83.3
Д64
7611-428

В. А. Долгов

# Чăваш литературин сăн-сăпачĕ

В. Долгов Чăваш литературин сăн-сăпачĕ

7611

Национальная библиотека ЧР
4-007611

~~1118~~
~~42774~~

Национальная библиотека ЧР
4-007611

83.3
Д 64

В. А. ДОЛГОВ

# ЧĂВАШ ЛИТЕРАТУРИН СĂН-СĂПАЧĔ

БИБЛИОТЕКА
Союза писателей
Чуваш. АССР
Инв. №

ЧĂВАШ АССР КĔНЕКЕ ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1963

ПРОВЕРЕНО
20.10 21 МАР 2017

7611-Чув

Национальная библиотека
Чувашской
Республики

## СОВЕТ ЛИТЕРАТУРИН АСЛĂ ТĔЛЛЕВĔ

(Н. С. Хрущевăн «Литературăпа искусствăна халăх пурнăçĕпе тачă çыхăнтармалла» кĕнекине чăвашла кăларнă май)

1957 çулта пирĕн хаçат-журналсенче Н. С. Хрущев юлташăн «Литературăпа искусствăна халăх пурнăçĕпе тачă çыхăнтармалла» ятпа пĕр произведение пĕрлештернĕ сăмахĕсем пичетленсе тухрĕç. Çак произведение партипе халăх чаплă ят пачĕ. «Парти документчĕ». Парти çав документра литературăпа искусствăн коммунизм строительствинчи вырăнне, писательсемпе искусствă çыннисен КПСС XX съезчĕ йышăннă решенисене пурнăça кĕртес ĕçри задачисене яр-уççăн кăтартса пачĕ. Совет писателĕсемпе искусствă çыннисем парти кăтартăвĕсене пĕтĕм чун-чĕрепе хавасланса йышăнчĕç.

1957 çул хыççăн Н. С. Хрущев юлташ литературăпа искусствă ыйтăвĕсем пирки тĕрлĕ съездсенче, канашлусемпе йышăнусенче тата та тухса каларĕ. Чăвашгосиздат Н. С. Хрущев юлташăн çав сăмахĕсене пĕр кĕнекене пухса чăвашла куçарса кăларчĕ. Кĕнекен ячĕ —«Литературăпа искусствăна халăх пурнăçĕпе тачă çыхăнтармалла» (1961 çул, кĕнекере 108 стр.).

Кĕнекене çак произведенисене кĕртнĕ: Совет Союзĕнчи Коммунистсен партийĕн Тĕп Комитечĕ партин XX съездне туса панă отчетлă докладăн идеологи ĕçĕн ыйтăвĕсем çинчен калакан пайĕ; «Литературăпа искусствăна халăх пурнăçĕпе тачă çыхăнтармалла» (1957 çулхи майăн 13-мĕшĕнче писательсен КПСС Тĕп Комитетĕнче пулнă канашлăвĕнче, 1957 çулхи майăн 19-мĕшĕнче писательсене, художниксене, скульпторсемпе композиторсене йышăннă чухне тата 1957 çулхи июль уйăхĕнче парти активĕн пухă-

вĕнче тухса каланă сăмахсене кĕскен каласа пани); Америкăри Юнайтед прес агентствин корреспонденчĕпе Генри Шапирăпа 1957 çулхи ноябрĕн 14-мĕшĕнче калаçнинчен илнĕ сыпăк; 1958 çулхи февралĕн 8-мĕшĕнче Кремльти Пысăк дворецра совет халăх интеллигенцийĕн представителĕсене йышăннă чухне каланă сăмах; СССР халăх хуçалăхне 1959—1965 çулсенче аталантармалли контроллĕ цифрăсем çинчен партин черетсĕр XXI съездĕнче тунă докладран илнĕ сыпăк; «Халăх ырлăхĕшĕн ĕçлесси — совет писателĕсен чи пысăк тивĕçĕ» (Писательсен III съездĕнче 1959 çулхи майăн 22-мĕшĕнче каланă сăмах); КПСС Тĕп Комитечĕн Пленумĕнче 1959 çулхи июнĕн 29-мĕшĕнче каланă сăмах сыпăкĕ; «Мĕн пур çĕршывсенчи халăхсен ирĕкĕ — пĕтĕм тĕнчипе мир тăвасси» (Ростов облаçĕнчи Вешенская станицăра 1959 çулхи августăн 30-мĕшĕнче каланă сăмахран); «Совет пичечĕ чи вăйлă та чи çивĕч пичет пулмалла» (1959 çулхи ноябрĕн 14-мĕшĕнче совет журналисчĕсене Кремльте йышăннă чухне каланă сăмах); «Журналистсен пĕтĕм тĕнчери иккĕмĕш тĕл пулăвне хутшăнакансене» (1960 çулхи октябрĕн 18-мĕшĕнче янă салам).

* * *

Кĕнекен ячĕ унта кĕртнĕ сăмахсен тĕп шухăшне палăртать: литературăпа искусствă халăх пурнăçĕпе тачă çыхăнса тăмалла, халăх ĕçне тумалла, коммунизм тума пулăшмалла. «Литературăпа искусствăна халăх пурнăçĕпе тачă çыхăнтармалла» кĕнекере социализмла, коммунизмла литературăпа искусствă çинчен сăмах пырать. Вĕсем пур тĕлĕшпе те малта пымалла, хăватлă пулмалла. Партин XX съездĕнче тунă отчетлă докладра кун пирки Н. С. Хрущев юлташ çакăн пек калать: «Пирĕн çĕршыври искусствăпа литературă содержани пуянлăхĕпе кăна мар, хăйĕн художествăллă вăйĕпе те, ăсталăхĕпе те тĕнчере чи малта тăракан искусствăпа литературă пулма пултарасçĕ тата вĕсен çавăн пек пулма тăрăшмалла та» (**Н. С. Хрущев.** «Литературăпа искусствăна халăх пурнăçĕпе тачă çыхăнтармалла». Чăвашгиз, 1961 ç., 9 стр. Цитатăсене пур çĕрте те çак кăларăмран илнĕ).

Çак шухăша эпир час-часах калатпăр. Каламаллах та, мĕншĕн тесен вăл — совет искусствипе литератури умĕнче тăракан тĕп задачăна палăртать. Анчах пирĕн искусствăпа литературă шухăшсен пуянлăхĕпе кăна мар, илемлĕх

вăйĕпе те малта тăмалла тетпĕр те вăл мĕне пĕлтерни çинчен шухăшласах каймастпăр, вулакансем каламасăрах, ытлашши ăнлантармасăрах пĕлеççĕ пулĕ, тетпĕр.

Эпир социализмла обществăра пурăнатпăр, коммунизм тăватпăр. Коммунизмла обществăн малтанхи сыпăкне — социализма — совет халăхĕ туса çитерчĕ ĕнтĕ. Коммунизм — чи малта тăракан общества, чи лайăх формаци. Унăн надстройкисем те урăхла надстройкăсем, малта тăраканскерсем, вĕсем халичченхи пеккисем пулмалла мар. Коммунизмла общества искусствипе литератури этем ку таранччен курман-илтмен искусствăпа литература пулмалла. Эпир коммунизм тăватпăр пулсан, пирĕн искусствăпа литература та çав малта тăракан обществăна тивĕçлĕ пулмалла, вĕсем пĕтĕм тĕнчипе чи малта тăмалла. Коммунизм шухăшĕсем, унăн революцилле идейисем çĕнĕ искусствăпа литературăн чаплă идейисем пулмалла, халăха ĕçпе кĕрешӳре хаваслăх парса тăмалла, хавхалантармалла.

Малта тăракан вăйлă шухăшсене кирлĕ пек каласа пама пысăк ăсталăх, чаплăран та чаплă илемлĕх вăйĕ кирлĕ, этемлĕх историйĕнче ку вăхăтчен никам та тĕл пулман пултарулăх кирлĕ, мĕншĕн тесен хăватлă идейăсен пуянлăхне ăстаран та ăста писательсем, художниксем, композиторсем тата искусствăпа литературăн ытти нумай вĕреннĕ, ăсталаннă работникĕсем çеç илемлĕн кăтартса пама, çынсен ăс-тăнĕ, чун-чĕри патне çитерме пултараççĕ.

Совет искусствипе литературине илес пулсан, çакă паллă: вĕсем чи малта пыракан искусствăпа литература пулнине пĕтĕм тĕнче пĕлет. Малашне вĕсем тата та вăйлă, тата та илемлĕ искусствăпа литература пулма пултараççĕ. Çавăнпа та Коммунистсен партийĕ литературăпа искусствăра ĕçлекенсене тата та тимлĕрех, пултаруллăрах ĕçлеме чĕнет.

«Искусствă органĕсенчи, редакцисенчи тата издательствăсенчи хăш-пĕр юлташсем килĕшнĕ пек,— тет Н. С. Хрущев юлташ,— тĕксĕм, васкаса çырнă произведенисемпе килĕшме юрамасть».

Малалла вăл çакăн пек асăрхаттарать: «Час-часах пирĕн халсăр, тĕрĕс мар çырнă произведенисене тивĕçлĕ отпор памасăр хăвараççĕ. Çакă вăл искусствă аталанăвне тата халăха художествăллă воспитани парас ĕçе сиен кӳрет» (9 стр.).

Чăваш литератури пирки калас пулсан, çакна асăрхаттармалла: тепĕр чухне пирĕн шупка произведенисем çеç

мар, япăххисем те пичетленсе тухаççĕ (скобкăра çакăн пек каласа хăвармасăр чăтма çук: вĕсем пичетленсе мар, «сиксе тухаççĕ!»). Вĕсен авторĕсем хушшинче тепĕр чухне ятлă писательсем те пулкалаççĕ. Чăваш писателĕсен задачи «вăтам» произведенисемпе çырлахасси мар (япăххисем пирки ĕнтĕ калама та кирлĕ мар), вĕсен задачи — Мускава çитме, Совет Союзне тухма, пĕтĕм тĕнчене кайма тивĕçлĕ произведенисем çырасси. Кун пек задачă художниксемпе композиторсем умĕнче те, театр работникĕсем умĕнче те тăрать. Вăл задачăна ăнăçлă пурнăçласа пыни пирĕнтен парти мĕн ыйтнине, Н. С. Хрущев юлташăн парти съездĕнче каланă сăмахĕсене эпир тĕрĕс ăнланнине кăтартса парĕ.

КПСС XX съезчĕ хăйĕн решенийĕсенче идеологи тĕлĕшпе пурнăçа кĕртмелли задачăсене яр-уççăн палăртса пачĕ, çынсене идейăллă воспитани памалли майсемпе пуриппе те — пропагандăпа, агитаципе, пичетпе, радиопа, культурăпа çутĕç организацийĕсемпе тата учрежденийĕсемпе, наукăпа, литературăпа, искусствăпа — ытларах та активлăрах усă курмалла, терĕ.

Çак задачăсене пурнăça кĕртессишĕн парти организацийĕсем пĕтĕм вăйне хурса ĕçлеççĕ. Литературăпа искусства организацийĕсем те вĕсене пурнăça лайăхрах кĕртес тесе тăрăшаççĕ.

* * *

«Литературăпа искусствăна халăх пурнăçĕпе тачă çыхăнтармалла» произведени — Н. С. Хрущевăн виçĕ сăмахне пĕр текста пĕрлештерсе çырнă документ. Документ тепĕр, мĕншĕн тесен, пачăрах ĕнтĕ каларăмăр, вăл совет литературине парти документчĕ ячĕпе кĕрсе юлчĕ. Вăл пĕтĕм совет литературине, çав шутра пирĕн чăваш литературине те, хальхи вăхăтри задачăсене уççăн кăтартса пачĕ. Н. С. Хрущев юлташ литературăпа искусства ыйтăвĕсем тĕлĕшпе парти мĕн тери тимлĕ ĕçлени çинчен калать. Литературăпа искусства партин идеологи ĕçĕнче, ĕç çыннисене коммунистла воспитани парас ĕçре калама çук пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Çавăнпа та парти литературăпа искусства чечекленсе аталанччăр, вĕсен идейăпа илемлĕх шайĕ çӳлте тăччăр тесе тăрăшать.

Литературăпа искусствăн ĕç çыннисене воспитани парас ĕçри вырăнне асра тытса, Коммунистсен партийĕ

«литературăпа искусствă деятелĕсене хăйĕн идеологи ĕçĕнчи шанчăклă тусĕсем, пулăшаканĕсем, çирĕп тĕрекĕ тесе шутлать» (30).

Ку шухăша, писательсем партие пулăшакансем, унăн помощникĕсем пулнине, Н. С. Хрущев юлташ 1959 çулхи ноябрĕн 14-мĕшĕнче совет журналисчĕсене йышăннă чухне тепĕр хут ас тутарнă:

«Хаклă юлташсем-журналистсем! — тенĕ унта вăл.— Писательсене эпир парти помощникĕсем тетпĕр. Писательсем ман çине ан кӳренччĕр те, эпĕ çапла калатăп: эсир, журналистсем, пирĕн партин шанчăклă помощникĕсем çеç мар, чăннипех ĕнтĕ партин чи çывăх помощникĕсем — унăн аслă ĕçĕшĕн активлă кĕрешекенсем. Мĕншĕн чи çывăх помощникĕсем? Мĕншĕн тесен эсир партишĕн яланах çывăхра, алă айĕнчех. Мĕнле те пулин решение ăнлантарса памалла тата пурнăçламалла пулсан, эпир сире чĕнсе илетпĕр, эсир вара, партие массăсемпе çыхăнса тăма пулăшакан чи шанчăклă вăй пулса, парти решенине пирĕн пĕтĕм халăх патне çитеретĕр» (103).

Йышăнура пулнă журналистсем Н. С. Хрущевăн çак сăмахĕсене тăвăллăн алă çупса ырланă. Писательсем те, журналистсем те пĕр ĕçех тăваççĕ,— партие пулăшаççĕ! Анчах писательсемпе журналистсен ĕçĕнче уйрăмлăхсем те пур. Журналистсем (асăрхарăр-и!)—«яланах çывăхра, алă айĕнчех». Кунта журналистсен идеологийĕ, шухăш-кăмăлĕ, ĕмĕчĕ çинчен мар, вĕсен ĕçĕн хăйне евĕрлĕхĕ, специфики çинчен каланă. Журналистăн хăш чухне хăйĕн корреспонденцине пĕр вырăнта ларса «этемле» çырма та май пулмасть, васкамалла, материала «чи кĕске вăхăтра» хаçат редакцине çитермелле пулать. Писателе мĕн?.. Вăл хуларан хулана поездпа ыткăнмасть, васкаса самолётпа вĕçмест,— кирлĕ материалсене пухса çитернĕ пулсан, кабинетра çырса ларать, çырнине юсать, кирлĕ маррине хуратать, лайăхран лайăх тăвать. Журналистăн ун пек ĕçлеме вăхăт çук, унăн пĕрре çырнипех лайăхран лайăх, тĕрĕсрен тĕрĕс çырас пулать. Паян, калăпăр, парти мĕнле те пулин решени йышăнчĕ пулсан, журналистăн ăна халех кирлĕ пек ăнланса илес пулать, унсăрăн вăл çыраймасть, кунсерен тухса тăракан хаçата корреспонденци вăхăтра параймасть. Ун çинчен ыран çырни кивелет е пысăк усă параймасть.

Çапах та, журналистсем те, писательсем те пĕр ĕçех тăваççĕ: тăван партие пулăшаççĕ! (Сăмах май куçару пирки пĕр асăрхаттару: кĕнекере «помощники партии» тенине

30 страницăра «партие пулăшакансем», 103 страницăра «парти помощникĕсем» тенĕ. Вĕсене кĕнеке редакторĕ асăрхайман, пĕр пек тăвайман).

Писательсем хăйсен тĕрлĕ пухăвĕсенче, нумай-нумай статйисенче литературăпа пурнăç хушшинчи çыхăну пирки тем чухлĕ каланă, ăна çирĕплетме сăмах панă, резолюцисем çырнă. Анчах литературăпа искусствăн обществă пурнăçĕнчи вырăнĕ çинчен, вăл халăхпа мĕнле çыхăнса тăни çинчен Н. С. Хрущев юлташ пек уçăмлă никам та каламан. Унăн çак произведенийĕсенче литературăпа искусствăн тĕп çул-йĕрне кăтартса панă.

«Аталанса пымалли çул-йĕр вара,— тет Н. С. Хрущев юлташ,— çакă пулать: литературăпа искусства яланах халăх пурнăçĕпе тачă çыхăнса тăччăр, пирĕн пуян та нумай енлĕ социализмла пурнăça тĕрĕс кăтартчăр, совет халăхĕн пурнăçа çĕнетекен аслă ĕçне, унăн ырă туртăмĕсемпе ĕмĕчĕсене, унăн чи лаха моральне уçăмлă та ĕненмелле кăтартса паччăр. Литературăпа искусствăн обществă пурнăçĕнчи аслă пĕлтерĕшĕ вăл — халăха коммунизм тăвас ĕçри çĕнĕ çитĕнӳсемшĕн кĕрешĕве çĕклесси» (30).

Кунта совет искусствипе литературин аслă задачине, вĕсен аслă тĕллевне питех те лайăх каласа панă. «Халăха коммунизм тăвас ĕçри çĕнĕ çитĕнӳсемшĕн кĕрешĕве çĕклесси, коммунизм тума пулăшасси, хавхалантарасси»,— акă мĕнле задачăсем тăраççĕ писательсемпе художниксем, композиторсем тата искусствăн ытти çыннисем умĕнче.

Кунта литературăпа искусствăн аслă тĕллевĕ çинчен каланă май çакна асăрхаттармасăр иртме çук: Н. С. Хрущев кĕнекинче вырăсла: «Высшее общественное **назначение** (палăртса çырни пирĕн.— **В. Д.**) литературы и искусства — поднимать народ на борьбу за новые успехи в строительстве коммунизма» тенĕ. «Назначение» сăмаха эпир акă мĕншĕн хурапа палăртрăмăр: ăна «пĕлтерĕшĕ» тесе куçарни тĕрĕс мар, вырăссен «назначение» тени задачă, тĕллев сăмахсен тупсăмĕпе, пĕлтерĕшĕпе çӳрет. Шел пулин те, çак кăлтăка редактор та сисеймен, редакциленĕ чух тӳрлетмен.

Сăмаха хальхи вăхăтри чăваш литератури çине куçарас пулсан, çакă курăнать: чăваш литератури, хальхи темăсене çутатса пама тытăнчĕ пулин те, паянхи пурнăçа сарлакан та тарăннăн кăтартакан произведенисем параймарĕ-ха. Çапах та савăнтараканни çакă: пирĕн литературă пурнăçпа тан утма тăрăшать. Хальхи çынсен сăнарĕсене кăтартса паракан повеçсем, калавсем, очерксем, поэмăсемпе сăвă-

сем, пьесӑсем пичетленсе тухма тытӑнчӗҫ. Паха романсем ҫук-ха. Ку вӑл роман ҫырма вӑхӑт ытларах кирлинчен, писательсен идейӑлӑх шайӗпе ӑсталӑх ҫителӗксӗрринчен килет пулмалла. Хальхи пурнӑҫ ҫинчен роман ҫырас тесен, иртнӗ вӑхӑтрипе хальхи вӑхӑтри пурнӑҫа аван пӗлнипе пӗрлех малалла пӑхма та пӗлес пулать. Малалла пӑхма пӗлменни, шухӑш ансӑрлӑхӗ, ӑсталӑх ҫителӗксӗрри пире касмаллипех касать, пӳлет, кал-кал ӗҫлеме памасть. Тепӗр тесен, пирӗн шутпа, иртнӗ самана ҫинчен ҫырма ытлашши йывӑрах та мар. Ку тӗлӗшпе пирӗн литературӑн опыт та, традици те пур. Тем пулсан та, ҫӗнӗ пурнӑҫӑн ҫӗнӗ ыйтӑвӗсене ҫӗклеме ӗнерсем ху мӗн курни ҫинчен каласа панинчен йывӑртарах. Ку ҫеҫ те мар-ха, чӑваш литературинче хӑшӗ-пӗрисем, хӑйсем Октябрь тантӑшӗсем ҫеҫ, малтанхи пилӗк ҫуллӑхсен тантӑшӗсем ҫеҫ пулин те, ытларах XIX ӗмӗрте «чаваланма» пӑхаҫҫӗ. Вӗсем хальхи ҫынсене курман та, вӗсем ҫинчен илтмен те тейӗн. Паллах, писателе иртнӗ пурнӑҫ ҫинчен те ҫырма юрать. Анчах писательсем иртнӗ саманасӑр пуҫне урӑх ним те курмаҫҫӗ тата яланах иртнӗ саманара «пурӑнаҫҫӗ» пулсан, литература халӑх ыйтнисене кирлӗ чухлӗ тивӗҫтерейместь, коммунизм тунӑ ҫӗрте ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума пӗтӗм вӑйпа чӗнеймест.

Кулленхи пурнӑҫ, хальхи ҫынсен ӗҫӗ-хӗлӗ, хальхи сӑнарсем, ӗмӗт-шухӑшсем писательсен ӗмӗтне, талантне ҫунат параҫҫӗ, ҫӗнӗ произведенисем ҫырма хавасланатараҫҫӗ. Ҫавӑнпа ӗнтӗ писательсен пурнӑҫран юлмалла мар, тем пулсан та, малаллах, малаллах кайса пымалла. Ҫакна асра тытса, писательсене кӑвар чӗреллӗ Ҫеҫпӗлӗн сӑмахӗсемпе ҫапла калас килет:

> Вут кайӑклӑн вӗҫӗр, ан юлӑр,
> Ан юлӑр кун-ҫул уттинчен.

* * *

Н. С. Хрущев ҫак произведенирех тата «партийность литературы» тени мӗне пӗлтернине ӑнлантарса панӑ. «Партийность» сӑмаха чӑваш писателӗсем «партилӗх» тесе куҫараҫҫӗ (ӑна ку кӗнекере те ҫавӑн пек куҫарнӑ). Ҫапла вара, партилӗх ӑнланупа ҫыхӑннӑ ытти терминсене ҫакӑн пек куҫарса ҫыраҫҫӗ: партийность науки — ӑслӑлӑх партилӗхӗ, партийность философии — философи партилӗхӗ, партийность литературы — литература партилӗхӗ тата ыт. те.

Литература партилӗхӗ ҫинчен калакан шухӑша,

литературăри партилĕх принципне чи малтан В. И. Ленин сăлтавласа, çутатса панă. Çулпуç шухăшне парти малалла аталантарнă.

Литературă партилĕхĕпе халăхлăхĕ пирки Н. С. Хрущев çакăн пек калать: «...Партилĕхпе халăхлăха хире-хирĕç тăратма юрамасть. Социализмла совет обществин вăйĕ — Коммунистсен партийĕпе халăх пĕрлĕхĕнче. Коммунистсен партийĕн политики халăхăн тĕп интересĕсене палăртать, вăл совет общества стройĕпе государствă стройĕн пурнăç никĕсĕ пулса тăрать. Çавăнпа та пирĕн совет условийĕсенче Коммунистсен партийĕн политикине пурнăçа кĕртес ĕçе активлă хутшăнмасăрах халăхшăн ĕçлеме пулать тесе шутлани пысăк йăнăш пулнă пулĕччĕ. Парти шухăшĕсемпе, унăн политикăлла çул-йĕрĕпе килĕшмесĕр, халăхпа пĕрле пыратăп тесе шутлама çук. Кам халăхпа пĕрле пулас тет, вăл яланах партипе пĕрле пулать. Кам парти позицийĕсенче çирĕп тăрать, вăл яланах халăхпа пĕрле пулать» (34).

Анчах литературăн партилĕх принципĕсене ăнланмасăр, эпир литературăна партире тăракан писательсен вăйĕпе çеç тума пултаратпăр тени — вăл йăнăшран та йăнăш, киревсĕртен те киревсĕр шухăш, ачалла, кĕтĕк те айван шухăш. Паллах, писательсем хушшинче парти членĕсем сахал мар, çав вăхăтрах партире тăман юлташсем те чылай. Вĕсем пурте, партире тăраканнисем те, тăманнисем те, пĕр ĕçе кӳлĕнсе ĕçлеççĕ: хăйсен произведенийĕсемпе совет литературине аталантараççĕ, халăха, партие пулăшаççĕ.

«Художествă творчествинчи партилĕх,— тет Н. С. Хрущев,— художник ячĕшĕн çеç парти ретĕнче тăнинчен мар, унăн шухăш-кăмăлĕнчен, унăн идейăллă позицийĕнчен килет. Парти членĕнче тăман лайăх писательсем те пирĕн сахал мар, анчах вĕсен произведенийĕсем хăйсен идейăллă содержанийĕпе, политикăлла çивĕчлĕхĕпе çав тери партиллĕ, халăх, хăйĕн интересĕсене палăртса тăнине кура, çав произведенисене ырласа йышăнать» (34).

Литературăри ленинла партилĕх принципĕ: литературă вăл — халăхпа парти ĕçĕ, тесе вĕрентет. Совет писателĕ, хăйĕн вăй-халне, пултарулăхĕпе талантне халăхпа парти ĕçĕ пулса тăнă литературăна парса, паттăр ĕç тăвать. Çак ĕç ăна хăйне те, унăн нумай-нумай вулаканĕсене те хавасланăх парать.

Коммунизм идеалĕсем писателе халăхпа, партипе пинпин майпа çыхăнтарса тăраççĕ. Н. С. Хрущев юлташ каланă тăрăх, коммунизм идеалĕсемшĕн, тăван халăх телейĕ-

шĕн кĕрешесси писатель пурнăçĕн тĕллевĕ пулса тăрать пулсан, вăл халăх интересĕсемпе, унăн шухăш-кăмăлĕпе пурăнать пулсан, вăл кирек мĕнле темă илсен те, пурнăçри кирек мĕнле явление çутатса парсан та, унăн произведенийĕсем халăх, парти тата государствă интересĕсемпе килĕшсе тăраççĕ.

Литературă ĕçĕ — халăхшăн ĕçлесси — çăмăл япала мар. Ниçта та кирлĕ пек вăй хурса ĕçлемен, ĕçĕн тути-масине ăс-тăнпа та, вăй-халпа та туйса курман çын çеç литературăра канлĕх шырама ĕмĕтленет, ăна кĕрĕк аркине йăвалакан чăваш куçĕпе виçме шутлать. Чăн-чăн писатель, чăн-чăн художник халăхшăн тăрăшас çула, никам хистемесĕр, хăй ирĕкĕпе, хăй шухăшĕпе, хăй кăмăлĕпе йышăнса, чунĕпе чĕри хушнипе суйласа илсе ĕçлет.

Литературă партилĕхĕ пирки буржуази идеологĕсем тем те пĕр калаççĕ, тĕрлĕ элек сараççĕ. Çакна асра тытса, Н. С. Хрущев Америкăри Юнайтед прес агентствин корреспонденчĕпе Генри Шапирăпа 1957 çулхи ноябрĕн 14-мĕшĕнче калаçнă чухне литературă партилĕхĕ мĕне пĕлтернине çапла ăнлантарса панă: «Хăш-пĕр буржуалла журналистсем тепĕр чухне çакăн пек калаççĕ: литературăпа искусствăри партилĕх вăл темле ирĕксĕрлени пулать, теççĕ. Хăй халăхне юратакан совет писателĕшĕн, искусствă деятелĕшĕн унăн произведенийĕсен партилĕхĕ, халăха усă парас ĕмĕт чĕре хушнинчен тухса тăрать. Ун çинчен пирĕн писательсем, искусствă деятелĕсем хăйсемех лайăх каласа параççĕ. Партилĕх вăл, çирĕп шухăш-кăмăлтан тухса тăрать пулсан, никамшăн та чăрмав пулса тăмасть» (46).

«...Писатель халăхшăн ĕçлет, унпа пĕрле пурăнать тата унăн тарçи пулсан, унăн творчестви вара халăх интересĕсене, Коммунистсен партийĕн тата унăн хăйĕн интересĕсене палăртса тăрать» (çавăнтах).

Çапла ĕнтĕ, литературăри партилĕхпе халăхлăх — вăл халăхăн, партин, писателĕн интересĕсем тачăран та тачă пĕтĕçсе тăнинче, парти çул-йĕрне, вăл ертсе пынине чунпа та, ăспа та йышăннинче, ăна пурнăça кĕртсе пынинче.

Вырăс халăх каларăшĕ (пословици): кил-йыш чăлахсăр пулмасть, тет. Иртнĕ вăхăтра, уйрăм çын культне критикленĕ кунсенче, Мускаври хăш-пĕр писательсем, пултарулăх «ирĕклĕхне» ăнланмасăр, партилĕх пирки урлă-пирлĕ калаçкаласа илчĕç. Шăпах ĕнтĕ çавнашкал писательсене асра тытса, Н. С. Хрущев юлташ КПСС Тĕп Комитечĕн Пленумĕнче 1959 çулхи июнĕн 29-мĕшĕнче çапла асăрхаттарнă:

«Писательсем хушшинче пирĕн йăнăш шухăшлакан уйрăм çынсем пур. Литературăна парти енĕпе мĕнле ертсе пырăнха!—теççĕ вĕсем. Ун пеккисене эпир çапла калатпăр: мĕскер эс, юлташăм, парти ертсе пынине йышăнмастăн-им?— тетпĕр. Анчах парти ертсе пыни мĕн-ха вăл? Ку вăл миллионшар çынсен ирĕкĕ-кăмăлĕ, миллионшар ăссен ирĕкĕ-кăмăлĕ, миллионшар çынсен коллективлă ăсĕ-хакăлĕ вĕт. Пĕр-пĕр литератор пĕр-пĕр дачăра хăйĕн произведенине, хăш чухне имшер произведенине, кăлăкласа кăларать те, ăна эпир пурăнакан вăхăтри çынсен, пĕтĕм халăхăн шухăшĕсене палăртса тăракан произведени вырăнне хуччăр тесе тăрăшать. Ку вăл чăннипех харпăр хăйне пысăка хурас йăла мар-и ĕнтĕ. Вăл, куратăр-и, миллионсен ирĕкне-кăмăлне палăртса тăракан парти ертсе пынипе килĕшесшĕн мар иккен. Унашкал çын ĕнтĕ хăйĕн пуçран шухăшласа кăларнă произведенийĕпе хăй партирен çӳлерех, халăхран çӳлерех хăпарса тăрасшăн. Тĕрлĕ çынсем сахал мар çав! Ку вăл, паллах, йĕркерен тухни, калас пулсан, психологиллĕ явлени ĕнтĕ. Уйрăм çынсем йĕркерен тухасси, тен, коммунизм чухне те пулать пулĕ» (88).

Чăваш литературин пурнăçĕ, чăваш писателĕсен ĕçĕ-хĕлĕ пирĕн литераторсен йышĕ парти ертсе пынине тĕрĕс ăнланнине, ăна пурнăçа кĕртсе пыма вăй-халне шеллесе тăманнине кăтартса пачĕ. Чăваш писателĕсен организацийĕ парти ертсе пынипе ĕçлет, парти çул-йĕрĕпе çирĕп пырать. Ним иккĕленмелли те çук, вăл малашне те çавăн пекех ĕçлĕ, çавăн пекех пырĕ.

* * *

«Литературăпа искусствăна халăх пурнăçĕпе тачă çыхăнтармалла» кĕнекене Н. С. Хрущев юлташăн писательсен III съездĕнче 1959 çулхи майăн 22-мĕшĕнче каланă сăмахне пĕтĕмĕшпех кĕртнĕ. Ку сăмах ячĕ «Халăх ырлăхĕшĕн ĕçлесси — совет писателĕсен чи пысăк тивĕçĕ».

Никита Сергеевич хăйĕн сăмахĕн пуçламăшĕнче, парти Тĕп Комитечĕн çырăвне асăннă май, писательсене «этем чунĕн инженерĕсем» тет. Çак чаплă сăмахсен тĕп шухăшĕ, тупсăмĕ çакăнта: литературă çынсен шухăшĕсене, ăс-тăнне, кăмăлне, характерне йĕркелеме, тĕрĕс çул-йĕрпе яма пулăшать. Илемлĕ литературă произведенийĕсем ĕç çыннисене хăйсен ĕçпе кĕрешӳри вырăнне, идеалĕсене ăнланса илме пулăшса, малалла чĕнеççĕ, вĕсен ырă туйăмĕсене вăратаççĕ, ĕмĕчĕсене çунатсем параççĕ.

Писательсен ĕçĕ — совет халăхне коммунизм тума пулăшасси, коммунизм тăвас ĕçе хăйсен произведенийĕсемпе хастар хутшăнасси. Н. С. Хрущев калана тăрăх, халăхпа, коллективпа пĕрле тăрăшса ĕçлессинчен, коллективра пурăнассинчен, обществăпа халăх ырлăхĕшĕн тăрăшма кирлине ăнланса ĕçлениччен пысăкрах телей çыншăн урăх çук. Тӳрех калăпăр, писательшĕн те çавах: халăхран аякра тăракан, халăх çине йĕрĕнсе пăхакан, унăн хуйхи-суйхи çине алă сулакан çын писатель пулма пултараймасть, вăл йăвасăр «шăпчăк» пек, унăн юрри-сăвви хăйĕн кăмăлне çеç йăпататать.

Съездра Н. С. Хрущев юлташ хăйĕн çамрăк чухнехи тусĕн, Пантелей Махиня поэтăн пĕр сăввине вуласа панă. Поэт «тĕрĕсне калакан кĕнеке» çинчен çакăн пек йĕркесем çырнă:

> Сасартăк тухнă тăвăл пек вăй патăр
> Çынсен чĕрисене ялкăштарма.
> Çынна вăл йывăр ыйхăран вăраттăр,
> Вăл чĕнтĕр тĕттĕме хирĕç çапăçма.

П. Махиня сăмахĕсене вуласа панă хыççăн Никита Сергеевич: «Акă мĕнле ăнланнă рабочи поэт хăй пурнăçĕн тупсăмне, мĕнре курса тăнă хăй ĕçĕн тĕллевне», тет (61). Çав вăхăтрах вăл Махиня поэт кунта кивĕ Российă çинчен каланине асăрхаттарать,— хальхи писательсен чаплă ĕçĕшĕн çулсем уçă, ĕçле кăна, ывăнас темесĕр ĕçле.

Никита Сергеевич съездра литература критики писатель ĕçĕнче мĕн тери пысăк вырăн йышăннине кăтартса панă. Вăл, ăшшăн кулса, хăш-пĕр писательсене юлташла тĕксе, литература критикине «хурăн милĕкпе» танлаштарать:

«Литература енĕпе ĕçлекен лайăх критик чи паллă писателе те нумай пулăшма пултарать: критикăллă ăслă статья вăл — мунчана çапăнма çӳреме юратакан çынна кирлĕ хурăн милĕк евĕрлех: вăл ăшши парать те милĕкпе çапăнать, хăй çапăнасшăн мар пулсан, ăна урăххи çапса ярать. Милĕкпе çапăнни вара вăл — начар ĕç мар, мĕншĕн тесен тир тасалать, ӳт лайăхрах сывлама пуçлать, пурăнма çăмăлланать» (64).

Çак сăмахрах Н. С. Хрущев критикă пирки çапла калать: «Кунпа пĕрлех çакна каламалла: литература критики, литература произведенийĕсене кулленех тĕплĕн пăхса тухни вăл — пирĕн литературăна ăнăçлă аталантармалли

чи кирлӗ услови. Акӑ мӗншӗн ӗнтӗ сирӗн хӑвар юлташӑрсене критиклессинчен тата вӗсен произведенийӗсене пӑхса тухассинчен пӑрӑнса тӑма ирӗк ҫук. Мӗне пӗлтерет-ха вӑл литература критики тени? Вӑл — писатель хӗҫ-пӑшалне ҫивӗчлетни, произведение тӗплӗн пӑхса тухни, вӑл — литераторсен ӑсталӑхне пӗрмаях ӳстерсе пыни. Манӑн ҫакӑн пирки калама кирлех те мар, эсир ҫакнашкал ыйтусен пӗлтерӗшне хӑвӑрах лайӑх пӗлетӗр. Пире кӗрешӗве чӗнекен, коммунизм ҫӗнтерӗвӗ патне чӗнекен ҫӗнӗ, лайӑх литература произведенийӗсем кирлӗ, ҫавнашкал произведенисене халӑх кӗтет» (75—76).

Асӑрхарӑр-и, литература критики вӑл —«пирӗн литературӑна ӑнӑҫлӑ аталантармалли чи кирлӗ услови»; критика вӑл —«писатель хӗҫ-пӑшалне ҫивӗчлетни, произведение тӗплӗн пӑхса тухни», «литераторсен ӑсталӑхне пӗрмаях ӳстерсе пыни». В. И. Ленин хӑйӗн Максим Горький патне янӑ ҫырӑвӗсенчен пӗринче «литература критикине те парти ӗҫӗпе тачӑрах ҫыхӑнтармалла» тенӗ *. Ку вӑл литература критикин обществӑ пурнӑҫӗнчи вырӑнӗпе тивӗҫӗ, тивлечӗпе тӗллевӗ мӗн тери пысӑк пулнине, унӑн партилӗхне питех те уҫҫӑн кӑтартса парать.

Литература критики —«литературӑна ӑнӑҫлӑ аталантармалли услови» пулсан, критика жанрӗнче ӗҫлекен литераторӑн, критикӑн мӗнле пулмалли те курӑнсах тӑрать. Вӑл «телей валеҫнӗ чухне ура сырса юлнӑ» чӑваш мар (эпир кунта «телей» вырӑнне «талант» сӑмаха асра тытатпӑр), пысӑк талантпа ҫуралнӑ, ҫав таланта ӳстернӗ, аталантарнӑ ҫын пулмалла. Анчах кун пек ҫеҫ калани ҫителӗксӗр пулнӑ пулӗччӗ: пирӗн вӑхӑтри литература критикӗ вӑл — парти ҫул-йӗрне тӗрӗс тытса пыракан ҫын, философ-марксист, литератор-публицист, эстетикӑна, литературӑпа критикӑн историне, гражданла историне, социологие тӗплӗ пӗлекен литератор пулмалла.

Хӑшӗ-пӗрисем критик ӗҫне ытла та «ансӑр ӗҫ» вырӑнне хураҫҫӗ. Вӗсен шучӗпе, чӑн-чӑн критика вӑл —«йӑнӑшсем тупасси, вӗсене тишкересси». Анчах критикӑна ҫавӑн пек ӑнланни марксистла-ленинла литература критикинчен питех те инҫетре тӑрать. Вӗсен хушши — пӗлӗтпе ҫӗр пекех: ӑна ҫӗр ҫинчен те, пӗлӗт ҫинчен те виҫсе пӑхма ҫук.

Партилӗх, ленинла, коммунистла партилӗх! Акӑ мӗн кирлӗ литература критикне. Критикӑра партилӗх принципӗсенчен пӑрӑнса кайни нихҫан та ырри патне илсе пы-

* В. И. Ленин. Соч., 34 т., 332 стр.

масть,— яланах «йăнăш çулпа чуптарать», критикă ятне ярать!

Критикра çакăн пек пахалăхсем пĕрлешсе тăмалла: критик пĕр вăхăтрах теоретик тата художник пулмалла. Литература теорийĕн, эстетикăн ыйтăвĕсенче аран-аран сĕмленекен çын, марксизм-ленинизм теорине чун-чĕрепе, пĕтĕм ăс-хакăлпа парăнман çын ăçтан хастар критик пултăр-ха! Эпир писательсене «этем чунĕн инженерĕсем» тетпĕр пулсан, çак сăмахсем литературă критикĕсем пирки те вырăнлă. Критик — сивĕ тимĕре ахальтен кăна чанк-чанк шаккакан «тимĕрçĕ» мар, «этем чунĕн инженерĕ».

Н. С. Хрущев юлташ литературă критикин задачисем пирки тата çакăн пек калать: «Эпир литературăпа искусствăн мĕн пур вăйĕсене принциплă никĕс çинче пĕтĕçтерсе çирĕплетме тăрăшатпăр, анчах марксизм-ленинизм принципĕсенчен пăрăнса кайса мар. Çавăн пек пĕтĕçтерсе çирĕплетес тĕллевпе принциплă критикăпа самокритикă сарăлса пырать. Çак критикă йăнăш тунă çынсене хăйсен йăнăшĕсене ăнланса илсе тӳрлетме, ура çинче çирĕпрех тăма, творчествăри активлăха ӳстерме пулăшать. Критикăпа самокритикăна вăйлатса пырса, çакна тимлĕн тĕпчесе пĕлмелле: пĕр-пĕр деятелĕн йăнăшĕ ăнсăртран пулнă-и е вăл унăн шухăшĕсен системине, вăл тытса пыракан уйрăм çул-йĕре палăртса тăрать-и; тата çав деятель критикă çине мĕнле пăхнине те шута илмелле. Йăнăш тума кашни çынах пултарать, çын ĕнер мĕн тунине кăна мар, вăл ыран мĕн тума пултарнине те курма пĕлмелле,— ку чи кирли,— пирĕн çынна çитменлĕхсемпе йăнăшсене ăнланса илме, вĕсене хăвăртрах пĕтерме, тӳрлетме пулăшмалла» (39).

Н. С. Хрущев юлташ кунта принциплă критикă çинчен калать. Принциплă критикă литературăпа искусствă çыннисене хăйсен ĕçĕнче пулăшас шухăша, тĕллеве асра тытать, вĕсем пирĕн халăха ырлăх кӳме тата та лайăхрах ĕçлеччĕр, коммунизмшăн пыракан кĕрешĕве активлă хутшăнччăр, хăйсен произведенийĕсемпе социализмла совет культурине, коммунизмла культурăна пуянлатчăр, тет.

Писательсен III съездĕнче Никита Сергеевич писательсене: Эсир йăнăшсем тăвассинчен мĕнле сыхланмалла?— теме пултаратăр, тенĕ. Çавăнтах вара ăнлантарса панă. Писатель чăн-чăн совет писателĕ пулсан, йăнăшсене юрием, пĕле тăрах тумасть. Писателĕн йăнăшĕсем тĕрлĕ сăлтавсене пула пулаççĕ. Вĕсем пурнăçа çителĕклĕ пĕлмен пирки, тĕрĕс мар позицире тăнă пирки пулаççĕ. Йăнăшсем ан

пулччăр тесен, писателĕн çакна асра тытмалла: «...писательсем обществăра пурăнаççĕ, обществă пурнăçне сăнласа кăтартаççĕ, вĕсен творчестви мĕнле çулпа аталанмаллине обществăлла критикăн кăтартса памалла, вĕсен çав критикăна итлемелле, ăна шута илмелле, юлташла дискуссисем тумалла, сӳтсе явмалла, вĕсен произведенийĕсене общественноçăн хак памалла» (82).

«Лайăххишĕн ним именмесĕр савăнас пулать!» — тет Н. С. Хрущев 1958 çулхи февралĕн 8-мĕшĕнче халăх интеллигенцийĕн представителĕсене йышăннă чухне каланă сăмахĕнче (54). Анчах калас пулать, эпир лайăххишĕн, паха произведенисемшĕн савăнма пĕлместпĕр. Хăш чухне çакăн пеккисем те пулаççĕ: произведени тем пек лайăх пулсан та, «критик» çитменлĕх шырать. Калас пулать, пирĕн критиксем çитменлĕхсем çинчен çырма «вĕренсе» çитрĕç ĕнтĕ, анчах произведенин паха енĕсем çинчен, писателĕн ăсталăхĕ çинчен çырма пĕлмеççĕ, пултарулăх çитереймеççĕ, çырсан та, сăпă хĕр пек вăтанса, шикленсе çыраççĕ. Шел пулин те, литературă критикин ку çитменлĕхĕ çинчен уççăн калама эпир çаплах хăяймастпăр-ха.

Н. С. Хрущев юлташăн съездра каланă сăмахĕнче çамрăк писательсене вĕрентсе ӳстересси, тĕрĕс воспитани парасси çинчен те паха шухăшсем каланă. Ку ĕçри тĕп çитменлĕх çакă: пирĕн халĕ çеç çырма пуçлакан писательсене час-часах «ăшă» условисем туса параççĕ, çĕртен, хăйсем пурăнакан условирен уйăраççĕ. Çамрăк писателе пĕр калав е сăвă çырсанах мухтама тытăнаççĕ, этемлĕх кĕтнĕ пысăк талант, чаплă ахах тесе шавлаççĕ, писательсен Союзне члена илеççĕ, Мускава чĕнеççĕ...

Çакă вăл, паллах, ырă йăла мар.

Сăмах май çакна каласа хăварар: кун пек ĕçсем чăваш писателĕсем хушшинче те пулкалаççĕ. Талантсем пирки шавлама юратакансем тĕлĕшпе пире те турă манса хăварман. Калăпăр, пĕррескер, çамрăк юлташ, педагогикă институтĕнче вĕренет, хăй сăвă çыркалать, тейĕпĕр. Пĕр-ик сăвви «Ялава» лексен, çамрăк автора мухтаса пĕлĕтех çитереççĕ, чăн тӳпери çут çăлтăр выраннех хураççĕ. Çăлтăрĕ вара хăй те çич çăлтăр шутне пырса кĕнĕ пекех туйса çӳрет. Пăхăсăн: «талантăн» чăн-чăн поэт пулма, «çăлтăр» пулма пĕлӳ те, опыт та çук, пĕлĕвĕ вара институтăн иккĕмĕш курсĕнчен виççĕмĕшне куçма та çитмест, таланчĕ чĕпĕ сăмси пек те çук... Пăхăсăн: талант пирки шавлакансем çамрăк авторăн пĕр сăввине те пулин путлĕ вуласа тухман.

Пăхăсăн: вăл пушă пучах çеç пулнă, сăмаххи те çавнашкал сăмах кăна иккен...

Тата çакăн пекки те пулкалать: «çамрăк» писатель аллăран та иртнĕ, литературăра вăтăр çул ĕçленĕ пирки юбилейне те иртгернĕ, çапах та ăна çамрăк писатель сăпкинче сиктереççĕ; хăй тĕллĕн утма тытăнсан, пĕри те тепри туя тыттараççĕ. «Ўксен — тяппи хуçăлĕ, çамки шăтĕ...» теççĕ. Чăннипе каласан, талантлă çамрăк писателе тимĕр туя та, ылтăн сăпка та кирлĕ мар, ăна пултарулăх ĕçĕнчи йывăрлăхсене çĕнтерме вĕрентни кирлĕ. Литературă ĕçĕ йывăр та ответлă ĕç пулнине ăнланса илни кирлĕ.

Мускавалла туртăнакан писательсем пирки Никита Сергеевич çапла калать: «Халĕ çеç сырма пуçлакан çавнашкал çын провинцире пурăнать пулсан, ун чухне вара ăна Мускавра е республикă столицинче хваттер памалла теççĕ. Ку вăл — çĕнĕ çăлтăр, ăçтан-ха вăл провинцире пурăнтăр ĕнтĕ, теççĕ.

Çакă тĕрĕс-и вара? Акă Михаил Александрович Шолохов хăйĕн столицинче — Вешенская станицăра пурăнать вĕт-ха, эсир вара, столицăра пурăнакансем, литературă ĕçĕнче унпа пĕр тан пыма тăрăшса пăхăр-ха.

Ыйту кам ăçта пурăнни çинчен мар, кам мĕн тума пултарни çинчен, пĕр е тепĕр çын мĕн тума пултарни çинчен тăрать» (78).

Н. С. Хрущев юлташ сăмахĕсенче, писательсене ытларах халӑхи вăхăт çинчен çырма чĕнсе каланă вырăнсенче, илемлĕ произведенисенче совет çыннисен пурнăçĕнчи çитменлĕхсене мĕнле кăтартса парасси пирки паха канашсем панă.

Халӑхи пурнăç теми — тĕп темă. Писательсен хăйсен пĕтĕм тимлĕхне, ăсталăхне халӑхи çынсен сăнарне, вĕсен ĕçĕсене кăтартса парас ĕçе памалла. Халӑхи çынсен ырă сăнарĕ, халӑхи геройсен сăнарĕ ĕç çыннисене паттăрла ĕçсем тума хавхалантармалла. Анчах ырă ĕçсем, паха тĕслĕхсем, паттăрлăхсем çинчен çырма чĕнни çитменлĕхсене хирĕç кĕрешмелле мар тенине пĕлтермест. Çук, пачах та пĕлтермест! Çитменлĕхсем çинчен çырмалла, çитменлĕхсене критиклемелле. Анчах мĕнле позицире тăрса критиклемелле, мĕнле ĕмĕт-шухăшпа критиклемелле? Коммунистсен партийĕ çитменлĕхсемпе йăнăшсене пĕтерес тесе тупса палăртать, çав шутпах вĕсене никамран та хытă критиклет. Çак ĕçе парти хăйĕн çул-йĕрне, совет стройне тата та тĕреклетес, çĕнĕ çитĕнÿсем тăвас, пысăкрах хăвартлăхсемпе



Национальная библиотека Чувашской Республики
Союза писателей ... ССР
Инв. №

малалла каяс, коммунизма куллен-кун çывхартас тесе тăвать. Анчах хăш-пĕр литераторсем пурнăçа пĕлмен, политикă енĕпе çителĕклĕ опыт пулман пирки пурнăçăн паха енĕсене, тĕп туртăмĕсене курман пирки совет çыннисен пурнăçĕнче çитменлĕхсемсĕр пуçне урăх нимех те курмаççĕ. Вĕсем уйрăм йăнăшсене, çитменлĕхсене ярса тытаççĕ те «пурне те пĕр купана йăвантараççĕ, хăйсем те хăраса ӳкеççĕ, ыттисене те хăратма пăхаççĕ» (36). Кун пекки В. Дудинцев писатель ĕçĕнче пулса иртрĕ. Хальхи пурнăçа Дудинцев пек сăнласа кăтартни вăл ăна юриех пăсса, тĕрĕс мар кăтартма тăрăшни пулать. Чăваш писателĕсем хушшинче «Не хлебом единым» романа каçса кайса мухтакансем пулмарĕç. Ăна пирĕн писательсем тĕрĕс хак пачĕç: Дудинцев хăйĕн романне йăнăш çул çине тăрса çырнă, терĕç. Ку вăл чăваш писателĕсем хăйсен задачине тĕрĕс ăнланни çинчен калать, тĕрĕс çулпа пынине кăтартса парать.

Писательсен III съездĕнче Дудинцев романĕ пирки Н. С. Хрущев акă мĕн каланă: «Çавнашкал литературăн çитменлĕхĕ мĕнре-ха? Эпĕ Дудинцев çинчен çеç мар, пирĕн социализм обществин пурнăçне сăнласа кăтартас ĕç çине хăйсен «тĕмески çинчен» çеç пăхнă ытти писательсем çинчен те калатăп. Вĕсем те ĕнтĕ юрăхсăр явленисене пĕтерес ĕçре партие, хăйсен халăхне пулăшасшăн пулнă пулмалла. Анчах вĕсем пурнăçа пăсса, çитменлĕхсене ытлашши пысăклатса кăтартакан картинă сăрласа хурсан, çав картинăна çийĕнчех пирĕн тусcем мар, тăшмансем асăрхарĕç. Ытла та усал шăршă тапса тухрĕ, йĕркеллĕ çын ăна нашатырь спирчĕсĕр тӳсме пултараймарĕ. Çĕнĕ обществă чăнлăхне çирĕплетсе паракан писательсем, пурнăçа çавăн пек пăсса, суйса сăнласа кăтартнине тĕрĕс мар тесе шутлакан мĕн пур çынсем хытă тарăхрĕç, ăна хирĕç тĕрĕссипех çĕкленчĕç» (67—68).

Н. С. Хрущев литературăпа искусствăн партилĕхĕпе халăхлăхĕ çинчен каланинчен çакă курăнать: вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрма çук, вĕсем, пĕр-пĕринпе тачăран та тачă çыхăнса, ӳтленсе тăраççĕ. Партилĕх принципĕ вăл — литературăн халăхлăхне туллин палăртакан формă, халăх пурнăçĕн, ĕçĕ-хĕлĕн пуян та пысăк опытне, миллионсен коллективлă ăс-хакăлне, идеалĕсене тĕрĕс те уççăн кăтартмалли никĕс.

Чăваш писателĕсем хушшинче хăш-пĕр чухне хăйсене хăйсем ытлашши юратса пăрахнă, хăйсен пур-çук ĕçĕпе висесĕр мухтанакан Нарцис пек этемсем курăнкалаççĕ. Вĕсем хăйсен юлташĕсем каланине те, вулакансен шухăшĕсене те,

тӗрӗс критика сӑмахне те вырӑна хумаҫҫӗ. Нарцисла «писательсемшӗн» коллектив та ним те мар, вӑл, Н. С. Хрущев юлташ сӑмахӗпе калас-тӑк, «хӑйӗн пуҫран шухӑшласа кӑларнӑ произведенийӗпе хӑй партирен ҫӳлерех, халӑхран ҫӳлерех хӑпарса тӑрасшӑн».

Тӗрӗссипе илсен, ҫакӑ вӑл хӑйне хӑй «культ» тума тӑрӑшни, хӑйне ҫынсене пуҫ ҫаптарма ӗмӗтленни пулать. Анчах ун пек йӑласен самани тахҫанах ӗнтӗ иртсе кайнӑ. Совет ҫыннисем куштанла йӑласемпе килӗшме пултараймаҫҫӗ, пачах урӑхла, вӗсем куштанла йӑлասен юлашкисене хирӗҫ ним шеллемесӗр кӗрешеҫҫӗ. Писательсем хушшинчи куштанла этемсем «киремет кульчӗпе» пурӑнасшӑн, хӑйсене киремете пӑхӑннӑ пек пӑхӑнтарасшӑн. Вӗсем ҫакна манаҫҫӗ: чӑваш ӗҫ ҫынниййӗ, коммунизм тӑвас ӗҫе чун-чӗрине парса ӗҫлекенскер, халӗ ӗнтӗ тӗрлӗ киреметсене, арҫурисене, кӑчӑрмасене, хӗрт-суртсене, турӑшсене ӗненмест. «Ҫакӑ ҫутӑ тӗнчере вӑйлӑ ҫук та этемрен» тесе ӗҫлет вӑл.

Коммунистсен партийӗ, уйрӑм ҫынна ытлашши пысӑка хурас йӑлана, Сталин культне критиклесе, унӑн сиенне пӗтӗм партие, пӗтӗм халӑха тӳрӗ кӑмӑллӑ каласа парӗ пулсан, ҫакна вӑл ертсе пырас ӗҫри тӗрӗс мар меслетсене сивлес, яланлӑхах пӑрахӑҫлас, парти пурнӑҫӗн ленинла нормисене, ленинла принципӗсене ҫӗнӗрен ҫирӗплетес, социализмла демократие пур майсемпе те сарса пырас, малалла аталантарса тӗреклетес тесе турӗ.

Ҫакӑн пирки халӗ ытлашши каласса тӑма та кирлӗ мар: ку ыйтӑва халӗ пурте лайӑх ӑнланаҫҫӗ, пирӗн вулакансем хушшинче ӑна ситлӗклӗ ӑнланас илеймен ҫынсем пур пулсан, вӗсене Н. С. Хрущев юлташӑн «Литературӑпа искусствӑна халӑх пурнӑҫӗпе тачӑ ҫыхӑнтармалла» произведенине (уйрӑмах унӑн II-мӗш пайне) тепӗр хут тимлӗн вуласа тухма сӗнетпӗр.

Тӗрӗс ҫул ҫинче тӑракан, ырӑ ӗмӗт-шухӑшпа ӗҫлекен писатель яланах пахха явленисене тӗп вырӑна хурать, лайӑххине кӑтартса панипе пӗрлех, юрӑхсӑр явленисене, аякккалла сирсе пӑрахмалли йӑласене сивлет, вӗсене пӗтермелли майсене кӑтартса парать, совет ҫыннисене вӗсемпе кӗрешме чӗнет.

Н. С. Хрущевӑн литературӑпа искусствӑ ыйтӑвӗсем пирки каланӑ сӑмахӗсем, писательсемпе искусствӑ работникӗсене литературӑпа искусствӑн тӗп ҫул-йӗрне, коммунистла тӗллевне кӑтартса парса, ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума чӗнеҫҫӗ. Партин XX съезчӗ литературӑпа искусствӑ

произведенийӗсен идейӑпа ӑсталӑх шайне ӳстерессм, ҫӳлерех ҫӗклесси ҫинчен калана шухӑш Н. С. Хрущев юлташӑн сӑмахӗсенче кашнинчех палӑрса тӑрать.

Писательсен III съездӗнче А. Твардовский поэт литература ӗҫӗнчи ответлӑхпа пахалӑх пирки тухса каланӑччӗ. А. Сурков юлташӑн отчетлӑ докладӗнчи «цифрӑсене» критиклесе, Твардовский ҫакна асӑрхаттарнӑччӗ:

«...Ӑс-тӑн ӗҫӗнче, уйрӑмах литературӑпа искусствӑ ӗҫӗнче, яланах пахалӑха мала хумалла. Ытларах та, япала хисепӗ кунта ҫав тери ӳсе пыма пултараймасть, анчах пахалӑхӑн вӗҫӗ-хӗрри пулмалла мар.

Чӑнах та, мана, спектакль пӑхакана, «отчетлӑ тапхӑрта ҫырнӑ 700 пьесӑ» мӗн тума кирлӗ? Мана ҫичӗ паха спектакль те ҫителӗклӗ пулнӑ пулӗччӗ, эпӗ вӗсене кашнинех татах та татах пӑхасшӑн пулнӑ пулӑттӑм.

Эпӗ сӑвӑсене темрен те хытӑ юрататӑп пулам, анчах ҫав отчетлӑ тапхӑрта кӑларнӑ ҫӗршер сӑвӑ кӗнеки мӗн тума кирлӗ? Ҫулталӑкра кӑларнӑ 365 роман мана мӗн тума кирлӗ?»

А. Твардовский поэтӑн шухӑшӗ ҫакӑн пек: литературӑ ӗҫӗнче чи малти вырӑнта пахалӑх пулмалла, писательсенчен пуринчен ытла произведени пахалӑхне ыйтмалла. Писатель ӗҫне хакланӑ чухне: «эсӗ кӑҫал миҫе сӑвӑ, поэмӑ, повеҫ, роман, пьесӑ ҫыртӑн» тесе мар, «мӗн тери паха произведени ҫыртӑн» темелле.

Никита Сергеевич ҫак шухӑша ырласа, Твардовский майлӑ пулнӑ: «Литературӑ творчествинче чи кирли вӑл пахалӑх пулмалла, тесе Александр Трифонович Твардовский хӑйӗн съездра каланӑ сӑмахӗнче, мач шутпа, тӗрӗс палӑртрӗ,— тенӗ вӑл.— Чӑнах та, ӑс-тӑн ӗҫӗнче «нумайрах» вырӑнне «лайӑхрах» тума тӑрӑшмалла. Пӗр кӗнеке, анчах лайӑх кӗнеке парӑр. Николай Островский кӗнекесем нумай ҫыман, сапах та унӑн «Хурсӑ мӗнле хӗрнӗ» ятлӑ кӗнеки — чӑн-чӑн кӗнеке. Писатель вилнӗ, анчах унӑн кӗнеки ӗмӗрӗмӗр пурӑнӗ. Урӑх автрсемпе урӑх произведенисене асӑнмастӑп, мӗншӗн тесен вӗсем пирӗн нумай. Кӗнекесем нумай пурӑнччӑр тата ҫынсене саванттарччӑр тесен, вӗсене лайӑх ҫырма тӑрӑшмалла» (82—83).

Хӑлхана лайӑх чикер: кӗнекесене тӑрӑшса ҫырмалла! Паха кӗнекесем ҫырмалла!

Юлашки 5—6 ҫул хушшинче пирӗн писательсемпе журналистсем, хальхи пурнӑҫа, хальхи самана ҫыннисене литературӑра кӑтартса пама материалсем пухас тесе «твор-

чествă командировкисем» илсе, таçта та кайса çӳрерĕç. Вĕсем Чăваш çĕршывĕпе юнашар республикăсемпе облаçсенче çеç мар, нумай инçетре те: Пушкăрт республикинче, Çĕпĕрти, Инçет Хĕвелтухăçĕнчи облаçсенче те пулчĕç, урăх çĕршывсене те кайса курчĕç. Çав вăхăтрах писательсем хушшинче хамăр республикăри тĕрлĕ заводсемпе фабрикăсенче, стройкăсенче, совхозсемпе колхозсенче, шкулсемпе клубсенче пĕрре те пулса курман юлташсем те сахал мар.

Ку вăл акă мĕн калать: 1. «Творчествă командировкисенче» çӳренипех кĕнеке пулмасть иккен. Материал пухрăр пулсан, кĕнеке çырмалла, кĕнекине вара кая юлнипе каю шăтиччен çырмалла;

2. Писателĕн, кирек ăçта пурăнсан та, пурнăçпа çыхăнса тăма, ăна пĕлме вĕренмелле. Вĕресе тăракан пурнăç, писателе материал паракан ĕçсем пур çĕрте те тем чухлех. Сăмахран, Мускав писателĕ Шупашкара «командировкăна» килсен, купи-купипе материал туянса каять. Пирĕн писательсем вара, Шупашкарта е Канашпа Çĕмĕрлере материал тупайман пирки, пĕр-пĕр Калайкассине материал илме каяççĕ. Анчах Калайкасси пек ялта пурăнас пулсан, ăçта каятчĕç-ши вĕсем?..

3. Хăйне писатель текен çыннăн кашни ĕç çине писатель куçĕпе пăхма вĕренес пулать. Писатель куçĕ витĕр куç, хăлхи çивĕч хăлха пулмалла. Л. Н. Толстой хăйĕн произведенийĕсене çырнă чухне пĕр-пĕр геройăн сăнарне туллирех те тĕрĕсрех тăвас тесе, пилĕк пус тăракан билет илсе, ахаль çынсене сăнаса пĕлес тесе, вĕсемпе мунча кĕме кайнă теççĕ. Мунчара вăл хула çыннисемпе, рабочисемпе, хресченсемпе, мещенсемпе тăват-пилĕк сехет хушши çăваннă, калаçнă, ăшшине парса хурăн, юман милĕксемпе çапăннă теççĕ. Толстоя яланах халăх кирлĕ пулнă, вăл халăхсăр пĕр кун та пурăнайман.

Халăх пурнăçĕпе çыхăнса пурăнни, ĕçлени писателе яланах вăй панă, ĕçре хаваслантарнă. Иртнĕ вăхăтри аслă писательсем çакна пурте лайăх туйнă. Акă, сăмахран, ку тĕлĕшпе А. П. Чехов мĕн çырнă: «Эпĕ врач пулсан, манăн чирлĕ çынсене сыватас, больницăра ĕçлес пулать; эпĕ литератор пулсан, манăн Малая Дмитровка урамĕнчи хваттерте мар, халăх хушшинче пурăнас пулать... Мана кăшт та пулин обществăпа политикă пурнăçне хутшăнни, пĕчĕкçĕ ĕçпе те пулин çыхăнса тăни кирлĕ. Çутçанталăка курмасăр, çынсемпе хутшăнмасăр тăвату стена хушшинче ларни — вăл... пурнăç мар».

Совет писательне кун пек çыхăнусем, обществăпа политикă пурнăçĕпе çыхăнса пурăнни, унта активлă ĕçлени пушшех те кирлĕ. Ун пек çыхăнса пурăнасси «командировкăсем» урлă мар, хастар ĕçпе, коммунизм тăвас ĕçе хутшăннипе пулмалла.

Парти ялавĕ, парти çулĕ — акă пирĕн литературăпа искусствăн ялавĕпе çулĕ. Çавăнта, парти ялавĕ айĕнче, парти çулĕ çинче — чăн-чăн паттăрсем, совет литературипе искусствин геройĕсем, çавăнта — вĕсен ĕмĕчĕсемпе шухăшĕсем, коммунизмшăн тăвакан чаплă ĕçсем. Совет халăхĕн, партин ĕмĕт-шухăшне пурнăçа кĕртессишĕн ĕçлесси, паттăрăн кĕрешесси, коммунизм туса çитересси — вăл пирĕн чаплă идеал.

Чăваш халăхĕ хăйĕн писателĕсенчен çĕнĕ те паха произведенисем кĕтет. Вĕсенче вăл хăйĕн пурнăçне, хальхи кунсенчи паттăрсен сăн-сăпатне курасшăн.

Ним иккĕленмесĕрех калама пулать: чăваш писателĕсем çавăн пек произведенисем çырма пултараççĕ, вĕсен опыт та, талантпа пĕлӳ те çителĕклех, тăрăшма та тăрăшаççĕ, марксизм-ленинизм идейисемпе хавасланса ĕçлеççĕ.

*1961*

## ЧĂВАШ ЛИТЕРАТУРИН МАЛТАНХИ УТĂМĔСЕМ *

Чăваш халăхĕн нумай ĕмĕр хушши пусмăр айĕнче таптанса тăнă пултарулăхĕ Октябрьти Аслă социализмлă революци хыççăн, совет влаçĕ туса панă условисенче, çĕнĕ вăйпа çĕкленсе ешерме тытăнчĕ. Чăваш литератури те, Совет Союзĕнчи пур тăванла халăхсен литератури сем пекех, социализмлă революцие пула, аслă вырăс халăхĕ пулăшнипе, туллин те нумай енлĕ аталанса ӳсме май илчĕ.

Патша Российи халăхсен тĕрми пулнă. Патша Российинчи нумай йышлă вырăс мар халăхсем пачах правасăр пулнă, вĕсенчен тĕрлĕ майсемпе вĕçĕмсĕр мăшкăлланă, вĕсене кӳрентернĕ... Патша правительстви наци культури кирек мĕнле палăрнине те путарса лартма тăрăшнă, вырăс мар национальноçсене вăйпах «вырăслатас», пĕр-пĕринпе харкаштарас, вĕсем хушшинчи туслăха аталанма чарас политикă тытса пынă.

Патша правительстви, çав ирсĕр тĕллеве тытса пырса, ĕç çыннисене революцилле кĕрешӳрен пăрса яма шутланă.

Патша чиновникĕсем чăваш литературин çамрăк хунавĕсене пĕр хĕрхенмесĕр хăртса пынă, ăна тĕн çулĕпе яма тăрăшнă. Кĕнеке çырса кăларас ĕç малтанхи вăхăтра пĕтĕмпех чиркӳ çыннисен аллинче пулнă; тепĕр енчен, чăваш кĕнекисене ун чухне, чăваш çырулăхĕ пулман пирки, никам ăнланма пултарайман чĕлхепе кăларнă. Çапах та пирĕн литературă ӳсмех пăхнă пулсан, ку ĕнтĕ пĕтĕмĕшпех аслă вырăс литератури ăна хавхалантарса, вăй парса пынинчен килнĕ. Вырăс литературин чи лайăх традицийĕсем: пусмăр

* Ку статьяна М. Я. Сироткинпа пĕрле çырнă.

йĕркине, пусмăрçăсене курайманни, халăха ирĕке, çутта тухма сунни, халăхăн пултарулăх вăйĕсем аталанассине çирĕп шанни чăваш литературине те тӳрремĕнех хастарлăх кĕртсе пынă, ăна аталанма пулăшса тăнă. Аслă вырăс писателĕсем тăван халăха, тăван çĕршыва чун-чĕререн юратни, халăха ирĕке кăларас ĕмĕте нихçан та пăрахманни революцичченхи чăваш писателĕсен малта пыракан пайне хавхалантарнă, ăна чăваш ĕç çыннисен ирĕке тухассишĕн пулса пыракан кĕрешĕвне хутшăнтарнă.

Чăваш писателĕсем литературă ăсталăхне алла илме, тăван халăха чăннипех те кирлĕ те усăллă произведенисем çырма Пушкинран, Лермонтовран, Некрасовран, Лев Толстойран, Максим Горькирен вĕренсе пынă. Вырăс литературин пархатарлă витĕмне эпир чăваш хушшинчен тухнă чи пирвайхи литератор-этнограф С. М. Михайлов çырса хăварнисенче те, чăвашсен малтанхи просветителĕпе писателĕн И. Я. Яковлевăн ĕçĕнче те, XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче пурăннă паллă поэтпа педагогăн М. Ф. Федоровăн произведенийĕсенче те, пĕрремĕш революци тапхăрĕнчи революциллĕ чăваш поэзинче те, чăваш литературин никĕсне хываканĕсенчен пĕри шутланакан поэт-демократ К. В. Иванов пултарулăхĕнче те куратпăр.

«Юрататăп, хисеплетĕп литературăна (вырăс литературине.— **Авт.**), нихçан та ăна ытахаль ĕç вырăнне хуман эпĕ, вăл — чуна хавхалантаракан меслет...» — тенĕ С. М. Михайлов хăйĕн дневникĕнче. Пушкин произведенийĕсенчи витĕмлĕ сăнлăхсем М. Ф. Федоровăн талантне аталанма пулăшнă, чăваш литературин чи пирвайхи оригиналлă произведенине çырма май панă. И. Я. Яковлев, вырăс культурин гуманизмĕпе, аслă вырăс литературин идейисемпе, халăхсен тăванлăхне, вĕсен туслăхне çирĕплетме кирли çинчен калакан идейăсемпе хавхаланса, çапла çырнă: «...Вырăс халăхĕн хурлăхĕпе савăнăçĕ — чăвашсен хурлăхĕпе савăнăçĕ, унăн пуласлăхĕ — вĕсен пуласлăхĕ, унăн телейĕ — вĕсен телейĕ...» тенĕ. Писатель-сатирик М. Ф. Акимов хăйĕн произведенийĕсенче хĕн-хурлă пурнăç йĕркисене хаяр питленĕ. Унăн пултарулăхĕ М. Е. Салтыков-Щедринпа Н. А. Некрасовăн сатирипе пĕр кĕвĕллĕ пулнине эпир куç кĕретех туятпăр. Сăмахран, «Тĕлĕнмелле» ятлă памфлетĕнче вăл харам пырсен ушкăнĕ çинчен шăпах Некрасов меслечĕсемпе çырать:

«Сӳс-кантăрне хам акап, ăна хутап, кăларап, тыллатылла тĕветĕп, чун тухиччен тĕртетĕп... Сурăх çăмне хам

касап, таптаратăп, аварлатăп, тĕрлĕ тăла тăватăп. Пăхăсăн,— тумланнă улпутсем, пупсем, хуçасем! Куç-пуç чалхăрать!.. Пĕр эпĕ анчах чавса çĕтĕк кĕпепе, çĕтĕк-çатăк сăхманпа, вĕлтĕр-вĕлтĕр çӳретĕп. Тĕлĕнмелле!»

М. Горькин революцилле-романтикăллă произведенийĕсенчи сăнлăхсем пĕрремĕш революци тапхăрĕнче чăваш литературине пырса кĕнĕ. Çакна эпир К. В. Ивановăн, Н. И. Полоруссов-Шелепин произведенийĕсенче куратпăр.

М. Горький геройĕсенчен пĕри «Этем тени — чаплăн янăрать!» — тенĕ майлах К. В. Иванов та:

Çакă çутă тĕнчере
Вăйли çук та этемрен:
Шывсем çинче, çĕр çинче
Хуçа пулса вăл тăрать...—

тесе хăватлăн каланă.

Н. И. Полоруссов-Шелепи хăйĕн «Çĕлен» ятлă сăввинче чăнлăхпа тĕрĕслĕх çĕнтерсе çиеле тухас шанчăка кăтартса парать.

...Çутă хĕвел çутти пек,
Вĕçсе çӳрет пĕр Кайăк...
Çĕлен çине пăхать Кайăк
Хăйĕн çĕр пин куçĕпе,
Пĕтĕ халь пĕрре çĕлен
Ĕмĕрлĕхе пуçĕпе.
Çĕлен чĕтресе выртать,
Çав кайăкран хăраса;
Кайăк çиçĕм пек çӳрет,
Чăнлăх çутти шыраса...

Революцичченхи сахал йышлă чăваш писателĕсене хавхалантарса пынă тепĕр чĕрĕ вăй-хал вăл — ĕç халăхĕн сăмахлă пултарулăхĕ (фольклор) пулнă. Революцичченхи чăваш литературинчи чи паха произведенисем пурте тенĕ пекех, çав шутра чаплă «Нарспи» поэмă та, халăх поэзийĕн пуянлăхĕпе анлăн усă курса çырнă произведенисем пулса тăраççĕ. Халăх массисен сăмахлăхĕн сывă оптимизмĕ чăваш писателĕсемпе поэчĕсен пултарулăхне сĕткен парса тăнă.

Çак, эпир асăннă икĕ сăлтава пула: пĕр енчен, аслă вырăс халăхĕн прогрессивлă литератури, тепĕр енчен, чăваш халăхĕн сăмахлă пултарулăхĕ çитĕнтерсе пынине пула, чăваш литератури халăха усă парас çул-йĕрпе аталанса пынă та ĕнтĕ.

Революцичченхи чăваш литератури халăх пурнăçĕпе

çыхăнса тăнине эпир уйрăмах пĕрремĕш революци тапхăрĕнче лайăх куратпăр. Шăпах çав тапхăрта ĕнтĕ вăл, революциллĕ массăсем хавхалантарнине пула, çĕнĕ шухăшсемпе, çĕнĕ формăсемпе пуянланать, массăллă литературă çулĕ çине тухма тытăнать. Ку ĕнтĕ унăн шалти вăйĕсем пысăк пулнине пит аван кăтартать. Анчах çав вăйсем революциччен кирлĕ чухлĕ аталанайман, мĕншĕн тесен ун чухне «халăхăн чĕлхе-çăварне хуплану пулнă, унăн чун çунаттисене çыхнă пулнă» (М. Горький).

Паллах, революцичченхи чăваш литературине калăпăшĕпе халăха усăллă пулнă тесе калама эпир ниепле те пултараймастпăр: ăна тĕпченĕ, тишкĕрнĕ, вĕреннĕ чухне пирĕн яланах В. И. Ленин ĕлĕкхи культурăн пуянлăхĕсемпе критикле усă курма кирли çинчен каланине асра тытмалла.

* * *

Чăваш çырулăхĕ XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çур пайĕнче пуçланса кайнă. И. Я. Яковлев Хусанти университетра вĕреннĕ чухне, В. А. Белилин студент пулăшнипе, 1871—1872 çулсенче чăваш чĕлхин фонетикине тĕпчесе вĕренме, чăваш алфавитне тума тытăннă. Вăл вырăс чĕлхин алфавитĕнчи 17 саспалли çумне çĕнĕрен сакăр саспалли хушнă. Çапла вара 25 саспаллиллĕ чăваш алфавичĕ пулса тăнă. Чăваш алфавитне тусан, И. Я. Яковлев чăвашла букварь çырнă. Ку вăл чăваш çырулăхĕн пуçламăшĕ пулнă.

Çав вăхăтра Российăра, вăл кая юлнă çĕршыв пулнине пăхмасăрах, капитализм аталанма пуçланă. Фабрикăсемпе заводсен шучĕ çултан çул ӳснĕ, рабочисен йышĕ нумайланнă. Тĕрлĕ облаçсемпе хуласем чугун çулсемпе çыхăннă. Çирĕм çул хушшинче, 1861 çултан тытăнса 1881 çула çитиччен, 19 пин километр ытла çĕнĕ чугун çул хывнă.

Капитализм яла та кĕрсе пынă. Ял ытларах та ытларах класлă сийсем çине пайланнă. Кулаксем чухăн хресченсене темиçе тĕрлĕ майпа эксплуатациленĕ. Çĕр улпучĕсен, кулаксен, купецсен пусмăрĕнчен хăтăлас шутпа хресченсем, хăйсен саплăк пек анисене пăрахса, хуласене ĕç шырама кайнă.

Рабочисемпе хресченсем ĕнси çинче исправниксен, урядниксен, жандармсен, полицейскисен, стражниксен пысăк ушкăнĕ тăнă. Вĕсем ĕç çыннисене хирĕç пынă, патшана, капиталистсене, çĕр улпучĕсене сыхласа тăнă.

Чăваш çĕршывĕ те капитализм аталанăвĕнчен аякра тăман. Капитализм йĕрки-йăлисем чăваш хушшине те çитсе кĕнĕ. XIX ĕмĕртех чăваш ялĕнче кулаксем, куштансем курăнма пуçлаççĕ. Чухăнсен йышĕ ӳссех пырать. Сăмахран, чăваш хушшинче лашасăр хресченсем 1858 çулта 4,9 проц. пулнă пулсан, 1884—1891 çулсенче вĕсем 10,9 проц. çитнĕ. Чухăна тухнă хресченсем, эксплуатаци танатинчен тухас тесе, «çĕнĕ çĕре» е «настăрна *» кайнă. Анчах унта кайма укçа-тенкĕ кирлĕ пулнă: кайнисем те 2—3 çултан çаппа-çарамас таврăннă.

Патша правительстви, кая юлнă халăхсене тĕнлĕ воспитани парас тесе, XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринче (1870 çултан пуçласа) «вак халăхсене», çав шутра чăвашсене те, пуçламăш шкулăн кĕçĕн класĕсенче тăван чĕлхепе вĕренме ирĕк панă. Çавна май хăш-пĕр кĕнекесем те пичетленсе тухкаланă. Анчах вĕсем пуринчен ытла тĕн кĕнекисем пулнă.

Чăваш çырулăхĕ пуçланиччен чăвашла çыракансем, чăваш фольклор произведенийĕсене çырса илекенсем вырăс алфавичĕпе усă курса çырнă. Ку шута, сăмахран, XVIII ĕмĕрте чăвашла çырнă сăвăсем, XIX ĕмĕрĕн пĕрремĕш çур пайĕнче Чăваш Хвети тата ыттисем хывнă юрă-сăвăсем кĕреççĕ.

Çав тапхăрти сăвă-юрăсем, тĕрĕссипе каласан, сăвăсем майлах та мар, вĕсенчен хăш-пĕрне ăнланма та йывăр. Çапах та чăваш литератури историйĕ çинчен сăмах хускатнă чухне çав малтанхи произведенисене асăнмасăр иртме çук.

Ку тĕлĕшпе «Хусанти крешĕн шкулĕнче вĕренекен чăваш ачисем ячĕпе II-мĕш Кĕтерин патшана халалласа çырнă сăвва» (1767) тĕслĕх вырăнне илме пулать. Çак шутах тата «Хусанта наместничество уçăлнă пирки ирттернĕ чапла пухура вуласа панă чăвашла сăвă» (1781), «Крешĕн шкулĕпе семинари çурчĕсене юсама укçа тупса панишĕн Хусан архирейне Амвросие халалласа çырнă чăвашла сăвă» (1795) кĕрет.

Тӳрех калас пулать, çав пĕчĕк произведенисем чăваш литератури историйĕн пуçламăшĕ пулмаççĕ-ха. Вĕсенче чăваш халăхĕн пурнăçĕ те курăнмасть-ха. Вăл сăвăсене çыракансем халăхран инçе тăнă, вĕсем чиркӳ таврашĕнчи

---

* «На сторону» тенине çакăн пек каланă.

çынсем пулнă, халăх шухăш-кăмăлне мар, хăйсен уйрăм шухăшĕсене каласа панă.

Халăх историйĕ çакна кăтартса парать: чăваш ачисен ячĕпе II-мĕш Кĕтерин патшана халалланă сăвва çырнă хыççăн кăштах вăхăт иртсен, 1773—1775 çулсенче, чăвашсем Емельян Пугачев пăлхавне хутшăнаççĕ. Чăваш халăхĕ пĕрре те Кĕтерин патшана мухтакан сăвă авторĕ каланă пек пулман: чăваш ĕç хресченĕсем ун чухне калама çук пысăк асапра тертленсе пурăннă, вĕсем патшана хăйсен «чунне пама» мар, чăваш çĕршывне Пугачев çыннисем килсен, вĕсемпе пĕрле патшана, улпутсене, пупсене хирĕç хĕç-пăшалпа тухнă, кĕрешĕве çĕкленнĕ.

Чăваш Хвети тата С. Янтуш хывнă сăвăсенче халăх пурнăçĕ ытларах курăнать. «Чăваш эпĕр полтăмăр...» сăвă (1852) тăрăх чăваш халăхĕн XIX ĕмĕрĕн пĕрремĕш çур пайĕнчи пурнăçĕ мĕнле пулнине каласа пама пулать.

Автор чăвашсен хуйхи-суйхи çинчен çырать:

Мĕн тăвас хойхă чохне!
Мĕн парас тияксене?

Малалла вара çак «хойхă» мĕнлине каласа парать:

Пирĕн полать выльăхсам.
Ут, сысна, чăхă, хортсам,
Сорăх, хор, лайăх мăкăр,
Кăвакал, сĕт, çăмарта;
Çи, чăваш, хора çăкăр,
Сотса яр выльăххуна,
Номай полĕ сан окçа—
Тьяксене хойхи чохне.
Çи, чăваш, хора çăкăр.
Мĕн тăвас?—Пирĕн телей!

Çакăн пек пулнă патша вăхăтĕнче чăваш ĕç çыннин «телейĕ»! Ана тĕрлĕ харам пырсем çаратса пурăннă,— тем чул ĕçлесен те вăл «хора çăкăрпа» çеç пурăнма пултарнă.

Ĕç çыннисене улпутсем, сутăçсем, капиталистсем, кулаксем, кантур çыннисем, пуп таврашсем вĕçĕмсĕр хĕсĕрленĕ.

Илер-ха, тĕслĕхшĕн, Спиридон Михайлович Михайловăн (Янтушăн) (1821—1861) хăш-пĕр калавĕсене.

С. М. Михайлов хăйĕн произведенийĕсене вырăсла çырнă. Вĕсенче чăваш халăх пурнăçĕн хăш-пĕр енĕсем сăнланса юлнă. Сăмахран, «Хваттер хуçипе калаçни» ятлă калавра вăл чăваш ĕç çыннисене вулăс пуçлăхĕпе тиексем

мĕн тери хытă хĕсĕрленине, улталанине лайăх кăтартса панă. «Клавапа тиексем,— тет калавра сăнласа кăтартнă карчăк,— кунти хресченсене акăш-макăш хăратса пĕтерчĕç. Мĕн чухлĕ укçа пуçтармарĕç пулĕ вĕсем кунти халăхран, темиçе пин те пулĕ».

Вĕсем, кăçал патша çарне набор пулать тесе суйса, чăваш хресченĕсен ывăлĕсене салтака илесрен хăвараньçи пулса, хăшĕнчен 10 тенкĕ, хăшĕнчен 20, хăшĕнчен 30, хăшĕнчен 50, теприсенчен 100 тенке çитиех улталаса илнĕ.

С. М. Михайлов «Телейсĕр ывăл» калавĕнче те рекрут старости ĕç çыннисене хăратса, вĕсен пур-çук укçине сăптăрса илнине кăтартса парать. Ку калавăн тĕп шухăшĕ çакăн пек: «тӳрĕ чунлă çын пуйма» пултараймасть.

С. М. Михайлов вăхăтĕнче «тӳрĕ мар чунлă» çынсем ĕç çыннисене пайтах тарăхтарнă. Вырăс литературинче ун пек çынсен сăнарне Г. И. Успенский лайăх кăтартса панă.

Иртнĕ ĕмĕрĕн çитмĕлмĕш-сакăр вуннăмĕш çулĕсенче, чăваш чĕлхин çырулăхĕ сарăлса пынă май, интеллигенци хушшинчен малтанхи чăваш писателĕсемпе поэчĕсем туха пуçланă. Вĕсем, хресченсемпе тачă çыхăнса тăнăскерсем, хăйсен произведенийĕсенче ытларах чăваш ялĕн пурнăçĕпе йăлисене кăтартса параççĕ.

Çак писательсен шутне чи малтан чăвашсен паллă просветителĕ-педагогĕ Иван Яковлевич Яковлев (1848—1930) кĕрет. Калавсем çырас ĕçе вăл чăваш шкулĕсем валли букварь тата тĕрлĕ кĕнекесем кăларнă май тытăннă. Букварь валли калавсем çырас ĕçе вăл ыттисене те явăçтарнă.

И. Я. Яковлев хăйĕн букварĕ тавра тăван литературăна юратса, уншăн тăрăшса ĕçлекенсене пĕтĕçтерсе тăнă, чăвашсен малтанхи писателĕсемпе поэчĕсене хăйсен пултарулăхне аталантарма пулăшнă, литературă ĕçне вĕрентсе пынă.

Ача-пăча валли калавсем çырнă чухне И. Я. Яковлев халăх пултарулăхĕн тĕслĕхĕсемпе анлăн усă курнă. Вĕсене вăл е хăй халлĕнех илнĕ. е калас тенĕ шухăшне витĕмлĕрех палăртас тесе, хăйне май йĕркелесе ăсталанă. Унăн произведенийĕсенчен нумайăшĕ Л. Н. Толстой тата К. Д. Ушинский калавĕсемпе юмахĕсем пек.

И. Я. Яковлев çырнă калавсенчен «Автан», «Чакак», «Арман» тата ыттисене палăртса хăвармалла. Вĕсенче ачасен пурнăçĕ, ĕçĕ-хĕлĕ, вăййи-кулли, хресчен пурнăçĕнчи йăласем, таврари çутçанталăк т. ыт. те сăнланнă. Калавсенчи сăнарсем — ачасене çывăх сăнарсем: ачасем, çитĕннĕ

çынсем (ашшĕ-амăшĕ), выльăх-чĕрлĕх, кайăк-кĕшĕк, ытти чĕрчун. Калавсене çăмăл та ансат чĕлхепе çырнă.

И. Я. Яковлевăн пĕтĕм ĕçĕ-хĕлĕ чăваш халăхне çутта кăларас, чăваш ачисене хут вĕрентес, халăх хушшине усăллă пĕлÿсем сарас енĕпе пулса пынă. Вăл мĕн ваталиччен хăй пуçарса янă Чĕмпĕрти чăваш шкулĕн инспекторĕ пулса ĕçленĕ. çĕнĕ шкулсем нумай тăрăшнă, чăвашла кĕнекесем кăларнă. Çавăнпа ĕнтĕ И. Я. Яковлева чăваш халăхĕ хисеплет, ысă сăмахпа асăнать.

И. Я. Яковлев литературă ĕçне тĕрлĕ вăхăтра хутшăнтарнă сынсенчен самаисене палăртма пулать: И. И. Иванов, И. Н. Юркин, Г. Т. Тимофеев, Г. А. Кореньков тата ыт. те.

Çав вăхăтри писательсенчен пĕри — Игнатий Иванович Иванов (1848—1885) — пĕтĕмпе 14 калав тата очерк çырнă.

И. Ивановăн калавĕсем фольклортан илнĕ пĕр-пĕр ваттисен сăмахне е каларăшне анлăлатса, ăса вĕрентсе çырнă калавсем е новеллăсем пулса тăраççĕ. Çакна калавсен ятĕнченех курма пулать. «Çынна епле тăвăн, ху та çавна курăн», «Çынна мулшăн туман, мула çыншăн тунă», «Çынна усал тăвакан хăй те усал курать» тата ыт. те.

Ваттисен сăмахне е каларăшне И. Иванов ял пурнăçĕнчен илнĕ пĕр-пĕр тĕслĕхпе ăнлантарса парать. Çавăнпа та унăн калавĕсем пурте пурнăçра чăн-чăнах пулса иртнĕ ĕçсем синчен калана пек пулса тухнă.

Хăйĕн калавĕсенче И. Иванов ял пурнăçĕпе йăлинчи киревсĕрлĕхсене — çăткăнлăха, хыт кукаррăха, çынна çын пусмăрланине тата ыттине те питлет. Унăн калавĕсен тĕп тĕллевĕ ял çамрăкĕсене обществăллă пурнăçра тата килте хăйсене мĕнле тытма кирли çинчен ăс парасси пулнă. Çак ыйтусене татса парас тĕлĕшпе вăл (хăй вăхăтĕнчи обществăн моралĕнчен пур чухне те тухайман пулин те) пурнăç тĕрĕслĕхĕ мĕнле майлă пулма кирли çинчен пит вырăнлă шухăшсем калаçа парать.

«Çынна мулшăн туман, мула çыншăн тунă» ятлă калавра И. Иванов, хыт кукарлăха питлесе, хăш-пĕр хресченсем кулака мĕнле майпа тухса кайни çинчен каласа парать. Калаври хыт кукар Йĕçтÿк, пуяна тухас тесе, тем те пĕр хăтланать. Çăкăр сахалтарах пĕттĕр тесе, арăмне тачка çăкăр пĕçерттерет. Пĕр турам аша икĕ яшка туса çиет: пĕр яшкана ашне, тепĕр яшкана шăммине яртарать. Виçĕ ĕне усраса та пĕр кашăк çу çимест, пĕтĕмпех пасара кайса сутать. Ун патне тарçа кĕнĕ çынсем виçĕ кунтан

ытла чӑтаймаççӗ, ӗçлесе халтан каяççӗ. Çапла вара, Йӗçтӳк пуйса каять. Анчах хӑй те вӑйран тайӑлса вилет.

«Сынна сиен тӑвӑн, ху та çавнах курӑн» ятлӑ калавра сутӑçӑ Васили, чухӑнсенчен мӑшкӑлласа, вӗсене: «Наянсем, кахалсем, ӗçлеме ӳркентӗр, çавӑнпа чухӑн пурӑнатӑр», тесе хӑртать. Ун патне кивçене пынӑ чухӑнсене вӑл парӑмшӑн ӗçлеттерсе суптарать. Кайран Васили хӑй те çука ерет. Чухӑнсем, ӑна ӗлӗкхине аса илтерсе: «Ӗлӗк хӑй çынсене епле тунӑ, хӑйне те çавӑн пекех тӑваççӗ», теççӗ.

Тепӗр калавне И. Иванов «Сынна усал тӑвакан хӑй те усал курать» тесе ят панӑ. Ку калавра И. Иванов, ялти ӗç çыннисен хӑйсен тӑшманӗсене пӗтерес туртӑмне ырласа, вӗсен кӗрешӗвне кӑмӑллать.

Пӗр чӑваш ялне приказ пуçлӑхӗ (старшина) пырса кӗрет те ним айӑпсӑрах Тимуш ятлӑ хресчене хӗнеттерет. Тимуш старшина мӑшкӑлне ахаль ирттермест. Вӑл унӑн ирсӗр ӗçӗсене, çынсенчен пусмӑрласа укçа илнине, вӗсене ним айӑпсӑр хӗненине халӑх умӗнче тӑрӑ шыв çине кӑларса, старшинана хӑйне айӑплӑ туса хурать. Айӑплӑ старшина Тимушран каçару ыйтать. Анчах Тимуш ӑна çапла тавӑрса калать: «Эпӗ сана каçарсан, эсӗ тата темӗн чухлӗ çынна йӗртӗн. Эсӗ темиçе çынна йӗртиччен, сана хӑна йӗртес», тет те, нимӗнле старшинана каçару та памасть.

Çак тӗслӗхсем И. Иванов пултарулӑхӗнче паха шухӑш, халӑх пусмӑрçисене хирӗç кӗрешме кирли çинчен калакан шухӑш пулнине кӑтартса параççӗ.

Чӑвашсен малтанхи писателӗсен произведенийӗсем ытла пысӑк ыйтусене мар, ун чухнехи пурнӑсӑн уйрӑм енӗсене çеç çутатса параççӗ. И. Иванов хӑйӗн калавӗсенче социаллӑ ыйтусене кӑштах хускатать. Анчах вӑл ялӑч социаллӑ пурнӑçӗ çине хресчен писателӗн куçӗпе пӑхать: çынсенчен хӑшӗсем мӗнле пуйнине, тепӗрисем мӗн пирки чухӑна тухса кайнине, классем мӗншӗн пӗр-пӗрипе килӗштерейменнине, вӗсем хушшинчи хирӗçӳсене И. Иванов ӑнланса илеймен. Унӑн мировоззренийӗ ансӑр пулни, вӑл хӑш-пӗр ыйтусене айвантарах ӑнланни (сӑмахран, выçӑллӑ-тутӑллӑ пурӑнса пуйни çинчен çырса пани, чухӑн Микулая — Йӗçтӳк кӗрӳшне — айван çын пек кӑтартни, Глинка улпута ырӑ кӑмӑллӑ туса кӑтартни тата ыт. те) пӗтӗмпех ун чухнехи хресченсен пурнӑç условийӗсенчен, вӗсен ӑнланӑвӗсенчен килнӗ.

Çапла вара, чӑвашсен малтанхи писателӗсен произведе-

нийĕсем пире акă мĕн кăтартса параççĕ: вĕсен произведенийĕсем пĕр пек мар, произведенисенчи шухăшĕсем те çавăн пекех,— вăл вăхăтри обществăра тĕрлĕ классем, тĕрлĕ сийсем пулнă пулсан, ун чухнехи писательсем (пĕлсе е пĕлмесĕрех) çав классемпе сийсенчен хăшне те пулин кăмăлланă.

Çак шухăш тĕрĕс пулнине чăваш литературин ытти произведенийĕсене пăхса тухсан та курма пулать. Акă, сăмахран, М. Федоров (1848—1904) çырнă «Арçури». Кам енче-ха поэтăн кăмăлĕ? Тӳрех калас пулать: унăн шухăш-кăмăлĕ ĕç çыннисем енче, халăх енче. «Арçури»—хăйĕн шухăшĕпе те, формипе те халăх произведенийĕ, унăн авторĕ — халăх поэчĕ. Поэта ĕç хресчен пурнăçĕ, чухăн хресчен çитмен пурнăç писки çын кусĕнчен пăхни, çиме çăкăр çитмесен, пăтавкка йăтса кайни, хушпу саклат хуни, ăна тара пани, кайран вара сука юлса, хутаç çакса ыйткаласа çӳрени хумхантарать. Çаксем — ун чухнехи пурнăç паллисем. Поэт-реалист вĕсене курмасăр иртме пултарайман.

Революцичченхи ытти писательсен произведенийĕсене (сăмахран, Н. М. Охотниковăн «Мана пăхса ӳстерни», И. Н. Юркинăн «Этемĕн пырĕ тутă та куçĕ выçă», «Мул», Г. Т. Тимофеевăн «Тăхăр ял» произведенийĕсене) илес пулсан, сакна калас пулать: вĕсенче пуринчен ытларах чăваш халăхĕн кивĕ йăлисене кăтартса панă. Çав йăласене тĕпчесе вĕренес ĕçре вĕсем усăллă пулма пултараççĕ.

Иван Николаевич Юркин (1863—1943) сăвăсем те, калавсем те нумай çырнă. Унăн «Этемĕн пырĕ тутă та куçĕ выçă» (1889)—чи малтанхи повеçĕ (тĕрĕссипе каласан, ку вăл чăваш литературинче те малтанхи повеç пулса тăрать). Повеçре автор «ашшĕсемпе» «ачисем» тенĕ ыйтăва хускатнă. «Ашшĕсем»— пуян хресчен Петр Петрович, унăн арăмĕ тата ыт. те, «ачисем»—Петр Петрович хĕрĕ Кĕтерин, чухăн хресчен ывăлĕ Кусма тата ыттисем те.

Повеçри пĕтĕм ĕç XIX-мĕш ĕмĕрĕн иккĕмĕш çурринчи чăваш ялĕнче пулса иртет. Петр Петрович, кулак, хăйĕн тусĕсемпе ялти пуянсем пулăшнипе вулăс старшини пулса тăрать. Çакă унăн ăс-пуçне çаврăнтарса ярать. Вăл мăн кăмăлланса каять, чĕоре кĕрекен çын пулать. Çакă Петр Петрович хăйне хăй мĕнле тыткаланинче, ялти çынсем çине вăл мĕнле пăхнинче курăнать.

Унăн хĕрĕ Кĕтерин Куçмана юратать. Анчах Петр Петровича ку килĕшмест. Мĕншĕн тесен Куçма — чухăн каччă, Кĕтерин — пуян çын хĕрĕ; апла пулсан, вĕсем пĕр-пĕрне

ăçтан юратчăр-ха,— çакăн пек шухăшлать кулак. Петр Петрович хăйĕн хĕрне пуян çын ывăлне Микитене качча парасшăн. Анчах ăна Кĕтерин юратмасть. Старшина вара тарăхнипе Куçма çинчен тĕрлĕ усал сăмах сартарать, вăрă тесе, ялти кулаксене Куçмана хĕнеттерет, юлашкинчен тĕрмене хуптарать.

Анчах малалла мĕн пулать-ха? Автор «çăмăл» çул çине тăрать те хăйĕн произведенине ытла та ĕненмелле мар меслетпе вĕçлет.

И. Н. Юркин каланă тăрăх, Петр Петровича турă хăех айăплать. Старшина вулăс кантурне каять те унта мачча ишĕлсе аннипе вилет. Чунĕ тухас умĕн Петр Петрович çакăн пек каласа хăварать: «Хĕрĕм, чунăм, пирĕштийĕм, эпĕ санăн пулас упăшкуна, леш, чипер Аннийĕн ывăлне, Куçмана, айăпсăр çынна айăп туса, вăрă ячĕпе тĕрмене хуптарса хурсаттăм, çавăншăн акă мана турă çапла турĕ ĕнтĕ... Çапах та, Куçмана, тĕрмере выртнă пулсан та, ан тирке, ăна качча кай, сирĕн иксĕрĕн çамрăк ĕмĕрĕрсене пĕр-пĕринпе пĕрле пурăнса ирттерме çырнă иккен...»,— тет.

Паллах, ку пĕрре те «турă çырнинчен» килмен. «Турă çырни», «турă пӳрни» тени — тĕшмĕшле шухăш. Çакна халĕ пурте пĕлеççĕ. Çĕнĕ саманари çĕнĕ çынсем, совет влаçĕн условийĕсенче марксистла-ленинла воспитани илнĕскерсем, И. Н. Юркин повеçĕн вĕçĕнче каланă шухăшсем халĕ кăна мар, XIX-мĕш ĕмĕр вĕçĕнче те тĕшмĕшле шухăшсем пулнине лайăх чухлаççĕ.

«Этемĕн пырĕ тутă та куçĕ выçă» повеçĕн тепĕр çитменлĕхĕ — автор сăнлăхсем тума пĕлменни. Геройсен портречĕсенче чăн-чăн çынсен сăнĕсем курăнмаççĕ. Автор вĕсене тулаш енчен çеç кăтартса панă, вĕсен психологине, шухăш-кăмăлне тарăн кăтартайман. Повеçри геройсем чĕлхе тĕлĕшпе те пĕр-пĕринчен уйрăм тăмаççĕ: пурте тенĕ пекех пĕр чĕлхепе калаçаççĕ. Кун пек çитменлĕхсем И. Н. Юркинăн «Мул» ятлă повеçĕнче те сисĕнеççĕ.

Григорий Тимофеевич Тимофеев (1877—1938) чăваш халăх юмахĕсемпе халапĕсене, юрри-сăввисене, ваттисен сăмахĕсемпе каларăшĕсене нумай пухнă. Унăн тĕп ĕçĕ — «Тăхăр ял». Ку произведенире вăл Сĕве тăрăхĕнчи чăвашсен ĕлĕкхи пурнăçĕпе йăлисем çинчен çырнă. Анчах хăйĕн произведенине Г. Т. Тимофеев ниçта та пичетлесе кăларайман. Ăна вăл Чĕмпĕрти чăваш шкулне халалласа панă.

Ку тĕслĕх акă мĕн çинчен калать: патша саманинче чăваш писателĕсен пултарулăхĕ ирĕклĕн аталанайман, хăй-

сен тăван чĕлхипе çырнă произведенийĕсене ниçта та пичетлесе кăларайман (хаçат-журналсем пулман, чăвашла кĕнеке кăларакан издательствă пирки шухăшлама та май килмен). Çакна пула ĕнтĕ М. Ф. Федоровăн «Арçурийĕ» те, 1879 çулта çырнăскер, 1908 çулччен пичетленеймен, алă вĕççĕн çӳренĕ.

* * *

1905—1907 çулсенче Российăра пĕрремĕш революци пулса иртет. Вăл Российăри мĕн пур халăхсен историйĕнче калама çук пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çав революци пирĕн çĕршыври халăхсен пурнăçĕнче пысăк улшăнусем тунă, тĕрлĕ классен ĕмĕт-шухăшĕсем мĕнлине кăтартса панă, рабочисемпе хресченсене питех те пуян политикăллă воспитани панă.

1905—1907 çулсенчи революцире кашни клас, кашни парти патша правительстви çине хăй мĕнле пăхнине палăртма тăрăшнă. Çакă вăл политикăллă литературăра çеç мар, илемлĕ литературăра та тĕрлĕ майсемпе сисĕннĕ.

Халăх революцийĕ, тĕрлĕ классене хăйĕн кивĕ позицийĕсенчен хускатса ярса, чăваш халăх хушшине те политикăллă шухăшсем вĕрсе кĕртнĕ. Чăвашсен çав тапхăрти писателĕсенчен нумайăшĕсем 1905—1907 çулти революцире халăх кăмăлне хумхантарнă политикăллă ыйтусене мĕнле те пулин пырса перĕнеççĕ. Хăш-пĕр поэтсемпе писательсем çавăн пек ыйтусене уççăнах лартаççĕ. Вĕсенчен паллăраххисем — К. В. Иванов, Тайăр Тимкки, М. Ф. Акимов, Н. И. Полоруссов (Шелепи) тата ыттисем те.

Чăваш халăхĕн XX ĕмĕр пуçламăшĕнчи, уйрăмах 1905—1907 çулсенчи революци тапхăрĕнчи, ăс-тăнĕ, ĕмĕт-шухăшĕ «Хыпар» хаçатра палăрнă. Çакă вăл, чăвашсен пирвайхи хаçачĕ «Хыпар», пирĕн халăхшăн революци йыхравçи пулнă. Вăл халăх ăс-тăнне, шухăшĕсене нумай енĕпе аталанма пулăшнă, чăваш литературине, публицистикине, литература чĕлхине вăйланса пыма пулăшнă.

1905—1907 çулсенчи революци тапхăрĕнче К. В. Иванов (1890—1915) пултарулăхĕ ӳссе аталаннă. Аслă поэта халăх революцийĕ хавхалантарнă. унăн куç-пуçне уçнă, кăмăлĕпе ăс-тăнне вăй-хал панă. Çак революцие пула тата вырăссен прогрессивлă литературинчен вĕренсе илнĕ шухăшсене пула К. В. Иванов обществăллă пурнăçра мĕнле улшăнусем пулса иртнине лайăх туйнă, курма пултарнă.

К. В. Ивановăн чи вăйлă, чи тарăн шухăшлă произве-

денийĕ —«Нарспи». Унта автор пусмăра хирĕç, этем ирĕклĕхĕшĕн тăрать. Анчах ку произведени тăрăх авторăн политикăллă шухăшĕсем мĕнле пулнине татăклăнах каласа пама çук-ха.

«Вăранăр, тапранăр!» ятлă сăввинче вара К. В. Иванов çав пусмăр çинчен уçăмлăн калать. Вăл — улпутсен пусмăрĕ, улпутсене пулăшакан патша пусмăрĕ.

Çак политикăллă шухăш улпутсемпе хресченсем хушшинчи кăрслă хутшăнусене пырса перĕнет.

Халăх поэчĕ акă мĕн калать:

> Хресченсем çĕрсĕр пит аптраççĕ,
> Улпутсемуншăн пит хавас,
> Пĕр çĕрсĕр хресченсене тытаççĕ
> Йӳн хака хăй ĕçне ĕçлеме.

К. В. Иванов, хресченсем çĕрсĕр аптранине курса, вырăнĕ халăха вăранма, тапранма, çĕкленме чĕнет: «Малалла, малалла, малалла!» тет.

Улпутсен çĕрĕсене туртса илесси, вăл çĕрсене хресченсене парасси 1905—1907 çулти революцире тĕп ыйтусенчен пĕри пулнă. Хресченсен юхăмĕ 1906 çулăн пĕрремĕш çур пайĕнче (январь — июнь) патша Российинчи мĕн пур уессенчен çуррине ярăн, çав çулăн иккĕмĕш çур пайĕнче (июль — декабрь) мĕн пур уессенчен пилĕк пайне çавăрса илнĕ. Хресченсен восстанийĕсем Чăваш çĕршывĕнче те нумай вырăнсенче пулса иртнĕ.

1905—1907 çулсенчи пĕрремĕш революци тапхăрĕнче чăваш литературинче тепĕр паллă та хастар поэт ĕçлеме тытăннă. Вăл — Николай Васильевич Васильев-Шупуççынни (1889—1942). 1908 çулта Чĕмпĕрте тухнă «Чăваш халлапĕсем» ятлă кĕнекере унăн «Янтрак янтравĕ» поэми çапăнса тухнă. Унта поэт куштан-пуянсен пусмăрĕпе ултавне хирĕç чухăнсемпе вăтамсен пĕр шухăшлă пулса кĕрешме кирлине сăнласа панă. Вăлах тата чăваш юмахне илемлетсе «Хитре Чĕкеç» ятлă поэмă çырнă. 1911 çулта Н. Шупуççыннин «Çамрăк кунсем», «Пĕтелмей», «Чĕлĕм» тата сăвăпа çырнă ытти произведенийĕсем тухнă.

Чăваш поэчĕсен 1905—1907 çулсенче çырнă кашни произведенийĕнче тенĕ пекех (кунта эпир К. В. Ивановăн сăвви-юррисем çинчен каламастпăр та) хресченĕн çĕрпе тырă синчен ĕмĕтленнĕ шухăшĕ пур (Тайăр Тимкки, Г. А. Кореньков, Д. А. Демидов, Д. Кольцов тата ыт. те).

Ку ыйтăва уйрăмах Тайăр Тимкки (1889—1916) пуринчен те çивĕчрех лартать. Вăл, 1905—1907 çулсенче

Хусанта наборщик пулса ĕçленĕскер, революци вăхăтĕнче рабочисем хушшинче пурăннă, революциллĕ ĕçе хутшăннă. Çакă вара унăн куçне ытларах уçнă, ăс-тăнне рабочисем майлă çавăрнă.

Хĕнре, тертре пурăнса, выçă ларни çинчен, вăйран кайса ӳкиччен ĕçлесен те, ĕç хресченĕн пурнăçĕ лайăхланманни çинчен çырнă хыççăн Тайăр Тимкки çакăн пек вывод тăвать:

Çитĕ пире тертленме!
Пурте пĕрле пухăнар.
Тĕрлĕ харам пырсене
Ĕнсе çинчен пăрахар.
(«Шухăш», 1906 ç.)

Тĕрлĕ харам пырсене, пусмăрçăсене сирпĕтсе антарса, çĕнĕ йĕркесем тума кирлине Тайăр Тимкки «Çĕнĕ çул» (1906) ятлă сăвăра та хăюллăнах каласа парать. Ку сăвăра вăл ĕç çыннисене пĕрлешме, тимĕр сăнчăра татма чĕнет:

Килĕр, пĕрле пухăнса,
Çĕнĕ шухăш шухăшлар.
Çĕнĕ çулта савăнса,
Кивĕ ĕçе пăрахар.
Пирĕн кивĕ йĕркесем
Кунтан урăх ан пулччăр,
Хальччен пире тытакан
Тимĕр сăнчăр таталтăр.

Кивĕ самана, патша йĕркисем «ан пулччăр» тенĕ шухăша асра тытса, Тайăр Тимкки «Марсельеза» юрра чăвашла куçарма пуçланă; рабочи клас, пĕтĕм ĕç çыннисем тума ĕмĕтленекен çĕнĕ йĕркесене асра тытса, вăл «Интернационала»— пролетариллĕ гимна тăван чĕлхене куçарма тытăннă. Паллах, çак произведенисем чăваш пичетĕнче кун çути курайман, анчах вăл юрăсен шухăшĕсем поэт-революционер сăввисене, калавĕсене витĕрех сăрхăнса кĕрсе юлнă.

Çĕнĕ пурнăç тусан, ĕç çыннисем савăнса пурăнĕç, «çĕр çинче халиччен пулман савăнăç пулĕ»,— çакăн пек поэтăн ĕмĕчĕ. Ку шухăша эпир унăн «Пурнăç çутти» ятлă калавĕнче тупатпăр. Унта тĕрĕслĕх Хĕвелĕ акă мĕн калать:

«Килĕр ман патăма, маншăн хурлăх куракансем. Килĕр ман патăма, ман пирки урăр-алăра сăнчăрласа, çуралнă çĕршывăрта чунăра хаклă çынсемпе уйăрăлса, инçете хурлăх курма янă çынсем... Эсир маншăн нумай асап курмалла пулнă... Эсир маншăн хăвăра хăвăр шеллемесĕр, сивĕре те,

ҫамӑрта та начар тумтирпе чӑтса ҫӳрерӗр. Халиччен маншӑн мӗнле асап курнине те манӑр!.. Тӗнче пулнӑранпа сирӗн юлташӑрсем, эсир пыракан ҫулпа пырса, мӗн шыранине тупас тесе тӑкнӑ юна пурне те пӗр ҫӗре пухсан, сирӗн юнӑра ҫӗр ҫӗклесе тӑраймӗ. Тӑрӑр ӗнтӗ, маншӑн юн тӑкса вилнӗ ҫынсем, килӗр кунта, пӗр ҫӗре пухӑнса савӑнар!.. Сире, хӗн-хур куракансене, пурне те йӑпатӑп. Пирӗн вара ҫӗр ҫинче халиччен пулман савӑнӑҫ пулӗ».

Патша йӗркине хирӗҫ Н. И. Шелепи сӑввисенче те каланӑ (кун ҫинчен эпир малтарах ҫырнӑччӗ ӗнтӗ). Вӑл халӑхпа патща хушшинчи кӗрешӗве сӑнласа парать: патшана — Ҫӗлен, халӑха — Кайӑк, тет.

«Раҫҫей» ятлӑ юптарулла сӑвӑра Н. И. Шелепи патшана, улпутсене, мул хуҫисене, пупсене хаяррӑн питлет, вӗсене каллех ҫӗленсемпе танлаштарать («Ҫӗлен пек пӑхкалаҫҫӗ», тет).

Ҫапла, 1905—1907 ҫулсенче Российӑра ҫӗкленсе кайнӑ пӗрремӗш революци чӑваш халӑхӗн ӑс-тӑнне ҫӗнӗ шухӑшсем кӗртнӗ, ҫав шухӑшсем чӑваш литературинче палӑрса юлнӑ. Ҫапла вара, чӑваш литератури, И. Я. Яковлев, И. И. Иванов, М. Ф. Федоров тата ыттисен литературӑри ӗҫӗ-хӗлӗнчен пуҫланса, аталанса пырса, ҫӗнӗ тапхӑра кӗнӗ. Ку тапхӑрта ӑна ҫӗнӗ пахалӑх, пысӑк хӑват параканӗсем «Нарспи» авторӗ — К. В. Иванов, «Хитре Чӗкеҫ» авторӗ — Н. В. Шупуҫҫынни тата «Хыпар» хаҫат тавра пӗрлешсе ӗҫленӗ поэтсемпе писательсем пулнӑ.

Анчах та патша Российинчи условисенче пирӗн литературӑ мӗнле аталанни ҫинчен ҫырнӑ чухне ҫакна манма кирлӗ мар: вӑл революцичченхи саманан нихӑш тапхӑрӗнче те пӗр юхӑм пек аталанса пыман; чӑваш халӑхӗ ытларах та ытларах классем ҫине пайланнӑ май, чӑвашсен малтанхи писателӗсем пӗр-пӗр клас, пӗр-пӗр сий шухӑш-кӑмӑлне палӑртма тӑрӑшнӑ.

Хӑшӗ-пӗрисем, эсерсем хыҫҫӑн кайса, «хура халӑх» ҫинчен пӗтӗмӗшле ҫырнӑ, ӗҫ халӑх ӑс-тӑнне уҫас вырӑнне ӑна пӑтраштарнӑ. Вӗсем чӑваш ялӗнчи Михетерсемпе Тӑхтамансене курман, Сетнер пек чухӑнсене те курман,— вӗсен шучӗпе, чӑваш хресченӗсем пурте пӗр пек пулнӑ, пуянсемпе чухӑнсем ҫине пайланса тӑракан хресченсем мар, вӗсем хушшинче чӳхенсе, чухӑна тухса тӑракан вӑтамсем мар — «хура халӑх» ҫеҫ пулнӑ.

Теприсем, чӑваш ялӗнче ӗнтӗ вӑл вӑхӑтра кӗрешӳ пуҫланса кайнӑ пулин те, ял-ялӗпе ӗҫ хресченӗсем, пуртӑсемпе

сенĕксем çĕклесе, улпутсене, кулаксене хирĕç тухнă пулин те, хресченсен пурнăçне идеализацилесе, лăпкă пурнăç пек туса кăтартма тăрăшнă. Кун пек туртăмсем, кун пек тĕслĕхсем пуринчен ытла Т. К. Кириллов сăвви-юррисенче курăнаççĕ.

Тарас Кириллович Кирилловăн (1880—1921) пирвайхи произведенийĕ — «Тырă пулнă çул» ятлă поэмă. Ăна автор 1903 çулта çырнă. 1905 çулта Хусанта уйрăм кĕнекепе пичетлесе кăларнă. Поэмăра Т. К. Кириллов чăваш хресченĕн пурнăçĕпе йăли-йĕркисене идиллллĕ сăрăсемпе сăнласа парать. Хресчен пурнăçĕн ăнăçлăхĕпе телейĕ, ун шучĕпе, пĕтĕмĕшпех ĕçченлĕхрен килет. Çĕр ĕçне тăрăшса туса пырсан, тырă-пулă ăнăçлă пулсан — çитрĕ те вара хресчене! — çакăн пек Кириллов поэмин тĕп кĕвви. Çав вăхăтри чăваш ялĕн социаллă сăн-сăпатне, унти явленисене вăл патриархаллă хресчен куçĕпе пăхса хаклать.

Анчах 1904 çулта Российăпа Япони хушшинче пулса иртнĕ вăрçă хресчен массисен пурнăçне юхăнтарни, ĕç çыннисен хĕн-хурне ӳстерни поэта пурнăç çине кăштах критикле пăхма вĕрентет. Сăмахран, «Пулăшăр» ятлă сăвăллă произведенире (1905) вăрçа пула чухăн хресченсен, тăлăхсемпе салтак арăмĕсен юрлăхĕ ӳсни куç кĕретех палăрать.

Т. К. Кириллов 1911 çулта «1812-мĕш çулхи вăрçă çинчен хывнă юрăсем» пичетлесе кăларать. Ку произведенире вăл вырăс халăхĕ ют çĕршывран килнĕ пусмăрçăсене хирĕç паттăррăн кĕрешнин уйрăм эпизочĕсене сăнласа парать. Российăри халăхсем хăйсен тăван çĕршывне юратни çинчен калать, вĕсем ют çĕршывран килнĕ захватчиксене хирĕç мĕн тери паттăр та хастар кĕрешни çинчен асăнать.

1912 çулта Хусанта Т. К. Кириллов «Хресчен хăй ĕçĕ çинчен хывнă юрăсем» ятлă сăвăсен циклне уйрăм кĕнеке туса пичетлеттерет. Кунта та идеализаци пур-ха, çапах та ку произведенире вăл чухăн хресченсен юрлă пурнăçĕ çинчен çырмасăр иртсе каяймасть. Патша саманинче чухăнсен пурнăçĕ мĕн тери хĕсĕккине Кириллов çакнашкал сăмахсемпе сăнласа парать:

Пурнăç пурăнма пит йывăр:
Мĕнле пурнас, кун курас?
Çукшăн тĕнче пит тăвăр,
Мĕскер туса асլатас?

Укçа мĕн туса тупас-ши? —
Пирĕн тавра савăт çук.

Кам патне тарҫа каяс-ши?—
Тарҫинче те тӳсме ҫук.

Йӗри-тавра ал ҫухрӑм кай—
Ӗҫе кӗртекен пур-и?—
Апла пулсан, хулана кай—
Сана кӗтекен пур-и?

Ӗҫ хресченӗсене хӗсӗк пурнӑҫ условийӗсенчен мӗнле майсемпе кӑларас шухӑш пырса кӗнӗ поэт пуҫне, анчах ҫак ыйтусене тӗрӗс татса парас ҫул ҫине ӳкеймен вӑл. Поэт, пӗр енчен, патшана мухтаса ырлас шухӑша пӑхӑнса ӗҫленӗ, тепӗр енчен, хресченсен хӗсӗк пурнӑҫӗ ҫинчен те ҫырма хӑтланса пӑхнӑ.

Кунта тата ҫакна палӑртас пулать: империализм вӑрҫин пуҫламӑшӗнче тапранса кайнӑ суя патриотизма парӑнса, Т. К. Кириллов «Львовпа Перемышль хулисене илни ҫинчен хывнӑ юрӑ» ҫырать. Патша ҫарӗн фронтри ҫӗнтерӗвӗсене мухтаса патшана ырлать.

Анчах ҫак суя патриотизмӑн сӗрӗмӗ ерипен-ерипенех сӗвӗрлет. 1916 ҫулта вӑл вӑрҫӑ хӑрушлӑхӗпе асаплӑхне кӑтартакан «Салтак арӑмӗн сӑпкари ачине сиктерсе ларнӑ чух юрланӑ юрри» ятлӑ сӑвӑ ҫырать. Унта вӑл ӗҫ ҫыннисем вӑрҫа кӑмӑлламанни ҫинчен калама хӑтланать:

...Аҫуна, пур халӑха та
Йывӑр саманара
Вӑйлӑ вӑрҫӑ пит хӑратрӗ,
Йывӑр пурӑнма.

Т. Кирилловӑн сӑввисем — пурте пекех халӑх юррисен формипе ҫырнӑ сӑвӑсем. Вӑл халӑх творчествин, халӑх юррин илемлӗх мелӗсемпе, вырӑнти чӗлхе формисемпе усӑ курнӑ. Кириллов творчествине, пӗтӗмӗшпе илсен, ҫакӑн пек хаклас пулать: ҫак поэт, халӑх творчествин формисемпе усӑ курса ҫырнӑ пулин те, халӑхӑн чӑн-чӑн шухӑш-кӑмӑлне нихӑш сӑввинче те палӑртса парайман. Унӑн хӑш-пӗр сӑввисен форми те, шухӑшӗ те кӑйттӑ, примитивлӑ,— пушӑ пучах пек.

* *
*

Революцичченхи чӑваш литературин произведенийӗсем, хисеп енчен илсен, нумай мар. Ҫапах та пирӗн ҫав вӑхӑтри литературӑра паха та усӑллӑ идейӑпа художествӑ традицийӗсем пулса тӑнӑ: литературӑ чӗлхине пуҫарса янӑ, лирикӑра та, эпосра та, драмӑра та тӗп жанрсем пулма тытӑннӑ, вырӑс халӑхӗн прогрессивлӑ литературин идейӑпа

художестваă çитĕнĕвĕсемпе, тăван халăхăн сăмахлă творчест-випе кирлĕ пек усă курас опыт пухăнса пынă,— çаксем ĕнтĕ чăваш литературин революцичченхи çул-йĕрĕ мĕнле пулни çинчен калама май параççĕ.

1905—1907 çулсенче пирĕн çамрăк литературăра граж-данла лирикă пуçланса кайнă. Ку тĕлĕшпе уйрăмах чăваш поэзин классикĕ К. В. Иванов, чăвашсен революциллĕ поэчĕ Тайăр Тимкки паллă вырăн йышăнса тăраççĕ. Граж-данла сăвăсем çырса, К. В. Иванов чăваш литературине Лермонтов, Некрасов, Огарёв традицине кĕртнĕ. Çакă вăл — литературăна халăх ĕçĕпе тата кĕрешĕвĕпе çыхăнта-рас, халăха хавхалантарас, халăха пулăшас традици.

К. В. Иванов, хăйĕн хăватлă «Нарспи» поэмине çырса, чăваш литератури чĕлхин никĕсне нумай-нумай сарнă, чă-ваш чĕлхи мĕн тери илемлĕ те пуян чĕлхе пулнине кăтарт-са панă.

В. И. Ленин вĕрентнĕ тăрăх, буржуаллă обществăри кашни нацире буржуаллă культурă пур, çав вăхăтрах де-мократиллĕ, социализмлă культурă элеменчĕсем те пур. «Эпир кашни нациллĕ культурăран унăн демократиллĕ тата социализмлă элеменчĕсене кăна илетпĕр...»*

Пирĕн революцичченхи литературăн демократиллĕ тата революциллĕ элеменчĕсем, литературăри демократиллĕ традицисем, чăваш поэчĕсемпе писателĕсем пуçарса янă литературă чĕлхи хальхи чăваш литературин никĕсĕ пулса тăнă. Совет саманинче çав никĕс çинче чăвашсен содержа-нийĕпе социализмлă, формипе нациллĕ литератури пуçлан-са кайнă. Çак литературă çултан çул çĕнĕ утăмсем тăвать, тăван халăха коммунизм тăвас ĕçре пулăшать.

*1949—1962*

---

* В. И. Ленин. Сочиненисем. 4-мĕш изд., 20 том, 3 стр.

## М. Ф. ФЕДОРОВАН «АРÇУРИ» ХАЛАПЕ

**(Ăна уйрăм кĕнекепе пичетлесе кăларнă май. 1956 ç.)**

Чăваш халăхĕн малтанхи поэчĕ Михаил Федорович Федоров хăйĕн «Арçури» ятлă халапне (балладине)* 1879 çулта çырнă. 1908 çулччен вăл пичетре кун курайман: ăл çырăвĕ вĕççĕн упраннă, халăх хушшинче алăран алла çÿренĕ. 1908 çулта тин Чĕмпĕрте «Чăваш халлапĕсем» кĕнекере пуçласа çапăнса тухнă. Октябрьти революци хыççăн «Арçури» тĕрлĕ кĕнекесенче, учебниксенче тăтăшах пичетленсе пынă. Акă халĕ, ăна çырнăранпа 75 çул иртсен, вăл уйрăм кĕнекепе пичетленсе тухрĕ. Ку факт мĕн çинчен калать-ха? Çакă вăл «Арçури» кивелми произведени пулни çинчен калать.

«Арçури» авторĕ М. Ф. Федоров 1848 çулхи ноябрĕн 17(29)-мĕшĕнче Хурапха ялĕнче (халĕ Ç ĕ р п ÿ р.) çуралнă, 1904 çулхи апрелĕн 21(майăн 4)-мĕшĕнче вилнĕ. Çапла вара поэт 56 çул кăна пурăннă. Унăн произведенийĕ хăйĕн авторĕ вилнĕ хыççăн 50 çул ытла пурăнать. Малашне те пурăнĕ, мĕншĕн тесен тарăн шухăшлă, илемлĕ произведенисем, халăх пурнăçне, шухăш-кăмăлне тĕрĕс кăтартса паракан, халăх йышăннă, юратса вулакан произведенисем вилĕмсĕр.

«Арçури» халап — чăваш литературин никĕсĕнче тăракан произведенисенчен пĕри. Ăна чăваш çырулăхĕ тин çеç йĕркеленнĕ, чăваш литератури чĕлхи пулса çитмен вăхăтра çырнă. Çак енчен пăхсан, эпир М. Федорова чăваш литературин, литературă чĕлхин малтанхи кирпĕчĕсене хунă поэт теме пултаратпăр. Ку шухăша халиччен уççăн

---

* Пирĕн литературăра б а л л а д ă термина чăвашла куçармасăрах çырма йышăннă. Çакна тĕрĕс тесе шутламалла.

калакансем пулман, çапах та «Арçури» авторĕн чăваш литературин историйĕнчи вырăнĕ çавăн пек пулни такамшăн та паллă: М. Федоров — чăваш халăхĕн малтанхи поэчĕ; вăл — литература ĕçне реализмла литература çулĕ çинче туса пынă поэт-демократ.

«Арçури» халапра кăтартса панă сынсемпе ĕçсем — чăваш халăхĕн XIX-мĕш ĕмĕрĕн иккĕмĕш пайĕнче пурăннă çыннисемпе ĕçĕсем. Унта чухăн хресчен вăрманта, уйра, çанталăкăн тĕрлĕ вăйĕсем хушшинче, тем те пĕр курса çӳрени çинчен каласа панă. Çав явленисене курнипе, вĕсене ăнланманнипе Хĕветĕр хăраса пырать, пурнăçпа вилĕм çинчен шухăшлама тытăнать. Вăл çав вăхăтрах хуçалăх çинчен те, ун чухнехи йĕрке çинчен те шухăшлать.

Хĕветĕр — çука юлнă хресчен. Унăн лаши те аран-аран уткалать, мĕншĕн тесен Хĕветĕр ăна ыраш улăмĕ кăна çитерме пултарать. Акă вăл, вăрмана кайсан, лашипе пĕрле аташса çӳреме тытăнать.

Хура утпа иксĕмĕр
Çырма хĕрне çитрĕмĕр.
Тăвар вăрри тăвайкки,
Аçта пур-ши сĕвекки?
Йĕп чиксе те куç курмасть.
Те арçури, те шуйттан,
Те ыр-усал, те вăр-хурах,
Те çул маяк, те амак?
Чун шикленет, ăш вăркать,
Пуç тӳпинчен сĕрĕм тухать.

Çакă вăл, Хĕветĕрĕн «пуç тӳпинчен сĕрĕм» кăлараканскер, арçури. Хĕветĕр арçурие ку вăхăтчен курман (курма та пултарайман), анчах арçури мĕнлине вăл «пĕлнĕ», мĕншĕн тесен тĕттĕм аслашшĕпе асламăшĕ, ашшĕпе амăшĕ ăна арçури çинчен пĕчĕк чухнех темиçе хут та каласа панă. Хĕветĕр вĕсен юмах-халапне хăра-хăра итленĕ, ĕненнĕ, çавăнпа та вăрмана кайсанах çав арçури ăна курăнас пек туйăннă. Акă ĕнтĕ халĕ, Хĕветĕр вăрманта çĕтсе-аташса кайсан, юмахри арçури чĕрĕ ярала пекех курăнма пуçланă:

Шĕвик! шăхărать çын пекех,
Мăкăл-мăкăл юмахлать,
Шăтăр-шатăр тутарать;
Путь ухмаххи тапранать,
Юмах ярать юптарать,
Йăнăш çулпа чуптарать,
Чике тăршшĕ ларттарать.
Акă ĕнтĕ, пăх ĕнтĕ:
Çавра çил пек çаврăнса,

Çĕмĕртсене çĕмĕрсе,
Сикрĕ-тухрĕ çырмаран,
Пĕкке хуçрĕ çурмаран,—
Ват çын пекех — шур сухаллă,
Качака пек майракаллă,
Ури вăрăм, куçĕ чармак,
Урхас-Кушăк вăрманĕнче
Урлă-пирлĕ уткалать;
Урнă йыт пек тулашать,
Вĕрет, сурать, пусмăрлать,
Кăтăкласа вĕлерет.

Арçури «пусмăрланă» самантра Хĕветĕр, чăвашсен мĕн пур туррисене аса илсе, пурнăçпа вилĕм çинчен «философилеме» тытăнать. Хĕветĕр «ырă вилĕмпе вилесшĕн»: вăл йӳтичченех пурăнасшăн, урăхла каласан, 90—100 çула çитсен, «тӳшек çинче вилесшĕн». Çапла вилсен вара вăл хăйне «авалхи çынсен йĕркипе тирпейлесе пытарасса» шанать. Çакăн пек шухăшласа пынă чухне унăн пуçне тепĕр шухăш пырса кĕрет. Вăл хăйĕнчен хăй ыйтать:

Ыр çын вилет — ят юлать,
Эпĕ вилсен мĕн юлать?

Хĕветĕрĕн мул çук, ырă ят та çук,— юлсан та унăн арăмĕпе ачи-пăчи кăна юлать. Ку ĕнтĕ пурнăçа çывăх тăракан «философи». Çак шухăшсем Хĕветĕр пуçне сыватаççĕ, юмах-халапа мантараççĕ,— вара арçури те юлса пыма тытăнать, уйăрăлса каять, арман айне кĕрсе çухалать. Çакăн хыççăн Хĕветĕр ăс-тăнĕ çуталса каять, вăл ĕнтĕ халĕ вилĕм çинчен мар, хуçалăх ыйтăвĕсем çинчен шухăшласа пырать:

Çул чиперех пулмин те,
Чун шикленми пулчĕ ĕнтĕ.
Чипер уйран иртсессĕн,
Пирĕн вăрман пит чипер:
Йăвă ӳснĕ йывăççем,
Питĕ вăрăм чăрăшсем;
Пăхсан çĕлĕк ӳкмелле,
Кассан часах ӳкмелле.
Пилĕк юплĕ пилеш пур,
Ссни́к тума пит селĕм.
Хурăншурта хурама,—
Тур ӳстернĕ туратсăр,
Турта тума вăл юрать..

Малалла Хĕветĕр арçури мĕнрен пулса кайни çинчен тепĕр кана шухăшласа пырать те тата та пысăкрах ыйту çине куçать. Халĕ ĕнтĕ вăл хăй вилсен, мĕн юласси çинчен

мар, халăх пурнăçĕ çинчен шухăшлать. Паçăр вăл «эпĕ» тетчĕ, халĕ «эпир» тет:

Çитмен пурнăç пирки-çке
Çын куçĕнчен пăхатпăр,
Çиме çăкăр çитмесен,
Пăтавкка йăтса каятпăр.
Хырăç-марăç памашкăн
Хушпу саклат хыватпăр,
Ыраш калчи сутатпăр,
Кайран çука юлатпăр,
Хутаç çакса каятпăр,
Ыйткаласа çӳретпĕр.

Ку йĕркесенче патша саманинчи чăваш ялĕн, чăваш чухăнĕн пурнăçĕ тухса тăрать. М. Федоров ăна лайăх пĕлнĕ, лайăх курнă, çавăнпа та реалистла кăтартса пама пултарнă. Анчах М. Федоров, халăх нушине хăйĕн куçĕпе курнă пулин те, çав нушаран, хĕн-хуртан мĕнле майпа тухмаллине кăтартса парайман (ку ĕнтĕ, чи малтан, ун чухнехи историлле условисенчен килнĕ). Çапах та поэт-демократ халăх мĕншĕн çука юлнине тĕрĕс каласа панă, вăл хăйĕн шухăшне, юмах формипе усă курса, хăш-пĕр таран пытарса каланă. Çавăнпа та «Арçури» халапăн вĕçĕнче, «ыйткаласа çӳретпĕр» тенĕ хыççăн поэт каллех юмах формине куçса, чăваш ваттисем пек ăслăн юптарать (ку выpăн ĕлĕкхи изданисенче пулман):

Ачасене юратса,
Вăрăм юмаха кĕскетсе,
Юри çыртăм юрлама
Качча каяс хĕрсене;
Питĕ хӳхĕм вулама
Хута вĕреннĕ çынсене,
Урнă йыт пек улама
Улах ларан хĕрсене.
Эпĕ çыртăм сăввине,
Эсир тупăр юррине.

Çапла, поэт-демократ, вулакана ерипенех пысăк шухăш патне илсе çитерет: вăл хăйĕн халапне Хĕветĕр «хăрăк турат пуçтарма» кайнинчен пуçлать те чăваш хресченĕсем ыйткаласа çӳрени çинчен каласа панипе вĕçлет, юлашки йĕркере пĕччен Хĕветĕре мар, çĕнĕ ăрăва асăнать, чăвашсем хушшинче хут вĕреннĕ çынсем пуласса шанать.

* * *

Чухăн Хĕветĕр — «Арçури» халапăн тĕп геройĕ, унăн авторĕ хресченсен пурнăçне, вĕсен сăнарĕсене, характерĕсе-

не кăтартса панипех хăйĕн ĕçне пĕтернĕ, вĕçлесе çитернĕ тесе шутлама пултарайман. «Арçури» халапра М. Федоров ытти хресченсен пурнăçне те кăтартса пама тăрăшнă. Чăваш ялĕнче Хĕветĕр пĕччен пулман, ун пек чухăнсем нумай пулнă. Автор малти йĕркесенчех Микула ятлă хресчене асăнать:

Карчăк Микули пымарĕ,
Ăна юлташ пулмарĕ:
Микул турра пуç çапма
Ишекелле каймалла, терĕ;
Тӳр кĕллине тӳрлетме
Тиха тытса пусмалла;
Арăм сыв мар, суя мар,
Хĕлĕн-çăвĕн хĕн курать.
Киремете килĕшмен,
Çырмаранах çырлахман...
Хур-кăвакал пусмасан,
Хĕл-çăвĕпе хĕн курăн...

Ку хресчен, тен, Хĕветĕр пекех чухăн пулмĕ. Çапах та Микулая пуян хресчен теме те çук,— унăн та нуши пысáк, вăл та, Хĕветĕр пекех, тĕрлĕ тĕшмĕшсене, киреметсене, турăсене ĕненсе пурăнать: Микулай пĕр вăхăтрах Микул турра та, киремете те пуç çапать, çапла вара, хĕлĕн-çăвĕн хĕн куракан арăмне сыватма ĕмĕтленет.

Малалла тата поэт Лавраç хресчене асăнать. Вăл салтак ачи пама лава кайнă. Ытти хресченсем, сăмахран, Кириллесем килте пулман.

Карчăк Микулин Ишеке каймалла пулман пулсан, Лавраç пичче лава кайман пулсан, Кириллесем килтех пулнă пулсан, тен, вĕсем те Хĕветĕрпе пĕрле вăрмана хăрăк турат пуçтарма кайнă пулĕччĕç, вара халапри ĕçсене автор урăхларах кăтартса панă пулĕччĕ. Анчах поэт ун чухнехи пурнăçа мĕнле курнă, çавăн пек кăтартнă: кашни хресченĕн хăйĕн нуши пулнă, кашни хăйĕн нушипе çӳренĕ. «Арçурире» çав тĕрлĕ нушасене çаплипех кăтартса панă,— вĕсене хитрелетмен те, тĕксĕмлетмен те.

«Арçури» халапа çырнă вăхăтра чăваш ялĕ ĕнтĕ клас тĕлĕшпе сийленме пуçланă. Унта чухăнсемпе пĕр вăхăтрах пуян хресченсем те пулнă. Куштансем яла пусмăрласа, хăратса пурăннă. Çак шухăша М. Федоров тепĕр сăнар урлă çирĕплетсе парать.

Хĕветĕрсен ялĕнче Энтри ятлă хресчен пулнă (ăна Хĕветĕр аслашшĕсем ас тăваççĕ). Энтри — вăл чи чухăн çын, ыйткалама çӳрекен мĕскĕн старик. Ăна ял куштанĕ лашапа

таптаса вĕлернĕ. Арçури мĕнрен пулса кайни çинчен шухăшласа пынă чухне Хĕветĕре çакăн пек халап аса килет:

Мĕнтен пулнă арçури,
Ял хысĕнчи — çырмари?
Асаттесем ас тăваççĕ:
Арçынтанах пулнă, тет,
Энтри ятлă çынтан, тет.
Якур пичче çулпала
Пушкăрт лаши кӳлнĕ те,
Те çуркунне, те çулла,
Яртлаттарса чуптарнă.
Кaç пултипе сиккипе
Ыраш пусси хĕррипе
Çавра çил пек пынă чух,
Пĕр ăстарик вăрманта
Чĕлĕм чĕртме тапратнă:
Куç витĕрех мар пирки
Пыран ута курмасăр
Йыт вилĕмпе вилнĕ, тет,
Леш ухмаххи пулнă, тет,
Пирĕн ялти — хыçалти...

Çак йĕркесенче эпир куштан сăнарне те куратпăр. Энтрие лашапа таптаса вĕлерекен çыннăн, Якурăн, хуйхă-суйхă çук: вăл пушкăрт лашине кӳлсе ларнă та çавра çил пек вĕçтерсе пырать, çул çинчи çынсене таптаса иртсе каять. Энтри вырăнĕнче Хĕветĕр пынă пулсан, Якур ăна та таптаса вĕлернĕ пулĕччĕ. Кун пек хăтланни Якуршăн ним те мар: вăл никамран та хăрамасть, мĕншĕн тесен пуянлăхĕ çине шанать.

Энтрисен, Хĕветĕрсен, Кириллесен куштан Якурăн пек пуянлăх пулман. Хĕветĕр лаши аран-аран уткалать, Якур лаши çавра çил пек вĕçтерсе пырать. Хĕветĕр хăрăк турат пуçтарма каять. Якур ăçта кайни çинчен автор каламасть. Анчах вулакан хăех тавçăрса илме пултарать: çав куштан (вырăсла: м и р о е д) вăрмана кайман, вăрмантан та таврăнман,— вăл хăнаран, вăйлă ĕçкĕрен таврăннă! Куштан Якур — ăнсăртран сиксе тухнă этем мар, кулак сăнарĕ. Якур пек куштансен хуçалăхри вăйĕ, пурнăçри чăрсăрлăхĕ ӳссех пынă. Куштан мĕнле тип пулнине палăртса, В. И. Ленин 1895 çулта хăйĕн «Экономическое содержание народничества» ятлă произведенийĕнче çавăн пек «кулаксем, куштансем, сутăçсем, хупахçăсем, подрядчиксем, закладчиксем» тата ыттисем, çав пĕтĕм «çамрăк буржуази», «кашни ялах», «алăра тытса тăни» çинчен çырнă *. Пурă-

* В. И. Л е н и н. Соч., I т., 354—361 стр.

на-киле вĕсем, танлаштарарах калас-тăк, ял çине тимĕр шапа пек хăпарса ларнă, сывлама та паман.

Энтри старик шăпах çитмен пурнăç пирки ыйткаласа çÿренĕ, паян пурăнас тесе, татăк çăкăр пухса таврăннă. Ăна ялтан яла çитсе пухнă татăк çăкăрне те пулин çисе пурăнма паман — «йытă вилĕмĕпе вĕлернĕ». К. Маркс сăмахĕсемпе калас пулсан, çакă вăл — «ялти пурнăç идиотизмĕн» паллисенчен пĕри. Çав «йытă вилĕмĕ», çав «идиотизм» ялсенче Октябрьти революциччененех пынă: ăна капитализм «культури» пĕтермелле пулнă, анчах пĕтерейменн, вăл таса ылтăн интересне çуратса, сынсен чунне, шухăш-кăмăлне тата та ытларах пăсма тытăннă, яла çĕнĕ «трагедие» кĕртсе янă, хăйĕн идиотизмне туса хунă. Аслă поэт калашле, «укçапала эрех çынна ăсран кăларма» тытăннă.

Çапла ĕнтĕ, М. Федоровăн «Арçури» халапĕ, малтанлăха çеç юмах пек туйăнать, чăннипе илсен, вăл — тарăн шухăшлă, социаллă произведени. Унта халăх пурнăçне, халăх нушине, шухăш-кăмăлне, халăх интересĕсем енчен пăхса, кăтартса панă.

Революцичченхи чăваш ялне çĕр хĕсĕкки, тырă пулманни хуплаcа тăнă. Анчах çĕр хĕсĕк пулнине ун чухне пĕтереймен, çĕр ыйтăвне татса параймаи. Ку ыйту вара XIX-мĕш ĕмĕрте кăна мар, 1905—1907 çулсенчи революци вăхăтĕнче те тĕп ыйтусенчен пĕри пулса тăнă. Хресченсен шухăш-кăмăлне палăртакан поэтсем çĕр ыйтăвне манăçа хăварман. Çав поэтсенчен пĕри — Тайăр Тимкки — чухăн хресчен хăйĕн çĕрне «çитмен пурнăç пирки» сутни çинчен М. Федоров кĕввипех сырнă:

Татăк çăкăр тупасшăн,  
Çине тумтир çакасшăн  
Хăйĕн ĕмĕр иртиччен,  
Вăл ватăлса виличчен  
Тырă акса пурăнать.  
Нуша ĕмĕр выртарать,  
Çитмен пурнăç сунтарать.

Г. А. Кореньковăн «Хальхи пурнăç» ятлă сăввинче тата ĕç хресченĕсен шухăшне çакăн пек палăртнă:

Унăн мĕн пур шанчăкĕ  
Уйри тырă çинчеччĕ,  
Анчах ани татăкĕ  
Ытла, ытла хĕсĕнчĕ:  
Ансăрне те ансăр вăл,  
Хыттине те хытă вăл.

М. Ф. Акимов «Çитмен пурнăç» ятлă новеллă çырнă. Унта та çакăн пек йĕркесем пур: «...Кирек ăçта, кирек кампа калаçсан та, хресчен çыннисем, пĕр сăмах — çĕр сахал, çиме çитмест, тепле пурăнас.— теççĕ».

Чăвашсен пирвайхи поэчĕ М. Федоров ĕç хресченĕсене çĕршĕн кĕрешĕве чĕнеймен пулсан, 1905—1907 çулсенчи революци тапхăрĕнчи поэтсем (Тайăр Тимкки, К. Иванов тата ыт. те) çĕрсĕр хресченсене çĕршĕн кĕрешме чĕннĕ. «Вăранăр, тапранăр, чăваш çыннисем!» — акă мĕнле пулнă вĕсен тĕп шухăшĕ. Çапах та 1917 çулти Октябрьти революцире çеç ĕç хресченĕсен ĕмĕрхи ĕмĕчĕ пурнăçа кĕнĕ. Елĕк нуша аптратнипе пур-çук çĕрсене сутса, чухăна тухса пынă пин-пин чăваш Энтрийĕсемпе Хĕветĕрĕсем тата Карчăк Микулисемпе Кириллесем, Лавраç пиччесем ирĕке тухрĕç, çĕр илчĕç, çын шутне кĕчĕç.

Хресченсем халĕ ирĕклĕ çĕр çинче ирĕклĕн пурăнаççĕ, колхозсенче машинăсемпе ĕçлеççĕ, уйсенче тулăх тыр-пул пухса илеççĕ, пуян та культурăллă пурнăçа тĕреклетсе пыраççĕ. Колхоз хресченĕсем пĕр ĕмĕтпе — çĕршыва пуянрах та вăйлăрах тăвас, совет государстви хăватне кунран кун тĕреклетес тесе тăрăшаççĕ.

* * *

М. Ф. Федоров пĕчĕк чухнех юмах яма, юрăсем юрлама юратнă, ача-пăча вăййисенче çĕнĕ вăйăсем шухăшласа кăларнă. Çавăнпа та ăна хăйсен ялĕнче «пĕчĕк ăста» тенĕ. Анчах Михала вунултă çула çитиччен вулама-çырма пĕлмен. Вĕренме ялта шкул пулман. Тепĕр енчен тата «пĕчĕк ăстан» вĕренес шухăш та пулман, ашшĕ-амăшĕ те ăна вĕрентес тесе кулянман. 1864 çулта М. Федорова ирĕксĕрлесех Шĕнерпуç шкулне вĕренме илсе кайнă. «Пĕчĕк ăста» вара вĕренни кирлине часах туйса илнĕ, тăрăшса вĕренме тытăннă, 1867 çулта шкултан лайăх паллăсемпе вĕренсе тухнă. Кун хыççăн М. Федоров малалла вĕренесси çинчен шухăшлама тытăнать. Çак çулхине Шĕнерпуçĕнче икĕ класлă училищĕ уçăлать. Унăн малтанхи ученикĕсенчен пĕри М. Федоров пулнă. Кунтан вĕренсе тухсан, вăл Самарти учительсем хатĕрлекен семинарие вĕренме каять. Çак тĕрлĕ шкулсенче вĕреннĕ чухне М. Федоров вырăс писателĕсен произведенийĕсемпе паллашать.

Пилĕк çул хушши учительте ĕçленĕ хыççăн, 1878—1879 çулсенче, М. Федоров Хусанта педагогика курсĕнче вĕренет. Курсран вĕренсе тухсан, вăл каллех педагогика ĕçне

каять. Халĕ вăл «ăста педагог» пулса тăрать. Пĕчĕклех чăваш юрри-сăввисемпе интересленнĕскер, М. Федоров 1876—1878 çулсенче халăх юмах-халапĕсене, такмакĕсене, юрри-сăввисене пухас енĕпе пикенсе ĕçлет, оригиналлă произведенисем те çырать. (Сăмахран, вăл вырăсла «Авалхи çынсем», «Улăп тăпри», «Хурапха», «Туппай юмçă», «Чиртен сыватни» ятлă пĕчĕк очерксем çырнă).

Хăй литературă ĕçне мĕнле пуçăнни çинчен М. Федоров çакăн пек каланă: «Вырăс писателĕсен, уйрăмах А. С. Пушкин, произведенийĕсене вуланипе тата тĕпченипе эпĕ хам та çырас тĕлĕшпе хамăн кăмăл-туйăмсене хатĕрлесе çитертĕм. Эпĕ Пушкинăн «Бесы» поэмине куçарма тытăнтăм. Куçарма йывăр пулчĕ. Çавăн чухне ман пуçа çакăн пек шухăш пырса кĕчĕ: чăваш халăх пурнăçĕ çинчен мĕн те пулин çавăн пек япала çырма пулмасть-ши? Эпĕ вара чăвашсен арçури пирки çӳрекен калавĕсемпе халапĕсене аса илтĕм те «Бесы» поэмăна куçарас вырăнне «Арçури» халапа çыртăм», тенĕ. М. Федоров вырăссен ытти поэчĕсемпе прозаикĕсен произведенийĕсене те юратса вуланă (кунта М. Ю. Лермонтов, Н. А. Некрасов, Н. Г. Помяловский, Н. В. Успенский, Ф. М. Решетников ячĕсене асăнма пулать).

Çапла ĕнтĕ, М. Федоров пултарулăхĕн пуçламăшĕпе никĕсĕнче эпир икĕ вăй куратпăр: пĕри — чăваш фольклорĕ, тепри — вырăссен классикла литератури шухăшĕн витĕмĕ (влияние, воздействие).

Литературăри витĕм — вăл писателе ăнсăртран пырса перĕннĕ япала мар. Унăн тупсăмне, В. Г. Белинский шухăшĕсене асра тытса каласан, çакăн пек ăнлантарса пама пулĕччĕ: пĕр-пĕр аслă поэтăн пултарулăхĕ тепĕр поэта хăйĕн витĕмне парать пулсан, ку вăл пĕрремĕшĕн вăйĕ иккĕмĕшĕн пултарулăхĕнче ахаль кăна сисĕнниньче мар, унăн пултаруллă вăйĕсене хускатса, хавхалантарса янинче,— хĕвел çĕре хăйĕн ăшшипе çуттине парса çĕрĕн шалти вăйне хускатса ярать, çĕр вара тĕрлĕ йывăç-курăксем ӳстерсе темиçе тĕслĕн ешĕрме, чечекленме тытăнать.

Çак шухăш тĕрĕслĕхне М. Федоровăн «Арçури» халапĕ те лайăх çирĕплетсе парать.

«Арçури», çапах та, малтан пуçласа вĕçне çитиех оригиналлă произведени. Унăн кашни йĕркинче, кашни сăмах çаврăнăшĕнче, танлаштарăвĕнче чăваш халăх ăсĕ сисĕнет, литературăн нацилле форми уççăн курăнать.

«Арçури» халапа М. Федоров, пĕтĕмĕшпе илсен, çичĕ

сыпăклă силлабикă виçипе çырнă. Унăн чĕлхи — çăмăл та илемлĕ, вăл — халăх чĕлхи. Сăвă форми те çавăн пекех: вăл — халăх сăвви-юррисен форми. Халăх пултарулăхĕпе тĕлĕнмелле ăста усă курнă вырăнсем М. Федоров халапĕнче питех те нумай.

Сăмахран, чăваш халăхĕн çакăн пек «сутмалли юмах» пур:

Хура вăрман хумханать,
Хура халăх пуçтарнать.

М. Федоров ку юмахпа акă мĕнле усă курнă:

Хура вăрман хумханать,
Хура лаша хартлатать.

Чăваш юмахĕсен вĕçĕнче час-часах çакнашкал йĕркесем тĕл пулаççĕ:

Юмах ятăм, юптартăм,
Пĕр сăмах та суймарăм.

М. Федоров ăна çапла улăштарнă:

Юмах ярать юптарать,
Йăнăш çулпа чуптарать.

Чăваш туйĕнче хĕр илме пынă каччăсем, хăйсен вăйхалне кăтартас тесе, чун-хавалне çĕклесе:

Тĕпĕр-тĕпĕр килтĕмĕр,
Çĕр чĕтретсе килтĕмĕр,—

тесе юрлаççĕ. М. Федоров арçуриĕ хăйĕн «вăй-халне» акă мĕнле кăтартать:

Çĕр çĕмĕрсе чуптарать,
Çĕр чĕтретсе кăшкăрать.

Акă тата «Арçури» халапра усă курнă ваттисен сăмахĕсем:

Тухман çын тухсан,
Тăман тухать, тет.
Пуян вилет — мул юлать,
Ыр çын вилет — ят юлать.

М. Федоров халапĕнчи йĕркесем тĕрлĕ майпа рифмăланаççĕ. Халап пуçламăшĕнче — юнашар рифмăсем:

Хĕвел ансан Хĕветĕр
(Эсир ăна пĕлетĕр)
Хĕвне çăкăр чикрĕ те,
Лаша кӳлсе ларчĕ те,

Тухрĕ-кайрĕ вăрмана
Хăрăк турат пуçтарма.

«Арçури» халапăн хăш-пĕр йĕркисенче икшер рифмă: пĕри — малта, тепри — вĕçĕнче. Тĕслĕхшĕн çак вырăна вулăр-ха:

Пилĕк юплĕ пилеш пур,
Сенĕк тума пит селĕм,
Хурăншурта хурама,—
Тур ўстернĕ туратсăр—
Турта тума вăл юрать;
Ват юмана çил ватнă,
Çĕмĕртсене çĕмĕрнĕ.

Ку йĕркесене аллитераци тĕслĕхĕ вырăнне илсе кăтартма пулать: вĕсенче хупă сасăсемпе (согласные звуки) пуçланакан сăмахсемпе питех те вырăнлă усă курнă. М. Федоров халапĕнче уçă сасăсемпе ăста усă курнă йĕркесем, урăхла каласан, ассонанссем те пур:

Ури вăрăм, куçĕ чармак,
Урхас-Кушăк вăрманĕнче
Урлă-пирлĕ уткалать...

Эпир ĕнтĕ иксĕмĕр
Ителмесрен иртрĕмĕр...

Малтарахра эпир М. Федоров хăйĕн халапне А. С. Пушкинăн «Бесы» ятлă поэмине куçарма тытăннă май çырнă, тенĕччĕ. «Арçури» халапра А. С. Пушкин произведенийĕн витĕмĕ мĕн чухлĕ те пулин сисĕнмест-ши? «Бесы» поэмăпа «Арçури» халап — икĕ тĕрлĕ произведени, вĕсене икĕ тĕрлĕ поэт çырнă. Çапах та вĕсене пĕр пекрех туйăмпа, пĕр пекрех интонаципе çырнă теме пулать. Уйрăм йĕркесенчи сăмах çаврăнăшĕсен шухăшĕсем те пĕр-пĕринпе пăртак çывăхрах. Акă Пушкинпа Федоров произведенийĕсенчен илнĕ хăш-пĕр тĕслĕхсем:

1

Мчатся тучи, вьются тучи (П.)
Хура пĕлĕтсем тухаççĕ... (Ф.)

2

Хоть убей, следа не видно (П.)
Йĕп чиксе те куç курмасть (Ф.)

3

Дует, плюет на меня (П.)
Вĕрет, сурать, пусмăрлать (Ф.)

4

Кто их знает? Пень иль волк? (П.)
Те çул маяк, те амак? (Ф.)

5

Закружились бесы разны (П.)
Çавра çил пек çаврăнса (Ф.)

Статьяна вĕçленĕ май çакăн пек калас килет: М. Федоров вырăс литературин ырă традицийĕсене вĕренсе воспитани илнĕ, халăх телейĕшĕн, çутă кун-çулĕшĕн тăрăшса ĕçленĕ. М. Федоров патша саманин чи тĕттĕм тапхăрĕнче, чăваш çырулăхĕ тин çеç пуçланса кайнă вăхăтра хăюллă ĕçе тытăннă — чăваш литературин чи малтанхи оригиналлă произведенине çырнă.

М. Федоров чăваш литературинче халăх пурнăçне туллин, ĕнентерӳллĕн кăтартас, халăхăн шухăш-кăмăлне хумхантаракан ыйтусене çутатса парас традицие пуçарса янă. Унăн произведенийĕн тĕп идейисем — халăх ăс-пуçĕнче çуралнă идейăсем, тĕп сăнарĕсем — халăх хушшинче ӳссе çитĕннĕ ахаль çынсем.

«Ыр çын вилет — ят юлать», тет чăваш ваттисен сăмахĕ. М. Федоров ячĕ — ырă çын ячĕ. Чăваш халăхĕ ăна нихçан та манмĕ, яланах ырă кăмăлпа асăнĕ.

*1956*

## ТАЙĂР ТИМККИ

Чăваш халăхĕ, темиçе ĕмĕр хушши йывăр пусмăрта пурăннă пулин те, Российăри ытти халăхсем пекех, хăйĕн кун-çулне, талантне тăшмансенчен сыхлама, упраса хăварма тӳсĕмпе вăй-хал çитерне. Унăн иксĕлми пултарулăхĕ, таланчĕ, ĕмĕт-шухăшĕ пĕтĕм халăх ĕçĕпе кĕрешĕвĕнче кăна мар, тĕрлĕ вăхăтсенче халăхшăн ĕçлесе, кĕрешсе пурăннă çынсен, тăван халăхăн паттăр ывăл-хĕрĕсен ĕçĕ-хĕлĕнче те палăрса пынă. Чăвашсен çавăн пек çыннисенчен пĕри кăвар чĕреллĕ, пысăк пултаруллă, çутă ĕмĕт-шухăшлă халăх сăвăçи, поэт-революционер Тайăр Тимкки — Тимофей Семенович Семенов пулнă. Унăн литературăри пултарулăхĕ, К. В. Ивановпа Н. В. Шупуççынни тата Н. И. Шелепи пултарулăхĕ пекех, 1905—1907 çулсенчи революци вăйĕпе çуралса тухнă, революцилле шухăшсен витĕмĕпе аталаннă, клас кĕрешĕвĕнче тĕрекленнĕ. Вăл хăйĕн кĕске ĕмĕрне пĕтĕмĕшпех халăх ĕмĕчĕсемпе интересĕсене пурнăçа кĕртессишĕн пурăнса ирттернĕ, пултарулăхне, ĕçне тăван халăха, революцие панă. Халăха панă ĕç çухалмасть, историе кĕрсе юлать, ĕмĕрех пурăнать.

Тайăр Тимкки, чăваш халăхĕн чи чухăн сийĕнчен тухнăскер, хурапа шурра çамрăклах нумай тӳссе курнă, ĕç çыннисен йывăр пурнăçне, вĕсен хуйхи-суйхине, ялти чухăнсене пуянсемпе куштансем мĕн тери хытă пусмăрланине пĕчĕкренпех курса пурăннă, тĕрĕслĕхшĕн тăнă. Вăл, ĕç халăхĕ майлă пулса, хĕрӳллĕ сăвă-юрăсем çырса, тăван халăха пулăшнă, пусмăрçăсене, патша тарçи-тĕрçисене хирĕç революциллĕ кĕрешĕве çĕкленме, харам пырсене ĕнсе çинчен ывăтса яма, чуралăх сăнчăрĕсене çапса ватма уççăнах

чĕннĕ. Çакăнта ĕнтĕ унăн литературăри пултарулăхĕн гражданла хăюлăхĕпе революциллĕ хастарлăхĕ, социаллă тупсăмĕ, кивелми вăйĕпе шухăшĕ,— çакăнтах унăн чăваш литературипе историйĕнчи вырăнĕ.

* * *

...Тимофей Семенович Семенов 1889 çулхи январĕн 15(27)-мĕшĕнче Чĕмпĕр кĕпĕрнинчи, Пăва уесĕнчи Шемек ятлă ялта (ку ял халĕ Тутар республикинчи Пăва районне кĕрет), чухăн хресчен кил-йышĕнче çуралнă. Вăл хăйĕн хушамачĕ вырăнне аслашшĕ ятне (Тайăр) çырма тытăннă. Тайăр старик пур ĕçе те ăста тунă. Тимкка ашшĕ Çимун ятлă, амăшĕ Серафима ятлă пулнă. Çимун хăйĕн ашшĕ пекех пултаруллă çын, паллă ал ăсти пулнă: вăл платник, тимĕрçĕ, механик ĕçне лайăх пĕлнĕ. Çимун-маçтăр уйăхĕ-уйăхĕпе киле çакланмасăр «çын çинче» ĕçлесе çӳренĕ. Анчах та тем чухлĕ ĕçленĕ пулин те, вăл кил-йышĕ валли çурт çавăрмалăх укçа тупайман, ачи-пăчине тутă усрамалăх тырă туса илеймен. Йывăр ĕçпе хуçалнă пирки Тимкка ашшĕ нумаях пурăнайман, вăхăтсăрах çĕре кĕнĕ; амăшĕ тăвата ачапа хĕрарăм вĕççĕн тăрса юлнă. Ачисем виççĕшĕ хĕр, пĕри ывăл пулнă. Пур-çук хуçалăхра арçынсăр юлнă хĕрарăм вара часах мĕскĕне тухнă: уйри анисене пуянсене чи йӳнĕ хакпа е çурмалла панă, ачи-пăчи выçă ларнă. Çитмен пурнăçпа хыпса-çунса пурăнакан амăшĕ те Тимкка тăххăрта чухне вилсе кайнă. Çакăн хыççăн Тимккана кӳршĕ ялти — Пимĕрселĕнчи Тихон Васильев (Тӳре Тихăнĕ) усрава илет (Тихăн хăй те юрлă çын пулнă). Нумай та вăхăт иртмест — Тимккан тăван мар амăшĕ те вилсе каять. Çакăн хыççăн тăлăх-туратăн пурнăçĕ тата та йывăрланать.

1898 çулта Тайăр Тимкки ялти пуçламăш шкула вĕренме кĕрет. Унта вăл тăватă çул (1898—1902) вĕреннĕ, чи лайăх вĕренсе пыракансенчен пĕри пулнă. Çиме çăкăр тата тăхăнма тумтир пулман пирки тăлăх çамрăка вĕреннĕ вăхăтра та пуянсем патĕнче тара кĕрĕшсе ĕçлеме тивнĕ. Анчах капла та пурнăç ăнса пырайман: вара вăл ирĕксĕрех Пимĕрселĕнчи пуп патне тарçа кайса кĕнĕ.

1902 çулта Кивĕ Мертлĕ ялĕнчи йыснăшĕ Г. О. Осипов пулăшнипе Тайăр Тимкки Кӳрен ялĕнчи икĕ класлă шкула вĕренме кайнă. Анчах ăна ку шкула вĕренсе пĕтерме май килмен: пĕр çултан унта вĕренме пăрахнă (хăш-пĕр юлташсем каланă тăрăх, ăна, «шанчăксăр ача» тесе, кăларса янă), çапах та çирĕп шухăшлă, пултаруллă ача, ку шку-

ла вĕренсе пĕтерме ĕлкĕреймен пулин те, шкултан вĕренсе тухнӑ ытти ачасенчен нумайрах пĕлнĕ. Вӑл ялти шкултах тĕрлĕ кĕнекесем вуланӑ, вырӑссен паллӑ писателĕсен хӑшпĕр произведенийĕсемпе паллашма ĕлкĕрнĕ, тарçӑра чухне те кĕнекесем вулас ĕçе манман, икĕ класлӑ шкулта вара тата та нумай вуласа пынӑ.

1903 çулта Тимккана йыснӑшĕ Чĕмпĕре илсе каять. Унта вӑл чӑваш шкулĕн хатĕрленӳ класне кĕрет. Çапла вара Тайӑр Тимкки 1903—1905 çулсенче Чĕмпĕрти чӑваш шкулĕнче вĕренет. Хатĕрленӳ класĕнчен вĕренсе тухсан, унӑн Чĕмпĕрти шкулӑн пĕрремĕш класне кĕмелле пулнӑ. Анчах çулла ялта пурӑннӑ хыççӑн Тайӑр Тимкки Чĕмпĕре кайман (ку шкула вӑл «хӑй ирĕкĕпех» хӑварнӑ теççĕ. Çавӑн пек пулнӑ-ши?). Кĕркунне ĕç шыраса тата вĕренес ĕмĕтпе Тимкка Хусана çитнĕ. Хусанта вӑл, 16 çулти çамрӑк, Тĕп типографине наборщике ĕçлеме кĕнĕ.

Хусанта ĕçлесе пурӑннӑ чухне-те Тимкка хӑйĕн пĕлĕвĕсене ӳстерме тӑрӑшать, вырӑс литературин классикла произведенийĕсемпе тата та тимлĕрех паллашать, революциллĕ писательсемпе поэтсен кĕнекисене тупса вулать.

1905—1907 çулсенчи революци хӑватлӑ хумĕсем чӑваш рабочийĕсемпе хресченĕсене те çĕклентернĕ. Хулари рабочисен пурнӑçĕпе пурӑнма тытӑннӑ чӑваш çамрӑкĕ, хастар чĕреллĕ поэт, часах рабочисен пухӑвĕсене, митингсене хутшӑнма пуçлать, чӑваш рабочийĕсем хушшинче вӑрттӑн кӑларнӑ листовкӑсемпе кĕнекесем сарать. Çакӑн чухнех вӑл пичет ĕçĕнчи рабочисен профессилле союзне кĕрет. Хусанта ĕçленĕ вӑхӑтра Тайӑр Тимкки тутарсен паллӑ революционерĕпе Хусаин Ямашевпа паллашать. Вĕсем тутарсемпе чӑваш ĕç çыннисене хӑйсен клас тӑшманĕсене хирĕç пĕрлешсе кĕрешме чĕннĕ. Вӑл çав çулхинех тата А. Ф. Кузнецов рабочи-большевикпа çывӑх паллашать.

Çакӑн пек лару-тӑрура, 1905—1907 çулсенчи революци кĕрешĕвĕнче, Тайӑр Тимккин шухӑш-кӑмӑлĕ йĕркеленсе пырать. Поэта революци ĕçĕ хавхалантарать. Вӑл пулассишĕн, çĕннишĕн кĕрешет, киввине хирĕç çапӑçава тухать.

1906 çул пуçламӑшĕнче Хусанта чӑвашсен пирвайхи хаçачĕ «Хыпар» тухма пуçлать. Тайӑр Тимкки «Хыпар» хаçата пичетлесе кӑларакан типографире наборщикре ĕçлеме тытӑнать.

Çак тапхӑрта вӑл революцилле сӑвӑсемпе калавсем çырнӑ. Вĕсем: «Чаплӑ вилĕм юрри», «Шухӑш», «Çĕнĕ çул», «Çутта тухасчĕ!», «Пурнӑç çутти», «Выçлӑх çул», «Эрех

сиенĕ» тата ыт. те. Анчах унăн чылай произведенийĕсем кун курайман. Сăмахран, 1907 çулти çуркунне Тайăр Тимккине тĕрмене хупсан, жандармсем, ун хваттерне ухтарса, çак произведенисене илсе кайнă: сăвăсем —«Вăран, çĕклен», «Вилĕм», «Тĕрме», 7—8 ятсăр сăвă, куçарусем —«Крестьянская марсельеза», «Рабочая марсельеза», «Варшавянка», «Интернационал» тата ыт. те, «Кольăпа Миккуль» калав пуçламăшĕ тата ыт. те.

Чăваш халăхне революцие хутшăнма чĕннĕшĕн Тайăр Тимккине патша правительстви 1907 çулхи майăн 31-мĕшĕнче (июнĕн 13-мĕшĕнче) арестленĕ те çав çулхинех ноябрĕн 7(20)-мĕшĕнче судсăр-мĕнсĕрех Томск облаçĕнчи Нарым ятлă вырăна виçĕ çуллăха каторгăна ăсатнă. Çапла вара, çамрăк поэтăн тăван литературăра ĕçлес ĕмĕчĕсем татăлаççĕ, асап, хĕн-хур тăллисемпе тăлланаççĕ.

Тайăр Тимкки ссылкăран таврăннă хыççăн (1911 ç.) пĕр вăхăт хушши Кивĕ Мертлĕ ялĕнче тăванĕсем патĕнче пурăнать. Хĕсĕк пурнăçа тӳсеймесĕр, 1912 çулта, ĕç шыраса, Кавказа тухса каять. Кунта вăл чугун çул çинче ĕçлет. Тайăр çак вăхăтра та революци ĕçне пăрахман: рабочисем хушшинче революциллĕ литература салатнă, демонстрацисем тăвас ĕçе хутшăннă тата ыт. те. Империализм вăрçине хирĕç демонстраци тăвакан рабочисемпе пĕрле пулнăшăн ăна патша хурахĕсем тепĕр хут айăплама тытăннă.

Çав вăхăтра вăл хăйĕн тантăшĕ, Донбасра шахтерта ĕçленĕ Н. Ф. Волков патне пынă. «Тайăр Тимкки...,— тесе аса илет Волков,— кĕтмен çĕртенех ман патăма килсе перĕнчĕ. Анчах та ăна Донбасра нумаях пурăнма тивмерĕ, пĕр çур çул ĕçлесен, тармалла пулчĕ. Тимккана темле политикă ĕçĕшĕн айăплас ĕç хускалнăччĕ. Вăл 1914 çулта, Хусан е Чĕмпĕр хулине каяс шутпа, Донбасран тухса кайрĕ. Тепĕр икĕ кунтан ман хваттере килсе ухтарчĕç, Тимофей Семенова, унăн документчĕсене, хучĕсене шырарĕç».

Ку вăхăт вăрçă вăхăчĕ пулнă. Вăй питти çынсене пĕтĕмпех фронта пухса кайнă. Тайăр Тимккине те патша çарне илеççĕ. Вăл Турцие хирĕç çапăçнă фронтра пулнă. Семенов салтак вăрçăран таврăнайман. Юлашки çырăвне Тимкка 1916 çул вĕçĕнче çырнă. Çав çырура вăл çакăн пек çырнă теççĕ: «Икĕ пуçлă çăткăн ăмăрт кайăк ларакан юпа силлене пуçларĕ, çĕрĕшсе çитнĕ. Часах ишĕлсе анĕ... Эпир перекен пăшалсем патша çине перес вăхăт та инçе юлман». Кун хыççăн вара Тайăр Тимккинчен хыпар-хăнар пулман.

* * *

Тайăр Тимкки — халăхăн чун-хавалне, ĕмĕт-шухăшне ăнланса, патша йĕркине хирĕç кĕрешĕве тухнă поэт-революционер. Вăл, хăйĕн халăхне камсем хĕсĕрленине кашни сăввинче тенĕ пекех кăтартса парса, пусмăрçăсене тĕп тума кирлине çинчен калать. Тайăр Тимкки сăввисенче чăваш ялĕнчи чухăнсен, çитмен пурнăç пирки кил-çурчĕ саланнă, выçă вилес мар тесе, ĕç шыракан хресченсен пурнăçĕн сăн-сăпачĕ курăнса тăрать, унăн сăввисенче рабочисемпе хресченсен ĕçри, кĕрешỹри туслăхĕн идейи те сисĕнет. Çапах та революционерсен сăнарне вăл пуринчен ытла чухăн хресченсене хỹтĕлекенсем, вĕсен пурнăçне лайăхлатассишĕн кĕрешекенсем пек туса кăтартнă. Политикăлла опычĕ çителĕксĕр пирки поэт хăйĕн пултарулăхĕнче пролетариатăн ертсе пыракан вăйне яр-уççăн кăтартса пама пултарайман.

Тайăр Тимкки сăввисенче çĕр ыйтăвĕ (çĕр çитменни, хĕсĕкки, выçлăх аптратни, хулана тухса кайни тата ыт. те) пысăк вырăн йышăнса тăрать. Çак ыйтăва поэт темиçе сăвăра кăларса тăрататъ. Акă, сăмахран, пĕр сăввинче вăл чухăн хресчен пурнăçне çакăн пек сăнласа парать:

Татăк çăкăр тупасшăн,
Çине тумтир çакасшăн
Хăйĕн ĕмĕр иртиччен,
Вăл ватăлса виличчен
Тырă акса пурăнать.
Нуша ĕмĕр выртарать,
Çитмен пурнăç çунтарать.

«Шухăш» ятлă сăвăра «хирте суха хыçĕнче» тем чухлĕ тертленсе çỹресен те, «вăйран кайса ỹкиччен» ĕçлесен те, «çĕрĕн йывăр ĕçĕнче нихçан ырлăх курман», çаплах выçă ларакан чухăн хресчен пурнăçĕ çинчен çырса панă. Поэт каланă тăрăх, ялти чухăнтан инкек-синкек хăпма пĕлмест: унăн акнă тырри шăтмасть — пысăк выçлăх çул çитет, хăш çул тырă пулмасть, тепринче пăр çĕмĕрсе каять,— хресчен каллех, каллех выçă çỹрет, мĕскĕн пурнăçĕпе пурăнать. Поэт çакăн социаллă сăлтавне те ăнланать. Çавăнпа та вăл тỹрех çапла калать:

Пирĕн мĕн пур тар тăкни
Харам пырта саланать...
Йĕри-тавра куççулли,
Йĕри-тавра йынăшни...

Вĕçĕмсĕр тĕнче тулли
Вăйсăр халăх юн тăкни...
Анчах эпир йынăшни
Тута çынна илтĕнмест,
Эпир вĕри хуйхăрни
Сивĕ пÿрте ăшăтмасть,—

тет вăл. Апла пулсан, «мĕскĕн халăхсен» мĕн тумалла-ха? Кампа кĕрешмелле? Кама сирпĕтсе антармалла? Çак ыйтусене асра тытса, поэт, пĕтĕм çиллине пухса, тата та хăюллăрах сăмахсем каласа, халăха çакăн пек сăмахсемпе чĕнет:

Çитĕ пире тертленме!
Пурте перле пухăнар.
Тĕрлĕ харам пырсене
Ĕнсе çинчен пăрахар.

Çапла ĕнтĕ, «Шухăш» ятлă сăвă чухăн хресченсене пĕрле пухăнма йыхăракан, тертлĕ пурнăçăн сăлтавĕсене уçса паракан, революциллĕ кĕрешĕве тухма чĕнекен произведени пулни уççăнах курăнать.

Эсерсем (çав шутра чăваш эсерĕсем те), кулаксен партийĕ пулнăскерсем, обществăри клас хирĕçĕвĕсене курмасăр, «хура халăх» йышши сăмахсемпе вĕçкĕнленсе, ĕç çыннисен ăс-тăнне минретме тăрăшнă пулсан, Тайăр Тимкки татăклăнах чухăнсемшĕн тăрать, шăпах ĕçлесе, тертленсе, асап курса пурăнакансене пĕрлешме йыхăрать.

«Чаплă вилĕм юрри» ятлă сăвăра поэт-революционер чухăн хресченсен интересĕсемшĕн кĕрешнĕ революционера «вăйлă улпутсем» çакса вĕлерме илсе кайни çинчен çырса панă. Автор революционерăн сăнарне яр-уççăн ÿкерсе кăтартайман пулсан та, эпир ăна çав революционерăн сăмахĕсем урлă витĕрех куратпăр. Революционер хăй вилес умĕн те халăх çине çирĕп шанать, никамран хăрамасăр, хăйĕн хăюллă сăмахĕсене калать:

Ман юлашки сăмахсем:
«Пуласси çине шанса,
Хытă тăрăр, халăхсем,
Ан чарăнăр хăраса...
Пуласси шĕн тăрăшăр!..
Ырлăхăра вăрçса илĕр».

Ку сăвăра та Тайăр Тимкки халăха кĕрешме чĕнет, пусмăр йĕркисене тĕп тума, революци пур пĕрех çĕнтересе, малашне çутă пурнăç пуласса шанма чĕнет.

Пусмăрçăсемпе харам пырсене çапса аркатса çĕнĕ

йĕркесем тума кирлине Тайăр Тимкки «Çĕнĕ çул» ятлă сăвăра тата та уççăнрах кăтартса панă. Ку сăвăра та вăл «пĕрлешме, тимĕр сăнчăра татма» кирли çинчен каласа парать:

Килĕр, пĕрле пухăнса,
Çĕнĕ шухăш шухăшлар.
Çĕнĕ çулта савăнса
Кивĕ ĕçе пăрахар.
Пирĕн кивĕ йĕркесем
Кунтан урăх ан пулччăр.
Хальччен пире тытакан
Тимĕр сăнчăр татăлтăр.

Жандармсем тытса илнĕ пĕр сăввинче «хресченсене пĕрле пухăнса тухма, улпутсенчен çĕре каялла туртса илме» чĕнет, «пупсене, улпутсене, патшана эпир ăвăс тăрне çакса вĕлеретпĕр», тет *.

Революци çĕнтерессе шанса, поэт «Çĕнĕ çул» сăвва çакăн пек каласа вĕçлет:

Тата пĕр-ик çул иртĕ,
Çынсем аван пурăнĕç.
Ырă усала çĕнтерĕ,
Çынсем чунтан савăнĕç.

1906 çулта Тайăр Тимкки революци çĕнтерессе питех те хытă шаннă, «пĕр-икĕ çултан» «ырă усала çĕнтерĕ» тесе шутланă, анчах истори кукăр-макăрне пула, пĕр вăхăтра реакци çиеле тухнипе патша йĕрки сывлăш çавăрса илнĕ пирки ырă усала çĕнтересси (революци пуласси) «пĕр-ик çултан» мар, вун-вун икĕ çултан тин çитрĕ. Октябрьти Аслă социализмлă революцире ĕç çыннисем, большевиксен партийĕ ертсе пынипе, пур йышши пусмăра та тĕпĕ-йĕрĕпех çапса аркатрĕç, çĕнĕ йĕркесем туса хучĕç. Çапла вара, Тайăр Тимкки ĕмĕчĕсем ытлашшипех пурнăçа кĕчĕç. Халĕ ирĕклĕ халăх Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе çĕнĕ тĕнче — коммунизм тăвать.

* * *

1907 çулта Тайăр Тимкки «Крестьянская марсельеза», «Рабочая марсельеза» тата «Варшавянка» юрăсене, тĕнчери пролетарисен хăватлă «Интернационал» юррине чăвашла куçарнă, терĕмĕр. Паллах, вăл куçарусем пĕри те кун çути курайман, анчах кĕрешӳ юррисенчи революциллĕ

* Ку цитатăна истори наукисен кандидачĕн П. Н. Николаевăн Мускаври архивра шыраса тупнă материалĕсенчен илнĕ.

шухăшсем Тайăр Тимкки сăввисене витĕрех сăрхăнса кĕнĕ, оригиналлă сăвăсем çырма хавхалантарнă.

«Интернационал» вырăсла чĕлхепе 1902 çулта пичетленсе тухнине шута илсен, Тайăр Тимкки ăна пилĕк çултан (1907 ç.) чăвашла куçарма тытăнни пирĕн халăхшăн, литературăшăн питех те пысăк пĕлтерĕшлĕ ĕç пулса тăрать. Чăвашсен ун чухне пролетариат, рабочи клас пулман, вăл тин çеç çуралса, тытăнса пынă, вырăс пролетариатне пула çамрăклах кĕрешĕве хутшăннă. Çуралакан, çамрăклăхне пăхмасăрах кĕрешĕве ыткăнакан пролетариат валли гимн хатĕрлекен, «Интернационал» юрра чăвашла куçаракан поэт унăн пулас вăйне сиснĕ, шухăшне ăнланса илме тăрăшнă. Поэта тĕрмене илсе кайсан, жандармсем унăн пӳлĕмĕнче тĕрлĕ хучĕсем хушшинче çакăн пек йĕркесем тупнă:

Вăран, çĕклен,
Мĕскĕн хура халăх,
Вăранмашкăн вăхăт çитрĕ!..
Пире патша та,
Турă та
Çăлас çук...

Ку вăл «Интернационал» шухăшĕ мар-и, унăн идейисен витĕмĕ мар-и? Пирĕн шутпа, ку — шăпах çав юррăн вилĕмсĕр идейи, унăн хăватлă кĕвви! Çакна шута илсе, эпир Тайăр Тимкки çинчен: вăл — пролетариатпа çывăх тăнă поэт теме пултаратпăр. Патша влаçĕ революциллĕ поэта, халăхран уйăрса, пурнăçран тăпăлтарса илсе, тĕрмерен тĕрмене, этапран этапа çитерсе, сивĕ Çĕпĕрте асапалантарман пулсан, таçта, темскерле вилĕмпе вĕлермен пулсан,— Тайăр Тимкки таланчĕ сарăлса çитнĕ пулĕччĕ, революциллĕ поэт интернационал çулĕпе малалла кайнă пулĕччĕ.

* * *

В. Г. Короленко çырнă «Огоньки» ятлă произведение чăвашла куçарса, Тайăр Тимкки «Хыпар» хаçатра пичетлесе кăларнă. Ăна вăл чăвашла «Вут куçĕ» тенĕ. Лайăх, илемлĕ калана! Пĕр сăмаха çавăн пек ăста куçарнинче те унăн таланчĕ вут пек çиçсе тăрать.

Поэтăн «Çутта тухасчĕ!» тата «Пурнăç çутти» калавĕсем (тĕрĕсрех каласан: прозăпа çырнă сăввисем) иккĕшĕ те Короленкăн «Вут куçĕ» сăвви майлă.

«Çутта тухасчĕ!» ятлă пĕчĕк калавĕнче поэт ĕç халăхĕн çутта тухас туртăмĕ çинчен каласа парать. Калавра герой,

халăхăн тĕттĕмлĕхне курса, уншăн пăшăрханса, халăх хушшинчи çĕнĕ туртăмсене ырлать.

«Пурнăç сутти» калавра Тайăр Тимкки тĕрĕслĕх хĕвелне мухтать: тĕрĕслĕх хĕвелĕ кăштăн-кăштăн çутăлса ерипен çӳлелле хăпарать, тĕнчене ăс парать. Çапла вара, тĕрĕслĕх хĕвелĕ пурнăç сутипе тĕл пулать. Çакăн чухне тĕрĕслĕх хĕвелĕ пурте илтмелле çакăн пек калать:

«Килĕр ман патма, маншăн хурлăх куракансем. Килĕр ман патма, ман пирки урăр-аллăра сăнчăрласа, çуралнă çĕршывăрта чунăра хаклă сынсемпе уйăрăлса, инçете хурлăх курма янă çынсем... Эсир маншăн нумай асап курмалла пулнă... Эсир маншăн хăвăра хăвăр шеллемесĕр, сивĕре те, çумăрта та начар тумтирпе чăтса çӳрерĕр. Халиччен маншăн мĕнле асап курнине те манăр!.. Тĕнче пулнăранпа сирĕн юлташăрсем, эсир пыракан çулпа пырса, мĕн шыранине тупас тесе тăкнă юна пурне те пĕр çĕре пухсан, сирĕн юнăра çĕр çĕклесе тăраймĕ. Тăрăр ĕнтĕ, маншăн юн тăкса вилнĕ çынсем, килĕр кунта, пĕр çĕре пухăнса савăнар!.. Сире, хĕн-хур куракансене, пурне те йăпатăп. Пирĕн вара çĕр çинче халиччен пулман савăнăç пулĕ».

Поэт калав вĕçĕнче çакăн пек пĕтĕçтерсе калать: хĕн-хур курса пурăнакансем кайран телей тупĕç, вĕсене хирĕç тăракансем ĕмĕрхи хурлăха кĕрĕç.

Кивви урăх ан пултăр, ун вырăнне çĕннине тăвар! Тĕттĕм путлантăр, ун вырăнне пурнăç хĕвелĕ, пурнăç çути килтĕр!— çакăн пек Тайăр Тимкки пултарулăхĕн тĕп шухăшĕ. Анчах çĕнĕ тĕнче хăй ăссĕнех килме пултарайман. Ăна патша йĕркине аркатса, патшана, харам пырсене, мул хуçисене пĕтерсе çеç тума пулнă. Çакна поэт-революционер лайăхах ăнланнă, революциллĕ майсемшĕн тăнă.

Писатель тăван халăхшăн ĕçлессине, ăна çутта кăларассине пысăк ĕç тесе шутланă. Вăл çутталла туртăнакан, çĕнĕ çул шыракан, тăшмансене хирĕç кĕрешекен халăх çине йĕрĕнсе улпутла пăхакансене хытă сивленĕ. «Çутта тухасчĕ» калавăн геройĕ çавăн пек этемсем çинчен çапла калать: вĕсем «çутăра çӳресен те, ыттисене çутă курма вĕрентиччен аллисене туя тыттараççĕ».

Пичетленмен сăввинче тата поэт вĕсене çакăн пек каласа ятлать:

Вăхăт иртет, сисĕнмест
Кунпа çулсем улшăнни.
Сирĕн ĕçсем курăнмасть,—
Ялан халăх хуйхăрни!

Сире халăх вĕрентме
Нумай укçа салатрĕ,
Сире çынна кăларма
Пĕтĕм вăйпа тăрăшрĕ.
Ухмах! Эсĕ халăха
Мĕскер усă кăтартрăн?
Вызлăх, пысăк хурлăха
Мĕскер ĕçпе пĕтертĕн?

Тайăр Тимкки мул хуçисене, патша тарçи-тĕрçисене, çут тӳмеллĕ улпутсене, вăрăм çӳçлĕ, хĕрес çакнă шампа хырăмсене, чиновниксене, сутăнчăк интеллигентсене тата ытти çавнашкал йăх-яхсене чун-чĕререн курайман. Çав вăхăтрах вăл, хăйĕн воспитанине пула, революционер чĕрине, ăс-тăнне пула Тăван çĕршыва — аслă Российйăна, чăваш çĕршывне, ялĕсене, уй-хирĕсене, улăх-вăрманĕсене ытарайми юратнă, халăх телейĕшĕн, çĕршыв пуласлăхĕшĕн пĕтĕм вăйпа тăрăшнă. Çавăнпа та вăл чăваш ĕç çыннисене çакăн пек чĕннĕ:

Атьăр, тăвансем, ан хăрăр,—
Хамăр çĕршĕн тăрăшар!

* * *

Тайăр Тимкки хăйĕн сăввисене çичĕ сыпăклă виçепе (силлабикăпа) çырнă. Анчах та, çав ансат та йăваш виçепе çырнă пулин те, унăн сăввисенче вĕри те çивĕч туйăмсем палăраççĕ. Ку, паллах, поэтăн ăсталăхне, калас тенĕ шухăшĕсене калама пĕлнине кăтартса парать. Тайăр Тимккин калавĕсем илемлĕ, паха чĕлхепе çырнă произведенисем шутне кĕреççĕ. Вĕсем ахаль калавсем мар, Тургенев пек, Короленко пек прозăпа çырнă илемлĕ сăвăсем, ăсра, чĕрере юлакан произведенисем.

...Тайăр Тимкки,— Тăхăр ял таврашĕнче, ĕç вăхăтĕнче те, ĕçкĕ-çикĕ, уяв вăхăтĕнче те юрă-сăвă кĕрлесе тăракан, сарăнсан та, хуйхăрсан та юрлакан чăвашсем хушшинче ӳсе çитĕннĕскер,— чăваш фольклорне лайăх пĕлнĕ. Вăл чăвашла та, вырăсла та селĕм калаçнă, юрăсем нумай пĕлнĕ, юрлама, çынсемпе калаçма юратнă. Тайăр Тимкки Чĕмпĕрти чăваш шкулĕнче Константин Ивановпа пĕрле вĕреннĕ, пĕр парта хушшинче ларнă. Икĕ поэт, икĕ хастар чĕре, урoксене те пĕрле хатĕрленĕ, пĕр-пĕрне вĕренӳре пулăшнă. Вĕсен поэзийĕ, ĕмĕт-шухăшĕ патша саманинче кĕрхи тĕттĕмре çунса тăракан çăлтăрсем пек куранса тăнă.

Пире тата çакă савăнтарать: Тайăр Тимкки тутарсен паллă поэт-революционерĕпе Габдулла Тукайпа та туслă

пулнă. Вĕсем иккĕшĕ, пĕр-пĕринпе тĕл пулсан, тутарпа чăваш халăхĕсен кун-çулĕ, литератури çинчен калаçнă, яланах пĕр-пĕрне ăнăçлăх суннă.

...Тайăр Тимкки хăйĕн çăлтăр пек çутă таланчĕпе пултарулăхне халăх ăс-хакăлĕпе пуянлатса, халăхăн ĕмĕр сӳнми ĕмĕт-шухăшĕпе сарса, пролетариатăн революциллĕ хастарлăхĕпе çĕклентерсе пынă пулсан,— вăл хăйне вĕрентсе ӳстернĕ халăх умĕнче парăмра юлман: хăйĕн пархатарлă ĕçĕпе, революциллĕ кĕрешĕвĕпе, вилĕмсĕр сăвви-юррисемпе ĕç халăх ăс-тăнне, шухăшĕсене çĕнетсе революцилентерес тĕлĕшпе, халăха хăйĕн тăшманĕсене палласа илме вĕрентес тĕлĕшпе калама çук пысăк ĕç тунă. Тайăр Тимккин революциллĕ сăввисем мĕн Октябрьти революцичченех чăваш ĕç çыннисене хăйсен ирсĕр тăшманĕсене хирĕç çĕкленме чĕнсе тăнă, малалла утма, революци тума чĕннĕ. Акă мĕншĕн эпир Тайăр Тимкки çинчен: вăл — чăваш халăхĕн революциллĕ туртăмĕсене яр-уççăн кăтартса панă поэт, вăл — халăх поэчĕ, кĕрешӳ йыхравçи, пролетариллĕ кĕрешӳ çулĕ çине çирĕп тăнă хастар поэт-революционер тетпĕр. Çавăнпа ĕнтĕ чăваш халăхĕ, щиксĕр революционерăн, поэт-патриотăн чаплă ĕçĕсене асра тытса, унăн тава тивĕçлĕ ятне яланах ăшă сăмахпа асăнать, пин-пин чĕрере усрать.

*1959—1962*

## КОНСТАНТИН ИВАНОВ

К. В. Иванов — чăваш поэзийĕн классикĕ, халăх юрăçи. Революциччен ăна малтанхи вăхăтра чăвашсен Чĕмпĕрти пĕчĕк шкулĕнче вĕренекен ачасемпе вĕсене вĕрентекенсем çеç пĕлнĕ. «Нарспи» поэмă пичетленсе тухсан, ăна чăваш шкулĕнче вĕренекен чăваш ачисемпе хĕрĕсем чăваш ялĕсене илсе кайса халăх хушшине сарсан, хут вĕреннĕ çынсем вуласан, хут пĕлменнисене вуласа е каласа парсан, чăваш халăхĕ хăйĕн чаплă поэчĕ çуралнине çинчен пĕлнĕ. Октябрьти Аслă социализмлă революци хыççăн вара чăваш çĕршывĕнче тата чăвашсем пурăнакан ытти вырăнсенче К. В. Иванова пĕлмен çын юлман. Халĕ унăн вилĕмсĕр поэмине вырăсла, украинла, тутарла, пушкăртла, марилле, удмуртла куçарса кăларнă май чăваш поэчĕн ячĕ пĕтĕм Совет çĕршывĕпех сарăлчĕ.

1961 çулта «Нарспи» Болгарире — Совет çĕршывĕпе юнашар социализмлă патшалăхра — пăлхар чĕлхипе пичетленсе тухнă. Пурăна киле вăл урăх çĕршывсенчи ытти халăхсен чĕлхисемпе те çапăнса тухĕ тесе шанас килет: «Нарспи» поэмăн тĕп шухăшĕ нихăш халăхшăн та ют мар, унăн илемлĕхĕ, эстетикăлла пуянлăхĕ пурне те килĕшет.

* * *

Константин Васильевич Иванов 1890 çулхи майăн 15(27)-мĕш кунĕнче Епхӳ кĕпĕрнинче (халĕ Пушкăрт АССРĕ), Пелепей уесĕнче, Слакпуç ятлă ялта, чăваш хресчен кил-йышĕнче çуралнă.

Халĕ тĕпчесе пĕлнĕ тăрăх, çакă курăнать: Ивановсен йăхĕ ĕлĕк-авал Атăл тăрăхĕнче пурăннă. XVII—XVIII

ĕмĕрсенче патша чиновникĕсемпе çĕр улпучĕсем тата та хытăрах хĕсме тытăнсан, хăш-пĕр чăвашсем, тӳре-шара пусмăрне, хырçă-марçăсене тӳсеймесĕр, Пушкăрт çĕршывне куçса кайнă. Вĕсем хушшинче Ивановсен йăхĕ те пулнă.

К. В. Иванов хăй каланă тăрăх, вĕсен аслашшĕ Пушкăрта пырса вырăнаçсан, вăрманта кашкăр тытса пурăннăран, ăна Кашкăр теме тытăннă. «Манăн,— тет Иванов,— тӳрĕ асаттесем ак çаксем: Кашкăртан — Кашкăр Иванĕ, Кашкăр Иванĕнчен — Çимун, Çимунран — Никулай Писсăр, Никулай Писсăртан — Ваçинка-пуян, Ваçинкаран — эпĕ Кĕçтук...»

Çак «несĕл йывăççинчен» «Иванов» хушамат хăш сыпăкра пулса кайни тата Ивановсен ашшĕ-амăшĕ пуян пулни курăнать (Кĕçтук ашшĕне ялта «Ваçинка-пуян» тесе чĕннĕ).

Сакăр çула çитсен, 1898 çулта, вăл пуçламăш шкула вĕренме кĕнĕ. 1901 çулта Кĕçтенттин Кекен ялĕнчи шкула вĕренме куçнă. Ку шкулта унăн Евгения Николаевна ятлă мăн аккăшĕ учительницăра ĕçленĕ. 1902 çулта вăл Пелепей хулинчи шкула каять. Анчах ку шкулта Иванов нумаях вĕренеймест. Пелепейри шкулта патша правительстви чĕртсе пыракан наци хирĕçĕвĕ питех те вăйлă пулнă. Çамрăк Константин, çав тискер йĕркене тӳсеймесĕр, шкула пăрахать те тăван ялне таврăнать. «Унта ăна, йăвашскерне,— тет К. Ивановăн аслă йăмăкĕ Мария Васильевна,— хула ачисем кӳрентернĕ пулас. Çавăнпа вăл тепĕр çулхине, Пелепейре начар тесе, Чĕмпĕрех вĕренме кайрĕ».

Пулас поэт ир те, каç та вĕренесси çинчен шухăшланă. Вĕренмесен çын пулаймăн, тĕттĕмре çухалса кайăн, тăван халăхшăн нимле усă та тăваймăн,— çакăн пек пулнă Ивановăн çамрăк чĕрине ыраттаракан шухăшсем.

1903 çулхи кĕркунне Константин Иванов Чĕмпĕрти чăваш шкулне пырса кĕрет. Малашне вара унăн кун-çулĕ, пĕтĕмĕшпе илсен, кĕпĕрне хулинче — Чĕмпĕрте иртет.

Поэт пулма ĕмĕтленекен çамрăк Константин Иванов вырăс литературин классикĕсен: Пушкин, Лермонтов, Кольцов, Некрасов, Тургенев. Толстой, Горький тата ыттисен произведенийĕсене юратса вулать. Хушăран унăн аллине Чернышевский, Герцен, Огарёв тата ытти писательсем çырнă кĕнекесем те лекеççĕ. Сăмахран, çакă паллă: вăл Н. Г. Чернышевскин «Мĕн тумалла?» ятлă романне тупса вуланă. Çав вăхăтрах Иванов чăваш чĕлхипе çырнă малтанхи произведенисемпе те паллашать. Вĕсенчен пĕри

М. Ф. Федоровӑн «Арҫури» халапӗ, тепри — Г. Т. Тимофеевӑн «Тӑхӑр ялӗ» пулнӑ. Кунта вӑл И. Я. Яковлевпа Игнатий Ивановӑн калавӗсемпе те паллашнӑ.

Вырӑс классикӗсен сӑвви-юррисемпе, калав-повеҫӗсемпе тата чӑваш писателӗсен ал ҫырӑвӗсемпе паллашни Ивановӑн кӑмӑлне ҫӗклентерсе ярать, чӑваш чӗлхин пуянлӑхне, хӑйӗн пултарулӑхӗн вӑйне тарӑнрах туйса илме пулӑшать.

1905—1907 ҫулсенче Российӑра пӗрремӗш революци пулса иртет. Ҫакӑн чухне Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче вӗренекен ачасем хушшинче те революциллӗ шухӑшсем палӑрма пуҫлаҫҫӗ. Сӑмахран, унта 1906 ҫулхи ноябрь уйӑхӗнче шкулта вӗренекенсен забастовки пулса иртет. 1907 ҫулхи январӗн 10-мӗшӗнче 1-мӗш класра вӗренекен 34 ача шовинистла шухӑш-кӑмӑллӑ Д. И. Кочуров преподавателе хирӗҫ ҫырнӑ ҫырӑва алӑ пуснӑ. Ку преподаватель шкулта вӗренекен ҫамрӑксене усал сӑмахсемпе кӳрентернӗ.

Пӑлханакан чӑваш ҫамрӑкӗсем вӗренӳ программисене анлӑлатма, вырӑс мар халӑх ачисене аслӑ шкулсене кӗмешкӗн ирӗк пама ыйтнӑ, вӗренекенсене хӑйсен пӗлӗвне ӳстерме кирлӗ кӗнекесене ирӗклӗн вулама, театрсене ҫӳреме чармалла мар тенӗ. Ҫаксем К. В. Иванова та хавхалантарнӑ.

1907 ҫулхи мартӑн 5-мӗшӗнче, Государствӑн II-мӗш думине уҫнӑ вӑхӑтра, Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче вӗренекенсем политикӑллӑ митингсем тӑваҫҫӗ, юрӑхсӑр учительсене (сӑмахран, Кочурова) шкулта вӗрентес ӗҫрен кӑларма ыйтаҫҫӗ. Митингра политикӑллӑ сӑмахсем тухса калаҫҫӗ, революциллӗ юрӑсем юрлаҫҫӗ. Ҫав политикӑллӑ митингсенче пулнӑшӑн 1907 ҫулхи мартӑн 7-мӗшӗнче шкултан 37 вӗренекене кӑларса янӑ. Вӗсем шутӗнче Константин Иванов та пулнӑ. Ҫакӑн хыҫҫӑн вӑл тӑван ялне, Слакпуҫне, таврӑннӑ.

Историрен акӑ мӗн курӑнать: 1905—1907 ҫулсенчи революци обществӑри ҫӗнӗ вӑйсене малти вырӑна кӑларса тӑратнӑ. Ҫак революци тӗлне ун пек вӑйсем чӑвашсем хушшинче те ҫитӗнсе пынӑ, кивӗ вӑйсене хирӗҫ кӗрешнӗ; ҫав кивӗ вӑйсемпе ҫӗнӗ вӑйсем хушшинчи хирӗҫӳсем тарӑнлансах пынӑ, тӗрлӗ формӑсемпе палӑрнӑ. Ку историллӗ процес чӑваш халӑхне те, Российӑри ытти халӑхсемпе пӗрлех, 1905—1907 ҫулсенче ҫӗкленсе кайнӑ революцие хутшӑнтарасси патне илсе ҫитернӗ.

К. В. Ивановӑн литературӑри таланчӗ шӑпах пӗрремӗш революци тапхӑрӗнче йӗркеленме тытӑннӑ, вӑй илсе пынӑ.

1906 çулта çамрăк поэт вырăссен «Отпустили крестьян на свободу» ятлă юрри тăрăх çакăн пек сăвă çырать:

Хура халăха ирĕке янă
Нарсăн вун тăххăрмĕш кунĕнче,
Анчах çĕр халăха пулаймарĕ,—
Ак сире улпутсен ырлăхĕ!

Вăранăр, тапранăр, чăваш çыннисем!
Тапран эс вăрçма, выçă халăх!
Халăх хăй çиллине кăтарттăр!
Малалла, малалла, малалла!

«Нарспи» поэмă — 1905—1907 çулсенчи революци вăхăтĕнче пулса çитнĕ произведени. Унта, çав революциччен-хи вăхăта кăтартнă пулин те, пĕтĕмĕшпе илсен, пĕрремĕш революци панă шухăш-кăмăл уççăнах сисĕнсе тăрать. 1905—1907 çулсенчи революцисĕр çавăн пек вăйлă произведени пулма пултарайман пулĕччĕ. Çаксене шута илсе, эпир: «Нарспи» вăл чăннипех те пĕрремĕш революци панă парне пулса тăрать, теме пултаратпăр.

«Нарспи» поэмăра сăнласа панă чăваш ялĕ уççăнах социаллă сийсем çине пайланса тăрать: пĕр енче — пуянсем, тепĕр енче — чухăнсем (паллах, ун чухнехи чăваш ялĕнче вăтам хресченсем те пулнă, анчах Иванов вĕсене кăтартса парас тĕллев лартман). Пуянсем — Михетерпе Тăхтаман; чухăнни — Сетнер. Силпи ялĕ, тулашĕнчен пăхсан, тӳлек те патриархаллă ял пек курăнать, анчах унăн шалти пурнăçне пысăк социаллă хирĕçӳсем таткаласа тăраççĕ. (Ас тăвăр-ха: Михетер çичĕ тарçă тытать!) Шăпах çав хирĕçӳсене илемлĕ литературă меслечĕсемпе уçса пани çинче никĕсленсе тăрать ĕнтĕ Иванов поэми. Революци поэта çав вăхăтри хирĕçӳсене тарăнрах ăнланса илме пулăшнă.

* * *

...«Нарспи» поэмă çур ĕмĕр ытла ĕнтĕ вулакансен чĕринчен тухма пĕлмест,— пачах урăхла, вăл халăх чĕрине, шухăш-кăмăлне шаларах та шаларах кĕрсе пырать.

Мĕншĕн-ха вăл çавăн пек? Мĕншĕн «Нарспие» кашниех юратса вулать? Мĕншĕн ăна ваттисем çеç мар, совет саманинче çуралса ӳснĕ çамрăксем те чун-чĕререн кăмăллаççĕ? Мĕншĕн çак поэмă кивелме пĕлмест?

Мĕншĕн тесен «Нарспие» пурнăç çуратнă, вăл пурнăçпа ӳснĕ, пурнăçпа тан утакан поэмă. Унăн тĕп никĕсĕ — пурнăç хăй, гуманизм.

Мĕншĕн тесен «Нарспи» — халăх кăмăлне палăртса

çырнă произведени. Унта эпир халăхăн чи паха шухăш-туйăмĕсене тупатпăр. Вĕсем халĕ те пирĕн чĕресен хĕлĕхĕсене ăшшăн перĕнсе, чунăмăрсене лайăх ырă сийсем кĕртсе, хавасланăхпа юрлаттараççĕ.

Мĕншĕн тесен «Нарспи»— этем тивĕçлĕхĕпе, граждан-лăх шухăшĕпе пурăнма вĕрентекен произведени. Вăл çам-рăклăх вăйĕпе, пурнăç туртăмĕпе çиçсе тăрать. Кирĕк-тусан çĕнеймест, тĕксĕмлĕх сăнĕ витеймест ăна.

«Нарспи»— этемĕн ырă шухăшĕсене, ĕмĕчĕсене хуска-такан, чăннипех те ырра вĕрентекен илемлĕ произведени; вăл — çуркунне юрри, çурхи хĕвел ăшши, ешĕл вăрманăн, йывăççен, чечексен шăрши, çурхи вĕçен кайăксен сасси; вăл — шыв-шурăн кĕмĕл шăнкăравлă сасси...

Çакă вăл акă мĕнрен килнĕ: Константин Иванов поэт-демократ пулнă; унăн поэзийĕ — пĕтĕмпех гражданла поэ-зи; унăн сасси — самана сасси. Вăл тата çакăнтан та килнĕ: Иванов произведенийĕн никĕсĕнче выртакан эстетикăллă тĕп принципсем халăх тунă ĕçсен илемлĕхĕнчен, унăн кĕре-шĕвĕнчен тухса тăраççĕ. К. Ивановăн эстетикăллă ăнланă-вĕсем халăхăн малта пыракан сийĕсен эстетикăллă ăнланă-вĕсем пек пулнă. Вăл пысăк та вăйлă туйăмсене пит те пысăк ăсталăхпа сăнласа панă.

Чăн-чăн поэт яланах халăхпа пĕрле пурăнать, халăхпа пырать. Унăн вырăнĕ ĕмĕрех малта, прогрессивлă шухăш-сем пĕрлешсе тăнă çĕрте. К. Иванов ĕнтĕ шăпах çавăн пек поэт пулнă. Çавăнпа вăл, малта пырса, кивĕ йĕркене хирĕç, унăн тарçи-тĕрçисене хирĕç кĕрешӳ хĕрсе пынă чухне, чăваш халăхне «вăранма», «тапранма» чĕннĕ.

Çакă уççăнах курăнать: Нарспипе Сетнер — иккĕшĕ те кĕрешекен çамрăксем, иккĕшĕ те хăйсен пĕтĕм вăйĕпе ма-лалла, пурнăç патне туртăнакан çынсем. Акă аса илер-ха, сăмахран, Нарспипе Сетнерĕн çӳллĕ валак патĕнче калаçнă сăмахĕсене. Поэт çав сăмахсенче «ăрăскала» кивĕ тĕнчене хирĕç пыракан кĕрешӳре çапăçса илме чĕнет.

— Çаплах вара, Нарспиçĕм,  
Çук-ши манăн ăрăскал?  
Çаплах сана ют çĕре  
Илсе кайĕ-ши усал?—

тесе ыйтать Сетнер. Нарспи те çавăн пек ыйтăвах лартать:

— Тăшман ытла хаяр, тет,  
Епле унтан хăтăлас?  
Сетнер, Сетнер, кала-ха,  
Ăçта каяс, мĕн тăвас?—

тет вăл. Сетнер вара акă мĕн калать:

— Пĕртен пĕрех пуçăм пур,
Вĕри юнлă чĕрем пур,
Ватă карчăк аннем пур,
Урхамах пек утăм пур,

Вĕсенчен те хаклăрах,
Чунăм савни, эсĕ пур,
Анчах сана та паян
Туртса илен тăшман пур,

Вăл тăшмана пĕтерме
Икĕ вайлă аллăм пур,
Анчах ăна пĕтерсен,
Унтан усал тĕнче пур.

Сетнер шухăшĕ поэмăра сарăлсах, çĕкленсех пырать. Вăл социаллă шухăш пулса тăрать. Арăскал тупас тесен, пуянсемпе кĕрешмелле, усал тĕнчепе кĕрешмелле,— çакă вăл поэмăн тĕп шухăшĕ. Ку тата çав вăхăтрах К. Иванов пултарулăхĕн тĕп туртăмĕ пулса тăрать.

К. Ивановшăн пуринчен те илемли — вăл пурнăç хăй. Вăл, Нарспипе Сетнерĕн сăнарĕсене поэзи меслечĕсемпе ӳкерсе, çав чи илемлĕ япалана, урăхла каласан, шăпах пурнăçа юратма, уншăн кĕрешме чĕнет.

Анчах «Нарспи» поэмă пурнăçпа мар, вилĕмпе вĕçленет (Сетнер те, Нарспи те пĕтет). Çапах та, Нарспипе Сетнерĕн пурнăçĕ поэмăра тĕп вырăн йышăнса тăни, вĕсен кĕрешĕвĕ, вĕсен таса та илемлĕ, вăйлă та тарăн юратăвĕ пире малтанах çирĕп кăмăл парать те, Нарспипе Сетнерĕн вăхăтсăр вилĕмĕшĕн пирĕн çилĕсен хаярлăхне Тăхтамансене, Михетерсене хирĕç çĕклет. Çавăн чухне вара куç умне Сетнер тухса тăнăн туйăнать. Нарспи калана сăмахсем, юрлана юрăсем кĕретĕнех илтĕннĕ пек туйăнать.

Нарспи ашшĕ-амăшĕ хăйĕн хĕрне ирĕксĕрех ватă çынна качча параççĕ. Поэт ватă упăшкан, çамрăк арăмăн сăнарне, шухăш-кăмăлне калама çук ăста кăтартса парать.

Нарспи питех те çамрăк, Нарспи — хитре чечек:

Ешĕл курăк хушшинче
Сап-сарă чечек ӳсет,
Аслă Силпи ялĕнче
Нарспи ятлă хĕр ӳсет.
Пичĕ-куçĕ пит хӳхĕм,
Хирти сарă чечек пек.
Икĕ куçĕ хуп-хура,
Икĕ хура шăрçа пек.
Явăнаççĕ хыçалта

Çивĕт вĕçĕ кăтрисем.
Утса-утса пынă чух
Шăнкăртатать тенкисем.
Куçĕсемпе пăхнă чух
Каччăн чĕри çĕкленет.
Çӳхе тути кулнă чух
Каччăн чунĕ çемçелет.
Хирти сарă чечеке
Ашă куçпа кам пăхмĕ?
Ун пек лайăх хитре хĕре
Мĕнле каччă юратмĕ?

Акă Тăхтаман —«чипер каччă», «пуян кĕрӳ»:

Лаптăк сăмса, хĕсĕк куç,
Сарă çӳçпе сар сухал;
Лаши вĕçсе пырупа
Пичĕ-куçĕ пит усал.
Хура сăхман, сар çĕлĕк,
Çамки çинче тенкĕпе;
Шурă чăлха-çăпата
Пит килĕшет кĕрĕве.

Тăхтаман Нарспие качча илет те («çаклатса каять те») хăй ватă, арăмĕ çамрăк пулнине сисе пуçлать. «Мĕн тумалла-ха? — шутлать пулмалла вăл.— Эпĕ ватă, тинех çамрăк пулаймăп. Нарспи çамрăк. Вăл ватăлма пултарать... Эппин хам çамрăкланаймастăп пулсан, арăма ватăлтарас!»

Мĕнле ватăлтарать-ха Тăхтаман çамрăк Нарспие? Ырă кĕрӳ Тăхтаман, туй кĕлетне ас туса, арăмне куллен-кун саламатпа кастарать, тĕрлĕ асап кăтартать. Ирсĕр Тăхтаманăн усал кăмăлне, психологине кăтартса, Нарспие мĕншĕн хĕненине палăртса, ват упăшкана тăрăхласа, поэт çапла çырать:

Хĕне, хĕне, Тăхтаман,
Чунне кăлар унăнне!
Асаплантар, Тăхтаман,
Хурсам йытă вырăнне!
Хĕне, хĕне. Тăхтаман,
Санран çамрăк ан култăр!
Асаплантар, Тăхтаман,
Нарспи часрах ватăлтăр!
Анчах кайран хăвăнах
Ӳкĕнмелле ан пултăр!..

Паллах, çынна çакăн пек ватăлтармалли «меслете» ватă Тăхтаманăн хĕсĕк пуçĕ çеç шухăшласа кăларма пултарнă. Ял идиотизмĕ, унăн çĕр тĕпĕнчи пек шăплăхĕпе тамăкри пек шавĕнче çуралнă «закон»,— акă вăл Тăхтаман «меслетне» упракан вăй. Упăшки арăмне йытă вырăнне

хурса хӗнет, асаплантарса чунне каларать. Анчах Нарспи хутне ашшӗ-амӑшӗ кӗмест. Мӗншӗн тесен вӗсем пурте, Михетерсемпе Тӑхтамансем, пӗр пек ӗмӗт-шухӑшпа пурӑнаҫҫӗ, пӗр урапа ҫинче ларса пыраҫҫӗ.

«Нарспи» поэмӑн литературӑпа историри вырӑнӗ, унӑн эстетикӑллӑ пӗлтерӗшӗ калама ҫук пысӑк. К. В. Иванов произведенийӗсем пирӗн ҫамрӑк ӑрусемшӗн уйрӑмах паха. Ҫак чаплӑ поэтӑн, классикӑн, поэт-гражданинӑн, ҫамрӑксемшӗн кӑмӑллӑ мар произведени пӗрре те ҫук. Пирӗн ҫынсем унӑн произведенийӗсене пӗчӗклех юратса вулаҫҫӗ, мӗн ватӑличченех ырлаҫҫӗ.

...«Нарспи» поэмӑн сӑвӑллӑ форми — ҫӗнӗ формӑ мар. Вӑл чӑваш халӑх юррисен ҫичӗ сыпӑклӑ форми, ансат формӑ. К. В. Иванов, ҫав формӑпа пултаруллӑ усӑ курса, хӑватлӑ произведени —«Нарспи» поэмӑ ҫырнӑ, ҫакӑн пек тума, пирӗн шутпа, пысӑк талантлӑ поэт ҫеҫ пултарнӑ. Ҫак енчен пӑхсан, Ивановӑн пултарулӑхӗ, ӑсталӑхӗ мӗн тери вӑйлӑ пулни тата та уҫҫӑнрах курӑнать. К. В. Иванов таланчӗ — хӑватлӑ, ҫутӑ талант.

Константин Иванов вӑхӑтӗнче чӑвашсен аталанса ҫитнӗ литературӑ чӗлхи пулманпа пӗрех. Паллах, унччен те чӑвашла калавсемпе сӑвӑсем ҫыракансем пулнӑ, сӑмахран, М. Ф. Федоров 30 ҫул ӗлӗкрех «Арҫури» халап ҫырнӑ, И. Я. Яковлев хатӗрленӗ чӑваш букварӗсенче пӗчӗк калавсем ҫапӑннӑ. Анчах вӗсем, тӗрӗссипе каласан, чӑваш литературӑ чӗлхине чӑннипе пуҫарса яма пултарайман-ха, танлаштарса калас-тӑк, вӗсем малтанхи кирпӗчсем ҫеҫ пулнӑ-ха. Шутлатӑн та тӗлӗнсех каятӑн: пӗтӗмӗшпех аталанса ҫитнӗ литературӑ чӗлхи пулман чухне «Нарспи» пек вӑйлӑ та илемлӗ произведени ҫырма мӗн тери хӑватлӑ талант, хӑватлӑ ӑс, пысӑк шанчӑк, мӗн тери пысӑк хӑюлӑх кирлӗ пулнӑ! Ивановӑн вара пурте пулнӑ,— унӑн талантпа ӑс та, хӑюлӑхпа шанчӑк та, вӑй-хӑват та пулнӑ! Ҫавӑнпа ӗнтӗ эпир ҫак чаплӑ поэт чӑваш поэзине, илемлӗ литературӑ чӗлхине пуҫарса янӑ, тетпӗр.

* * *

«Нарспи» поэмӑна К. В. Иванов 1907 ҫул вӗҫӗпе 1908 ҫул пуҫламӑшӗнче ҫырса пӗтернӗ пулмалла. 1908 ҫулхи кӗркунне вара ӑна, халӑх хушшинче ҫырса илнӗ произведени тесе, «Чӑваш халапӗсемпе юмахӗсем» ятлӑ кӗнекере пичетлесе кӑларнӑ.

К. В. Иванов «Нарспие» ҫыриччен хӑйӗн ытти произ-

веденийёсене çырса хăш-пĕр таран опыт туяннă. Сăмахран, Иванов 1907 çулта виçĕ юмах («Тимĕр тылă», «Тăлăх арăм», «Икĕ хĕр») çырнă. Çав çулхинех «Выçă аптăранисем», «Шуйттан чури» произведенисене те çырнă.

Çав юмахсемпе сăвăсене çырнă чухне Иванов халăх пултарулăхĕпе ытларах усă курнă. Анчах вăл нихăш юмахĕнче те хайĕн пултарулăхĕн сăн-сăпатне çухатман. Унăн кашни юмахĕ — оригиналлă произведени. Иванов юмахĕсем — поэт шухăшĕсене пăхăнтарса çырнă, социаллă шухăшсемпе çивĕчлетнĕ произведенисем.

Ку тĕлĕшпе уйрăмах «Икĕ хĕр» юмах, хăй пысăк мар пулин те, паллă вырăн йышăнса тăрать. Пĕр пуянăн икĕ хĕр пулнă. Аслă хĕрĕ, ашшĕ çулĕпе пыраканскер, пуянлăха мухтать, пуянлăх умĕнче йăпăлтатса ырă ят илтме тăрăшать. Кĕçĕн хĕрĕ пуянсен йăлине пăхăнмасть, тĕрĕслĕхшĕн тăрать, ашшĕ мулне мухтамасть, чăн сăмах калать, паллах, пуян ашшĕне ку килĕшмест.

Ашшĕ, тăван хĕрĕн таса ĕненĕвне хирĕç пырса, кĕçĕн хĕрне чăн шухăша ним пытармасăр каланăшăн килтен хăваласа кăларать: «Санра пархатар сахал, эсĕ манăн хĕрĕм мар!» — тет вăл. Ку вăл мул çинче, суялăх çинче, этемĕн ирĕклĕхне чăрсăррăн путарни çинче тытăнса тăракан тĕнчен кашкăрла законĕ. Иванов хайĕн произведенийĕсенче çав ирсĕр закона уçса кăтартать. Ырă курасси, çын телейĕ, ирĕклĕх укçара мар,— акă унăн пултарулăхĕнчи тĕп шухăш. Этем — вăл чи вăйли, чи таси; анчах мул тĕнчин, капитализмăн законĕсем этеме çыхлантарса лартаççĕ, ăсран кăлараççĕ, этемĕн пĕлтерĕшне, вăйне путараççĕ, пĕтерсе лартаççĕ.

«Тимĕр тылă» юмахра автор класлă обществăри тĕшмĕшсем (тĕрлĕ тухатмăшсемпе юмăçсем) халăха мĕнле улталаса, хăратса, тĕттĕмре тытса тăнине каласа парать. Вăл унта, тĕрлĕ тухатмăшсем темĕнле хăтлансан та, сутă çĕнтересси çинчен, вăл çĕнтермех кирли çинчен калать.

Тухатмăш карчăк, асар-писер суккăр карчăк, хайĕн кинĕн пуçне тимĕр тылăпа касса татасшăн. «Çав кин пуçне çи, тыллăм!» тесе ĕскĕртет вăл тыллине. Кинĕ хăраса вилсе каять.

Юлашкинчен, тимĕр тылă карчăка хайне те пĕтерет,— унăн пуçне татса пăрахать, карчăк пырĕнчен вара хура юн юхса тухать.

Çакăн хыççăн К. В. Иванов акă мĕнле шухăш каласа хурать:

Иртрĕ-карĕ тĕттĕм çĕр,
Хуллен-хуллен сирĕлчĕ.
Сикрĕ-тухрĕ çутă кун,
Çут çанталăк çутăлчĕ.
Акăр ялĕ вăраннă,
Йывăр ыйхă таталнă.

Çак шухăша поэт «Тăлăх арăм» юмахра та каласа парать:

Çут хĕвелпе çут тĕнче
Вăй паччăр çак кунсенче,—

тет вăл.

«Тăлăх арăм»— халăх юмахĕпе усă курса çырнă произведени. Унта поэт вăрçă хăрушлăхĕ çинчен çырса кăтартнă. Çичĕ пĕр тăван вăрçăра. Вĕсен арăмĕсем уйра тырă выраççĕ. Кĕçĕн кинĕн упăшки вăрçăра вилнĕ. Çак хĕрарăм та хăй упăшкин çӳçĕпе çакăнса вилет...»

К. Иванов, вăрçăн тискер хăрушлăхне кăтартса парса, вăрçа пула тăлăха юлнисем майлă тăрать. Вăл, вилнĕ упăшкипе унăн арăмĕ хутне кĕрсе, акă мĕн калать:

Эп те вара хурланса,
Икĕ чуна асăнса,
Урхамаха вырттартăм,
Чӳклерĕм те хăвартăм.

К. Иванов юмахĕсенче вăл тăван çĕршыва юратни, унăн патриотла шухăшĕсем сисĕнеççĕ. Вăл вăрçăра асапланакан çынсен, вĕсен тăлăха юлнă арăмĕсен хутне кĕрет, вăрçăхарçа хирĕç тăрать.

* * *

К. В. Ивановăн кирек хăш произведенине илсен те, эпир унăн таланчĕ мĕн тери хăватлă пулнине куратпăр. Оригиналлă произведенисем çырнă вăхăтрах вăл вырăс писателĕсен произведенийĕсене чăвашла куçарас тĕлĕшпе те пысăк ăсталăхпа ĕçленĕ. Унăн таланчĕ çак ĕçре те лайăх курăнать.

Константин Ивановшăн куçару ĕçĕ пысăк шкул пулнă: вăл вырăсларан куçарнă чухне вырăс классикĕсен ăсталăхне вĕреннĕ, вĕсен ырă шухăшĕсене ăса илме тăрăшнă.

Куçару ĕçĕнче аслă поэта тата тепĕр шухăш хавхалантарнă: вăл чăваш халăхне вырăссен аслă поэчĕсен чаплă произведенийĕсемпе паллаштарасшăн пулнă, çакă ăна халăхсен туслăхне çирĕплетес çул çине тăратнă. К. Ивановăн

литературӑри ӗҫ-хӗлне ҫак енчен илсе пӑхсан та, унӑн пултарулӑхӗн халӑхлӑхӗ уҫҫӑнах курӑнса тӑрать.

К. В. Иванов пуринчен ытларах М. Ю. Лермонтов произведенийӗсене куҫарнӑ. Вӗсен шутӗнче эпир Лермонтовӑн чи чаплӑ поэмине —«Калашник хуҫа ҫинчен хунӑ юрра» куратпӑр. Ку поэмӑ пирки вырӑссен аслӑ критикӗ В. Г. Белинский: «Лермонтов поэми — пиҫсе ҫитнӗ хӑватлӑ произведени, ҫавӑн пекех вӑл — илемлӗ, вӑл — халӑх произведенийӗ», тесе ҫырнӑ. Ку «поэмӑна нимле чӗлхене те куҫарма ҫук», мӗншӗн тесен унӑн колоричӗ — халӑх чӗлхи колоричӗ, тенӗ.

Ҫак сӑмахсене шута илсен, чӑнах та Лермонтов поэмине урӑх чӗлхене куҫарасси ҫинчен шухӑшламалли те ҫук пек туйӑнать. М. Ю. Лермонтов поэмине Иванов питӗ ӑста куҫарни унӑн таланчӗ ҫав тери пысӑк пулнине кӑтартса парать.

«Калашник хуҫа ҫинчен хунӑ юрра» К. Иванов 1907 ҫулта куҫарнӑ. Ун чухне вӑл вун ҫиччӗре ҫеҫ пулнӑ. Ҫамрӑк поэт хӑйӗн хӑватлӑ талантне туйса ӗҫленӗ, Лермонтов «Юррине» чун-чӗререн юратса куҫарнӑ (сӑмах май каласан, Лермонтов та хӑйӗн юррине ҫырнӑ вӑхӑтра 22 ҫулта ҫеҫ пулнӑ). Константин Иванов ҫавӑн чухне хӑйӗн аслӑ пиччӗшӗпе, Михаил Лермонтовпа, ӑмӑртса ӗҫленӗ теме пулать. Шӑпах ҫав пултарулӑх ӑмӑртӑвӗнче унӑн ӑсталӑхӗ аталанса пынӑ, вӑй-хӑват илнӗ. К. Иванов ку ӗҫре те чӑн-чӑн поэт пулнӑ. Ҫавӑнпа ӗнтӗ унӑн вырӑсларан куҫарнӑ поэмисемпе сӑввисене вулана чухне вӗсем урӑх чӗлхерен куҫарнӑ произведенисем пулнине пӗрре те сисместӗн. Мӗн пек хитре вӗсен чӗлхи! Вӗсенче те «Нарспи» авторӗн чӗлхиех, вӗсенче те пысӑк ӑсталӑх курӑнса тӑрать.

К. В. Иванов Лермонтовӑнне 8 произведени куҫарнӑ. Ҫав вӑхӑтрах вӑл А. В. Кольцов, Н. А. Некрасов, Н. П. Огарёв, А. Н. Майков сӑввисемпе юррисене те тӑрӑшса куҫарнӑ.

Эпир Лермонтовӑн вырӑсла сӑввине вулатпӑр-и е Иванов куҫарнине вулатпӑр-и,— пирӗн чуна ҫав-ҫавах илемлӗх вӑйӗ хумхантарса ярать:

Играют волны, ветер свищет,
И мачта гнется и скрипит...—

тет Лермонтов «Парус» ятлӑ сӑввинче. Иванов ӑна акӑ мӗнле куҫарать:

Чӳхенеҫҫӗ хумсем, ҫил улать,
Шăтăр-шăтăр юпа авăнать...

Ҫак йӗркесенче хумсем чӳхенни курăнмасть-и-ха, ҫил улани, юпа шăтăртатни илтӗнмест-и-ха? Курăнать, илтӗнет!

К. В. Иванов куҫару ӗҫӗнче, хальхи хăш-пӗр тăлмачсем пек, саспалли хыҫҫăн саспалли куҫарса пыман, унăн меслечӗ творчествăллă меслет пулнă.

И разделют по себе злы
татаровья
Коня доброго, саблю острую, —

тенӗ «Калашник хуҫа ҫинчен хунă юррăн» вырăсла текстӗнче. Чăваш поэчӗ ку йӗркесен историлле пӗлтерӗшне тӗпчесе тупнă, ăна вăл акă мӗнле куҫарнă:

Курайман тăшмансем уйăрса
илӗҫ
Ырă утăмпала ҫивчӗ хӗҫӗме.

Кунта эпир халăхсен туслăхӗн пархатарлă идейине куратпăр: кӳршӗллӗ халăхсен, тутарсемпе чăвашсен, ӗмӗрхи туслăхне асра тытса, К. В. Иванов вырăсла текстри сăмахсене хăюллăнах улăштарать, анчах «Юррăн» тӗп шухăшне пачах та пăсмасть.

Константин Иванов, хăйӗн шухăшӗсене 1905—1907 ҫулсенчи революци условийӗсенче аталантарнăскер, вырăс писателӗсен произведенийӗсене вуласа вӗреннӗскер, ялан тенӗ пекех халăх юррисене кăмăлланă. Сăмахран, вăл 1906 ҫулта вырăс халăхӗн «Дубинушка» ятлă юррине чăвашла куҫарма тытăннă. Ку вăл — питех те чаплă юрă, ӗҫ юрри, ҫавăнпа ӗнтӗ ҫав юрă Российăри халăхсем хушшинче анлăн сарăлнă. Ҫав юрра пирӗн поэт чăваш халăх хушшине те сарма ӗмӗтленнӗ.

Патша самани сӗм-тӗттӗм каҫ пек пулнă. Константин Иванов ҫав тӗттӗм саманара вутăн-хӗмӗн ҫунса ҫӗкленнӗ те чăваш халăх хушшине хăйӗн таланчӗн ӗмӗр сӳнми ҫутине сарма тытăннă.

* * *

К. В. Иванов — поэт-лирик. Унăн лирики — гражданла лирикă. Ивановăн шухăш-кăмăлӗ халăх шухăш-кăмăлӗпе пӗрлешсе, ăна уҫҫăн палăртса тăнă. Халăха савăнтарни поэта савăнтарнă, халăха хурлантарни — хурлантарнă, чунчӗрине ыраттарнă.

«Нарспи» авторӗ хăйӗн произведенийӗсенче обществăл-

ла ыйтусем хускатма пĕлнĕ. Илер-ха, тĕслĕхшĕн, «Хальхи самана» сăввах. Иванов ăна, Чĕмпĕрти чăваш шкулĕ 40 çул тултарнине хисеплесе, 1908 çулхи октябрьте çырнă.

Вăл сăвăра Чĕмпĕрти чăваш шкулне, çав шкула пуçарса яракан И. Я. Яковлевăн пархатарлă ĕçĕсене хакласа, Иванов çакăн пек калать:

Ырă чăваш тупăнчĕ,
Ырă ĕçе тытăнчĕ.
Чăн чăвашла сăмахпа
Хăй тăванне, чăваша,
Пырса çапрĕ чĕрипе,
Пăлхатса ячĕ чĕрене.
Палхатнинчен питĕрех
Шухăш ӳкрĕ пуç çине.

Мĕнле шухăшсем пырса кĕнĕ-ха поэт пуçне?

Константин Иванов ку сăвăра чăваш халăхĕн ĕлĕкхи пурнăçĕ çинчен калать, патша вăхăтĕнчи сивĕ кунсен сăнне, пусмăр йĕркине тĕлĕнмелле уççăн, тĕлĕнмелле хăватлăн кăтартса парать:

Чăтаççĕ-ха чăвашсем,
Вĕсне çитмен-ха вĕсем.
Ĕçкĕ-çикĕ тунă чух
Юррисене юрлаççĕ,
Куççулĕпе кулаççĕ.
Чăваш! Сана ун чухне,
Чуну çĕкленнĕ чухне,
Мĕн пит асна килет-ши?
Мĕн пит чунна хĕсет-ши?
Савăнăç-и, куççуль-и
Сан куçăнта куç тулли?

Ку йĕркесене çырнă чухне поэт-гражданинăн, тен, хăйĕн те чĕре тулли халăх хуйхи пулнă пулĕ... Поэт «куççульпе кулать», чăвашсем хушшинчен тухнă улпутсене, вĕсен тарçи-тĕрçисене питлет, халăха маннă чиновниксем çинчен хаяр сăмахсемпе çырать:

Анчах чăваш хушшинче
Чунĕ хытнă çынсем те
Тапаланма пуçларĕç,
Тăрса çапла каларĕç:
«Чаплă вырăн тупасчĕ,
Часрах улпут пуласчĕ».
Тĕрлĕ çутă тӳммешĕн
Тенки тухать ав лешĕн;
Чăвашла та калаçмасть,
Тăванне те ас тумасть...

Çут тӳмеллӗ этемсене, тӑванне те ас туман чиновниксене Тайӑр Тимкки те, Иванов пекех, хытӑ питлет:

Хӑвӑр ахаль пурӑнсан,
Эсир ырлӑх тупаймӑр;
Еçе тума чарӑнсан,
Усал айне хупӑнӑр.
Эсир ӗççӗр пурӑнсан,
Сире çынсем ылханӗç.
Сиртен юлнӑ ачӑрсем
Сире пӑхса хурланӗç...
...Сире халӑх вӗрентме
Нумай укçа салатрӗ,
Сире çынна кӑлларма
Пӗтӗм вӑйпа тӑрӑшрӗ.
Ухмах! Эсӗ халӑха
Мӗскер усӑ кӑтартрӑн?
Выçлӑх, пысӑк хурлӑха
Мӗскер ӗçпе пӗтертӗн?..

Халӑха маннӑ, унӑн ӗçне тума пӑрахнӑ этемсем çинчен икӗ поэт тарӑхса çырнӑ, çав улпутсем, сӑрӑ еверлӗ этемсем, патша влаçӗ майлӑ çаврӑнса ӳкнӗскерсем, ун чухне, хура реакци пуçланса кайнӑ çулсенче, халӑхӑн малта пыракан ывӑлӗсене питех те кансӗрленӗ, тарӑхтарнӑ. Шӑпах çавӑнпа ӗнтӗ Константин Иванов та, Тайӑр Тимкки те вӗсене хирӗç çырмасӑр чӑтса тӑрайман.

Ку шухӑша калана май тата çакна палӑртас килет: патша вӑхӑтӗнче тутар реакционерӗсем, 1905—1907 çулсенчи революцирен хӑраса ӳкнӗскерсем, хӑйсен националистла-пантюркистла шухӑшӗсене сарма тӑрӑшса, тутарсене Турцие куçса каймашкӑн чӗннӗ. Тутар халӑх поэчӗ Габдулла Тукай националистсене хирӗç «Каймастпӑр!» ятлӑ хаяр сӑвӑ çырать. Унта вӑл: «Эпир кунта çуралнӑ, кунта ӳснӗ, çакӑнтах эпир вилӗпӗр. Вырӑс çӗрӗпе пире хамӑр кунçул хӑех пӗрлештернӗ», тет.

Тутар реакционерӗсем хӑйсен реакциллӗ, националистла-пантюркистла шухӑшӗсене чӑвашсем хушшинче те сарма хӑтланса пӑхнӑ. Анчах чӑваш ӗç çыннийӗсем, тутар ӗç çыннийӗсем пекех, хӑйсен пурнӑçӗ йывӑр пулин те, реакционерсем хыççӑн кайман: ӗç çыннисен телейӗ — Турцире мар, хамӑр Тӑван çӗршывра, унӑн пуласлӑхӗнче пулнӑ.

К. В. Иванов «Хальхи самана» ятлӑ сӑввинче, «чунӗ хытнӑ çынсем» чӑваш хушшинче тапаланма пуçланине питлесе çырнӑ вӑхӑтрах, тутар реакционерӗсене те питлет,

чăваш ĕç çыннисем вĕсен çулĕпе кайманнине кăтартса парать. «Урăх çулпа утрăмăр, урăх çĕре тухрăмăр», тет.

Çав çул — тăван çĕршывшăн, çĕнĕ Российăшăн чун-чĕререн тăрас çул пулнă. Иванов, вырăссен прогрессивлă литератури тăрăх вĕренсе ӳснĕскер, хăйĕн пултарулăхне демократи çулĕпе аталантарса пыма тăрăшнă.

Çак ырă традици чăвашсен ытти писателĕсене те ĕçре хаваслантарнă.

* * *

Константин Иванов вырăс халăх поэчĕсенчен вĕреннĕ, терĕмĕр. Вăл Пушкинран, вырăс халăхĕн чи аслă поэтĕнчен, творчествă сарăмлăхне вĕреннĕ, таран идейăллă произведенисем çырма вĕреннĕ; вăл Лермонтовран çынсен чун хавалне, вĕсен хаярлăхне кăтартса пама вĕреннĕ; вăл çынсен кăмăлне Кольцов пек ăшшăн кăтартма пĕлнĕ, вĕсен шăпи çине Некрасов пек пăхма та пĕлнĕ. Çынна, этеме Горький пек мухтанă!

Чăнах та, кам чун хавалне çĕклемĕç-ши Ивановăн çак чаплă сăмахĕсем:

Çакă çугă тĕнчере
Вăйли çук та этемрен:
Çĕрсем çинче, шыв çинче
Хуçа пулса вăл тăрать.

Ку вăл — вырăссен аслă писателĕн Максим Горькийĕн паттăр шухăшĕсене пула аталаннă хăватлă гуманизм. Вăл нихăш ĕмĕрте те кивелес çук, пĕтес çук.

Этем çинчен аслă Горький, çавăн пекех пирĕн Иванов каланă витĕмлĕ сăмахсене, эпир паян кун та, социализм тĕнчипе капитализм тĕнчи хушшинче хаяр кĕрешӳ пынă вăхăтра та, уйрăмах палăртатпăр. Социализмпа халăх демократи çĕршывĕсенче этем пĕлтерĕшĕ чи çӳллĕ вырăнта тăрать. Капитализм тĕнчинче пачах урăхла: кунсерен çĕрсе, пăнтăхса пыракан буржуаллă литературă этемĕн тивĕçне варалас шутпа, этем чунĕ вараланчăк та ирсĕр тесе ĕнентерес шутпа тем те пĕр хăтланать. Империализма сутăннă буржуаллă философипе литературă çынсен чунĕсене типĕтсе хурасшăн, хăртса çĕртесшĕн, ĕç çыннисен ырă кăмăлне, пусмăра хирĕç кĕрешес хăюлăхĕпе вăй-халне путарса лартасшăн. Çапла вара, вĕсем çынсен шăммисем çинче тытăнса тăракан, юн ĕçсе пурăнакан капитализм пусмăрне тата та ытларах çирĕплетесшĕн. Америкăри буржуалла

писательсем тӳрĕ ĕçпе пуранакан, таса чунлă этеме мар, вăрă-хурахсене, гангстерсене мухтаççĕ.

Совет литератури, пĕтĕм тĕнчери прогрессивлă литература пуçĕнче тăрса, этеме мухтать, ăна хутĕлет, унăн тивĕçне чи çӳллĕ шая çĕклет. Совет литературин тĕп геройĕ — ĕç çынни, вăл халăхшăн, обществăшăн тăрăшать. Пирĕн литературăри ырă геройсен ĕçĕ-хĕлĕ, паха тĕслĕхсем вулакансене коммунизмшăн кĕрешме хавхалантараççĕ.

Ырăссен аслă писателĕсем. чи малтан, халăх писателĕсем пулнă. К. В. Иванов вара, тăван халăхăн нушине, хуйхи-суйхине, унăн савăнăçне, ĕмĕчĕсене лайăх пĕлекенскер, хăйĕн творчествине пула халăхпа пин-пин çыхăпа çыхăннăскер, хăйĕн учителĕсем вырăнне Пушкина, Лермонтова, Кольцова, Некрасова, Огарёва суйласа илнĕ пулсан (тепĕр хут палăртса калăпăр: ш ă п а х х а л ă х п о э ч ĕ с е н е с у й л а с а и л н ĕ п у л с а н!),— çакă та вара унăн пултарулăхĕн халăхлăхĕ (народность) çинчен калать.

К. В. Иванов тăван халăхăн шухăш-кăмăлне кăтартса пама вырăс литературинчен вĕреннĕ. Вырăс писателĕсем вырăс халăхĕн наци пахалăхĕсене мĕнле тĕрĕс кăтартса панă, К. В. Иванов та, вĕсенчен вĕренсе пынăскер, чăваш халăхĕн наци пахалăхĕсене вĕсем пекех тĕрĕс кăтартма тăрăшнă.

К. В. Иванов патша вăхăтĕнче, тискер самана пуранна. Питех те кĕске пулнă унăн ĕмĕрĕ. 1915 çулхи мартăн 13(26)-мĕшĕнче вăхăтсăрах çĕре кĕнĕ вăл.

* * *

К. В. Иванов совет саманине пурăнса çитеймен, вăл пирĕн вăхăтри пурнăç мĕн тери улшăнса çĕнелнине, унăн ӳсĕмĕсене курман. Поэт вилсен, пĕр виç çултан, Российăра пулса иртнĕ Аслă социализмлă революци çĕршыва панă вăй-хăвата пула, Коммунистсен партийĕн наци политикине пула, Совет çĕршывĕнчи мĕн пур халăхсен, вăл шутра чăвашсен те, хуçалăхĕпе культури улăпла утăмсемпе малалла кайрĕ.

Совет саманинче чăваш халăхĕн çĕнĕ ăрăвĕсем ӳсе çитĕнчĕç. Вĕсем ĕлĕкхи самана вăхăтĕнче пурăнса курман. Çав ăрусем иртнĕ ĕмĕре кĕнекесем тăрăх, ваттисем каласа панисем тăрăх çеç пĕлеççĕ. Иртнисене тĕрĕс ăнланма вĕренеççĕ. Ку ĕçре вĕсене К. В. Ивановăн чаплă кĕнекисем те нумай пулăшаççĕ.

...Константин Васильевич питех те сăпайлă çын пулнă.

Пур ĕçре те унăн ĕçченлĕхĕ, сăпайлăхĕ палăрнă. Ашшĕ-амăшне, тăванĕсене хисепленĕ. Вăл хăйĕн амăшне чунтан юратнă, унăн пурнăçне çăмăллатма тăрăшнă: шыв кӳрсе парассинчен те, урай çуса парассинчен те именсе тăман. Вăл ăна нихçан та сивĕ сăмах каламан.

Килте чух Иванов тăванĕсене час-часах хăйĕн ĕçĕн планĕсене, шухăшĕсене каласа панă. Сăмахран, пĕррехинче вăл ваталăх йăмăкне çакăн пек каланă: «Халăх юррисене, йăлисене, уявĕсене пĕтĕмпех хут çине çырса илес пулать, унсăрăн вĕсем çухалса пĕтме пултараççĕ. Халăхăн историне пĕлес тесен, нимран малтан çав материалсене пĕлмелле».

К. В. Иванов, çак шухăша асра тытса, халăх юррисене çыра-çыра илнĕ, вĕсене тĕпчесе пĕлнĕ, вĕреннĕ. Ку ăна «Нарспи» поэмăна çырнă чухне те пулăшнă. Анчах çак чаплă произведение поэт мĕн вăхăтра, мĕнле çырнине пирĕн литератури историкĕсемпе тĕпчевçисем çаплах тĕпĕ-йĕрĕпех каласа параймаççĕ-ха. (Поэт ун пирки ытлашши калаçса çӳремен, ăна çынсем «асăрхаман хушăра» çырнă). Тăван йăмăкĕ П. В. Михеева: «Константина поэмă çырас шухăш ăçтан пырса кĕни, ăна хăçан тата ăçта çырни çинчен никам та пĕлмест», тет. Эпир вулакансемпе пĕрле çапла çеç калама пултаратпăр: çав тери хăватлă поэмă, революцичченхи чăваш литературине чапа кăларнă произведени вăй хумасăр, тар тăкса ĕçлемесĕр, тăван халăх кун-çулĕ çинчен шухăшламасăр, унăн ĕмĕрхи тăшманĕсем çине тарăхмасăр, хĕрӳлленмесĕр пулман, пулма та пултарайман.

Константин Васильевичпа Чĕмпĕрте пĕр вăхăтра вĕреннĕ И. Т. Трофимов каласа панă тăрăх çакă курăнать: Иванов «Нарспи» поэмăна чи малтан Иван Яковлевича вуласа панă, вăл вара ача пек хĕпĕртесе кайнă, çамрăк поэта ыталаса илсе чуп тунă, ăнăçлăх суннă.

Кайран вара поэмăна пичетлесе кăларма пулăшнă; пичетленсе тухсан, Чĕмпĕрте вĕренекен чăваш ачисем урлă тăван халăх хушшине салатнă, вулакансем патне çитернĕ

...К. В. Иванов çирĕм пилĕк çула яхăн çеç пурăннă, тĕрĕссипе калас-тăк, хальхи комсомолецсен çулĕнчен иртеймен, çапах та вăл хăйĕн чунĕ тухиччен пысăк ĕмĕтпе ĕçленĕ, «чăвашсем вăранасса» чун-чĕререн шаннă.

Чăваш халăх поэчĕ Яков Ухсай калашле, аслă поэт чăваш поэзи вăрманĕн малтанхи йывăçĕсене лартнă. Çав вăрмана лартаканĕ хăй поэзи вăрманĕн юманĕ пулнă.

Поэт юман пулса шавланă
Асаплă чуллă çĕр çинче,—

Кашни çулçи пĕр юра панă,
Юман юрланă пĕр-пĕччен.

«Юман пулса кашланă» поэтăн — Константин Ивановăн — «йĕкелсем нумай пулнă», шăпах ĕнтĕ çав йĕкелсенчен халĕ çĕнĕ вăрман çĕкленчĕ, ашкăрса кайрĕ. Ку вăл — çултан çул аталанса пыракан чăваш совет литератури. Çак литератури чăннипех те вăрман пек пуян, унăн вăйĕ ем-ешĕл, иксĕлми, чĕрĕ.

Ерчевлĕ вăрлăх акаканĕ
Кайсан та, ĕмĕчĕ кайман.
Хитре вăрман, сĕм-сĕм вăрман—
Чăваш поэзийĕн вăрманĕ.

Чăвашсен хальхи вăхăтри поэзийĕ, Константин Иванов поэзийĕнчен пуçланса кайнăскер, хăйĕн аталанăвĕнче калама çук пысăк утăмсем турĕ. Вăл совет саманинче, çĕнĕ тапхăрта, ӳссе çĕнĕ йышши литература пулса тăчĕ. Чăваш халăх чĕлхи те нумай-нумай пуянланчĕ. Вырăс халăхĕ тăванла пулăшнипе, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, чăваш халăхĕ культура фрончĕ валли талантлă çынсем нумай ӳстерсе çитĕнтерчĕ. Вĕсен патриотла ĕçĕпе пĕтĕм халăх савăнса мухтанать, тăван литература çĕнĕрен çĕнĕ ӳсĕмсем тăвасса чун-чĕререн шанать.

*1959—1962*

## ÇЕÇПЕЛ МИШШИ

### 1. Поэт пурнăçĕ

Çеçпĕл Мишши кун-çулĕ кĕске те тертлĕ пулнă: поэт çирĕм икĕ çул ытларах çеç пурăннă, унăн çамрăк пурнăçĕ нушара иртнĕ, ĕçпе кĕрешӳре çунса кайнă.

Михаил Кузьмич Кузьмин — Çеçпĕл Мишши 1899 çулхи ноябрĕн 4(16)-мĕшĕнче, Чăваш республикинче, Канаш районĕнчи Касаккасси ялĕнче çуралнă. Çемьере вăл таслă ывăл пулнă. Мишша çамрăклах хурапа шурра тӳссе ӳснĕ. Ашшĕпе амăшĕ, Кузьма Федоровпа Агафия Николаева, çитмен пурнăç пирки лăш канмасăр ĕçленине Мишша ачаран курнă. Вунă çула çитсен, вăл ашшĕсĕр тăрса юлнă. Çакна пула кил-йыша тăрантарасси пĕтĕмпех Мишшапа амăшĕ çине юлнă. Çулла Мишша кĕтӳ кĕтсе çӳренĕ, тара кĕрĕшсе суха сухаланă, тырă вырнă.

1907 çулта, сакăр çулта чухне, Мишша Шăхасанти кăтартуллă пуçламăш шкула вĕренме кĕнĕ. Ăна 1911 çулта вĕренсе пĕтернĕ. Çакăн хыççăн вăл Шăхасан вулăс кантурне переписчик вырăнне хутсем çырма кĕрет. Унта виçĕ çула яхăн ĕçлет. Çамрăк Мишшана вĕренес шухăш канлĕх паман. Мĕнле те пулин вĕренес, çын пулас тесе, вăл 1914 çулхи кĕркунне Шăхасанти иккĕмĕш каслă шкула кайса кĕрет. Кунта вăл ырă кăмăллă, хăйсене хăйсем чипер те йĕркеллĕ тытакан, тăрăшса вĕренекен ачасемпе паллашать. Вĕсем хушшинче унăн çывăх тусĕсенчен пĕри Андрей Григорьев пулнă. Энтрипе Мишша иккĕшĕ те кĕнекесем вулама юратнă, кĕнекесĕр çӳремен. Ку çеç те мар-ха, вĕсем юрлама ăста пулнă, ӳкерчĕксем тума та юратнă. Вĕсем сăвăсем çырма та ĕмĕтленнĕ, сăввисене çырсан, темиçе хут вуласа тухнă, пăхмасăр каланă, нумай чухне пĕр-пĕр

юрă кĕввипе юрланă. Çавăнпа та А. Григорьев Çеçпĕлĕн ача чухне çырнă сăвви-юррисене халичченех манман. Ку вăхăталла вĕсем вырăс чĕлхипе калаçма та, çырма та питĕ лайăх вĕренсе çитнĕ. Нумай вуланă. Çеçпĕл Мишши уйрăмах вырăс классикĕсен произведенийĕсене тимлĕ вуланă, Пушкин, Лермонтов, Майков, Плещеев, Надсон сăввисене кăмăлланă. Кайрантарахпа вăл Блок, Есенин, Брюсов, Маяковский, Кириллов, Александровский, Герасимов тата ытти поэтсен пултарулăхĕпе те паллашнă.

Вырăс литературипе сывăх паллашма ăна вырăс чĕлхипе литературине вĕрентекен Павел Александрович Ломоносов пулăшнă. Ырă кăмăллă учитель çамрăк Мишшан шухăш-кăмăлне, ĕмĕчĕпе интересне лайăх пĕлнĕ, тĕрĕс çулпа яма тăрăшнă.

Çеçпĕл Шăхасанта вĕреннĕ вăхăт вăрçă тапхăрĕ пулнă. Фронтран кашни кун тенĕ пек хурлантаракан хыпарсем килсе тăнă. Ялсене урасăр, аласăр тăрса юлнă салтаксем таврăннă. Мишшапа Энтри фронтран килнĕ салтаксемпе паллашаççĕ, вĕсем мĕн-мĕн каланисене тăнлаççĕ. Салтаксем ялти çамрăксене вăрçăра илтнĕ хыпарсене каласа кăтартаççĕ, салтак юррисене юрласа параççĕ. Çак вăхăтра Çеçпĕлпе Григорьев «Салтак шăпи» ятлă вырăсла юрра улăштарса çыраççĕ. Ăна вĕсем ялта, шкулти çамрăксем хушшинче юрлаççĕ. «Шинель çактарчĕ самана», «пăшал чакарчĕ халăма»— илтĕнет вĕсен юрринче.

Шăхасан шкулĕнче вĕренекенсем çав çулсенче алăпа çырса литературă журналĕ кăларса тăнă. Журналăн ячĕ — «Звездочка», редакторĕ Çеçпĕл пулнă. Унта çамрăк поэтăн малтанхи сăввисем пичетленнĕ. 1916 çул вĕçĕнче Çеçпĕл Мишши вырăсла «Скоро...» («Часах...») ятлă сăвă çырнă. Вĕренчĕкле çырнă, анчах тепĕр ватă поэт çырниччен те лайăх сăвăра Çеçпĕл чăвашсемшĕн асаплă самана пуçланни çинчен калать:

Мĕн чул хурлăх вĕсене
Кӳчĕ вăрçă-харçă:
Ывăль лесрĕ ашшĕне,
Кĕç — хăйне ыйтаççĕ.

Выçлăх йĕртрĕ ялсене,
Ачасем те хăрăк.
Питĕрте патша тронне
Сырса илнĕ вăрă.

Хысна илчĕ лашана,
Пулăшмарĕ турă.

Ах, хăçан ку патшана
Аслати тĕл курĕ?

Халăх хум пек çĕкленет
Тăваллăн, хаяррăн;
Таса мар патша йăхне
Час юхтарса ярĕ.

Тепĕр виç-тăват уйăхран, 1917 çулхи февралĕн 27-мĕшĕнче (мартăн 12-мĕшĕнче) патшана чăнах та сирпĕтсе антараççĕ.

1917 çулта Çеçпĕл Мишши Шăхасанти шкултан вĕренсе тухать. Çав çулхинех, кĕркунне, Тетĕш хулинчи учительсем хатĕрлекен семинарине кайса кĕрет.

Ку вăл шавлă тапхăр пулнă. Революци хумĕсем Тетĕш хулине те пыра-пыра çапнă. Çеçпĕл хăйĕн юлташĕсемпе Октябрьти революци ĕçне хастар хутшăнать, революцие хирĕç пыракансемпе ним килĕшми кĕрешет.

Семинарире вĕренекенсене тĕрлĕ ыйтусем тавлаштарнă. Ку шутра вĕсене наци ыйтăвĕ те пайтах шухăшлаттарнă. Анчах çав нумай ыйтусене вĕсем час-часах ăшăх ăнланнă. Наци ыйтăвне кирлĕ пек пĕлменни çав тапхăрта Çеçпĕл шухăшĕсенче те сисĕннĕ. Çапах та революци сарăлса пыни, çĕнĕ самана пуçланса кайни çамрăк поэта çĕнĕ шухăшсем панă, событисене çĕнĕлле хаклама вĕрентнĕ. Хăйĕн политикăлла тавра курăмĕпе ăнланулăхĕ ӳссе пынă май поэт обществă пурнăçне тата та активлăрах хутшăна пуçланă. 1918 çулхи декабрĕн 15-мĕшĕнче М. К. Кузьмин большевиксен партине кĕнĕ. Кайран, 1920 çулхи ноябрĕн 18-мĕшĕнче, кун-çулĕ пирки шухăша кайса, поэт хăйĕн кун кĕнекинче (дневникĕнче) çапла çырнă: «Манăн иртнĕ пурнăç виçĕ тапхăра уйрăлать. Пĕрремĕш тапхăр — 1911 çулхи июнь уйăхĕччен,— тискер чухăнлăхра пулсан та, çутă та асра юлакан ачалăх... Иккĕмĕш тапхăр çемьери йывăр хуйхăпа пуçланчĕ: атте вилчĕ, манăн пурнăçри чи тискер, буржуалла обществă мана пур енчен те хĕсĕрлесе тăнă тапхăр. Вăл 1918 çулта, ман пурнăçăн виççĕмĕш тапхăрĕн пуçламăшĕпе, эпĕ партие кĕнипе вĕçленчĕ. Партие кĕрсен, эпĕ, çемье, тĕн тата обществă каяшĕсен тыткăнĕнчен хăтăлса, хама хам ирĕклĕ те вăйлă туйма пуçларăм, пролетариатпа пĕрле пурнăçăн чăн-чăн хуçи пулнине ăнланса илтĕм. Çавăнтанпа вара манăн ăс-тăнăм таса. Асăм хăватлă — эпĕ коммунист... Коммунистăн чыслă ятне нихăçан та вараламăп».

1919 çул пуçламăшĕнче парти укомĕ Çеçпĕле Муска-

ва инструктор-агитаторсен ултă уйăхлăх курсне янă. Унта вăл В. И. Ленина курнă, унăн сăмахне итленĕ. Мускавран таврăннă чухне Çеçпĕл, тăван ялне вăхăтлăха кĕрсе, амăшне çапла каласа панă: «Ленина куртăм, анне, вăл питĕ хĕрӳллĕ сăмах каларĕ»,— тенĕ. Çавăн чухнех ывăлĕ хутпа кăранташ илнĕ те амăшне çулпуç сăнне ӳкерсе панă. Ленин сăнĕ, унăн сăмахĕсем поэт асĕнчен тухман. Кайрантарахпа, Украинăра ĕçленĕ чухне, вăл çулпуçа курни çинчен Н. Н. Рубиса темиçе хут та каласа панă. Рубис, çавна асра тытса: «Унăн куçĕсем ĕмĕр сӳнми çулăмпа ялкăшаççĕ, чĕринче — вилĕмсĕр Ленин»,— тет хăйĕн пĕр çырăвĕнче.

Мускаври курсран таврăннă хыççăн Çеçпĕл пĕтĕмĕшпех партипе Совет ĕçне парăнать. Кайрантарах çырнă пĕр анкетăран Çеçпĕл çак ĕçсенче пулни курăнать: 1917—1919 çç.— Тетĕшри учительсем хатĕрлекен семинарире вĕренекен; 1918—1919 çç.— уесри парти комитечĕн инструктор-агитаторĕ; 1919—1920 çç.— Тетĕшри Судпа следстви комиссийĕн председателĕ; 1920 çулхи январь-март уйăхĕсенче — Тетĕш уесĕнчи Комсомол организацийĕн ответлă организаторĕ тата председателĕ; июль-август уйăхĕсенче — Тетĕш уесĕнчи РОСТА заведующийĕ; сентябрь-октябрь уйăхĕсенче — Чăваш РКСМ обкомĕн членĕ; сентябрĕн 4-мĕшĕнчен пуçласа декабрĕн 1-мĕшĕччен — Чăваш автономлă облаçĕнчи Ревтрибунал председателĕ; октябрĕн 25-мĕшĕнчен пуçласа декабрĕн 27-мĕшĕччен — Чăваш автономлă облаçĕнчи Юстици пайĕн заведующийĕ. 1920 çулхи ноябрьте Çеçпĕл Мишшине Облисполком членне суйланă.

Михаил Кузьмич Шупашкара, Чăваш автономлă облаçне тунă хыççăн, икĕ уйăхран, августăн 30-мĕшĕнче килнĕ. Виçĕ кунтан вара Çеçпĕл Мишшине пысăк та ответлă ĕç панă: ăна, анкетăран куртăмăр ĕнтĕ, Ревтрибунал председателĕ туса хунă. Ку вăхăтра вăл 21 çулта пулнă.

1920 çулта Çеçпĕл Мишшине Чăваш РКСМ секцийĕсемпе ячейкисен пĕрремĕш съездне делегат туса янă. Съезд Чăваш комсомолĕн ĕçĕ-хĕлĕ мĕнле пынине, ун умĕнче мĕнле задачăсем тăнине пăхса тухнă. Чăваш çамрăкĕсен ячĕпе съезд хăйсен юратнă учителĕ В. И. Ленин патне телеграммă янă. Ăна В. Дмитриевпа М. Кузьмин çырса хатĕрленĕ, вĕсемех съезд хушнипе тата съезд ячĕпе алă пуснă.

Совет учрежденийĕсене хĕсĕнсе кĕнĕ тĕрлĕ йышши буржуалла этемсем Çеçпĕле Шупашкарта ĕçленĕ вăхăтра кансĕрлеме, унăн çулне пӳлме тăрăшнă. Пĕррехинче, Çеçпĕл хăй командировкăра чухне, Юстици пайĕн çуртĕнче пушар

пулнӑ. Тӑшмансем, ҫавӑнпа усӑ курса, Ҫеҫпӗл Мишшине айӑплама тытӑнаҫҫӗ, ун ҫинчен суя хыпарсем сараҫҫӗ, элеклӗ ҫырусем ҫыраҫҫӗ. Малтан Ҫеҫпӗл хӑйне чӑннипех айӑплама пултарасса ӗненмен, хӑйӗн тӑшманӗсенчен кулса, вӗсене тӑрӑхласа: «Эпӗ ҫавнашкал ҫын, командировкӑра пулнӑ пулин те, ҫунтартӑм...», тенӗ. Анчах тӑшмансен кавар вӑйлӑ пулнине сиссен, Ҫеҫпӗл вӗсен ирсӗр тӗллевне пӗтӗмпех ӑнланса илнӗ: вӗсем Ревтрибунал председательне, кӑвар чӗреллӗ поэт-коммуниста хирӗҫ тахҫантанпах вӗчӗхсе, хӑйсен ҫиллине пухса пурӑннӑ, халӗ ӗнтӗ тавӑрма тытӑннӑ. Хӑйсене патша вӑхӑтӗнчи чиновниксем пек тыткалакан, анчах совет ӗҫӗнче «ӗҫлекен» этемсем поэта сӗнтернӗ. Ҫакна пула Ҫеҫпӗлӗн ахаль те начар сывлӑхӗ тата та ытларах хавшаса каять. Шӑмӑ туберкулезӗ, пӗр вӑхӑта лӑпланнӑскер, ӑна каллех асаплантарма пуҫлать.

1921 ҫулта Ҫеҫпӗл Мишши кӑштах урӑх ӗҫре — чӑвашла кӗнекесем куҫаракан комиссире — ӗҫлет. Унтан чирлӗ поэт Чулхулари госпитале сывалма каять. Кайран ӑна Крыма сывалма яраҫҫӗ. Крымра кӑнтӑр хӗвелӗпе тинӗс сывлӑшӗ Ҫеҫпӗлӗн сывлӑхне самайланма май панӑ. Сывалма ӑна ырӑ кӑмӑллӑ ҫынсемпе тӗл пулни те, вӗсемпе пӗрле пурӑнни те чылай пулӑшнӑ. Кунта поэт ҫӗнӗ сӑвӑсем ҫырнӑ, вӗсенче вӑл хӑйӗн мал ӗмӗчӗсене палӑртнӑ.

Ҫав ҫулхине, август уйӑхӗнче, Крымран тӳрех Ҫеҫпӗл Киев хулине кайнӑ. Вӑл унта художествӑ шкулне вӗренме кӗнӗ, анчах шкулта нумай вӗренме май килмен. Ҫакӑн чухне ӑна Хӗрлӗ Ҫара илнӗ. Шӑмӑ туберкулёзӗ каллех амаланса кайсан, поэта ҫартан хӑтарнӑ. Вара вӑл Крымра паллашнӑ Федор Пакрышень ятлӑ тусӗ патне Чернигов кӗпӗрнинчи, Остӗр хули ҫывӑхӗнчи Волчья Гора (Кашкӑр Тӑвӗ) ялне кайнӑ.

Украинӑра пурӑннӑ вӑхӑтра Ҫеҫпӗл Мишши украинла калаҫма, ҫырма вӗреннӗ. Кунта вӑл Украинӑ писателӗсен, уйрӑмах Т. Г. Шевченко произведенийӗсене вуланӑ, унӑн «Кобзарь» кӗнекинчи сӑввисене нумайӑшне чӑвашла куҫарнӑ (вӗсем пурте ҫухалса пӗтнӗ). Федор Николаевич Пакрышень чӑваш поэтне Украинӑ халӑхӗн пурнӑҫне пӗлме пулӑшнӑ, унӑн йӑлисемпе паллаштарнӑ, юррисене юрласа кӑтартнӑ. Ҫеҫпӗл хӑйӗн тусне Ф. Пакрышене сӑвӑ ҫырма вӗрентнӗ. Сӑмахран, Ҫеҫпӗл ятарласах ӑна тоникӑ системин правилисене ҫырса панӑ (ку правилӑсене тетрадь ҫине ҫырнӑ пулнӑ. Ҫеҫпӗл тетрадьне пӗр «тӗпчевҫӗ» вӑрҫӑчченхи ҫулсенче Шупашкара илсе килнӗ; анчах ӑна ҫухатнӑ...).

Çеçпĕл Мишши Украинăра пуріннă чухне Атăл тăрăхĕнче пысăк выçлăх пулнă. Чăвашсем выçăпа аптранă. Нумай çын выçăхса вилнĕ. Çак инкек поэта питех те нумай шухăшлаттарнă, унăн пуçĕнче йывăр шухăшсем çуратнă.

Ку вăхăт тата çĕнĕ экономика политики тапхăрĕ пулнă. Çав политикăпа уса курса, хăш-пĕр çĕрте уйрăм хуçасем чĕрĕле пуçланă, хăйсен ĕçне-хĕлне уралантарма пуçланă. Çеçпĕл çĕнĕ экономика политикин тупсăмне çителĕклĕ ăнланайман. Вăл ÇЭПа каялла чакни, социализм позицийĕсене капиталистла элементсене пани выранне хунă. Çакă та поэта йывăр шухăша янă, татса парайми ыйту пек туйăннă. Поэтăн идеалĕ коммунизм пулнă, çав вăхăтрах вăл хуласенче уйрăм сутăçсем, ялсенче кулаксем тапаçланма пуçланине курнă та хăйĕн идеалĕ пурнăçа кĕресси пирки иккĕленме тытăннă.

1922 çулхи июнĕн 15-мĕшĕнче чир-чĕрпе тата йывăр шухăшсемпе асапланакан поэтăн куçĕ хупăннă.

Çеçпĕл вилсен, Федор Николаевич Пакрышень чăваш поэчĕн вил тăпри çинчи юман палăк çине çĕçĕпе картса сăвă çырнă:

Оця едина могила
Великого поета сховала.
З ним богато писень новых
Буденна земля втеряла.

...Çеçпĕл Мишши хăйĕн сăввисене ытти тĕрлĕ ĕçсене туса пынă вăхăтра çырнă. Нумай чухне унăн литература пирки шухăшлама вăхăчĕ те пулман.

Литературăпа интересленме Çеçпĕл Шăхасанта вĕреннĕ чухне, уйрăмах «Звездочка» журнал кăларнă вăхăтра тытăннă. Унăн малтанхи сăвви —«Часах...» сăвă (1916 ç.). Унтан вăл 1918—1919 çулсенче темиçе сăвă çырнă (вĕсем —«Чухăнсен кĕрешӳ тертĕнчи кун çути...», «Иртнĕ самана», «Вăхăт çитĕ, вăхăт пулĕ», «Хĕрлĕ тинĕсре», «Пуласси», «Атăл юрри», «Ака çинче» тата ыт.). 1920-мĕшпе 1921-мĕш çулсенче Çеçпĕл «Пурнăçпа вилĕм», «Чăваш чĕлхи», «Чăваш ачине», «Эп вилсен», «Чăваш поэтне Ахаха асăнса», «Чăн чĕрĕлнĕ», «Йывăр шухăшсем» сăвăсене çырнă. Ытти сăввисене поэт Крымра тата Украинăра çырса хăварнă. Вĕсенчен чи паллисем, тивĕçлипех, «Тинĕсе» тата «Хурçă шанчăк» сăвăсем.

Поэт-патриот пуласси çинчен чăннипех те хурçă шанчăкпа ĕмĕтленнĕ:

Ыран-и, паян-и... тĕреклĕн
Вутланĕ çĕршывăм чĕри,

Кăварлă чечеклĕн чечеклĕ
Çĕре çĕн хĕвелĕн юрри.
Çĕршывăм хĕвеллĕн çуталĕ,
Тапранĕ кăвар-кайăкла.
Кам хирĕç каласĕ,— улталĕ,
Кам «мар», тет, ун чунĕ—чăлах.

* * *

...Чăваш ĕç çыннисем Çеçпĕл Мишшине юратаççĕ, чун-чĕререн сума сăваççĕ, унăн ятне яланах ырă кăмăлпа асă-наççĕ. Поэтăн тарăн шухăшлă, çивĕч сăмахлă сăввисене пĕтĕм чăваш халăхĕ, ватти те, вĕтти те, юратса вулать.

Мĕншĕн-ха пирĕн халăх Çеçпĕле çавăн пек хисеплет? Мĕншĕн-ха унăн ячĕ пирĕншĕн çавăн пек хаклă? Мĕншĕн-ха çавăн пек çывăх?

Çеçпĕл Мишши — чăваш халăхĕн чи чухăн сийĕсем хушшинче ӳссе çитĕннĕ хастар поэт. Халăх шухăш-кăмăлне вăл çамрăклах ăша хывнă. Октябрьти Аслă революци ку-нĕсенче тапăкланах, ăнлансах революциллĕ халăх енне тăнă. Тепĕр çултан вара, вун тăхăр çулхи çамрăк, чăваш ачи Çеçпĕл Мишши большевиксен аслă партийĕн ретне кĕнĕ те, революци панă пултарулла вăй-хала тата та тарăн-рах туйса илсе, революциллĕ шухăшсемпе хавхаланса ĕçле-ме пуçланă.

Çĕршывра ун чухне хаяр кĕрешӳ пынă. Кивĕ тĕнчепе çĕнĕ тĕнче хушшинчи çапăçура Çеçпĕл Мишши вăйне шел-лемесĕр, çĕнĕ пурнăçшăн, коммунизмшăн кĕрешнĕ. Унăн сăввисем хĕç пек каснă, тăшмансене вут пек çунтарнă. Пĕ-тĕм чун-чĕрепе хĕмленсе, поэт-революционер халăха чĕннĕ: киввине ишсе, «ĕмĕрлĕх никĕс çине çĕнĕ çурт лартар», «йăлтăр хĕвел çуттипе тăрлар!»—тенĕ. Унăн чĕри чăнни-пех те «пин çын чĕри», юрри —«пин çын юрри» пулнă.

Çеçпĕл Мишши — поэт-гражданин. Тăван çĕршывпа халăх, вĕсен интересĕ поэтшăн — чи хакли, чи пахи пулнă. Вăл хăйĕн ялĕ çинчен калать-и, Шупашкар çинчен юр-лать-и; чăваш кĕнекипе чĕлхи çинчен кĕвĕ кĕвĕлет-и, уя тухса çӳрет-и, вăрмана пырса кĕрет-и, Атăл хумĕсен сасси-не итлет-и, шавлă тинĕс хĕрринче сăвă вулать-и,— кирек ăçта та, кирек хăçан та мухтавлă патриот Тăван çĕршыв çинчен, коммунизмăн хĕрлĕ ялавне çĕре ӳкермен паттăрсем çинчен шухăшланă. Унăн шухăшĕсем малтан мала вĕçнĕ, пулас çутă кунсене инçетрен курнă. Поэтăн ĕмĕчĕ халăх

ĕмĕчĕпе пĕрлешсе пынă, шанчăкĕ хурçă пек çирĕп пулнă. Çавăнпа та, пулас вăхăт çине шанса, çĕнĕ пурнăçа курса, уншăн кунĕн-çĕрĕн тăрăшса, ĕçлесе, кĕрешсе, Çеçпĕл Мишши: «Хăватлă, çĕн чĕреллĕ çĕн ĕмĕр чăвашĕ» умне «Интернационал кĕперĕ анĕ», тесе юрланă.

Патриот ĕмĕчĕсем пурнăçа кĕчĕç. Чăваш çĕршывĕ, Октябрьти революци панă ырлăхсене пула, аслă вырăс халăхĕ тăванла пулăшнипе, Ленин партийĕ ертсе пынипе, тĕпренех улăхланса çĕнелчĕ. Ĕлĕк пушă вырăнсем пулнă çĕрте çĕнĕ хуласем, улăпла заводсемпе фабрикăсем çитĕнсе ларчĕç. Колхозлă ялсенчи пурнăç та культурăллă та пуян. Чăваш пÿрчĕсенче Ильич лампи çутатать, радио сасси илтĕнет.

Патша вăхăтĕнче чăваш ваттисем: «Чăваш кĕнекине ĕне çинĕ», тесе калана пулсан, халĕ ăна вăл ытарлă сăмахсем ĕлĕкхи самана çинчен доклад тунă чухне усă курма çеç юрăхлă. Çеçпĕл ĕлĕкхи саманана тÿссе курнă çын, пирĕн халăха революци панă вăй-хала курса, унăн культури чечекленессе пĕлнĕ те: чăвашăн «кĕнеке те пулĕ — çĕршыв мулĕ», тесе çырнă.

Çаксем чăн сăмахсем пулчĕç. Халĕ кашни чăвашран тăваттăшĕ мĕнле те пулин шкулта вĕренет. Шкулсенче вĕренекен ачасем тăван чĕлхепе çырнă кĕнекесем вулаççĕ. Пушкин, Лермонтов, Толстой, Горький произведенийĕсене кăмăлласа вĕренеççĕ.

Çеçпĕл Мишши чăваш совет поэзине пуçласа янă, унăн никĕсне хывса, унăн çĕнĕ çулне тупнă. Çав çĕнĕ çулпа пырсан, тенĕ вăл, революци сывлăшĕпе сывласа ĕçлесен — «Чăваш Пушкинĕсене, Лермонтовĕсене курăпăр».

Çеçпĕл Мишши, хăйĕн ĕмĕчĕ пурнăçа кĕрессе шанса, çапла çырнă: «Шанчăк пуррисем — телейлĕ. Авал асаттесене мăшкăл тунине манас мар. Мăшкăл айĕнчен чĕрĕ тухнă чĕлхе тĕнчерен çухалмĕ.

Ку таранччен чăваш чĕлхийĕ илтĕнмен,— малашне чăваш юрри илтĕнĕ, чăваш сăвви, чăваш сăмахĕ, Атăл хумĕ пек, вăрман сасси пек, кĕсле сасси выранне пулĕ. Чăваш чĕлхи тимĕр татĕ, çивĕч пулĕ».

Чăваш халăхĕ Константин Иванова сума сăвать, революциллĕ юрăсем çырнă поэт-гражданина, харсăр Тайăр Тимккине, асрах тытать, Çеçпĕл Мишшин тĕлĕнмелле пултарулăхĕпе мухтанать. Вĕсем тунă ĕçсене чăваш халăхĕ сухатмарĕ, çĕр хут, пин хут ÿстерчĕ, пуянлатрĕ. Чăвашсен ĕнтĕ Пушкин, Лермонтов, Некрасов, Иванов, Тайăр,

Çеçпĕл традицийĕсене тытса пыракан, тĕпе хурса ĕçлекен поэтсем пур. Вĕсем чăваш Пушкинĕпе Лермонтовăн ĕçне ушкăнпа тăваççĕ, чăваш литературин ырă ятне ушкăнпа ĕçлесе сараççĕ.

Вĕсен сасси пĕтĕм çĕршывра илтĕнет.

*1952—1957*

## 2. Поэт сасси

**(Çеçпĕл Мишшин «Хурçă шанчăк» кĕнекине украинла куçарса кăларнă май)**

Çеçпĕл Мишши сăввисене вуланă чухне пирĕн ума тĕрлĕ ӳкерчĕксем тухса тăраççĕ. Çав ӳкерчĕксенчен пĕри çакăн пекрех: эпир, чăваш çыннисем, хамăр çĕршыв тăрăх хавасланса утатпăр, аслă Тăван çĕршыв çинчен шухăшлатпăр, уншăн, унăн хăвачĕшĕн, пулас кун-çулшăн вăй хурса ĕçлетпĕр. Çак хĕрӳллĕ ĕçре, пĕр-пĕрне пулăшса, аларан ал тытса ĕçленĕ çĕрте,— эпир чăваш ывăлĕ-хĕрĕсем, çĕн ĕмĕр çыннисем, Çеçпĕл Мишшине аса илетпĕр, поэт кĕнекине алла тытатпăр та сăвă вулатпăр:

Хăватлă, çĕн чĕреллĕ çĕн ĕмĕр чăвашĕ,
Хул пуççипе кăвак пĕлĕте перĕнсе,
Кун-çул уйне тухса, хĕвеллĕ тумтир тумланĕ,
Çĕн Кун ăна ыталĕ савăнса, ачашшăн;
Умне, çĕн çул çине, çĕн чечексем чĕртсе,
Интернационал кĕперĕ анĕ.

Поэт-патриот ку сăвва 1921 çулта çырнă. Ун чухне, ют çĕршыв интервенцине тата шалти контрреволюцие çĕнтерсе, Совет Çĕршывĕ хăйĕн юхăннă хуçалăхне ура çине тăратма тытăннă, вăрçă кӳнĕ сурансемпе, чир-чĕрпе, выçлăхпа пĕтĕм вăя хурса кĕрешнĕ. Ку ĕçе Çеçпĕл Мишши те хутшăннă. Вăл хĕрӳллĕ сăвăсем çырнă. Вĕсенче поэт халăх ĕмĕт-шухăшне каласа панă, çитес кунсене курма тăрăшнă.

Российăри тĕрлĕ халăхсем тахçантанпах, вĕсене капиталистсемпе улпутсем, патшан сĕмсĕр чиновникĕсем пĕр-пĕринпе хирĕçтерме тăрăшнă пулин те, халăхсен туслăхĕ çинчен ĕмĕтленнĕ. Вĕсен шухăшĕсене паттăр ывăлĕсем, çутă ăс-тăнлă писательсем — халăх куçĕ, халăх хăлхи пулса тăракан çынсем каласа панă.

Вырăссен аслă поэчĕ А. С. Пушкин, янравлă лирăпа

халăхăн ырă кăмăлне вăратнăскер, пулас аслă Ҫурҫре хăйĕн ятне пур халăх та асăнасса шаннă. Украинă аслă поэчĕ Т. Г. Шевченко та ҫавăн пек ĕмĕтсемпех пурăннă: хăйне халăхсем сума суса ырă сăмахпа асăнасса пĕлнĕ. Ҫавăн пек пулнă осетин поэчĕ Коста Хетагуров, тутар поэчĕ Габдулла Тукай, коми поэчĕ Иван Куратов, чăваш поэчĕ Константин Иванов. Ҫавăн пек пулнă чăн-чăн халăх поэчĕсем пурте.

Тĕрлĕ халăхсен тата хамăр тăван халăхăн поэчĕсен ырă ĕҫĕсене аса илсен, эпир Ҫеҫпĕл Мишшин ятне те асăнмасăр иртейместпĕр. Поэт-коммунист, халăх юрăҫи — Ҫеҫпĕл Мишши, вырăссен прогрессивлă литературин, революцилле писательсен паха традицийĕсене тытса пырса, революци поэзийĕн задачисене пурнăҫа кĕртес ҫул ҫине тăнă. Вăл хурҫă шанчăкпа пурăннă: ҫакă вăл — интернационал кĕперĕ, урăхла каласан, халăхсен туслăхĕ пуласси ҫинчен, ҫитмĕл ҫичĕ чĕлхе пĕр-пĕринпе тăванла пурăнасси ҫинчен ĕмĕтленни пулнă.

Ҫеҫпĕл Мишши сăввисене вуласан тата вăл Украинă революцилле поэтĕнчен Т. Г. Шевченкăран вĕреннине аса илсен, пирĕн куҫ умне иртнĕ вăхăтри тепĕр ӳкерчĕк тухса тăрать.

...1857 ҫулхи сентябрĕн 17-мĕшĕ. Атăл тăрăх, Шупашкар патĕнчен, «Князь Пожарский» ятлă пăрахут тăвалла, Чулхула еннелле, иртсе пырать. Унта Украинă поэчĕ-революционер Шевченко. Ăна патша правительстви ссылкăран ссылкăна ҫӳретнĕ. Ку чухне ăна Чулхулана янă.

Авалхи Шупашкара курсан, Тарас Григорьевич хăйĕн кун кĕнеки ҫине ҫакăн пек ҫырнă: «Эпĕ, пуҫласа хунă портрета малалла ӳкерес тесе, ирхи апат хыҫҫăн капитан пӳлĕмне кайма тухнăччĕ; умра, сăрт хыҫĕнчен, Шупашкар хули курăнса кайрĕ. Мĕскĕн, анчах илемлĕ вырăнта ларакан пĕчĕкҫĕ хула, унта чиркӳсен шучĕ ахаль ҫуртсенчен ытларах пулмасан, вĕсем ҫурри таран пулаҫҫех. Пĕтĕмпех авалхи Мускав архитектури. Кам валли тата мĕн валли туса лартнă вĕсене? Чăвашсем валли-ши? Ҫук, **православи валли»** (православи сăмаха Шевченко хăй аялтан палăртса туртнă).

Ҫакă вăл 95 ҫул ĕлĕк пулса иртнĕ.

Шупашкарта Шевченко пулнăранпа 64 ҫул иртсен,— Октябрьти социализмлă революци хыҫҫăн, виҫĕ ҫултан, 1921 ҫулти сентябрь уйăхĕнче, чăваш поэчĕ, аслă Шевченкăн литературăри ученикĕ — Ҫеҫпĕл Мишши Крымран Киев

хулине пынӑ. Украинӑн тӗп хулинче чӑваш поэчӗ хӑйӗн чи чаплӑ произведенийӗсенчен пӗрне — «Хурҫӑ шанчӑк» ятлӑ сӑввине ҫырнӑ.

Мӗн ҫинчен калать-ха пирӗн поэт ҫак паха сӑвӑра? Вӑл унта ҫӗнӗ кун ҫинчен, патша вӑхӑтӗнче пӗтсе ларасси патне ҫитнӗ чӑваш ҫӗршывӗ чӗрӗлесси ҫинчен калать:

Чӗрем, сик хӑюллӑн, хавассӑн
Хӑюлӑх юрри кӗвӗле—
Чӑваш чӗрӗлнине курмалла сан,
Ӑна тӗл пулса илмелле...

...Хастарлӑ, хыт утӑмлӑ пулӑр,
Ҫӗршывӑн хастар ачисем,
Вут кайӑклӑн вӗҫӗр, ан юлӑр,
Ан юлӑр кун-ҫул уттинчен.

Чӑваш поэчӗ Киева пысӑк ӗмӗтпе пынӑ: вӑл, литературӑпа живопиҫ ӗҫне вӗренес тесе, Киеври художествӑ институтне кӗресшӗн пулнӑ. Анчах Тӑван ҫӗршыв кун-ҫулне мала хурса, вӑл хӑйӗн ӗмӗтне пӑрахнӑ та Хӗрлӗ Ҫара кайнӑ. Кунта поэт-коммунист салтаксем хушшинче политикӑ енӗпе хастар ӗҫленӗ (парти ячейкин секретарӗ пулнӑ, культурӑпа ҫут ӗҫ енӗпе ӗҫленӗ тата ыт. те). Ҫеҫпӗл патне унӑн Украинӑри сывӑх тусӗсем ҫӳренӗ, комсомол енӗпе ӗҫлекен паллӑ работник Кирилл Турган тӑтӑшах пырса тӑнӑ. Крымра вӗсем пӗрле карточкӑ та ӳкерттернӗ. Картӑчкӑн тепӗр енне Ҫеҫпӗл: «Революцин хурҫӑ карапӗ ҫинче халсӑррисем ан пулччӑр. Хӑюллӑ та ҫирӗп чунлисем ҫеҫ. Октябрь тӑвӑлӗнче ҫуралса чечекленнӗ Ҫӗнӗ Куна тивӗҫлӗ», тесе ҫырнӑ.

Ҫак пӗчӗк ҫыру пире Ҫеҫпӗлӗн «Ҫӗн Кун аки» сӑввин тӗп шухӑшне ӑнланса илме те пулӑшать. Ҫеҫпӗл пысӑк саспаллисемпе ҫыракан Ҫӗн Кун — вӑл Октябрьти революци пуҫласа янӑ совет самани кунӗ. Вӑл кун чӑваш ҫыннине те кун-ҫул панӑ, ӑна хӗвел ҫутине кӑларнӑ, телейлӗ тунӑ. Ҫӗн Кун аки чӑваш ҫӗрне тӗрӗ тӗрлесе, сӳрелесе пӑрахнӑ, чӑвашӑн иртнӗ ӗмӗрӗ вара вилсе выртса, пытарӑнса юлнӑ.

Поэт-большевик чӗри кӑвар пек ҫуннӑ, революци шухӑшӗпе хавасланнӑ. Кашни сӑвӑра тенӗпе пӗрех вӑл философиллӗ шухӑшсем калать. Сӑмахран, поэт ирӗклӗхшӗн ҫапӑҫса вилнӗ тӑванӗсене аса илет те акӑ мӗн ҫырать:

Чухӑнлӑх, пуянлӑх, уйрӑмлӑх йӑранӗ
Ирӗкпе ҫӗнелнӗ пурнӑҫран тарӗ;
Чӗрере ачашшӑн ҫунӗ, ҫулӑмланӗ
Тантӑшлӑх, тӑванлӑх, юрату кӑварӗ.

Ку йĕркесем эпир малта асăннă «интернационал кĕперĕ» мĕне пĕлтернине ăнланса илме те пулăшаççĕ. Интернационал кĕперĕ — çĕнĕ саманари, Совет влаçĕ вăхăтĕнчи тăванла халăхсем хушшинчи туслă çыхăну (паллах, ăна Çеçпĕл тĕпĕ-йĕрĕпех каласа парайман, каласа пама та пултарайман, анчах ăна чĕрепе туйса илнĕ те «интернационал кĕперĕ» тесе ят панă).

Киевра Çеçпĕлĕн тахçанхи чирĕ каллех йывăрланнă: ури хытă сурма тытăннă (ку чирпе вăл вунă çул асапланнă). Çуркунне, 1922 çулхи март уйăхĕнче, хăйĕн тусĕсенчен пĕри, Украинă поэчĕ — Ф. Н. Пакрышень чĕннипе Çеçпĕл Чернигов кĕпĕрнинчи Остĕр хулине ĕçлеме каять. Кунта ĕçрен пушаннă вăхăтсенче вăл Т. Г. Шевченко сăввисене тĕпчесе вĕренет, нумайăшне чăвашла куçарать, вырăсла сăвăсем çырать (сăмахран, «Весна», «Вечер», «Выдуманным глазам» тата ыт. сăвăсем те).

Çавăн чухне Атăл тăрăхĕнче хăрушă выçлăх пулнă. Выçă çӳрекен çынсем çинчен шухăшланипе чирлĕ поэтăн кăмăлĕ хуçăлма тытăннă, пуçне пĕччен лĕх шухăшĕсем пыра-пыра кĕнĕ. Унăн хăйне пурте маннă пек туйнă самантсем те пулнă. Вăл вара хăш-пĕр сăввисем айне **«М. Забытый»** тесе ал пуснă.

Выçлăх çулĕсенче Çеçпĕл Мишши шухăшĕсенче хирĕçӳсем сисĕнме пуçлаççĕ. Киева пырсан, пĕр çул каярах, революциллĕ çамрăксемпе пĕрле чухне, вăл революци карапĕ çинчен хавасланса çырнă: халĕ, экономикăри çĕнĕ политика вăхăтĕнче, Остĕр çывăхĕнчи ялта, вак буржуалла сийсем хушшинче, поэт пуçне чуна ыраттаракан шухăшсем пырса кĕнĕ, вăл вара хăйĕн пурнăçĕ çинчен «çулсăр çĕрте çара уран тăракан пурнăç», тесе çырнă.

Çак хирĕçӳсем тата хăпма пĕлмен чирĕ Çеçпĕл Мишшине вăхăтсăрах çĕре кĕртнĕ.

Çеçпĕл Мишшине унăн Украинăри тусĕсем питех те пысăк хак панă. Сăмахран, Ф. Н. Пакрышень хăйĕн тусĕ çинчен 1921 çулта çакăн пек çырнă:

Эп пурнап-и чăн телейпе
Е пулăп йывăр хурлăхра,—
Анчах эс, сутă çăлтăр пек,
Çиçме пăрахмăн асăмра.

Вăхăтсăр вилнĕ поэта пĕлекенсем 1921—1922 çулсенче сахал пулнă, халĕ вара ăна чăваш халăхĕ кăна мар, вырăс çыннисем те, Украинă çыннисем те пĕлеççĕ. Хастар поэтăн сасси çухалман, вăл паян та илтĕнсе тăрать.

* * *

Çеçпĕл Мишши ячĕ чăваш литературишĕн, чăваш халăхĕшĕн çывăх та ырă ят пулса тăчĕ. Унăн чапĕ сарăлсах пырать. Поэтăн произведенийĕсем темиçе хут ĕнтĕ уйрăм кĕнекепе пичетленсе тухрĕç. Чăвашла вĕсем виçĕ хут тухрĕç: 1) «Сăвăсем» (1928 ç.)— 25 сăвă; 2) «Сăвăсем» (1940 ç.)— 19 сăвă; «Хурçă шанчăк» (1948 ç.)— 22 сăвă.

«Хурçă шанчăк» кĕнекене 1949 çулта вырăсла кăларнă («Стальная вера»). Кунта пĕтĕмпе 21 сăвă кĕнĕ.

Кăçал Украинăри «Радянський письменник» издательствă Çеçпĕл Мишшин «Хурçă шанчăк» кĕнекине украинла куçарса 5 000 экземпляр кăларнă. («Сталева вира». 1957). Ку изданире пĕтĕмпе 27 сăвă.

Çапла вара, Çеçпĕл Мишшин Украинăра пичетленсе тухнă кĕнеки, ыттисемпе танлаштарсан, чи туллирехххи пулса тăрать.

Украинă чĕлхи — вăл Тарас Шевченкăпа Иван Франко, Леся Украинка чĕлхи, вăл Павло Тычина, Микола Бажан, Максим Рыльский чĕлхи.

Вырăспа украин чĕлхисем — славян халăхĕсен чĕлхисем йышĕнче чи пуян та хăватлă чĕлхесем. Пирĕн поэтăн юрри-сăввисене çак чаплă чĕлхесем çине куçарни пире чăннипех те савăнтарать.

«Хурçă шанчăка» украинла куçаракансем хушшинче Украинă литературин чи паллă çыннисем. Унта Государствă преми лауреачĕсем—Павло Тычина тата академик-поэт Максим Рыльский, Микола Бажан, Владимир Сосюра, Андрей Малышко, Микола Нагнибеда поэтсем, Олесь Гончар писатель тата ыттисем те.

«Хурçă шанчăк» кĕнеке «Чăваш халăхĕн юрăçи» ятлă статьяпа пуçланать. Ăна çыраканĕ — Украинă писателĕ Олесь Новицкий.

«Хурçă шанчăк» кĕнекене лайăх хутпа, лайăх хуплашкапа кăларнă. Поэт сăнне чăваш художникĕ Петр Чичканов ÿкернĕ.

Пирĕн поэт сăввисене Киевра украинла куçарса кăларни, Украинă çыннисем ăна ырă кăмăлпа вулани, хисеплени, поэт вил тăприне тăванла упраса пурăнни, чи малтан, Украинă халăхĕпе чăваш халăхĕ хушшинчи туслăх çинчен калать. Кун пек туслăх ирĕклĕ Совет çĕршывĕнче çеç пулма пултарать.

Çак пысăк ĕçшĕн эпир, чăваш писателĕсем, пирĕнпе

пĕрле пĕтĕм чăваш халăхĕ, Украина писателĕсене чун-чĕререн тав тăватпăр.

«Сталева вира» кĕнекери сăвăсен ярăмĕ «Хурçă шанчăк» сăвăпа уçăлать. Ку сăвă хыççăн «Тинĕсе» ятлă сăвва пичетленĕ. Питех те тĕрĕс тунă. Мĕншĕн тесен Çеçпĕл Мишшин пултарулăхĕ пуринчен ытларах çак сăвăсенче палăрать.

«Тинĕсе» сăвăра поэт хăйĕн эстетикăллă шухăшĕсене каласа пама тăрăшнă. Унăн эстетикăллă шухăшĕсем çак йĕркесенче лайăх сисĕнеççĕ:

Тинĕс, тинĕс, эс хаяррăн
Сăвăçăн юнне-чунне
Вăйлă хумлă юрăпа,
Кĕрешме чĕнен саспа
Нишлĕхĕсенчен тасат.
Вăйлă паттăрлăх, хăват
Вырнаçтар ун чĕрине.
Чунĕ ун хăюллă пултăр,
Тинĕс вăйĕпеле тултăр.
Савтăр паттăрлăх вăйне;
Çĕн куна, çĕн тĕнчене
Юратса çĕн юрă хутăр,
Кĕрешӳ ĕçне-вăйне
Хăй чĕрин хĕвелĕ тутăр.
Çĕн поэт ака та тутăр,
Утă çултăр,
Вутă çуртăр,
Ĕçлесе çĕн юрă хутăр,
Туй пулсан,—ташлатăр, култăр...

Çеçпĕл Мишши шухăшĕпе, çĕнĕ поэтăн пурнăçпа çывăх тăмалла, пурнăçа тĕрĕс кăтартса памалла. Çĕнĕ поэт чĕринче нишлĕхсем пулмалла мар, ун чĕринче вăйлă паттăрлăх, хăюлăх, хăват пулмалла.

Эпир, писательсен ĕçĕ çинчен калана май, ялан тенĕпе пĕрех: писательсем çĕнĕ пурнăç çинчен çырмалла, тетпĕр. Çакă вăл — тĕрĕс шухăш. Хальхи пурнăç хăех çавăн пек тума хушать. Çеçпĕл Мишши сăмахĕсене çак енчен илсе пăхсан, вĕсем халĕ те кивелменни курăнать. Чăнах та, çĕнĕ поэт «çĕн куна, çĕн тĕнчене юратса çĕн юрă хутăр...» тени ăçтан кивелтĕр-ха? Мĕнле вăл юрăхсăра тухтăр-ха? Çук, вăл кивелекен шухăш мар; вăл совет литератури теорийĕн никĕсĕнче, материалистла эстетикăн никĕсĕнче тăракан шухăшсенчен пĕри пулать.

Кĕрешӳ поэчĕ, халăх поэчĕ тăван халăхĕнчен, ĕç çыннисенчен аякра тăма пултараймасть: унăн ĕçлесе çĕн юрă хывмалла, ака та тумалла, утă та çулмалла, вутă та

çурмалла; туй пулсан — ташламалла, юрламалла, кулмалла, савăнмалла...

Çеçпĕл калана тăрăх, чăн-чăн поэт чĕри лăпкă чĕре пулма пултараймасть, унăн чунĕ çĕн тĕнчен çĕн пурнăçне, çĕн кунне, çĕнĕ кун-çулне, çĕнĕ пурнăç хĕвелне мухтаса юрламасăр кăвар çунатлăн вĕçме пултараймасть. Халăх чунĕ çĕкленнĕ чух ăçтан-ха поэт кăмăлĕ лăпкă пултăр, чĕри ан хаваслантăр? Халăх чунĕ савăннă чух вăл ăçтан-ха ан савăнтăр? Ăçтан-ха ан юрлатăр, ăçтан-ха ун чĕлхи вĕçне кăварлă сăмахсем ан килччĕр?

«Тинĕсе» сăвă авторĕ шăпах ĕнтĕ çавăн пек çĕнĕ поэт пулнă.

«Тинĕсе» — паха та вăйлă, илемлĕ те кĕрнеклĕ сăвă, çĕнĕ тĕнчене мухтакан философиллĕ сăвă.

Тепĕр енчен, çак сăвă чăваш чĕлхин хăвачĕпе илемĕ çинчен те калать. Çеçпĕл унăн хăватне ытти поэтсенчен ытларах туйнă. Эпир çакна поэтăн кашни сăввинчех куратпăр. Хальхи чăваш совет литературин утăмĕсенче туятпăр. Халĕ ĕнтĕ чăваш чĕлхи аталанса çитнĕ чĕлхе пулса тăчĕ. Халĕ чăваш букварĕ кăна мар, чăваш чĕлхин грамматики те, чăваш пичечĕ те, литератури те пур.

«Тинĕсе» сăвва украинла, ман шутпа, вырăсла куçарнинчен лайăхрах куçарнă (куçаракансем: вырăсла — А. Ойслендер, украинла — П. Тычина).

«Хурçă шанчăк» кĕнекери произведенисем — пурте тенĕпе пĕрех лирикăллă сăвăсем. Çеçпĕл — поэт-лирик, поэт-гражданин. Çапла каланинче хирĕçӳ çук-и? — тесе ыйтма пултараççĕ. Çиелтен пăхсан, пур пек туйăнать, анчах унта хирĕçӳ çук. Çеçпĕл — пӳлĕмре «чĕвĕлтетсе» ларакан лирик мар, кĕрешӳпе ĕç поэчĕ.

Çеçпĕл Мишши сăввисенче кашнинчех автор хăй çинчен, хăй мĕн шухăшлани, мĕн ĕмĕтленни çинчен çырать.

Пурнăçри тĕрлĕ пулăмсене (явленисене) поэт чи малтан хăйĕн чĕри витĕр, хăйĕн кăмăл-туйăмĕ, чун-хавалĕ урлă кăтартса парать. Ак, сăмахран, патша вăхăтĕнчи чăваш çĕршывне вăл «шухăш йĕрки» витĕр курать те чуна çӳçентерекен картинă ӳкерсе парать:

Катаран каç килсен, каçхи кунăн мĕлки
Уйсене ыйăхпа хупласан,
Йĕркерен-йĕркерен тĕрлĕ шухăш йĕрки
Пуçăма пуçтарна пуçласан,—
Ĕлĕкхи ĕмĕрсен ĕмĕлки-кĕлетки
Куçăма куранать аякран.

Елёкхи ёмёрсен ёмёлки хушшинче
Чăваш çĕрĕ мана курăнать:
Ман çĕршыв хĕрлĕ юнлă хĕрес çумĕнче
Çакăнса, çыхăнса тăраять.

Кăмрăкланнă асаплă чăваш чĕринчен
Юн тумлать, юн тумлать — хĕрлĕ юн.
Чăваш пусĕ çинче хуп-хура сивĕ кун
Шăхăрса ахăрать пур енчен...

Ку картинă — поэт-лирик ӳкерсе панă картинă. Анчах вăл кунта хăй шухăшне çеç мар, хăй вăхăтĕнчи сынсен, хăй класĕн, хăй халăхĕн шухăшне сырса парать. Çапла вара, поэт-лирик шухăшĕ халăх шухăшĕпе пĕр пек пулса тăрать. Поэт хăй те ахаль поэт кăна мар, поэт-гражданин, халăх поэчĕ пулса тăрать.

Тепĕр сăвăра поэт акă тата мĕн çырать:

Кивви çĕтет, çĕрсе çĕтет кивви.
Чĕре кĕтет хĕвеллĕ ĕмĕре.
Ыран килес Çĕн Кун юрри-кĕвви
Ман чĕрене çапла килсе кĕрет.

Кивви çĕрсе пĕтни, çĕнни ӳссе çитĕнни поэт «чĕрине килсе тивет». Çакна вăл хăйĕн халăхне каласа парать. Пирĕн поэт ку сăвăра та поэт-гражданин çулĕ çинче тăрать. Вăл кунта та пысăк ыйтусене, самана ыйтăвĕсене, «самана саккине» пырса тивекен ыйтусене хускатать.

Çавăнпа та ĕнтĕ Çеçпĕл Мишши хăй çинчен çакăн пек калама пултарнă:

Кăвар чĕрем — пин çын чĕри.
Эп пĕр çын мар — эп хам пин-пин,
Эп пин чăваш, эп пин-пин çын!
Чĕрем юрри — пин çын юрри.

Украинă чĕлхипе кăларнă кĕнекери сăвăсенчен пĕри Çеçпĕлĕн ытти кĕнекисенче нихăшĕнче те пичетленмен (51 стр.). Ку сăвă «Пăталарĕç тăван çĕршыва...» сăмахсемпе пуçланать. Çак сăввăн тĕп шухăшĕ «Катаран каç килсен...» сăвă шухăшĕ пекрех. Унта патша вăхăтĕнче чăваш çĕршывĕ мĕнле йывăр асапра пурăнни çинчен çырнă.

Çав сăввăн малти йĕркисенче иккĕлле ăнланмалла шухăшсем пур. Ăна поэт якатса çитереймен, вăл черновик çеç. Çавăнпа та, ман шутпа, ăна украинла кĕнекене кӳртмелле пулман (е вăл сăвă мĕнле вăхăт çинчен каланине, ăна хăш вăхăтра çырнине умсăмахра тĕплĕн кăтартса памалла пулнă).

Сăввăн иккĕмĕш пайĕнчи йĕркисем поэтăн шухăшĕсене уçса параççĕ: кунта Чăваш çĕршывне Октябрьти революци вилĕмрен çăлни курăнать. Анчах Çеçпĕл темшĕн çакна тĕрлĕ «хĕрессем» урлă кăтартса парать:

Янк уяр кĕрхи каç çĕр чĕтрерĕ,
Çÿлтен мар, çĕртенех пĕр мăн сас:
— Эй, эсир, выççисем, итлĕр!— терĕ,—
Итлĕр, кам пурăнмашкăн хавас!..

Ман çĕршыв хĕресне аça çапрĕ,
Кусне уçрĕ çĕршывăм, пăхать:
Хăй пекех мĕскĕнсен йышлă çарĕ
Ун патне юрласа çывхарать.

Çитмĕл çич чĕлхепе саламлаççĕ,
Ыталаç, чуп тăваç пĕр-пĕрне,
Сÿтĕл, татăл, асап саламачĕ,
Чура мар эпир тек ĕмĕрне!..

Ку сăввăн формине тĕн тавращĕнчен илнĕ сăмахсемпе, таçтан евангелирен илнĕ сăнлăхсемпе йĕркеленĕ пулсан та, ăна «шĕкĕлчесе», тĕпчесе, чăн шухăшне тупма пулать. Унăн тĕп шухăшĕ — лайăх шухăш: **чăваш ĕç çыннисем тек чура мар ĕнтĕ!**

Çеçпĕл Мишшин сăввисенчи хăш-пĕр сăнлăхсем символизм шухăшĕсем витĕмĕнчен килнĕ. Çеспĕл Мишши Пушкинран, Лермонтовран, Некрасовран, Шевченкăран, Горькирен, Ивановран, Тайăр Тимккинчен вĕреннĕ, анчах çав вăхăтрах çакă та паллă: ăна Надсон та, Блокпа Брюсов та пайтах интереслентернĕ, пирĕн поэта имажинистсем те хăш-пĕр чухне килĕшкеленĕ (сăмахран, вăл хăйĕн «Выдуманным глазам» сăввине пуçлас умĕн эпиграф вырăнне çакăн пек сăмахсем çырса хунă: «... **Моей несравненной — поэзии имажинизма...» — «...Манăн ытараймие — имажинизм поэзине...»**

Имажинизм шухăшĕсен витĕмĕ поэт-гражданина пĕтĕмпех çавăрса илнĕ, темĕпĕр. Çук, эпир ун пек каласшăн мар, анчах та Çеçпĕл Мишшин уйрăм сăввисенче имажинизмăн пултарулăх мехлечĕн йĕрĕсем те палăраççĕ *.

---

* **Халĕ асăрхаттарни.** Хăш-пĕр юлташсем çак вырăна вуласан: статья авторĕ поэт ятне варалать теме пăхрĕç. Анчах «имажинизмăн пултарулăх меслечĕн йĕрĕсем те палăраççĕ» тенинче поэт ятне варалама пăхни пачах та çук. Поэт пултарулăхĕн вăйсăр енĕсене кăтартса панипе унăн пĕлтерĕшĕ пĕрре те чакмасть. Çеçпĕлĕн те çавах: унăн ырă ячĕ çитменлĕхсене, вăйсăр енĕсене кăтартнăшăн пĕчĕкленмест те, вараланмасть те.

Çеçпĕл Мишши — икĕ самана хушшинче пуранса ӳснĕ поэт. Кивĕ саманана, капитализм йĕркине, социализмлă революци çапса аркатнă; коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, рабочисемпе хресченсем çĕнĕ самана, совет йĕрки, тума тытăннă. Çак ĕçре кашни çыннăн класлă сăн-сăпачĕ, шухăш-кăмăлĕ палăрнă. Киввипе çĕнни хушшинче хаяр кĕрешӳ пынă. Çĕршывра граждан вăрçи вучĕ ялкăшнă. Çак хĕрӳ кунсенче Çеçпĕл тăшмансене хирĕç хаяр кĕрешнĕ, ĕç çыннисене кĕрешĕве чĕнсе сăвăсем çырнă.

Çеçпĕл сăввисенчен çакă курăнать: вăл çĕнĕ саманапа пĕрле; çавăн чухне вăл, тӳрех, кивĕ йăласенчен, кивĕ шухăш-кăмăлсенчен пĕтĕмĕшпех тасалса çитнĕ çĕнĕ çынсем (идеаллă çынсем) пуласса кĕтнĕ. Паллах, çĕнĕ çынсем ун чухне пулнă ĕнтĕ, вĕсен йышĕ ӳссех пынă. Çав çынсене курсан, поэт савăннă; анчах тĕрлĕ майсемпе тытăнса юлнă кивĕ çынсене курсан, тарăхнипе хĕмленсе çуннă, хăш чухне ун пуçне йывăр шухăшсем килнĕ, тĕксĕм мĕлкесем курăннă.

Сеçпĕл Мишши пултаоулăхĕн вăйсăо енĕсем, унăн шухăшĕсенчи хăш-пĕр хирĕçӳсем 1917—1922 çулсенчи пурнăçăн хирĕçĕвĕсенчен, вĕсенчен хăшне-пĕрне поэт тĕрĕс ăнланса илейменнинчен килнĕ (çакă вăл «Вăрман ачисем» калавра, «Чăваш поэчĕ» пьесăра, «Выç псалом», «Кĕпер хывни», «Паянтан» сăвăсенче уççăнах палăрать). Савна шута илмесен, Çеçпĕл Мишшин пултарулăхне кирлĕ пек тĕрĕс хаклама çук.

---

«Выдуманным глазам» сăвва поэт 1922 çулхи майăн 30-мĕшĕнче (вилес умĕн 15 кун малтан) çырнă, сăвви айне «М. Забытый» тесе алă пуснă. Тӳрех калас пулать: ку сăвăра ӳкĕнчĕкрех шухăшсем палăраççĕ, унти шухăш-кăмăл, унти сăнлăхсем, сăмах çаврăнăшĕсем, мелсем, танлаштарусем çав çулсенче имажинизм текен юхăмра пулнă поэтсенни пекрех.

Литература аталанăвĕн çак тапхăрне (1922—1923 çç.) асра тытса, А. Фадеев хăйĕн «Мой литературный опыт — молодому автору» ятлă статйинче сапла çырать: «Вăл вăхăтра литературăра «имажинизм шкулĕн витĕмĕ (влиянийĕ) вăйлă палăрса тăнă. Тĕлĕнмелле танлаштарусем шухăшласа кăларассине, тĕлĕнмелле эпитетсемпе тата метафорăсемпе усă курассине имажинистсем художествăлла творчествăн чи кирлĕ задачи тесе шутланă. Имажинистсен витĕмне пула эпĕ те мĕнле те пулин «сверхъестественный» япала шухăшласа кăларма тăрăшаттăм. Çавăнпа пĕрремĕш повеçре манăн суя сăнлăхсем, тĕрĕсмарлăхсем нумай пулчĕç, вĕсем сиччен халĕ аса илме те намăс» («О писательском труде» кĕнекен 295—296 стр. пăхăр).

Çак сăмахсене асра тытса, Çеçпĕл Мишшин хăш-пĕр сăввисене, илсе пăхсан, «Выдуманным глазам» сăвва поэт мĕне пула çырнине те, ăна валли эпиграф вырăнне мĕншĕн «...моей несравненной — поэзии имажинизма»... тенĕ сăмахсене илнине те çăмăллăнах ăнланма пулать.

Çеçпĕл пултарулăхĕнче тата çакă сисĕнет: поэт наци ыйтăвне вĕçне çитиех тĕрĕс ăнланайман, экономикăри çĕнĕ политикăн ăш-чиккине те кирлĕ пек чухласа илеймен.

Чăваш халăх тăшманĕсем, буржуалла националистсем чăваш совет литературин аталанăвне тĕрлĕ майсемпе чарса лартасшăн пулнă, пирĕн чи лайăх поэтсен — Константин Ивановăн, Çеçпĕл Мишшин ячĕсене варалама хăтланнă. Вĕсем, поэт произведенийĕсен класлă ăш-чиккине пăсса, усал элек сарасшăн пулнă, халăха хăйĕн юратнă сăвăçĕнчен пистерме шутланă.

Чăваш халăхĕ, парти ертсе пынипе, ирсĕр тăшмансене пуçĕпех пĕтерсе тăкрĕ. Националистсен ирсĕр ĕмĕчĕсем путланса лаочĕç.

Çеçпĕл Мишшине чăваш халăхĕ юратать, пысăк хисеппе хисеплет. Çеçпĕл чăваш совет литературин сăпки умĕнче тăнă, чăваш совет поэзийĕн никĕсне хывнă. Унăн чаплă сăвви-юррисем чăваш совет поэзийĕнче классикла произведенисем пулса тăчĕç.

Çеçпĕл Мишши сăввисене вырăсла тата украинла куçарса кăларни ăна ытти халăхсен ĕç çыннисем те ыоă кăмăлпа юратса хисеплени çинчен каласа парать. Чăваш поэтне Украинăра мĕн тери хисеплени çинчен Олесь Новицкий «Хурçă шанчăк» умсăмахĕнче çакăн пек çырать: «Вăл пирĕншĕн тăванла халăхăн аслă ывăлĕ пулнипе кăна мар хаклă. Çеçпĕл Мишши пирĕншĕн тата çакăн пирки те хаклă: вăл хăйĕн творчествине пула, революциллĕ вăй-халпа, хĕрӳллĕ те хăватлă ĕçпе тулнă творчествине пула, Совет Украинипе унăн йăмăкĕ пулса тăракан Чăваш совет çĕршывĕ хушшине чи пуçласа кĕпер хывакансенчен пĕри пулчĕ».

Ирĕклĕ чăваш халăхĕ хăйĕн аслă пиччĕшĕсене — вырăспа украинă халăхĕсене чăваш поэтне сума сунăшăн, хăйне куллен-кун пулăшса пынăшăн чун-чĕререн тав тăвать, çитмĕл çичĕ чĕлхеллĕ халăхсен тăванла йышĕнче хисепленĕшĕн савăнать.

*1957*

## И. Е. УНДРИЦОВ (АХАХ)

Иван Евграфович Ундрицов (Ахах) — питех те йывăр вăхăтра, пирĕн çĕршыв граждан вăрçине пуранса ирттернĕ çулсенче, палăрнă поэтсенчен пĕри. Чăннипе каласан, унăн пултарулăхĕ кирлĕ чухлĕ сарăлса та çитеймен, çапах та вăл чăваш совет литературин историне кĕрсе юлнă.

И. Ахах — чи малтан лирикăллă поэт, анчах çав вăхăтрах вăл калавсемпе очерксем те, публицистикăллă статьясем те çырнă. Ку çеç те мар-ха. Ахах сăвăллă пысăк драмăсем çырас тĕлĕшпе те хастар ĕçленĕ. Вăл «Тăвана юратни», «Тайга пусмăрĕнче» ятлă драмăсем, «Марине» пьесăн пĕр пайне, «Алюнкапа Алюшка» ятлă поэмăн пуçламăшне çырнă. Грибоедован «Горе от ума» комедине чăвашла куçарма тытăннă.

Поэтăн ĕмĕрĕ питех те кĕске пулнă: вăл пĕтĕмпе те çирĕм икĕ çул çеç пурăннă; литературăра Ахах пĕр-ик çул кăна ĕçленĕ.

* * *

И. Е. Ундрицов Уйпуç Ялтра ялĕнче (халĕ Çĕмĕрле районĕ, Чăваш АССР) 1898 çулта вăтам хресчен çемйинче çуралса ӳснĕ.

Иван Евграфович тăванĕсем вĕреннĕ çынсем пулнă. Пулас поэт хăй те çамрăклах вĕренме тытăннă. Вăл малтан Юманай салинче пуçламăш шкулта вĕренет, унтан Хĕрлĕ Чутайри икĕ класлă шкултан вĕренсе тухать.

Çак шкулсенчен вĕренсе тухсан, кăштах тăван ялĕнче пурăннă хыççăн, хастар чĕреллĕ çамрăк, çĕршывшăн, тăван халăхшăн усăллă пулас тесе, вĕренесшĕн çунакан

чăваш ачи — Иван Ундрицов Хусана тухса каять. Кунта вăл духовнăй семинарине кĕрет. Анчах ку шкул унăн кăмăлне кайман. Вăл унта вĕренме часах пăрахнă та Хусанти педагогика институтне кĕнĕ. 1918 çулта «Канаш» хаçат редакцинче ĕçленĕ.

Ку вăхăтра çĕршывра граждан вăрçи пынă. 1918 çулхи август уйăхĕнче шурă гвардеецсемпе пăлхавçă-чехословаксем Хусана çитсе кĕреççĕ. Вĕсене Хусанти мул хуçисем савăнса кĕтсе илнĕ, хулара террор пуçланса кайнă. Шуррисен влаçĕ рабочисене, коммунистсене персе вĕлерме тытăннă. Çак тискер кунсенче çамрăк поэт Ундрицов тăшмансенчен тарса пытанать те августăн 29-мĕшĕнче Хусана Хĕрлĕ Çар чаçĕсемпе пĕрле таврăнать.

И. Е. Ундрицов çав çулхинех коммунистсен партине кĕрет. Вăл, ялти шкулта вĕреннĕ чухнех литературăпа интересленнĕскер, çĕрне-кунне пĕлмесĕр, политикăллă статьясем, сăвăсем, калавсем, рецензисем çырать. Хĕрлĕ Çар ретĕнче пулнă вăхăтра, 1919-мĕш çулта, вăл «Чухăнсен сасси» хаçат редакцинче секретарьте ĕçлет. Поэт-воин хăйсен чаçĕпе пĕрле вырăнтан вырăна куçса çӳренĕ, хуларан хулана çитнĕ (Хусан, Пĕкĕлме, Пăхăрăслан, Сызрань, Чĕмпĕр, Пелепей, Ёпхӳ).

Хăйсен чаçĕ Ёпхӳре тăнă чухне, икĕ уйăх хушши, Ахах чăвашла спектакльсем лартас тĕлĕшпе ырми-канми ĕçлет, концертсем организацилет, докладсем тăвать, хăех пьесăсем çырать.

Урал енчен Колчак хĕсе килме пуçласан, Хĕрлĕ Çар вăхăтлăха каялла чакнă. Çакăн чухне Ахах хăйĕн юлташĕсемпе пĕрле «Чухăнсен сассин» типографине çăлса хăварать. Хаяр çапăçу вăхăтĕнче ĕçлеме тивнĕ пулин те, хаçат йĕркеллĕ тухса тăрать, хĕрлĕ салтаксене тăшмана хирĕç хастар çапăçма, ăна хăвăртрах çапса аркатма чĕнет. «Атьăр социализмшăн çапăçма!» ятлă статйинче вăл 1919 çулта, хăйĕн ĕмĕтне уççăн палăртса, çакăн пек çырать: «Хресченпе ĕçлекен, тыт çирĕп аллуна хĕç-пăшал! Атя окопри юлташ патне социализмшăн çапăçма», тет.

Чылай чухне Ахах хăй те, алла пăшал тытса, вăйне шеллемесĕр, шуррисене хирĕç çапăçать.

1919 çула вăл пĕтĕмĕшпех фронтра ирттерет.

Хастар чĕрелле поэт-воин граждан вăрçинче темĕнле йывăрлăх та тӳссе курнă. Пĕкĕлмепе Пелепей хушшинче 120 çухрăм хушши çунапа (ăшă тумтирсĕр) кайнă. Пĕррехинче вăл сĕлкĕшлĕ, пăрлă шыв урлă ишсе каçнă. Малта-

нах имшеркке сывлăхлă, ÿпке чирĕпе асапланакан Иван Ахах çавăн чухне шăнса пăсăлнă та йывăр чирлесе ÿкнĕ.

И. Е. Ундрицов 1920 çулхи мартăн 13-мĕшĕнче хăйĕн тăван ялĕнче вилнĕ. Çамрăк поэта пĕтĕм ял масар çине ăсатнă, ялти коммунистсем халăха поэтăн ĕçĕсем çинчен каласа панă.

Çамрăк поэт вăхăтсăрах çĕре кĕни çинчен калакан хуйхăллă хыпар унăн тусĕсем патне çитнĕ. Каштах вăхăт иртсен, поэтăн литературăри тусĕ, кăвар чĕреллĕ Çеçпĕл Мишши, Ахаха асăнса, ятарласа сăвă çырнă.

Çеçпĕл Мишши çав сăвăра Ахах çинчен тĕлĕнмелле йĕркесем çырса хăварнă, поэта тивĕçлĕ хак панă. Акă вăл сăвă:

Тăван çĕршыв чĕлхин малашнехи çинчен
Шухăшласа, пуçа тĕрлĕ шухăш килсен,—
Сан иртнĕ ĕмĕрÿ, çĕре кĕнĕ поэт,
Чуна пăчăртаса ялан аса килет.

Чăваш чĕлхи çеçке ярса чечекленсен,
Сан кĕвĕллĕ чĕлхÿ кăварланса çитсен,
Чăваш сынни хăна юратакан пулсан,—
Ĕмĕтсене татса, куçу хупăнчĕ сан.

Тăван чăваш çĕрне юратакан чĕрÿ,
Сикми пулса, хуллен татăлчĕ ĕмĕрÿ...

...Çурхи кунсем каллех çутатрĕç тĕнчене,
Тĕнче симĕсленет... Хĕвел йăлтăр... Уяр.
Анчах сана пĕрех: сана — вилнĕскерне—
Çуркуннехи тĕнчен илемĕ кирлĕ мар...

Калас килет сана: «Чăваш чĕлхи илемĕ
Ÿссех пырать. Тăрсам! Каллех сăвă çырар».
Анчах, мана чĕнсе, мана «илтетĕп», темĕн...
Вилнисене тĕнче илемĕ кирлĕ мар...

Çыврах, тăван поэт!.. Сăвву кĕввисене,
Сан сăмаххусене никам та манас çук.
Чăваш чĕлхи пур чух тăван поэт ятне
Вĕри кăвар чунсем савма пăрахас çук.

Чăваш поэчĕсен сăвви-юррисене
Вула-вула чунран хавасланнă чухне
Сан мĕскĕн ĕмĕрÿ, çĕре кĕнĕ поэт,
Чуна пăчăртаса ялан аса килет.

* * *

Çеçпĕл Мишши хăйĕн сăввинче Ахахăн литературăри ĕçне калама çук пысăк вырăна хунă. Поэзие пĕтĕм чун-чĕререн юратакан çын çеç, Çеçпĕл Мишши пек поэт çеç, Ахах çинчен çав тери тĕрĕс çырма пултарнă.

И. Е. Ундрицов (Ахах) литература ӗҫне мӗн ҫамрӑкранпах юратса пурӑннӑ, сӑвӑ ҫырма та ҫамрӑклах тытӑннӑ. Вӗренме вӑл ытларах вырӑс поэчӗсенчен: Грибоедовран, Пушкинран, Лермонтовран тата ыт. те вӗренсе пынӑ. Чӑваш поэчӗсенчен ытларах К. В. Иванова кӑмӑлланӑ. Сӑмахран, И. Ахах хӑйӗн «Сарӑ хӗр» ятлӑ сӑввине «Нарспи» поэмӑри сӑвӑсем пек ҫырма тӑрӑшнӑ.

Иван Ахахӑн калавӗсемпе сӑввисенче нумайӑшӗнче кӗрешӳ шухӑшӗ, класлӑ тарӑхупа хаярлӑх сисӗнсе тӑрать. Ҫакна кӑтартса парас тесен, И. Ахахӑн икӗ произведенине: «Пӗрре ир ҫинче» тата «Икӗ виле» ятлӑ калавӗсене илсен те ҫителӗклӗ пулмалла.

«Пӗрре ир ҫинче» калав икӗ клас (буржуазипе пролетариат) хушшинчи хирӗҫӗве кӑтартса парать. «Ку ӗҫ пӗрре ир ҫинче пулчӗ, хӑш уйӑхӑн миҫемӗш кунӗнче — пур пӗрех, анчах ку ӗҫ ир ҫинче 6 сехетре пулчӗ», тесе пуҫлать автор хӑйӗн калавне. Кунта «6 сехете» ахальтен илмен,— ӑна рабочисем ӗҫе тытӑннине кӑтартса пама илнӗ.

Калавра революцичченхи социаллӑ картинӑна сӑнласа кӑтартнӑ. Сӑмахран, хӗрарӑм-пролетаркӑн асаплӑ пурнӑҫӗ ҫинчен автор ҫакӑн пек ҫырнӑ: «Вӑл ларнӑ та ларать, унӑн чӗркуҫҫийӗсем ҫинче ачи сывӑрать, вӑл хӑй тӗлмӗрсе таҫта малалла пӑхать.

Унӑн куҫӗсем тип-типӗ. Вӑл нумай пулать йӗреймест те ӗнтӗ, анчах унта, унӑн куҫӗсенче, темле шухӑш пытанса кӗрсе ларнӑ. Ҫак шухӑш унӑн ҫамрӑк пит-куҫне ваттӑн кӑтартать, ӑна темле йывӑр ҫӗклем хытӑ пусса лучӑркать пек туйӑнать.

Вӑл мана пӗр сӑмах та хушмарӗ.

...Карттус шыранӑ вӑхӑтра: — Эпӗ каятӑп ӗнтӗ, — терӗм эпӗ. — Сывӑ пул-ха!

Унӑн хул пуҫҫийӗсем тапранчӗҫ, вӑл вара, пуҫне ман паталла пӑрмасӑрах, ҫапла каларӗ:

— Эпӗ тата?.. Вӑл?.. — тесе ачи ҫине пуҫӗпе сулса кӑтартрӗ. — Сана вӗт унта...»

Ҫак хӗрарӑмӑн упӑшки ир ирех, 6 сехетре, баррикадӑна тухса кайнӑ. Баррикадӑна каякан рабочи, капиталистсене хирӗҫ кӗрешсе, вӗсен тӗнчине пӗтересшӗн. Вӑл «Коммунистсен партин манифестӗнчи» шухӑшсене каласа кайнӑ: «Ан хӑра, хамӑра сӑнчӑрласа лартнӑ сӑнчӑрсемсӗр пуҫне, пирӗн урӑх нимӗн те ҫухатмалли ҫук, тупасси — пӗтӗм тӗнче пирӗн пулма пултарать!»

Калава хаяр кӗрешӳ пуҫланнине кӑтартнипе, малалла

чĕнекен шухăшпа вĕçленĕ: «Çак ĕç пĕрре ир çинче пулчĕ, ун чухне пирĕн хуçасем çемçе тӳшексем çинче хитре тĕлĕксем курса çывăратчĕç, анчах сасартăк вĕсен ыйхине пирĕн пирвайхи пăшал сасси салатрĕ. Ку пăшал сасси пролетарисен баррикади çинчен илтĕнчĕ».

«Икĕ виле» ятлă калавра та Ахах икĕ тĕнче кĕрешнине кăтартса парать. Пĕр тĕнчи вăл — социализм тĕнчи, тепри — капитализм тĕнчи. Пĕрремĕшне ĕç çынни сыхлать, иккĕмĕшне улпут ывăлĕ, шурă офицер сыхлать. Икĕ тĕнче çыннисем пĕр-пĕринпе çапăçу хирĕнче тĕл пулаççĕ, харпăр хăй тĕнчишĕн çапăçса, пĕрне-пĕри кăкăртан штыкпа чиксе вилеççĕ. Вĕсем пĕр-пĕринпе килĕшме пултарайман икĕ клас çыннисем пулнине автор акă мĕнле кăтартса парать: «Çакă икĕ вилерен пĕрин алли шап-шурă. Теприн пачах апла мар: ĕç ĕçлесе пурăннипе, пуртă тытса каснипе унăн алли паталлă».

Ахахăн кăмăлĕ «ĕç ĕçлесе пурăннă çын» енче, вăл хăй те, унпа пĕрле кивĕ тĕнчене хирĕç тăрса, çĕннишĕн паттăр çапăçнă.

«Икĕ виле» калавра тата çакă уççăн курăнать: ĕç çынни кĕрешӳре пĕччен мар: пĕри çапăçса вилсен, унăн ĕçĕ татăлмасть, ăна массăсем малалла илсе пыраççĕ.

Акă вĕсем, çĕнĕ тĕнчене сыхлакансем: «Пирĕн паттăр юлташсем «Урра!» кăшкăрса ячĕç, штыксене тăратса, тăшман çинелле чупрĕç. Çитрĕç... Тĕл пулчĕç. Вăйлă вăрçă пуçланчĕ... Тупă, пăшал, пулемёт,— пурте вăйлă ĕçлерĕç. Хĕрлĕ Çарăн паттăрлăхне шурă тăшман тӳсеймерĕ, вăрçă уйне пăрахса, ту айнелле пĕрĕхрĕ», тет автор.

Буржуй ывăлĕн, шурă офицерăн, çĕртен-шывран уйрăлса кайнă харам пырăн кĕлетки çапăçу хирĕнче выртса юлать. Ун таврашĕнче уншăн таврăкансем çук: массăсем ун майлă мар. Ĕç çынни массисем «алли паталлă» çыншăн мул тĕнчине хирĕç кĕрешсе малалла пыраççĕ; вĕсем, мул тĕнчине çĕмĕрсе, ăна тĕппипех пĕтерсе, çĕнĕ пурнăç патне, ĕç тĕнчи патне çул хываççĕ. «Икĕ виле» тата «Пĕрре ир çинче» калавсене иккĕшне те писатель контраст мелĕпе усă курса çырнă, вĕсенче пĕр-пĕрне хирĕçле икĕ вăй: пĕр енче — ĕç çыннисем, тепĕр енче — мул хуçисем.

Революцие, Совет влаçне хӳтĕлекенĕн, хĕрлĕ салтакăн сăнне Ахах «Хуралта» сăвăра лайăх кăтартса панă. Акă вăл хĕрлĕ салтак:

...Калпак, çĕнĕ шур кĕрĕк,
Аш çăм атă уринче.

Патронсемпе сыхнӑ пилӗк,
Ҫӗнӗ пӑшал аллинче.
Пирӗн хӗрлӗ салтак вӑл,
Хуралта иккен тӑрать.
Таса, харсӑр... Лӑпкӑ вӑл.
Шур тӑшмансенчен сыхлать.

1919 ҫулта Ахах «Ҫуралнӑ ҫӗршыва» ятлӑ сӑвӑ сырнӑ. Унта вӑл тӑван ҫӗршыв вӑй-хӑватне, пуласлӑхне шанать, патриотла мухтать:

Эп ҫуралнӑ ҫӗршывӑм,
Ӗмӗр-ӗмӗрӗпелех
Сана тӗттӗм хуплаймӗ,
Сана усал ҫӗнеймӗ...
...Сан ҫунату ҫитӗнӗ,
Ҫӗнӗ вӑхӑт час ҫитӗ...

«Малалла» ятлӑ тепӗр сӑввинче те поэт тӑван ҫӗршыв ҫинченех калать:

Пит ҫирӗппӗн пӗрлешер,
Шур усала пӗтерер.
Хамӑр ӳснӗ ҫӗршыва
Кӑларӑпӑр ҫутталла,—

тет.

И. Ахах хамӑр ҫӗршыв ҫирӗп те паттӑр пуласса, чӑваш халӑхӗ, чӑваш ялӗ ҫутта тухасса чун-чӗререн шанса пурӑннӑ. Сӑмахран, унӑн «Чӑваш ялне» ятлӑ сӑввинче ҫакӑн пек йӗркесем пур:

Ирӗк тӗнче пур халӑха
Ырлӑхне сӗнет.
Чӑваш ялӗ, эс те пӑх-ха,
Сана та чӗнет!

Эс те халӗ ҫут тӗнчере
Тан пур халӑхпа.
Сан та вӑй пур чӗрере,
Ан лар ыйхӑпа!

Тӗттӗмпеле пусмӑрлӑха
Урӑх курас мар,
Кив тӗнчене... пур хурлӑха
Умран ҫухатар.

Тӗттӗм, пусмӑр, йывӑр кунсем
Пулмӗҫ ирӗкре.
Пӗр кил-йыш пек пур халӑхсем
Пурнӗҫ тӗнчере.

Ҫакӑн пек пулнӑ поэтӑн шухӑш-кӑмӑлӗ, ӗмӗчӗ, сисӗм-туйӑмӗ. Вӗсем ун чухнехи саманапа, халӑх пурнӑҫӗпе, ӗмӗт-шухӑшӗпе килӗшсе тӑнӑ.

Поэт-коммунист И. Е. Ундрицов ёмётленнĕ ĕмĕтсем совет халăхĕн паттăр ĕçĕпе кĕрешĕвĕнче пурнăçа кĕчĕç. Совет çĕршывĕ, çав шутра Чăваш республики те, улăпла утăмсемпе малалла кайса, тĕлĕнмелле çитĕнӳсем турĕ.

И. Ахах сăввисем техникă енчен вăйлах мар. Вăл, Çеçпĕл Мишшипе пĕр вăхăтрах пуăннă пулин те, Çеçпĕл сăввисен çӳллĕшне çĕкленеймен, унăн чăваш сăвви пирки çырнă статйинчи çав тери чаплă кăтартусене ăса илсех çитереймен. Ахахăн калавĕсем унăн сăввисенчен нумай вăйлăрах: вĕсем ахаль калавсем мар, вĕсем, тӳррипе каласан,— паха новеллăсем, прозăпа çырнă тарăн шухăшлă сăвăсем. Ку тĕлĕшпе вăл Тайăр Тимккин традицийĕсене пуянлатнă, малалла аталантарнă.

И. Ахах произведенийĕсем шутĕнче кивелсе кайнисем те пур. Сăмахран, унăн «Тутар купăс калать» ятлă калавĕ, Çеçпĕлĕн «Вăрман ачисем» калавĕ пекех, автор наци ыйтăвне ăнлансах çитеймен вăхăтра çырни курăнать. Çапах та унăн литературăри пултарулăхĕ, пĕтĕмĕшпе илсен, ĕç çыннисемшĕн юрăхлă, революцие, çĕнĕ саманана мухтакан сăвви-юррисем, калавĕсемпе статйисем чăваш литературинче хăйне тивĕçлĕ вырăн йышăнаççĕ.

*1949*

## И. Е. ТӐХТИ

Илья Ефимович Ефимов ҫамрӑклах, 16 ҫулта чухнех, литературӑ пирки,- тӑван литературӑра ӗҫлесси ҫинчен шухӑшлама тытӑннӑ. Малтан, чӑваш юмахӗсен асамлӑ вӑйне ытараймасӑр, юмах-халапсем, юмах евӗрлӗ сӑвӑсем ҫырнӑ, халӑх юррисем пухнӑ... Анчах патша саманинче Ефимов-Тӑхтин пултарулӑхӗ тӑвӑнса пурӑннӑ,— ҫавна пула унӑн таланчӗ сарӑлайман.

Октябрьти Аслӑ революци, асап сӑнчӑрне ҫапса аркатса, халӑхсене ҫӗнӗ ҫул ҫине кӑларсан, ирӗклӗх ҫилӗ ӗҫ сыннисен чунне уҫса ярсан, чӑваш халӑхӗн ывӑл-хӗрӗсем те хӑйсен тӑвас тенӗ ӗҫне тума, юрлас тенӗ юррине юрлама тытӑннӑ. Ирӗклӗхпе кӗрешӳ юрри халӑх чунне савӑнтарнӑ, тӑван ҫӗршыва хӳтӗлеме, ҫӗнӗ йӗркешӗн ӗҫлеме чӗннӗ.

Чӑваш ҫӗршывӗнчи хаяр кӗрешӳ вут-ҫулӑмӗнче, вӑрҫӑ шавӗнче, пурнӑҫ уттинче Ҫеҫпӗл сасси, Ахах, Шелепи, Элкер, Тал-Мӑрса, Чӗкеҫ, Шаланкӑ, Алентей сасси илтӗннӗ. Ҫавӑн чухне Тӑхти сасси те уҫҫӑнрах илтӗнме тытӑннӑ.

* * *

И. Е. Тӑхти (Пракка Тӑхтийӗ) 1889 ҫулхи сентябрӗн 4-мӗшӗнче (ҫӗнӗ ст.) Хусан кӗпӗрнинче, Ҫӗрпӳ уесӗнчи Нӳшкасси ялӗнче (халӗ Чӑваш республикин Вӑрмар районне кӗрет) хресчен кил-йышӗнче ҫуралнӑ. Вӑл мӗн ҫамрӑкранпах вӗренес шухӑшпа пурӑннӑ: ялти шкултан вӗренсе тухсан, Хусанти учительсем хатӗрлекен семинарие кайса кӗнӗ, ӑна 1908 ҫулта вӗренсе пӗтернӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн И. Е. Тӑхти учитель пулса ӗҫлеме тытӑнать: 1908—1914 ҫулсенче Тавӑт шкулӗнче (хальхи Ҫӗмӗрле районӗ), 1918—1919 ҫулсенче Шӑхранта (хальхи Канаш хули) учи-

тельсен семинарийĕ çумĕнчи кăтартуллă шкулта учительте тата çут ĕç инспекторĕнче ĕçленĕ. 1925—1928 çулсенче Мускавра В. Я. Брюсов ячĕпе хисепленекен литература институтĕнче тата I Государствă университетĕнче (литература уйрăмĕнче) вĕреннĕ, унтан Шупашкара килнĕ, педтехникумра преподавательте ĕçленĕ.

Литературă ĕçне И. Е. Тăхти 1905—1908 çулсенче, Хусанти семинаринче вĕреннĕ чухне, хутшăннă. Унта вĕсем алăпа çырса «Шурăмпуç» ятлă журнал кăларнă.

Хăй литературă ĕçне мĕнле пуçлани çинчен И. Тăхти çакăн пек каласа парать: «1905 çулта эпĕ хам валли чăвашла тата вырăсла сăвăсем çырма пуçларăм. Çав сăвăсене хăш-пĕр юлташсене кăтартрăм та манран тăрăхласа кулма тытăнчĕç, чылаях кӳрентерчĕç. Пĕри икĕ хутчен патакпа пуçран çапрĕ. Эпĕ çакăн çинчен семинари пуçлăхне кайса каланă пулсан, мана вĕлерес пекех хĕненĕ е семинаринче вĕренме пăрахтарнă пулĕччĕç...»

Çакăн хыççăн И. Тăхти хăйĕн сăвви-юррисене, калавюмахĕсене çынсене кăтартма пăрахнă. Çапах та çырни усăллă пулнă: çамрăк писателĕн чĕлхи якалса, пуянланса пынă. ăсталăхĕ ӳснĕ.

1907 çулта Илья Ефимович пуçламăш шкулсем валли Михеев кăларнă задачнике чăвашла куçарма тытăнать. Ăна чăваш ачисемшĕн ăнланмалларах тăвас тесе, тăлмач задачăсен текстне чылаях улăштарать, чăваш халăх пурнăçĕнчен илнĕ тĕслĕхсем кĕртет, чĕлхине халăх чĕлхипе çывăх тăвать. Ун чухне семинаринче вĕрентсе пурăннă Н. В. Никольский преподавательпе Н. Ф. Катанов профессор Тăхтин çав куçарăвне ырланă. Çакăн хыççăн, 1908 çулта, ăна «Наглядный первоначальный задачник для чувашских школ» ятпа Хусанта пичетлесе кăларнă.

Çак çулхинех И. Тăхти, чăваш халăх пултарулăхĕпе усă курса, «Ухливан вутăшаултаслани» ятлă юмах çырнă. 1911 çулта Хусанта унăн икĕ пĕчĕк кĕнеке: «Тавăт, Мĕлĕш, Шураç туй юррисем» тата «Хураç» ятлăскерсем пичетленсе тухнă. Кĕнекере 120 страницă ытла.

1914—1915 çулсенче И. Тăхти, учительсен пурнăçĕнчи çитменлĕхсене палăртса, фельетонсем çырать. Вĕсене Сарапул хулинче тухса тăракан «Кама» ятлă хаçата ярса тăрать.

1917 çулта И. Тăхти «Хыпар» хаçата империализм вăрçине хирĕçлесе, куштансене питлесе çырнă корреспонденцисем ярса парать, анчах «Хыпар» вĕсене пичетлемен.

Çав вăхăтрах «Хыпар» унăн йăнăш шухăшлă «Самана» ятлă сăввине савăнсах пичетлет.

И. Е. Тăхтин пултарулăхĕ Октябрьти социализмлă революци хыççăн тин туллин палăрма тытăнать.

Совет влаçĕн малтанхи кунĕсенче, тăван çĕршыва революци тăшманĕсем темиçе енчен тапăнса килнĕ çулсенче, граждан вăрçи тапхăрĕнче, И. Е. Тăхти Демьян Бедный çырнă «Земля обетованная» ятлă пысăк сăвва (1918) чăвашла куçарнă. «Колчак» ятлă поэмă-памфлет (1919) çырнă.

«Колчак» поэмă пичетленсе тухсанах кашни чăваш ялне çитнĕ, çарта, чăваш салтакĕсем хушшинче, çĕршер те пиншер экземпляр саланнă.

«Колчак» поэмă пролетариллĕ революцишĕн, ăна хӳтĕлессишĕн, унăн ĕçне чăваш хушшине сарассишĕн пынă кĕрешӳре питех те пысăк вырăн йышăннă. Ирсĕр тăшмансем, пирĕн çĕршывра тепĕр хут кивĕ йĕрке туса хума ĕмĕтленсе, пире пур енчен те хĕссе килнĕ вăхăтра чăваш поэчĕ çавăн пек чаплă поэмă-памфлет çырни, ăна чăваш халăхĕ чун-чĕререн кăмăлласа вулани, тăшмана хирĕç хастар тухни пирĕн халăх революцишĕн мĕн тери паттăр кĕрешнине кăтартса парать.

Колчак — чи хăрушă, чи усал тăшмансенчен пĕри пулнине граждан вăрçи вăхăтĕнче В. И. Ленин, Коммунистсен партийĕ пĕрре кăна мар кăтартса панă.

В. И. Ленин: эпир Колчака тĕп тунипе граждан вăрçине те яланлăхах тĕп тăватпăр, тенĕ, «ăнланулла рабочипе работницăн кашни ирĕклĕ кунĕ, кашни ирĕклĕ сехечĕ» Колчака хирĕç «агитацилес çĕре каймалла», тенĕ *.

И. Тăхти, партире тăман çын пулнă пулин те, «Колчак» поэмăна çырнипе парти ĕçне тунă, В. И. Ленин чĕнсе каланисене пурнăça кĕртнĕ,— вăл хăйĕн поэмине çырнипе чăвашсем хушшинче Колчака хирĕç хăватлă агитаци пуçарса янă.

А. В. Колчак (1873—1920) — патша флочĕн адмиралĕ. Революци пулсассăн, Колчака вырăнтан сирпĕтсе антарнă. Советсене пĕтерсе кивĕ йĕркене таврас шутпа вăл хăй тавра революци тăшманĕсене пухнă, çар организацилене, Российă çине Çĕпĕртен вăрçăпа килнĕ, Хусан патнелле, Чăваш çĕршывнелле талпăннă. Революцие, Совет влаçне

* В. И. Ленин. Соч., 29 т., 296 стр.

ҫӑлса хӑварас тесен, Российӑри халӑхсен тӑшмана хирӗҫ пӗр ҫын пек тӑмалла, тӑшмана тӗп тумалла пулнӑ.

«Колчак» поэмӑ шӑпах ӗнтӗ ӗҫ ҫыннисене ҫавӑн пек тӑма чӗнет.

И. Тӑхти ирсӗр Колчак пухнӑ пуху ҫинчен ҫырать, ӑна тӑрӑхласа питлет:

Чӗрӗ юна ӗҫмешкӗн
Тискер-кайӑк кашкӑрӗ
Пӑрахаймасть теeҫҫӗ.
Ҫавӑн пекех Колчак та
Халӑх юнне ӗҫесшӗн,
Елӗкхине ас туса,
Колчак ӗнтӗ ҫавӑнпа
Пӗтӗм улпут пуххине
Пухнӑ Ҫӗпӗр ҫӗр ҫине.

Камсем пухӑннӑ-ха унта? Унта —«улпут тавраш», «генерал та полковник», «этем юнне ӗҫекен хуҫа тавраш, пуянсем», «хӳҫа-усламӑҫ», «вӑрӑм ҫӳҫлӗ мӑн хырӑм» тата ыттисем те,— пӗр сӑмахпа каласан, унта халӑх юнне ӗҫсе пурӑнакансем пухӑннӑ.

Юн ӗҫенсен пухӑвӗнче Колчак адмирал сӑмах калать:

— Советсене ҫӗнтерес,
Чухӑнсене пӗтерес,
Пролетара ҫаптарас
Шурӑ хурӑн хуллипе.
Ӗҫлекене ҫактарас
Икӗ юпа хушшине.
Хамӑн кӗрес патшана
Микулайӑн вырӑнне.
...Аслӑ улпут таврашӗ—
Мӗн чул кирлӗ ҫӗр — илтӗр;
Хапрӑк-савӑт хусасен
Ӗмӗр пултӑр аллинче.
...Буржуйсен хутне кӗме,
Ӗҫлекене ҫаптарма,
Вулӑсран та вулӑса
Урядниксем, приставсем
Лартса тухас ҫӗнӗрен.
...Халӑх пултӑр — ӗҫлекен,
Эпир пулар — ҫиекен.

Автор тата ҫакна та уҫҫӑн кӑтартса панӑ: Колчака ют патшалӑхсем — Америкӑпа Англи, Франци тата Япони — хӗҫ-пӑшал парса тӑнӑ. Ӑна, чӑннипех те, «Европӑри пӗтӗм буржуази пулӑшнӑ» (В. И. Л е н и н). Колчака пулӑшнӑшӑн Япони Ҫӗпӗр ҫӗрне, вӑрманне, ылтӑн тӑпри вырӑнӗсене ыйтнӑ; Франципе Америкӑ пирӗн заводсене, чугун

çулсене тата ытти пурлăхсене хăйсен аллине илесшĕн пулнă.

Поэт-патриотăн сăмахĕсем, поэмăн тĕп шухăшĕ чăн-чăн историе кăтартса параççĕ: Америкă, Англи, Франци, Япони империалисчĕсем пирĕн çĕршыва çаратас, ĕç çыннисене чуралăха кĕртсе пăрахас шутпа килнĕ.

Колчак çарĕсем Атăл патнелле ыткăннă вăхăтра Европăри хаçат-журналсем «Совет влаçĕ пĕтсе ларчĕ», «Колчак пĕтĕм Российăн хуçи пулса тăчĕ», тесе шавланă. Çак шав Колчак патне çитме те ĕлкĕреймен,— Хĕрлĕ Çар ирсĕр тăшмана Çĕпĕрелле хăваласа янă. Çакăн хыççăн вара пирĕн Çар Урала кăна мар, пĕтĕм Çĕпĕре шурă гвардеецсемпе интервентсенчен тасатнă, çавăн чухнех Колчака тытнă, Иркутскри Çарпа революци комитечĕн постановленийĕ хушнипе 1920 çулти февралĕн 7-мĕшĕнче персе пăрахнă.

Поэмăра Колчакăн тата ытти тăшмансен ĕмĕт-шухăшне çеç мар, вĕсен сăнĕсене те ÿкерсе кăтартнă. Акă вĕсем, ĕç çыннисен граждан вăрçи вăхăтĕнчи тăшманĕсем:

Шĕвĕр сăмса, хуочка куç,
Типшĕм питлĕ Колчакĕ
Ларать сĕтел умĕнче
Пархат çапнă пуканпа.
Колчак сылтăм енĕнче
Ыраш çĕмел пысăкăш
Тулли питлĕ, мăн хырăм,
Хура ризă тăхăнса,
Ылтăн хĕрес çакнăскер,
Апат тутлă çинипе,
Аоман хуçи ĕни пек,
Мăшлаттарса сывласа,
Пысăк сухал, вăрăм çÿç—
Пукан çине сĕвенсе
Ларать çавă пуп этем.
Тата тепĕр енĕнче
Яка çÿçлĕ, хĕсĕк куç—
Ларать хуçа-усламăç.

Ку сăнарсене пирĕн асаттесем, атте-аннесем, аслăрах пиччесем, аппасем манман-ха, эпир хамăр та, революципе граждан вăрçи вăхăтĕнче хальхи пионерсем пек пулнăскерсем, вĕсене лайăх ас тăватпăр-ха. Çав ирсĕрсене пирĕн халăх ĕмĕр-ĕмĕрех ылханĕ. Улпутсем, капиталистсем, кулаксем, патша тарçисем, урядниксем, приставсем халăха нумай-нумай асаплантарнă, ĕç çыннисен юнне юхтарнă, çĕршер те пиншер çыннăн хаклă пурнăçне вăхăтсăр татнă, çамрăксен кун-çулне картланă, ĕмĕчĕсене путлантарнă, хĕрсене намăса кăларнă, кăкăр ачисене вĕлернĕ...

Патша таврашӗ те, улпут та, капиталист та, кулак та хӑйсен ушкӑнне, хӑйсен класне хӳтӗлесе, намӑса пӗлмесӗр, ҫапла калать:

> Халӑх пултӑр ӗҫлекен.
> Эпир пулар — ҫиекен.

И. Тӑхти хӑйӗн поэмине пӗтӗм тӑван ҫӗршыв интересӗсене асра тытса ҫырнӑ, чӑваш ӗҫ ҫыннисене Совет влаҫӗшӗн тӑма чӗннӗ.

Граждан вӑрҫи тапхӑрӗнчи совет поэзийӗ пирки ,сӑмах хускатсан, эпир яланах вырӑссен паллӑ поэчӗ Демьян Бедный ҫавӑн чухне ҫырнӑ сӑвӑсемпе поэмӑсене аса илетпӗр. Вӗсем калама ҫук пысӑк ӗҫ тунӑ: совет халӑхне тӑшмана хирӗҫ кӗрешме чӗннӗ, чун хавалне ҫӗклентернӗ. Чӑваш халӑхӗ хушшинче ҫавӑн пек ӗҫе чаплӑ тӑвакан произведенисенчен пӗри шӑпах «Колчак» поэмӑ пулнӑ.

Ку поэмӑ, ҫиелтен пӑхсан, вӗҫленмен пек туйӑнать, пат татӑлнӑ пек пӗтет, унта Хӗрлӗ Ҫар ҫӗнтерӗвӗ курӑнмасть. Поэмӑ патша флочӗн адмиралӗсем, патша ҫарӗн генералӗсем, полковникӗсем, прапорӗсем... ӗҫкӗ-ҫикӗре урлӑ-пирлӗ тӑсӑлса выртнипе, «тислӗк купи манерлӗ», купаланса тапкаланнипе пӗтет. Ҫакӑнтан тӗлӗнмелли ҫук: поэмӑна ҫырнӑ вӑхӑтра (1919 ҫ.) Колчакӑн ирсӗрлӗхӗ (колчаковщинӑ) сарӑлса пынӑ, ӑна пӗтерме, тӗп тума хаяр революциллӗ кӗрешӳ пуҫарса ямалла пулнӑ, ҫав кӗрешӗве халӑха чӗнмелле пулнӑ. «Колчак» поэмӑ ӗнтӗ шӑпах кӗрешӗве чӗнекен, революци ӗҫне хӳтӗлекен произведенисенчен пӗри пулнӑ.

* * *

И. Е. Тӑхтин «Колчак» поэмӑра палӑрнӑ ӑсталӑхӗ унӑн кайрантарахпа ҫырнӑ калавӗсенче те ӳҫӗн курӑнса тӑрать. Чӑн та, унӑн калавӗсенче сюжет ҫукпа пӗрех, е пулсан та, вӑл — ытла та ҫӑмӑл сюжет. Вӗсен вӑйӗ — пурнӑҫа тӗрӗс кӑтартнинче, реализмра. И. Тӑхти ял ҫынни курни-илтнисене, сӑнанисене, аса илнисене, пӗтӗҫтернисене тӗп-тӗрӗс ҫырса пынӑ, сӑнласа кӑтартнӑ. Унӑн кашни калавӗнчех вулакан чӗрипе ӑс-тӑнӗ патне ҫитекен шухӑш пур. Тӗслӗхрен, акӑ, илер-ха «Шерхулла» калава (1925 ҫ.). Ӑна вулатӑн та, малтанлӑха унта нимех те ҫук пек туйӑнать. Анчах кӑшт шухӑшласа пӑхсанах, куҫ умне тӗлӗнмелли ҫын — Шерхулла тухса тӑрать. Вӑл — «чӑвашпа тутар хутӑшлӑ ҫын», чӑвашсем хушшинче кӗтӳ кӗтсе пурӑннӑ. Кӗтӳҫсем яланах пӗр ялта, хӑнӑхнӑ ҫӗрте, кӗтӳ пӑхма юратнӑ

пулсан, Шерхулла ун пек мар: вăл чăваш ялĕсенче пĕрер çул кĕтӳ кĕтет. Шерхулла анатри чăвашсем патĕнче: Кавалта, Чупайра, Шăхранта, Хапăсра; виръялта: Кăкшăмра, Нурăсра, Тенире тата ыт. ялсенче кĕтӳ пăхса пурăннă, нумай-нумай çынсемпе паллашнă, туслашнă. Чылай çĕрти чăвашсем Шерхуллана палласçĕ, ĕçкĕ-çикĕ вăхăтĕнче хăнана чĕнеççĕ.

И. Тăхти хăйĕн калавĕнче тури чăвашсен туйне кăтартса панă. Калава Шерхулла хăй туйра пулни çинчен каласа панă пек туса çырнă. Калава вулакан туй халăхне, туй ачисене, туй арăмĕсене, хĕрсене курать, унтах туй пуçне те тупать.

Шерхулла сăмахĕсене вуланă май куç умне туй ӳкерчĕкĕ тухса тăрать: чăваш туйĕ çар пек кĕрлесе пырать. «Туй пуçĕ Мĕлĕшсем пулнă, флотски салтак, Прамун ятлăскер, питĕ вăйлă çын. Вăл хăйĕн маткипе пырать, тата тепĕр мăшăр ларнă унпа, икĕ лашапа, лашисене ташлатса пыраççĕ вĕсем малтан.

Мăн кĕрӳ, кĕçĕн кĕрӳ, Тимуххан аслă ывăлĕ Васук — кĕрӳ пуласси, икĕ туй арăмĕ, парнесем çакса пĕтернĕ виçĕ лашапа, пысăк кӳмепе ларса пыраççĕ. Вĕсем хыççăн çатан урапасемпе, кӳмесемпе пĕрер, икшер лаша кӳлнисем сарăшурă тутăрсем çакса пĕтеонĕ, аллă урапа ытла пулĕ Шураçран йăтăнса тухаççĕ. Шураç ураменче шап-шурă халăх. Витри-витри сăрапа, эрехпе ăсатаççĕ туя» («Шерхулла» кĕнекен 7 стр.).

Калавра тури чăвашсен туй юррисене нумай çырса панă. Унта «Хĕр хӳхлени» те пур (тепĕр çĕрте ку юрра «Хĕр йĕрни» теççĕ).

Пĕркенчĕк пĕркенсе ларнă хĕр, туй хыççăнах арăм пулмалласкер, хĕрлĕхрен уйрăлас умĕн хăйĕн юррине йĕреЙĕре çакăн пек пуçласа ярать:

Шăпăр-шăпăр çумăр çăвать—
Чӳрече витĕр курăнать;
Эпĕ хурлăх курасси
Пăхса витĕр курăнать...

Шерхулла хăйĕн мыскарисемпе, юррисемпе пĕтĕм туй халăхне тĕлĕнтерет. Ташлама та вăл темиçе тĕслĕ ташлать: чăвашла — хыça силлентерсе, вырăсла — ура пусне авкаласа, тутарла — пĕççе тăсса, ярăнса ташлать. Вăлах тата лезгинла, «пĕр алла саламат» тытса, тепĕр алла «çумри çава çĕççе» тытса, туй ачисем умĕнче ташласа пырать.

Шерхуллана автор юратса, ырӑ кӑмӑлпа кӑтартса панӑ. Автора чӑвашсемпе тутарсен туслӑхӗн шухӑшӗ хаваслантарнӑ.

И. Тӑхтин «Ваҫка, Ванька, Ахмет» калавне илер-ха тата. Ку калавӑн ячӗ ӗнтӗ произведенин тӗп шухӑшӗ мӗнли ҫинчен калать. Ваҫка — чӑваш, Ванька — вырӑс, Ахмет — тутар. Вӗсем пӑрахут ҫинче тӑвансем пек юнашар ларса каяҫҫӗ. Ку ҫеҫ те мар-ха. Сормовӑ заводӗнче вӗсем пӗр-пӗрне юлташла пулӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Каламасӑрах паллӑ: ҫак пӗчӗк калавӑн тӗп шухӑшӗ — халӑхсен туслӑхне палӑртакан идейӑ.

«Ҫанталӑк» ятлӑ калавра (1925 ҫ.) эпир тата ҫакӑн пек йӗркесем вулатпӑр. «Халь самана ӗлӗкхи мар; халь уяр ҫанталӑк; халь ӑшӑ ҫанталӑк. Ӑшӑ ҫанталӑкра вырӑс, чӑваш, тутар, ҫармӑс ӗҫ халӑхӗ пӗр-пӗрне тӑван вырӑнне хисеплеҫҫӗ» («Шерхулла» кӗнекен 21 стр.).

Тӗрлӗ халӑхсем хушшинче хирӗҫӳ, харкашу кӑларма тӑрӑшакансем пуянсемпе эксплуататорсем пулнӑ. Ҫакӑ вӑл капитализм тӗнчишӗн усӑллӑ пулнӑ. Ӗҫ ҫыннисем пӗр тӑвансем пек килӗштерсе пурӑнсан, пӗрлешсе, хӑйсене пусмӑрлакансене хирӗҫ кайма пултараҫҫӗ, пусмӑр тӗнчине аркатса, ҫӗнӗ тӗнче тума пултараҫҫӗ. Ҫакна патша та, улпут та, капиталист та... лайӑх ӑнланнӑ. Ҫавӑнпа та вӗсем тӗрлӗ халӑхсем пӗрлешсе кӗрешӗве тухасран яланах хӑраса пурӑннӑ.

1906 ҫулта Хусанта чӑвашла хаҫат «Хыпар» тухма тытӑннӑ. Ҫав хаҫатра сахал йышлӑ халӑхсене хӳтӗлес шухӑшлӑ статьясем те пичетлекеленӗ. «Хыпар» тухнӑ вӑхӑтра Хусанта «Казанский телеграф» хаҫат — дворянсен, улпутсен, пупсен, славянофилсен «мухтавлӑ, хисеплӗ» хаҫачӗ — чӑваша тӑрӑхласа, кулса ҫапла ҫырнӑ.

Российский гражданин,
Чуксарский дворянин
Продаёт «Хыпару»
За копейку пару!..

Чӑваш культуринчен кулакан, ӑна таптакан, путлантарма тӑрӑшакан ирсӗр этемсем «Хыпара» часах хуптарнӑ.

Халӗ, 1958 ҫулта, пирӗн республикӑн тӗп хулинче типографире пичетлекен хаҫат виҫҫӗ, район центрӗнче — 27, заводсенче — 10, колхозсенче 4 тухать.

Стена хаҫачӗн хисепне шутласа кӑларма та ҫук.

Ҫакна май И. Тӑхтин «Мӗн ку?— япала ку? (1927 ҫ.)

ятлă калавĕ пирки ик-виç сăмах калас килет. Ку калавăн шухăшĕ те çăмăл шухăш: стена хаçачĕ пек япалана халиччен тĕнче халăхĕ курман, илтмен; хакла ларакан япалах мар вăл: стена хаçачĕ кăларма кашни ялăн вăй çитет. Парижра, Лондонра, Нью-Йоркра вуншар капиталистсем, темиçе миллионшар тенкĕ укçа пĕтерсе, пысăк хаçатсем кăларса, ĕç çыннисен пуçĕсене минретеççĕ, ĕç халăхне пусмăрлаççĕ, сăнчăрлаççĕ. Пирĕн патăмăрта вара пачах урăхла: пионерсем алăпа çырса кăларакан стена хаçачĕ, пĕчĕккĕ пулин те, халăх хушшине тĕрĕслĕх çути сарать, кивĕ йăласемпе кĕрешет, йĕркесĕрлĕхе, çитменлĕхе пĕтерет.

«Иптеш» калавра (1928 ç.) икĕ ватă, карчăкпа старик, тавлашаççĕ. Старикĕ: «Туркка вăрçи тапранмалла», тет. «Туркăпа вăрçă тапратсан, ман кăмсамула кĕрес те пăшал илес. Каяс ман туркка вăрçине», тет. Карчăкĕ ăна хирĕç акă мĕн калать: «Ан аташса лар. Туркка пирĕнпе вăрçмасть халь... Сан пек ват çынна кăмсамула илеççĕ-и? Кĕресех пулсан, сан тахçанах партие кĕмелле-çке», тет. Юлашкинчен вара икĕ ватă килĕшеççĕ. «Пирĕн пеккисен партие кĕрес пулать. Ленин çапла хушнă», теççĕ. Карчăкпа старик тата ал шăлли пирки тавлашса каяççĕ. Пĕр ал шăллипе пит шăлма юрамасть, тет карчăкĕ; юрать, тесе хирĕçлет старикĕ. Карчăк çĕнтерет: пĕр ал шăлипе пит шăлсан, трахомлă çынтан трахомă ерет; кашни çыннăн пит шăлма харпăр хăйĕн ал шăлли пулмалла; эсĕ çавна килĕштерместĕн пулсан, ĕç халăх тăшманĕ пулатăн,— тесе вĕрентет вăл хăйĕн старикне. Карчăк шухăшĕ тĕрĕсе тухать. Юлашкинчен автор вулакана майĕпенех акă мĕнле шухăш патне илсе пырать: ача-пăча пăхасси, кил-çурт тытасси, пир-авăр, çи-пуç ĕретлесси, апат-çимĕç пĕçересси, пурнăç йĕркине тытасси хĕрарăмсăр, карчăксемсĕр, ватăсемсĕр пулса пымасть.

И. Тăхти калавĕсенчи геройсем — пурте тенĕпе пĕрех ахаль çынсем, ялти ĕç çыннисем, патша вăхăтĕнче хĕнхур тӳссе пурăннăскерсем. Совет самани вĕсене çутă ĕмĕтсем панă. Сав ĕмĕтсем кивĕ йăласемпе, шухăшсемпе кĕрешеççĕ. «Пĕр кĕтӳ кашкăр» ятлă калавра пĕр хресчен хăйĕн лашисене вăрмана кайса ярать те вĕсене кашкăрсем тытасран, вăрăсем илсе каясран хăраса çӳрет. Тепĕр хресченĕ ăна, лашасене вăрмана ярса, çамрăк йывăçсене çĕмĕрттеретĕн тесе ятлать. «Сирĕн выльăхсем,— тет вăл,— вăрманти хунава ватса пĕтереççĕ. Вăрманти çĕре таптаса хытараççĕ. Апла вăрман ӳсми пулать. Йывăç ӳсми пулать.

Йывăç хăрать. Хунав юмансем пĕтеççĕ». Унтан вара вăл: эсир çапла хăтланни «пĕтĕм халăха сиен, хур туни пулать», тет. Пирĕн вăрмана — халăх, государствă пурлăхне — упрамалла, вăл яланах хамăра усă парать. Акă мĕнле паха шухăш сарать ку калав.

«Ăçта пулнă-ши вăл?» ятлă калавра автор Чăваш республикинче темĕнле тыр-пул та, темле ўсен-тăран та ўсме пултарни çинчен ĕнентерўллĕн каласа парать. Çутă ĕмĕтпе пурăнакан, хăйсен ĕмĕт-шухăшĕсене пурнăçа кĕртсе пыракан маттур колхозниксем, хамăр республикăн вăй-халне ĕненсе, тăрăшса ĕçлеççĕ. Хăш чухне вĕсен ĕçĕнче çитменлĕхсем те сиксе тухаççĕ-ха, йывăрлăхсем те тĕл пулаççĕ-ха. Анчах хăш вăхăтра, ăçта çĕнĕ пурнăç çăп-çăмăл майсемпе пулса пынă-ха? Çĕнни ĕмĕрех киввине хирĕç, кивĕ йăласен, шухăшсен юлашкийĕсене хирĕç кĕрешсе пырса çуралать, çĕнтерсе вăй илет, малалла кайса пырать. Çакă вăл пирĕн ĕçсен, çĕнтерўсен, пирĕн кулленхи пурнăçăн, обществăн законĕ.

И. Е. Тăхти хăйĕн çак калавĕсене 1925—1928 çулсенче, колхоз стройĕ сарăлса каяс умĕнхи тапхăрта, çырнă. Ун чухне пирĕн хресченсем уйрăм хуçалăхпа пурăннă, вĕсен йăлисем те урăхла пулнă. Писатель шăпах ĕнтĕ хресченсен çав тапхăрти йăлисене, шухăш-туйăмĕсене реалистла кăтартса панă. И. Тăхти пысăк ĕмĕтлĕ писатель-реалист, пурнăçа ытарайми юратакан художник пулнă.

Чăваш ĕç çыннисем И. Е. Тăхти произведенийĕсене юратса вулаççĕ. Вĕсем унăн поэмисемпе калавĕсенче хăйсен нумаях пулмасть иртнĕ пурнăçĕн уйрăм ўкерчĕкĕсене кураççĕ, вĕсене хальхи сăнсемпе танлаштарса пăхма май тупаççĕ, çапла вара, хăйсен пурнăçĕ мĕн тери мала кайнине, улшăнса лайăхланнине, илемленнине кураççĕ.

* * *

И. Тăхти пултарулăхĕ тап-такăр та яп-яка çулпа аталанса пынă тесен, йăнăш пулнă пулĕччĕ. Хăш чухне, пурнăç туртăмĕсене ăнланман пирки, вăл çул кукрисене кĕрсе кайнă вăхăтсем те пулкаланă. 1917 çулта Февральти революципе Октябрьти революци хушшинчи тапхăрта пулса иртнĕ событисене Тăхти тĕрĕс тавçăрса илеймен: вăл эсерла шухăшсен танатине пырса лекнĕ,— ку унăн «Самана» ятлă сăввинче аван курăнать:

Кивĕ йывăр самана
Юхса кайрĕ çур шывпе;

Авалтанхи ылхана
Çĕнтертĕмĕр пĕтĕмпе...
Пуяннипе чухăнни
Пĕр хисепе кĕреççĕ;
Куштаннипе мĕскĕнни
Пĕр сак çине лараççĕ...
Тискер кайăк-кашкăрсем,
Сурăх тытма чарăнăр;
Ялти куштан чăвашсем,
Ма́н кăмăла пăрахăр...

Çак сăвă — пĕтĕмпех йăнăш шухăшлă сăвă, янрама та вăл çурăк çатма пек янăрать. Чăн та, ăна çырнă чухне патша пусмăрĕ ĕнтĕ пулман, анчах патшана вырăнтан сирпĕтнĕ революци, Февральте пулса иртнĕ буржуалла революци, авалтанпа пынă ылхана пĕтĕмпе çĕнтерме шутламан, ку çеç те мар-ха: вăл пуянсене (капиталистсене, кулаксене) ытларах хускатнă, хавхалантарнă, çавна пула чăваш буржуазийĕ те хăюллăрах кăшкăрма тытăннă, унăн параппанне çапакан буржуалла националистсем, эсерсем класлă мир пирки пылак сăмахсем каланă, хаçатсенче статьясем çырнă. «Самана» сăвă эсерсен, кулаксен кăмăлне каякан, ĕç çыннисен ăс-тăнне минретекен сăвă пулнă. Автор çакна ăнланман: пуянпа чухăн нихçан та пĕр хисепре тăман, тăма та пултарайман, куштанпа мĕскĕн нихçан та пĕр сак çинче ларман, ларма та пултарайман,— мĕншĕн тесен пуянпа чухăн, куштанпа мĕскĕн хушшинче ĕмĕрех клас хирĕçĕвĕ пулнă, вăл хăш чухне тамалнă, тепĕр чухне çĕнĕ вăйпа çĕкленсе, арасланса кайнă, анчах нихçан та пĕтмен, пĕтме те пултарайман. 1917 çулти кĕркуннене илес пулсан, тӳрех çакăн пек калас пулать: вăл чăвашсем хушшинче те куштанпа чухăн пĕр сак çинче ларнă самана пулман, клас кĕрешĕвĕ çивĕчленсе пынă вăхăт пулнă. Ун чухне Российăра аслă революци çывхарса килнĕ. Çакна «Самана» авторĕ сисеймен, саманана ăнланайман. Анчах тепĕр ик çултан, Октябрьти Аслă революци хыççăн, И. Тăхти шухăшĕсем йăлтах урăхланса каяççĕ, поэт пачах урăх çын пулса тăрать. «Самана» сăвăра Тăхти: «Тискер-кайăк кашкăрсем, сурăх тытма чарăнăр», тесе çырнă пулсан, «Колчак» поэмăра кашкăрсем çинчен урăхла çырать: «Шурă кашкăр ушкăнĕ — ĕç халăхĕн тăшманĕ», тет.

Çĕршывра пулса пыракан хаяр клас кĕрешĕвĕ нумай çынсен куçне уçнă, хăйсем камне ăнланса илме май панă. И. Тăхти Октябрьти революцие пула тĕрĕс çул çине тух-

нă, революцие хӳтĕлекенĕ пулса тăнă, хăйĕн пултарулăхне халăха панă, çĕршыв тăшманĕсене хирĕç сырма тытăннă.

И. Тăхти сăвăсем, поэмăсем, калавсем çеç мар, публицистикăлла статьясем те ăста çырнă. Тĕслĕхшĕн унăн «Атăл та кăна халиччен курман» ятлă статйине илме пулать. Ку статьяна вăл 1934 çулта, Шупашкара Совет Союзĕн пирвайхи геройĕсем — Доронинпа Ляпидевский килсен, çырнă пулмалла. Статьяра патша саманинче тĕрлĕ вак халăхсем мĕн тери пысăк хĕн-хур, асап-мăшкăл тӳссе пурăннине нумай тĕслĕхсемпе кăтартса панă. Унта автор патша пуç касаканĕсем çинчен, сулă пĕрени çине юпасем лартса, юпа çинчен юпа çине урлă-пирлĕ каштасем хурса, Пугачев пăлхавĕ вăхăтĕнче Пугачев майлă пулса улпутсене хирĕç пынă вырăс, чăваш, мари ĕç çыннисене сухан майи пек, çав каштасенчен çака-çака, Атăл тăрăх юхтара-юхтара яни çинчен çырать. Çакăн пек картинăсене çырса кăтартнă хыççăн: «Атăл, Аслă Атăл, мĕн курман эс хăвăн ĕмĕрĕнте?» — тесе ыйтать писатель. Анчах большевиксем тума тытăннă ĕçсем пек чаплă ĕçсене Атăл курман. «Çакна эсĕ, Атăл мучи, темиçе пиншер çул юхса та курманччĕ-ха», — тет вăл.

Ку статьяра автор капитализм тĕнчинчи харам пыр-империалистсене те хаяррăн питлет. Империалистсем яланах мулшăн, вăрçăшăн хыпса, çунса çӳренĕ; мула харпăр хăй аллине çавăрса илесси ятлаçмасăр, хирĕçмесĕр, вăрçмасăр, юн тăкмасăр нихçан та пулман, — çакна «Колчак» авторĕ лайăх ăнланнă.

Империалистсен ирсĕр политикине хирĕç Совет Союзĕн мирлĕ политикине, халăхсен туслăхĕн политикине кăларса тăратса, писатель-патриот И. Тăхти малалла çакăн пек каласа парать:

«Капиталистсем пĕр-пĕринпе тавлашса, харкашса, тĕнче пуянлăхне пĕри те пĕри тата та ытларах ярса илесшĕн рабочисене, колонисенчи тĕрлĕ чĕлхеллĕ ĕç халăхсене хытăрах хĕсме майсем шыранă вăхăтра Германире, Австрире Гитлерсен «ырă кăмăлĕпе» юн тăкăннă вăхăтра, паянхи кун (1934 çулти июнĕн 24-мĕшĕнче — В. Д.) — чăваш халăхĕн автономи уявне, рабочи клас ĕçĕшĕн хăйсене пĕр хĕрхенмесĕр, ĕç халăхне канăçлă, кăмăллă, телейлĕ, культурăллă, илемлĕ, çителĕклĕ пурнăç туса памашкăн хăйсен пурнăçне те хĕрхенмесĕр ĕçлекен çынсем, Совет Союзĕн паттăр геройĕсем, чăн ырă кăмăлпа пире хисеплесе Шупашкара килни — мĕне-мĕне пĕлтернине каласа та çитерме çук».

И. Тăхти Совет Союзĕн, тăван республикăн ӳсĕмĕсемшĕн савăннă, хавасланса çырнă, империалистсен, фашистсен тискер çăткăнлăхне питленĕ, чăваш ĕç çыннисене çирĕп кăмăллă, сыхă та хастар пулма чĕннĕ, халăхсен туслăхне, мирлĕ ĕçне мухтанă.

* * *

И. Е. Тăхти, çамрăклах халăх пултарулăхне юратса пухнăскер, чăваш чĕлхин илемне лайăх туйнă, сăвăсемпе калавсем çырнă чухне кирлĕ те вырăнлă сăмахсене, сăмах çаврăнăшĕсене суйласа илме пĕлнĕ.

Акă илер-ха «Колчак» поэмăнах. Унта поэт çĕнĕ йĕркешĕн хавасланса, чун-чĕререн тăрăшса çырни кăна мар, çав йĕркешĕн вăйлă сăмахсем, танлаштарусем тупма пĕлни те лайăх сисĕнет. Поэтăн сăмах енчĕкĕ туллиех, унта кĕмĕл те, ылтăн та пур,— кашниех хăйĕн вырăнĕнче, поэт нихçан та парăма кĕмест.

Тăхти час-часах ваттисен сăмахĕсемпе е вĕсем майлă сăмах çаврăнăшĕсемпе, танлаштарусемпе усă курать. Пĕр вырăнта: «Тип кашăкпа тута та çурăлать, теççĕ чăвашсем», тет, тепĕр вырăнта: «Кĕпçе пултăр сыпăклă, сăмах пултăр татăклă», тет. Е тата танлаштарусем: «кашта çинчи чăхсем пек»» «кикен çинĕ сысна пек»; «арман хуçи ĕни пек» тата ыт. те.

Колчак пухнă «шурă кашкăр ушкăнĕн» ĕçкине кăтартса парса, патша адмиралĕнчен пирĕн поэт акă мĕнле кулать:

Юрла-юрла шавласан,
Çакă ушкăн Колчака
Урра йăтма тапратать.
Адмирала улпутсем
Ярса илчĕç пĕр харăс.
Урра! Урра! кăшкăрса,
Ывăтаççĕ çӳлелле.
Колчак пĕрре мачча̀на
Хырăмĕпе сĕртĕнет.
Тепре çакă адмирал
Çурăмĕпе маччана
Çитсе лексе перĕнет.

—

...Пĕр кĕтесре улпутсем
Тислĕк купи манерлĕ
Пирамидă пулнă та
Тапкаланса выртаççĕ.

Тăшмансене çакăн пек тăрăхлани, чи малтан, акă мĕн çинчен калать: Тăхтин çиççе, кулса, ахăрса тăракан сатирă

вăйĕ, сатирик таланчĕ пулнă (анчах вăл кирлĕ пек сарăлса каяйман).

И. Тăхти, ĕлĕкхи саманара ӳсе çитĕннĕскер, ĕлĕкхи хресчен пурнăçне тĕлĕнмелле паллăсемпе кăтартса панă (куншăн ăна: «Тăхти чăваш ялĕн сăн-сăпатне пăсса кăтартать», тесе айăплакансем те пулчĕç). Çав паллăсенче те унăн сатирă мелĕсем уççăн курăнса тăраççĕ: вăл, совет халăхĕн тăшманне, Колчак адмирала тăрăхласа питленĕскер, кивĕ йĕркене, унăн юлашкисене те хаяр питлет, тĕрлĕ çăпансурансене хирĕç хăйĕн пултарулăхĕн пĕтĕм вăйне çĕклет.

Акă ĕлĕкхи ялти чăваш хресченĕн пурнăçĕ И. Тăхти калавĕсенче мĕнлерех курăнать:

«Эпĕ те çиччĕре, те саккăрта ун чухне, лайăх ас тумастăп. Эпир хĕлле урайне выртаттăмăр. Пӳрт ăшă пулатчĕ те. Урхалăхпа сыхса, каçхине атте ыраш улăмĕ илсе кĕретчĕ пӳрте. Çав улăма урайне сарса, улăм çине тӳшек, сăхмансем сарса выртаттăмăр эпир. Атте пĕр хĕрне, анне тепĕр хĕрне выртатчĕ; эпĕ, шăллăм, икĕ йăмăк варне выртаттăмăр; сывăрса тăрсан, ирхине анне, улăм кĕлте туса сыхса, кăмака хутатчĕ».

«Каçхине эпир урайне улăм çине выртсан, краççын сӳнтерсен, ула сыснапа икĕ чĕппи пирĕн тавра нăрăклатса, улăм чавса çӳретчĕç. Ула сысна, улăм пуçтарса, пирĕн ура вĕçне выртатчĕ... Çав сысна чĕпписем, эпир витĕннĕ кĕрĕк айне кĕрсе, шăллăмпа иксĕмĕр хушша, ăшă çĕре кĕрсе выртатчĕç» («Калавсем», 1955 ç., 20 стр.).

Ĕлĕкхи чухăн хресченсен (вăтаммисен те нумайăшĕн) пурнăçĕ шăпах çавăн пек пулнă, хăшĕсен унтан та кичемрех, хăрушăрах, тискертерех пулнă. И. Тăхти калавĕсенче çав кичем (кичемрен те кичем!) картинăсене те курма пулать. Çапла çырса вăл тепĕр чух натурализм çулĕпе те кайнă.

И. Тăхти — чĕлхе ăсти, терĕмĕр. Вăл хăйĕн калавĕсен чĕлхине халăх пултарулăхĕн сăмахĕсемпе илемлетме пĕлнĕ. «Шерхулла» калав ку тĕлĕшпе уйрăмах паха вырăн йышăнса тăрать.

Унта пĕр чăваш арăмĕн сасси пирки писатель çакăн пек çырнă: «Сасси те унăн çинçе сас, йĕс шăнкрав пек, уçă янăрать».

Ялта туй халăхĕ шавланине, кĕрленине, йăсланине, юрланине, кăшкăрнине, ташланине, сикнине... автор иквиç сăмахпа каласа панă: пĕтĕм ял хушши çĕмĕрлет!

Çак тĕслĕхсем те писатель илемлĕ калама пĕлнине

кăтартса параççĕ: «Алтан Ваçли кӳме тăрне ларнă, шăпăрне ахăртса пырать».

Ку сынна Алтан Ваçли тесе ахальтенех каламан пуль! Вăл туйсенче-мĕнсенче хăйне хăй автанла тыткалать пулмалла. Куратăр-и, вăл кӳме тăрне хăпарса ларнă! Кăштах кайсан, ал-ура хĕрсен, Алтан тус кӳме çинче тайкаланса ахăртма пуçлать шăпăрне!

Тепĕр чухне писатель ăсталăхĕ произведени геройĕ валли илнĕ хушаматра та аван палăрать. Анчах çакна хушаматпа çеç мар, çав геройăн ĕçĕ-хĕлĕпе, хăтланăвĕсемпе, сăмахĕсемпе çирĕплетсе парас пулать.

Чăваш ялĕсенчи сынсен хушамачĕсем таçтан-муртан пуçланса кайман. Вĕсем мĕнле те пулин ĕçпе сыхăнса тăраççĕ, вĕсем — халăх хăй сăнаса, пĕлсе панă хушаматсем. Çав Алтан е унăн ывăл-хĕрĕсем халĕ хăйсен сырăвĕсем айне «Петухов» тесе алă пусаççĕ пулĕ. Çапла, чăваш хушамачĕсем хăш чухне калав сырмалăхах материал параççĕ.

Илья Ефимович чăваш чĕлхин вăй-хăватне, чапне ӳстерессишĕн ырми-канми тăрăшнă, пĕтĕм пултарулăхне парса ĕçленĕ, çамрăксене вĕрентнĕ, хăй те вĕреннĕ.

И. Тăхти çакăн пек шутланă: писателĕн ăсталăхĕ чĕлхене лайăх пĕлнинчен, унăн пуянлăхĕпе тивĕçлĕн усă курнинчен, шухăшсене калама кирлĕ сăмахсем, танлаштарусем тупма пĕлнинчен килет, тенĕ. Чăваш писателĕсен 1936 çулти январьте пулса иртнĕ пухăвĕнче, çав шухăша палăртса, хăй тĕрлĕ институтсенче вĕреннĕ вăхăта аса илсе, И. Тăхти çакăн пек каланă: «Эпĕ пĕтĕмпе 48 экзамен патăм, пурте чĕлхе, литература, истори экзаменĕсем, çапах та эпĕ кашни пуплевех асапланса çыратăп. Çакна эпĕ илемлĕ литературăра сăмах, пуплев йĕрки шухăша каласа памалли хатĕр пулса тăнă пирки калатăп. Пирĕн чĕлхе ăсталăхне алла илмелле, чĕлхе ахахĕсене суйласа илме вĕренмелле».

Писательсен тепĕр пухăвĕнче тухса каланă сăмахра И. Тăхти, çамрăк поэтсене литература чĕлхине вĕренме чĕнсе, çапла асăрхаттарнă: «Пушкинпа Лермонтов сăввисене вуланă чухне манăн юрлас килет. Вĕсен сăввисем манăн кăмăла çав тери хытă хускатаççĕ. Пирĕн поэтсен те Пушкинпа Лермонтов пек çырмалла».

Çав çулхине вăл писательсен пухăвĕнче (апрель уйăхĕнче) Н. Ф. Катанов профессор (тюрколог) 117 чĕлхе пĕлни çинчен каласа парать. «Пирĕн çичĕ чĕлхе те пулин пĕлесчĕ», тет. Ку тĕслĕхе вăл акă мĕншĕн илсе кăтартнă: çав вăхăтра пирĕн хăш-пĕр «писательсем» «пире чăваш

чӗлхине пӗлни те ҫитет», текелесе ҫӳренӗ. Анчах хӑйсем ӑна та ҫителӗклӗ пӗлмен, тепӗр чухне хӑй ал ҫырӑвӗсене те тара тытса юсаттарнӑ. Тара кӗрешсе ӗҫлекенсем те юсаса ҫитереймен, редакторсем «кондицие» ҫитерсе парӗҫ тесе чунӗсене йӑпатса ҫӳренӗ. Вӗсем хӑйсен культурине ӳстерессипе ҫинчен шухӑшласшӑн та пулман, ытти халӑхсен чӗлхине вӗренесси ҫине йӗрӗнсе пӑхнӑ. Ҫав «писатель» тенӗ этемсем ҫак шухӑша ӑнланман: писатель пулас тесен, нумай-нумай вӗренмелле, пуҫламӑш шкултан тытӑнса аслӑ шкул таранах пӗтӗм вӑя хурса вӗренмелле. Писателӗн пурнӑҫран вӗренмелле, халӑхпа пӗрле пымалла, унӑн шухӑшне тӗрӗс калаcа пама пӗлмелле. «Ӗмӗр пурӑн — ӗмӗр вӗрен» тенине писателӗн нихҫан та манмалла мар. Вӗренме тӑрӑшман ҫын, вӗренме пӑрахнӑ этем писатель пулаймасть. Ахаль ҫын та вӗренме пӑрахсан, каялла кайса пырать, ӑсӗ чакать, чӗри типме тытӑнать.

И. Тӑхти илемлӗ произведенисем ҫырма вырӑс литературин классикӗсенчен вӗреннӗ. Эпӗ ҫакна лайӑх астӑватӑп. 1933 ҫулхине, пӗр кӗркуннехи ҫумӑрлӑ кун, Атӑл хӗрринче эпӗ Илья Ефимовича тӗл пултӑм. «Сана пӗр япала каласа парам-ха», — терӗ вӑл. Вара ҫавӑнтах Днепр ҫинчен Н. В. Гоголь ҫырнисене пӑхмасӑр калама тытӑнчӗ. Вуласа пӗтерчӗ те: «Гоголь ҫырнисене вулатӑп та тӗлӗнсе путсах каятӑп...», терӗ. Унтан туйине пӗр вырӑнтан тепӗр вырӑна тӑратрӗ те: «Куҫ пӑван пулма писателӗн никамран та мар, Гогольтен вӗренмелле», — тесе хушса хучӗ. «Куртӑн-и, Днепр варрине пӗр кайӑк та вӗҫсе ҫитеймест, тет. Тет ҫеҫ те мар, ӗнентермеллипех ӗнентерет...»

Илья Ефимовича тӗл пулсан, уйрӑлма ҫукчӗ. Питех те ӑста калаҫатчӗ вӑл. Такам та итлесе савӑнатчӗ. Унӑн калаҫу ӑсталӑхӗ калавӗсенче те лайӑх сисӗнет. Тӑхти геройӗсем пурте Тӑхти пек ӑста калаҫҫӗ: вӗсен чӗлхи-ҫӑварӗ, чӑннипех те, ҫу сӗрнӗ пек.

...И. Тӑхти, вӑрах чирпе асапланса пурӑннӑ пулин те, хӑйӗн куҫӗ мӗн хупӑничченех ҫырма пӑрахман. 1937 ҫулхи йывӑр кунсенче чирлӗ поэт «Самана сӑвви» ятлӑ икӗ пайлӑ поэмӑ ҫырса пӗтернӗ. Анчах ӑна пичете пама ӗлкӗреймен: вӑл 1938 ҫулхи февралӗн 22-мӗшӗнче, хӗрӗх тӑхӑр ҫулта, вилсе кайнӑ.

И. Е. Тӑхти, темле хӗн килсен те, шанчӑкне ҫухатман, аллине усса ларман. Сывлӑхӗ тӳрленейми хавшаса ҫитнӗ пулин те, вӑл пурнӑҫ ҫинчен шухӑшланӑ, малалла пӑхнӑ, тӳсӗмлӗ пулнӑ. П. Хусанкай кӑкӑрсӑр поэтӑн юлашки

кунĕсем çинчен çырнă пĕр сăввинче (ку вăл Н. И. Шелепие хисеплесе литературă кaçĕ ирттернĕ хыççăн ирхине пулнă) Илья Ефимовича çапла аса илет:

Уçĕркелен поэтпала кăшт иккĕн
Çӳрерĕмĕр тӳлек çыранпалан.
Хĕвел хăпарчĕ ешĕл Йăлăмран.
Çын пăхрĕ тинкерсе: «Пурнар-ха!» терĕ.

Илья Ефимович Тăхти чăвашсен пултаруллă писателĕсенчен пĕри пулнă. Илемлĕ произведенисем çырма вăл К. В. Ивановпа пĕр вăхăтрах тытăннă, пурăнасса Н. И. Шелепипе Н. В. Шупуççынни пекех икĕ саманара пурăнса курнă. Унăн революцичченхи кун-çулĕ ытти чăваш писателĕсен пекех асаплă та тумхахлă пулнă, çапах та вăл хăйĕн ырă ĕмĕтне — тăван çĕршывшăн, халăхшăн, тăван литературăшăн ĕçлесе пурăнас ĕмĕтне çирĕп тытса пынă. Ирĕклĕ совет самани çитсен, И. Тăхти пултарулăхĕ çĕкленсе кайнă, ĕмĕчĕ пурнăçа кĕнĕ, ырă ячĕ халăх патне çитнĕ.

*1955—1958*

# ЧӐВАШ ХАЛӐХ ЮРӐÇИ

Ӳтӗм çӗрте çӗрсе пӗтсессӗн те,
Ятӑм çӗрмӗ тесе шанатӑп...

*Н. И. ШЕЛЕПИ*

Кашни халӑхӑн хӑй чӗререн юратакан, ырӑ кӑмӑлпа асӑнакан ывӑл-хӗрӗсем пур. Чӑваш халӑхӗн те ун пек çынсем сахал мар. Вӗсем халӑхшӑн тӑрӑшса ӗçленипе, халӑх телейӗшӗн кӗрешнипе чапа тухнӑ. Пирӗн халӑхӑн çавӑн пек чаплӑ çыннисенчен пӗри вӑл — халӑх поэчӗ Николай Иванович Полоруссов-Шелепи.

Н. И. Шелепи 1881 çулта май уйӑхӗн 2(14)-мӗшӗнче Тутар республикинче, Аксу районӗнчи Çӗнӗ Ӳсел ялӗнче, вӑтам хресчен кил-йышӗнче çуралса ӳснӗ. Вӑл ялти шкулта тӑвата çул хушши вӗреннӗ. Çакӑн хыççӑн вара пулас поэт урӑх ниçта та вӗренеймен, унтан-кунтан кӗнекесем тупкаласа вуланипе çеç хӑйӗн пӗлӗвӗсене хӑпартса пынӑ. Хут сахал вӗреннӗ пулин те, вӑл тӑван ялӗнче пӗртен пӗр хут пӗлекен çын пулнӑ.

1904—1914 çулсенче Н. И. Шелепи Çӗпӗрте малтан чугун çул çинче рабочи пулса ӗçленӗ, кайрантарахпа ялта хресчен ӗçӗпе пурӑннӑ. 1914 çулта тӑван ялне таврӑннӑ, кӗске вӑхӑт хушши учительте ӗçленӗ, 1916 çулта салтакра пулнӑ.

Октябрьти Аслӑ социализмлӑ революцие поэт пысӑк хаваслӑхпа кӗтсе илнӗ. Революци хыççӑн вӑл чухӑнсен комитетӗнче ӗçленӗ, ӑна Чистай уесӗнчи исполком членне суйланӑ. Совет саманинче Шелепин пултарулӑхӗ пуянланса пырать, чапӗ халӑх хушшине сарӑлать.

Н. И. Шелепи литературӑ ӗçне патша саманинче тытӑннӑ. Унӑн таланчӗ виçӗ революци витӗр пиçӗхсе тухнӑ, икӗ саманара тӗрӗсленнӗ. Поэт патша саманинче хӑйӗн çур ӗмӗрне пурӑнса ирттернӗ. Çакӑ вара унӑн пурнӑçӗнче

йывăр йĕрсем, ăс-тăнĕнче чуна ыраттаракан аса-илӳсем хăварнă.

Н. Шелепин революцичченхи пурнăçĕ çăмăл пулман: вăл хурине те, шуррине те нумай тӳссе курнă. Унăн çулĕ — тертлĕ çул, ĕç çыннисен çулĕ пулнă. Поэт яланах халăхпа нихçан уйрăлми çыхăнса тачă пĕтĕçсе ĕçленĕ. Çакă ăна чи йывăр вăхăтра та вăй парса тăнă, чунне хавхалантарнă, сассине çĕкленĕ, юррисене янравлăх панă.

Халăх поэчĕ, хăйĕн хĕн-хурлă кун-çулне аса илсе, 1925 çулта «Çул курки» ятлă сăввинче акă мĕнле йĕркесем çырнă:

> Темле йывăрлăхсем тӳссессĕн те
> Чарăнмарăм çырма тăрăшса,
> Пурнăçăм йывăр пулсассăн та
> Юрăмсемпе хытă савăнтăм...
> Хуйхă çине хуйхă килех тăчĕ,
> Шухăшла-шухăшла ватăлтăм.
> Выртнă вырăн çинчен тăра-тăра
> Çыру çинче лартăм çĕрĕпе.
> Темле йывăр хĕн-хур курсассăн та
> Пурăнма тăрăшрăм тӳрĕпе!

Н. Шелепи — чăваш халăхĕн юратнă поэчĕсенчен пĕри. Вăл тӳрĕ пурăнма тăрăшнă, вăл чăннипех те тӳрĕ пурăннă. Çакна унăн ĕçĕ-хĕлĕ, тăван халăхпа пин-пин тымарпа çыхăнса тăракан пултарулăхĕ кăтартса парать.

Илер-ха, сăмахран, унăн 1905—1907 çулсенчи революци вăхăтĕнче çырнă сăввисене. Вĕсенче эпир поэт халăхшăн тăнине куратпăр. 1905—1907 çулсенчи революци, унччченхи ытти мĕн пур революцисенчен те ытларах, классен, уйрăм çынсен позицийĕсене тĕрĕсленĕ. Çакăн чухне чăваш халăхĕ те хумханса кайнă. Революци хумĕ çĕршыв тăрăх вĕçрен вĕçе çӳренĕ кунсенче чăваш интеллигенчĕсенчен пĕрисем, патша майлă пулса, монархистсен лагерĕнче пынă, теприсем — чăваш буржуазипе кулакĕсем хушшине тăнă, виççĕмĕшĕсем — ĕç халăхĕшĕн тăрăшса, тумхахлă, анчах тĕрĕс çулпа пынă.

Пирĕн поэт Н. И. Полоруссов-Шелепи халăхпа пынă, ĕç çыннисемшĕн тăрăшнă, ĕçре те, кĕрешӳре те хăш чухне халăхшăн ăш çуннипе, тепĕр чухне халăхшăн савăннипе юрланă. 1907 çулта вăл «Çĕлен» ятлă хĕрӳллĕ сăвă çырать, «Хыпар» хаçатра пичетлесе кăларать. Ку сăвăра вăл патшана Çĕлен тесе ят парать, халăха Кайăк, тет, халăхпа патша хушшинчи кĕрешĕве сăнласа кăтартать.

Çĕлен чĕтресе выртать,
Çак кайăкран хăраса;
Кайăк çиçĕм пек çӳрет,
Чăнлăх çути шыраса,—

тет вăл унта.

Поэт халăх вăйĕ çине шан^а тăнă, патша йĕркине революциллĕ вăйсем пĕтерессе ĕненнĕ. Çавăнпа та вăл çакăн пек çырма пултарнă:

Çĕлен пĕрре вилĕ-ха,
Ĕмĕрлĕхе пĕтĕ-ха.

Чăнах та, 1917 çулта халăх çав ирсĕр Çĕлене пĕтерсе хучĕ. Октябрьти социализмлă революци мул хуçисен влаçне çапса аркатса тĕп турĕ, çĕнĕ влаç туса хучĕ,— çапла вара çĕнĕ истори алăкне уçрĕ.

Революци тăшманĕсем Совет влаçне хирĕç вăрçă пуçласа ярсан, Шелепи, ĕç çыннисене революци ĕçĕшĕн кĕрешме чĕнсе, çакăн пек çырнă:

Пĕтĕм çĕре чĕтретсе,
Хăрăс утар малалла,
Мул пуçлăхсен хăватне
Пăр! салатса ямалла.

Поэт 1905—1907 çулсенчи тата 1917 çулхи революцисем çине мĕнле пăхни унăн обществăри позицине, унăн идеологийĕн никĕсне кăтартса парать. Шелепи литератури ĕçне тытăннă чухнех вырăссен прогрессивлă литератури çулĕ çине тăнă (вăл хăйĕн ун чухнехи произведенийĕсене: «Раççей» ятлă сăвва Н. А. Некрасов сăввисенчи шухăшсен витĕмĕпе, «Çĕлен» ятлă сăвва М. Горькин «Песня о Соколе» ятлă произведенийĕнчи шухăшсен витĕмĕпе çырнă).

Тепĕр енчен çакна палăртас пулать: Шелепин литературăри пултарулăхĕ чăваш халăх пултарулăхĕ çинче никĕсленсе тăрать. Халăх пултарулăхĕпе (фольклорпа) çак поэт чухлĕ хальхи чăваш поэчĕсенчен нихăшĕ те усă курман.

Н. И. Шелепи, халăх пултарулăхĕпе усă курса, «Константин хулине туни çинчен чăваш ваттисем калаçни», «Пӳлĕрти Валĕм — Хуçа çинчен» тата «Çарăмсанпа Хăнтăрçă» произведенисем çырнă, 1915 çулта Хусанта пичетлесе кăларнă.

Н. И. Шелепин халăх пултарулăхĕн çирĕп никĕсĕсем çинче ӳссе аталаннă творчестви Октябрьти революци

хыççăнхи тапхăрта тата та çӳллĕ пусăма çĕкленет. Совет саманинче поэт çĕнĕ сăвăсем, юрăсем, поэмăсем шăрантарать.

Революцие пула, чăваш халăхĕ хăйĕн телейне тупнине мухтаса, унăн юрри тинех ирĕклĕн янранипе савăнса, халăх сăвăçи чăваш сăвви çинчен, ăна сар кайăкпа танлаштарса, «Чăваш сăвви» ятлă юрă çырать. Ĕлĕк чăвашсем хăйсен юррисене çырмасенче пытанса вăрттăн юрланă. Халĕ ĕнтĕ пачах урăхла: чăваш юрри ялта та, хулара та янрать, таçти çĕршывсенче те илтĕнет. Халĕ вăл ирĕклĕ юрă, ăна ĕç çыннисем аслă тĕнчере юрлаççĕ.

Аслă тĕнчене уçса паракан̆ĕ вăл — коммунистсен хăватлă партийĕ, унăн аслă çулпуçĕ Ленин. Вăл пирĕн партипе халăхăн аслă учителĕ Ленин çинчен калама çук паха юрăсем çырать. Çак юрăсене çырма поэт чи ăшă, чи вăйлă сăмахсем тупать.

1924 çулта, Ленин вилнĕ хыççăн, Шелепи вулаканăн чун-чĕрине хумхантаракан, тĕлĕнмелле ăшă, илемлĕ сăвă çырнă. Çав сăввăн пуçламăшĕнче эпир Ленинăн ача чухнехи кунĕсене куратпăр:

Камăн варĕнче
Утленсе пулса,
Кам кăкри сĕтне
Çисе ӳсрĕн-ши?

Кам чĕрçи çинче
Выляса кулса,
Хĕвел шевли пек
Йăлт-йăлт сикрĕн-ши?

Пусмăрлăхпала
Ултав-суяна
Ывăç çинчи пек
Курса тăраттăн.

Малалла, Ленин вилнĕ пирки хурланса, хăйĕн хуйхине халăха пĕлтерсе, поэт çапла калать:

Вут çулăмĕ пек
Чĕлхӳ-сăвару—
Епле сивĕнсе
Чĕнми пулчĕ-ши?

Тĕттĕм пуçлăхĕ—
Хăрушă вилĕм—
Епле сан патна
Хăйса пычĕ-ши?

Пурне те курса
Тăракан куçу
Епле хупăнса
Тĕттĕмленчĕ-ши?..

Аслă Ленин вилнĕ пулсан та, унăн ячĕ пĕтĕм çĕр çинче чăн-чăн çутă çăлтăр пулнине, ĕç çыннисене малалла чĕнессе, пулас ĕмĕрсене çутатса тăрасса поэт лайăх пĕлнĕ:

Пĕтĕм çĕр çинчи
Ĕç халăхĕшĕн
Сан ят чăн-чăнах
Чăн çутă çăлтăр.

Аслă, мухтавлă,
Хăватлă, чаплă
Владимир Ильич
Ульянов-Ленин,

Хĕвел çути пек,
Яту çут пултăр,
Янтраса тăтăр,
Ĕмĕр чĕр пултăр!

Тӳрех калас пулать: Н. Шелепи пултарулăхĕнче унăн Ленин çинчен çырнă юрри-сăввисем — чи паха произведенисем. Çав сăвăсенче вăл чăваш халăхĕн шухăш-кăмăлне, ĕмĕтне каласа панă, ирĕке тухнă телейлĕ, çутă ĕмĕтлĕ халăх хăйĕн çулпуçне мĕн тери хытă юратнине кăтартса панă.

Чăваш литературине аталантарас ĕçре тава тивĕçлĕ ĕçсем тунăшăн Н. И. Полоруссов-Шелепие 1936 çулта Чăваш АССР правительстви халăх поэчĕ ятне панă, 1939 çулта, ытти паллă совет писателĕсемпе пĕрле, Совет правительстви ăна «Хисеп палли» орденĕпе наградăланă.

1936 çулта поэт-патриотăн юбилейне ирттернĕ кунсенче Н. И. Шелепие нумай ĕç çыннисем, тĕрлĕ халăх писателĕсем çырусемпе телеграммăсем ярса саламланă. Çав шутра французсен паллă писатель-гуманисчĕ Ромен Роллан çыру çырса янă.

«Эпĕ,— тет Р. Роллан,— Шелепи юлташа малашне татах та ăнăçлăрах ĕçлеме, телейлĕ пулма чĕререн ырă сунатăп. Ĕлĕкхи саманара вăл, революциччен, хăйĕн пурнăçĕнчи тата Сирĕн халăхăн пӳрнăçĕнчи йывăрлăхсене парăнман,— хăйĕн таланчĕпе çутă шанчăкĕн çулăмне упраса хăварма пултарнă. Çакăншăн ăна пĕтĕм чунтан сума сăватăп. Хамăн Францири тусăмсен ячĕпе эпĕ унăн аллине ăшшăн, тăванла чăмăртатăп. Унăн çитĕнĕвĕсемшĕн эпĕ те Сирĕнпе пĕрлех хĕпĕртесе савăнатăп, мĕншĕн тесен эпир пурте пĕр этемлĕх членĕсем пулса тăратпăр. Çав этемлĕхшĕн расăсемпе нацисем хушшинчи уйрăмлăх çук — пĕрисен телейĕ е хуйхисуйхи теприсемшĕн те телей е хуйхă-суйхă пулса тарать».

...Анчах Николай Иванович пурнăçĕнче унăн чун-чĕри-

не ыраттаракан вăхăтсем ĕлĕкхи саманара çеç мар, Совет саманинче те, чип-чипер пуранна кунсенче те пулна. Сăмахран, 1937 çулта пĕр элекçĕ халăх поэчĕн ыра ятне варалама пăхнă, вата поэт çинчен киревсĕр статья çырса кăларнă. «Çыннăн сутă кунне çĕмĕрекен» элекçе хирĕç Н. И. Шелепи «Элекçе хирĕç» ятлă сăвă çырнă.

Сăвă пуçламăшĕнче поэт ĕç çыннисем кĕрешсе çĕнтернĕ патшалăхра, аслă та ирĕклĕ çĕршывра хăй савăнса, халăхпа пĕрле ĕçлесе пуранни çинчен, хăйне чаплă кун-çулăн мухтавлă сасси хавхалантарни, юррисенче халăхăн паттăр ĕçĕсем ялкăшни çинчен çырать:

Колхозсен ялĕсене çӳресе,
Çĕнтерӳсемпе хĕпĕртесе,
Ĕç паттăрĕсемпе курнăçаттăм,
Юрла-юрла сăвă çыраттăм.
Ачасене чунтан юрататтăм,
Юрласа саламсем яраттăм,
Хăнасене хĕрӳ пахалаттăм,
Сăвăласа салам калаттăм.
Урампала утса пынă чух та
Пуçра юрă-сăвă çыраттăм,
Ĕç халăхĕн чаплă ĕçĕпеле
Çĕнтерӳ юррисем шăрататтăм.

Анчах культ вăхăтĕнче, хура пĕлĕтсем капланса килсен, ирсĕр элекçĕ çĕлен пек шуса тухать те халăх поэтне ним сăлтавсăрах лăскама тытăнать. Çав киревсĕр этем, поэт калашле, ăна «вăйлă çын ячĕпе хăратаканскер», халăх поэтне мĕн тери тарăхтарни çак йĕркесенчен питех те лайăх курăнать:

Хăй вăл, хура ăш-чиклĕ пулин те,
Хĕрлĕ ялав айне пытанать.
Сеспĕл Мишши мăйин пăявĕпе
Мана та вăл пăвма пикенет.
Пӳтсĕр сăмахсемпе тĕнче çине
Тӳсме çук тискер ят сарать.
Чăваш халăх вата сăвăçине
Çĕлен сăннисемпе хăмсарать.
«Шелепин юррисем янрамаç,
Ĕç халăх ячĕпе çырмасть», тет.
Чĕререн юратнă ĕç халăхне,
Юлташсене манран сивĕтет.
Суять вăл кашкăр-кашаман тусĕ,
Элек ăшне путнă унăн ăсĕ,
Икĕ питлĕ хĕç-суеçĕ çынта
Чăнлăхпа тӳрĕлĕх çук унта.

Элекçĕ тарăхтарнă поэт хăйне çеç мар, ытти таса çынсене те элекçĕсенчен хӳтĕлет, пĕр кашкăр-кашамана çеç

мар, ытти мĕн пур элекçĕ-суеçĕсене питлет. Вăл, пĕтĕм хаярлăхне пухса, хăрушă кунсем çинчен çакăн пек йĕркесем çырать:

Элек пирки йыта вилĕмĕпе
Сахал мар ырă çынсем вилеççĕ.
Савăн пек минесĕр элекçĕсем
Сахал мар çын ятне варалаççĕ.
Ним айăпсăр совет гражданĕсене
Пĕтерме пикенсе хурлаççĕ.
Халăхшăн хĕрӳ ĕçлекенсене
Халăх тăшманĕсем терĕçĕ,
Вĕсен кил-йышĕпе ачисене
Вĕри куççульпе йĕртерчĕçĕ.

Халăх поэчĕ хăйне кам ирĕк панине, унăн юрри-сăввисене кам хăват панине, сассине кам уçнине лайăх пĕлет. Элекçе ответлесе, вăл тĕрĕссине калать:

Эпĕ ĕç халăхĕн ывăлĕ,
Чăвашсен вата поэчĕ.
Октябрь вут-хĕмлĕ тăвăлĕ
Мана хаваслă ят пачĕ.

Ман поэзи — революци ачи,
Аслă Октябрь сарса ячĕ.
Ĕс халăхĕ лайăх пĕлет ăна,
Уншăн эп мĕн пур вăя хунă.

Ответ хыçне «Мартăн 11-мĕш кунĕнче 1938 çулта» тесе паллă тунă. Çапла, поэт ку сăвва элекçĕсем ирттĕхсе кайнă вăхăтра, совет çыннисене вăйлă çын ячĕ хăратса тăнă кунсенче çырнă. Н. И. Шелепи ун чухне сĕм-суккăр пулнă. Ăна арăмĕ çаратса çӳренĕ. Юлташĕсене поэт сасран çеç палланă. элекçĕсене вара мĕнле утнинчен пĕлнĕ...

Н. И. Шелепи яланах пурнăçпа çывăх тăма тăрăшнă: вăл кашни çĕнĕ событи пирки тенĕпе пĕсех хăйĕн сассине панă,— вата поэт самана юттинчен юлса пыман. Чăнах та, мĕн çинчен çырман-ши вăл? Çĕршыври фабрикăсемпе заводсем, совхозсемпе колхозсем, çĕнĕ хуласемпе колхозлă ялсем, Совет Çарĕ, уявсем, савăнăçсем тата ыттисем те,— совет çĕршывĕн кашни утăмĕ халăх поэтне хаваслантарнă, ырă кăмăлпа юрлаттарнă.

Н. И. Шелепи халăх интересĕсемпе пурăннă поэт: вăл совет çыннисене, вĕсен ĕçне мухтанă, çĕршыв тăшманĕсене çивĕч сăмахпа питленĕ. 1907 çулта вăл патшана Çĕлен тесе ят панă пулсан, çак ята вăл революцин ытти тăшманĕсене те — улпутсене, капиталистсене, кулаксене, сăтăрçăсене парать. Шелепи капитализм тĕнчине «хĕн-хур тĕнчи», «юнлă

тĕнче», «ылханлă тĕнче», тет; мул хуçине —«çын юнне сăхса, янттине чыхса вăй илнĕ тискер тăшман», тет.

1941 çулта Совет Союзне хирĕç юн ĕçен Гитлер вăрçă пуçласа ярсан, ирсĕр те çăткăн фашистсен тĕллевĕ мĕнле пулни çинчен халăх поэчĕ «Чĕнетĕп» сăвăра каласа парать. Совет халăхне тăшман çĕнтерес çуккине поэт пĕлет. Темĕн чухлĕ çĕр туртса илме хапсăннă Гитлерăн кун-çулĕ мĕнпе пĕтесси çинчен каласа, вăл çакăн пек йĕркесем çырать:

Тăршшĕ — ик метр, урлăш — пĕрре
Территори кирлĕ Гитлера.

Çак сăмахсене поэт çĕршывăн, халăхăн, пирĕн çарăн вăйĕ çине шанса калать, вĕсене вăл Совет влаçĕн, Коммунистсен партин хăватне ĕненсе, унăн идейисен вăйĕпе хавхаланса калать.

Аслă парти ертсе пынипе, хăватлă совет çĕршывĕ, паттăр Совет Çарĕ хăйсен историллĕ ĕçне чаплăн пурнăçа кĕртрĕç. Анчах ватă поэт — чăваш шăпчăкĕ — Çĕнтерӳ уявĕнче пирĕнпе пулаймарĕ. Н. И. Полоруссов-Шелепи, нумай вăхăт хушши йывăр чирпе чирленĕ хыççăн, 1945 çулхи январĕн 12-мĕшĕнче вилсе кайрĕ. Эпир, орденлă поэтăн, чăваш халăхĕшĕн хăйĕн ĕмĕрне тӳрĕ кăмăлпа ĕçлесе ирттернĕ сăвăçăн, литературăри пархатарлă ĕçĕсене пăхса тухса, ăна хисеплесе ырă кăмăлпа асăнатпăр: санăн ĕçӳсене халăх йышăнчĕ, тетпĕр.

*1951*

## «ХӖН-ХУР АЙӖНЧЕ» ПОЭМӐ

Чӑваш халӑх поэчӗ С. В. Элкер ҫырнӑ «Хӗн-хур айӗнче» поэмӑ чӑваш совет литературинче паха произведенисен шутне кӗрет. Ҫак историллӗ поэмӑ тӑрӑх эпир чӑвашсен XVIII ӗмӗрти пурнӑҫне куратпӑр: пирӗн ума ҫӗр аллӑ — ҫӗр ҫитмӗл ҫул ӗлӗкрех пулса иртнӗ ӗҫсем сарлакан тухса тӑраҫҫӗ. Инҫетри вӑхӑт! — анчах та, вӗсем пире паян кун та интереслентереҫҫӗ, хумхантараҫҫӗ. 1773 ҫулта казаксен чухӑнӗсем хӑйсене хӗсӗрлекенсене хирӗҫ ҫӗкленеҫҫӗ. Вӗсене ертсе пыраканӗ вӑйлӑ, ӑслӑ, хастар Емельян Иванович Пугачёв пулнӑ. Пугачев восстанийӗ майлӑ пулса, Российӑри тӗрлӗ халӑхсем нумай ҫӗрте патшана, ҫӗр улпучӗсене, пупсене тата ытти харам пырсене хирӗҫ тухнӑ.

Чӑваш ӗҫ ҫыннисем те Пугачев восстанине хастаррӑн хутшӑннӑ. Кун ҫинчен вырӑссен аслӑ поэчӗ А. С. Пушкин «Пугачев историйӗ» тата «Капитан хӗрӗ» ятлӑ произведенисенче ҫырса панӑ, А. С. Пушкин хресченсен восстанийӗн сӑлтавне, вӗсем крепосла йӗркене хирӗҫ пынине, ҫакӑ вӑл пӗтӗм халӑх юхӑмӗ пулнине тӗрӗс те тарӑн ӑнланса илнӗ.

«Капитан хӗрӗ» ятлӑ романӑн цензурӑ пичетлеме ирӗк паман сыпӑкӗнче Пугачев восстанине мӗнле ҫынсем хутшӑннине кӑтартса панӑ. Гринёв Атӑл ҫинче «юхса пыракан такан» (виселица) курать. Такан ҫинче виҫӗ вилӗ ҫакӑнса тӑнӑ. «Кимӗ ҫинчен сиксе тухрӑм та,— тет Гринёв,— эпӗ тӳрех хӑрушӑ юпасем хушшине пырса тӑтӑм. Тулли уйӑх мӗскӗнсен сӑнсӑрланса кайнӑ пичӗсене ҫутатса пӑхать. Вӗсенчен пӗри — ватӑ чӑваш иккен, тепри — пӗр ҫирӗм ҫула ҫитнӗ, вӑй питти те тӗреклӗ вырӑс, завод хресченӗ. Виҫҫӗмӗшӗ ҫине пӑхсассӑн, эпӗ ӑнран кайрӑм... вӑл Ванька

иккен...» (Ванька — Гринев патĕнче ĕçлекен крепосла хресчен.— В. Д.).

Акă мĕнле çынсем хутшăннă Пугачев восстанине: вĕсем — крепосла хресченсем, заводра ĕçлекен хресченсем, пусмăр туссе, пурăнакан халăхсен çыннисем (чăвашсем, тутарсем, мордвасем, удмуртсем тата ыт. те).

«Пугачев Атăл урлă каçсан, пурте хускалса кайнă,— тет А. С. Пушкин.— Атăлăн хĕвеланăç енĕ, восстание çĕкленсе, самозванец майлă пулнă. Улпут хресченĕсем пăлханма пуçланă; урăх тĕнлисем тата тĕне кĕнисем вырăс священникĕсене вĕлерме тытăннă. Воеводăсем хуласенчен, дворянсем поместйисенчен тарнă; хура халăх лешсене те, кусене те тытнă, вĕсене пур çĕртен те Пугачев патне иле-иле пынă. Пугачев халăха ирĕклĕх парасси çинчен, дворянсен йăх-ăруне пĕтересси çинчен, хырçă-марçăсене каçарасси çинчен тата укçасăрах тăвар валеçсе парасси çинчен пĕлтернĕ...» («Пугачев историйĕ»).

Çакăн пек ĕçсем Улатăрта, Çĕрпӳре, Кăрмăшра пулнă. Ун пек ĕçсем ялсенче те нумай çĕрте пулса иртнĕ. Хресченсем çĕр хуçисене, пуян усламçăсене тыта-тыта тăпăлтарнă, чиркӳсем тăрринчен пуп тавраш ĕсене тыта-тыта пăрахнă. Анчах та çак нумай çĕре сарăлнă пысăк вăрçă юлашкинчен пĕтсе ларнă. Е. Пугачев восстанийĕ те, Болотников, Степан Разин, Булавин тата ыттисен восстанийĕсем пекех, пĕтнĕ. Вĕсен сăлтавĕ пĕтĕмпех ун чухнехи социаллă-экономикăллă условисенчен, пурнăç йĕркинчен килнĕ.

1775 çулхи январьте Мускавра Е. И. Пугачева пуçне касса вĕлернĕ. Анчах Пугачев пуçарса янă пăлхав часах пĕтмен: унăн витĕмĕ хресченсем хушшине юлнă, çулăмĕ нумайччен ялкăшса тăнă.

С. В. Элкерĕн поэминче çак событисем хыççăнхи вăхăта илсе çырнă. Сăмахран, Чакка патне пырса кĕнĕ хусахсен ушкăнĕн утаманĕ чăвашсем хушшинче Пугачев мĕнле çӳрени çинчен, улпут тавраш не мĕнле çĕмĕрни çинчен акă мĕн каласа парать:

— Çук ĕнтĕ Пугачев! Çирĕç ун пуçне!..
Анчах манас çук эпир ун ĕçне!..
Ак вун çул иртет... Эпир унтанпа
Юлтăмăр виççĕн çеç ак çак ушкăнра;
Çӳретпĕр ишсе сĕм-сĕм вăрманпа—
Сăртан — Атăла, Атăлтан — Сăра.

Çапла, «Хĕн-хур айĕнче» поэмăра сăнласа кăтартнă ĕçсем XVIII ĕмĕрĕн иккĕмĕш çур пайĕнче (Пугачева вĕлер-

сен тепӗр вунӑ çул иртсен) пулса пыраççӗ. Вӗсем вара çак ӗмӗр пӗтнӗ çӗре çеç, тӗрӗсрех калас-тӑк: XIX ӗмӗр пуçланнӑ вӑхӑтра, вӗçленсе çитеççӗ.

* * *

«Хӗн-хур айӗнче» поэмӑ — чӑваш халӑхӗн социаллӑ пурнӑçне кӑтартса паракан историллӗ произведени. Унта историре чӑннипех пулнӑ çынсем çук, темелле. (Анчах та Пахом пирки çакна калас пулать: çак ят чӑваш халӑхӗ хушшинче паллӑ ят. Вӑл историре чӑннипех пулнӑ çын ячӗ). Истори вӑл — чӑннипе обществӑра, çӗршывра мӗн пулни, анчах илемлӗ литературӑн историллӗ произведенийӗнче çырни вара — чӑннипе мӗн пулни çеç мар, чӑннипе мӗн пулма пултарни те.

Патша влаçӗ хӑйӗн колонизаторла политикине çине тӑрсах тытса пынӑ. Чӑвашсем, колонизаторсен пусмӑрӗнчен хӑтӑлас тесе, чӑтлӑх вӑрмансене, упа каçми çырмасене тара-тара пытаннӑ. Тарнӑ чухне вӗсем çапла шутланӑ:

— Тарар сӗмлӗхе,
Пурнар ирӗкре...
Пире пуçлӑхсем унта тупас çук...

Вӑхӑт нумаях та иртмен, çав «сӗмлӗхсем» те сӗмлӗхсем пулма пӑрахнӑ. Çӑткӑнсем вӗсене унта та шыраса тупа пуçланӑ.

Анчах, инкеке, пытанчӑк ялсем
Часах мӗн тухнӑ «тӗнче» куç умне;
Патша тарçисем, усал пуçлӑхсем
Кунти кӗтессе те пуçланӑ çитме.

Çав усал пуçлӑхсем халӑха куланайшӑн хӗсӗрленӗ, çич хут тирне сӳнӗ, ватнӑ, хӗненӗ, вут тивретсе çунтарнӑ. Ĕç халӑхӗ куланая вӑхӑтра татайман, çапла вара, парӑмсем ӳссех пынӑ, инкек çине синкек тиеннӗ. Çак картинӑна Элкер хӑйӗн поэмин «Куланайшӑн» ятлӑ пайӗнче чуна хумхантаракан сӑнлӑхсемпе кӑтартса парать. Акӑ ватӑ Итапая вӗлерес пек хӗнеççӗ. Акӑ хӗнеççӗ ялти чухӑна — Чаккана, çапмассерен юн пӗрӗхет:

Чӗрӗ юн юхса шӑннӑ пӑрлӑк вырӑна
Чӗнсе кӑлараççӗ пӗр çамрӑк çынна,
Ку çын — хут çинче Якку ятлӑскер,
Ялта, чӑвашла — Чакка тенӗскер.
...Ак çамрӑк пуçа хураççӗ тӑсса,
Çири тумтирне илеççӗ хывса;
Пилеш хуллисем суйласа илсе

Пуçлаççĕ ăна касса ислетме.
Ак çапнă йĕртен чĕр юн пĕрĕхсе
Шур юр çинелле каять сирпĕнсе...

Çакă вăл — поэмăри тĕп герой чухăн Чакка. Вăл пурлăх енчен хĕсĕнсе-пĕсĕнсе çеç пурăнкалать. Чухăн хресчен Чакка — ун чухнехи ялăн, ун чухнехи йĕркен пĕтĕм социаллă пусмăрĕ айне пулнă хресчен сăнарĕ. Куланай вăхăтра тӳлесе тăма Чаккан укçа тавраш çук. Унăн куланай икĕ çул хушшинче тăвată тенкĕ те çирĕм пуса çитнĕ (кайран вара çичĕ тенкĕ патнех те çитет). Çавăнтах тата пупĕ: «Тавай виçĕ тенкĕ! Тавай, халех туп!» тесе хĕстерет. Çак хырçă-марçăсемшĕн унăнне тирне сĕвеççĕ, юнне ĕçеççĕ, пуçне çиеççĕ.

Ялти пуян — Алапит, никам умĕнче пĕр шит чакман, ун чухнехи ялăн пур йышши «кĕтмен хăнисемпе» те — пурмис-тиекпе, пуппа туслă пурăнакан пуян хресчен, пĕрмаях чухăн Чакка çине тăрать. Вăл, тиеке пылпа та çупа çавăрса, хăйĕн ывăлне салтак службинчен çăлса хăварать, унăн вырăнне ним хӳтсĕр Чаккана ямалла тутарать. Çапла ĕнтĕ, Чакка кĕтмен çĕртенех салтака каять. Икĕ çул пурăнсан, вăрах чирлĕ пулнă пирки вăл каялла килет. Анчах çак вăхăт хушшинче унăн куланай татах та ӳссе пынă. Çавăн чухнех Алапитпе Чакка хушшинчи хирĕçӳсем те нумаях ӳссе вăйланнă. Çак социаллă хĕскĕче Чакка туйса илмешкĕн тытăнать: иртни çеç мар, малашнехи те ăна хăратать, ним канлĕх памасть.

Кайрантарахпа Чакка Пахом ушкăнне юрăхлă çын пулса тăрать (Хăш-пĕр архив докуменчĕсем пĕлтернĕ тăрăх, Пахом ятпа виçĕ çын çӳренĕ: пĕри — Василий Гулящев, иккĕшĕ — Пахомпа Сергей Швецовсем). Вăрă-хурах пулас тесе мар, ирĕке тухас тесе, пĕрлешет Чакка çав ушкăнпа, Пугачев çыннисем пуринчен ытла пусмăра хирĕç кĕрешекенсем пулнă. Çавăнпа вĕсене чухăн хресченсем кăмăлланă, мĕншĕн тесен «Пугачев ятне чĕртнĕ таркăнсем хĕн-хур çыннине хушаççĕ çунат».

Чакка вара пусмăра хирĕç мĕн май килнĕ таран кĕрешет. Пахомпа пĕрле вăл çĕр улпучĕсене, кантурсене, чиновниксене, пупсене хирĕç кăна мар, ялти пуянсене хирĕç те кĕрешет. Пахомăн (автор сăмахĕпе каласан, «Пугачев мĕлкин») йĕркеленсе çитмен «программă» та пур, çакна эпир унăн вырăсла-чăвашла каланă сăмахĕнче куратпăр. Вăл тасти çĕр улпучĕ çĕршыва касни çинчен, нӳхреп куçлă пупĕ ĕмсе тăни çинчен калать; хресчене тăван вăрмана та

касма чарни ҫинчен, сывлан сывлӑша та туртса илесси ҫинчен калать. Вӑл хресченсене Пугачев вӑхӑтӗнчи пек ҫӗкленме чӗнет: «Йӑтар хӗҫ-пӑшал та каяр кантура... Ҫӗмӗрер кантура та, унтан малалла...»— тет вӑл. Малалла!— ҫакӑ вал, урӑхла каласан, хресченсен вӑрҫине сарса пырас тенине пӗлтерет. Пугачев вӗт «нимле улпута, нимӗнле пуҫлӑха... хӗрхенме хушман».

Анчах поэмӑра кӑтартнӑ Кушлавӑш хресченӗсем иккӗленеҫҫӗ, шикленеҫҫӗ, хӑраҫҫӗ. Паллах, Пугачев вӑхӑтӗнче вӗсем хӑюллӑрах пӑлханнӑ, алла лекнӗ харам пырсене чӗррӗн вӗҫертмен. Пугачев восстанине путарса лартсан, Кушлавӑшри хресченсене те хытӑ хӗсӗрленӗ, ҫӗре юнпа шӑварнӑ. Ҫапла вара, ҫак юнлӑ вӑхӑта аса илсе, «пӑлхав тапратсан, каллех кӗт ҫавна», тет хресченсенчен пӗри. Вӑл пуянсене пӑртак хӑратасшӑн, анчах сӑмахне хӑрарах калать: «Куштан та пулсан вӗсем хамрӑннах, улпут мӗн пулсан юратчӗ касмах», тет. Чӑваш хресченӗсен пӑлханӑвӗ ку чухне малтанхи чухлӗ ҫӗкленеймест. Чакка ӗмӗчӗ те ӗмӗт пулнипех юлать. Вӑл вара, ирӗке юратакансккер, яла хӗрхенсе, халӑхшӑн тӑрса, хӑйӗн тӑван ялӗнчен уйӑрӑлса каять. «Ман урлӑ хӗн-хурлӑх ан тивтӗр яла!»— ҫакӑн пек унӑн юлашки сӑмахӗ. Ку вӑл хӑраса ӳкни мар. Хӗн-хур мӗн тери йывӑр пулнине Чакка пӗтӗм чун-чӗрепе туять. Ҫав вӑхӑтрах вӑл кирлӗ пек кӗрешме май ҫуккине те ӑнланать. Чуралӑха, тискерлӗхе пӗтерес тесен, хресченсем пурте Пахом пек пулмалла, вара нисҫта та, никам та чура пулас ҫук...— тет вӑл улпут патӗнче ӗҫлекенсене. Хресченсем хушшинче Пахом пек ҫынсем питех те сайра, ҫавӑнпа ӑнӑҫлӑн кӗрешме май ҫук, тесе каласшӑн вӑл. Чакка хӑй ӗнтӗ чӑннипех те Пахом пекех. Мӗн виличченех вӑл хӑйӗн шухӑшне, хӑйӗн ҫулне ҫирӗп тытать.

Чакка «малалла» чӗнет, терӗмӗр. Анчах эпир ҫакна каламарӑмӑр: Чакка «малалӑхӗ» уҫӑмлӑ мар, ытла та тӗксӗм пулнӑ. Инҫе ҫулсем курӑнман. Вӑл, хӑйӗн ҫулӗ ҫинче ҫирӗп тӑнӑ пулин те, ҫав ҫул ӑҫта илсе тухасса пӗлмен.

* *
*

Чакка чӑваш халӑх историйӗнче пулнӑ ҫын мар, терӗмӗр, ҫапах та вӑл пӗрре те пурнӑҫра пулман ҫын пек мар: Чакка — чӗрӗ ҫын пекех; тен, историре Чакка пек ҫынсем темиҫе те пулнӑ пулӗ,— тавҫӑрса илме йывӑр мар,— вӗсем хӑюллӑ та хастар пулнӑ, ҫутӑ ӗмӗтлӗ, тӳрӗ кӑмӑллӑ пулнӑ; тен, хӑш чухне вӗсем йӑнӑшнӑ та, ҫав йӑнӑшсем вӗсен

юхăмне кансĕрленĕ те пулĕ,— çапах та Чакка пек çынсем малалла туртăннă, халăх ĕмĕчĕпе пурăннă. Чакка вăл — чăваш халăхĕн иртнĕ вăхăтри паттăрлăхне кăтартса тăракан герой. Элкер хăйĕн çак произведенийĕнче Чаккасен характерлă енĕсене пĕр çĕре, пĕр çынна пухса пĕрлештернĕ, вăл XVIII ĕмĕрти хресченсен пăлханăвĕсене хутшăнса кĕрешекенĕн сăнарне (типне) тунă.

Литературă историйĕ енчен илсе пăхсан, эпир тӳрех çакна калама пултаратпăр: Чакка — пирĕн литературăра çирĕпленсе юлнă сăнар. «Хĕн-хур айĕнче» поэмă — чăваш хресченĕсен XVIII ĕмĕрти пурнăçĕ çинчен çеç мар, вĕсен кĕрешĕвĕ, пăлхавĕ çинчен те калакан пысăк поэмă. Унăн историллĕ пĕлтерĕшĕ çакăнта: вăл пире çав вăхăтри хресченсен вăрçисен характерне лайăхрах тавçăрса илме пулăшать. Чăн та, çак поэмă хамăр юратнă геройсем çĕнтернипе вĕçленмест. Ун чухнехи геройсем мĕншĕн çĕнтерейменнине иртнĕ ĕмĕрсенче Францире, Германире, Российăра пулнă хресченсен восстанийĕсен историйĕ питех те уççăн каласа парать. Хресченсем тĕттĕмлĕхре сапаланса пурăннине пула, хăйсен кĕрешĕвĕн тĕллевне уççăн ăнланайман. Вĕсем хăйсен тĕллевĕшĕн кĕрешме çирĕп организаци тата тĕреклĕ çар тăвайман. Ун чухне тата хресченсен шанчăклă союзник — организациленнĕ рабочи клас пулман. Элкер хăйĕн поэмине çак историллĕ самантсене асра тытса, вĕсене лайăх чухласа çырнă. Историллĕ эпохăна тĕрĕс кăтартса панăран тата историпе килĕшсе тăнăран «Хĕн-хур айĕнче» поэмăна эпир чăннипех те историллĕ поэмă тесе хаклатпăр.

«Хĕн-хур айĕнче» поэмăн историллĕ пĕлтерĕшĕ тата çакăнта: поэмăн тĕп геройĕ — халăх, унăн ирĕклĕхшĕн, чăнлăхшăн, этем тивĕçлĕхĕшĕн кĕрешекен чи лайăх çыннисем. Çак пысăк произведенире халăх поэчĕ нумай халăхлă ĕç çынни массисен: вырăссен, чăвашсен, тутарсен, мордвасен социаллă шухăшĕпе ĕмĕчĕсем пĕр пекех пулнине кĕрешӳ урлă кăтартса панă. Поэмăри ĕçсем трагедиллĕ, çапах та вăл оптимистла шухăшлă произведени. «Хĕн-хур айĕнче» поэмă шухăшсен пуянлăхĕпе, сăнлăхсен вăйĕпе, чĕлхе илемлĕхĕпе С. В. Элкер пултарулăхĕнче çеç мар, пĕтĕм чăваш совет литературинче те чи лайăх произведенисен шутне кĕрет.

*1949*

## ПЕТĔР ХУСАНКАЙ

**(Çуралнăранпа 50 çул çитнĕ тĕле)**

Петĕр Хусанкай — чăваш халăхĕн хальхи паллă поэчĕсенчен пĕри, нумай-нумай сăвă-юрăсен, поэмăсен, статьясен авторĕ. Унăн произведенийĕсене чăваш ĕç çыннисем лайăх пĕлеççĕ, юратса вулаççĕ, юррисене уявсенче, ĕçкĕ-çикĕсенче юрлаççĕ.

Петр Петрович Хусанкай 1907 çулхи январĕн 22-мĕшĕнче Тутар республикинче, Юхмалчă районне кĕрекен Сиктĕрме ялĕнче çуралса ÿснĕ. Унăн ашшĕ-амăшĕ чухăн пулнă. Выçлăх çул ашшĕ вилнĕ. Ку вăхăта аса илсе, поэт çапла çырать: «Лашасăр та, хуçасăр та тăрса юлнăскерсем — аннепе эпир ят çĕрне те акайми пултăмăр: çурмалла актара пуçларăмăр. Хуçалăх тени колхоз самани пуçланиччченех ура çине тăраймарĕ».

Ялти шкултан вĕренсе тухсан, 1923 çулта Хусанкай Хусанти чăваш педагогика техникумне вĕренме кĕнĕ. Вăл, пĕчĕклех литературăна ĕçне юратса пурăннăскер, вун иккĕрех сăвăсем çырма тытăннăскер, техникумра илемлĕ литературăпа тĕплĕрех паллашать, хăйĕн пĕлĕвĕсене ÿстерет, литература журналĕ кăларас ĕçе пысăк хаваслăхпа хутшăнать. 1924 çулта çамрăк поэтăн малтанхи сăввисем «Сунтал» журналта пичетленсе тухаççĕ.

1927 çулта П. П. Хусанкай Хусанти Хĕвелтухăç педагогика институтне кĕрет. Унта 1931 çулччен вĕренет. Институтра чăваш чĕлхине вĕрентекенсенчен пĕри Н. И. Ашмарин профессор пулнă. Çаплă профессор чăваш студенчĕсене тăван чĕлхене ăнланма пулăшнă, чĕлхе пуянлăхĕпе паллаштарнă, чăваш сăвви-юрри виçисем мĕнлерех пулса пырассине каласа панă. Н. И. Ашмарин лекцийĕсем

поэта калама çук пысăк усă панă, унăн ăс-пуçне пуянлатнă, чунне хавхалантарнă.

1931 çулта Хусанкай Мускава куçать, «Коммунар» чăваш хаçачĕн вырăнсене тухса çӳрекен корреспонденчĕ пулса ĕçлет. Хаçат корреспонденчĕ пулни поэта рабочисен, колхозниксен пурнăçĕпе, йăлисемпе лайăхрах паллашма май парать: вăл Горький хулинчи, Магнитогорскри, Донбасри тĕрлĕ фабрикăсенче, заводсенче пулать, шахтерсен пурнăçне сăнать; инçетри чăваш ялĕсене çитсе курать, колхозсем чăмăртанни, колхозсем тавра клас кĕрешĕвĕ çивĕчленсе пыни поэт куçĕ умĕнче пулса иртет.

1941—1945 çулсенче Хусанкай вăрçăра пулнă. Тĕнчене, пуринчен ытла пирĕн Тăван çĕршыва, пысăк сиен кӳнĕ вăрçă поэта амантнă та туя тыттарса хăварнă.

П. Хусанкайăн чăваш литературинчи пысăк тава тивĕçлĕ ĕçĕсене шута илсе, Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн Президиумĕ ăна 1950 çулта чăваш халăх поэчĕн ятне панă. П. П. Хусанкая Чăваш АССР Верховнăй Совечĕн депутатне, республикăри Мир комитечĕн президиум членне суйланă.

П. Хусанкай сăвăсем çырма пĕчĕклех тытăннă. «Тăван чĕлхен вăйĕпе илемне чи малтан мана «Нарспи» туйтарчĕ», тет вăл. «Нарспи» пулас поэтăн çырас кăмăлне аталантарнă, çунат панă: чăваш чĕлхипе ĕлĕкех çавăн пек хăватлă произведени çырма май пулнă пулсан, халĕ мĕншĕн ĕç тухмĕ тесе хăраса тăрас, мĕншĕн çырас мар... Çамрăк поэт, çĕнĕ самана çынни, литературă ĕçне хăюллăн тытăннă.

П. Хусанкайăн чи малтан пичетленнĕ сăвви «Ирĕк тимĕрçе» ятлă (1924). Çак кăштах абстрактлăрах, анчах çирĕп шухăшлă, илемлĕ сăвă пролетарилле революци панă ирĕке, ĕç вăйне мухтать:

Вăйлă кăкăрăм
Çăмăллăн сывлать.
Хăнăхнă аллăм
Пĕрмаях шаккать;
Шаккать те ватать
Асап сăнчăрне,
Çĕнĕрен хывать
Тĕнче никĕсне.
Çӳлерех çĕклен,
Ирĕк мăлатук!
Сана хĕсĕрлен
Урăх чĕрлес çук.

Поэт çулĕ, ĕçĕ-хĕлĕ лайăх пуçланнă, вăйлă шухăшпа, ĕмĕтпе никĕсленнĕ, чун хавалĕ çĕнтерӳ юррипе сĕкленсе пынă. Ку юрра çырнăранпа 30 çул ытла иртрĕ. Çак тапхăр хушшинче пирĕн çĕршыв улăпла утăмсемпе малалла кайрĕ, тĕпренех çĕнелсе улшăнчĕ. Совет çыннисем хăйсем те нумай-нумай улшăнчĕç: кăкăр ĕмекен ачасем çитĕнсе çитрĕç, тĕрлĕ çĕрте ĕçлекен пулчĕç, 1941 çулта пăшал тытса вăрçа кайрĕç, тăшмана çĕнтерсе таврăнчĕç... Халĕ мирлĕ ĕçре пысăк хаваслăхпа ĕçлеççĕ. Поэтăн малтанхи юрри пачах та кивелмерĕ, ун çине кирĕк пĕрчи лармарĕ.

П. Хусанкайăн пуçламăш тапхăрта, 1924—1930 çулсенче, çырнă произведенийĕсем çак поэтăн таланчĕ пысăккине кăтартса пачĕç. Паллах, унăн çавăн чухне çителĕклĕ таран пĕлӳ те, опыт та пулман, çавăнпа вăл тĕрлĕ поэтсенчен вĕренсе пыма тăрăшнă, хăш-пĕр чухне йăнăшсем те тунă, çапах та поэтăн хăйĕн сăн-сăпачĕ, хăйне çеç тивĕçлĕ çемĕсемпе кĕвĕсем вăйлансах пынă. Çапла вара, поэтăн сасси те, вăйĕ те тĕрекленнĕ, майĕпен, анчах шанчăклăн тĕрекленнĕ, пултарулăх сăн-сăпачĕ уçăлса пынă, палăрса çитнĕ.

Константин Ивановпа Тайăр Тимкки пултарулăхне 1905—1907 çулсенчи революци вăй-хăват парса сĕклентернĕ пулсан, чăваш совет поэчĕсене 1917 çулхи пролетарилле революцишĕн, совет йĕркине тĕреклетессишĕн, социализм çĕнтерĕвĕшĕн пынă паттăр кĕрешӳ паттăр вăйпа хавхалантарнă. Çавăн пек поэтсенчен пĕри шăпах Хусанкай пулса тăрать. Унăн произведенийĕсенче революци хăвачĕпе, строительствă пафосĕпе сĕкленнĕ шухăш-кăмăл палăрать, поэт пултарулăхне обществăпа, халăх пурнăçĕпе çыхăнтарать. Поэт çулĕ такăрах пулман, çапах та, тумхахсем урлă пулин те, малаллах илсе пынă. Тумхахсем хăш чухне поэтăн урине кăна мар, чунне те ыраттарнă, тепĕр чухне сассине те урмăштарнă, çапах вăл юрлама пăрахман... Халăх вăйĕ, халăх сасси унăн сассине уçса пынă, янравлăх, тĕреклĕх панă. Чăнах та, кам халăх çине шанать, вăл йăнăшмасть; кам халăхпа пĕрле, вăл вăйлă, кам халăхран вĕренет, вăл ăслă,— ку шухăшăн тĕрĕслĕхне вырăс литературин историйĕ те, чăваш литературин кун-çулĕ те лайăх çирĕплетсе парать.

П. Хусанкайăн малтанхи тапхăрта сырнă произведенийĕсенчен чи палли «Çирĕм улттă» поэмă (1927). Ку поэмăра поэт Баку комиссарĕсен, сирĕм улттă революционерăн паттăрлăхне кăтартса панă. Унта Шаумян, Азизбеков, Джапаридзе тата ытти коммунистсен пархатарлă ĕçĕ-хĕлĕ,

паттăр кĕрешĕвĕ, вĕсем тăван çĕршыва, халăха, партие чунчĕререн парăнни курăнать. Коммунист-комиссарсене Англи палачĕсем персе вĕлернĕ. Вĕсем ĕнтĕ çук. Анчах большевик-комиссарсене ĕç çыннисем манмаççĕ, вĕсен çутă сăнарĕсене чĕрере усраççĕ. Чăваш ĕç çыннисем те, «Çирĕм улттă» поэмăна вуласа, поэт сăмахĕсемпе хăйсен патриотла кăмăлĕсене палăртаççĕ:

Çирĕм улттăн вĕсем, çирĕм улттăн,
Çирĕм ултă герой — сахал мар.
Вĕсен ячĕ пуриншĕн те ылтăн,
Çирĕм улттăн вĕсем, çирĕм улттăн,
Çирĕм ултă чăн-чăн коммунар.

Поэмă теми, тĕрĕссипе каласан, «Ирĕк тимĕрçе» юрăри шухăшсенех сарлакантарах, конкретлăрах каласа парать: вĕсем — ирĕклĕх, патриотизм, паттăрлăх, кĕрешӳ. Баку комиссарĕсем хаяр кĕрешӳре ӳссе çитĕннĕ, тĕрекленнĕ, вĕсем мĕн виличченех пролетарилле революци ĕçĕшĕн, Совет влаçĕшĕн харсăр кĕрешнĕ.

«Çирĕм улттă» поэмăра Англи колонизаторĕсен Кавказпа Вăтам Азири политикине тăрă шыв çине кăларнă, вĕсен агенчĕсен — буржуалла националистсемпе эсерсен тата ытти йăх-яхсен — ирсĕр ĕçĕсене питленĕ.

П. Хусанкай пултарулăхĕ Тăван çĕршыв аталанса, чечекленсе пынă май темă тĕлĕшпе те, шухăш пуянлăхĕ енĕпе те сарăлса, тарăнланса, тĕрекленсе пынă, ют шухăш витĕмĕсенчен тасалса, малалла аталаннă, пуянланнă.

Поэтăн тĕрлĕ вăхăтра çырнă произведенийĕсем уççăнах çакна кăтартса параççĕ: вăл яланах кун-çул уттипе тан утма, çĕннине çитсе пыма, ăнланма, тĕрлĕ произведенисенче сăнласа пама тăрăшнă, вăй çитнĕ таран сăнласа панă.

Граждан вăрçи, выслăх, тĕрлĕ йывăрлăх, çитменлĕх тата ыттисем иртсе кайсан, совет халăхĕ, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, кивĕ заводсене, фабрикăсене юсама, çĕршыва индустрилеме тытăнчĕ, çĕнĕ заводсем, шахтăсем, рудниксем, çĕнĕ чугун çулсем турĕ. Çак ĕçсен сарăмĕпе, çĕршыва малалла чĕнекен шавĕпе хавасланса, П. Хусанкай «Магнит ту» ятлă поэмă çырчĕ. Ку поэмă чаплă Урал историне кĕскен каласа панинчен пуçланса каять. Унтан вара автор совет çыннисем Урал сăнне епле хăвăрт улăштарнине кăтартса парать. Поэмăра эпир пысăк металлурги завочĕ тунине куратпăр. Çав завода тунă çĕрте чăвашсем те ĕçлеççĕ Сăмахран, чăваш ачи Йӳçкăшман Хĕветĕрĕ, ялта ĕлĕк «Хĕвел ансан Хĕветĕр» пек тертленсе ӳснĕскер, ĕç-

лесе пăртак укçа тупас та яла таврăнас ĕмĕтпе завода пырса кĕрет. Заводра вăл рабочисен пурнăçĕпе, шухăш-кăмăлĕпе пурăнма тытăнать. Çапла вара, Хĕветĕр комсомола кĕрет, малта пыракан рабочи пулса тăрать.

«Магнит ту» поэмăра нумай-нумай рабочисен, инженерсен, техниксен, ялтан тухса промышленноç ĕçне хутшăннă çынсен, ют çĕршывран килнĕ специалистсен ĕçне, йăлисене, ĕмĕчĕсене кăтартса панă. Поэмă çĕнĕ завода ĕçе кĕртнипе, малтанхи чугун шăратса кăларнипе, социализмла ĕçĕн çĕнтерĕвĕшĕн строительсем чун-чĕререн савăннипе вĕçленет.

Поэтшăн ку темă йывăр темă пулнă. Çакна шута илсе, автор поэмăн пуçламăшĕнчех хăй шикленнине, именнине каласа парать:

Эп сыртăм та çак
    сарлака săввăма
Иментĕм:
    илейрĕ-ши вăл
        çавăрса тĕп темă—
Сисĕнет-ши унта
Мĕльюнсен вăй-халĕ?

Поэт, «Магнит ту» поэмине тата ун чухне çырнă чылай сăввисене аса илсе, 1948 çулта: вĕсем «халь нумайăшĕ кивелнĕ, савăнпа вĕсене эпĕ ку кĕнекене кĕртмерĕм», тесе çырнă (сăмах «Сăвăсемпе поэмăсем» кĕнеке çинчен пырать. Чăвашиздат, 1948 ç.).

Ялта коллективизаци ĕçĕ вăйлăн пынă вăхăтра Хусанкай ял пурнăçĕ çинчен «Çĕр йĕркелӳ» ятлă поэмă çырать. Анчах ку поэмă пирĕн литературăра пысăк йĕр хăвараймарĕ. Ăна автор васкарах çырнă, çавăнпа пулас ку поэмăра ялта сĕнни киввине çĕнтерсе пынине, вĕсем хушшинчи кĕрешĕве ĕненмелле кăтартса парайман. «Çĕр йĕркелӳ» поэмăна автор пĕрре çеç пичетлесе кăларчĕ, ăна вăл урăх тӳрлетмерĕ, ун синчен урăх шарламарĕ те.

П. Хусанкайăн, «Çĕр йĕркелӳ» поэмăсăр пуçне, ял пурнăçĕ çинчен çырнă произведенисем тата та пур. Сăмахран, кунта çак сăвăсене асăнма пулать: «Ватă колхозник юрри», «Инспектор», «Сантăр — çĕлĕк çавракан». «Тантăшсем», «Элтиван пичче». «Автанран автанччен», «Çулмахи талăк», «Тури Вылта туй сикет» тата ыттисем те. Вĕсенче колхозниксен савăнăçне, ĕмĕт-шухăшне кăтартса панă. Вĕсене вуласан, пирĕн ума колхозниксен сăнĕсем тухса тăраççĕ. Акă, сăмахран, Элтиван старик сăнарĕ:

Суркунне, ҫӗршыв типсессӗн,
Элтиван пичче вара,
Тырӑсен хакне пӗлесшӗн,
Ҫавӑнатчӗ хир тавра.
Тем сарлакӑш, пӗр йӑрансӑр
Ешӗл уҫӑм пуссипе
Вӑл сӑретчӗ васкамасӑр,
Танлӑн, ҫӗрӗн хуҫи пек.

П. Хусанкай ял пурнӑҫӗ ҫинчен, колхозниксен тӗрлӗ ӗҫӗ-хӗлӗ. ӗмӗчӗ ҫинчен, савӑнӑсӗ, тӗрлӗ уявӗ, ӗҫки-ҫики ҫинчен хӑйӗн ытти произведенийӗсенче те нумай ҫырнӑ.

Тӑван ҫӗршывӑн Аслӑ вӑрҫи тапхӑрӗнче ҫырнӑ произведенисенчен чи паллӑ «Таня» поэмӑ (1942 ҫ., апрель). Ку вӑл — лирикӑллӑ поэмӑ. Унта вырӑс халӑх хӗрӗн Зоя Космодемьянская комсомолкӑн ӗмӗр манӑҫа тухми паттӑр ӗҫне кӑтартса панӑ. Совет хӗрӗн пӗтӗм тӗнчене тӗлӗнтернӗ хӑюлӑхӗпе паттӑрлӑхне поэт совет халӑхне тивӗҫлӗ патриотизмӑн, героизмӑн, ҫирӗплӗхӗн уйрӑлми пайӗ пек сӑнласа кӑтартать. Ку вӑл пур енчен те тӗрӗс: совет халӑхӗ — ҫавӑн пек паттӑр халӑх, вӑл вӑрҫӑра та, мирлӗ ӗҫре те шикленми кӗрешет.

Вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчех, 1941—1942 ҫулсенче, Зоя Космодемьянская ҫинчен П. Лидов очерк ҫырнӑччӗ, унтан вырӑс поэтесси Маргарита Алигер «Зоя» ятлӑ поэмӑ ҫырчӗ, каярахпа тӗрӗксен паллӑ поэчӗ Назым Хикмет комсомолкӑ-герой ӗҫне мухтакан поэмӑ пичетлесе кӑларчӗ (ку поэмӑ та «Зоя» ятлӑ; ӑна чӑвашла та куҫарнӑ). Вырӑс, тӗрӗк, чӑваш поэчӗсен произведенийӗсен геройӗ — Зоя Космодемьянская: ун сӑнарӗнче тӑшмана парӑнман халӑх ӗсӗсем курӑнаҫҫӗ. Поэмӑсене кашни поэт хӑй майлӑ ҫырнӑ. Чӑваш поэчӗ вырӑс хӗрӗн паттӑрлӑхне хӑй пек кӑтартса панӑ, хӑй пек мухтанӑ.

«Таня» поэмӑн пуҫламӑшӗнче Хусанкай халӑх юмаххалапӗнчен илнӗ тӗслӗхсемпе усӑ курать. Унта вӑл, ӗлӗкавал Вупӑрпа Хӗвел хушшинче пынӑ вӑрҫӑ ҫинчен ҫырса, вулакана малтанах пӗр сирӗп шухӑш парать: Совет ҫӗршывне хирӗҫ фашистла Германи пуҫланӑ вӑрҫӑ вӑл — Тӗттӗмпе Ҫутӑ хушшинчи, Вупӑрпа Хӗвел хушшинчи вӑрҫӑ. Аслӑ вӑрҫӑра вырӑс хӗрӗ Зоя ҫутӑ Хӗвел хӗрӗ пулса кӗрешет. Хӗвелпи хӑйӗн амӑшӗнчен тӳсӗмлӗхпе паттӑрлӑх ыйтать:

«Эс аннем те ман, эс аттем те ман,
Ыо Хӗвелӗмҫӗм ҫуттинче тытан!
Тӳсӗм пар мана хурлӑха чӑтма,
Ан кулайтӑрччӗ курайман тӑшман...»

Хĕвелпи ĕмĕчĕ, халăх ĕмĕчĕ, çакăн пек: Тĕттĕм пĕтмеллех, Хĕвел çĕнмеллех! Совет халăхĕ, унăн çарĕ фашистла Германие тĕп турĕ. Эпир каллех çутă пурнăçпа пурăнма тытăнтăмăр. Пирĕн умра — Хĕвел! Анчах капитализм тĕнчи — Тĕттĕмлĕх — çаплах-ха Çутта хирĕç тапаçланать: империализмла реакци, вăрçă вутне чĕртсе яма, кайран вара халăхсене ирсĕр тĕттĕм ăшне путарма ĕмĕтленсе, тем те пĕр хăтланать.

«Таня» поэмă вулакансене сыхă тăма, паттăр пулма, ирсĕр тăшмана хирĕç тăра типĕ тытма, кĕрешĕве хатĕр тăма чĕнет. «Таня» поэмă — чуна хумхантаракан таса шухăшлă произведени. Ăна автор чун-чĕререн тăрăшса, хăйĕн юратнă ĕçне пысăк вăй хурса çырнă. Çавăнпа та вулакансем «Таня» поэмăна юратаççĕ, пысăка хурса хаклаççĕ.

Совет халăхĕн вăрçă вăхăтĕнчи паттăрлăхĕ — фронтри тата тылри паттăрлăхĕ, вăрçă хыççăнхи ĕçĕ-хĕлĕ Хусанкая çĕнĕ произведенисем çырма хавхалантарнă. Ĕçчен поэт темиçе çул хушши «Аптраман тавраш» ятлă поэмă çырчĕ (ку поэмăн пĕрремĕш кĕнеки 1946 çулта пичетленсе тухнăччĕ.

Поэмăра пĕр чăваш йăхĕн — Аптрамансен паттăр йăхĕн — темиçе ĕмĕрти пурнăçĕпе ĕçне-хĕлне кăтартса панă. Поэмăн пуçламăшĕнче вулакансем чăваш колхозникĕ Аптраман Энтрийĕ вырăс рабочийĕпе Виктор Басовпа салтакра туслă пурăннине кураççĕ. Вĕсем фронтра пĕр-пĕрне пулăшаççĕ, амансан та, тем пек йывăр пулсан та, пĕр-пĕрне пăрахмаççĕ. Вĕсене пĕр шухăш хавхалантарать: Тăван çĕршыв — анне, ăна тăшмансенчен сыхламалла; Тăван çĕршыв пулмасан — ирĕк çыннăн пурнăçĕ те, чысĕ те пулма пултараймасть.

Тăван çĕршыв чысне ирсĕр тăшмансенчен хĕç-пăшалпа сыхлас йăла пирĕн çĕршывра ăруран ăрăва пынă. Российăри ытти халăхсемпе пĕрле чăвашсем те тĕрлĕ тăшмансене хирĕç сахал мар кĕрешнĕ. Сакă вăл Аптрамансен пурнăçĕнчен те лайăх курăнать. Энтрин мăн аслашшĕ Унисĕм салтакра çирĕм пилĕк çул çӳренĕ. Унисĕм несĕлĕнчен темиçе салтак тухнă, вĕсем те вăрçăсенче нумай юн тăкнă:

> Тĕрĕкпе те вăрçма тивнĕ,
> Яппунпа та вĕсене.
> Энтри ашшĕ хăй те вигнĕ
> Польшăн, нимĕçсен çĕрне.

Энтри ашшĕ, Илле хресчен, граждан вăрçинче пулнă, революци çĕнтерĕвĕсене хӳтĕленĕ. Совет саманинчен пуç-

ласа Аптраман тавраш ҫӗнӗ пурнӑҫпа пурӑнма тытӑннӑ. Ӗлӗк Аптраман йӑхӗнчи салтаксем хӑйсем мӗншӗн вӑрҫӑсенче ҫӳренине ӑнланса илеймен, халӗ вӗсем хӑйсем кӗрешсе илнӗ, тӗреклетнӗ ҫӗнӗ пурнӑҫа, совет ҫӗршывне хӳтӗлеҫҫӗ. Халӗ Совет Союзӗнчи халӑхсем пӗр туслӑ йышра пурӑнаҫҫӗ, вӗсен ӗмӗчӗ, тӗллевӗ — Тӑван ҫӗршыва пуянран та пуян, тӗреклӗрен те тӗреклӗ тӑвасси, коммунизм туса ҫитересси.

П. Хусанкай пултарулӑхӗнче халӑхсен туслӑхӗн идейи витӗр курӑнса тӑрать. Халӑхсен туслӑхне поэт темиҫе произведенире тӗрлӗ майпа каласа парать. Акӑ, тӗслӗхрен, 1930 ҫулта ҫырнӑ «Малаллӑх маршӗ» ҫакӑн пек йӗркесемпе пуҫланать:

Чӑваш-и, вырӑс-и, тутар-и,
Мӗн пурӗ пӗр ҫӑлтӑр айне!

«Аслӑ ҫулпа» ятлӑ сӑвӑра (1950) поэт чӑвашпа вырӑс халӑхӗсен туслӑхӗ ӗмӗртен ӗмӗре чӑмӑртанса пыни ҫинчен ҫырать:

Ак тӑвата ҫӗр ҫул аслӑ халӑх
Хӳтӗлет пире хӑй шӑллӗ пек.
Кӗрешӳ, ҫӗнтерӳ, терт, хаваслӑх—
Пурте унӑн пӗрле пирӗнпе.

...Сывӑ пултӑр ҫӗнелнӗ Российӑ!
Аслӑ туслӑхӑн сурчӗ — Мускав!
Варкӑшайтӑр Чӑваш ҫӗрӗ ҫийӗн
Пур йӑхне пӗрлештернӗ ялав!

П. Хусанкай хӑйӗн «Тӑван ҫӗршыв» ятлӑ поэминче (1950), Совет Союзӗнче тӑван халӑхсене, республикӑсене ырӑ кӑмӑлпа хисеплесе, юратса, совет халӑхӗсен туслӑхӗ ҫултан ҫул тӗрекленсе, илемленсе пынине кӑтартса парать.

Ҫак патриотла сӑвӑсемпе поэмӑсем — пурте тенӗ пекех гражданла сӑвӑсемпе поэмӑсем: пӗрисенче мӗнле те пулин факта истори енчен ҫутатса ҫырнӑ, теприсенче хальхи пурнӑҫри факта илнӗ те, йӗрӗ ҫухаличчен тенӗ пек, ҫийӗнчех ҫырнӑ. Сӑмахран, 1930 ҫулта Хусанкай «Итле, Германи!» ятлӑ сӑвӑ ҫырнӑччӗ. Унта вӑл Германин Мускаври посольстви Чӑвашпа Монголи Республикисен представителӗсене, вӑрҫа хирӗҫ пыракансен конференцине кайма виза памасӑр, Германие пыма чарнине питленӗ.

Германи — Генрих Гейне ҫӗрӗ-шывӗ,
Пӗлтер мана: илемсӗр туйӑнчим
Чӑвашпала монголӑн хӗрӗ-ывӑлӗ?..

...Çĕр чăмăрĕ икке пайланнă чух
Çак çылăхна аса илĕн эс, Германи.
«Каçару çук сана, каçару çук!»—
Тесе тĕнче тăрăх ылхав янăранĕ.

Ку сăвва çырнăранпа 26 çул иртнĕ хыççăн та камсем монголпа чăваш представителĕсене визă паманнине ĕç çыннисем манмаççĕ: Германи империалисчĕсем тĕнчери халăхсене пĕр-пĕринчен сивĕтме, пĕр-пĕринпе хирĕçтерме, вăрçтарма тăрăшнă. Халĕ çĕр чăмăрне икке пайлакан чикĕ Германире выртать: Генрих Гейне Германийĕ прогресшăн, демократишĕн, социализмшăн, анчах унта, çав чиккĕн леш енче, тепĕр Германи пур,— унта вăрçă хатĕрлекенсем тар личкисем хушшинче вутпа выляççĕ.

Хусанкай — поэзи ăсти, унăн чĕлхе çӳпçи тарăн, сăмахĕсем чĕлхе вĕçне килсех тăраççĕ. Акă вулăр-ха халăхсен туслăхне мухтакан «Сăпка юррине»:

Сĕм вăрманĕ каш та каш,
Сулхăн çилĕ ваш та ваш,
Эс ан çуйăх, ан çухраш,
Çывăр, пĕчĕкçĕ чăваш!
Урупа ан тапкалаш,
Аннӳпе эс ан тавлаш,
Çывăр, Аптраман тавраш!
...Вырăспа та тăванлаш,
Тутарпа та эс туслаш,
Пурте — пирĕн хурăнташ,
Çывăр, пĕчĕкçĕ чăваш!
Малалла утсан — малаш,
Каялла юлсан — каяш,
Чăн çултан эс ан аташ.
Çывăр, Аптраман тавраш!

П. Хусанкай, чăваш халăхĕ ытти мĕн пур халăхсемпе яланах туслă пурăннине, унăн нихăш халăхпа та ютшăнмашкăн нимле сăлтав та çуккине асра тытса, халăхсен туслăхне хӳхĕм ялава мухтанă пек мухтать:

Кам пулсан та — сухаçă, шахтер е салтак,
Украинец, чăваш, армянин-и—
Манăн чыс та, мухтав та малтан вăл ак çак:
Эп — Советлă Союз гражданинĕ!

П. Хусанкай чĕлхе тути-масине лайăх туять, сăвă виçине çирĕп тытса пырать: вăл хăш-пĕр поэтсем пек сăввăн тĕрлĕ виçисем хушшинче «çĕтсе каймасть», сăввăн силлабикă виçипе те, тоникă виçипе те ăнăçлă усă курать; вăл А. С. Пушкинăн произведенийĕсене теаслă поэт хăй мĕнле виçепе çырнă, чăвашла та çав виçепех куçарать;

В. Маяковский, А. Твардовский, Н. Тихонов сăввисене те çавăн пекех куçарса парать. А. С. Пушкин произведенийĕсене куçарнă чухне пирĕн поэт пĕр паха шухăша асра тытса ĕçлет: Пушкинăн ытарайми илемлĕ сăвви чăвашла вулакан-шăн та, вырăс çыннине илтĕннĕ пекех, лайăх янăраса илтĕнтĕр, аслă поэтăн гениллĕ шухăш-кăмăлĕ чăваш халăхне те тăван сăмах пекех çывăх пултăр.

П. Хусанкай вырăсларан А. С. Пушкинăн «Евгений Онегин» сăвăллă романне, «Полтава» поэмине тата ытти произведенийĕсене ăнăçлă куçарнă, çавăн пекех А. Грибоедовăн «Ăса пула инкек» комедине, В. В. Маяковскин «В. И. Ленин» поэмине те лайăх куçарнă. Çакă вăл чăваш чĕлхин пуянлăхне палăртнисĕр пуçне поэтăн талантне те уççăнах кăтартса парать. Чăваш чĕлхи — калаçу чĕлхи кăна мар, чăваш чĕлхи — поэзи чĕлхи те, наукă чĕлхи те. Вăл — чăннипех те хăватлă илемлĕ чĕлхе!

П. Хусанкай чĕлхе, сăмах вăйĕ çинчен «Чĕре юрри» поэмăра, кĕскен çеç пулин те, çакăн пек калаçать:

Эп сăмах хăватне ĕненетĕп,
Эп пĕлеп: сăмахпа этеме
Амантма та пулать, ӳкерме те,
Ӳкнине те пулать çĕклеме...

Хусанкай хăш чухне хăйĕн сăввисене те тӳрех вырăсла çырать. Тепĕр чухне хăйĕн сăввисене хăех куçарать. Хусанкай «Нарспи» поэмăна, Çеçпĕл Мишши, С. Элкер, Н. Шелепи, Я. Ухсай тата ыттисен сăввисене вырăсла куçарнă. Ку вăл Çеçпĕл Мишши традицийĕ: вăл чăвашла та, вырăсла та ăста çырнă, ыттисене те çавăн пек ĕçлеме вĕрентнĕ.

П. Хусанкайăн уйрăм кĕнекисене вырăсла куçарнă. Вĕсем — «Дружба» (1950), «Поют дубравы» (1953), «Дом в Горках» (1955). Унăн произведенийĕсене, вырăсла кăларнисĕр пуçне, украинă, тутар, латыш, грузин, пушкăрт, мари, мадьяр чĕлхисене куçарнă.

Маларахра эпир Хусанкай сăвăсем çырма К. В. Ивановран вĕреннĕ, терĕмĕр. Тĕрĕсрех каласан, вăл тата Çеçпĕл Мишшинчен те вĕреннĕ, халĕ те сав паллă поэтсенчен вĕренет. Хусанкай пирĕн поэзире К. Ивановăн, Çеçпĕл Мишшин паха традицийĕсене пуянлатса малалла илсе пырать. Хăшĕсем вăл «Çеçпĕл шкулĕн» çул-йĕрне «малалла аталантарать» (е аталантаракансенчен пĕри), теççĕ. «Чăваш поэзийĕнче нумай вăхăт хушши пынă тавлашура Çеçпĕлĕн тоникăлла шкулĕ çĕнтерчĕ-çĕнтерчех», тет П. Хусан-

кай хăйĕн пĕр статйинче («Ялав», 8-мĕш №, 1954 ç.). «Çеçпĕл шкулĕ» е «тоникăллă шкул» тени тĕрĕс-и, тĕрĕс мар-и (сăмах май вулакана çакна асăрхаттарар: чăваш халăх поэзийĕнче тоникăллă виçе пуррине В. Сбоев XIX ĕмĕрĕн 60-мĕш çулĕсенчех кăтартса панă),— эпир кунта ун пирки каласшăн мар. Эпир çакна çеç палăртасшăн: чăваш поэзийĕнче тоникăллă сăввăн виçи аталанса пыни пысăк та прогрессивлă ĕç, вăл пирĕн поэзин пуласлăхĕ мĕн тери пысăккине кăтартса парать. Анчах чăваш поэзишĕн халĕ силлабикă виçи те, тоникă виçи те пĕр пекех тăван, пĕр пекех хаклă: чăвашла икĕ виçипе те чаплă произведенисем çырма пулать. Еç яланах ăсталăхран, поэта хавхалантарса тăракан шухăшсенчен килет. Хусанкая илес пулсан, вăл икĕ виçипе те çăмăл çырать,— поэзи кĕслин уççипе ăста усă курать.

П. Хусанкай — чун-чĕрине литературăна парса ĕçлекен поэт-лирик. Юлашки вăхăтра вăл тарăн шухăшлă, философиллĕ сăвăсем чылай çырчĕ. Ку сăвăсенче те унăн ăсталăхĕ лайăх палăрса тăрать. Хусанкай пултарулăхĕн ӳсĕмĕсем социализмлă реализм вăйне кăтартса параççĕ. Социализмлă реализм меслечĕпе ĕçлесе пирĕн литературă çӳллĕ шая çĕкленчĕ, вăй-хăват илчĕ, тĕрекленчĕ.

П. Хусанкая чăваш ĕç çыннисем юратаççĕ, хисеплеççĕ. Вĕсем унăн нумай-нумай юрри-сăввисенче хăйсен шухăшкăмăлне тупаççĕ. Вĕсем халăх поэчĕ малашне тата та паха произведенисем çырасса, парти çул-йĕрне çирĕп тытса пырасса чун-чĕререн шанса тăраççĕ, ăнăçлă ĕçлеме ăна ырлăхсывлăх сунаççĕ.

Поэт хăйĕн вăй-халне шанса, пуласлăха ĕненсе ĕçлет. Тăван халăха вăл çакăн пек сăмах панă:

Акапуçĕ тытса хăпаланнă
Аллăма пĕтĕм халăх çинче
Парти хĕç пек перо шанса панă,
Эп пăрахмăп ăна виличчен...

*1957 çулхи январь*

## Поэзи пулсан...

### (П. Хусанкайăн «Тилли юррисем» тата «Кун-çул тӳпинчен» кĕнекисене вуланă май килнĕ шухăшсем)

Чăваш халăх поэчĕн Петĕр Хусанкайăн юлашки вăхăтра (1961—1962 çç.) пичетленсе тухнă икĕ кĕнеки пăхма питех те пĕчĕккĕ, анчах, пĕчĕкçĕ пулин те, паха кĕнекесем

шутне кĕреççĕ. Пĕр кĕнекине, «Тилли юррисене», поэт 1933—1940 çулсенче, теприне, «Кун-çул тӳпинчен» ятлине, 1953—1957 çулсенче çырнă.

Эпир хамăр статьяна, хронологи йĕркине асра тытса, пĕрремĕш кĕнекерен пуçлатпăр. Çав вăхăтрах, 1933—1940 çулсем хыççăн поэтăн шухăшĕсемпе ăнланăвĕсем чылай çӳллĕ пусăма çĕкленнине шута илсе, «Тилли юррисем» çине иккĕмĕш кĕнеке «тӳпинчен» пăхатпăр. Эстетика ыйтăвĕсене тĕпе хурса пăхсан, иккĕмĕш кĕнеке тӳпи — вăл «Поэзи пулсан...» сăвă. Унпа юнашар тăраканни —«Кун-çул тӳпинчен» ятлă сăвă. Иккĕшĕ те тарăн шухăшлă, илемлĕ произведенисем.

...«Тилли юррисене» вулатăн та савăнса çапла калатăн: ку юрăсенче — тăван халăх юрри-сăввисен тахçантанпа пухăнса пынă илемĕ, халăх кăмăлĕ, ăс-хакăлĕ, чăваш поэзийĕн хăйне евĕрлĕхĕ, вăйĕ, поэт ăсталăхĕ, тетĕн, вара ху калана сăмахсене çирĕплетсе пама, сăлтавлама, ăнлантарма тытăнатăн. Чăваш халăх юррисем — паян е ĕнер пуçланса кайнă юрăсем мар. Вĕсем халăхпа пĕрле, унăн пултарулăхĕ ӳснĕ май çуралнă. Тахçанхи саманасене мар, историллĕ ĕмĕрсене илсе пăхсан, çакă курăнать: чăваш çынни уя суха тума, тырă акма кайнă-и, улăха утă çулма-и, вăрмана йывăç касма-и, вăл, йывăр ĕçне çăмăллатас тесе, юрă юрланă; ĕç хыççăн, пушă вăхăтсенче, тăванĕсемпе, юлташ-тусĕсемпе уявсенче, ĕçкĕ-çикĕсенче пулнă-и,— ку чухне те хăйĕн юратнă юррисене юрланă. Чăваш хĕрарăмĕсем, ĕçре арçынсенчен юлмасăр (тепĕр чухне ирттерсе те) ĕçленĕскерсем, уявсенче те «шăпчăк чĕпписем пек шăппăн» ларман,—юрланă та ташланă. Чăваш хĕр-упраçĕсем тата хĕллехи улахсенче мĕн тĕслĕ юрă юрламан-ши? Ку çеç те мар-ха. Вĕсем тата мĕнле юрăсем çĕнĕрен хывман-ши? Шăпăрçăсемпе кĕслеçĕсем мĕнле кĕвĕ, мĕнле çемĕ шутласа кăларман-ши?.. Халăх юррисем сыпăкран сыпăка, ĕмĕртен ĕмĕре куçса, якалса, илемленсе пынă, пирĕн вăхăта çитнĕ.

Çав юрăсем тăрăх халăх шухăш-кăмăлне, ăс-хакăлне пĕлме пулать. Вĕсем халăх тĕнчене, пурнăçа, ĕçпе кĕрешĕве, малашлăха, туслăха, юлташлăха, хитрепе усала мĕнле ăнланнине кăтартса пăраççĕ.

«Тилли юррисем» кĕнеке умсăмахĕнче Илпек Микулайĕ: «Юрă вăл халăх чĕринчи куçа курăнми хăват», тет. Юрăсенче, чăннипех те, куçа курăнми хăват пур. Акă, чăвашсем кĕпер хывма тухнă, тейĕпĕр. Сăвай çапаççĕ. Пурте ывăнса çитнĕ. Сăвай юррине юрлаççĕ те, вĕсен

вайĕ «хутшăнать»,— хул какĕсем, ал тупанĕсем ыратни те сисĕнмест! Кам пулăшрĕ-ха сăвайçăсене? Мĕнле хăват? Юрă юррăн куçа курăнми хăвачĕ!

Çарсем, похода-мĕне кайсан, инçе çула юрăпа кĕскетнĕ. Юрă сăрт-ту, шыв-шур урлă каçма вăй панă. Салтаксен урисене çăмăллатнă. Юрă хаяр çапăçусенче тăшмана çĕнтерме пулăшнă...

«Тилли юррисене» вуласан, куç умне чăваш чĕлхин хăвачĕ тухса тăрать. И. Я. Яковлев чăваш халăхĕ «хăй чĕлхинче çĕр пин сăмах усрать» тенĕ. Вĕсенчен нумайăшĕ халăх юррисемпе çуралнă, халăх юррисенче пурăнаççĕ.

Чăваш сăмахлăхĕн йышĕнче «философсем» пуçарса янă сăмахсемпе сăмах çаврăнăшĕсем те пайтах. («Философсем» тенĕрен, çакна хăш-пĕрисем вĕçкĕн шухăш вырăнне хума та пăхрĕç. «Философсем» тесе кунта халăх ăслăлăхне пуянлатнă çынсене калатпăр. Философсем пек ăслă çынсем пирки сăмах пырать пулин те, çакна палăртас килет: халăх ăслăлăхĕ, паллах, наукăпа пĕр тан пулма пултараймасть). Йĕркеллĕ ашшĕ-амăшĕ çуратнă йĕркеллĕ чăваш нихçан та ăсран тайлăк пулман: çавăн пек чăвашсем пурнăçпа тĕнче тытăмне тавçăрса илме, шухăш шухăшлама, тепĕр чухне тавлашма та, хирĕç тавăрса калама та, тăшмана сăмахпа çапса хуçма та пултарнă. (Чăваш «философĕсен» ăслăлăхĕсене ку вăхăта çитсе те пухса йĕркелекенсем тупăнмарĕç-ха, чăваш халăх философине тĕпчесе çыракансем те курăнмаççĕ-ха).

«Тилли юррисем» çинчен сăмах пуçласа янă май тата çакна каламалла: чăваш халăх пултарулăхĕ юрă-сăвăсемпе питех те пуян. Вĕсенче куçа пăвакан илем те, тарăн шухăш та пур. Анчах вĕсене тупма, çырса илсе, чун-чĕре, ăс-хакăл витĕр кăларма пĕлес пулать. Çыраканăн чĕри хавшак, ăсĕ кĕтĕк пулсан, вăл ырăпа усала уйăрса илеймест пулсан,— ун пек юрăсене вăл тупаймасть, илемне туйса илеймест. Юрлаканĕ те, çырса илекенĕ те Тилли пек пулмалла, çавăн чухне тин юрăсен вăйĕ, илемĕ, кĕрнекĕ упранса юлĕ, халăх патне тепĕр хут çитĕ.

«Тилли старик»,— тет Илпек Микулайĕ кĕнеке умсăмахĕнче,— вăл Петĕр Хусанкайăн мăн аслашшĕ. Хусанкай çуралса ӳснĕ Сиктĕрме таврашĕнче Тилли старик юррисене ват çынсем халь те пулин нумайăшĕ ас тăваççĕ, ачисене, мăнукĕсене юрла-юрла параççĕ... Юрăсене Петĕр Хусанкай май килнĕ чухлĕ илемлетнĕ пуль, тĕллĕн-паллăн хушнă та пуль... Сăвăç çав юрăсене ĕнчĕ суйланă пек

халăхран пĕрчĕн-пĕрчĕн суйласа илет те вĕсене поэзи янравлă майĕпе шĕкĕлчесе тăван халăха каялла тавăрса парать», тет.

Илпек сăмахĕсемпе килĕшĕпĕр те тата çакна асăрхаттарăпăр: «Тилли юррисенче» — поэт ăсталăхĕ, вĕсенче — чăнчăн поэзи. Çакна калана май эпир вулакансене Хусанкайăн «Кун-çул тӳпинчен» ятлă кĕнекинче пичетленнĕ «Поэзи пулсан...» сăввине аса илтерĕпĕр:

Поэзи пулсан — ăш хыпса çуннă чух
Выртса ĕçмелли шыв пек пултăр;
Кашни сăвăпа, савнипе чунпа чун
Калаçнă пекех, кăмăл тултăр.

Поэзи пулсан — ĕçлесе ывăнса
Сӳсленнĕ ӳте паттăрлаттăр;
Хула-çурăма мунчара çăвăнса
Тасатнăн, çынна вăл тасаттăр.

Поэзи пулсан — тӳшекпе-минтерпе
Выртса каçхине эс вулуçăн
Çĕклетĕр сана хăйвĕçен кавир пек,
Çил çеç вăркăшса вĕртĕр уççăн.

Поэзи пулсан — журналсем ун анне
Хĕссе лартиччен вăл пĕр тапхăр
Пĕçерттĕр наборщик аллин тупанне,
Чунна çĕнĕ çулăм хыптартăр.

Поэзи пулсан — вăл мантартăр ĕçке;
Сăвва сыпкăмшар ас тивсессĕн,
Калатăр этем: «Ку тата тутлă-çке!
Çакна тахçанах ман ĕçес-мĕн».

Куратăр-и, поэзи пулсан — вăл мĕн тери хăватлă вăй пулмалла! Тĕнчери аслă поэтсен пултарулăхне, вĕсем поэзи çинчен вĕрентнине илсе пăхсан, эпир çакна куратпăр: вĕсем поэзи хăйĕн хăватне пула пурăнни, манăçа тухманни, халăха пулăшни çинчен калана. Ахальтен мар ĕнтĕ А. С. Пушкин хăйĕн юлашки сăввисенчен пĕринче халăх унăн ырă туйăмĕсене лирăпа хускатса вăратнăшăн ăна манмасса шанса çырнă («И долго буду тем любезен я народу, что чувства добрые я лирой пробуждал» тенĕ вăл).

Поэзи пирки калана шухăша вĕçлес тесе, Хусанкай сăввинчен тепĕр йĕрке илĕпĕр:

Поэзи — шырав, кĕрешӳ, ăмăрту,
Ача йăл кулли, гени тарĕ,
Им-çам, юрату, кӳлешӳ, аркату,
Тĕнчемĕр нуши, пархатарĕ.

«Тилли юррисене», «поэзи пулсан...» тесе пăхсан — эпир ним иккĕленмесĕрех: вĕсем чăн-чăн поэзи шайĕнче тăрăççĕ теме пултаратпăр. 1933—1940 çулсенче çырнăскерсем вĕсем чăваш поэзийĕн паха тĕслĕхĕсем шутне кĕреççĕ, поэтăн таланчĕ тăван халăх ăс-хакăлĕпе, чун-чĕрипе çывăхран та çывăх тăнине кăтартса параççĕ.

Пĕлетпĕр ĕнтĕ, Тилли чăвашра пурăннă, нумай сăвă-юрă хывнă, вĕсене халăх хушшине хăварнă. Ĕненетпĕр. Анчах халĕ вăл тахçан пурăннă çын мар, вăл ĕнтĕ поэт пултарулăхне пула литературăри сăнар пулса тăчĕ, тепĕр хут пурăнма тытăнчĕ. Ĕлĕкхи Тилли — çын, Тилли-юрăçă çуралнă, пурăннă, вилнĕ пулсан, Тилли — сăнар вилмĕ, яланах чăвашсемпе пурăнĕ. «Тилли юррисене» урăх чĕлхесене куçарсан, вĕсем вырăссем, тутарсем... патне çитĕç. Тилли пурăнĕ! Чăваш юррисенче, ăслă сăмахĕсенче пурăнĕ, çĕнĕ ăрусене иртнĕ саманасем çинчен каласа çӳрĕ, чăваш халăх пултарулăхĕн, поэзийĕн, чĕлхин вăйĕ çинчен систерсе тăрĕ, чĕресене, ăссене хускатса пурăнĕ.

«Тилли юррисем» кĕнекери юрăсене юрлакан уйрăм çын чăваш хушшинче чăнах та пулнă-и е пулман-и, поэт вĕсене Тиллирен çырса илнĕ-и е çырса илмен-и, çапах та, вĕсем — халăх юррисем çеç мар, поэт произведенийĕсем те, вĕсенче, татах калăпăр, Хусанкай ăсталăхĕ, пултарулăхĕ, таланчĕ сисĕнет.

Эппин, Хусанкайăн çак кĕнекери ăсталăхне палăртас тесе, «Тилли юррисене», вĕсене юрланă çын сăнарне кĕскен те пулин пăхса тухар-ха.

Чăнах та, мĕнлерех-ха Тилли сăнарĕ? Мĕнлерех-ха унăн юррисем?

* * *

Статья пуçламăшĕнче эпĕр чăваш «философийĕ» пирки ахальтен каламарăмăр: чăваш халăх ăс-тăнĕнче ĕлĕкех философла шухăшсем пулнă, çав шухăшсене каласа пама халăх хăш-пĕр сăмахсемпе терминсене те шухăшласа кăларнă (аслă шкулсенче вĕреннĕ, академисенче ĕçленĕ çынсем пулманни тата çав «философи» чăн-чăн наукă çӳллĕшĕ, «философи тăвĕ» тӳпине хăпарса çитейменни халăхăн философла шухăш пулманнине пачах та пĕлтермест).

Акă, илер-ха «Тилли юррисем» кĕнекери «Мехел тени мĕн тени?» сăввах. Вăл чăннипех те философилле сăвă: унта, çут тĕнчен тĕрлĕ пулăмĕсене (явленийĕсене) илсе,

автор философийĕн пĕр ăнланăвĕн тупсăмне уçса панă, ăнлантарнă.

Мехел тени мĕскер тени пулать?
Ыйтсамăр çумăр пĕлĕчĕсенчен:
Мĕн-ма вĕсем кăвак уярпала
Юхаççĕ çăвăнмасăр тахçанччен?

Мехел çитмен.

Мĕн-ши вăл «мехел»? Мĕне пĕлтерет-ши?

Н. И. Ашмарин профессор «мехел» сăмаха çапларах ăнлантарать: «Мехел çитмесĕр (вăхăт çитмесĕр) ăçта каян? теççĕ». Тепĕр тĕслĕх: «Тĕнченĕн мехелĕ çапла куран: пĕри пĕтнĕ çĕре тепри пулса тăрать» (вырăсла: «ко времени гибели одного возникает другое»).

Хăш-пĕр сăмах çаврăнăвĕнче «мехел» вырăнне çак сăмахсем вырăнлă пулма пултараççĕ: май (возможность), вăхăт (время), вăй (сила), пултару (способность). «Мехел» сăмаха философла шухăшлакан çын шухăшласа кăларнă пулмалла. Хусанкай сăввине вулакан çын, чăваш философине тĕпчесе вĕренекен çын пулас пулсан, мĕн тери савăннă пулĕччĕ, савăннипе:— Эврика! Шыраннине тупрăм, тупрăм! Хисеплĕх пахалăха куçнине кăтартакан тĕслĕх...— тесе кăшкăрса янă пулĕччĕ (чăвашла кирлĕ таран ăнланайман вырăссене мар, философие университетра вĕреннĕ чăвашсене «хисеплĕх пахалăха куçни» мĕне пĕлтернине вырăсла куçарса парăпăр: вăл «переход количества в качество» тенине пĕлтерет! К. Маркс çапла калать: «...Чисто количественные изменения на известной ступени переходят в качественные различия» *.

Эппин, çумăр пĕлĕчĕсен мехелĕ çитет-и—çитмест-и? Çитет. Мĕнле çитет? Акă çулла. Ашă кун. Кăвак тӳпене пĕлĕтсем тухма тытăнаççĕ. Тачкаланса, хулăнланса пыраççĕ вĕсем. Çапах çумăр çумасть-ха.

Тăрсан-тăрсан пĕтĕм тӳпене хулăн пĕлĕтсем карса илеççĕ. Пĕрисем иртме те ĕлкĕреймеççĕ — çавăнтах теприсем капланса килеççĕ. Çапах çумăрĕ çук-ха. Тумламсем шĕпĕршепĕр çеç ӳкелеççĕ...

Акă хайхи тĕксĕм пĕлĕтсем кăвак тӳпене хупласа хураççĕ. Акă çиçĕм çиçрĕ, аслати те кĕрĕслеттерчĕ. Çумăр халĕ чĕреслетсе çăвать... Мĕншĕн тесен **мехелĕ çитрĕ:** пухăнса, пухăнса пынă çумăр «чăтаймарĕ, тӳсеймерĕ»— çуса ячĕ! Çакă вăл, пирĕн шутпа, диалектикă законĕпе пыракан

---

* К. Маркс. Капитал, I т., 206 стр.

йĕрке — унта хисеплĕх пахалăха куçать (акă хайхи философа савăнтаракан тĕслĕх!)

Çав сăвăранах тепĕр тĕслĕх илер:

Мехел тени мĕскер тени иккен?
Ыйтсамăр пахчари улмуççирен:
Ма ун çеçки, чăмăртансах çитсен,
Тепре çĕр каçатех çурăличчен?
Мехел çитмен.

Ашă çуркунне. Пахча тулли улмуççи. Кашниех, пан улми çитĕнтерсе, çĕнĕ йывăç ӳстересшĕн. Çеçкисем чăмăртанса тухаççĕ, анчах вĕсем çурăлман-ха, уçăлса каяйман-ха... Халь-халь куçĕсем уçăлас пек, чечек сăнĕ, илемĕ курăнас пек силленсе тăраççĕ. Çапах та мехелĕ çитмен те — вĕсем чечексем мар-ха, папкасем, çеçкесем çеç-ха. Акă, хайхискер, мехел, патнех-патнех сывхарчĕ, çитрĕ — сиссе те юлаймарăмăр, чечек сиксе тухрĕ, анасларĕ те сарăлса кайрĕ. Ку вăл диалектика законех: хисеплĕх пахалăха куçни!

Çапла, тĕрĕс сырать поэтăмăр:

Мехел çитсессĕн сумăр ярăнать,
Çунатлă чун çӳлтен çĕре анать,
Чечек папки илемлĕн çурăлать,
Йĕркипелен юрри те юрланать—
Мехел çитсен.

Шутланă-ши Тилли старик унăн юрри-сăввисем, халăх хушшинче сарăлса, якалса, илемленсе пырса, мехел çитсен, поэзи ахахĕ пулса тăрасса? Тилли юррисенче философла шухăшсем тăтăшах тĕл пулаççĕ, çапах та вăл хăйне философ тесе шутламан (вăл, паллах, философ тесе кама каланине те пĕлмен): унăн юррисенче тем чухлĕ илем, çапах та вăл хăйне поэзи ăсти вырăнне шутламан. Юрăçă старик пурăннă пурнăçра асапне те, хĕнне те пайтах курнă, тар юхтарнă, куççуль тăкнă,— юрлама пăрахман: пĕтĕм ĕмĕрне юрласа ирттернĕ, çавăнпа унăн юррисем халăх чĕринче юлнă, шухăшĕсем халăх ăс-тăнне кĕнĕ. Юрăра ун яланах мехел çитсе пынă.

Юрăсене вуласан, малтан Тиллин ача чухнехи сăнарĕ курăнса каять. Мĕнлерех-ха вăл? Тиллисем пиллĕкĕн пĕр тăван. Тилли чи кĕçĕнни, ăру асси. Пирĕн Тилли ултă уйăхра ураланнă, тăххăралла чĕлхе кăларнă. Çуралма вăл, малтанах каламаллаччĕ, чышкă чăмăртаса, тĕпекпеле çуралнă. Тĕпекне амăшĕ çӳпçе тĕпне пытарнă.

Тилли ача чухнехи вăхăта, иртнĕ кунсене аса илсе юрлать:

Унпа пĕрле пытарнă вăл юрра,
Çавна тупса эп халь кĕвве хурап.

Сĕвем çумне сĕвем тиреп сăмах,
Пĕр сăмаххи — мерчен, тепри — ахах.

Шăрçа пек юрă ярăмĕ вара
Пĕр сыпăксăр юхать çавра-çавра.

Эпир, малалла, тепĕр ик сăвă вулатпăр та пирĕн ума вун улттăри Тилли чупса тухать. Çитĕнсех пырать вăл, юрă хыççăн юрă юрлать, юррисенче тăванĕсене асăнать. Камсем-ха унăн тăванĕсем? Мĕнле çынсем?

Шурăмпуçсем килеççĕ шуралса,
Ват асаннем ларать пуç тураса,
Шурăмпуçран та шурă сурпанне
Тирпейлĕн сырăпать ыр асанне.

Вут çутипе вылять пĕр чÿрече,
Анне çÿрет тĕпелĕн кукринче:
Вăл чашкăрта пуçланă çатмана,
Юсман шăрши кĕрет ман сăмсана.

Чĕрик туса илет кĕçĕн хапха,
Тин уявран кĕрет иккен аппа...

Инке тăрса тухать шур кĕлетрен,
Шăлт-шалт кĕвентелет ик шуç витре.

Çапла, вун улттăри Тиллин асламăшпе аслашшĕ, ашшĕ, амăшĕ, инкĕшĕ, аппăшĕ, йăмăкĕ пур. Вĕсен пурнăçĕ — чăваш пурнăçĕ, вĕсен йăлисем — чăваш йăлисем.

Тилли асламăшĕ «шурăмпуçран та шурă сурпанпа», инкĕшĕ «шур кĕлетре» çывăрать, «шап-шур чĕр çиттипе» çÿрет.

Шурăмпуçран та шурă сурпана, шап-шурă чĕр çиттипе кунта «нацилле колорит» палли теме пулĕ («колорит» пирки эпир маларахра калăпăр-ха). Пирĕн шутпа, çак шурă япаласем — чăваш халăхĕ тирпейлĕ, таса пурăннине кăтартакан тĕслĕх. Тилли юррисенче час-часах «шурă» тени ăнсăртран персе янă сăмах мар, чăваш пурнăçне палăртакан паллăсенчен пĕри.

Тилли çитĕнсех пырать, каччă пулса çитет. Унăн тăват касра тăвата савни, тăваттăшĕ те мерчен тухъяпа, анчах хăрхăм тăвас хĕрсем мар, хĕве хупмалли — пĕри кăна.

Тиллин ĕнтĕ мăшăрланас шухăш та пур. Урампа утса пыруçăн вăл кăвак куçлă тухъя пуçа курать, кăвак куç кă-

чăк туртса чĕнсе илет. Каччă хĕр патне кĕрет, симĕс атă кунчине çитмĕл пуслăх (хальхи шутпа — 20 пуслăх) кĕмĕл ярать, шӳт туса аттине хывтарать, кĕмĕл укçа урайне тухса ӳкет. Кăвак куç, çакна курсан, кулкаласа: «Туй кĕлечĕ мар-çке...», тет.

Саксенчен чăвашсен иртнĕ саманари йăлисем курăнаççĕ. Вĕсем чăваш халăхĕн авалхи пурнăçне кăтартса параççĕ. Паллах, йăласене ĕмĕрлĕхех хытса ларнă, çĕнĕ кунсем витмен, улăштарайман япала вырăнне хума çук. Вĕсем улшăнсах пыраççĕ. Хальхи чăваш хĕрĕсемшĕн пулсан, шупăрсем, тухъясем, симĕс атă кунчине янă кĕмĕлсем тата ытти те ниме те пĕлтермеççĕ. Анчах çав тумсемпе йăласем иртнĕ вăхăтри пурнăçра пулнă, çавăнпа та Тилли юррисем пек произведенисенче тĕл пулма пултараççĕ те, вырăнлă та.

...Еç сыннисем ыйхăран ир вăранаççĕ, ир тăма юратаççĕ. Тилли асламăшĕпе аслашшĕ те, амăшĕпе ашшĕ те çавах — вĕсем шурăмпуç çутипе вăранаççĕ. Пĕррехинче Тилли амăшĕпе ашшĕ ирех, автансем шарлатса авăтма тытăннă чух, тăнă та тем пирки сăмах вакласа лараççĕ. Тилли итлесе выртать:

Мăнтарăнсем, ăш ыйхине татса,
Канаш тăваççĕ иккĕш ерипен:
«Хăш ывăла парар-ши салтака?
Май çук пĕрне памасăр пиллĕкрен».

Пилĕк ывăлтан кĕçĕннине салтака пама калаçса татăлаççĕ стариксем, мĕншĕн тесен: чи аслине парас — ачи нумай; иккĕмĕшне парас — мăшăрĕ усал; вăталăххи çуртра — ăсли самай; ун хыççăнхи — кăçал çеç авланнă...

Тилли, куççульне аран-аран тытса чарса, çав вăхăтрах хăйне евĕрлĕ шӳтлĕрех сăмахпа калать:

«Нихçан та манăн шурăмпуçпелен
Вăранас мар-мĕн тутлă ыйăхран!»

Çакăн хыççăн Тилли юррисенче кăштах хуйхăллă кĕвĕсем илтĕнме тытăнаççĕ: вăл тĕмеске тăпри çинчен те шухăшласа илет. Çапах та, Тилли ялтан, халăхран юлмасть: халăхра çӳрет, туйран туя çӳрет, ĕçкĕ-çикĕре пулать.

Кашни юрăрах Тиллин характерĕ уçăлса пырать, сăнарĕ ытларах курăнать. Ашшĕне вăл арăсланпа танлаштарать, амăшне ăмăрт кайăкпа, пиччĕшне — пĕрхĕтпе, инкĕшне — илĕртӳллĕ хĕрарăмпа, аппăшне — акăшпа, йăмăкне — йăпăртанпа.

Тилли хӑй кам пек-ши? Унӑн сӑнарӗ мӗнлерех-ши? Салтак ҫулне ҫитнӗ Тилли хӑй ҫинчен акӑ мӗн калать:

Хурчӑкапа тан хам пур:
Кунӗн-ҫӗрӗн юр юрларӑм,
Пӗр туйран та эп юлмарӑм,
Чуп туман хӗр хӑвармарӑм.

Ҫак строфа тӑрӑх, Тилли хурчка пек тейӗпӗр, вӑл ҫивӗч куҫлӑ, пултаруллӑ сын пулни курӑнать. Хурчка пек ҫынсем ниҫта та аяла пулмаҫҫӗ. Анчах Тилли хурчкапа тан пулсан, пирӗн шутпа, «кунӗн-ҫӗрӗн юр юрларӑм» тени кунта килӗшӳллӗ мар. Хурчка... юрӑ юрлать! Тен, вӑл сӑнӗпе чӑнах та хурчка пек, тен, унӑн кӑмӑлӗ, характерӗ пачах урӑхла. Ҫапах та, пӗтӗм ӗмӗрне юрласа ирттернӗ, халӑх хушшине илемлӗ юрӑсем хӑварнӑ ҫынна урӑхларах кайӑкпа танлаштарас килет.

Тилли юрлать, юрлать те ашшӗпе амӑшӗ тата хӑй ҫинчен тепӗр хыпар пӗлтерет: вӑл — тӗне кӗнӗ чӑваш.

Аттеҫӗм ман Хусанӑн хуҫи мар,
Аннеҫӗм Питӗрпурӑн пики мар,
Эп хам Тилли, пуп хунӑ ят Ҫерук,
Ман пек такмакҫӑ таврара тек ҫук!

Ҫав вӑхӑтрах эпир Тиллисен кил-йышӗ каталнине пӗлетпӗр: аслашшӗпе асламӑшӗ Тилли туйӗнче пулаймаҫҫӗ,— вӗсем ачин ачи туйӗнчен, поэт сӑмахӗпе калас-тӑк, «тӗнӗ-сӗр пӳрт» туяннӑ, пӗри юман юпа айне, тепри ҫӑка юпа айне выртнӑ. Тилли, халӑх йӑлине тытса, аслашшӗпе асламӑшне: ҫӑмӑл пултӑр нӳр тӑпра, тесе асӑнать, пехил ыйтса тулли курка тӑкать.

Тилли тавра курӑмӗ малалла тата та анлӑланать, сарӑлать. Ку таранччен Тилли-Ҫерук кил-йыш, ҫемье хуйхи-суйхи ҫинчен юрлатчӗ, халӗ ӗнтӗ вӑл халӑх хуйхи-суйхи ҫинчен те юрлать. Урӑхла пулма та пултарайман, мӗншӗн тесен вӑл таҫта, темле утрав ҫинче, пурӑнакан сын мар, Тилли халӑхпа пӗрле пурӑнать. Унӑн юррисене поэтӑмӑр вӑхӑта, саманана, халӑх пурнӑҫне асра тытса, туйса ҫырнӑ.

Куртӑмӑр ӗнтӗ, Тилли Хусана асӑнать, Питӗрпур ҫинчен калать. Ун юррисенче Атӑл, Шур Атӑл, Ҫарӑмсан тӗл пулать. Сиктӗрмене асӑнса юрлани те пур. Ҫаксем Тилли ӑҫталла пурӑннине, мӗнле самана ҫынни пулнине кӑтартса параҫҫӗ. Ҫӗршывра патша пуррине те пӗлет Тилли. Вӑл халӑх тамашипе нуши ҫинчен юрлать. Юрри вара, юрри — тӗлӗнмелле юрӑ:

Хăпартăм çӳллĕ ту çине;
Çаврăнтăм пăхрăм ял енне;
Ялти ватсем-мĕн хупахра,
Алси-калпакĕ саклатра.
Пуш кĕленчи умĕсенче,
Сенкер черкки аллисенче,
Чĕлĕмсем шăл хушшинче,
Тĕтĕмĕсем урайĕнче.
Пурак тĕпне шаккаççĕ те
Черкки çине пăхаççĕ-çке:
Ĕçмеллисем — пĕрре сыпма,
Туртмаллисем — пĕр сывлама.
Ан хуйхăрăр, ватсем, сĕрс,
Таврăрах енчĕкĕре.
Калатăп эп, Тилли, сире:
Ним кӳмесессĕн те пире,
Патша эрех кӳрех тăрĕ,
Табак кимми килех тăрĕ.

Çак йĕркесем художник ӳкернĕ картинă пек. Ӳкерчĕк çинче çӳллĕ ту; унта Тилли тăрать. Аялта ял. Ялта хупах. Тĕрлĕ хĕн-хур тамаша пусарнипе хĕсĕнсе-пĕсĕнсе пурăнакан чăвашсем хупаха пухăннă. Хуйхи-суйхине эрехпе сӳнтерме шут тытнă. Анчах эрехне мĕнпе илмелле-ха? Тен, вĕсен пур-çук укçине тахçанах патша чиновникĕсем сăптăрса кайнă? Тен, çав ватăсен тата та хырçă-марçă тӳлемелле? Халĕ вĕсем пушă енчĕкĕсене таврăса пăхаççĕ, хуйха ӳкеççĕ: мĕнле пурăнмалла-ха пурнăçа?..

Тилли чăваш ялĕн социаллă нуши-тамашине тĕрĕс ăнланать, патша политикине те чухлать. Патша халăх нушине эрех ăшне путарма, эрех ăшне путарса хысна таврашне пуйтарма шутланă, ялсенче, çав шутра чăваш ялĕсенче те, хупахсем уçса тултарнă (сăмах май Çĕмĕрле районĕнчи ялсенчен пĕри халĕ те-ха «Хупахушкăнь» тенĕ ятпа пурăнать. Çакă вăл патша правительствин шалти политикине кăтартакан паллăсенчен пĕри пулмасан, мĕн пултăр-ха!).

Тилли хăйне пысăка та, ăсла та хумасть. Вăл — патша кӳрсех тăракан табак киммине пушатса пурăнакан чĕлĕмçĕсенчен пĕри, енчĕкре укçа тытайман кĕлмĕçĕ (кĕлмĕçрен те кĕлмĕçĕ!). Вăл тĕнчери кĕлмĕçсене пĕрре курнипех ăнланать, хăй камне те каласа парать:

Эй, эсир, чĕлĕмçĕсем,
Тĕнчери кĕлĕмçĕсем!
Хам та эпĕ чĕлĕмçĕ,
Тен, сиртен те кĕлĕмçĕ...

Кĕлĕмçĕ пурнăç çинчен, тĕнче çинчен шухăшлать, шухăшлать те:

Шăнкăрах та шăнкăр шăнкăрав,
Мĕскер тесе шăнкăртатать-ши?—

тесе ыйтать Тилли. Çавăнтах вăл тупсăмне те пĕлтерет:

Итлеп, итлетĕп те ăнкарап:
Тĕлĕнтерет тĕнче тамаши!

Малтан, çамрăкрах чух, Тилли кил-суртри япаласем çинчен, тăванĕсем çинчен юрлатчĕ, унтан ял, çĕршыв çинчен юрларĕ, халĕ ĕнтĕ вăл тĕнче çинчен юрлама тытăнчĕ.

Тилли кун-çул пирки шухăшлать те куккукран: «Миçе çул эп пурăнмалла?» тесе ыйтать. Хăех вара, нумай пурăнма ĕмĕтленсе, ответне тупать: «Тем чул, тем чул...» Хаваслă ĕмĕт ун чĕринче юрă хыççăн юрă суратать, ăна хуйхă пусса илеймест. «Мĕн пур хуйха-суйха пуçра тытсан, тухма пулать иккен тăр ухмаха»— тесе йăпатать вăл хăйне хăй.

Эппин, шав та тăвар, кĕр те тăвар,
Ĕçер-çиер, тăван, выляр, кулар!
Никам та ик ĕмĕр пурăнман,
Никам та çук тĕнчене тытакан.

Ку йĕркесенче хаваслăх, оптимизм вĕресе тăрать. Тилли халăх йăлипе хăй миçе çул пурăнасса куккукран ыйтанçи пулать, çав вăхăтрах куккука ĕненмест, хăйне çеç шанать, куккука ĕненес пулсан та, вăл çакна аван чухлать: тĕнчере никам та икĕ ĕмĕр пурăнса курман, икĕ ĕмĕр пурăнма май пулсан, «ырă улпутсем» нихçан та вилмĕччĕç, халăха пусмăрласа пурăнĕччĕç те пурăнĕччĕç...

Çын, ватăлнă май, улшăнса пырать: пĕри ăс пухма чарăнмасть, мĕн виличченех чипер ăспа пурăнать, ун пеккисем çинчен чăвашсем: «ват çын — тăват çын», теççĕ; теприн, ăсран тухса, сӳтĕлсе каять, унăн «кĕнеки çĕтĕлнĕ», теççĕ халăхра. Тилли чăннипех те «тăват çын». Вăл ватлăхра та çут тĕнче тытăмĕ пирки шухăшлама пăрахмасть. Ана кăвак тӳпен хĕррипе варри, тĕпĕ пурри-çукки, çĕр, хĕвел, уйăх, çăлтăрсем мĕнле пулса кайни, хура тăпра, сар хăйăр, чул муклашки тата ытти те интереслентерет. Анчах çут тĕнче пирки шухăшласа пуçне çĕмĕрнĕ чухне те унăн шухăшĕсем социаллă ыйтусем патне çавăнса тухаççĕ. Акă вăл, çĕрпе, хăйăрпа, чул катăкĕпе «калаçма» пултаракансем, хурал пӳртне хурланса кĕрет те, кантур таврă-

шĕсене куланай чакарттарас тесе йаланса, урайне выртнă хура халăха тата ăна тĕрлĕ хырăç-марăçшăн хĕнеме илсе килнĕ пĕр купа çĕмĕрт хулли курсан, йывăр шухăша кайса, хăйĕнчен хăй ыйтать:

Тĕнче тытан чăнах пур пулсан,
Курать-ши вăл çакна куçĕпе?
Епле-ха çын, çыннах паранса,
Çак мăшкăла чĕмсĕр тўсеп эп?

Çамрăкрах чухне юрланă юрăсенче Тилли турра-пўлĕхе, турă çырнине асăнать, халĕ вăл «турра шансан, турат çине тăрăнан» тет; ăна халĕ пуп та, мулла та кирлĕ мар, вăл «ан сун мана эс, пуп, леш тĕнчесем» тет.

Тилли старике, иртнĕ ĕмĕрти чăваш çыннине, хресчене, ĕлĕкхи саманаран тăпăлтарса илсе, хальхи çын пек сăнласа кăтартнă пулсан, поэт тĕрĕс мар тунă пулĕччĕ. Вун тăххăрмĕш ĕмĕр çынни — вун тăххăрмĕш ĕмĕр çынниех пулмалла: Тилли — çав ĕмĕрте пурăннă чăвашсен сăнарĕ, поэт ăна ăста кăтартса панă, ăна вăл халăх ăс-хакăлĕн, шухăш-кăмăлĕн çуттипе çутатса кăтартнă. Тилли — çирĕп сывлăхлă, çирĕп шухăшлă, ырă ĕмĕтлĕ чăваш хресченĕ, унăн шухăш-кăмăлне халăх шухăш-кăмăлĕ йĕркеленĕ. Тиллин сăнĕ те, ăсĕ те пур, чи кирли — унăн тўсĕмлĕх пур, тўсĕмлĕхе пула вăл «вилме маннă» вата çулне çитиччен пурăнать, çапах та чăваш ятне çĕртмест.

Тилли сăнне кăтартса парас тесе, поэт ăна куç кĕски çине пăхтарать. Тилли, хăйĕн сăнне курсан, иртнĕ пурнăçне аса илсе, хăй мĕн тери ватăлнине каласа парать:

...Ас тумарăм, тантăшăм, туймарăм:
Нар пек хĕрлĕ питĕм пĕтĕмпех
Пĕркеленнĕ кайнă пĕлĕм пек.
...Пăрçа лавĕ евĕр çўçĕмпе
Кукшаланнă юлнă йĕтем пек...

Тилли юррисенчен тата çакă курăнать: Тилли çамрăк чухне шăлĕпе тулли пăтавкка çыртса йăтнă, çĕнĕ сўс тăлла çыртса татнă; унăн куçĕ-пуçĕ тĕлĕнмелле пулнă, лашине виç çухрăмран палланă, тинкерсессĕн — йывăçа хăртнă, кăнтăрла çăлтăр курнă (ку тĕлĕшпе вăл чăнахах та «хурчкапа тан» пулнă).

Юлашкинчен, Тиллин элчел çинчен хунă юррине вуласан, кăштах чун хурланать: çын çуралать, çуралсан — пурăнать, пурăнать те, ĕçлет, ĕçлет те, вăхăчĕ çитсен — куçĕ хупăнать, тетĕн. Анчах эпир камалсăр çынсем мар, пирĕн пĕрле ўснĕ, пĕрле пурăннă, ĕçленĕ тус-тантăшсем, ырă

юлташсем пур, ял-йыш, хула-йыш пур; вӗсем пӗр-пӗрне тӗл пулсан, пӗр ҫӗре пухӑнсан — пире ырӑ сӑмахпа асӑнӗҫ, тетӗн... Ҫак шухӑш ҫӗклет кӑмӑла, хурланса вилме памасть. Пурӑнатӑн та шухӑшлатӑн: пурӑнсан — пурӑнас пулать пултаруллӑ та илемлӗ! Этем пурӑнӑҫӗ яланах ҫутӑ пултӑр. Ҫутти тӗттӗме ҫутаттӑр, ҫынсен чӗрисене ӑшӑттӑр. Кун пек ҫынсен сӑнарӗ пирӗн литературӑра пур ӗнтӗ. Вӗсем йывӑрлӑхсенчен те, тӑшмансенчен те хӑраман. Вӗсем аптраман, юрласа пурӑннӑ,— юрлама вара Тилли пек юрланӑ.

* *
*

«Тилли юррисенче» пурте вырӑнлӑ: вӗсен содержанийӗ те, форми те оригиналлӑ, хитре, пӗр-пӗринпе ним уйрӑлми ҫыхӑнса, пӗр-пӗрне витӗр витсе тӑраҫҫӗ. Вӗсем пӗтӗмпех халӑхӑн, ҫав вӑхӑтрах — поэтӑн, Хусанкайӑн; вӗсенче халӑх пултарулӑхӗпе поэт пултарулӑхӗ пӗр ҫӗре пӗтӗҫсе, тӗвӗленсе, пӗрлӗх пулса тӑраҫҫӗ, пӗр-пӗрне вӑй параҫҫӗ. Анчах кам та кам: поэта хӑйӗн пултарулӑхне халӑх пултарулӑхӗпе пӗрлештерме ҫӑмӑл, тет,— вӑл йӑнӑшать, мӗншӗн тесен халӑх сӑмахлӑхне, халӑх пултарулӑхне ҫавӑн пек (Тилли юррисем пек!) чӗртсе яма, чун кӗртме, ҫунат пама пысӑк талантлӑ поэт ҫеҫ пултарать.

«Тилли юррисенче» Хусанкай чӑваш халӑх поэзийӗн паха формисене чӗртсе янӑ, чун парса ҫӗнӗ шая ҫӗкленӗ. Вӗсем ҫӗнӗлле янраҫҫӗ, чӑваш поэзин формисем пуян та пиҫӗ пулнине тепӗр хут кӑтартса параҫҫӗ. Вӗсенче чӑваш сӑввин виҫи ҫеҫ мар, чӑваш литературин нациллӗ формин элеменчӗсем те яр-уҫҫӑн курӑнаҫҫӗ. Эпир чӗлхе ҫинчен: вӑл — илемлӗ произведенин пӗрремӗш элеменчӗ, тетпӗр, анчах вӑл нациллӗ формӑн хӑйне евӗрлӗхне унӑн ытти паллисемпе пӗрле ҫеҫ кӑтартса парать. Литературӑ произведенийӗн форми — вӑл питех те кӑткӑс япала, унта наци чӗлхин сӑмахӗсен сӑнарлӑ йӗрки те, калаҫӑвӑн ритм йӗрки те, произведение ҫырнӑ чухне автор ӑсталанӑ сюжетпа композици те кӗрет. Кусемсӗр пуҫне нациллӗ формӑна фольклорӑн, халӑх пултарулӑхӗн, нациллӗ литературин традицийӗсем те кӗреҫҫӗ.

Чӑваш поэзийӗн формисем пирки В. Сбоев хӑйӗн «Исследования об инородцах Казанской губернии» ятлӑ кӗнекинче (1856 ҫ.), чӑваш фольклорӗнчен илнӗ сакӑр юрра тӗпчесе тухса, ҫакӑн пек ҫырнӑ: «Юлашкинчен, ҫакна асӑрхаттарни кирлӗ тесе шутлатӑп: чӑваш сӑввин тытӑмӗ — тоникӑллӑ тытӑм. Чӑвашла сӑвӑ ҫырас йӗркен пӗрре-

мĕш условийĕ тата унăн никĕсĕ — вăл логикăллă ударенисем, тепри — сăмахсен вылявĕпе аллитераци; чăваш сăввинче аллитераци — пирĕн сăвăсенчи рифмă вырăнĕнче; анчах рифмă чăваш сăвви йĕркин вĕçĕнче мар, малта е варринче пулать...»

Рифмăсене çавнашкал йĕркепе тунине, сăмахран, эпир М. Ф. Федоровăн «Арçури» халапĕнче куратпăр. Унта аллитераципе ассонансăн паха тĕслĕхĕсене тупма пулать *.

П. Хусанкай «Тилли юррисенче» аллитераципе питех те ăста усă курнă. Унăн сăввисен хăш-пĕр йĕркисем янăравлă рифмăпа пуçланаççĕ, янăравлă рифмăпа пĕтеççĕ, теприсенче — рифмăсем йĕрке варринче.

Акă, хорей виçипе çырнă, малта рифмăланакан юнашар рифмăллă сăвă:

Хапха умне тайăлтăм,
Хапăл курки эп ĕçрĕм.

Кил картине тайăлтăм,
Килĕшу курки ĕçрĕм.

Пăлтăр умне тайăлтăм,
Пăлчав курки эп ĕçрĕм.

Пӳрте кĕтĕм, тайăлтăм,
Пӳрнĕ курка эп ĕçрĕм.

Сак халăхне тайăлтăм,
Савăш курки эп ĕçрĕм.

Такмакларăм, тайăлтăм,
Тав куркине эп ĕçрĕм.

Кĕрекене тайăлтăм,
Кĕрӳ курки эп ĕçрĕм.

Юр юрларăм, тайăлтăм,
Юрлав курки эп ĕçрĕм.

Таш ташларăм, тайăлтăм,
Тăрлав курки эп ĕçрĕм.

Çулăх çултăм, тайăлтăм,
Çул куркине эп ĕçрĕм.

Ку юрăра, ăна васкарах вуласа тухсан, нимех те çук пек туйăнма пултарать. Пăхăсăн — вăл тĕлĕнмелле илемлĕ,

* Çак кĕнекен 51 стр. пăхăр.

янравлă юрă. Пăхăсăн — унта тем тĕрлĕ рифмă. Пăхăсăн — унта чăваш поэзийĕн колоричĕ.

«Колорит» тенĕрен, çакна асăрхаттарас килет: колорит тени, поэт халăх пурнăçне, йăлисене, ăс-тăнне пĕлет пулсан, вăл хăех тупăнать, ун пек поэт, «колорит» тупас тесе, хыпса-çунса çӳремест. Колорит вăл поэт пултарулăхне нациллĕ тĕс парать, унăн произведенийĕсен содержанине те, формине те ытти халăх поэчĕсен произведенийĕсен содержанийĕпе форминчен уйăрса илме май парать. Колорит тенине нациллĕ поэтăн пултарулăхĕнчен, сăввиюрринчен уйрăм илсе пăхма çук, вăл поэт пултарулăхĕн содержанийĕпе форминче — этем кĕлеткинчи ӳтпе юн пекех; вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрни — этемĕн ӳт-тирне каса-каса пăрахса, юнне юхтарнă пекех. Нациллĕ колорит — вăл нациллĕ литературăн, искусствăн сăн-сăпачĕ, илемĕ, ăшчикки

«Нациллĕ колорит» поэзие тем пекех кирлĕ. Сăвăсен илем, шухăш пулмалла. Урăхла пулсан, вĕсем çара çерçи пекех. Ун пек çерçи-сăвăсен илем мар, çара ӳт-тирне витмелĕх мамăкĕ те, тĕкĕ те çук.

Хусанкай сăввисен хăйне евĕр рифмисене, вĕсен янравлăхне кăтартса парас тесе, тата пĕр-ик тĕслĕх илсе пăхар-ха. Акă малти тата кайри рифмăллă йĕркесем:

**Пиллĕкĕнех** эпир, ай, **пĕр тăван,**
**Пилĕкех** те пилеш пĕр **тымартан.**

Сăвă йĕркисен варринче тунă рифмăсене кăтартакан тĕслĕхсем (ун пек рифмăсене р е д и ф теççĕ):

Çуралнă **эп çурхи** чĕрлĕхпелен.
Кĕрленĕ **эп кĕрхи** кĕрлĕхпелен.

Е тата:

Авал пире — **ах, тур!** — тетчĕç,
Мур-шар тивми **маттур,** теетчĕç,
Шыва ӳксен, вута вăрăнсан
Сарăплами **сатур,** теетчĕç.

Çак тĕслĕхсем Хусанкайăн сăвă ăсталăхне, унăн талантне кăтартса параççĕ. Вăл кашни сăмаха, унăн янравлăхĕпе тупсăмне сăвăра туйса çырать, сăмахпа вырăнлă усă курма пĕлет. Унăн сăввисене чăвашсен тупмалли (сутмалли) юмахĕсем те, ваттисен сăмахĕсем те, каларĕшсем те лайăх кĕрсе вырнаçаççĕ.

Хусанкай юрри-сăввисенче ăсталăх, талант çиççĕ тăрать.

Калама канас: ăсталăх!.. Ăсталăх туянас тесе, поэт мĕн тери тăрăшнă-ши, мĕн чухлĕ вăй пĕтернĕ-ши, тар юхтарнă-ши, ыйхă вĕçтернĕ-ши?.. Мĕн чухлĕ, мĕн чухлĕ?..

Калама канас: талант!.. Хусанкайăн ĕнтĕ талант тенĕ çителĕклех: талант «валеçнĕ» чухне вăл, мĕштĕркки чăваш пек, çăпата сырса юлман. Пахи, пурне те савăнтараканни тата çакă: талантне вăл ĕçре упрать, ĕçре аталантарать.

...«Тилли юррисенчи» уйрăм вырăнсене хальхи çамрăк вулакансем, тен, тӳрех ăнланса та илеймĕç. Мĕншĕн тесен вĕсенче иртнĕ саманан эпир ĕнтĕ манса кайнă паллисем час-часах тĕл пулаççĕ. Хăш-пĕр çĕрте сăмахĕсем те хальхисем мар.

Елĕк чухне эп хам ĕлĕкчĕ,
Ман пуçăмра сăсар çĕлĕкчĕ,
Çĕлĕкĕмĕн тӳпи — чăн тарай,
Чи тăрринчи çӳçи кĕмĕлччĕ,—

тесе юрлать Тилли. Мĕне пĕлтерет-ха «ĕлĕк чухне... ĕлĕкчĕ» тени? Вĕсем ниме пĕлтермен сăмахсем мар-ши? Н. И. Ашмарин словарĕнче «ĕлĕк чухне» сăмах çаврăнăшне çакăн пек пуплевпе çирĕплетсе панă: «Эпир ĕлĕк чухне ĕлĕкчĕ, çичĕ хĕл касна пăланччĕ» (IV вып., 100 стр.). Çавăнтах тата «ĕлкĕ» сăмах пур. Ку сăмах «тĕслĕх» (образец) тенине пĕлтерет; «ĕлĕк чухне эп хам ĕлĕкчĕ» тени ĕлĕк эпĕ маттурччĕ, çирĕпчĕ, вăйлăччĕ, илемлĕччĕ тенине пĕлтерет. Çавăнпа та Тилли çапла юрлама пултарнă:

Елĕк чухне эп хам ĕлĕкчĕ,
Пăшатан пек куçлă йĕкĕтчĕ,
Кача пӳрнем тулли çĕрĕччĕ,
Кăчăк туртмассерен пĕр хĕрччĕ.

Ватăлма пуçланă Тилли хăйĕн йыттипе калаçать:

Ватăлатпăр пуль, Сарпайăм!
Санăн та куç хупанки
Тăртанса ĕнтĕ сархайнă,
Ман юратнă çум.çакки!

Строфари юлашки йĕрке, инверси меслечĕпе пуплев вĕçне пырса вырнаçнăскер, мĕне пĕлтерет-ши? Мĕн-ши вăл «çум çакки»?

Ана çапла ăнлантараççĕ: ĕлĕк чăвашсем аякка, хул хушшине, пĕчĕкçĕ хутаç çакса çӳренĕ. Çав хутаçа арçынсем укça-тенкĕ, хĕрарăмсем йĕп-çип... чикнĕ. Н. И. Ашмарин

профессор: «Çум çакки, то же, что çумма çакмалли, прицепка», тесе ăнлантарать (Словарь, XII вып., 234 стр.). Тилли хăйĕн йыттине, çывăх тусне, «çум çакки» вырăнне хурать.

Хусанкай «Тилли юррисенче» чăваш чĕлхин шкул грамматикинче тĕл пулсах кайман формисемпе те ăста усă курать (тĕслĕх: чăрманмасса, сăрхăнмасса).

Кĕнекери пĕр юрă çапла пуçланать:

> Ни Киремет, ни Пӳлĕх, ни Хăрпан
> Мана хăтараймарĕç ватлăхран.

Паллах, «ни... ни... ни» тенисем, чăвашсен калаçу чĕлхинче пур пулин те, пирĕн шутпа, Тиллишĕн характерлă пулма пултараймаççĕ. Мĕншĕн тесен вĕсем чăваш чĕлхине кайрантарах кĕнĕ. Тилли вăхăтĕнчи çын: «Киремет те, Пӳлĕх те, Хăрпан та...» тенĕ пулĕччĕ.

Хусанкай сăввисем пирки тата та çырма пулать. Вĕсенче тăван чĕлхен илемĕ, вăйĕ, пуласлăхĕ пирки калана вырăнсем те сахал мар. Сăмахран, «Кун-çул тӳпинчен» кĕнекере чăваш чĕлхин малашлăхĕ поэта çакăн пек курăнать:

> Пăхăрпала тăхлан пăтрашăнса
> Илемлĕ, çирĕп бронзă пулнă пек
> Çак хамăршăн ытарайми таса
> Чĕлхемĕр те çухалмĕ пĕтĕмпех.
>
> Ытти чĕлхесемпе пĕр хуранта
> Вăл варăшĕ те пиçĕхĕ татах;
> Юлашкинчен хытсах ларсассăн та,
> Упранĕ, тен, тĕлĕнмелле сăмах.
>
> Çак чĕлхенех вăйне пара-пара,
> Поэт хăватлă шухăш хăварсан,—
> Ун чапĕ кайĕ пĕтĕм çĕр тавра.
> «Камран?» тесессĕн, калĕç: «Чăвашран!»

* * *

Эпир хамăр статьяна Хусанкайăн «Кун-çул тӳпинчен» ятлă кĕнекине асăнса пуçларăмăр, çапах та ытларах «Тилли юррисем» пирки сăмах вакларăмăр. Юлашкинчен те пулин, «Кун-çул тӳпинчен» кĕнеке çинчен калас пулсан, çакна палăртмалла: унта поэтăмăр паянхи пурнăç çине, иртнĕ самана, чăваш культурин хăш-пĕр çыннисемпе вĕсен ĕçĕ-хĕлĕ çине хальхи кунсен шайĕнчен, тӳпинчен пăхма тăрăшать. Хальхи пурнăç çинчен çырнă сăвăсем: «Ленин», «Ленин çулĕпе», «Ноябрĕн 7-мĕшĕ, «Эпĕ — халăх», «Ырă

кăмăллă тус, сасă пар, алă пус!» «Çĕр юлташĕ çавăрнать», «Çамрăксем, малалла, çÿлелле!», «Суйлавçăсем умĕнче» тата ыттисем те. Сăвăсен тепĕр ушкăнĕнче автор наукăпа литературă ĕçĕнчи пултарăва (творчествăна) мухтаса çырать.

«Кун-çул тÿпинчен» кĕнекери сăвăсем те нумайăшĕ философла сăвăсем. Вĕсенчен чи лайăххисенчен пĕри тесе «Поэзи пулсан...» сăвва шутлас пулать. Ку сăвă пирĕншĕн «Тилли юррисене» виçмелли виçе пулчĕ. Çапла вара, эпир Хусанкайăн пĕрремĕш кĕнекине, малтанах каларăмăр ĕнтĕ, иккĕмĕш кĕнекин «çутипе», уйрăмах «Поэзи пулсан...» сăвă шухăшĕсем енчен пăхса тухрăмăр, çав çутăра унăн пахалăхне куртăмăр, хăш-пĕр çитменлĕхне те асăрхарăмăр.

«Кун-çул тÿпинчен» кĕнекере, шел пулин те, ăнланма йывăр вырăнсем те пур. Сăмахран, ун пек вырăнсем «Пултару» сăвăра (1955 ç.), В. Г. Егоров профессора хисеплесе çырнăскерсенче, тĕл пулаççĕ. Этем тăвакан хаклă пурлăх (илемпе чăнлăх) çинчен çырнă хыççăн автор çакăн пек калать:

Çав пурлăха куллен пухса
Хăш чух çука тăрса юлатпăр,
Хăш чух никам çăвар уçса
Сăмах чĕнменнине куратпăр.

Суя мухтав ярапине
Вĕлкĕштерен çил хÿрисемшĕн
Эс — пĕтнĕ çын ун пек чухне,
Сана вĕсем шыва тĕртесшĕн.

Çынсемшĕн темле те, пирĕн шутпа, ку йĕркесене тĕптĕрĕс ăнланса илме çук.

«Çурри» ятлă сăвăра та (1957 ç.) ăнланма йывăр йĕркесем сиксе тухаççĕ.

Эх-хей! Тĕнчен саманисем те саккăр,
Тамашисем те тăххăр, тенĕ пек,—
Апла та вылянать, капла та тапхăр,
Сасартăках уйлаймăн пĕтĕмпех.

Кунта «апла та, капла та» вылянакан тапхăр тесе уйрăм этеме турă вырăнне хунă çулсене каланă пулсан, эпир ăна çакăн пек ăнланатпăр: вăл ĕнтĕ пирĕн çĕршывшăн иртнĕ тапхăр! Сталина турă вырăнне хунă çулсем кая тăрса юлчĕç, урăх нихçан та таврăнаймĕç.

«Кун-çул тÿпинчен» кĕнеке, пĕтĕмĕшпе илсен, паха кĕнеке пулсан, «Тилли юррисем» кĕнеке, унăн юррисене уйрăм илсе пăхсан, кашниех интереслĕ те паха.

«Тилли юррисем», тĕрĕссипе каласан,— юрăсем çеç мар, вĕсем хăйне евĕр лирикăллă пĕчĕкçĕ энциклопеди, хăйне евĕр поэмă. («Энциклопеди» тенĕрен хăшĕ-пĕрисем шартах сикĕç. Ăнлантарăпăр вĕсене: «Тилли юррисем» «энциклопеди» пулсах çитмен пулсан, вĕсене «энциклопеди» тума пулатех!) Унта темиçе юрă, вĕсене уйрăмшарăн илсе пăхсан, пурте мар пулсан та, нумайăшĕ вĕçленсе çитернĕскерсем, пĕрле илсе пăхсан, пурте пĕр çын пурнăçĕ çинчен калаççĕ, çав вăхăтрах халăх ĕмĕт-шухăшне, ăнланăвĕсене кăтартса параççĕ.

«Тилли юррисем»— поэзин хăйне евĕр жанрĕ, поэмăн хăйне евĕр форми тесен те йăнăш пулас çук. Çавăн пек формăпа Митта Ваçлейĕ «Тайăр» ятлă поэмă çырма тытăннăччĕ. Вăхăтсăр çĕре кĕнĕ пирки çырса пĕтереймерĕ. «Тайăр», «Тилли»— пĕр енчен, питех те çăмăл, тепĕр енчен, çав тери йывăр формă. Çавна пула хăшĕ-пĕрисем ку формăн «çăмăллăхне» те, «йăвăрлăхне» те ăнлансах каймаççĕ. Тен, шăпах çавăн пирки пулĕ «Тайăр» произведение уйрăм юлташсем: «Ăçтан вăл поэмă пултăр? Вăл — Миттан хăй çинчен çырнă сăввисем... татăк-кĕсĕкĕсем...», терĕç. Çавăн пек критиксем «Тилли юррисем» пирки те: «Вĕсенче Хусанкай хăй çинчен çырнă» теме пултарĕç. Çапах та, ку юрăсем уйрăм йышши поэмă пулнине палăртмасăр иртме çук (тен, вĕсем поэмă пулса çитеймен пулĕ, çапах та вĕсене поэмă тума пулать). Вĕсенче герой сăнарĕ çеç мар, халăх сăн-сăпачĕ те курăнать. Ку вăл пĕрремĕш юрăран тытăнса юлашки юрра çитиччен курăнса тăрать.

«Тилли юррисенче» поэт ахаль сăмахпа, калаçупа, прозă чĕлхипе каласа пама çук шухăш-туйăмсене каласа панă. Этем ăс-тăнĕнче çавăн пек шухăшсем, чĕринче çавăн пек туйăмсем пурри çинчен А. И. Герцен «Поврежденный» ятлă повеçре çапла çырнă: «Досадно, что я не пишу стихов... Стихами легко рассказывается именно то, чего не уловишь прозой... едва очерченная и замеченная форма, чуть слышный звук, не совсем пробужденное чувство, еще не мысль... в прозе просто совестно повторять этот лепет сердца и шепот фантазии».

«Кăшт çеç илтĕнекен, йăлтах хускалса çитеймен туйăм, пулса тăрайман шухăш...»— чăн-чăн поэтсем ĕнтĕ вĕсене каласа пама пултараççĕ, каласа параççĕ те. Çакă вăл «Тилли юррисенче» те аван курăнать.

...Пирĕн шутпа, «Тилли юррисен», ăна поэмă тесе шутлас пулсан, пĕр çитменлĕх палăрать. Тилли — хресчен, ĕç

çынни... Эппин, ăна ытларах ĕçре кăтартмалла пулнă. Халлĕхе вăл ытларах ĕçкĕрен ĕçке çӳренĕ пек курăнать.

Çĕршывра мĕнле ĕçсем пулса иртнĕ вăхăтра пурăннă вăл? Çав ĕçсенчен пĕрине те пулин, пысăкраххине, Тилли юрринче палăртма çук-ши? Тăван халăх, ял-йыш ун чухне мĕнпе ытларах тăрмашнă тата ыт. те.

Тилли старике чăвашсен асран кайми аки-сухи çинчен, утă-çаран, тыр-пул, çĕмел-капан çинчен, чăваш ялĕсене тăташах пыра-пыра çапнă выçлăх, «çĕр вăрçи», ял пуçĕнчи «хура юпа», «хурăн çул»... çинчен юрлаттарас килет. Ан тив, вăл Чăваш Хвети, Янтуш тата ытти ятсăр нумай-нумай юрăçсен вĕçленмен сăвви-юррисене вĕçлесе, юрласа чунне лăплантартăр.

Тилли кĕрешӳ юррисене те юрлатăр. Чăвашсем кĕреçе, сенĕк, пуртă тытса ĕçлеме пĕлнипе пĕр вăхăтрах пуртă, кĕреçе, сенĕк йăтса кĕрешме те пĕлнĕ. Чăваш халăхĕ ытти халăхсем тăшманпа кĕрешнине пăхса çеç тăман, çук, пачах та ун пек мар: вăл хăй те ирсĕр тăшмансене хирĕç тухса кĕрешнĕ, ытти халăхсемпе пĕрле тăрса, пĕрле пырса кĕрешнĕ. Чăваш хресченĕсем Степан Разин, Емельян Пугачев хыççăн кайнă, патшасен, улпутсен тарçи-тĕрçине тытса силленĕ, тăпăлтарнă, вĕлернĕ, пупсене вăрăм çӳçĕсенчен тытса чиркӳ тăрринчен пăрахнă.

Тилли сăнарĕ тата та кăмăллăрах, паттăртарах, типлăрах пултăр, халăх ăс-тăнне кĕтĕр, чăвашпа пурăнтăр, ĕçлетĕр, кĕрештĕр.

Çапла, пирĕн шутпа, «Тилли юррисен» ярăмне çĕнĕ юрăсем кĕртсе анлăлатмалла, сармалла пек туйăнать, вара унăн шухăшĕ таранланĕ, пахалăхĕ тата та çĕкленĕ, ӳсĕ. Вара вăл чăннипех лирикăллă пĕчĕкçĕ энциклопеди пулса тăрĕ.

Тата çакна асăрхаттарас килет: кĕнекери хăш-пĕр юрăсене юрлама, çырма пуçланă çеç, çавăнпа та вĕсем, писательсен сăмахĕпе каласан, «заготовкăсем» пек кăна туйăнаççĕ. Акă вĕсенчен пĕри:

Кăмăлăрсем çемçе — кăпăк пекех,
Чĕлхĕр-çăварăрсем чĕкеç пекех.
Тав куркине ĕçрĕм эп тĕппи,
Çул куркине епле ĕçĕп-ши?

Ку юрă юрламалăх çук, пĕр çаврăм çеç. Юрăра сахалтан та виçĕ çаврăм пулмалла. Çав вăхăтрах юрă ютлашши

вăрăм та пулмалла мар. Чăваш юрри çеçен хир пек сарлака мар, хирпе пыракан çул пек вăрăм мар.

«Тилли юррисене» хакласа, вĕсене поэт илемлетнине асра тытса, Илпек Микулайĕ «...вĕсем тăван халăхăн авалхи юррисене пур пĕрех çывăх тăраççĕ», тет. Пирĕн тата çапла хушса калас килет: вĕсем чăвашсен хальхи юррисене те çывăх тăраççĕ. Мĕнпе? Хăйсен хаваслăхĕпе, оптимизмĕпе. Тилли пек чăвашсем, пурнăç тем пек йывăр пулсан та, вилме маннă ватăсен çулне çитиччен пурăнма ĕмĕтленнĕ, «пурăнар-ха пурнăça...» тесе юрланă. «Тилли юррисем» ĕмĕртен ĕмĕре куçса, илемленсе пынă пахалăхĕпе хальхи чăваш поэзине çывăх тăраççĕ. Вĕсен виçи халăх юррисен çичĕ сыпăклă виçи çеç мар, хальхи поэтсем усă куракан сăвă виçи (ямб, хорей, анапест).

Статьяна пирĕн çакăн пек каласа пĕтерес килет: поэзи пулсан — вăл Тилли юррисем пек пултăр, унтан та вăйлă, илемлĕ пултăр. Çавăн пек поэзи тăван литературăна çĕнĕ те хаклă пурлăх хушать. Поэт калашле, чăнах та:

Çав пурлăха кĕве çимест,
Шăши касмасть, хыпмасть вут-çулăм.
Çав пурлăх муртăхмасть, çĕрмест,
Пĕтмест те,— вĕçĕмсĕр кун-çул ун.

*1962*

## ЯКОВ УХСАЙĂН
## ХĂШ-ПĔР ПРОИЗВЕДЕНИЙĔСЕМ ПИРКИ *

**(Юлташ ĕçне кура пуçа килнĕ шухăшсем)**

### Пĕрремĕш статья

Юлашки вунă çул хушшинче (1945—1955) чăваш халăх поэчĕ Яков Ухсай пысăк произведенисем нумай çырчĕ. Унăн икĕ произведенийĕ —«Кĕлпук мучи» тата «Çул» поэмисем — пирĕн литературăра уйрăмах паллă вырăн йышăнчĕç: вĕсем, танлаштарса калас-тăк,— чăваш поэзийĕн улăпĕсем! Çавăнпа ĕнтĕ вĕсем, Чăваш республикинчен тухса, хăйсен улăпла утăмĕсемпе пĕтĕм Совет Союзĕ тăрăх кайрĕç, нумай йышлă вулакансен юратнă кĕнекисем пулса тăчĕç. Çавăн пек инçе çула кайса, халăх хушшине сарăлмашкăн вĕсене авторăн çутă та вăйлă таланчĕ çунат панă. Ун пек паха произведенисене халăх яланах хапăл туса йышăнать, ырă хак парса мухтать.

Çур ĕмĕр ĕлĕкрех, патша саманин кĕрхи тĕттĕм каçĕнче, К. В. Иванов таланчĕ, вутлăн-хĕмĕн çутăлса кайса, чăваш литературине вилĕмсĕр «Нарспие» панă, анчах «Нарспи» поэмăн чăваш литератури рамкисенчен тухса пĕтĕм çĕршыв культурине кĕрес кунĕсем 30—40 çултан кăна, пирĕн саманара çеç çитрĕç. Çакă вăл чăваш литературин ытти халăхсен вулаканĕсем патне каяс çул çинчи пĕрремĕш утăмĕ, экзаменĕ пулнă. К. В. Иванов поэми ку экзамена питех те чаплă тытрĕ. «Нарспи» авторĕ пирĕн хальхи поэтсен аслă пиччĕшĕ пулсан, унăн ырă кăмăллă шăллĕсем малтанхи халăх поэчĕн паха опычĕпе традицине асрах тытса пурăнаççĕ. Сăмахран, К. В. Иванов традицине пуянлатса, çирĕп

---

* Çак икĕ статья малтан «Ятлисенчен ытларах ыйтаççĕ» тенĕ ятпа пĕри —«Ялав» журналта, тепри —«Тăван Атăл» альманахра тухнă. Статьясенче Я. Ухсайăн 1955—1956 çулсенче тухнă поэмисемпе сăввисем çинчен ытларах çырнă.

тытса, малалла аталантарса пыракан Яков Ухсайăн поэмисем, чăваш литературинче ӳссе çитĕннĕскерсем, пĕтĕм совет литературине кĕрсе вырнаçрĕç, ытти халăхсене хальхи чăваш литературин пысăк утăмĕсем çинчен каласа пачĕç. Çав чаплă произведенисен малашнехи кун-çулĕ такăр пуласса эпир пурте (хăш-пĕр çатăлти «критиксемсĕр» пуçне) шанса тăратпăр.

Яков Ухсай пысăк поэмăсем çырма юратать. вăл никамăн «суха пуçĕ» çитсе перĕнмен çĕре пырса çĕнĕлле меслетсемпе сухалама тăрăшать, вырăнĕ-вырăнĕпе сӳрелесе çитерме ĕлкĕрсех каймасть пулин те, поэзи хирне ырă вăрлăх акать, ырă вăрлăхран паха тырă ӳсет. Йывăçсем лартмалла çĕре Ухсай вĕтĕр-шакăр йывăçсем мар, юмансем лартать. Вăл лартнă юмансем — чăваш совет литературин никĕсне кĕме тивĕçлĕ юмансем. (Кунта каланисем ытлашши пулсан, юлташсем пире тӳрлетĕç.)

Юлашки çулсенче, чăваш журналĕсене «шăнăçайми» пысăк поэмăсем çырнă вăхăтра, Ухсай сăвăсемпе «аппаланмарĕ», темелле, çавăн пирки ĕнтĕ унăн ячĕ «Ялав» журналпа «Тăван Атăл» альманахра ытла курăнсах каймарĕ,— пысăк произведенисем çине вăй хурса ĕçлекен поэтăн пĕчĕккисене çырма «мехел» çитменнинчен нимĕн тĕлĕнмелли те çук! Акă халĕ Яков Ухсайăн çĕнĕ произведенийĕсем (ку чухне пĕчĕк поэмăсемпе пĕчĕк сăвăсем) пичетленсе тухрĕç. Ку статьяра манăн çав сăвăсем çинчен пĕр-ик сăмах калас килет (поэта кашни произведенишĕнех ырлас е ятлас тесе мар, юлташ ĕçне кура пуçа килнĕ шухăшсене палăртас тесе калас килет,— эппин вĕсене калар-ха).

Малтан Яков Ухсайăн 1955 çулти «Тăван Атăлăн» 2(55)-мĕш кĕнекинче пичетленнĕ «Ленин çурчĕ умĕнче» ятлă пĕчĕк поэмине кĕскен пăхса тухар.

«Ленин çурчĕ умĕнче» поэмăра автор Ульяновск хулинчи (Чĕмпĕрти) В. И. Ленин çуралнă çурт çинчен çырать. Поэмăна çапла йĕркеленĕ: поэт пĕрре каçхине Чĕмпĕр хулине (Ульяновска) пырать, малтан вăл Ленин вĕреннĕ гимнази çурчĕ патне, унтан Ленин çуралнă çурт патне çитсе тăрать, çулпуçăн тăван хулинче иртнĕ кунĕсене аса илет. Поэмă шухăшĕ Ульяновсен пурнăçĕнчи событисемпе çыхăнса тăрать. Вĕсене, сăмах май каласан, çакăн пек «хронологипе» кăтартнă: Владимир Ульянов гимназире вĕреннĕ çулсем (1879—1887); Ленин çурални (1870); Александр Ульянова патша çакса вĕлерни (1887); юлашки икĕ çулĕ хушшинче (1870 çулпа 1887 çул хушшинче) Я. Ухсай чă-

ваш халăхĕшĕн паха событие, вăтăр çул кайрантарах пулнăскере — И. Я. Яковлев пирки В. И. Ленин Чĕмпĕре телеграммă янине (1918) асăнать. Çапла вара, поэмăри «хронологи» çакăн пекрех пулса тухать: 1879—1887, 1870, 1918, 1887. Тен, илемлĕ произведенире хронологие тĕптĕрĕс тытса пыни кирлех те мар пулĕ, тепĕр чухне ăна тĕрлĕ «отступленисене» пула, пăсма та тивет, çапах та, пирĕн шутпа, хронологи вăл, темле çырсан та, хронологиех пулмалла, унăн хăйĕн йĕрки пур, ăна уçăмлă тытса пырас пулать. Вăл, сиктеркелесе çырсан та, этем ăнланмалла пултăр, ун тавра пыракан шухăш уçăмлă пултăр. Автор «Ленин çурчĕ умĕнче» поэмăра пĕр çулĕ (1870) çинчен кăна тĕплĕрех, йĕркеллĕрех çырнă, ыттисем çинчен вăл, шел пулин те, ун пек çырайман,— вĕсем поэзи тĕлĕшпе те шупка, вăйсăр тухнă, çитменнине тата çав событисем çинчен çырнă йĕркесен чĕлхи те яка мар, çавăнпа вĕсене вуланă чухне пĕрмаях такăнса пыратăн. Кирек камăн та пĕрпĕр çулпа пынă чухне тикĕсрех, якарах вырăнпа утас килет; кĕнеке вуланă чухне те çавах — кирек камăн та паха чĕлхепе, тикĕс çырнă, яка пооизведени вулас килет.

Ленин çуралнă куна, 1870 çулхи апрелĕн 22-мĕшне, аса илсе, Яков Ухсай çакăн пек çырать.

Ванчăк пăр кайма пуçланă
Суркунне Сĕве çинче.
Пĕр чипер ача çуралнă
Ватă Чĕмпĕр хулинче.
Çав кервен ача çуралнă
Тĕнчене кисрентерме.
Ун çинчен пĕлмесĕр ларнă
Хулари тискер тĕрме.

Поэмăн çак строфисемпе пуçланса каякан сыпăкне «Коммунизм ялавĕн» 1955 çулхи апрелĕн 22-мĕшĕнче тухнă номерĕнче пичетленĕччĕ. Ку сыпăка эпир ун чухне чăннипех те савăнса вуларăмăр, пĕтĕм поэмă пичетленсе тухассa кĕтме тытăнтăмăр, поэмă пĕтĕмĕшпех паха пуласса шанса пурăнтăмăр.

Яков Ухсай «Ленин çурчĕ умĕнче» поэмăн хаçатра пичетленнĕ пайĕнче çулпуçăн пĕчĕкçĕ чухнехи сăнарне ăшă сăмахсемпе, чăннипех те ăста кăтартса панă:

Сăпкара пĕр пĕчĕк паттăр
Ярăнса сикни çинчен
Пĕр сăмах та губернатор
Хăлхине пырса çитмен...
...Пĕчĕкçĕ ача сăнарĕ

Чĕмпĕрти ачасенчен
Уйрăм-и е уйрăм мар-и,—
Уйрăлман ыттисенчен.
Юмахла пĕр пичĕ уйăх,
Тепĕр пичĕ сар хĕвел
Пулмасан та, тупĕ хурлăх
Тĕнчине ишме ăс-мел.
Вăл та пулнă пĕчĕкçеççĕ,
Пулнă унăн та кипке.
Ачасем епле ӳсеççĕ,
Çавăн пек вăл ӳснĕ-çке.
Малашне çулпуç пулин те,
Вăл, сăпка ачи чухне,
Ыттисем пек йĕрнĕ ĕнтĕ,
Емнĕ амăш кăкăрне.
Паттăр ӳснĕ, паттăр тӳсĕ
Тĕрмене, сивве, вутта...

Ухсай кунта кăмăллă сăмах та, паха сăнлăх та тупнă,— ăсталăх çитернĕ. Анчах малалла поэт çавăн пек илемлĕ çырайман: вăл Ленин çурчĕ умĕнче аса илнĕ ĕçсем çинчен çырма тытăннă, çырса çитереймен, каласа иртсе кайнă. Тĕрĕссипе калас пулсан, поэт унта вулакансем халиччен пĕлменнине, вулакансемшĕн çĕннине нимех те памасть. Акă, сăмахран, Ульяновсемпе Яковлевсем хушшинчи туслăха асра тытса, поэмă авторĕ пире çакна пĕлтерет:

Кĕркеленĕ ашшĕн тусĕ
Пирĕн Яковлев кунта.
. . . . . . . . . . . . . .
Халăхсен çулпуçĕ панă
Телеграммă Чĕмпĕре.

Ку фактсем, чăнах та, пурте пĕлекен фактсем мар-и-ха? Чăвашсем вĕсене тахçанах пĕлеççĕ. Поэт вĕсене калама та тĕссĕр сăмахсемпе çеç каланă. Поэтăн çак фактсене поэт пек илемлĕ çырса, сăнласа кăтартмалла пулнă. Поэт вăл ахаль çын тупайман сăмахсене тупать, асран кайми сăнлăхсем тăвать, вĕсене пула хăйĕн шухăшне ытларах ăнланмалла калать, вулакансем патне çăмăлраххăн çитерет. Халăх туйăмĕ, шухăшĕ, поэт патне çитсе, ун чĕринчен, кăмăлĕнчен çулăм пек ялкăшса тухсан, вĕсем халăх хушшине çĕнĕ вăйпа ĕмĕрлĕхех сарăлаççĕ.

Ульяновсемпе Яковлевсем хушшинчи ырă туслăх чăваш халăхĕ хушшинче чи паха, чи вăйлă туслăх выранĕнче шутланать, унăн идейи чăваш хушшинче чи илемлĕ, чи хăватлă поэмă пек çӳрет, кунран кун, çултан çул çĕнĕ вăй илет. Сăмахран, çак саманта та пулин аса илер-ха: 1886 çулхи

январӗн 12(24)-мӗшӗнче И. Н. Ульянов вилсе кайнӑ, ҫакӑн ҫинчен пуринчен малтан И. Я. Яковлев пӗлнӗ; пӗлтерекенӗ Володя Ульянов пулнӑ. Тата тепӗр тӗслӗх. 1887 ҫулта Александр Ульянова патша влаҫӗ тӗрмене хупсан, Ульяновсенчен вӗсен Чӗмпӗрти «тусӗсем» командӑ тӑрӑх пӑрӑннӑ пек пӑрӑннӑ, Ульяновсене паллайми пулнӑ. Ҫав йывӑр та хуйхӑллӑ кунсенче И. Я. Яковлев Ульянов ҫемйинчен хӑраса пӑрӑнма мар, Ульяновсен хуйхи мӗн тери пысӑк пулнине чӗрепе туйса илнӗ, вӗсен хуйхипе пурӑннӑ. Вӑл Н. И. Ильминский профессор урлӑ Александр Ульянова мӗнле те пулин ҫӑлса хӑварма тытӑнса пӑхнӑ. Мӗн тери паха фактсем! Тата В. И. Ленинӑн 1918 ҫулта И. Я. Яковлев пирки Чӗмпӗре янӑ телеграммисем пирӗн халӑхшӑн мӗн тери хаклӑ! Вӗсен тарӑн шухӑшне пирӗн историксем ҫаплах тӗплӗн ӑнлантарса параймарӗҫ-ха. Шанас килет: историксем вӑй ҫитерейменрӗҫ пулсан, поэтсем вӑй ҫитерӗҫ,— вӗсем ҫав историлле телеграммӑсем ҫинчен вилӗмсӗр поэмӑсем ҫырӗҫ! Ку ырӑ тӗслӗхсенчен Ульяновпа Яковлев пӗр-пӗринпе мӗн тери туслӑ пурӑннине, В. И. Ленин ашшӗ хӑйӗн тусне, И. Я. Яковлева, мӗн тери хисепленине «Яковлев кӗркеленӗ» тенипе ҫеҫ кӑтартса пама ҫукки питех те аван курӑнать.

В. И. Ленин ҫинчен, унӑн ашшӗ ҫинчен чӑваш поэчӗсен лайӑхрах ҫырмалла, халӑх юрлакан юрӑсем, мухтав поэмисем ҫырмалла, анчах «Ленин ҫурчӗ умӗнче» поэмӑ ҫавӑн пек юрӑ, ҫавӑн пек поэмӑ пулайман,— халӑхсен партин ҫулпуҫӗ ҫинчен ҫырнӑ произведени тирпейсӗр пулмалла мар! Яков Ухсай лайӑх ҫырма пултарнӑ: унӑн таланчӗ те пур, пӗлӗвӗсем те, опычӗ те ҫителӗклӗ, вӑл литературӑ чӗлхине те ӑста пӗлет. Анчах «Ленин ҫурчӗ умӗнче» поэмӑна ҫырнӑ чухне вӑл хӑйӗн ӑсталӑхне кирлӗ пек сарса ярайман, ҫителӗклӗ ӗҫлемен, чӗлхе тирпейлӗхӗшӗн тӑрӑшман тесе калас килет.

Эпир ӗнтӗ поэмӑн содержанийӗ пирки каларӑмӑр, халӗ унӑн илемӗ, чӗлхи пирки, унӑн сӑнлӑх вӑйӗ пирки пӗр-ик сӑмах калар. Произведенин сӑнлӑх вӑйӗ чи малтан чӗлхерен, унӑн илемӗнчен килет, ҫавӑнпа та чӗлхе ыйтӑвӗ писательшӗн яланах тӗп ыйтусенчен пӗри пулса тӑрать.

«Ленин ҫурчӗ умӗнче» поэмӑн чӗлхи пур ҫӗрте те пӗр пек яка мар: унта час-часах турат пек курӑнса тӑракан вырӑнсем сике-сике тухаҫҫӗ. Поэт ҫакӑн пек ҫырать:

Эп кунта туран, чӑвашӑн
Ҫӗрӗнчен, халь ҫитрӗм те,—

Çил паллашнă пек ачашшăн
Йăпшăнса лекет пите.

Е тата çавăнтах:

Çамрăк Ленин чун хавалĕ
Ӳснĕ çĕр çинче паян
Çӳреме эп килтĕм халĕ
Чăвашран, Шупашкартан.

Икĕ строфи те яка мар, иккĕшинче те пĕр шухăшах калама тăрăшнă («Чăваш çĕршывĕнчен», «Шупашкартан» килни). Сăмахĕсем те пĕр пекех: «халь çитрĕм...», «килтĕм халĕ...» Пĕрремĕш строфари пуплев грамматика тĕлĕшĕнчен те, логика тĕлĕшĕнчен те пулса çитмен, çавăнпа та ăна ăнланма йывăр. Ăна вулатăн та: мĕн каласшăн пулнă-ши кунта автор, тесе ыйтатăн, ăнланса илме тăрăшатăн, анчах кăткăс танлаштарăва («çил паллашнă пек ачашшăн йăпшăнса лекет пите» тенине) нимле те пуçра тытаймастăн, кураймастăн. «Кураймастăн» терĕмĕр, мĕншĕн тесен лайăх та вăйлă сăнлăх хăйĕн илемне пула куçа куранна пекех туйăнмалла, илемлĕхĕпе чуна килентермелле.

Çавăн пек илемлĕхе, çавăн пек сăнлăха курас тетĕр пулсан, акă, тĕслĕх вырăнне, вуласа пăхăр-ха вырăс поэчĕн Ф. И. Тютчевăн пĕр сăввинчен илнĕ йĕркесене:

Есть в осени первоначальной
Короткая, но дивная пора—
Весь день стоит как бы хрустальный,
И лучезарны вечера...
Где бодрый серп гулял и падал колос,
Теперь уж пусто всё — простор везде,
Лишь паутины тонкий волос
Блестит на праздной борозде.

Çак сăвва хĕлле е çулла вуласан та, санăн куçу умне кĕрхи кунсен илемĕ тухса тăрать. Тепĕр чухне тата çапла та пулать: калăпăр, кĕркунне янкăр уяр кун, «вăтă ăшши» тенĕ вăхăтра, пушă уя тухатăн, хăмăлсем çинче эрешмен картисем куратăн, хĕвел каçалла сулăнна, сывлăш уçă та сулхăн... Çакăн чухне Ф. И. Тютчев сăвви аса килет. Чĕрере темле туйăмсем хускалса каяççĕ, кăмăла темскер ачашлать пек,— çук, темскер мар, ăна илемлĕх вăратнă туйăм ачашлать!

Каллех Яков Ухсай поэми патне таврăнар-ха. «Чăвашран, Шупашкартан», тенĕ хыççăн тепĕр строфа вулатăн:

Утнă майăн харпăр пусăм
Шăплăхра ян-ян янрать.
Чул сасси те хамăн тусăм
Халь калаçнăн туйăнать.

Кунта сăнлăх элеменчĕсем пур, çавăнпа ку строфана вуласа пĕтеричченех: «Кун пекки ăçта пурччĕ-ха?» тесе ыйтатăн... Аса илме сăнлăх вăйĕ пулăшать. Эпир вара çак поэмăн чи малти йĕркисене аса илетпĕр:

Атăл хĕрринчен утуçăн
Эпĕ тухрăм урама.
Хам ура сасси яр-уççăн
Илтĕнсе пырать хама.

Вулакан татах хăйĕнчен хăй ыйтать: «Тата ăçта вуланăччĕ-ха? Ăçтаччĕ-ха?» Каллех шухăшлама, аса илме тытăнать... Вулакан хăйĕн юратнă поэчĕсен произведенийĕсене тимлĕн вулать, вĕсен кашни сăмахне асăнать. Вулакан ку чухне Яков Ухсайăн 1941 çулта уйрăм кĕнекепе пичетленсе тухнă «Ĕмĕт» ятлă поэмине аса илет. Унăн пуçламăшĕнче, «Ленин çурчĕ умĕнче» ятлă сыпăкĕнче, акă мĕн çырнă:

Эп утатăп, кашни пусăм
Шăплăхра ян-ян янрать,
Чул сасси те çывăх тусăм
Калаçни пек туйăнать.

Çапла, ку строфасенче пуринче те пĕр йышши сăмахсемпе, пĕр йышши танлаштарусемпе пĕр шухăш каланă. Çапах та, 1941 çулта çырнипе 1955 çулта çырни хушшинче мĕнле уйрăмлăх пур-ха? Автор пĕррремĕш йĕркене халĕ улăштарнă: «Эп утатăп, кашни пусăм» пулнă малтан (15 çул ĕлĕк), халĕ вара: «Утнă майăн харпăр пусăм» тесе тӳрлетнĕ, тĕрĕссипе каласан, пăснă. «Харпăр пусăм» тени— поэт чĕлхи мар, япăх куçаракан тăлмач чĕлхи. Виççĕмĕш йĕрке икĕ строфинче те килĕшӳсĕр илтĕнет («Чул сасси те çывăх тусăм...»: «Чул сасси те хамăн тусăм...») Тăваттăмĕш йĕркене илемлетнĕ: ...«калаçнăн туйăнать» тени «калаçни пек туйăнать» тенинчен аванрах.

Пĕтĕмĕшпе калас-тăк, поэт кунта пĕр шухăш çинчех тапăртатса тăрать.

1955 çулхи поэмăра поэт ытти хăш-пĕр йĕркесене те 1941 çулта çырнă поэмăран илнĕ. Акă вĕсем:

Тӳпере сап-сарă уйăх,
Сăнĕ — Атăл çийĕнче.
Тĕлĕрет мăн Атăл уйĕ
Улăхра, утрав çинче.

Тӳпере сап-сарă уйăх,
Сăнĕ — Атăл çийĕнче.
Çывăрать вăрман та улăх,
Хир те Атăл леш енче.

Кăçал пичетленнĕ текстра авторăн чĕлхи якарах, илемлĕрех, анчах шухăшĕ малтанхинчен нумаях улшăнман.

Поэмăн 1941 çулта пичетленнĕ текстĕнче çакăн пек строфа пур:

Янраса кĕпер кĕрлерĕ,
Çутă поезд-мĕн кĕрет.
Чĕнтĕрлĕ Чĕмпĕр кĕперĕ
Шавлă пулнă ĕлĕкрен.

Мĕнешкел илемлĕ строфа! Сăвăри сăмахсем янраса, кĕрлесе кăна тăраççĕ. «Чĕнтĕрлĕ Чĕмпĕр кĕперĕ» тенине вуласан, Чĕмпĕр кĕперĕ кĕретĕнех куçа курăнать, кĕрленĕ пек туйăнать. Кунта поэт аллитераци меслечĕпе чăннипех те ăста усă курнă. Анчах та мĕншĕн-ха Чĕмпĕр кĕперĕ «шавлă пулнă ĕлĕкрен»? Çак ыйту поэт пуçне пырса кĕнĕ те эпир халĕ çеç илсе кăтартнă строфана вăл çапла улăштарнă:

Чĕнтĕрлĕ чугун кĕперĕ—
Çутă пуйăс кĕнĕрен—
Янраса кĕр-кĕр кĕрлерĕ
Васкамасăр, ерипен.

Сăмахсен çыхăнăвĕ енчен, рифмăсем енчен пăхсан, пирĕн шутпа, пĕрремĕш строфи иккĕмĕшĕнчен (çĕннинчен) пахарах, янравлăрах. Чăнах та, иккĕмĕшĕнчи çак рифмăсем: «кĕнĕрен» — «ерипен» пĕр шайра тăмаççĕ, пĕр пек янраймаççĕ. Кунта икĕ йĕркинчен те—«рен» сыпăкпа вĕçленекен сăмахсем пулнă пулсан, питех те аван пулнă пулĕччĕ.

Çак тĕслĕхсенчен мĕн курăнать-ха? Пĕрре калана шухăшах тепĕр хут калани курăнать. Анчах мĕнле пулма пултарнă-ха вăл? Пирĕн шутпа, ку «инкек» акă мĕнле пулса тăнă: поэт хăйĕн 1941 çулта пичетленсе тухнă произведенине 1955 çулта çĕнетме, юсама шут тытнă: юсанă, юсанă... поэмăн сюжечĕ йăлтах улшăнса кайнă, анчах унăн «кăшкарĕ» кăштах юлнă, хăш-пĕр строфасем, йĕркесем ним улшăнмасăрах çĕнĕ текста кĕнĕ.

«Ленин çурчĕ умĕнче» поэмăна (хальхи вариантне) çĕнĕ произведени теме пулать-и? Пулать. Мĕншĕн тесен унăн сюжечĕ йăлтах урăх, çĕнĕ сюжет. Çапах та вăл вăйлă произведени мар,— Ухсай лайăхрах, вăйлăрах çырма пултарнă. Талант пур çинчех çавăн пек çителĕксĕр тăрăшнине тӳрре кăларма нимле сăлтав та çук.

«Ленин çурчĕ умĕнче» поэмăна тата çак енчен кăштах «тиркес» килет: авторăн, Ленин çурчĕ çине каçхи куçпа

мар, кăнтăрлахи куçпа пăхмалла пулнă. Поэмăри «герой» (ăна автор теме те пулать; хăшĕ-пĕрисем пек каласан, ăна «лирический герой» теме юрать) Ульяновск хулине çĕрле, çур çĕр иртсен, пырса кĕрет; вăл «кĕмĕл уйăхлă çĕрле» «сап-сарă уйăх» çуттинче çӳрет, малтан Ленин вĕреннĕ гимнази патне, унтан Ленин çуралнă çурт патне çитет. Поэмă валли илнĕ вăхăт — хулана каçпа пырса кĕни, каçпа çӳрени — автора хăйĕн ăсталăхне кăтартма, шухăшĕсене сарма, таранлатма, пирĕн шутпа, нихăш енчен те пулăшмасть; кăнтăрлахи, хĕвел çутти йăлтăртатса тăнă чухнехи вăхăта илнĕ пулсан, автор курнисем анлăрах, ытларах пулнă пулĕччĕç, çапла вара, унăн «лирический геройĕ» нумайрах курнă, ытларах сăнанă пулĕччĕ. Каçпа вăл çуртсене çеç курать, пĕр çынна та тĕл пулмасть, шăпплăхра хăйĕн ури сасси кăна илтĕнет... Çапла, кунта автор хăйне хăех пӳлнĕ, шухăшне ансăрлатнă, ăшăхлатнă. Поэтăн историлле пĕлĕвĕсем поэмăна кĕреймен, пултарулăх фантазийĕ çунат илеймен, поэмăра искусствăпа истори пĕрлешеймен.

Этемлĕх 19-мĕшпе 20-мĕш ĕмĕрте çуратнă гений çинчен, историе никам курман-илтмен хăватлă теоретик çинчен, вырăс халăхĕн ăсларан та ăслă ывăлĕ çинчен, халăхăн, Коммунистсен партийĕн çулпуçĕ çинчен çырнă произведенисем чи хăватлă, чи паха произведенисем пулмалла,— çакăн пек ыйтать пирĕн халăх.

* * *

Халĕ тата Яков Ухсайăн «Ялав» журналти (8-мĕшпе 10-мĕш номерсем, 1955 ç.) сăввисене кĕскен пăхса тухар. Пĕтĕмпе вун тăватă сăвă, анчах вĕсем, пĕр çын çырнăскерсем пулин те, пачах та пĕр пек мар: чăннипех те паха сăвăсем хушшинче якатса çитерейменнисем те пур; пахисенче Ухсай таланчĕ çиçсе тăрать, начаррисенче — поэт васкани, ăсталăх ыйтăвĕсене манса кайни, чĕлхе илемлĕхĕшĕн тăрăшсах кайманни курăнать.

Я. Ухсайăн «Ялав» журналăн 8-мĕш номерĕнче пичетленнĕ сăввисенчен чи пахи —«Вăштăр-вăштăр çил вĕрет» тенĕ йĕркесемпе пуçланакан ятсăр сăвă. Унта ĕç хаваслăхĕпе илемĕ чуна савăнтарать. Сăвви те янăравлă, хитре. Анчах вулакан çапах та: «Ку сăвăра хăçанхи ĕçе кăтартса панă?» тесе ыйтма пултарать. Тĕрĕс ку! Мĕншĕн тесен çак сăвăра самана сăнĕ, вăхăт сăнĕ çукпа пĕрех. Чĕлхе тĕлĕшпе илсен, ку сăвăра та тĕрĕсех мар вырăнсем тĕл пулаççĕ. Акă пĕр тĕслĕх:

Халăхпа куккук пĕрле
Килĕшсе кĕрле-кĕрле
Юрласа илсен...

Çак йĕркесен содержанийĕ пирки поэт шухăшласа пăхман пулмалла, вăл кунта формă хыççăн, янравлăх хыççăн кайнă пулмалла. Чăнах та, халăхпа куккук «килĕшсе кĕрле-кĕрле юрланине» мĕнле ăнланмалла-ха? Халăх «кĕрле-кĕрле» юрлама пултарать, тейĕпĕр, ун пек калани шухăш енчен те, сăмахĕсем енчен те вырънлă та тĕрĕс. Анчах куккук «кĕрле-кĕрле юрлать» тени тĕнчере пулма пултарайман япала: куккук кĕрлемест те, юрламасть те, «чăваш куккукĕ» яланах авăтать (ахальтен мар чăваш халăх юрринче: «Вун ик куккук пĕр карăш авăтаççĕ пĕр харăс», тенĕ). Вырăссем те автан «юрлать» теççĕ пулин те, куккук юрлать темеççĕ, вĕсем «петух поет», «кукушка кукует», теççĕ. Чăвашсем «автан авăтать», «куккук авăтать» теççĕ. Мĕн тăвас-ха? Халăх чĕлхи çавăн пек, халăх чĕлхине хирĕç кайма çук.

Çакăн пек лĕчĕк çитменлĕхсем пур пулин те, Ухсай ку сăвва тăрăшса çырни курăнать. Унта чăн-чăн ăсталăх сисĕнет:

Ваштăр-ваштăр вĕр те, çил,
Лăпкă-лăпкă шăл та ил
Пит çинчи тара!
Аслă улăх варринче
Çӳллĕ çирĕк тăрринче
Савăк вăхăтра
Авăтать куккук,
Чăп-чăпар куккук.

Ку йĕркесем, хăшĕ-пĕрисем калашле, чăннипех те «шыв пек юхса» пыраççĕ. Шывĕ вара «тăрна куçĕ пек таса», шăнкăрав саслă!

Паха сăвăсенчен тепри —«Хĕр юрри». Шухăшĕ çакăн пек: халь çеç киле таврăннă салтакăн чунне ял урамĕ сарлака пулни «касать», анчах ăна ял урамĕ мар, сар хĕрпе каласма пĕчĕк сад, пĕрле ларма хăма сак кирлĕ пулнă; çапах та, хĕрпе каччăн ырă юратăвĕшĕн сарлака урам кирлĕ, мĕншĕн тесен вĕсен мăшăрланмалла, туй тумалла. Хĕрпе каччă пĕтĕм ялпа туй туса, халăх умне тухса, мăшăрланма шутлаççĕ пулсан, вĕсен юратăвĕ чăннипех те çирĕп юрату пулмалла. Хальхи хăш-пĕр каччăсем халăх умĕнче пĕрре шеп туй туса хăйĕн мăшăрĕпе ватăличчен пĕрле пурăнас вырăнне, ашшĕ-амăшне те пулин систермесĕр, çич-сакăр

«туй» тăваççĕ, анчах çирĕп çемье тăваймаççĕ... Кун пек хăтланни ĕç çыннисене нихçан та килĕшмен, вăл нихăш самана та халăха юрăхлă йăла пулман. Социализм саманинче вара ун пек хăтланни капитализм е феодализм саманинчи аскăнчăк этемсен ирсĕр йăли юлашкийĕсем палăрнине çеç пĕлтерме пултарать. Яков Ухсай сăввине вуласан, пирĕн çамрăксем чипер ӳсчĕр, çитĕнччĕр, пĕрне пĕри юратчăр, тăванĕсене, пĕлĕшĕсене, тусĕсене чĕнсе туй туччăр, ташлаччăр, юрлаччăр, тесе калас килет. Ырă яланах ырра вĕрентет. Ырă сăвă та çавах: вăл вулакансене ырă шухăш парать, чунне уçать, ырă ĕç тума хаваслантарать.

«Хĕр юрри» сăввăн çитменлĕхĕ пирки калас пулсан, каллех вăхăт сăнĕ пирки асăрхаттарас пулать: сисĕнмест вăл!

Вăхăт сăнне хăш чухне сăвă шухăшĕ кăна мар, унти ĕçсем кăна мар, сăвăри сăнлăхсем, сăмахсем лайăх кăтартса параççĕ. Тепĕр чухне пĕр сăмах та сăвă мĕнле вăхăта кăтартнине каласа хăварать. Акă, сăмахран, Ухсайăн «Пĕлĕтсем» ятлă сăввинех илер-ха. Мĕн çинчен каланă унта? Пĕлĕтсем Чăваш çĕршывĕ çине çитсен, анлă Атăлпа Сăртан шыв илни çинчен, çапла вара, пирĕн патăмăрта çумăр çума пуçлани çинчен, унтан çумăр Йошкар-Олана, Хусана, Пушкăрт çĕршывне çитни çинчен каланă. Поэт чăвашсен, марисен, тутарсен, пушкăртсен тыр-пул вăйлă пуласса шанать, çак шухăшпа хавасланса сăвă çырать. Ку вăл — совет халăхĕсем хушшинчи тăслăх идейи. Пушкăрт çĕрĕ çине çумăр пĕлĕчĕсем çитни çинчен:

Ман тус Сайфи Кудаш
Пĕлтерĕ хăйĕн сăввинче,—

тет чăваш поэчĕ. Çапла вара, пушкăртпа чăваш поэчĕсем, вĕсен халăхĕсем пĕр-пĕринпе туслă пурăннине, Сайфи Кудаш вăхăтне (хальхи вăхăта) куратпăр. (Сайфи Кудашăн икĕ сăввине кăçалхи «Ялавăн» 7-мĕш номерне кĕртнĕ; вĕсене Митта Ваçлейĕ питĕ ăста куçарнă).

Произведенири ĕçсемпе çынсем тăрăх, вĕсен шухăшĕ тăрăх самана палăрать, вăхăт сăнĕ тухса тăрать. Çавна кура эпир: ку писатель иртни çинчен е хальхи çинчен çырать, тетпĕр. Тепĕр чухне ним те калама пĕлместпĕр, мĕншĕн тесен произведенире ним те курăнмасть: унăн шухăшĕ те ăшăх, форми те шупка, вăл пушă пучах пек çеç курăнса тăрать. Шел пулин те, кун пек сăвăсем хăш-пĕр чухне пирĕн литературăра тĕл пулаççĕ-ха. Тепĕр чухне сăвă кăна мар, калав та вăхăт çинчен калаймасть. Тĕслĕх вырăнне

И. Тукташăн «Пурнăç пуçламăшĕ» ятлă калавне илме пулать. Калавĕ лайăх, илемлĕ. Анчах унта революцичченхи мĕнле вăхăт, мĕнле тапхăр çинчен çырни пачах та паллă мар. Калав геройĕсен нацилле характерĕ те курăнмасть. Çавăнпа та хăш халăх çинчен сăмах пынине те пĕлме хĕн. Ун пек произведенисене (калава та, сăвва та) пĕр чĕлхерен тепĕр чĕлхене куçарма та йывăрах мар, мĕншĕн тесен тăлмач умĕнче ку чухне произведенин нацилле формине, унăн нацилле колоритне упраса хăварас йывăр та кăткăс задачă тăмасть. Произведенин нацилле форми пуян та паха пулсан, ăна тепĕр чĕлхене куçарма йывăртарах, анчах вăл тепĕр чĕлхене куçарсан та хăйĕн илемлĕх вăйне те, шухăшсен витĕмлĕхне те ытлашши çухатмасть.

Яков Ухсайăн «Çул çинче» сăвви, пысăкскер, ыттисемпе танлаштарсан, нумай тирпейсĕртерех. Поэт паха шухăш тытнă, анчах тĕплĕ çырайман. Чĕлхи — сăвă чĕлхи мар, çӳпĕллĕ чĕлхе. Сăвă тени вăл вуланă чухне чĕлхене ан такăнтартăр, сăвă тени шăранса, ярăнса, юрланса пытăр. Вырăссен ăслă критикĕ Н. Г. Чернышевский кашни сăвă юрлама юрăхлă пултăр тенĕ. Анчах Ухсайăн ку сăввине юрлас пулсан,— ах, çырлах!— мĕнле юрламалла-ши? Унта çакăн пек йĕркесем те тĕл пулаççĕ:

Тем пек Тăван çĕршывăма
Чĕре тулли тата, тата
Нумай пĕлме, нумай курма
Çӳрерĕм эпĕ çу хута.
Пĕр уйăх та, çулталăк та,
Вуншар çулсем хушши те кай.
Тухса çӳре, анчах малта
Курас тени тата нумай.
Тата та тепĕр çӳреме,
Илтме, пĕлме хисте-хисте
Васкатĕ чун, пур илеме
Курасшăн пулĕ пур çĕрте.

Мĕне пĕлтерет «чĕре тулли тата, тата...» тени? Мĕнле илем пур çав çине-çинех каланă «татасен»? Çакă вăл сăмах купи мар-и? Çӳпĕ мар-и? Хăш чухне вырăнсăр лартнă пĕр «тата» та пуплеве пăсать, унăн сăнне, сассине илемсĕрлетет. Сăвă тумĕ илемлĕ пулмалла, ăна тĕрлĕ «татасемпе» сапласа тумалла мар. Çĕтĕк-çатăк сăхман пек сăмах тĕрки сăвă тумтирĕ пулма пултараймасть.

Ку сăвăра «висячая строка» тенĕскерсем нумай (чăвашла вĕсене «çакăнса тăракан йĕркесем» тенĕччĕ пĕри; пирĕн

шутпа ӑна «ҫакӑнчӑк йӗркесем» тесен лайӑхрах пек). Акӑ вӗсем — ҫакӑнчӑк йӗркесем:

**Ума тухса тӑрать таса**
Ҫаран таврашӗнчи вӑрман.
**Пӑхса тӑратӑп, шухӑша**
Кӗртетӗп эп йӗркесене.

Ҫакӑн пек йӗркесем, вырӑна кӗртсе (лартса) ҫитереймен «ҫакӑнчӑк йӗркесем», Ухсайӑн, шел пулин те, ытти произведенийӗсенче те час-часах тӗл пулаҫҫӗ. Хӑш чухне вӗсем рифмӑ тӑвас тенипе сӑвва кӗрсе каяҫҫӗ, тепӗр чухче поэт хӑйӗн сӑввисен ҫитменлӗхӗсене туйса илеймен пирки пулаҫҫӗ. Акӑ пӗтӗмӗшпех ҫавӑн йышши йӗркесенчен тунӑ строфасем:

Пӗр ик ҫӗр ҫитмӗл миллион
Ҫул ӗлӗк тинӗс тӗпӗнче.
Капланнӑ нефть—хӑватлӑ юн—
Нумай чӗр-чун кӳлепинчен.
    Совет науки хушнипе
    Аста ҫынсем паян кунта
    Чаваҫҫӗ ҫивӗч пӑрипе
    Ик ҫухрӑм тарӑнӑш шалта.
Кунта кӑларнӑ бензинпа—
Ҫеҫен хирти чи хӑвӑрт ҫил
Хуса ҫитми — нумай ҫулпа
Ҫӳрет пиншер автомобиль.

Чӑннипех калӑпӑр: сӑвӑ мар ку, начар прозӑ кӑна! (Прозаиксем ан кӳренччӗр! Эпир лайӑх прозӑна хурламастпӑр, начаррине — сӑвва та, калава та йышӑнмастпӑр!) Паллах, автор ку сӑвва та рифмӑсемпе ҫырнӑ, ҫапах та сӑвӑ пулайман, мӗншӗн тесен рифмӑланипе кӑна сӑвӑ пулмасть: рифмӑланӑ сӑмахсем илемлӗ пулмалла, вӗсем пӗрпӗр паха шухӑш тумӗ пулмалла, янраса тӑмалла. Унсӑрӑн вӗсене пуҫра тытса хӑварма ҫук, унсӑрӑн вӗсем «сӳтӗлсех» пыраҫҫӗ.

Ухсайӑн ҫак сӑввинчи шухӑшӗ —«нефть философийӗ»— тӗрӗсех мар. Нефть пӗр 270 миллион ҫул ӗлӗк тинӗс тӗпӗнче капланнӑ, тет вӑл. Анчах унта вӑл ӑҫтан пырса капланнӑ-ха? Хими вӗрентнӗ тӑрӑх, нефть таҫтан пӗр тӑрук, тӳрех пырса капланман, майӗпен пухӑнса пынӑ (нефть процессӑр пулнӑ япала мар). Нефть «нумай чӗрчун кӳлепинчен» пырса «капланнӑ» тени те тӗрӗсех мар, мӗншӗн тесен нефть пуринчен ытларах йывӑҫ-курӑк юлашкисенчен пулса кайнӑ. Ҫакна М. В. Ломоносов 1763 ҫултах кӑтартса панӑ. Ку шухӑша геохими халӗ те тӗрӗс тесе шутлать.

Поэт нефть кăларнă чухне çĕре мĕн таранăш чавнине те каласа парать («ик çухрăм таранăш»). Çакна асăрхаттармалла: кунта «чавассĕ» сăмах мар, «пăралассĕ» сăмах выранлă. Тепĕр енчен тата мĕншĕн «икĕ çухрăм» çеç? Халĕ икĕ çухрăм кăна мар, 5,5 километр таранăш те пăралассĕ.

Малтарахра илсе кăтартнă виçĕ строфаран юлашки строфине калама çук «искусственнă» тунă. Чăнах та, çак пуплев (предложени) йĕркеллĕ пуплев пулма пултарать-и-ха: «Кунта кăларнă бензинпа — çеçен хирти чи хăвăрт çил хуса çитми — нумай çулпа çӳрет пиншер автомобиль?» Çакăнчăк йĕркесем прозăра та («ашапатман карчăк» шăлĕсем пек) сулланса тăмассĕ-и?

Вырăссен аслă поэчĕн А. С. Пушкинăн сăввисем шыв пек юхса пыраççĕ, теççĕ. Тĕрĕс! Çавăнпа ĕнтĕ вĕсене вулама çăмăл. Вĕсем пĕр-ик хут вуласанах пуçа кĕрсе юлаççĕ. А. С. Пушкин вырăс чĕлхине питех те лайăх пĕлнĕ, никамран та лайăх туйнă, çапах вăл никамран та нумай ĕçленĕ, тăрăшса çырнă, çĕнĕ рифмăсем шыранă, сăвă техникине çĕнетме тăрăшнă. Вăл 20-мĕш çулсенче «чаплă онегин строфине» тĕпчесе тупнă пулсан, 30-мĕш çулсенче сăввăн çĕнĕ виçисем, çĕнĕ йĕркисем пирки шухăшлама тытăннă.

> Четырехстопный ямб мне надоел:
> Им пишет всякий. Мальчикам в забаву
> Пора б его оставить. Я хотел
> Давным-давно приняться за октаву.
> А в самом деле: я бы совладел
> С тройным созвучием. Пущусь на славу!
> Ведь рифмы запросто со мной живут;
> Две придут сами, третью приведут.

Ку йĕркесем А. С. Пушкин сăвăсене мĕн тери тăрăшса çырни çинчен каланă вăхăтрах аслă поэт рифмăсене çăмăллăн тупни çинчен, мĕнле сăмах юрăхлине питĕ хăвăрт туйса илни çинчен каласа параççĕ.

Вырăссен поэчĕсем нумайăшĕ Пушкинран вĕреннĕ. Сăмахран, Пушкин традицийĕсене тытса пыракан вырăс поэчĕсенчен пĕри — А. Майков хăйĕн пĕр сăввинче «сăвă музыки пирки» çакăн пек сăмахсем çырнă:

> Гармонии стиха божественные тайны
> Не думай разгадать по книгам мудрецов:
> У брега сонных вод, один бродя, случайно,
> Прислушайся душой к шептанью тростников,
> Дубравы говору, их звук необычайный
> Прочувствуй и пойми... В созвучии стихов
> Невольно с уст твоих размерные октавы
> Польются звучные, как музыка дубравы.

Хăшĕ-пĕрисем: кунта сăмах октавă (сакăр йĕркеллĕ сăвă) çинчен пырать, яланах октавă çырма çук, тейĕç. Тĕрĕс! Анчах кирек мĕнле пулсан та поэтăн чĕлхешĕн, сăвă техникишĕн, илемĕшĕн тăрăшмалла. Çакă вăл, паллах, сăвă техникипе «илĕрсе каймаллине», рифмă тăвассишĕн «çунса», сăмахсене мăкăлтамаллине пĕлтермест. Сăвă тени вăл яланах сăвă пек пултăр, чĕлхи этем чĕлхи пек пултăр, ăна çамрăкки те, ватти те юратса вулатăр, савăнтăр. Вулана чухне юрласа ятăр!

Пирĕн Çеçпĕл Мишши Пушкин пек ĕçленĕ, сăввăн çĕнĕ виçине, çĕнĕ рифмисене шыранă, тупнă, тоникă системи чăваш сăввишĕн юрăхлине кăтартса панă. Анчах вăл нумаях ĕçлеймен, чăваш совет поэзийĕн пархатарлă ĕçне пуçланă çеç. Апла пулсан, çак ĕçе хальхи поэтсен малалла туса пымалла, тăрăшмалла, вĕренмелле, пĕлекеннисен пĕлменнисене вĕрентмелле.

1830 çулта А. С. Пушкин: «Эпĕ пичетленме тытăннăранпа 16 çул çитрĕ ĕнтĕ, критиксем манăн сăввăмсенче 5 грамматикă йăнăшĕ тупрĕç», тенĕ. Ыйтасчĕ: пирĕн поэтсенчен хăшĕ çавăн пек калама пултарать-ши? Тен, Хусанкай калĕ... тен, Алка... Тен (ну тата кам?)... Шел пулин те, çавăн пек калама пултаракан поэтсем пирĕн питех те, питех те сахал-ха. Каллех калатпăр: сăвă вăл чăннипех те сăвă пултăр, сăвăра чĕре, ăс, илем пултăр,— унсăр вăл çунатсăр кайăк. Сăвă çынсен чĕрине хумхантартăр, ăсне вăраттăр, илем тупăмĕсене çĕклетĕр, кĕрешĕве чĕнтĕр.

Хăшĕсем: «Статья авторĕ Пушкинран, Майковран вĕренме чĕнни вырăнсăр. Тупнă камран вĕренмеллине...»— тесе хирĕçлеме пултараççĕ. Анчах чăвашсен Пушкинсем пулман пулсан, мĕншĕн вырăс пушкинĕсенчен, вырăссен ытти поэчĕсенчен вĕренес мар? Мĕншĕн вĕсен опытне, ырă традицийĕсене тиркес?

...Яков Ухсай хăйĕн çак ярăмри икĕ сăввинче поэзи ыйтăвĕсене хускатнă. Поэзи ыйтăвĕсем пирки çырнă сăвăсем вырăс литературинче те час-часах тĕл пулаççĕ. А. С. Пушкин, М. Ю. Лермонтов, Н. А. Некрасов, В. В. Маяковский тата ытти поэтсем те çавăн пек сăвăсем çырнă, хăйсем поэзи çине мĕнле пăхнине каласа панă. Çав произведенисем тăрăх эпир вĕсен эстетикăлла ăнланăвĕсене пĕлетпĕр.

Çеçпĕл Мишши хăйĕн эстетикăлла принципĕсене «Тинĕсе» ятлă сăввинче каласа панă:

Çĕн поэт ака та тутăр,
Утă çултăр,

Вута çуртăр,
Еçлесе çĕн юрă хутăр,
Туй пулсан,— ташлатăр, култăр...

Ку йĕркесен тĕп шухăшĕ çакăн пек: поэт (çĕнĕ поэт, совет поэчĕ) халăхпа çыхăнса тăмалла, халăх ĕçне тумалла, халăх пурнăçĕпе ĕçне, кĕрешĕвне хисеплесе, мухтаса çĕнĕ юрă хумалла.

Эпир статьяра асăннă сăвăсенчен пĕринче Яков Ухсай темле каппайчăк поэта хурласа, тăрăхласа çырать. Малтанхи йĕркерех вăл: «Поэт теме ăçта чĕрӳ кăварĕ», тесе ыйтать. Ку ыйту — ырăнлă ыйту: поэтăн «чĕре кăварĕ» пулмалла (Çеçпĕл поэта «вут-кăварлă чĕре» тенĕ). Ухсай тиркесе ятлакан поэтăн çавăн пек чĕре çук пулмалла. Ухсай «чĕре кăварĕ» пулманнине намăс ырăннех хурать, урăхла пулсан, мĕншĕн-ха вăл поэта: «Питӳ çунмасть-и халăх умĕнче?» тесе ятлатăр? «Кăвар чĕре» пулманни айăп тунине пĕлтермест, вăл çав поэтăн илемлĕх туйăмĕ мăка пулнине е пачах çуккине çеç пĕлтерет, вăл поэт пулма çуралманнине çеç пĕлтерет. Хирĕçлемĕпĕр, çавăн пек «поэтсем» хăш чухне литературăра тĕл пулаççĕ-ха. Çавăн пек «поэтсем», хăйсен чăн-чăн çулне тупайман çынсем, çыркалаççĕ-çыркалаççĕ (çырассинчен ытларах кăшкăраççĕ-кăшкăраççĕ те), поэзире ĕç ăнманнине аран-аран ăнланса илеççĕ, вара урăх ĕçе тытăнаççĕ: хăшĕсем учитель, агроном, врач, инженер пулмашкăн вĕренме тытăнаççĕ, лайăхах вĕренеççĕ, вĕренсе тухсан, хăйсен чăн-чăн хастарлăхне, талантне кăтартса параççĕ; теприсем — инженер е агроном пулмасăрах усăллă ĕç тăваççĕ, обществăна пулăшаççĕ. Обществăшăн тăрăшса ĕçлекенсене пирĕн халăх хисеплет, вĕсен ĕçри ӳсĕмĕсене ырă кăмăлпа йышăнать.

Ухсай каланă тăрăх, çав каппайчăк поэтăн шухăшĕ те çук:

Çӳçӳ арпа. Пуш-пушă унăн айĕ.
Пĕрех те пĕрчĕ шухăш çук унта.

Çапла пулин те, сăвă авторĕ каланă тăрăх, вăл «тарăн шухăша» кайса тăрать. Мĕнле-ха вăл «пĕр пĕрчĕ шухăшсăр» çын тарăн шухăша кайтăр? Тарăн шухăш ăс пулнине пĕлтерет, ним ăссăр, ним шухăшсăр çын нихçан та тарăн шухăша каймасть: вĕсене çав тивĕçе çутçанталăк (природа) паман,— тарăн шухăш вăл ăслă çын пахалăхĕ, тăр-ухмаха пӳрмен япала.

Малалла Ухсай çав чĕре кăварĕсĕр, пĕр пĕрчĕ шухăш-

сăр каппайчăк «поэта» чěнсе, пулăçсен вучахне кăтартса, çапла калать:

Поэзи сивěнě, сана пăрахě,
Илемлě хěр качча пăрахнă пек.
Куратăн-и, шыв урлă инçетре
Çунать тарменлě пулăçсен вучахě?

Çакна пěлтерне хыççăн Ухсай (Çеçпěл Мишши шухăшне аса илсе пулас) «каппайчăка» пулăçсем патне чěнет:

Атя каяр! Пире çěрле унта
Шыва чăмса ишме хавaслă пулě,
Сěрекепе сěрсе кăларнă пулă
Сиккелě, авкаланě умăнта.

Сăвă авторě кунта поэтăн халăхпа çыхăнса тăмалла тесе каласшăн пулнă пулмалла, анчах ăна этем ăнланмалла калайман. Тěрěссипе илсен, çак сăвăра пирěн поэт çěннине нимех те параймаи, Çеçпěл 35 çул ěлěкрех каланă шухăшсене çеç аса илнě, вěсене те пулин пăтраштарса, такамран тарăхса, такама витлесе каланă.

* *
*

«Ялав» журналăн 10-мěш номерěнче Яков Ухсай сăвăсен ярăмě пичетлесе кăларнă (пěтěмпе 6 сăвă, сăввисем пурте ятсăр). Ку сăвăсене автор тăрăшарах çырни курăнать, вěсен юлашки йěркисем автор шухăшне лайăх вěçлесе параççě.

Пěр сăввине автор иртнě вăрçă кунěсем çинчен çырнă. Поэт кěрхи çěрле хăватлă çиллě çумăр кěрленě чухне, тěттěмре вут сикнě вăхăтра, хăйěн тăван килне аса илет.

Ун чух пире хěвел пек ăшăтатчě
Киле аса илни çеç сивěре,—

тет поэт. Пирěн шутпа, иккěмěш йěркере «çеç» вырăнне «те» тесе çырмалла пулнă, вара сăвва вěçлекен шухăш вырăнлăрах, тěрěсрех пулнă пулěччě.

Иккěмěш сăвă илемлě. Амăшě хăйěн ачине çутă уйăхлă каçсенче çывăратмашкăн сăпкана вырттарма тăрăшнă, ача урама туха-туха тарнă. Халě поэт, уйăх çине пăхсан, çав вăхăта аса илет, сăввине вара çакăн пек паха сăнлăхпа вěçлет:

Халь те манăн уйăх сăнě пур:
Çўçěм тăнлавсем çинче шап-шур.

Виççěмěш сăввăн юлашки сăмахěсем афоризм пулса тăма та пултараççě:

Йывăр ĕçсенче этем чĕри паха.
Çавăнта шыратăп эпĕ туслăха.

Тăваттăмĕшĕ — тирпейлĕ, илемлĕ. Сăнлăх мĕн иккенне ăнлантарса панă чухне ăна тĕслĕх вырăнне илме те юрать:

Лартрăмăр эпир санпа пĕрер йĕкел.
Савнă тусăм, ан вăтан та ан хĕрел:
Пирĕн ачасем юман пекех парка,
Иккĕшин те хул пуççийĕ сарлака.
Çулçăсем пекех ачаш чĕлхисемпе
Калаçса иртеççĕ ял урамĕпе.

Пиллĕкмĕш сăвăра автор каллех поэзи ыйтăвне хускатать. «Сар шывлă, шăршăллă кӳлленчĕкре» пурăнакан, «шуйттан вăкри пек мĕкĕрсе» кăшкăракан шыв вăкри ятлă нăрă çинчен çырса панă хыççăн поэт литература ыйтăвĕсем патне куçать:

Ун пекултавлă саслă вăкăрсем
Поэзире те пирĕн пулкалаççĕ.
— Пĕрре те эп, тепре те эп,— тесе
Пĕри кĕрлет те сухăрать хăрушă.
Анчах тытса вулатăн пикенсе:
Сасси ытла та мăн, тĕшши пуш-пушă.

Кун пек поэтсем чăваш литературинче те курăнкалаççĕха. Хăшĕ-пĕрисен нимĕнле сăпайлăх та çук: вĕсемшĕн юлташ та юлташ мар, коллектив та коллектив мар, хăй çеç этем, анчах тĕрĕссипе илсен, вăл — ним йĕркесĕр, асар-писер, анархистла, улпутла этем. Çавăн пек поэт никамшăн та ырă тĕслĕх пулма пултараймасть, никама та ырă шухăш параймасть, мĕншĕн тесен поэтăн, вăл ырă шухăш калас тет пулсан, чи малтан хăйĕн ырă шухăшсем пулмалла, этем чĕри пулмалла, вăл вара чăннипех чунсен инженерĕ пулма пултарать.

Яков Ухсай ытти поэтсен çитменлĕхĕсене кăтартса пама, вĕсене юлташла тĕксе илме, хăш чухне çивĕччĕн критиклеме юрататать. Акă пĕр тĕслĕх:

Çыратăп вăтăр çул ытла та ĕнтĕ
Хĕрсем çинчен, хĕрсем çинчен кăна.
Тархасшăн, тусăмçăм, пĕрре пулин те,
Сăвва кĕртсе хăвар-ха арăмна!

Çавăн пек поэтсене çапла тăрăхласа, кулса çырнипе такам та килĕшме пултарать. Ун пек поэтсем пур-ха, хăш чухне вĕсем, тăнлавĕсем çинчи çӳçĕ шап-шур пулин те, туяпа, аран-аран çӳреççĕ пулин те, «юрату» сăввисем çырса, вата чунне йăпатаççĕ:

Янкăр çутă уйăхлă урам.
Мĕншĕн-ха килте пĕччен ларам?
Савнă хĕрĕн çурчĕ умĕпе
Эп иртем-ха шурă кĕпепе.

Шурă уйăх пăхнă урама
Çамрăк хĕр питне çеç кăтартма.

Ку сăвăсем иккĕшĕ те пире килĕшеççĕ, паха сăвăсем вĕсем. Эпир Ухсай шухăшне те ăнланатпăр: вăл лирикă мĕнне ăнланман поэтсенчен кулать (ун пек поэтсем вара пурах!). Вĕсем хĕрсем çинчен çырнă сăввисене лирикă теççĕ. Анчах хĕрсем пирки çерçи пек чĕвĕлтетсе çырнă сăвăсем лирикă яхăнне те пыраймаççĕ, вĕсем юрату лирики патне те çывхараймаççĕ. Лирикăллă сăвăсем çырас тетĕн пулсан, сăввусене «чĕре кăварне» пар, çынсен ырă туйăмĕсене хускатма пултаракан сăмахсем туп, хуйхă-суйха мантар, çынсене савăнтар, юрлаттар,— вара эсĕ те Пушкин пек калама пултаратăн:

...Чувства добрые я лирой пробуждал...

Эпир ытла нумай çырса тултартăмăр пулас, шухăшсене пĕтĕçтерме те вăхăт ĕнтĕ. Эппин пĕтĕçтерер, статьяна вĕçлер.

Яков Ухсайăн «Ленин çурчĕ умĕнче» поэми вулакансене çырлахтарма пултараймасть: ăна тирпейсĕр çырнă; «Çул çинче» ятлă сăвви те çавăн пекех тирпейсĕр. Вĕсенче автор чĕлхе культуришĕн, поэзи пахалăхĕшĕн тăрăшсах кайманни курăнать. Тен, вĕсене çавăн пек хаклани поэта килĕшсех каймĕ, анчах ваттисем калашле, тӳрĕ сăмахăн, чăн сăмахăн — суйи çук.

Ухсай — пысăк талантлă поэт, вăл хурапа шурра та нумай курнă, нумай вĕреннĕ (шкулта вĕренниничен ытларах пурнăçран вĕреннĕ), çапах та ку вăл вĕренӳ çине халĕ алă сулмаллине пĕлтермест. Ваттисен те, çамрăккисен те вĕренмелле,— Ухсайăн та вĕренмелле! Вырăс халăх сăмахĕ кашни çыннах: ĕмĕр пурăн — ĕмĕр вĕрен, тет. Ку вăл — кивелми сăмах.

Ухсай таланчĕ — малалла аталанса, çĕкленсе пыракан талант. «Кĕлпук мучи» поэмăпа «Çул» роман пек вăйлă произведенисем çырнă поэт хăйĕн талантне чакармĕ, вăйсăрлатмĕ, çĕнĕ те паха произведенисем çырĕ, пархатарлă ĕçĕпе халăха савăнтарсах тăрĕ. Çавăн пек пуласса шансах

тăратпăр, кĕтетпĕр! Çапла пулин те, юлташа тӳрĕ сăмах калас килет: ятлă поэтсен ытларах тăрăшмалла, мĕншĕн тесен ятлисенчен нумайрах ыйтаççĕ!

*1956*

### Иккĕмĕш статья

Эпир ку статьяра каллех Яков Ухсай произведенийĕсем çинчен çыратпăр. Статьян ячĕ те пĕрремĕшĕнни пекех: «Ятлисенчен ытларах ыйтаççĕ». Мĕншĕн çавăн пек ят? Эпир ăна пĕрремĕш статьяра ăнлантарса параймарăмăр, çавăнпа та халĕ ун пирки пĕр-ик сăмах калама кирлĕ тесе шутлатпăр.

Яков Ухсай — ятлă поэтсенчен пĕри. Ăна Чăваш республикинче кашни хуларах, кашни ялтах пĕлеççĕ, унăн произведенийĕсене шкулсенче вĕренеççĕ. Ку çеç те мар, Ухсайăн вырăсла куçарнă кĕнекисем («Стихи», «Дед Кельбук», «Перевал») пĕтĕм Совет Союзĕпех сарăлнă.

Ухсай тесен, пирĕн куç умне вун пилĕк-çирĕм кĕнеке тухса тăрать, Тутимĕр, Кĕлпук мучи, Калля тата ытти нумай геройсем курăнаççĕ. Кашни вулаканах Ухсайран çĕнĕ те паха произведенисем кĕтет. Урăхла пулма та пултараймасть: ку вăхăтчен ăнăçлă ĕçлесе пынă поэт малашне те ăнăçлă ĕçлемелле, ăнăçлă кăна мар, нумай ăнăçлăрах, лайăхрах ĕçлемелле. Çавăн пек ĕçлеме Ухсайăн опыт та, пĕлӳ те пур. Талант «валеçнĕ» чухне вăл «ура сырса» юлман, çав таланта аталантарас тĕлĕшпе ӳркенсе пурăнман.

Поэт ĕçĕ-хĕлĕ — пĕр хăйĕн ĕçĕ çеç мар, вăл — халăх пулăшнипе, халăх хавхалантарнипе пулса пыракан ĕç. Çавăнпа та халăх хăй çитĕнтернĕ, вĕрентнĕ, ăспа пуянлатнă поэтсенчен ытларах ыйтать, вĕсене асрах тытать, кĕнекисене алран ямасть. Халăх хăй юратнă писательсен ĕç-хĕлне, вĕсен литературăри утăмĕсене, çĕнĕ кĕнекисене тимлĕн сăнаса тăрать, ашшĕ хăйĕн ывăлĕн е хĕрĕн ĕçне сăнанă пек сăнать. Писатель ĕçне халăх çавăн пек сăнани совет саманинче нихăçанхинчен те вăйлă пулса пырать. Халĕ çав ĕç мĕн тери сарлака пулнине кăшт та пулин ăнланса илес тесен, çакна калани те çителĕклĕ: революцичченхи вăхăтра (тĕрĕсрех: революци умĕнхи вăхăтра) чăвашсем хушшинче хут пĕлекенсен шучĕ аран-аран 18 процента çитнĕ, халĕ çав процент темиçе хут ӳснĕ, халĕ кашни çын тенĕ пекех кĕнеке вулать. Çакă вăл, чи малтан, совет çыннисен культури ӳс-

нине, вĕсен ăс-тăнĕ, пĕлĕвĕсем пуянланнине кăтартса парать. Кĕнеке вулакан çын кĕнеке вуланипе хăйсен писателĕсен ĕçне тĕрĕслет, çав вăхăтрах хак парать: паха кĕнекешĕн савăнать, начар кĕнекешĕн хурланать (тарăхать те). Писатель ĕçĕ — халăха çĕнĕ шухăшсем парасси, халăхăн ырă туйăмĕсене, ăс-хакăлне аталантарасси, ĕçре пулăшасси. Ку ĕçе тума тарăн та ырă шухăшлă, ăста çырнă произведенисем кăна пултараççĕ.

Кашни писателĕн Н. А. Некрасов çырнă ăсларан та ăслă сăмахсене, Çеçпĕл Мишши пек, асра тытса ĕçлемелле:

Сейте разумное, доброе. вечное...

«Çеçпĕл Мишши пек...» терĕмĕр, мĕншĕн тесен Çеçпĕл аслă поэтăн сăмахĕсене хăйĕн сăвă тетрачĕн хуплашки çине çырса хунă пулнă, вĕсене хăйĕн девизĕ тесе шутланă. Вăл ытти поэтсене те çавăн пек ĕмĕр-ĕмĕрех пурăнакан, аслă та ырă шухăшсем сарма хушнă.

Çак тĕлĕшпе те тăван халăх хăйĕн ятлă писателĕсенчен ытларах ыйтать. Çавăнпа та ятлă поэтăн тăрăшарах çырмалла, творчество шайне чакармалла мар.

* * *

«Самана» — поэмăсен кĕнеки, унта тăватă поэмă: «Ленин çурчĕ умĕнче», «Чапаевпа тĕл пулни», «Халăхăн ылтăн кĕнеки» тата «Телей çинчен хунă юмах». Çырасса вĕсене тĕрлĕ вăхăтра çырнă (1937—1955). Ку произведенисем çинчен пирĕн хаçат-журналсенче çырман мар,— нумай çырнă! Анчах эпир ку статьяра çав авторсен шухăшĕсене тепĕр хут каласа парас тĕллеве мар, хамăр шухăша çырса парас тĕллеве тытса пыратпăр. Статьян тепĕр тĕллевĕ — автора пулăшасси. Çапах та, пирĕн статья — критикăллă статья: унта кĕнеке авторне ырлани те, юлташла ятлани те пур; çапах та ырланинче те, ятланинче те пĕр шухăш çип çапнă пек курăнса тăрать: Ухсай — ятлă поэт, ятлисенчен ытларах ыйтаççĕ!

«Ленин çурчĕ умĕнче» поэмăна эпир пĕрремĕш статьярах кăштах тишкĕрсе тухнăччĕ. Халĕ эпир çав поэмăна тепĕр хут вуланă чухне пуçа килнĕ шухăшсене çеç каласа парăпăр. Ку поэмă — Ленин çурчĕ умĕнче чăваш поэчĕ мĕнмĕн шухăшлани çинчен калакан произведени:

Елĕкхи хула гимнази
Пулнă **çуртăн умĕнчен**
Иртнĕ чух, мĕнле кăна-ши
Калăп **туйăмăм çинчен?**

Тухакан хӗвел тымарӗ
Йӑмӑхать тӳпе ҫинче.
Шухӑшӑм мана ямарӗ
Чаплӑ ҫуртӑн умӗнчен.

Ирхине урам шӑпран шӑп,
Вӑранман-ха ыйхинчен.
Эпӗ пуҫ тайса тӑратӑп
Ленин ҫурчӗ умӗнче.

Поэт Чӗмпӗре (Ульяновска) ҫур ҫӗр иртсен пырса кӗрет те хӗвел тухнӑ вӑхӑтра тухса каять. Ҫакӑн чухне вӑл Ленин ҫурчӗ умӗнче пулать, анчах шала кӗрсе кураймасть. Ленин ҫуртне тулашран курнипех те поэт шухӑшӗн «хӑвачӗ саралать» (поэмӑн иккӗмӗш строфине вулӑр). Ҫурт ӑшне кӗрсе, Ульяновсем пурӑннӑ пӳлӗмсене, Ленин утса ҫӳренӗ урая, ларнӑ тенкелсене, вӑл тытнӑ япаласене, вуланӑ кӗнекесене тата ыт. курнӑ пулсан, поэт шухӑшӗн хӑвачӗ, тен, ытларах саралнӑ пулӗччӗ. Унта вӑл, сӑмахран, Н. Г. Чернышевскин саралса кайнӑ «Мӗн тумалла?» ятлӑ кӗнекине (ӑна Володя Ульянов юратса вуланӑ), Н. А. Некрасов сӑввисене, ҫавӑнтах — Карл Маркс «Капиталне» курнӑ пулӗччӗ. (Маркс «Капиталне» Александр Ульянов Питӗртен илсе килнӗ, В. Ульянов ӑна Чӗмпӗртех, вун ҫичӗ ҫултискер, вуланӑ). В. И. Ленин ҫамрӑклах хӑйне революционер пулма, халӑх телейӗшӗн кӗрешмешкӗн хатӗрлеме тытӑннӑ. Анчах В. И. Ленин халӑхсен телейӗ ҫӗр ҫине хӑй ӑссӗн килессе кӗтмен, ӑна кӗрешсе илме рабочи класа хатӗрленӗ, унӑн партине организациленӗ.

Я. Ухсай хӑйӗн поэминче ҫамрӑк Ленина Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗпе ҫыхӑнтарса, унӑн сӑнарне кӑтартса парас тесе, ҫакӑн пек йӗркесем ҫырать:

Шурӑмпуҫ хуллен пуҫларӗ
Кӗмӗл чаршавне карма.
Аслӑ Ленинӑн сӑнарӗ
Чӗррӗн тухрӗ ман ума.

Ҫамрӑк Ленин кайкаланӑ
Чӗмпӗрти чӑваш шкулне.
Юратса вӑл алӑ панӑ
Ҫӑпаталлӑ ҫынсене.

Мӗскӗнсен телей ҫӑл куҫӗ
Сӗр ҫине тухассине
Халӑхсен пулас ҫулпуҫӗ
Витӗр курнӑ ун чухне.

Мăшкăлпа асап путланĕ,
Пур ҫынна та кирлĕ чыс...
Пысăк шухăш шухăшланă
Сарă ҫӳҫлĕ гимназист.

Тĕрĕссипе каласан, кунта ҫамрăк Ленин сăнарне кăтартса парайман, ҫавăнпа та «аслă Ленин сăнарĕ чĕррĕн тухни» курăнмасть. Ҫак тăватă строфара Ленин сăнарне палăртакан йĕрке пĕрре ҫеҫ («сарă ҫӳҫлĕ гимназист»). Ҫыннăн сăнарне, паллах, унăн шухăшĕсем те, кăмăлĕ те кăтартса парать, анчах ҫӳлтерехре илнĕ йĕркесенчи хăш-пĕр шухăшсем пирки автора ҫакăн пек асăрхаттарас килет: «мĕскĕнсен» (кунта «мĕскĕнсем» тесе чăвашсене каланă) «телей ҫăл куҫĕ» мĕнле майпа ҫĕр ҫине ҫавăн пек (хăй ăссĕнех) тухма пултарать-ха? Кунта «хăй ăссĕнех» шухăшĕ ăҫтан лекнĕ-ха? Пирĕн шутпа, ҫаксем акă мĕнтен килнĕ: ҫăл куҫне илес пулсан, вăл пĕр-пĕр ҫĕрте (ҫĕр ҫинче) яланах хăй ăссăнех тухма тытăнать (ахальтен мар ĕнтĕ чăвашсем: «Тухас ҫăл куҫ ҫул тăваткалĕнче те пулать», теҫҫĕ); пирĕн поэт «ҫăл куҫ» сăмаха илнĕ те, ун ҫумне тепĕр сăмах хушса, «телей ҫăл куҫĕ» туса хунă; ҫапла вара, «телей» сăмаха «ҫăл куҫ» сăмахăн пĕлтерĕшне пăхăнтарнă (ку вăл сисмен ҫĕртенех пулнă темелле, мĕншĕн тесен ҫав икĕ сăмахăн ҫакăнти пĕлтерĕшĕн килĕшĕвĕ, формă енчен илсен, йĕркеллех пырать, вĕсенче логикă та пур). Анчах обществă историйĕ, революциллĕ вĕрентӳ хăйĕннех (тĕрĕссинех!) калать: «телей ҫăл куҫĕ» класлă обществăра хăй тĕллĕнех тухмасть, кĕрешме пултарайман мĕскĕнсем ҫеҫ телей хăй тĕллĕн тухасса (килессе) шанса ларма пултараҫҫĕ. «Мăшкăлпа асап та» хăй ăссĕнех путланмасть. Вĕсене путлантараҫҫĕ, пĕтереҫҫĕ! «Путлантараҫҫĕ», «пĕтереҫҫĕ» тени грамматикă форми кăна мар, вăл — ĕҫĕн активлăхне пĕлтерекен формă. Ҫав активлăх кунта — кĕрешӳ. Кĕрешӳ темле пулсан та, вăй хумасăр, активлăхсăр пулса пымасть.

В. И. Ленин сăнарне кăтартса парас тесен, вăл пролетарилле революционер пулнине асра тытас пулать; ҫамрăк Ленин ҫинчен калас пулсан, вăл пролетарилле революционер пулма хатĕрленнине кăтартса пама тăрăшас пулать. Владимир Ульянов гимназин аслăрах класĕсенче вĕреннĕ чухнех революциллĕ шухăш-кăмăлпа пурăнма тытăннă. Ҫав шухăш-кăмăл унăн шкулта ҫырнă сочиненийĕсенче те сисĕннĕ. Сăмахран, пĕррехинче ҫавăншăн ăна гимнази директорĕ хăтăрса та илнĕ. В. Ульянов ҫырнă сочиненине каялла панă чухне директор ҫилĕллĕ сасăпа:. «Эсир кунта

мĕнле пусмăрта пурăнакан классем çинчен çыратăр, вăл мĕн тума кирлĕ?» тенĕ.

Çакă вăл В. И. Ленин вĕреннĕ гимнази суртĕнче пулса иртнĕ. Çав çурт патне пырсан ĕнтĕ пирĕн поэт умне «аслă Ленин сăнарĕ чĕррĕн тухнă». В. И. Ленин Чĕмпĕрте пурăннă чухнех Карл Маркс кĕнекине вуланă, çав чаплă кĕнекере пусмăр тĕнчине мĕнле аркатмалли çинчен калакан вĕрентӳ пулнине пĕлнĕ

Я. Ухсай поэминче В. И. Ленин çинчен «титан», «гени», «халăх утаманĕ», «пулас çулпуçĕ», «малашне çулпуç пулин те...» тесе çырнисем «вообще» (пĕтĕмĕшле) каланă сăмахсем кăна пулса тăраççĕ. Вĕсем, тĕрĕссипе илсен,— Ленин сăнарне ахаль сăмахсемпе кăтартса пама авторăн ăсталăхĕ çитейменни çинчен калакан тĕслĕхсем.

В. И. Ленин çинчен кирек мĕнле произведени çырнă чухне те унăн пурнăçĕнчи фактсене лайăх пĕлес пулать, вĕсене пăсмалла мар. Я. Ухсай поэминче хăш-пĕр фактсемпе ирĕклĕнтерех усă курнă.

1887 çулта Ульяновсен çемйине пысăк инкек пырса тивнĕ: мартăн 1-мĕшĕнче Петербургра Владимир Ильич пиччĕшне — Александр Ульянова — III-мĕш Александр патшана вĕлерме хатĕрленĕ çĕре хутшăннăшăн арестленĕ. Çав çулхи майăн 8-мĕшĕнче Александр Ульянова тата унăн çав ĕçре пулнă юлташĕсене Шлиссельбург крепоçĕнче çакса вĕлернĕ.

Александр Ульянов народоволец пулнă. Народоволецсем патшана хирĕç террор меслечĕпе кĕрешнĕ, патша влаçне тытса тăракан уйоăм çынсене вĕлерсе пĕтерсе, çĕнĕ йĕрке тума шутланă. Çакă вăл — йăнăш çул пулнă, Ленин ăна йышăнман, унăн çулĕ — рабочи клас çулĕ, пролетарилле революци çулĕ пулнă. Пиччĕшне çакса вĕлерни çинчен пĕлсен, В. И. Ленин: «Çук, эпир ун пек çулпа каймăпăр. Ун пек çулпа мар каймалла!» тенĕ. («Нет, мы пойдем не таким путем. Не таким путем надо идти!»)*

Я. Ухсай ку сăмахсемпе (тата А. И. Ульянов ĕçĕпе) çавăн пек усă курнă:

Пиччĕшне патша хурахĕ
Вĕлерни синчен хыпар
Çитнĕ кун таса ахахăн
Çуннă ун ăшра кăвар.

---

* «Ленин, Владимир Ильич. Краткая биография». Иккĕмĕш изд., 1955, 7 стр.

Харсăр пиччĕш ĕлкĕрмерĕ
Чăн-чăн тĕрĕс çул тупма.
Юрамасть пĕрер-пĕрерĕн
Çапăçу хирне тухма.

— Урăх çул тупатпăр,— тенĕ
Çамрăк Ленин амăшне,
Çав çулпа кайма пилленĕ
Амăш паттăр ачине.

А. Ульянова çакса вĕлернĕ патша палачне «хурах» теме пулать. анчах Ухсай поэминче «патша хурахĕ» (хурах — вор, разбойник, бандит) тени ытла пĕтĕмĕшле пулса тухнă. Сахал вĕреннĕ е анчах вĕренекен çыншăн (ку поэмăна Ухсай ачасем валли çырнă, çавăнпа та ачасемшĕн темелле) «патша хурахĕ» тени усал «тĕтре» кăна, эппин, вулакан çав поэмăна çĕр хут вуласан та, «патша хурахĕ» А. Ульянова мĕншĕн, ăçта, мĕнле вĕлернине пĕлмесĕрех юлать (юмах ĕнентернĕ тăрăх, хурахсем сĕм вăрманта çӳреççĕ, мăн çул çинче вĕлереççĕ). Поэмăра Владимир Ульянов пиччĕшĕн ятне те пулин каламан-çке. Ахăртнех, ку поэмăна поэт вулакансене асра тытмасăртарах çырнă пулмалла.

Александр Ульянова вĕлерни çинчен калакан хыпара мĕнле сăнласа пани те вулакана иккĕлле шухăшлаттарма пултарать.

...хыпар
Çитнĕ кун таса ахахăн
Çуннă ун ăшра кăвар,—

тенĕ çĕрте сăмах Ленин çинчен пырать. Пирĕн шутпа, ку — туса çитереймен сăнлăх (образ). Кăвар хăй çунмасть, кăвар — вăл çунакан кăмрăк, кăмрăк çунни; ахах та çунмасть, ахах — вăл чул (халăх хушшинче «ахах пек çунать» тенине илтме пулать, анчах ку ахах «çутине» çеç пĕлтерет). Я. Ухсай çав йĕркесенче «ăшри кăвар» тенипе те Ленин хуйхи çинчен. те унăн ырă (таса) шухăшĕ çинчен калать,— пĕлме çук. Шухăшĕ çинчен пулсан, çакăн пек асăрхаттарас килет: унăн шухăшĕ вăл кун кăна мар, яланах «таса ахах» пек пулнă.

Çапла, эпир тишкĕрнĕ строфари сăнлăх пулса çитменни уççăнах курăнса тăрать: вăл тулашран пăхсан — паха, ăшне кĕрсе пăхсан — суя ахах пек çеç.

Малалла. В. И. Ленин урăх çул çинчен вăл мĕнле çул пулнине пĕлсе каланă. Ленин ăна тупнă. Ухсай поэминче сăмах ăна тупасси çинчен кăна пырать. Çапах та «амăш паттăр ачине» çав çулпа кайма пиллет.

А. Ульянова патша палачĕ çакса вĕлерни çинчен, В. И. Ленин урăх çул пирки калани çинчен В. В. Маяковский хăйĕн «Владимир Ильич Ленин» ятлă поэминче çакăн пек çырнă:

Подготовщиком
          цареубийства
                    пойман
брат Ульянова,
             народоволец
                    Александр.
Одного убьешь—
               другой
                во весь свой пыл
пытками
          ушедших
            переплюнуть тужится.
И Ульянов
     Александр
                повешен был
тысячным из шлиссельбуржцев.
И тогда
         сказал
            Ильич семнадцатигодовый—
это слово
             крепче клятв
               солдатом поднятой руки:
— Брат, мы здесь
                 тебя сменить готовы,
победим, но мы
                пойдем путем другим!

Эпир илсе кăтартнă тĕслĕхсенчен икĕ поэтăн пултарулăх меслечĕ курăнать. Вĕсем иккĕшĕ те пĕр фактпах усă кураççĕ, анчах вĕсен ăсталăхĕ икĕ тĕрлĕ палăрать. В. В. Маяковский çырни вулакансемшĕн пĕтĕмпех ăнланмалла, Я. Г. Ухсай çырни ун пек мар.

В. В. Маяковский хăйĕн произведенийĕсенче час-часах В. И. Ленин сăмахĕсемпе усă курать, анчах вĕсен тĕп шухăшне, тупсăмне ниçта та пăсмасть («Нет, мы пойдем не таким путем»,— тенĕ В. И. Ленин; «...Мы пойдем другим!» — тет Маяковский) *.

«Ленин çурчĕ умĕнче» поэмăна пĕтĕмĕшле хак парас шутпа эпир хамăрăн пĕрремĕш статьяри сăмахсене тепĕр хут каласшăн (вулакансем касарччăр пире уншăн):

* В. В. Маяковский кун пек чухне мĕн тери тимлĕ пулнине эпир ятарласах сăнаса тухрăмăр. Анчах ăна тĕплĕнтерех çырасси — урăх темă, тепĕр чух çырмалли темă.

этемлĕхĕн прогрессивлă вăй-хăвачĕ çуратнă гени çинчен, историре никам курман-илтмен революционер, теоретик çинчен, вырăс халăхĕн ăсларан та ăслă ывăлĕ çинчен, халăхсен, Коммунистсен партийĕн çулпуçĕ çинчен çырнă произведенисем чи хăватлă, чи паха пулмалла. В. И. Ленин пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен пули-пулми произведени çырма юрамасть.

Халлĕхе чăваш литературинче Ленин çинчен çырнă чаплă произведенисем çук-ха. Чăваш писателĕсем çулпуç çинчен çавăн пек произведенисем çырасса эпир ĕненетпĕр.

* * *

«Чапаевпа тĕл пулни» поэмăн ячĕ хăех те унта мĕн çинчен сăмах пынине кăтартса парать. Анчах Чапаевпа кам, ăçта, хăçан тата мĕнле тĕл пулать-ха? Çак ыйтусене ответ парсан, поэмă шухăшĕ хăй ăссĕнех уçăлса каять.

Поэмăра илсе кăтартнă ĕçсемпе событисем 1919 çулта Пушкăрт çĕршывĕнче пулса иртнĕ. Çакă вăл — граждан вăрçи вăхăчĕ, çамрăк Совет Çарĕ, çĕршыври мĕн пур ĕç çыннисем Совет влаçне, Тăван çĕршыва ирсĕр тăшмансен тапăнăвĕсенчен çăлса хăварас тесе кĕрешнĕ вăхăт. Ку ĕнтĕ, паянхи кун енчен пăхсан, тахçанах историлле вăхăт пулса тăчĕ, çав тапхăр хушшинче çĕнĕ ĕçсемпе çĕнĕ событисем пулса иртрĕç, вĕсем историе тата та пуянлатрĕç.

Поэмă авторĕ хăйĕн умне граждан вăрçин пĕтĕм тапхăрне кăтартса парас тĕллеве мар, пĕр эпизода — чăваш ялне Чапаев хăйĕн салтакĕсемпе пырса кĕнине кăтартса парас тĕллеве лартнă.

...Выçăпа аптранă чăваш ачисем серте татса таврăнаççĕ. Çав кунхине унта шурă гвардеецсемпе Хĕрлĕ Çар чаçĕсем хушшинче хаяр çапăçу пуçланса каять. Çапăçу Пелепей хулине шуррисенчен ирĕке кăларассишĕн пырать. (Çавăн чухне, 1919 çулхи майăн 17-мĕшĕнче, Хĕрлĕ Çар Пелепей хулине ирĕке кăларнă). Çак çапăçу вăхăтĕнче Чапаев хăйĕн дивизийĕпе пĕр чăваш ялĕ çывăхĕнче канма чарăнать. Серте татса çӳрекен ачасем вĕсем патне йывăç чĕрессемпе çăл шывĕ ăсса пыраççĕ. Чăваш ачисене чапаевецсенчен пĕри поход хуранĕ патне илсе каять, çарти повар вĕсене пăтă çитерет, хăналать.

Какайлă тутлă пăтă ячĕ
Салтак
Çăка чĕресĕме
Пĕр çăпала,
Тата пĕр пысăк чĕлĕ

Ҫăкăр пачĕ.
Мĕскер калас?
Пĕлместĕп вырăсла.

Ытти ачасене
Кунта чĕнтерчĕ
Ҫак ырă ҫын,
Вара брезент сарсах
Ҫерем ҫинче
Хăна туса ҫитерчĕ
Пурне те
Шурă шупăрлă салтак.

Ҫакăн пек кĕскен каласа парас пулсан, «Чапаевпа тĕл пулни» поэмăн содержанийĕ. Тĕрĕссипе илсен, унта ҫакăнтан ытларах каламалли урăх ним те ҫук,— унăн содержанийĕ ансат та кĕске.

Поэмă валли илнĕ ĕҫсене ҫич-сакăр ҫулти ача курăмтуйăмĕпе (кăштах тата хальхи куҫпа пăхса) кăтартса панă. Ача-пăча — ача-пăчах ҫав, хăйсем выҫă, ҫапах та выляҫҫĕ, ашкăнаҫҫĕ, ҫерем ҫинче ҫарран чупаҫҫĕ:

Чупса ырсан,
Хашка-хашка сывлатпăр.
Канса ларатпăр
Пĕр самант хушши,
Чĕре сури—
Кăшкар ути чăмлатпăр.
Пиртен перет
Ыхра-сухан шăрши.

Поэт кунта ялти чăваш ачисен сăн-сăпатне ҫакăн пек кăтартса панă хыҫҫăн, хальхи вăхăта куҫса, авалхи, хăй ҫуралнă вăхăтри, саманана «хаклама» тытăнать (анчах халех пĕр ҫитменлĕхе асăрхаттарса хăварар: хăй мĕнле саманара ҫурални ҫинчен «политграмота» чĕлхипе ҫине-ҫинех пĕр шухăша темиҫе хут калани — вăл сакăр ҫулти ача чĕлхи мар):

Эпир
**Хаяр саманара (!) ҫуралнă**
Шăй-шай,
Кĕрлев те итлеме,
Ачаранах
Каҫса кайсах юратнă,
Сехре хăпсан та,
**Вутлă илеме (!)**

—

Вĕри куҫҫуль те юн
Емсе ҫăралнă
Тăпра ҫинче
**Хаяр саманара (!)**

**Эпир**
Синкер те терт
Курма **çуралнă,**
Пӳрне ĕмсе
Йăпаннă выçлăхра.

—

Кĕр те кĕр аслатиллĕ
Сивĕ çумăр
Хăратрĕ
Кĕрленай вăрманĕнче.
Аçа çапсан та,
Шанмĕ пирĕн шăнăр:
**Эпир çуралнă (!)**
**Тертлĕ çулсенче.**

—

Пире хăрушă мар.
Пире пурте пĕр.
**Пире çуратнă (!)**
**Çапăçу курма.**
Эпир серте шăрши илсе
Кĕретпĕр
Măян яшки
Шăршилле урама.

—

**Эпир хаяр саманара**
**Çуралнă (!),**
Пире ачашлакан
Никам пулман,
Нумайăшне
Аттемĕрсем хăварнă,
Киле килмен-ха
Халь те вăрçăран.

Кунта ĕнтĕ поэмăри ача мар, хăйĕн ача чухнехи кунĕсене аса илнĕ пысăк çын калаçать. Сакăр çулти ача калаçать тес пулсан, вăл 1910—1911 çулсенче çуралнăскер, ытла та «ăслă» пулни курăнать, анчах «вутлă илеме» «каçса кайсах юратни» ăс çинчен мар, тĕрĕссипе илсен, ним çинчен те каламасть. Мĕн вăл «вутлă илем»: революци-и е граждан вăрçи-и? Е ахаль пушар кăна-и? Пĕлме çук!

«Хаяр саманара» çурални çинчен виç-тăват хут калани (эпир ку цитатăсене «Самана» кĕнекен 17, 21, 25, 28, 40 стр. илтĕмĕр) вулакана мĕн парать-ши? Нимĕн те памасть, ăса та, чĕрене те пуянлатмасть. «Шăй-шай», «кĕрлев» итлеме, «синкер те терт курма», «çапăçу курма» çуралнă тенине тăвата строфара мар, пĕр строфара каланă пулсан та çителĕклĕ пулнă пулĕччĕ. Пĕр шухăшах темиçе хут калани — вăл мана ăнланаймĕç тесе шухăшланă пирки пулнă япала. Çавăн пек чух вара лайăх шухăшах ĕненмелле мар пулса тухать, «сӳсленсе каять».

Поэт «хаяр саманара çуралнă» ачасен ваййисем çинчен те çырать:

Эпир шавра
Вĕренне вăйăсем илемлĕ.
Теттемĕрсем
Йĕсрен те тăхланран,
Пуканесем (?) те пирĕн
Сăр шинеллĕ,
Вĕсен хĕçпе пăшалĕ
Пур паян.

Каллех «ăслă ача...» (çук, ачасем мар, вĕсен пуканисем!), каллех «шав» çеç, сăпар çук,— анчах шав вăл куçа та курăнмасть, хăлхана та ачашламасть, шав «поэзийĕ»— поэзи мар. «Ăслă ача» вулакана çапла каласа ĕнентересшĕн: «Куратăр-и — эпир мĕнле ачасем, пуканесем те пирĕн çĕнĕ самана йĕркипе килĕшсе тăраççĕ, вĕсем сăр шинеллĕ, хĕç-пăшаллă, ăслă...». Вĕсемпе пĕрле поэт та çавăн пекех каласшăн, çавăн пекех ĕнентересшĕн. Пирĕн вара поэмăна вуланă чух çакна ĕненмелле, граждан вăрçи вăхăтĕнчи ачасен ăнланулăхĕ мĕн тери çӳллĕ шайра тăнă тесе тĕлĕнмелле... Анчах пирĕн ĕненес те килмест, тĕлĕнес те килмест, мĕншĕн тесен поэмă пачах та ĕнентермест,— унăн ĕнентермелĕх художествăллă вăйĕ çук! Поэт сăмахĕ вăл кăмăла пырса тивтĕр, туйăмсене хускаттăр, куçа курăнса кайтăр, шухăшлаттартăр,— чăнах та, пуртăр-мĕн, Митта Ваçлейĕ калашле, поэзин виçĕ хăват:

Пĕри вĕсенчен
Чĕлхен чăн илемĕ;
Тепри — чун-чĕрен
Хĕвеллĕ хĕлхемĕ;
Çунатлă ăс, теççĕ,
Мĕн, виççĕмĕшне.

Я. Ухсай поэминче «хаяр саманара çуралнă» ачасемсĕр пуçне урăх никам та çук, ялти хресченсем çинчен каланисем — пĕтĕмĕшле каланă сăмахсем çеç. Акă поэт акăнмасăр юлнă анасене асăнать:

Ун пек анасене
Пăхас сухаçă
Çӳрет е вилнĕ
Вăрçă хирĕнче.

Ку вăл схемă кăна. Граждан вăрçи вăхăтĕнчи пурнăç нумай кăткăсрах пулнă. Граждан вăрçи тапхăрĕнчи ял çинчен çырас пулсан, хресченсем çинчен çырмасăр иртме

çук. Ун чухнехи ялта чухăн та, вăтам та, кулак та пулнă, унта хĕрлисем майлисем те, шуррисем майлисем те пулнă.

Граждан вăрçи историйĕ 1919 çулхи май уйăхĕнче Пелепей сывăхĕнче шуррисемпе хĕрлисем хушшинче хаяр çапăçу пулнине, Чапаев салтакĕсене хресченсем чун-чĕререн кĕтсе илнине кăтартса парать. Чапаева кашни ялтах хресчен халăхĕ çăкăр-тăварпа тĕл пулнă (Ухсай: «Ун чухне выçлăх пулнă», тейĕ,— поэмăра та вăл пысăк выçлăх çинчен çырать-çке!); хресченсем Чапаев патне ялĕ-ялĕпе пынă, унăн дивизийĕпе пĕрле шуррисене хирĕç вăрçма фронта кайнă. Мускав университетĕнче вĕреннĕ чухне пире Чапаев дивизийĕнче пулнă М. А. Попова юлташ (Анка-пулемётчица) питех те интереслĕ факт çинчен каласа кăтартрĕ. Пĕррехинче чапаевецсем, вăйлă çапăçу хыççăн, сывăхри яла пырса кĕнĕ. В. И. Чапаев хăй ун чухне урăх çĕрте пулнă. Унăн салтакĕсене кĕтсе илме пĕтĕм ял халăхĕ савăнса тухнă. «Сывă пултăр Совет влаçĕ! Сывă пултăр Чапаев!»— тесе кăшкăрнă хресченсем. Вĕсем Василий Ивановича курасшăн пулнă. Чапаевецсем аптраса çитнĕ. Вара пĕри ним тăвайман пирки: «Чапаев — эпĕ...» тесе хунă, çак салтак урапа çинче тăрса пынă-мĕн. Пĕтĕм халăх чапаевец патне кĕпĕрленсе пынă, ăна хупăрласа илнĕ, кашниех Чапаевпа калаçса пăхма ĕмĕтленнĕ. Хăшĕ салтакăн аттине тытса пăхнă, тепри унăн шинелĕн аркине чуп тунă. Савăннипе ташланă... Пирĕн шутпа, ку факт Российăри пĕтĕм хресченсен шухăш-кăмăлне кăтартса парать. Чăваш хресченĕсем те çавăн пек шухăш-кăмăлпах пурăннă. Вĕсем, Октябрьти революцие пула ирĕке тухнăскерсем, Хĕрлĕ Çара хăйсен тăван çарĕ тесе шутланă, ăна пулăшнă, паттăр ывăлĕсене салтака панă. Совет влаçне пĕтĕм вăйпа хӳтĕленĕ.

1919 çулта Пушкăрт çĕршывĕнче Хĕрлĕ Çар, тăшмансене аркатса, питĕ хăвăрт малалла кайса пынă: майăн 17-мĕшĕнче (шăпах Я. Ухсай поэминче кăтартса панă вăхăтра) Пелепей хулине ирĕке кăларнă, июнĕн 7-мĕшĕнче Шур Атăл урлă каçнă, июнĕн 9-мĕшĕнче Епхӳ хулине ирĕке кăларнă. Чапаевпа унăн салтакĕсен паттăрлăхне палăртса, Республика Реввоенсовечĕ 1919 çулти июнĕн 14-мĕшĕнче приказ çырса кăларнă. Унта çакăн пек калана выран пур: «Всегда предводительствуя своими частями, он храбро и самоотверженно сражался в передовых цепях, неоднократно был ранен и контужен, но всегда оставался в строю».

«Настойчивыми и стремительными ударами и искусными маневрами он остановил наступление противника и в течение полутора месяцев овладел городами Бугуруслан, Белебей и Уфа, чем и спас Среднее Поволжье и возвратил Уфимско-Самарский хлебный район».

Поэмăна «Чапаевпа тĕл пулни» тесе ят панă. Апла пулсан, поэмăна вуласа тухиччен, унта Чапаев çинчен, ун салтакĕсем çинчен сырни ытларах пулĕ тесе шутлас килет. Анчах ун пек мар: автор хăй çинчен ытларах çырать, вăл унта хăй мĕнле саманара çурални çинчен кăна мар, хăйĕн аслашшĕсем çинчен те çырать. Акă илер-ха каллех хăй çурални çинчен каланă вырăна:

Пыратăп саккăрта.
Кĕтет телейĕм,
Анне каларăш,
Малашне мана.
Кĕпеллĕ, тет, çуралнă эп.
Кĕпепе йĕм
Паянлăха
Шăла пиртен кăна.

Кун пек шухăшлă строфана эпир «Кĕлпук мучи» поэмăра курнăччĕ. Кĕлпук мучи çинчен çырнă чухне «кĕпепе çуралнине» асăнни интереслĕ пулнă. Анчах ку поэмăра вăл тĕшмĕш пек кăна курăнса тăрать. Кунта Ухсайăн хăй çинчен çырнă ытти вырăнсем те, хăшĕ-пĕрисем, поэмăна тĕшмĕшле хутăшсемпе çӳпĕлеççĕ.

Акă çав тĕшмĕш çӳпписем:

1. Вут-тар чиртен
Сыхлать, тесе калаççĕ.
Пистертĕр!
Патронсен гильзисенчен
Илсе тар хунă
**Пĕчĕк пир хутаçĕ**
**Çакса çӳретпĕр**
**Кăкăр çумĕнче.**
2. Çурхи тĕнче,
Пире хĕрхен, тархасшăн!
Эпир ырхан вăя
Пухатпăр ӳт-тирте,
**Çакатпăр**
**Вилĕме тытса чарасшăн**
**Мăя**
**Таса пилеш пĕтевĕ** * те.

---

* Кунта Я. Ухсай çакăн пек асăрхаттарать: «П ĕ т е в — чир-чĕртен сыхланас тесе, тĕшмĕшлĕ чăвашсем мăйне пилеш йывăç татăкне çакса çӳренĕ» (24 стр.).

3. Хӗп-хӗрлӗ хӑмачран
Ҫӗленӗ ҫӑлтӑр
Ахаль тетте пек
Туйӑнман пире.
**Инкек-синкексенчен**
**Пире вӑл ҫӑлтӑр,**
Сӑвап та ырлӑх,
Патӑр тӗнчере! *

Тӳрех калас пулать: чиртен, вилӗмрен хӑтӑлас тесе, тар хутаҫӗ, пилеш йывӑҫ татӑкӗ ҫакса ҫӳресси — ача-пӑча йӑли мар; ҫавӑн пекех тата инкек-синкексенчен ҫӑлтӑр, тӗнчере («леш тӗнчере» мар-и?!) «сӑвап ырлӑх патӑр» тесе, хӗрлӗ ҫӑлтӑр ҫӗлени те ача-пӑча йӑли мар, тӗрлӗ тӗшмӗш ӑшне путнӑ карчӑк-хырчӑк йӑли. Ача-пӑча валли ҫырнӑ поэмӑна ҫавӑн пек тӗшмӗш ҫӳпписемпе тултарни усӑсӑр кӑна мар, сиенлӗ, «хӗрлӗ ҫӑлтӑра» «пилеш пӗтевӗ» вырӑнне хурса, вӑл пире тӗрлӗ инкексенчен ҫӑлӗ тесе ҫырни традици те мар, нацилле колорит та мар, ҫӗнӗ тӗшмӗш шухӑшласа кӑларма тӑрӑшни ҫеҫ.

Тӗшмӗш нацилле колорит пулма пултарать-ши? Пирӗн шутпа, нацилле колорит вӑл —«пилеш пӗтев» ҫакса ҫӳренине кӑтартса панинче мар, «хӗрлӗ ҫӑлтӑра» тӗшмӗшле ӑнланнинче те мар, халӑхӑн пӗтӗм пурнӑҫӗпе ҫыхӑнса тӑракан ырӑ йӑлисене, нацилле уйрӑмлӑхӗсене тӗрӗс кӑтартса панинче. Ҫавӑн пек колорит художествӑлла сӑнлӑх тума, пурнӑҫ тупсӑмне уҫса пӗлме, ҫынсен характерне курма пулӑшать.

«Чир-чӗртен» сыхланас тесе, пилеш йывӑҫ татӑкӗ ҫакса ҫӳрес йӑла — тахҫан-авал (капитализм саманиччченех, чӑваш халӑхӗ хушшинче христианствӑ сарӑличченех) пулнӑ йӑла. Эпӗ ҫакна лайӑх ас тӑватӑп. 1917—1918 ҫулсенче пирӗн ялта (Хутар салинче, Ҫӗмӗрле р.) пӗр ҫын пилеш йывӑҫ татӑкӗ ҫакса ҫӳретчӗ. Ҫав мӗскӗн хӑй те ӑслӑ-пуҫлӑ ҫын маййлӑ марччӗ: вӑл хӑйӗн ҫӳҫӗпе сухалне нихҫан та кастармастчӗ; «кассан — чир-чӗр ерет»,— тетчӗ. Унӑн йӑлисем пӗтӗмпех урӑхлаччӗ. Тен, Яков Ухсай хӑйӗн поэминче илсе кӑтартнӑ вырӑнта ҫавӑн пек этемсем ытларах пулнӑ пулӗ, тен, вӗсен ачисем те пилеш пӗтев ҫакса ҫӳренӗ пулӗ... Тен... Ҫапах та ӗненес килмест, мӗншӗн тесен вӑл — XX-мӗш ӗмӗрти чӑваш халӑхӗшӗн типлӑ явлени мар, вӑл халӑхӑн нацилле традицийӗ пулма пултараймасть. Традици вӑл — халӑхӑн ӑруран ӑрӑва пыракан пурнӑҫпа ӗҫ

* Ку тӗслӗхсене «Самана» кӗнекен 24 тата 26 стр. илнӗ.

йĕркисем, йăлисем, хăйне ĕçре, кĕрешӳре тыткалас майсем, пĕлĕвĕсем, шухăшĕсем, идейисем; «нацилле колорит» тени çав йăласене, пĕлӳсене, идейăсене литература, живопис, музыкă произведенийĕсенче ăсталăх майĕсемпе кăтартса пани пулать; вăл çав явленисен илемне, вĕсен ырă туртăмĕсен чăн-чăн çыхăнăвĕсене, хутшăнăвĕсене кăтартса пани пулать. Нацилле колорит вăл — нацилле литературăн, искусствăн сăн-сăпачĕ, илемĕ, ăш-чикки *. Хăш-пĕр писательсем «колоритшăн» ытах «çунаççĕ» пулсан, тăван халăхăн ĕçпе кĕрешӳ традицийĕсене тĕплĕрех вĕренччĕр, сăначчăр, çав традицисем, историлле условисене пула улшăнса пынине ăнланма вĕренччĕр, хăйсен пултарулăхĕн ăсталăхне ӳстерсе пыччăр... Халăхсăр, çĕршывсăр пурăнакан çын çук. Робинзон кăна çавăн пек пурăнма пултарнă, анчах робинзонсен самани тахçанах иртсе кайнă. Робинзон пек çынсене шухăшласа кăларас тесен, малалла мар, каялла кайса пыракан фантази кирлĕ. Анчах ырă фантази яланах малалла кайса пырать, çунатланса вĕçет. Произведенире яланах пĕр-пĕр халăх çинчен, унăн çыннисем çинчен, вĕсем пурăнакан çĕршыв, вăхăт çинчен, вĕсен ĕçĕпе кĕрешĕвĕ çинчен сăмах пырать. «Папуасла теорие», урăхла каласан, чăвашсем пек халăхсем яланах кая юлса пыраççĕ тесе калакан «теорие» шухăшласа кăларма ăс пуянлăхĕ кирлĕ мар; ăна сĕтĕрсе пыма ăс та, вăй та кирлĕ мар, анчах нацилле традицисем мĕншĕн улшăнса пынине, хăшĕ вĕсенчен прогрессивлă, хăшĕ реакциллĕ пулнине ăнланса илме витĕр куракан ăс кирлĕ, марксизм-ленинизма лайăх пĕлни, унпа усă курма пултарни кирлĕ.

Халĕ тата В. И. Чапаев сăн-сăпатне поэмăра мĕнле кăтартса пани çинчен тепĕр ик сăмах калар.

Василий Иванович шурă утпа килет:

Чĕмчен çеремлĕ вырăнта
Хулленçĕ
Юртса килет
Çинçе те шурă ут...
...Лаша çиччи

---

* Н. Г. Чернышевский çакăн пек çырнă: «Без местного колорита в обстановке, без национального элемента в действующих лицах никак не могут обходиться настоящие романы, настоящие повести. Без местных красок и без национальных обычаев, мыслей, национальных характеров в действующих лицах нет ни вида реальности — правдоподобия — в действии, ни осязательности в действующих лицах. А без этих условий нельзя обходиться романам, повестям».

Сар мăйăхлă этемĕн
Сике-сике
Йĕнер пусси çинче
Шеп кăйкăр кайăк евĕр
Пынăçемĕн
Вĕçет тир буркă
Çурăм хыçĕнче.

Сар мăйăхлă этем патне
Пыратăп
Именерех
Тулли чĕресĕмпе...
...Ӳт-тирĕ аттенни пек
Типшĕм унăн,
Ялти Митрюк Еккимĕ
Евĕр-çке
Ӳстернĕ мăйăхне,
Вĕçне вăл тунă
Кăтралатса
Ик унка пĕтĕркке.

Ку йĕркесенче эпир Чапаев сарă мăйăхлă пулнине куратпăр. Анчах «ӳт-тирĕ аттенни пек типшĕм...» тени вулакана ним те памасть, мĕншĕн тесен вулакан авторăн ашшĕне курман, пĕлмест (ку авторшăн çеç паллă); «Ялти Митрюк Еккимĕ евĕр...» тени те вулаканшăн пушă сăмах çеç, мĕншĕн тесен вулакан ăна та курман, пĕлмест. Митрюк Еккимĕ сăнĕ пирĕншĕн пачах та паллă мар, Чапаев сăнне эпир, Митрюк Еккимĕпе танлаштармасăрах пĕлетпĕр, эпир унăн тĕрлĕ портречĕсене темиçе те курнă. Чапаева кинокартинăсенче те курнă, ун çинчен кĕнекесем вуланă, лекцисем, докладсем итленĕ. Çапла, Чапаев сăнарĕ — халăхшăн тахçанах йĕркеленсе çитнĕ сăнар, вăл — вилĕмсĕр сăнар.

Митрюк Еккимĕ мĕнле сăнлă пулнине Чапаев сăнĕ урлă çеç пĕлме пулать, анчах ку вулакана пачах та кирлĕ мар, вулакан Чапаев сăнне курасшăн. «Митрюк Еккимĕ евĕрлĕ-çке» тени Чапаев сăнарне анлăлатмасть, ун çумне нимле паллă та хушмасть.

Нихçан курман çыннăн ятне асăннипех унăн сăнне курма çук. Чăнах та, çак шухăша ăнланмалларах тăвас тесе, пĕр-пĕр ят çырса хурар-ха, сăмахран, вăл Рахмул пултăр. Çак ят унăн сăнне мĕн чухлĕ те пулин кăтартса парать-и? Çук, памасть.

Рахмул ята эпир шухăшласа кăларман, вăл, чăннипех пурăннă çын ячĕ. Рахмул Петр Иванович — Хутар сали çынни, вăл 1771—1774 çулсенче Пугачев юхăмне хутшăннă.

хăйĕн юлташĕсемпе пĕрле (вĕсем 30 ытла пулнă) Хутар пупне çакса вĕлернĕ.

Халĕ ĕнтĕ эпир Рахмул ĕçне куратпăр, çапах та сăнне кураймастпăр.

Емельян Пугачева илес пулсан, эпир унăн ĕçне те, сăнне те пĕлетпĕр (куратпăр та!). Мĕншĕн тесен, унăн ятне асăнсанах, пирĕн куç умне Пугачев портречĕ тухса тăрать. Çакăнта, сăмах май, Ухсай меслечĕпе усă курса, Пугачев «Рахмул евĕрлĕ-çке» теер-ха. Çакăн пек калнипе Пугачев сăнарĕ мĕн чухлĕ те пулин пуянланчĕ-и-ха? Çук, ним чухлĕ те пуянланмарĕ, Пугачев портречĕ мĕнле пулнă, çавăн пекех юлчĕ. «Рахмул Пугачев евĕрлĕ» тесен, Рахмул сăнĕ мĕнлине калаcа пама пулать. Анчах ку чухне эпир Пугачев сăнне асра тытса калатпăр, Пугачев сăнне Рахмул çине куçаратпăр.

Чапаевпа Пугачев сăнарĕсем халăх ăс-тăнĕнче пурăнаççĕ, вĕсене халăх нихсан та манас çук,— Чапаевпа Пугачев вилĕмсĕр! Вĕсене Митрюк Еккимĕсемпе танлаштарни — ăнăссăр ĕç кăна: вăл автора та, вулакана та пулăшмасть.

Малалла Яков Ухсай «Чапаев» хушамат ăçтан тухса кайнине «ăнлантарса пама» тăрăшать.

...Салтак хаваслă пĕлтерет  
Мухтавлă  
Чапай пире  
Хăна туни çинчен.

Апла иккен,  
Чапран Чапаев тенĕ (?)  
Чăнах та  
Тĕрĕс ячĕ чăвашла.  
Унччен çак ят  
Кĕрсе тухса çӳренĕ  
Кунта килтен киле,  
Ялтан яла.

Паллах, Чапаев хушамачĕ «чап» сăмахран пулса кайнă тенине ĕненме çук,— ăна никам та тĕпчесе тухман-ха, кăтартса паман.

Кунта тата каллех хресченсем пирки сăмах хускатас килет. Чапаев ячĕ ялтан яла, килтен киле «кĕрсе тухса çӳренĕ» пулсан, мĕншĕн-ха апла Чапаев патне хресченсем тухмассĕ, мĕншĕн виç-тăват ача çеç тухать? Чăваш хресченĕсем Чапаева кăмăлламан тесе калама пирĕн нимле сăлтав та çук. Чапаев — халăх геройĕ, ăна пĕтĕм халăх юратнă, унăн ячĕ чăннипех те ялтан яла, килтен киле çӳренĕ, ха-

лăх чĕрине кĕрсе вырнаçнă. Анчах Ухсай хăй пĕчĕк чухне хăй таврашĕнче мĕн курнă, çавăн çинчен кăна çырнă: пĕчĕк ачан тавра курăмĕ питех те анлăр, вăл çав тавра курăм «картинчен» тухайман, типлă явленисене, çынсене курайман, теме пултараççĕ. Чăн та, Ухсай чапаевецсен ăшă кăмăлне лайăх кăтартса панă. Çав салтаксене ĕç хресченĕсемпе тĕл пултарса, калаçтарса кăтартнă пулсан, вĕсен кăмăлĕпе характерĕ тата та уççăнтарах, анлăрах курăннă пулĕччĕ. Çапла вара, Чапаев сăнарĕ те вăйлăрах тухнă пулĕччĕ, чăваш хресченĕсен шухăш-кăмăлĕ те лайăхрах сисĕннĕ пулĕччĕ. Поэмăна ача мар, Ухсай çырнă, ăна вăл лайăхрах çырма та пултарнă, çапах та тĕрĕссине калас пулать: Ухсай ку поэмăна çырнă чухне хăйĕн пултарулăхне кирлĕ таран сарса ярайман.

«Чапаевпа тĕл пулни» поэмăра, ятарласах ача-пăча валли çырнăскерĕнче, тĕрлĕ тĕшмĕш юлашкисене каларса пăрахсан та, ачасемшĕн юрăхсăр вырăнсем тĕл пулаççĕ. Сăмахран, çак строфа ачасене ырра вĕрентме пултарать-и?

Атте-анне курман чухне
Пӳртре мăк
Çăлса туртатăп эп,
Анчах та ман,
Чăваш ачин,
Турат çинче сасартăк
Кулас килет
Каппайчăк тăшманран.

Поэт мĕн каласшăн пулнине цитатă тăрăх ăнланма çук, мĕншĕн тесен эпир ăна шухăш йĕркинчен «тăпăлтарса» илтĕмĕр (хăш-пĕр писательсем, критиксене хирĕç калас-тăвас пулсан, яланах «тăпăлтарнă» сăмахпа усă кураççĕ), ăнланмалла пултăр тесе, авторăн шухăшĕ мĕн çинчен пынине каласа парар. Çапăçу вăхăтĕнче сакăр çулхи ача пахчари йăмра çине хăпарса ларать, унта вăл шуррисем тарнине сăнать... Çакăн чухне ĕнтĕ чăваш ачи «пӳртре мăк çăлса туртнине» аса илет, çав вăхăтрах тата унăн «каппайчăк тăшманран» куласси килет. Тĕрĕссипе каласан, çак «турат çинчи» аса илӳ поэмă шухăшĕпе пачах та çыхăнса тăмасть, вăл — ытлашши япала. (Пӳртре мĕн ытлашши?— Çӳпĕ! теççĕ чăвашсем).

Çак вырăна та поэмăра ытлашши тесе калас пулать:

Ман тусăм
Кӳпĕнсе тертленчĕ,

Варне тытса
Шăри-шари саспа
Йĕретчĕ вăл.
— Анне вĕлер-ха!— тетчĕ,—
Анне, пуçран тиверт-ха
Пуртăпа.

Мĕнле ача хăйĕн пуçне пуртăпа кастартăр? Мĕнле амăшĕ юратнă ачине пуртăпа кастăр? Кунта выçăпа аптранă ача çинчен сăмах пырать, тейĕç. Килĕшетпĕр. Çак ача выçăпа тертленсе шыçăнса кайнă. Çапах та вăл калакан сăмахсем — ача сăмахĕсем мар. Çын çуралсанах унăн пурнăçĕнче вилĕм пуçланать, пурнăçпа вилĕм пĕрлĕх пулса пурăнать, теççĕ философсем. Çын, темле йывăр пулсан та, пурнăç çинченех шухăшлать, ача-пăча вара вилĕме ăнланмасть, пĕлмест, хăйне вĕлерме, пуçран пуртăпа тивертме чĕнмест. Ухсай çавăн пек чĕннине ăçта та пулин «курнă», тейĕпĕр, çапах та ун çинчен çырни никама та кирлĕ мар, мĕншĕн тесен вăл, çынсен кăмăлĕнче ырă туйăма та, хаярлăха та хускатмасть, ăша йĕклентерет кăна, мĕншĕн тесен вăл çĕр процентлă натурализм («натурализм — ремесло фотографов...» тенĕ М. Горький).

«Чапаевпа тĕл пулни» поэмăра «музыкăллă» «параппанлă» сценăсем те пур. Шуррисем параппан çапса тараççĕ:

Э-хе, кусем иккен!
Эпир паллатпăр.
Хаваслă
Тўнкĕр-тўнкĕр параппан
Кĕрлевĕнче
Вĕсем питех те паттăр
Асанчĕç
Пелепей енне куптан.

Хĕрлисем оркестрпа килеççĕ:

Суптал çинче шакканă,
Хĕрлĕ хурçă
Хĕмленнĕ пек
Ялавĕ айĕнче
Пыраççĕ
Виçĕ çамрăк юлан утçă

Йĕс чĕлĕхлĕ
Оркестр шавĕнче.

Çакна вуланă чухне пире Шупашкарти «Родина» кинотеатрта вăрçă кăтартакан фильм курса ларнă пек туйăнса кайрĕ (паллах, кино музыкăсăр пулмасть, вăрçăра та му-

зыкӑ таврашӗ пулатех!), анчах эпир ӗнтӗ вӑрç еçне лайӑх пӗлетпӗр: пирӗнтен аслӑраххисем граждан вӑрçинче пулчӗç, эпир хамӑр 1941—1945 çулсенчи Аслӑ вӑрçӑра пултӑмӑр. Пирӗн самана музыкӑпа килмерӗ, тупӑ сассипе, вутçулӑмпа килчӗ, пӗтӗм тӗнчене кисретсе, çӗр çӗмӗрсе, хӗлхем тӑкса этемлӗх историне кӗчӗ. Таракансем те параппан çапса мар, ик урине кута тивертсе, пуçӗсене çухатса тарчӗç. Российӑра революци тӑвасси, революцие сыхласа хӑварасси çăмӑл пулмарӗ, йывӑртан та йывӑр ӗç пулчӗ.

«Кинофильмра» вӑрçӑ калама çук çăмӑл пулса пырать (тӗслӗх вырӑнне Пелепей патӗнчи наступление те илме юрать):

Çыхса пӗр ункӑ тунӑ
Сӑр шинелӗ
Кашни салтакӑн
Хул пуççи çинче.
Тўме çинче
Вылять çу кун хӗвелӗ,
Сикет
Штыкпа затвор çинче.

Пурте пӗр ушкӑн
«По морям» юрлаççӗ
Тата хушса калаççӗ
«По волнам!»
— Нам-нам!— тесе
Вара вӑрах янраççӗ
Сӑртри вӑрман,
Çыран та,
Вар,
Урам.

Çакӑнта илсе кӑтартнӑ йӗркесем, хальхи критикӑран пӗр термин илсе калас-тӑк,— лакировкӑ, урӑхла каласан,— пурнӑça, кӗрешӗве нимĕнле йывӑрлӑхсемсӗр кӑтартни пулать. Граждан вӑрçинче кашни салтакӑн «çу кун хӗвелӗ вылякан тўмеллӗ» тумтир пулнӑ теме çук, вӗсене час-часах тӗрлӗ йышши тумтир тӑхӑнма, çăпатапа çўреме те тивнӗ (çакна ас тутарма пулать: чӑваш халӑхӗ çавӑн чухне çар валли миллион мӑшӑр çăпата туса панӑ!).

Чапаев дивизийӗнче комиссар пулнӑ Д. А. Фурманов, писатель-боец, коммунист, хӑйӗн «Чапаев» ятлӑ произведенийӗн «До Белебея» тенӗ сыпӑкӗнче (шӑпах Ухсай кӑтартса панӑ салтаксем çинчен) çакӑн пек çырнӑ: «По горам, по узким тропам, бродом переходя встречные реки,— мосты неприятель взрывал, отступая,— и в дождь, и в грязь, по утренней росе и в вечерних туманах, день сытые,

два голодные, раздетые и обутые скверно, с натертыми ногами, с болезнями, часто раненые, не оставляя строя, шли победоносно они от селения к селению,— неудержимые, непобедимые, терпеливые ко всему, гордые и твердые в сопротивлении, отважно смелые и страшные в натиске, настойчивые в преследовании»*.

Ухсай чĕлхи, пĕтĕмĕшпе илсен,— пуян чĕлхе. Анчах «Чапаевпа тĕл пулни» поэмăра чĕлхе пуянлăхĕпе кирлĕ пек усă курайман: автор те ытлашши васканă, те ывăнса çитсе чĕлхе илемне çителĕклĕ туйса илеймн пулнă.

Акă тĕслĕхрен, çак строфара, пирĕн шутпа, грамматика йĕрки мар, шухăш йĕрки те çук:

Таса ыраш капанĕ пек
Сап-сарă
Хĕвел çутисене
Кĕлте-кĕлте
Пăрахрĕ те
Вĕри хĕрте пуçларĕ
Çынна,
Çурта, хире те пур çĕрте.

Тата çак строфана ăнланма çăмăл-и?

Çăл шывĕ валакран ÿксе
Пиншерĕн
Саланнă
Йăлтăркка пĕрчисенчен
Пуласа çĕкленнĕ
Асамат кĕперĕ
Шап-шур çеçкеллĕ
Çĕмĕртсем çине.

Çакна та ăнланма хĕн:

...Çынсен сасси...
Шурă сывлăш витĕр
Пĕр харăс илтĕнет
Хускалура.

Аллин ăшши алла
Кĕртсе хăварчĕ
Ӳте хăват,
Куçа тулли кăвар.

Кунта поэт питĕ «ăслă» калама, питĕ «илемлĕ» çырма тăрăшнă, анчах ун пек çырнинче илем те, ăс та курăнсах каймасть. Илемпе ăс чĕлхене, унăн йĕркине пăсса, муталаса,

---

* Д. А. Фурманов. Сочинения в трех томах, т. I. Чапаев. ГИХЛ. 1951. Стр. 197.

ирĕксĕрлесе çырнинче мар, ăнланмалла çырнинче,— этеме этем чĕлхипе çырнă произведени кирлĕ, этем этем чĕлхине çеç ăнланать.

Илемлĕ чĕлхешĕн тăрăшасси — кашни писатель ĕçĕ. Ятлă поэтăн чĕлхе илемĕшĕн, тирпейлĕхĕшĕн ытларах тăрăшмалла, мĕншĕн тесен ун пек поэтран çамрăк поэтсем вĕренеççĕ. Вĕренекенсем лайăх тĕслĕхсенчен вĕренесшĕн, хăйсене вĕрентекенсенчен иртсе каясшăн, лайăхрах çырасшăн... Апла пулсан, пурин те тăрăшса вĕренмелле, вĕренмелле, вĕренмелле! Ку сăмахсене эпир темиçе хут та каланă ĕнтĕ, çапах та, паян тата тепĕр хут калатпăр, мĕншĕн тесен писатель вĕренмесен, литературăра пĕр утăм та тума пултараймасть. Пушкинсем, Гогольсем, Тургеневсем тăрăшса ĕçленĕ, вĕреннĕ пулсан, пирĕн, паллах, вĕсенчен ытларах вĕренме тăрăшмалла *.

«Чапаевпа тĕл пулни» поэмă пирки юлашкинчен çакăн пек калас килет: пирĕн шутпа вăл — пулса çитмен произведени; çитменнине тата ăна ытлашши тăсса кайнă; унăн сюжетне йĕркелесе çитереймен; шухăшĕ пăтранчăк; автор ытларах «экзотикă» шыранă. Çак çитменлĕхсен сăлтавĕ пĕрре кăна: автор çанна тавăрса, тар юхтарса ĕçлеме чăраннă, хăйĕн юлташĕсен, критикă асăрхаттарăвĕсене шута илме пăрахнă. Тен, кун пек калани пирĕн ятлă поэтăмăра килĕшмĕ, тен, вăл аллине сулĕ те мăн кăмăллăн калĕ: «эпĕ Пăртта таврашĕ...» «Сивĕ критик мĕн ăнланĕ?», тейĕ **. Вара эпир тăван поэта итлĕпĕр, итлĕпĕр те ирĕксĕрех çапла калăпăр: хăвна Пăртта таврашĕ тетĕн пулсан, çырма та Пăртта таврашĕ пекех çыр, Пăртта таврашĕн, Константин Ивановăн, ырă традицине малалла аталантарса пыр. Яков Ухсайăн çавăн пек ĕçлеме, çырма вăйĕ те, пĕлĕвĕ те, таланчĕ те пур. Апла пулсан, чăннипех те Пăртта таврашĕ пек ĕçлемелле!

* * *

«Халăхăн ылтăн кĕнеки» поэмăна çырнăранпа кĕçех çирĕм çул çитет (1937—1957). Тĕрĕссине тĕрĕс калас пулать: çак поэмă чăваш совет поэзийĕн ылтăн фондне кĕрсе

* И. С. Тургенев çакăн пек çырнă: «Коли Пушкины и Гоголи трудились и переделывали десять раз свои вещи, то уж нам, маленьким людям, сам бог велел. А то придет порядочная мысль в голову, поленишься обдумать ее хорошенько, да обделать как следует,— и выйдет какая-то смутная чепуха. Это со мною не раз случалось,— и я дал себе слово вперед не позволять себе этого».

** Ку сăмахсене Я. Ухсай произведенийĕсенчен илнĕ.

вырнаҫрӗ. Унта икӗ самана пурнӑҫне, икӗ саманан социаллӑ сӑн-сӑпатне тӗлӗнмелле вӑйлӑ кӑтартса панӑ. Унта чӑваш халӑхӗн шухӑшӗ, ӗмӗчӗ тапса тӑрать. Унта чӑваш чӗлхин янравлӑхӗ кӗмӗл саслӑн илтӗнет.

«Халӑхӑн ылтӑн кӗнекине» ҫырнӑ чухне поэта совет халӑхӗн 1917—1937 ҫулсенче тунӑ ҫитӗнӗвӗсем хаваслантарнӑ, чун-хавалне, шухӑш-кӑмӑлне, пултарулӑхне ҫунат парса ҫӗклентернӗ. Совет халӑхӗ, ҫав историлле ҫӗнтерӳсен итогне пӗтӗҫтерсе, Конституци ҫырнӑ, ӑна малтан хуласенче рабочисен пухӑвӗсенче, университетсенче, тӗпчев институчӗсенче, ялсенче — хресченсен пухӑвӗсенче сӳтсе явнӑ. Ҫапла вара, ӑна 1936 ҫулхи декабрӗн 5-мӗшӗнче Советсен Пӗтӗм Союзри Чрезвычайлӑ съездӗнче йышӑннӑ. Ҫакӑн хыҫҫӑн вӑл совет государствин Тӗп Законӗ пулса тӑнӑ.

Эпир Яков Ухсай поэми ҫинчен ҫакӑн пек калама пултаратпӑрах: вӑл — совет халӑхӗ хӑйӗн Конституцийӗн проектне сӳтсе явнӑ чухне поэт тӑван халӑхӑн иртнӗ пурнӑҫӗпе хальхи кун-ҫулӗ ҫинчен шухӑшланӑ шухӑшсен итогӗ, чӑваш халӑхӗн историйӗпе пурнӑҫӗ ҫинчен каланӑ шухӑшсене хӑш-пӗр таран пӗтӗҫтерекен кӗнеке, унта халӑх ӑслӑлӑхӗпе философийӗн паха тӗслӗхӗсем чуна савӑнтараҫҫӗ. «Халӑхӑн ылтӑн кӗнеки» гражданла поэзи вӑйӗпе, халӑх ӑс-хакӑлӗпе ялкӑшса тӑрать. Ҫавӑнпа ӗнтӗ вӑл, чӑннипех те, кивелми, тӗксӗмленми произведенисен шутне кӗчӗ.

...Поэт, поэмӑн малтанхи йӗркине ҫырнӑ чухне, патша саманине, патша саккунне аса илсе: «Саккун тесен, сехре хӑпатчӗ...» тет. Малалла вара ҫав саккуна пула патша влаҫӗ тунӑ ирсӗрлӗхсене каласа парать: патша вӑхӑтӗнче «саккун тесе», халӑхӑн ҫич хут тирне сӳнӗ, сӑпкасенчи ачасене чӳречерен вӑркӑнтарнӑ, ашшӗсене вӑрҫа хӑваласа кайнӑ, куланайсемшӗн кил-ҫуртне ҫаратнӑ, выльӑх-чӗрлӗхне сутнӑ, тумтирӗсене хывса илнӗ, хӗрарӑмсене мӑшкӑлланӑ, куҫӗсене шӑтарнӑ... «Саккун тесе», халӑха улталанӑ, выҫӑ хӑварнӑ, пусмӑрланӑ, таптанӑ, лутӑрканӑ, юнне юхтарнӑ. Патша саккунӗ хӗснипе пин-пин ҫын ҫӗре кӗнӗ. Вӗсене халӗ аса илсен, поэт калашле:

> Ума килет пӗлӗт пек халӑх,
> Тухаҫҫӗ шӑмӑ этемсем.

Патша тарҫи-тӗрҫисем, урядниксемпе тиексем, старшинасемпе старостӑсем пур ирсӗре те «саккун» тесе тунӑ:

Саккун тесе, пире вырттарнă
Харам пырсем хăма çине,
Чĕр хулăпа вĕтсе кастарнă,
Сӳтернĕ çурăмăн тирне,
Хĕненĕ хыççăн сирпĕнтернĕ
Пире хура тĕп сакайне;
Куштан çынсем туйра йĕртернĕ
Эпир юратнă хĕрсене.

Халăх культурине те «саккун тесе» путарса, хăртса пынă:

Саккун тесе, лӳппер çӳренĕ
Патша вĕренĕнчи ĕне,
Ялан çăтса ярса кавленĕ
Чăваш чĕлхи кĕнекине.
Çут ылтăн майракаллă выльăх,
Çĕр çăтмăш сехремет ĕне,
Пур халăхсем те ас тумалăх
Чылай варланă тĕнчене.

Иккĕмĕш строфан пĕрремĕш йĕркинчи «лӳппер» сăмах, тен, выранлах та мар пулĕ, мĕншĕн тесен чăваш халăхĕн: «Чăваш кĕнекине ĕне çинĕ» текен сăмахне тĕпчесе пăхсан, унта мĕнле ĕне пирки калани уççăнах курăнать; çав «ĕне»— ахаль ĕне мар, вăл икĕ уралла, медальсем çакса çӳрекен, çынсене саламатпа хĕнекен, патша саккунĕшĕн хăйĕн ашшĕ-амăшне, чунне сутма хатĕр «ĕне» пулнă,— вăл ахаль ĕне мар, патша чиновникĕ пулнă. Çав чиновник «лӳппер» çӳремен, хурах пек вашкăртса çӳренĕ, кĕнеке пулмасан — çынсене те çинĕ...*

Поэт чăвашсен патша вăхăтĕнчи кун-çулне тĕлĕнмелле вăйлă кăтартса панă. Поэмăн кашни строфинчех пирĕн халăх пурнăçĕн мĕнле те пулин саманчĕ курăнса тăрать. Акă, сăмахран, çак сăмахсене вуласан, кĕлетке тăрăх юн сăркăлтатса каять:

Эпир чура та тарçă пулнă
Авал мăн Атăл хĕрринче.
Пире тытса йытран йӳн сутнă
Таçти-таçти пасарсенче.
Патша та, тăрăн та турхан
Пире такан çине çактарнă,
Кăвар пек куççене çăхан
Сӳнес чухне сăхса кăларнă.

---

* «Чăваш кĕнекине ĕне çинĕ» сăмаха çакăн пек те ăнлантарса пăраççĕ: чăваш кĕнекине патша чиновникĕсем пĕрмаях хĕсĕрленĕ, çавăнпа та чăвашсем ăна ĕне хырăмне пытарнă, тет. Питех те тĕплĕ пытарнă-мĕн хăйсен кĕнекине чăвашсем!

Кам кăна чăвашсене хĕсĕрлемен, пусмăрламан?.. Вĕсене тĕрлĕ вăхăтра тăрăнсем, мурзасем, турхансем, улпутсем, кулаксем, куштансем, усламçăсем, сутăçсем пусмăрланă, вĕсене патша, унăн чиновникĕсем пусмăрланă, капиталистсемпе банкирсем пăвса пурăннă,— пурте халăх юнне ĕçнĕ! Анчах халăх çĕкленчĕ. 1917 çулта мĕн пур харам пырсене ĕнсе çинчен сирпĕнтерсе ячĕ, çĕнĕ саккун тăвас çул çине тухрĕ.

«Халăхăн ылтăн кĕнеки» поэмăра патша саккунĕн ирсĕрлĕхне кăтартса панă хыççăн автор çĕнĕ саккун (Совет Конституцийĕ) çинчен хавасланса çырать. Уншăн халăх мĕнле кĕрешнĕ, ăна çырса хатĕрлесен, çирĕплетсен мĕн тери савăннă, мĕнле тивĕçлĕхсем туяннă,— çаксене поэт манмалла мар сăмахсемпе каласа парать:

Ахаль юхмарĕ халăх юнĕ,
Кĕтни ахаль иртмерĕ ун:
Умне хăпарчĕ çутă кунĕ,
Килчех телейлĕ чăн саккун.
Ик пуçлă ăмăрт кайăка
Октябрьти кăвар çунтарчĕ,
Çăва тĕпне те аякка
Кĕлне вĕçтерчĕ те пытарчĕ.

* * *

Çĕнĕ саккуншăн тухрĕ халăх
Хăватлă граждан вăрçине,
Çĕклерĕ вăл тĕнче курмалăх
Çĕршывăн хĕрлĕ ялавне—
Хирте те хулара хăпартăр,
Çилпе хумхантăр ваш та ваш!
Туслашрĕç вырăс та, тутар та,
Грузин та, пушкăрт та чăваш.

Кунта эпир çĕнĕ саккуншăн совет халăхĕсем мĕнле кĕрешнине, мĕн тери нумай вăй хунине, пĕр-пĕрне пулăшнине куратпăр. Ăна поэт питех те ăста кăтартса панă. Çапах та кунта, сăмах май, автора пĕр тĕрĕсех мар вырăн пирки кăштах систерес килет. «Ик пуçлă ăмăрт кайăка» 1917 çулти февральтех сирпĕтсе антарнă, ăна «çунтарасси» «Октябрьти кăвар» задачи пулман, Октябрьти революци задачи капитализма, буржуазие çапса çĕмĕресси пулнă. Поэмă каланă пек пулнă пулсан, Февральпе Октябрь революцийĕсем хушшинче уйрăмлăх та пулман пулĕччĕ.

Пирĕн кĕрешӳ йывăр кĕрешӳ пулчĕ. Юн та нумай юхрĕ, çынсен пурнăçĕсем те пайтах пĕтрĕç, вăй питти çынсем,

çамрăк юлташсем вăхăтсăрах çĕре кĕчĕç. Кун пирки поэт çакăн пек çырать:

Çĕнĕ саккуншăн халăх юнĕ
Тумларĕ вăрçă хирĕнче.
Уй витĕр çут малашлăх кунĕ
Пире кĕпер пек курăнчĕ.
Тырра ӳсмешкĕн çумăр кирлĕ,
Çĕнтерĕве — хăват та юн.
Эпир кĕрешрĕмĕр пит вирлĕ,
Юнпа çуралчĕ çĕн саккун.

Сăмах май, каллех тепĕр тĕрĕсех мар йĕрке пирки асăрхаттарса хăвармалла. «Тырра ӳсмешкĕн çумăр кирлĕ...» — ку тĕрĕс, ку — çутçанталăк саккунĕ. «Çĕнтерĕве хăват» кирлĕ тени те тĕп-тĕрĕс, анчах «çĕнтерĕве юн» кирлĕ тени çутçанталăк саккунĕ пек кирлĕлĕх (необходимость) пулма пултараймасть. Историре юнсăр пулса иртнĕ çĕнтерӳсем те сахал мар пулнă. Пирĕн халăха граждан вăрçинче юн тăкма тиврĕ пулсан, вăл акă мĕнрен килнĕ: çав вăрçа контрреволюцилле вăйсем пуçарса янă, вĕсем ĕç çыннисене каллех пусмăра кĕртсе ӳкересшĕн пулнă,— çапла вара, хаяр кĕрешӳ пуçланса кайнă, юн тăкăннă.

«Ленинизм,— тет Н. С. Хрущев,— çакăн пек вĕрентет: пуç пулса тăракан классем влаçа хăйсен ирĕкĕпе памаççĕ. Анчах социализма куçнă чухне кĕрешӳ çивĕчлĕхĕ вăйлăрах е вăйсăртарах пуласси, вăйпа ирĕксĕрлени пуласси е пулас çукки пролетариатран ытла эксплуататорсем мĕнле хирĕç тăнинчен, эксплуататорла классем хăйсем вăйпа ирĕксĕрленинчен килет»*.

Тепĕр асăрхаттару: Яков Ухсай, граждан вăрçи çинчен çырнă чухне, яппун салтакĕсен эшкерĕн тискер ĕçĕсем пирки кăна калать (35-мĕшпе 36-мĕш строфасене пăхăр). Интервентсен граждан вăрçи тапхăрĕнчи тискерлĕхĕсем çинчен калас пулсан, акăлчансемпе американецсем мĕн-мĕн хăтланнине те кăтартса памалла, мĕншĕн тесен вĕсем ирсĕр ĕçсем тăвас тĕлĕшпе яппунсенчен кайра тăман. Вĕсем пурте Российăна, унăн халăхĕсене çаратас, пăвас шутпа килнĕ.

«Халăхăн ылтăн кĕнекине» чĕлхе енчен илес пулсан, эпир пĕр иккĕленмесĕрех çапла калама пултаратпăр: вăл Ухсай творчествинче чи лайăх произведенисен шутĕнче

* Н. С. Хрущев. Отчетный доклад Центрального Комитета КПСС XX съезду партии. Госполитиздат, стр. 43 (Чăвашла изд., Чăвашгиз, 43 стр.).

тăрать. Пирĕн шутпа, хăш-пĕр строфасене чăваш поэзийĕн классикăлла чĕлхипе çырнă теме те юрать (чăваш поэзийĕ çине нигилистла пăхакан пĕр-пĕр этем, çакна вуласан, шартах сикĕ те тавлашма тытăнĕ. Мĕн тăвас ĕнтĕ, нигилистăн йăли ĕмĕрех çавăн пек-çке!).

«Халăхăн ылтăн кĕнеки» — гражданла лирикă произведенийĕ, унта чăннипех те халăх ăсĕ, философийĕ, поэт шухăш-кăмăлĕ, ăсталăхĕ пĕр-пĕринпе пĕрлешсе тăрать.

* * *

«Телей çинчен хунă юмах» — «Самана» кĕнекери произведенисенчен чи пысăкки. Ку юмаха эпир 10—15 çул ĕлĕкех вуланăччĕ: унăн пĕрремĕш кăларăмĕ хыçĕнче автор 1937—1938 çулсене кăтартса панă, хальхи кăларăм хыçне 1937—1955 çулсене лартнă. Çакă вара поэмăна 15—17 çул хушши çырнине пĕлтерет пулмалла, вăл, сахалтан та, 1938—1955 çулсенче тепĕр хут тӳрлетсе, юсаса çырнине пĕлтерет. Поэмă ятне юлашки кăларăмра улăштарнă: ĕлĕк «Телей юмахĕ» пулнă, халĕ — «Телей çинчен хунă юмах».

«Телей юмахне», автор пĕлтернĕ тăрăх, «1934 çулта Пушкăрт республикинчи, Пишпулек районĕнчи Çирĕклĕ ялĕнче çырса илнĕ»* (хальхи кăларăмра кун пек асăрхаттарни çук).

«Çырса илнĕ» тенине ĕненес те килет, ĕненес те килмест, — ку юмахра халăх творчествипе пĕрлех поэт творчестви те пур. Çавăнпа та «çырса илнĕ юмаха сăвăласа панă» (е «çырнă») тенĕ пулсан, тĕрĕсрех пулнă пулĕччĕ.

Вăрçăченхи вăхăтра К. В. Иванов юмахĕсем пирки тавлашу тухса кайнăччĕ. Çавăн чухне пĕрисем: К. Иванов чăваш юмахĕсене ним улăштармасăр илнĕ, терĕç; теприсем — улăштарса çырнă, вĕсен тупсăмне çивĕчлетнĕ, тесе хирĕçлерĕç. Чăнах та, халăхран çырса илнĕ юмаха улăштарма юрать-и? Çак ыйтăва ответлесе эпир: Константин Иванов хăйĕн юмахĕсемпе халапĕсене çырнă чухне А. С. Пушкин пек ĕçленĕ», тенĕччĕ.

А. С. Пушкин мĕнле ĕçленине А. М. Горький питех те лайăх каласа панă:

«...Пушкин был первым русским писателем, который обратил внимание на народное творчество и ввел его в литературу, не искажая в угоду государственной идее «на-

---

* Ухсай Яккăвĕ. Сăвăсемпе поэмăсем. Чăвашгосиздат, 1947, 123 стр.

родности» и лицемерным тенденциям придворных поэтов. Он украсил народную песню и сказку блеском своего таланта, но оставил неизменными их смысл и силу»*.

Яков Ухсай юмахне илес пулсан, ҫакӑн пек калас пулать: вӑл Пушкин пек те, Иванов пек те ӗҫлемен, Ухсай—Ухсай пек ӗҫленӗ. Унӑн ӗҫри меслетне кӑтартса парас тесен, малтанхипе хальхи кӑларӑмсене илес пулать. Вӗсем хушшинче ытла та пысӑк уйрӑмлӑх пур. Юлашки кӑларӑмне «юсанӑ» (?),—ку сӑмаха кавычкӑпа ыйту паллисӗр нимле те калама ҫук, мӗншӗн тесен Ухсай юмахӗ юсанӑ хыҫҫӑн нумай ҫӗрте никам та ӑнланмалла мар пулса тухнӑ. Юмахне ачасем валли ҫырнӑ, анчах ӑна ачасем мӗнле вулама пултарассине автор шута илмен.

Юмахӑн ятне те пулин пӑснӑ: лайӑх ята кӑнттам ятпа улӑштарнӑ,—«Телей ҫинчен хунӑ юмах» тени чӑваш чӗлхине пӗлмен тӑлмач чӗлхи пек (чӑвашсем: юмах ярать, теҫҫӗ).

«Телей юмахне» Яков Ухсай Н. А. Некрасовӑн «Кому на Руси жить хорошо» ятлӑ поэми пекрех пуҫласа ярать:

Асап патши ҫӗрӗнче,
Выҫлӑхкасси ялӗнче,
Авалтанах-ӗлӗкрен
Ҫӗр пек пысӑк хӗнлӗхре
Шавла-шавла, кӗрлесе,
Асаттесем-вӗрлесем
Тӑснӑ мӗскӗн ӗмӗре;
Хӗсӗртен хӗсӗр ҫӗре
Чӗрнӗ суха шӑрчӗпе.
Йӗппе пусӑ алтнӑ пек
Йывӑр пулнӑ пурӑнӑҫ,—
Ниҫта та ҫук пӑрӑнӑҫ.
Анчах аслӑ ҫуртсенче
Юман сӗтелсем ҫинче,
Пуян кӑмӑлне уҫса,
Янӑранӑ ҫут укҫа,
Пӳлме туллн тырӑсем
Нихӑҫан та иксӗлмен;
Хура вӑрман варринче,
Йывӑҫсен хӑвӑлӗнче,
Сӑвӑслан мар, вакша мар—
Пыл пылланӑ хурт-хӑмӑр**.

---

* М. Горький. Избранные литературно-критические статьи., 1954, 79 стр.

** Ухсай Яккӑвӗ. Сӑвӑсемпе поэмӑсем. Чӑвашгосиздат. 1947, 123 стр.

Ку йĕркесене автор «Самана» кĕнекери çене каларамра пĕтĕмпех улăштарнă, хăшĕ-пĕрисене çĕнĕрен çырнă:

Асап патша çĕрĕнче,
Выçлăхкасси ялĕнче
Елĕкрен-авалтанах
Мăянран юрса çăмах
Çинĕ пирĕн тăвансем—
Апăрша асаттесем,
Акăш-макăш хĕнлĕхре
Хĕсĕртен хĕсĕр çĕре
Сухаланă çулсерен,
Çулсерен, ĕмĕрсерен—
Çулсерен кайман инкек,
Йĕппе пусă алтнă пек,
Йывăр пулнă пурăнăç,
Ниçта та çук пăрăнăç.
Пысăк катмар çуртсенче,
Сăрлă сĕтелсем çинче,
Пуян кăмăлне уçса,
Янăранă çут укça,
Пĕр самант та иксĕлме
Пултарман пуян пўлме,
Сĕм-сĕм вăрман варринче,
Йывăçсен хăвăлĕнче
Юрсăр-варсăр çыншăн мар
Пыл пылланă хурт-хăмăр.

Н. А. Некрасов хăйĕн поэмине халăх творчествипе усă курса çырнă пулсан, Я. Ухсай «Телей юмахĕнче» халăх творчествипе те, Некрасов поэмипе те усă курать (аса илер-ха, унти ялсен ячĕсене: Заплатово — Саплăккасси, Дырявино — Шăтăккасси, Разутово — Çарракасси, Знобишино — Шăнкасси, Горелово — Çункасси, Неелово — Выçлăхкасси...).

Выçлăхкасси çинчен Некрасовла каланă хыççăн Я. Ухсай хăйĕн юмахне пуçлас умĕн пĕр яланхи картинăна ўкерсе кăтартать. Вăл çуллен-çулах çуркунне аслатиллĕ вăйлă çумăр çунине, çырма-çатра, вăйлă шывпа тулса, çырансене асар-писер çĕмĕрсе юхнине, çырансен тăприне илсе кайнине, çапла вара, çыран хĕрринче «сарă хăрăк шăмăсем» тухса выртнине кăтартса парать. Поэт, «Кĕтўç вилли» (малтанхи кăларăмра «Ваçка вилли сăрчĕ») текен ансăр сăрт çинче пĕччен сĕнксе тăнă вăхăтра, тахçан авал çĕре кĕнĕ çыннăн пуç купташкине тытса, «пысăк шухăша» каять:

Мĕскĕн çыннăм! Самана
Лутăрканă та сана,
Хăрса кайнă хирсенче,
Касса вĕрнĕ çил çинче

Йĕпхĕм хура çӳçӳсем
Ларнă юр пекех тĕсе.
Мĕншĕн эсĕ тĕнченс
Килсе хунă ĕнсӳне!
Этем пулса çӳриччен,
Хура халăх çĕрĕнче
Пулмаллаччĕ хур хуххи,
Курмăттăм кун-çул хуйхи,
Мамăк пулса вĕçĕттĕн,
Хĕр минтерне лекĕттĕн.

Халĕ тата малтантарах илсе кăтартнă йĕркесенче, пирĕн шутпа, чĕлхе енчен те, шухăш енчен те çыпăçуллах мар вырăнсем пур. «Çĕр пек пысăк хĕнлĕхре» тенине тӳрлетнипе автор тĕрĕс тунă, мĕншĕн тесен ку танлаштару — кăнттам танлаштару. «Акăш-макăш хĕнлĕх» тени лайăхрах. Анчах автор тӳрлетмеллисене тӳрлетсе çитереймен. «Ниçта та çук пăрăнăç» тенĕ йĕрке икĕ кăларăмĕнче те тĕп шухăшпа килĕшсе тăмасть: «йывăр пурнăç» çинчен «ниçта та çук пăрăнăç» тени, çăмăл пурăнăç çинчен каланă пек туйăнать.

Малтанхи кăларăмра «сăвăслан мар, вакша мар» тени, шухăш енчен илсе пăхсан, ниме те пĕлтермест,— янăравлă сăмахсем кăна. Анчах тӳрлетнине те автор туса çитернĕ теме çук. Чăнах та «юрсăр-варсăр çыншăн мар, пыл-пылланă хурт-хăмăр» тени мĕне пĕлтерет-ха? Сĕм вăрман варринчи пыл хурчĕсем те пуянсемшĕн ĕçленĕ тесе каласшăн мар-и автор? Çавăн пек пулсан, ку вăл хурт-хăмăр ĕçне социалла ăнлантарма пăхни пулмасть-ши?

Малалла тата çакна асăрхаттармалла: «Этем пулса çӳриччен... пулмаллаччĕ хур хуххи...» тенипе килĕшме çук. Ку шухăш прогрессивлă литературă этем çинчен вĕрентнипе килĕшсе тăмасть. Мĕнле пулсан та этем — этемех, тăлăх чĕрчун мар вăл. Пирĕн классик, çамрăк Константин Иванов, чаплă гуманист, этемĕн пурнăçри вырăнне Горький пек ăнланнă:

Çакă çутă тĕнчере
Вăйли çук та этемрен:
Шывсем çинче, çĕр çинче
Хуçа пулса вăл тăрать.

Я. Ухсай, авалхи çыннăн пуç купташкине тытса, тата тепĕртак «философиленĕ» хыççăн телей çулĕ çинчен юмах «хывма» тытăнать (тинех «Телей юмахĕ» пуçланса каять!):

Асап патши çĕрĕнче
Выçлăхкасси ялĕнче

Елĕкрен-авалтанах
Мăянтан юрса çăмах
Çисе эпир хăртăмăр,
Ӳтсĕр чунлă пултăмăр,
Кутамкка хыçа çакса,
Сенĕк-пуртă та тытса
Телей шăпи шырама,
Вилес пулсан — сар шăмма
Çичĕ ютра хăварма
Аслă çула тухрăмăр,
Умлăн-хыçлăн утрăмăр.

Пирĕн шутпа, ку вырăн — юмах пуçламăшĕнчи илемлĕ вырăнсенчен пĕри, анчах ун пек паха вырăнсем юмах текстĕнче сахалтарах, унта ăнланма йывăр вырăнсем нумайрах.

Телей шыракансем чăваш халăхĕн телейĕ ăçтине малтан уйăхран ыйтаççĕ, унтан, кайсан-кайсан, шăпчăкран, хĕвелтен ыйтаççĕ, вĕсем мĕн каланине асра тытса, малалла каяççĕ. Хĕвел çул кăтартса парать. Вăл çул — çӳллĕ ту хĕррипе пыракан çип-çинçе те «тăвăр сукмак».

Телей шыракан чăвашсене хĕвел акă мĕн калать:

. .Питĕ тăвăр пĕр сукмак,
Пĕр-пĕччен утма сукмак.
Ертсе кайĕ вăл сире
Ĕмĕтленнĕ тĕлĕре—
Курăр çутă шăтăкра
Тарăн йывăр шухăшра
Ларнă икĕ старике.
Выртĕ ылтăн кĕнеке
Сарлака сĕтел çинче.
Çак сынсем çырнисенче
Тĕпчесе шыра та кур—
Чăннипе те чăнлăх пур.

Хайхискерсем, пырсан-пырсан, чăнах та «хулăн ылтăн кĕнеке вулакан» икĕ старик патне çитеççĕ. Вĕсен çӳçĕ кĕркунне кăн-кăвак таса ирпе лăпăс-лăпăс ӳкнĕ пĕрремĕш юр пек шап-шурă. Акă телей шыракансем «çутă шăтăкра» икĕ старикрен телей ăçта тупмаллине ыйтса тăраççĕ:

Харпăр хăй шĕлепкине
Хĕстертĕмĕр хул айне,
Пилĕк таран пуç тайса,
Кăкăр çумне ал тытса,
Хамăр мĕншĕн килнине,
Хамăр мĕншĕн юрлине
Каласа пĕлтертĕмĕр:
Ăçта-ши телейĕмĕр?
Пур-ши, çук-ши?— терĕмĕр.

Малаллине ăнланма вара питех те йывăр. Малтанхи кăларăмпа хальхи кăларăма танлаштарса вуласан çеç, юмахăн шухăшне кăшт ăнланса илме пулать (телей тупса паракане — ăслă ăмăрт кайăк).

Вулакансем çакăн пек ыйтаççĕ: икĕ старик — камсем, мĕнле çынсем? Пĕрисем: икĕ старик — Маркспа Энгельс, теççĕ. Çав стариксем, ылтăн кĕнеке вулакансем, чăвашсене тĕрĕс çул кăтартса параççĕ. Логикă енчен пăхсан, çавăн пек шухăшлама сăлтав та пур. Ăслă ăмăрт кайăк — Ленин. Поэт хăй те юмахăн пĕрремĕш кăларăмĕнче çавăн пек шухăшлама май панă. Унта вăл акă мĕн çырнăччĕ:

Пĕрре сарăлчĕ хыпар:
Ăмăрт кайăк чĕрĕ мар.
Шартлама сивĕ хĕлле
Хаяр çиле хирĕçле
Çара пуçăн пурсăмăр
Пĕр чĕнмесĕр утрăмăр.
Ватăран та ваттисем,
Юр пек шурă çÿçлисем,
Мĕн тÿсмен те мĕн курман,
Нихăçан та макăрман,
Анчах вĕсен çакă çул
Пăчăртанчĕ тăр куççуль.
Халăх пуçĕ çиййĕнче
Хуласенче, ялсенче
Явăнаççĕ вĕлкĕшсе
Хура сăнлă ялавсем.
. . . . . . . . . .
...Сана, сан çинчен,
Ăмăрт кайăкăмăр, ялан
Аса илĕç юрăсенче,
Асăнĕç юмахсенче,
Ленин! Эс — хĕвелĕмĕр.
Ленин! Эс — телейĕмĕр! *

Хальхи кăларăмра çак йĕркесене йăлтах улăштарса пĕтернĕ, ăнланмалла мар тунă. Çапах та поэтăн сăмахĕ халĕ те ăмăрт кайăк вилни çинчен пырать:

Ăмăрт кайăк сывă мар,
Вăл вилни çинчен хыпар
Шартлама хĕлле пĕрре
Сиксе тухрĕ тĕнчере,
Шĕкĕр Мускав хулинчен
Çитрĕ юр кĕрчĕсенче
Путса ларнă ялсене,
Пирĕн халăх чĕрине
Пысăк хуйхă пĕлтерме...

---

* Ухсай Яккăвĕ. Сăвăсемпе поэмăсем. Чăвашгосиздат. 1947, 138—139 стр.

Аслă çулпуçăмăр В. И. Ленин çинчен çырнă, эпир кунта илсе кăтартнă йĕркесем пурте хитре. Унта халăх хуйхине ăста кăтартса панă.

Поэт ытла васканипе пулас, унăн произведенийĕсенче пысăк шăйрăксем тĕл пулаççĕ, хăш-пĕр вырăнсенче, шел пулин те, чĕлхе йĕрки те, шухăш йĕрки те (логикă) çук,— чĕлхепе шухăш çыхăнăвĕ, пĕрлĕхĕ çук. Пулса, йĕркеленсе çитнĕ шухăша çырса пама та çăмăл, ăна вулакансем те лайăх ăнланаççĕ. Йĕркеллĕ шухăш хут çинче те йĕркеллĕ тухать, яр уççăн курăнса тăрать.

Я. Ухсай юмахĕнчи телей шыракан чăвашсем хĕвелпе тĕл пулнă хыççăн сĕм вăрман витĕр çичĕ уйăх утаççĕ. Вĕсен уринчи çăпатисем çĕтĕлсе пĕтеççĕ, «вĕрлĕ чуллă тăпрара» (79 с.) çара урисем аманаççĕ (малтанхи кăларăмра: «Хыçа юлать юнлă йĕр», тенĕччĕ). Çапах та, телей шыракансем, икĕ ватăпа калаçсан, хăйсем халран кайнине, урисем аманса пĕтнине пăхмасăрах, «тăпăр-тăпăр-тăпăртăк ташласа» (82 с.), такмак каласа пыраççĕ:

— Хура вăрман — хуйхăмăр,
Унăн витĕр тухрăмăр.
Ăна сирес кăмăлпа
Вăрăм çулпа, çак çулпа
Ку таврана килтĕмĕр.
Хурама пек пĕвĕмĕр
Çичĕ уйăх хушшинче
Пулса тăчĕ çип-çинçе.
Халĕ ĕнтĕ, ку чухне,
Ырхан ĕнсе путăкне
Алтăр шыв та кĕмелле —
Лартсан — çарăк ӳсмелле.

Ку йĕркесенче телей шыраса ывăннă çынсен, çапах та «тăпăр-тăпăр-тăпăртăк» ташласа пыраканскерсен, сăн-сăпатне кăтартса панă. Çавăн пек ташлани юмахăн тĕп шухăшĕпе çыхăнман,— вăл армак-чармак турат пек курăнса тăрать.

Хăш чухне Я. Ухсай ваттисен сăмахне илет те ăна хăйне май ăнлантарса пама тăрăшать. Кун пек тĕслĕхсем «Телей çинчен хунă юмахра» та пур. Сăмахран, чăваш ваттисен сăмахĕ: «Халăхсене телей валеçсе панă чухне чăваш урине сырса юлнă», тет. Ку сăмахпа поэт акă мĕнле усă курнă:

Тахçанах ĕлĕк-авал
Кирлĕ чухлĕ ăраскал
Турă хăй валеçнĕ, тет—
Çавăн пек халап ҫӳрет.

Имĕш ун чухне чăваш
Анкĕ-минкĕ те йăваш,
Тăр лӳппер пулайнăран
Çăпата аран-аран
Сырса ларнă сак çинче,
Хăрăмланнă пӳртĕнче.
Телее валеçиччен
Вăл çитме ĕлкĕреймен.

Ыйтас килет: çав ура сырса ларнă чăваш мĕнле чăваш пулнă-ши? Тĕрĕссипе илсен, халăхсене «телей валеçсе панă чухне» чăваш мĕнле халăх пулнă-ши? Чăвашсем ытти халăхсенчен мĕнпе уйрăм тăнă-ши? Катăк халăх пулман-ши?.. Ухсай калана тăрăх, чăвашсем «анкă-минкĕ», «йăваш», «лӳппер» халăх пулнă. Ваттисен сăмахĕнче чăваш халăхĕ çинчен мар, уйрăм чăваш çинчен калана пулсан, «анкă-минкĕ» сăмаха пĕтĕм халăх çине сарма юраманни уççăнах курăнса тăрать. Тĕрĕссипе каласан, халăх нихçан та анкă-минкĕ пулмасть. Халăх вăл — пин-пин пуç, пин-пин ăс.

Пĕр-пĕр Обломов йышши юлхав этем çинчен, унăн ăс-пуçĕ çинчен калана чухне «лӳппер», «анкă-минкĕ» тени вырăнлă. Анчах Обломов — вăл халăх сăнарĕ мар. Унăн йăлисене халăх çине сарма юрамасть; Обломов ăсĕн шайĕ халăх ăсне виçмелĕх çук,— çитменнине, халăх ăсне Обломов ăсĕн шайĕпе виçни элек кăна пулма пултарать.

«Телей юмахĕнчи» шухăшпа чĕлхе шайрăкĕсем пирки сăмах пуçларăмăр пулсан, тата тепĕр ик тĕслĕх илсе кăтартас килет. Юмахра çакăн пек вырăн пур:

Чике старик — Хурсухал
Пурăнать, тет, пит усал.

«Пит усал» пурăнать тенине мĕнле ăнланмалла-ши? Пирĕн шутпа, пит пуян, пит чухăн пурăнать теме пулать, анчах «пит усал пурăнать» тени вырăнлă сăмах мар.

Йăлт вĕрентĕ пĕтĕмпе
Хăйĕн аслă ăсĕпе,—

тенĕ тепĕр çĕрте. «Йăлт» тата «пĕтĕмпе» сăмахсен пĕлтерĕшĕ пĕр пек, янрама çеç вĕсем тĕрлĕ янраççĕ.

Тăрнасем çинчен çакăн пек çырнă:

Кик-как, кик-как тăрнасен
Виç кĕтеслĕ картисем...

Кунта шухăшлама хур кайăксем çинчен шухăшланă, çырма тăрнасем çинчен çырнă,— урăхла пулсан, тăрнапа хур кайăк сассине пăтраштарма çук.

Кайăксем пирки сăмах хускатнă май тепĕр тĕслĕх илер-ха:

Шăпчăксем çинçен-çинçен
Шăрататчĕç юррине...

Шăпчăк çинçен-çинçен юрламасть, унăн сасси çинçе мар,— автор кунта та урăх кайăк çинчен шухăшласа çырнă пулмалла.

...«Телей çинчен хунă юмаха» пĕтĕмĕшпе илсен, çакăн пек калас пулать: вăл —«юмах», анчах халăх юмахĕнчен уйрăлса кайнă «юмах», кивĕ юмаха «çĕнетме» хăтланса пăснă юмах. Халăх юмахне çырса илес пулсан, ăна сăвăласа çырас пулсан, унăн тĕп шухăшне тĕрĕс тытса пырас пулать. Юмах шухăшĕ юмах тĕтри ăшне кĕрсе ан çухалтăр, тĕтрене кĕрсен те, унăн çути курăнса тăтăр.

Юмаха пуринчен ытларах ача-пăча юратать. Ача юмах юратни унăн фантази пуррине кăтартса парать, поэзи еннелле илсе пыракан туйăм пуррине пĕлтерет. Юмахсене ача-пăча юратса вулать пулсан, çырса илемлетнĕ юмахсем — чи çăмăл, чи ăнланмалла произведенисем пулмалла, сăвăллă юмахсенче поэт таланчĕ çиçсе тăмалла. Шел пулин те, «Телей çинчен хунă юмахра» халăх юмахĕ юлман,— автор ăна пĕтернĕ, çĕнĕ произведени тăвайман (ку юмахăн «чунĕ те çук, юнĕ те çук»).

«Телей çинчен хунă юмахра», ăна «çĕнетме», «юсама» хăтланнине пула, «тенденциозность» тенĕ япала, урăхла каласан, автор хăйĕн шухăшне вулакансене ирĕксĕрех пама тăрăшни сисĕнсе тăрать. Авторăн художествăлла майсемпе кăтартса пама вăй çитмесен, ялан тенĕ пекех, каласа парас, вулакана «ирĕксĕрлес», хистес меслет çиеле тухать. Çавăн пек чухне вара автор пуçĕнчен пĕр шухăш тухма пĕлмест. «Эпĕ ĕненмелле мар çыратăп пулсан та, эсĕ ĕненме тăрăш,— эпĕ çырнисем пурте тĕп-тĕрĕс!»— текен шухăш вăл. Анчах вулакана çап-çара шухăш мар, тум тумланнă шухăш кирлĕ, ăна ăс-пуçне, чĕрине хускатакан илемлĕ произведени кирлĕ. Произведенире шухăш пуянлăхĕ, туйăм хăвачĕ пулмасан,— вăл вăйсăр!

«Телей çинчен хунă юмахăн» тĕп шухăшне Яков Ухсай хăйĕн «Халăхăн ылтăн кĕнеки» ятлă поэминчех каласа панă:

Эпир хирте, тусем çинче
Çăлтăр çутисене тĕпченĕ,
Урапасен таврашĕнче
Выртса çĕр каçнă, ĕнтĕркенĕ.

Телей шӑписӗр ачасен
Сӑпкисене ҫилсем силленӗ,
Эпир чӗлхе такӑниччен
Ҫиллеслӗ юрӑ кӗвӗленӗ.

Эпир ҫӳле пӑхса йӗрленӗ
Чӑвашӑн хӑйӗн ҫӑлтӑрне,
Кӗл тунӑ, ҫичӗ ҫӑлтӑр, тенӗ.
— Хӑҫан тухать-ши тӳпене?
Уйран уя, хиртен хире
Эпир асап курса танкканӑ,
Ҫич ӗмӗр урлӑ тӗнчере
Ҫуллен-ҫулах телей шыранӑ.

«Самана» сборнике кӗртнӗ поэмӑсем пирки, юлашкинчен, пӗтӗҫтерсе калас килет: вӗсен художествӑллӑ пахалӑхӗ пӗр пек мар, тӑватӑ поэмӑран пӗри кӑна («Халӑхӑн ылтӑн кӗнеки») чӑннипех те паха та вӑйлӑ. «Самана» тенӗрен, ҫак кӗнекере пӗр-пӗр самана сӑнне курас килет (сӑмах май, ҫакна та асӑрхаттарса хӑвармалла: «самана» сӑмаха пӗле тӑркачах вырӑсла тӗрӗс мар куҫарнӑ: «время» тени «вӑхӑт» тенине пӗлтерет), анчах «Самана» кӗнекере темиҫе саманана пӗр купана йӑвантарнӑ, пӗр ҫӗре купаланӑ (унта сахалтан та ҫичӗ ӗмӗр ҫинчен ҫырнӑ: чӑвашсем «уйран уя, хиртен хире» ҫӳренӗ саманаран пуҫласа 1955 ҫула ҫитнӗ).

«Ленин ҫурчӗ умӗнче» поэмӑра кӑштах ӗлӗкхи самана сӑнӗ те, хальхи самана сӑнӗ те пур. Поэмӑн тӗп тӗллевӗ В. И. Ленинӑн ача чухнехи (Чӗмпӗрти) пурнӑҫне кӑтартса парасси пулнӑ, ҫавӑнпа та унта вӑл Ленин ҫинчен ытларах ҫырнӑ. Апла пулин те, самана паллисене вӑйлӑрах палӑртмалла пулнӑ.

«Чапаевпа тӗл пулни» поэмӑра «хаяр саманара ҫурални» ҫинчен виҫ-тӑват хут каланӑ пулин те, «хаяр самана» сӑнӗ курӑнмасть, ӑна тӗрлӗ «тӗшмӗшсем» те кӑтартса памаҫҫӗ. «Телей ҫинчен хунӑ юмахра» вара самана тӗлли-палли йӑлтах пӑтрашӑнса кайнӑ: унта Хур сухал «саманинчен» (?) пуҫласа ҫырнӑ, телей панӑ ӑмӑрт кайӑк Мускавра вилнӗ «саманапа» пӗтернӗ,— ку вӑл шутсӑр нумай вӑхӑт, анчах кунта та нимле самана палли те ҫук.

Юмахӑн малтанхи кӑларӑмӗнче ӑмӑрт кайӑк чурасене сӑнчӑрӗсене татма чӗнет, юлашки кӑларӑмра автор ку шухӑша кӑларса пӑрахнӑ та юмаха ҫапла вӗҫленӗ:

Вӑл тӗреклӗ ҫулӗнче
Вӑхӑтсӑр вилни ҫинчен
Хурлӑх пырӗ тӗнчере
Тата нумай ӗмӗре.

Мĕн ку? Самана палли-и? Пирĕн шутпа, пăтранчăк пуплев кăна: «Вăхăтсăр вилни çинчен хурлăх» пырать тени — чăвашла мар, начар тăлмачла каланă сăмах çаврăнăшĕ. «Хурлăх» вырăнне «хыпар» сăмах пулнă пулсан, çавăн пек çырни тĕрĕс пулнă пулĕччĕ. Темле пулсан та «хурлăх... тата нумай ĕмĕре» пымалла мар. Сăмах чăннипех те аслă çулпуçăмăр Ленин вилни çинчен пырать пулсан та, эпир поэтăн çав сăмахĕпе килĕшме пултараймастпăр: пирĕн çĕршыври тата пĕтĕм тĕнчери ĕç çыннисем Владимир Ильич ячĕпе хăйсен мĕн пур çĕнтерĕвĕсене çыхăнтараççĕ,— çакă вăл ленинизм ĕмĕрех чĕрĕ, хаваслă вĕренту пулнипе, унăн революцилле тупсăмĕпе килĕшсе тăрать. 1955 çулччен эпир В. И. Ленин вилнĕ куна, январĕн 21-мĕшне, паллă тăваттăмăр, 1955 çултан тытăнса, вăл çуралнă куна, апрелĕн 22-мĕшне, паллă тума тытăнтăмăр. Мĕншĕн тесен çулпуç вилнине пĕтĕм çĕршывĕпе асăнни хурлантарать, траур тĕсне кĕртет («накладывает печать траура и скорби...», тенĕччĕ КПСС Центральнăй Комитечĕ «О дне памяти В. И. Ленина» ятлă постановленире).

«Самана» кĕнекере, тĕрĕссипе калас-тăк, темиçе самана çинчен çырнă. Пĕри — Ленин самани. Акă вăл:

Çĕнĕ саккуншăн пулчĕ Ленин
Çап-çутă ирĕк çăлтăрĕ.
Эпир ун витĕр çул тĕлленĕ,
Утатпăр çавă çул тăрăх.
Утатпăр яланах телейлĕ,
Инкек-синкексĕр тĕнчере,
Нихçан сӳнми саккун хĕвелĕ
Ачашшăн супăрлать пире.

Тепри — патша самани. Ун çинчен поэт çакăн пек çырать:

Саккун тесе, хăпса килетчĕç
Тпексемпе урядниксем.
Кăкăрĕсем çинче çиçетчĕç
Ӳпне çăпан пек тӳмисем.
Куланайсем пухса сутатчĕç
Тӳнсе каяс пек пӳртсене;
Чӳречерен вăркăнтаратчĕç
Сăпкасенчи ачасене.

Ытти саманисем пирки калаçса тăмăпăр. Çакна çеç калăпăр: Ухсайăн тăвата поэминчи саманасенчен иккĕшĕ — патша саманипе совет самани — вулакан куç умне уççăн тухса тăраççĕ, ыттисем, тахçан авал пулнисем, тĕлли-паллисĕр пăтрашăнса, пĕрре курăнса, тепре çухалса пыраççĕ.

Çак тĕслĕхсем кĕнекене «Самана» теме май памаççĕ. «Самана» темешкĕн унта пĕр самана çинчен çырнă произведенисем пулмалла, вĕсенче самана сăнĕ, самана паллисем, çыннисем, классем, вĕсен ĕçĕсем, событисем курăнса тăмалла.

«Самана» («Время») кĕнекери хăш-пĕр произведенисене ку вăхăтчен 2—3 хут (е ытларах та!) кăларнине, юлашки кăларăм валли мĕн-мĕн «тӳрлетнине» асра тытса, эпир хамăрăн статьяна пĕр авалхи халаппа пĕтересшĕн.

...XVI-мĕш ĕмĕрте Германире Лейпциг хулинче пĕр Иван Балгорн ятлă çын кĕнеке кăларса пурăннă, тет. Çав кĕнекеçĕ пĕррехинче букварь кăларнă имĕш. Ун чухнехи йăла тăрăх, букварь хуплашки çине автан кĕлетки туса хунă. Кăштах вăхăт иртсен, букваре иккĕмĕш кăларăмпа кăларма шут тытнă. Анчах иккĕмĕш хут кăларма букваре юсамалла, çитменлĕхсене пĕтермелле, йăнăшсене тӳрлетмелле... Хайхискер букваре чăнах та «юсаса» кăларнă. Кĕнеке хуплашки çине: «Иван Балгорн тӳрлетсе кăларнă», тесе çырса хунă. «Тӳрлетме» çакăн пек тӳрлетнĕ-мĕн: автана яланхи пекех чаканпа (качапа) туса кăтартас вырăнне чакансăр тунă, автанпа юнашар икĕ çăмарта ӳкерсе хунă. Çавăнпа ĕнтĕ нимĕçсем Иван Балгорн пек «тӳрлетнине» (тӳрлетес вырăнне пăсса пăрахнине Verballhonung теççĕ). Ку сăмаха В. И. Ленин вырăсла чĕлхене «обалгоривание» тесе куçарнă *, чăвашла ăна балгорнлатни е Балгорн пек юсаса кăларни теме пулать...

Тем пулсан та, пĕр-пĕр произведение çĕнĕрен кăларнă чухне пăсас марччĕ: юсасан — лайăхрах юсасчĕ.

Тата тепĕр сăмах калас килет: юлашки вăхăтра Яков Ухсай вулакансен шухăшне, критиксен кăтартăвĕсене шута илме пăраха пуçларĕ. Тен, критиксемпе килĕшме, çитменлĕхсене, йăнăшсене йышăнма чăнах та йывăр, анчах, темле йывăр пулсан та, çитменлĕхсене пĕтерни, йăнăшсене тӳрлетни яланах çĕнĕ çитĕнӳсем тума пулăшать, вăй-хала çĕклентерсе ярать.

Çĕнĕ çĕкленӳсем пулмасан, поэт пĕр вырăнта тапăртатса тăрать е каялла каять. Яков Ухсай — пысăк талантлă поэт. Тăрăшсан, вăл ыттисенчен малта пыма пултарать,— çак сăмах пушă сăмах ан пултăрччĕ, тĕрĕсе тухтăрччĕ.

Ятлисенчен ытларах ыйтаççĕ пулсан, Ухсайран та

* В. И. Ленин. Соч., 5 т., 381 стр.

çавăн пекех нумай ыйтаççĕ, эпир çакăнпа килĕшĕпĕр те статьяна В. В. Маяковский сăмахĕсемпе пĕтерĕпĕр:

Дайте крепкий стих
годочков этак на сто,
чтоб не таял стих,
как дым клубимый,
чтоб стихом таким
звенеть
и хвастать
перед временем,
перед республикой,
перед любимой.

Яков Ухсай, пирĕн юратнă поэтăмăр, çавăн пек паха та «çирĕп сăвă-юрăсем», поэмăсем ĕнтĕ сахал мар çырчĕ, тăван халăха пачĕ. Вĕсем çĕр çул мар, ытларах та пурăнĕç. Çапах та Ухсай: «Эпĕ мĕн çырас тенине çыртăм, халĕ ыттисем çырччăр. Мана çитет...» тесе йăпанса пурăнмĕ. Вăл çĕнĕ те паха, илемлĕ те хăватлă, классикла произведенисем çырасса шанас килет. Иккĕленмĕпĕр: çырĕ вăл, чăннипех те классикла çырĕ, классик пулса тăрĕ!

*1957*

## СТИХВАН ШАВЛИ ÇЫРНĂ ИКĔ ПОЭМА

Стихван Шавли çырнă «Киев пионерĕ» тата «Матур Якур» поэмăсенче* иккĕшĕнче те 1941—1945 çулсенчи Аслă вăрçă кунĕсене кăтартса панă. Вăл кунсем кая тăрса юлчĕç ĕнтĕ, унтанпа нумай вăхăт иртрĕ, анчах çав тапхăрти кунсемпе çулсене эпир нихçан та манас çук. Вăрçă пирĕн çĕршыва, пĕтĕм халăхăн пурнăçĕпе историйĕнче хăйĕн паллă йĕрĕсене хăварчĕ. Çав вăхăт кашни совет çыннин пурнăçĕнче мĕнле те пулин майпа палăрса юлчĕ. Урăхла пулма та пултараймасть: Тăван çĕршыв çине ирсĕр тăшман килсе тапăнсан, ăна хирĕç паттăр совет халăхĕ улăпла çĕкленчĕ, алла хĕç-пăшал тытса, вăй-халне, ăс-тăнне пĕр тĕллеве пăхăнтарчĕ, хаяртан та хаяр çапăçусенче тăшмана çапса аркатрĕ. Мĕн пур совет çыннисем, аслă çĕнтерÿшĕн кĕрешсе, Тăван çĕршыва чапа кăларчĕç.

1941—1945 çулсенчи вăрçă пирĕн çĕршыван хальхи вăхăтри историне совет халăхĕн паттăрлăхĕ калама çук вăйлă çĕкленнĕ тапхăр пулса кĕрсе юлчĕ. Ку вăл литературă историйĕнче те çавах: çĕршыври кашни халăхăн литературинче, кашни совет писателĕн пултарулăхĕнче вăрçă вăхăтĕнчи кунсем, ĕçсем, шухăш-кăмăлсем паллă тапхăр пулса тăрасçĕ. Чăваш совет литератури çинчен те çавăн пекех калас пулать. Чăнах та, пур-и-ха пирĕн Аслă вăрçă çинчен мĕнле те пулин произведени çырман писатель? Ун пек писатель пирĕн çук. Чăн-чăн писатель, писатель-патриот пĕтĕм

* Стихван Шавлы. Матур Якур. Поэмăсем. Чăвашгосиздат, 1953. (Ку кĕнекене икĕ поэма кĕртнĕ: «Киев пионерĕ» тата «Матур Якур». Пирĕн статьян тĕллевĕ — çав поэмăсене тишкĕрсе тухасси).

халăх кĕрешĕве çĕкленнĕ кунсенче ăçтан-ха ним шарламасăр пурăнтăр! Писательсенчен кашниех хăйĕн талантне, мехелне кура çырнă, пултарулăхне халăха панă, вĕсем: ылханнă тăшмана çĕнтеретпĕрех! — тесе ĕçленĕ. «Тăшмана çĕнтеретпĕрех!» тени — вăл патриотла идейă, совет çыннисен вăй-халне, шухăш-кăмăлне çĕклекен, ăна хăват паракан идейă. Чăваш совет литературине çак енчен илсе пăхсан, эпир ним иккĕленмесĕрех çапла калама пултаратпăр: пирĕн литературă Тăван çĕршывăн вăрçи вăхăтĕнче кирек хăш вăхăтринчен те ытларах пурнăçа çывăх тăнă, пурнăçпа пĕрле утса пынă, совет патриотизмĕн идейисемпе хавхаланнă. Елĕк-авал: «тупăсем кĕрленĕ чухне музăсем шарламаççĕ», тенĕ, анчах пирĕн вăхăтра, Тăван çĕршыв вăрçи кунĕсенче, тупăсем нихçанхинчен те хăватлăрах кĕрлерĕç, музă та вара хăйĕн сассине çухатмарĕ: совет поэзийĕн сасси вăйлăн илтĕнсе тăчĕ — пирĕн воинсен вăй-халне çĕклентерсе пычĕ.

* * *

Чăвашсен халыхи поэчĕсенчен пĕрин — Стихван Шавлин (Степан Антонович Шумковăн) творчествинче 1941—1945 çулсенчи вăрçă вăхăчĕ хăйне евĕрлĕн палăрчĕ. Вăрçăчченхи тапхăрта пĕтĕмĕшлерех, абстрактлăрах сăвăсем çырнă поэт — Стихван Шавли вăрçă çулĕсенче, вăрçă хыççăнхи вăхăтра конкретлăрах çырма тытăнчĕ. Çак шухăша унăн «Киев пионерĕ», «Маттур Якур», «Зоя» поэмисемпе ытти нумай сăввисем те çирĕплетсе параççĕ. Паллах, вĕсем Шавли творчествинче чи çӳллĕ шай пулса тăмаççĕ, вĕсем, чи лайăх пулсан та, творчестврi утăм çеç; вĕсенче пысăк çитменлĕхсем те тĕл пулаççĕ (тепĕр енчен тата, Шавлин вĕсенчен пахарах сăвăсем те пур), — çапах та эпир пăхса тухма тытăннă «Киев пионерĕпе» «Матур Якур» поэмăсем, ахальтен мар ик-виç хут пичетленсе тухнăскерсем, поэтăн пархатарлă ĕçне кăтартса параççĕ.

«Киев пионерĕпе» «Матур Якур» поэмăсенче поэт вăрçă кунĕсенчи уйрăм ĕçсене, пуринчен ытларах ачасен патриотла ĕçне çутатса пама тăрăшнă. Пирĕн çамрăк ăру пурнăç тума, тӳрĕ ĕçшĕн кĕрешме аслăрах ăрусенчен, халăхран, ăна ертсе лыракан Коммунистсен партийĕнчен вĕренет. Çакă вăл пирĕн пурнăçăн кашни утăмĕнчех палăрса тăрать. Литературă пурнăçа кăтартса парать пулсан, ку вара уйрăм произведенисенче те палăрмаллах ĕнтĕ, — палăрать те.

Шавли поэтăн поэмисене çак çӳлте каланă шухăшсем енчен илсе пăхсан, мĕн куратпăр-ха? Мĕнле-ха вĕсен иде-

йăллă пуянлăхĕ? Мĕнле-ха тата вĕсен художествăлла пахалăхĕ? Çамрăк ăрăва ырра вĕрентме пултараççĕ-и вĕсем?

Малтан «Киев пионерĕ» поэмăна илер. Ку произведенире сăмах полк ялавĕ çинчен пырать. Вăрçăн малтанхи кунĕсенче, пирĕн çар чакса пынă вăхăтра, пĕр аманнă салтак Киевра Николай Лещук пионера полк ялавне хамăр чаçсем каялла таврăниччен пытарса усрама парса хăварать. «Эпĕ хам, тен, вилĕп»,— тет салтак, анчах вăл Совет Çарĕ тăшмана çĕнтерессе, вĕсен полкĕн ялавĕ каллех хăйсен чаçĕнче пуласса, вăл малалла чĕнессе шанать. Киев пионерĕн шухăшĕ те çавăн пекех: Коля Лещук полк ялавне пытарса усрама сăмах парать. Пионер вара ялава çăл пуссине пытарать, ăна икĕ çул сыхлать. Пионерăн пĕр ĕмĕт:

Килĕ, тет вăл, килĕ
Пирĕн Хĕрлĕ Çар.
Фашиста вăл силлĕ,
Вăхăт инçе мар!

Ку йĕркесенче Киев пионерĕн шухăшне кăна мар, ун чухне нимĕç захватчикĕсем йышăнса илнĕ вырăнсенчи мĕн пур совет çыннисен шухăшне те каласа панă поэт. Вĕсем пурте çав шухăшпа пурăннă, паттăр Совет Çарĕ фашистсен çарне тĕп тăвас ĕмĕте çухатман.

Полк ялавне усрасси çинчен çырни — пирĕн литературăра çĕнĕ темă мар, тейĕç хăш-пĕр юлташсем. Тĕрĕс, вăл — çĕнĕ темă мар. Çак темăпа нумай çырнă, малашне те çырĕç. Шавли çырнă пек мар, кашни урăхларах çырĕ, лайăхрах та çырĕç, анчах, пĕтĕмĕшпе илсен, вĕсене хавхалантараканни — Шавлине хавхалантарнă шухăш пеккиех пулĕ: полк ялавне, темле йывăр килсен те, тăшман аллине памалла мар. Çар чаçĕн ялавĕнче — çав чаçĕн пĕтĕм чысĕ, çар чысĕ, халăхпа çĕршыв чысĕ. Киев пионерĕн паттăр ĕçĕ шăпах ĕнтĕ çак патриотла шухăша пирĕн çамрăк ăру ăнланса илнине кăтартса парать. Фашистсем Коля Лещука ирĕксĕрлесе çичĕ юта илсе кайма тăраççĕ, анчах вăл тыткăнран тарать. Киева тăшманран ирĕке кăларсан, Лещук полк ялавне совет генералне парать. Генерал харсăр ачана тав тăвать, ашшĕ пек чуп тăвать.

Николай Лещук пек пĕчĕк паттăрсем Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи вăхăтĕнче нумай пулнă. Вĕсен ĕçĕ мĕн пур совет ачисен шухăш-кăмăлне, вĕсен ĕмĕчĕсене кăтартса парать. Вĕсене çавăн пек пулма ашшĕ-амăшĕ, халăх, парти вĕрентет, çапла вара, пионерсем, çитĕнсе пыракан ăрусем, аслăрах ăрусен ĕçне, паха традицийĕсене пуянлатса пыраççĕ.

Стихван Шавлин иккӗмӗш поэминче («Матур Якур») кӑтартса панӑ ӗҫсем те — вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче пулса иртнӗ ӗҫсемех. Ку поэмӑн тӗп геройӗ — чӑваш ачи Якур. Унӑн тусӗ — Украинӑран эвакуаци йӗркипе килнӗ Остап. «Киев пионерӗ» поэмӑн геройӗ вӑрҫӑ пынӑ вырӑнта полк ялавне хӑтарнипе чапа тухать пулсан, иккӗмӗш поэмӑн геройӗ урӑх ҫӗрте, инҫетри тылра, Чӑваш ҫӗршывӗнче, хӑйӗн ӗҫӗпе фронта пулӑшса, чапа тухать.

Якур хӑй пӗчӗк ача пулнишӗн лӑшӑрханать.

Енер выртсассӑн куртӑм тӗлӗк:
Эп улӑп пулнӑ. Пит хастар
Тытап та фашиста — нӑватӑп,
Тиреп те сӑннӑмпа — сулап,
Урхамахпа таптаттаратӑп,
Хӗҫпе каса-каса ваклап.
Тӑратӑп та — вун иккӗрс эп,
Хушасчӗ тепӗр ултташне! —
Вара чӑнах вӑрҫа кӗреттӗм,
Кӗреттӗм варкӑш вут ӑшне.

Ача ӗмӗтне, шухӑш-кӑмӑлне тӗлӗк урлӑ кӑтартса пани, тен, тӗрӗсех мар пулӗ, анчах вӑрҫӑ вӑхӑтӗнче Якур пек ӗмӗтленнӗ ачасем сахал мар пулнӑ. Вӗсем ӗмӗтленнипе ҫеҫ чарӑнса тӑман, тӗрлӗ ӗҫе хутшӑнса, тӑван халӑха, Совет Ҫарне пулӑшнӑ. Шавли хӑйӗн «Матур Якурне» ҫырнӑ чухне, ҫак шухӑша тытса пырса, чӑваш ачисен вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи ырӑ ӗҫне кӑтартса парас задачӑ лартнӑ. Анчах мӗнле татса панӑ-ха ӑна? Вун иккӗри Якур хӑйӗн юлташӗсене тырӑ вырма, кӗлте ҫыхма, пучах пухма ертсе тухать. Вӗсем выртмара пулаҫҫӗ, колхоз конюхӗсене пулӑшаҫҫӗ. Кӗркунне ҫитсен, ачасем колхоз пахчинче ӗҫлеҫҫӗ, купӑста, хӑяр йӑтаҫҫӗ, вӑрманта кӑмпа татаҫҫӗ...

Якур — ҫӗнӗрен ҫӗнӗ ӗҫ пуҫарма юратакан ача. Акӑ унӑн тепӗр паха ӗҫӗ:

Ҫуртран ҫурта ҫӳрет Якур,
Пӗрне те канӑҫ кӑтартмасть:
— Эй, камӑн тимӗр-тӑмӑр пур?
Ахаль ҫӗртмешкӗн юрамасть.

Якур пуҫарнипе чӑваш ачисем тата кӗл, чӑх тислӗкӗ пухаҫҫӗ, вӗсене колхоз уй-хирне кӑлараҫҫӗ, уйра юр тытнӑ ҫӗрте ӗҫлеҫҫӗ тата ыт. те. «Пулас лаша тихаран паллӑ, пулас ҫын ачаран паллӑ», тенӗ ваттисем. Вӗсем ӗнтӗ шӑпах Якур пек ачасене мухтаса каланӑ ҫак сӑмаха. Якурӑн ӗҫӗ сарӑлса пырать. Пӑхӑр-ха: вӑл уйра пучах пухассинчен

пуçларĕ те ăçта çитрĕ — пысăк çынсенчен пĕрре те юлмасть. Ăна Головатый колхозник ĕçĕ хавхалантарать. Çапла вара, Якурăн патриотизмĕ тата та вăйланать, ăна тепĕр шухăш малалла чĕнет: тăшмана хăвăртрах çĕнтермешкĕн фронта пулăшма укçа пухмалла. Якур пуçарнипе çак патриотла ĕçе шкулта вĕренекен ачасем пурте хутшăнаççĕ, пĕтĕмпе вара вунă пин тенкĕ укçа пухăнать. Пархатарлă ĕçшĕн çамрăк патриотсене çар командованийĕ тав туса саламлать.

Эпир юриех çак поэмăсен содержанийĕ çинче ытларах чарăнса тăтăмăр, мĕншĕн тесен произведение хаклас тесен, малтан унăн содержанине тĕрĕс ăнланса илмелле, идейине уçса кăтартмалла. Шавли поэмисем вара содержани енчен, автор хăйĕн умне лартнă задачăсем енчен илсе пăхсан — лайăх произведенисем. Вĕсенче калана шухăшсем, вĕсем вулакана паракан идейăсем — килĕшӳллĕ шухăшсемпе идейăсем. Çавăнпа та «Киев пионерĕпе» «Матур Якур» поэмăсем çамрăксене коммунистла воспитани парас ĕçре тивĕçлĕ вырăн йышăнасса шанас килет. Паллах, вĕсен çав тивĕçлĕ вырăнĕ произведенисенче каласа панă шухăшсенчен, вĕсен содержанийĕнчен килнисĕр пуçне, вĕсен илемлĕхĕнчен те, чĕлхе пахалăхĕнчен те, мĕн тери ăста çырнинчен те килет. Паха шухăшлă, ăста çырнă произведени нумай пурăнать, ун çине кунсемпе çулсен кирĕкĕ лармасть, кирĕк ларман произведени — вилĕмсĕр. Анчах чăннине калас пулать: «Киев пионерĕ» те, «Матур Якур» та ун пек произведенисен шутне кĕреймеççĕ-ха. Çавăн пек произведенисем çырас тесен, поэтăн нумай-нумай ĕçлес пулать, ăсталăхне тата та ытларах аталантарса, вăйлатса пырас пулать, хальхи самана шухăшĕсене ăса илсе, вĕсемпе, поэт каларăш, кăвар пек ялкăшса пурăнас пулать.

Халĕ тата Шавли поэмисене ăсталăх енчен илсе пăхар, поэтăн ăсталăхĕ пирки пĕр-ик сăмах калар. Икĕ поэми те сюжетлă произведенисем. Сюжетлă произведени тесе эпир событисен çыхăнăвĕсем çинче, вĕсен системи çинче тытăнса тăракан произведение калатпăр. А. М. Горький: сюжет — вăл «çыхăнусем, хирĕçӳсем, симпатисем, антипатисем, çынсен хутшăнăвĕсем — пĕр-пĕр характер, сăнар ӳснин, вăл организациленнин историйĕ», тесе çырнă.

Шавли поэмисен сюжечĕсем ытла кăткăсах мар. «Киев пионерĕ» поэмăн сюжечĕ çакăн пек çеç: 1) вăрçăн малтанхи кунĕсенче Совет Çарĕ каялла чакать; унтан вара, тăшмана çĕнтерсе пырса, каллех Киева килет; 2) Коля Лещук

аманнă салтака тĕл пулать, салтак ăна ялав парса хăварать; Совет Çарĕ тăшмана Киевран хăваласа кăларсан, Коля полк ялавне генерала парать,— çакăн пек çыхăнса тăраççĕ поэмăри событисем, çакăн пек унти çынсен «историйĕ». Çав событисене пăхса тухсан, эпир Николай Лещукăн характерĕ мĕнле ӳснине, мĕнле çирĕпленнине куратпăр. «Матур Якур» поэмăн сюжечĕ «хроникă» пекрех çыхăнса пырать. Унти ĕçсем пĕрин хыççăн тепри, «ир пулать те каç пулать», тенĕ пек пулса иртеççĕ. Вĕсене автор ытла ăстах çыхăнтарайман. Ку поэмăра хăш-пĕр вырăнсенче лирикăллă отступленисем те пур, диалогсем те тĕл пулаççĕ. Çапах та, пирĕн шутпа, поэт ку тĕлĕшпе çĕннине нимех те парайман. Шавли хăйĕн хăш-пĕр сăввисене питех те хăйне евĕрлĕ, оригиналлă çырнă, анчах эпир халĕ пăхса тухнă поэмăсене вăл ун пек çырайман.

Ыйтас килет: ку мĕнрен килнĕ-ши? Васканинчен килнĕ вăл! Тĕрĕсрех каласан: васкаса çырнипех чарăннинчен килнĕ. Çапла каланипе килĕшмесĕр, пĕр-пĕр критик: эсир хăвăрах «Шавли поэмисене ик-виç хут пичетленсе тухнăскерсем», тенĕччĕ мар-и?— тейĕ. Халĕ урăхла калатăр, васкаса çырнипех чарăннă, тетĕр, çапла, эсир хăвăра хирĕç калатăр, теме пултарать. Чăн та, ку поэмăсем ик-виç кăларăмпа та пичетленсе тухрĕç. Авторĕ кашни кăларăм (издани) валли вĕсене урăхлатнă. Çапла, поэт ĕçленĕ, ĕçлемен мар. Анчах, çапах та, васканипех чарăннă. Паллах, писатель ĕçĕнче васкани те пулмаллах: сюжет тупăнсан, пуçа лайăх шухăш пырса кĕрсен, чĕре канлĕх памасть пулсан, чĕлхе вĕçне сăмах килсех тăрать пулсан,— поэт, васка, çыр!.. Анчах малтанлăха «çырса пĕтерсен», çакăнпах ан чарăн: мĕн-мĕн çырнине тепрер хут тĕплĕ юсаса çыр, тĕрĕсле, якат,— ан чарăн, ывăна пĕлмесĕр якатса çыр. Çапла ĕçлесен вара ăсталăх хăех çуралать, поэт таланчĕ çиçме, ялкăшма тытăнать... Шавли поэмисенче юсаса çырман, якатса çитермен, тĕрĕслемен, тĕплĕрех шухăшласа пăхман вырăнсем сике-сике тухаççĕ те ирĕксĕрех вара: «васканипех чарăннă», тетĕн. Поэмăсенче, танлаштарса калас-тăк, хитре вырăнсемпе пынă вăхăтрах çӳп-çаплă, тункаталлă çĕре çитсе тухатăн (васкаман пулсан, вĕсене тасатма йывăр пулман; вĕсене кĕнеке редакторĕ те аяккалла ывăтма пултарнă. Васканă пулĕ çав Н. Ильбеков юлташ та!).

Малтан хитре вырăнсене илсе пăхар. Вĕсенче аторăн пултарулăхĕ, ăсталăхĕ курăнать.

«Киев пионерĕ» поэмăн пуçламăшĕнчи тăватă йĕркене

вуласан, куç умне кĕрхи çанталăк картини — «ылтăн кĕркунне» сăнĕ тухса тăрать:

Кĕркунне те çитнĕ
Сарă тумтирпе.
Кайăк хур та иртнĕ
Йышлă картипе.

Ку йĕркесем — чăн-чăн поэт çырнă йĕркисем. Хĕл çинчен те поэт лайăх калать:

...Сив хĕл çывхарать те
Тăлăп тăхăнать.
Пĕчĕк çын тухать те
Сукмакпа утать.

Совет Çарĕ Атăл хĕрринче, Волгоград патĕнче, фашистсен çарне аркатса тăксан, тăшман тарнине Шавли çакăн пек кăтартса парать: «Халь çаралнă кашкăр каялла тапать» (19 стр.). Совет çарĕ нимĕç захватчикĕсене хăваланине те лайăх сăнласа çырать поэт: «Хыçалта пехотă пĕлĕт пек пырать», тет (21 стр.).

«Матур Якур» поэмăра выртмари каç çинчен лайăх çырнă. Акă выртмари ачасем вăрманти ĕшнере вут умĕнче ларассĕ:

Чĕртессĕ пĕчĕксĕ вучах,
Улма хурассĕ кĕл ăшне,
Шăкăлтатассĕ те кăштах,
Выртассĕ пĕр хăва айне,
Ват конюх, ывăннă пирки,
Харлаттарма та тытăнать.
Якурăн та пĕтет йĕрки,
Пуçне вăл лăнк! усса ларать.
Сисмест вăл хăй те, пуç айне
Хурать çемçелнĕ аллине.
Шенкер тӳпе çеç тĕлĕрмест,
Пин-пин куçне хупса илмест.

Ку йĕркесене çырнă чух автор ахаль сăмахсемпе çеç усă курнă, чĕлхене «илемлĕ» тăвас тесе шутламан та пулĕ, çапах та сăнлăхсем вулакансене килĕшмелле пулса тухнă. Вăл йĕркесенчен юлашки икĕ йĕрки пушшех те илемлĕ, вĕсем поэт шухăшне вĕçлесе çитерессĕ, поэт ӳкерсе панă картинăна искусствă вăйĕ кĕртессĕ.

Пирĕн шутпа, çак вырăн та илемлĕ:

Вăрман тулли пилеш-палăн
Кăвар шăрçа пек курăнать.

Каллех танлаштарса калас пулсан, çакăн пек йĕркесем поэмăсенче те «кăвар шăрçа пек» курăнассĕ. Ку тĕслĕхсем

поэт паха сăнлăхсем тума пĕлни çинчен, тăрăшсан, илемлĕ чĕлхепе çырма пултарни çинчен (çак пултарулăх çÿллĕ шая çĕкленме пултарасси çинчен) калаççĕ. Çав вăхăтрах поэмăсенче рифмăланă прозăна аса илтерекен вырăнсем те тĕл пулаççĕ. Вĕсене вулатăн та ирĕксĕрех: «акă хайхи васкаса çырнă йĕркесем», тетĕн. Сăмах пушă ан пултăр тесе, пĕр-ик тĕслĕх илер.

Чăваш ачи — пĕчĕк Якур çакăн пек чĕлхепе калаçать:

Пире мухтарĕç райкомра,
Пире мухтарĕ секретарь.
Анчах та пирĕн колхозра
Культурă тĕлĕшпе начар.
Сăмах—
чăнах.
Спектакльсем сайра хутра
Эпир лартатпăр-ха клубра.
Çитмеççĕ лайăх пьесăсем,
Сахал çыраç писательсем.
Савса юрлатпăр юррине,
Савса вулатпăр хаçатне.
Çук, хамăр вулани сахал,
Хаçат вулатăр пĕтĕм ял!
Çĕнĕ хыпарсăр кун иртмест,
А пирĕн радио — чĕнмест.
Ку йăлана пĕтермелле,
Мĕн хушнă — йĕркелемелле!
Тухар комсомолпа патвар,
Эпир пĕрле тăрăшмалла,
Малти шутра çеç пулмалла!

Пирĕн поэзи чĕлхи çакăн пек çеç пулас пулсан, кам вулĕ-ши ăна, кам итлĕ-ши?

«Анчах та пирĕн колхозра культурă тĕлĕшпе начар»,— тет Якур. Ку пионер хăйĕн чĕлхине вырăсларан яка куçарайман тăлмачсем куçарнă кĕнекесене вуланипе пăснă пулмалла. Ун пек тăлмачсем хăйсен чĕлхи чухăн пирки «тĕлĕшпе» сăмахсăр пĕр утăм та ярса пусаймаççĕ. «Тĕлĕшпе» сăмах «хăватне» пула çав тăлмачсем кирек мĕнле йывăрлăха та «çĕнтереççĕ»: алгебрă кĕнекине те, тимĕр-тăмăр пухмалли хутсене те, классик романне те, политикă, экономикă, философи, медицинă ыйтăвĕсемпе çырнă произведенисене те... тем те, тем те куçараççĕ. Илемлĕ произведение алгебрă чĕлхипе куçараççĕ, алгебрăна вара никам ăнланайми чĕлхепе куçарса параççĕ... Кун пек чĕлхерен сыхланас пулать пирĕн! Мĕншĕн тесен поэтсемпе писательсен чĕлхинчен, илемлĕ литературă чĕлхинчен халăх хăйĕн тăван чĕлхине вĕренет, вĕсен произведенийĕсене

вуласа, пирĕн чĕлхе мĕн тери хăватлине, илемлине, янравлине туйса илет, пуянлăхне пĕлет.

Якур сăмахĕнче чĕлхе кăлтăкĕсемсĕр пусне тĕрĕсех мар шухăш та пур. Ялта пĕтĕм ĕçе пионерсем пуçарса пынă пек тухать. Ку ялта учительсем те, комсомолецсем те, коммунистсем те пур (поэмăна вуласан, çакна аванах туятăн), анчах «культура тĕлĕшпе» темшĕн пионерсем çеç «ĕçлеççĕ».

Каллех чĕлхе çинчен тепĕр ик сăмах калар. Матур Якур — чăваш ачи — Мускава çыру çырать. Поэт каланă тăрăх, вăл, хитре çырас тесе, ик-виç листа хут çырать, сăмахĕ тупăнсах пырать пулин те, пĕри те кăмăла каймасть. Юлашкинчен Якур: «Хитре çырма эпĕ сăвăç мар», тесе хурать. Анланмалла шухăш: поэт чĕлхи вăл — хитре чĕлхе, вăл — пуян та илемлĕ чĕлхе. Шавли поэмисенче çавăн пек паха вырăнсем пулнине эпир кăтартса патăмăр ĕнтĕ. Çав вăхăтрах поэт хăш-пĕр танлаштарусене ăнăçлах тăвайманни те курăнать.

«Матур Якур» поэмăра чăваш ĕç сынни юрлани çинчен калакан сыпăк пур. Акă вăл:

Инçе-инçе, лере-лере
Чĕтрет сĕр ĕçлекен юрри.
Çав юрăра хаваслăх пур,
Вăл тинĕс хумĕ пек шавлать,
Çав юрăра хаярлăх пур,
Вăл тăвăл евĕр капланать.

«Юрă чĕтрет» тени, ăна уйрăм илсен, вырăнлă, хитре. Ку ĕнтĕ çав çын хуллен те лăпкăн, ерипен шăрантарса юрланине кăтартса парать. Чĕтренсе тăракан юрăра «хаваслăх пур» тени те вырăнлă, тĕрĕс,— анчах ку илемлĕ вырăна поэт хăех пăсса ярать: чĕтренекен юрăра — хаваслăх, «тинĕс хумĕ пек шавлать», хаярлăх «тăвăл евĕр капланать» тенисем «чĕтренекен юрă» тенĕ ăнланăвăн рамкисене шăнăçмаççĕ, мĕншĕн тесен кайранхи икĕ танлаштару пĕрремĕшĕнчен («чĕтрет» тенинчен) вăйлăрах, анлăрах: «чĕтрет» тенин «сассине» тинĕс хумĕн шавĕ, тăвăл капланăвĕ хупласа лартать, пĕтерсе хурать.

Çĕр ĕçлекенĕн юрри поэмăра çакăн пек пуçланса каять:

Малалла пăхап—
Советсен çĕрĕ!
Каялла пăхап—
Советсен çĕрĕ!
Сылтăма пăхап—
Советсен çĕрĕ!
Сулахая пăхап—
Советсен çĕрĕ!

Ку юрă малалла та çакăн пекрех, çитменнине тата вăл ытла та вăрăм. Поэмăн çак сыпăкĕ чăннипех те паха юрă пулнă пулсан, пирĕн композиторсем ăна тахçанах асăрханă пулĕччĕç, музыкине çырса панă пулĕччĕç. Ман шутпа, çак юрăра шалти пĕрлĕх çук, çавăнпа та вăл саланса каять. «Юрăран сăмах кăларса пăрахаймăн», теççĕ, анчах ку юрăри сăмахсем нумайăшĕ хăйсемех тухса ӳкеççĕ — вăл юрă мăйăрĕсене тытайман курланкă пекрех.

Поэмă чĕлхи пирки сăмах хускатнă май тата çакна та асăрхаттарас килет: Шавли, халăх юррисем майлă çырма тăрăшса, ытла шухăшламасăр-тумасăрах хăйĕн поэмисене «та», «те» союзсем кĕртсе тултарнă. Вĕсем поэмăсен уйрăм йĕркисене, строфисене çӳпĕлесе янă. Акă, тĕслĕхрен, «Матур Якур» поэмă пуçламăшĕ:

Якур питне салху сăн çапрĕ,  
Ик çăлтăр куçĕ те кулмасть.  
Чĕри те ун васкавлăн тапрĕ,  
Пуçне те шухăш кантармасть.  
Утти те унăн хăвăртланчĕ,  
Пиçиххине те тăп çыхать.

Кун пек «та»-«те»-сем «Киев пионерĕ» поэмăра та час-часах тĕл пулаççĕ. Хăш-пĕр строфасенче вĕсенчен рифмăсем те тунă («Тарăхать-мĕн шыв та» — «тĕпренет-мĕн чул та»).

Чăн та, халăх юррисенче кун пекрех сăмах çаврăнăшĕсем пур (былинăсем куçарнă чухне Шавли вĕсемпе лайăх усă курнă), анчах вĕсем ку поэмăсенче имитаци пекрех, халăх юрри майлă çырма хăтланнă пекрех тухнă. Хатĕр тĕслĕх тăрăх çырасси, тĕрĕссипе каласан, вăл ытла йывăрах мар, анчах халăх юррисемпе чăннипех те пултаруллă усă курасси, вĕсен ахах пек те мерчен пек лаха элеменчĕсене илемлĕ произведенин «ӳчĕпе юнне» кĕртсе вырнаçтарасси — çăмăл ĕç мар. Урăхла ăçтан пултăр-ха вăл, мĕншĕн тесен литературă ĕçĕ, поэмă е роман çырас ĕç нихçан та çăмăл ĕç пулман. Произведенире халăх пултарулăхĕнчен илнĕ элементсем пачах та сисĕнмелле мар, поэт çырнисемпе ним уйрăлми тачă çыхăнса тăмалла.

Танлаштарусем çинчен калама палăртнисене эпир шухăшсем ытти ыйтусем çине куçнă пирки каласа пĕтерейменĕр. Шавли хăш чухне, сăмах пĕлтерĕшне тĕплĕн ăнланма тăрăшмасăрах, танлаштару туса хурать. Акă пĕр тĕслĕх:

Куккукĕ ячĕ авăтса  
Йĕс шăнкăрав пек сассипе.

Паллах, ку йĕркесене çырнă чухне автор ытла шухăшласах тăман. Куккук авăтнине «йĕс шăнкрав сассипе» танлаштарма çук, мĕншĕн тесен куккук сасси — йĕс шăнкрав пек сасă мар.

Çĕр кайăк харăссăн юрлать
Çĕр çухрăма илтĕнмелле,—

тенĕ тепĕр çĕрте. Хирĕçлемĕпĕр: çак йĕркесем «хитре» янăраççĕ, илемлĕ пек курăнаççĕ, анчах... шухăшласа пăхăр-ха, мĕнле кайăк юрри çĕр çухрăма илтĕнме пултарать? Çар çыннисем калані тăрăх, чи вăйлă тупă сасси те утмăл километртан ытла илтĕнмест. «Çĕр çухрăма илтĕнмелле» тени — гипербола, анчах гипербола, пирĕн шутпа, çын ăстăнне вырнаçмалласкер пулмалла. М. Горький ку ыйту пирки хăй вăхăтĕнче поэтсене пĕрре кăна мар асăрхаттарнă, лайăх канашсем пана.

Шавли поэмисенче чăнахах тĕрĕс мар вырăнсем те тĕл пулкалаççĕ. Сăмахран, вăл нимĕçсен «вун икĕ пырлă миномечĕпе» «тăват çĕр тĕрлĕ пулемечĕ» (40 стр.) çинчен калать пĕр тĕлте. Тăватă çĕр тĕрлĕ пулемет нимĕç фашисчĕсен кăна мар, тĕнчери пĕр çарăн та пулман.

Киев пионерне, хăюллă та хастар герой туса кăтартма шутласа, Шавли паха та ĕнентерӳллĕ, çамрăк паттăрăн сăнне куç умне кăларса тăратакан сăмахсем калана вăхăтрах, килĕшӳсĕр танлаштарусемпе усă курать.

Чарăнчĕ сасартăк
Пирĕн янавар (?):
Халь ĕнтĕ тарсан та
Вилĕм инçе мар.

«Янавар» сăмах кунта вырăнлă мар. Вăл çыннăн мĕскĕнлĕхне, хăюсăрлăхне, хăравçăлăхне кăтартса пана чухне юрăхлăрах. Янавар — выльăх. Янаварпа мĕскĕн те айван çынна танлаштараççĕ.

Çак тĕслĕхсене эпир Шавли поэмисене тиркесе тăкас тесе илмен. Ун пек шухăш пирĕн çук. Тĕрĕссипе калас-тăк, «Киев пионерĕ» тата «Матур Якур» поэмăсен чĕлхи — вĕреннĕ çын чĕлхи, хут лайăх пĕлекен çын чĕлхи. Поэмăсенчи пуплевсем тĕрĕсех, вĕсенче пăнчăсем те, хĕрӳллĕ пăнчăсем те хăйсен вырăнĕсенчех лараççĕ, кирлĕ çĕрте кăшкăру паллисемпе ыйту паллисем те пур. Поэмăсенче илемлĕ вырăнсем, паха танлаштарусем те çук мар. Анчах литературăра тахçантанпах ĕçлекен поэтран нумайрах ыйтас килет, унăн умне пысăкрах требованисем лартас килет,

ӳсӗмсемшӗн, сӑвви-юррисемшӗн савӑнас килет. Поэзи чӗлхи пӗтӗмпех ӑнланмалла чӗлхе, таса та илемлӗ чӗлхе, пуян та витӗмлӗ чӗлхе пулмалла. Шавли — вӑл ятлӑ поэт, ятлисенчен пирӗн ытларах ыйтас килет. Ыйтмалла та!

Ҫак йӑрӑна ҫырса ҫитсен, пире П. Хусанкайӑн «Поэт ӗҫӗ-хӗлӗ» ятлӑ статйи аса килчӗ. Унта вӑл питех те вырӑнлӑ ҫырнӑччӗ, пирӗнпе пӗр вӑхӑтри вырӑс поэчӗ Александр Твардовский хӑйӗн чи ырӑ ят, чи пысӑк чап тесе мӗне шутланине каланӑччӗ: ан тив, пӗр-пӗр вулакан ман кӗнекесене тыттӑр та ҫакӑн пек калатӑр:

> Сӑвӑ ак, сӑвӑ пулин те—
> Пӗтӗмпех ӑнланмалла,
> Пӗтӗмпех ку вырӑсла...

Аслӑ сӑмахсем! Вӗсем пирки, П. Хусанкай каларӑш, пирӗн пӗр шухӑш ҫеҫ пулмалла: эпир хамӑршӑн пулсан, вырӑс поэчӗн кайранхи йӗркинчи пӗр сӑмахне ҫеҫ улӑштарма пултаратпӑр:

> Пӗтӗмпех ку чӑвашла!—

тетӗр чӑваш вулаканӗ. Ҫакӑ вара поэтӑн пысӑк талантне пӗлтерекен, халӑх ӑна ӑнланнине кӑтартса паракан паллӑсенчен пӗри пулӗ.

Чӑваш вулаканӗ чӑвашла сӑвӑ вулама тытӑнсан, ҫапла каласа вулатӑр: «Сӑвӑ пулин те — пӗтӗмпех ӑнланмалла!»

Юлашкинчен мӗн калас-ха? «Киев пионерӗпе» «Матур Якур» поэмӑсен шухӑшӗ, содержанийӗ паха. Анчах вӗсен форми, чӗлхи, вӗсен тумӗ пирки ун пек калама хӑюлӑх ҫитмест. Автор, ку поэмӑсене темиҫе хут юсаса ҫырнӑ пулин те (эпир малтанах каларӑмӑр: кун пирки пӗрре те иккӗленместпӗр), вӗсен илемлӗх шайӗ, пирӗн шутпа, поэт ҫырма пултарнӑ чухлӗ ҫук.

Искусствӑн чӑн-чӑн произведенийӗнче идейӑллӑ содержанипе художествӑллӑ формӑн уйрӑлми пӗрлӗхӗ пулмалла, теҫҫӗ критиксем. Тӗрӗс калаҫҫӗ. Ҫавӑн пек пӗрлӗх произведение вӑй парать, чӑн-чӑн искусствӑ произведенийӗ туса хурать. Произведенире паха шухӑшсем пулсан та, унта ку чухнехи ыйтусене лартсан та, ҫав произведенин форми ҫителӗксӗр пулсан,— унта паха ыйтусем те, паха шухӑшсем те кирлӗ таран вӑйлӑ пулаймаҫҫӗ, ҫапла вара, произведени хӑй те вӑйлӑ пулаймасть.

Ҫакӑ вӑл — пӗтӗмӗшле ыйту, пӗтӗмӗшле калаҫни, ҫавӑнпа та ӑна хӑварса, Шавли поэмисем патне каялла таврӑнар та вӗсем пирки конкретлӑрах калар: «Киев пионерӗпе»

«Матур Якур»— поэт творчествинче малтанхи ĕç те мар, юлашки ĕç те мар, вĕсем поэтăн малтанхи произведенийĕсенчен нумай пахарах, çапах та творчествăри утăмсем çеç-ха.

Стихван Шавли — пĕр вырăнта тăракан поэт мар. Вăл малаллах утать,— унăн сасси илтĕнсех тăрать!

Шавли сырнă поэмăсемпе сăвăсенчен чи лайăххисене суйласа илес тесен, чи малтан, унăн çак произведенийĕсене кăтартса парас пулать: «Çиçĕм çиçет» (поэмă), «Тăван çĕршыв», «И. Н. Ульянов уçнă Хутар шкулĕ», «Аслă урам», «Шкул çутисем», «Литвечер», «Константин Ивановăн юлашки сăмахĕ», «Ватă салтак» тата ыттисем те. Çак произведенисем чăннипех те поэтăн çирĕп утăмĕсем пулса тăраççĕ. Вĕсем хăйсен хакĕпе, шухăшĕпе, илемлĕхĕпе, пĕлтерĕшĕпе чăваш совет поэзине паха произведенисем пулса кĕреççĕ. Вĕсенче — Шавли поэтăн сасси илтĕнет, унăн литературăри пултарулăхĕн сăн-пичĕ курăнать. Çак сăвăсен çулĕпе каймалла поэтăн, анлăлатса пымалла ăна. Вăл — унăн творчестви çулĕ.

Стихван Шавли çинчен: «вăл Маяковскирен вĕренет», теççĕ. Çак сăмахсем вырăнлă пулсан, вĕсен тĕрĕслĕхне халĕ çес асăннă сăвăсем тепĕр хут çирĕплетсе параççĕ. Çапла, Стихван Шавли вĕренет, вырăс поэчĕсенчен, чи малтан Владимир Маяковскирен вĕренсе пырать, анчах вăл хăй чĕлхипе çырать, хăй сассипе юрлать. Çакă ĕнтĕ поэт çитĕнсе çитни çинчен, сасси çирĕпленни çинчен, вăл «хăйне тупни» çинчен калать, унăн таланчĕ чăмăртанса çитнине кăтартса парать. Çаксене асра тытса, юлашкинчен, Шавлине, творчествă ĕçĕнче ăнăçлăхсем сунса, хăйĕн сăмахĕсемпех çапла калас килет:

...Ан хĕрхен,
поэт, вутна,—
кăвар пек ялкăш!

*1953*

## ПОЭТ ĔÇĔ — КАНĂÇСĂР ĔÇ *

**(Н. Евстафьевăн «Çĕршывăмçăм, тăван анне» ятлă кĕнекине вуланă май)**

1955 çулта Николай Евстафьевăн «Çĕршывăмçăм, тăван анне» ятлă сăвăсемпе поэмăсен кĕнеки пичетленсе тухрĕ. Ку кĕнеке пирки хаçатсенче статьясемпе рецензисем те пулчĕç. Сăмахран, Александр Алка «Коммунизм ялавĕнче» (180-мĕш №, 1955 çулхи сентябрĕн 11-мĕшĕ) пысăк статья çырса кăларчĕ. Автор хăйĕн статйине Н. Евстафьевăн çак сăмахĕсемпе пуçлать:

Мĕн тери телейччĕ маншăн—
Эпĕ çырнă йĕркесем
Пурнăçра кӳрсессĕн усă
Манăн тантăшăмсене!

Ку сăмахсем мĕне пĕлтернине ăнлантарас шутпа А. Алка: «Поэтăн ĕмĕчĕ ырă та пархатарлă»,— тет. Эпир те, статья авторĕпе килĕшсе, çавăн пекех каласшăн, анчах çав вăхăтрах пĕр-ик сăмах хушса хурасшăн: поэт çырнă сăвăсем хăйĕн тантăшĕсене çеç мар, пурне те — ватăтине те, вĕттине те, хальхи ăрусене те, пулас ăрусене те, пĕр сăмахпа каласан, пĕтĕм халăха усă памалла. Сăвăсем пĕтĕм

---

* Ку статья «Сăвă çырасси тăрăшмасăр пулмасть, сăвă çырасси— канăçсăр ĕç» тенĕ ятпа 1956 çулта «Ялав» журналта пичетленнĕ. 1928 çулта мана Х. поэтпа пĕрле пĕррехинче Мускавра çĕр выртма тиврĕ. Каç кӳлĕмĕпе поэт сăвă çырма пуçларĕ. Çырчĕ-çырчĕ, вун ик сехет те çитрĕ, иртсе те кайрĕ. Поэт çаплах çырать: пĕрре ларать, тепре тăрать, утса çӳрет, çырнине вуласа пăхать, хуратса хурать... Çывăрма выртса пăхрĕ, çывăраймарĕ — часах сиксе тăчĕ, каллех çырма тытăнчĕ. Унтан тепре выртрĕ, кăштах вăхăт иртсен — татах тăчĕ, çырнисене хуратса тăкрĕ... Ирчченех çавăн пек ĕçлерĕ, çĕрĕпех чăлăм куç хупмарĕ. Эпĕ, поэт юлташ мĕнле ĕçленине аса илсе, çак статьян ятне «Поэт ĕçĕ — канăçсăр ĕç» тесен лайăхрах пулĕ, терĕм.

халăха усă паракан пулччăр тесен, вĕсем таран шухăшлă, илемлĕ произведенисем пулмалла. Сăвă-юрăсенче халăх шухăшĕ, туйăмĕ, кăмăлĕ пулсан, вĕсем халăх чĕрипе ăсĕ патне хăйсемех çул тупаççĕ, халăх пурнăçĕпе пĕрлешсе каяççĕ. Халăх пурнăçĕпе, йăлипе пĕрлешсе кайнă произведенисем ĕмĕр-ĕмĕрех пурăнаççĕ. Ку вара чăннипех те пысăкран пысăк телей, ку вара кĕмĕлтен те, ылтăнтан та хаклă.

Николай Евстафьев 1934—1935 çулсенче çырма тытăннă. Çапла ĕнтĕ вăл çирĕм çул ытла сăвă-юрă çырать, вĕсене хаçат-журналсенче кăна мар, уйрăм кĕнекесенче те пичетлесе кăларать.

«Çĕршывăмçăм, тăван анне» кĕнекене поэтăн 1941—1945-мĕш çулсенчи вăрçă хыççăн çырнă сăввисемпе поэмисене кĕртнĕ.

Мĕнлерех-ха çав произведенисем?

* * *

Поэт хăйĕн сăввисемпе поэмисене кашнине тенĕпе пĕрех халăхи пурнăçран илнĕ темăпа çырнă. Çакна сăвăсен ячĕсем те аван кăтартса параççĕ: «Юратнă парти», «Хĕвел пек вилĕмсĕр Ленин», «Мускавра», «Мавзолейре», «Пирĕн çĕнтерӳ», «Совет Конституцийĕ», «Мухтав, хĕрлĕ çăлтăрлă çарăмăр!», «Хуларан механик килчĕ» тата ыттисем те. Хальхи пурнăç ыйтăвĕсене çутатса пама тăрăшнине ырлас пулать: Н. Евстафьев тахçан ĕлĕк иртсе кайнă ĕçсемпе аппаланмасть, ăна ытларах хальхи пурнăç темисем интереслентереççĕ.

Акă «Çĕнĕ çул кас» ятлă сăвă. Çĕнĕ çул çинчен çырнă сăвă кашни поэтăн пур темелле. Кашни поэтах ун çинчен хăйне май çырса парать. Н. Евстафьев хăйĕн сăввинче Çĕн çул тĕлне колхоз çĕнĕ клуб уçни çинчен, унта Ильич лампиисем çутăлса кайни çинчен çырать. Колхоз председателĕ, колхозниксен савăнăçне палăртса, сăмах калать, пĕрлехи ĕçе мухтать:

— Татах пĕр çул ак иртрĕ
Ĕçпе кĕрешӳре.
Эпир пĕрле ĕçленĕ,
Пĕрлех — кĕрекере.

«Кĕрхи кунсем» сăвăра кĕр мăнтăрне, кĕр пуянлăхне лайăх кăтартса панă. Унта тăван ялсен, уйсен сăн-сăпачĕ курăнать.

«Сад пахчинчи улмуççи...» сăвва автор халăх юрри

майлӑрах кӗвӗпе ҫырнӑ. Сӑвӑ илемлӗ тухнӑ, юрӑ тума та юрать темелле.

«Ҫар гарнизонӗнче, каҫхине» сӑвва та лайӑх сӑвӑсен шутне кӗртмелле. Анчах ку сӑвва пӗр сӑмах пӑсать: автор сӑвва чип-чипер тытса пынӑ ҫӗртех, хӑйӗн юррине салтаксем стройра юрлани ҫинчен каланӑ май, сӑвва вӗҫлесе ҫакӑн пек ҫырать:

Ӳлӗм пулӑшӗ ватмашкӑн
Пархатарсӑр тӑшмана!

Кунта «пархатарсӑр» сӑмах юрӑхсӑр, мӗншӗн тесен, автор «логики» хыҫҫӑн каяс пулсан, «пархатарсӑр тӑшман» теме кӑна мар, «пархатарлӑ тӑшман» теме те пулать (пархатарлӑ ҫын, пархатарсӑр ҫын, тетпӗр-ҫке!),— ҫапах та ҫын пирки ҫавӑн пек калама юрать пулсан та, тӑшман пирки калама юрамасть: тӑшман пархатарлӑ пулмасть пулсан, ӑна «пархатарсӑр» тени те килӗшӳллӗ мар.

Лайӑх сӑвӑсем Н. Евстафьев кӗнекинче татах та пур. Анчах вӗсенче, хӑшӗ-пӗринче, пӗр е ик сӑмах пӗтӗм сӑвва пӑсса хурать. Автор ҫавӑн пек сӑмахсен пӗлтерӗшне хӑш чухне те ӑнланмасть, те тӗрӗс мар ӑнланать — тӗлли-паллисӗр ҫырать те вӗсене, сӑвӑ шухӑшне мӑкӑлтаса пӑрахать, пӑсса ярать.

Сӑмахран, «Хӗвел пек вилӗмсӗр Ленин» ятлӑ сӑвӑран пӗр тӗслӗх илме пулать. Акӑ вӑл:

Эсӗ тунӑ аслӑ Партипе
Коммунизм сутӑ ҫулӗпе
Халь пыратпӑр—Улӑп ҫарӗ пек.

Ленин тунӑ аслӑ парти «Улӑп ҫарӗ пек» ҫеҫ пулсан, коммунизм ҫулӗпе пырасси ҫинчен шухӑшламалли те ҫук. «Улӑп ҫарӗ» коммунистсен партийӗпе нимӗнле те танлашма пултараймасть. Ҫитменнине тата, Улӑпӑн ун пек «ҫар» пулман: авалхи паттӑрсем, Улӑпсем — ҳумай чухне пӗччен-шерӗн кӗрешеҫҫӗ, урӑхла пулсан, вӗсем паттӑрсем те пулман пулӗччӗҫ. Коммунистсен партине мӗнле те пулин ҫарпа танлаштарас пулсан, ӑна чи ҫирӗп, чи хӑватлӑ, чи вӑйлӑ ҫарпа танлаштарас пулать. «Улӑп ҫарӗ»— ытла та кивӗ япала, киввин хӳрешки (вырӑсла калас-тӑк: атрибут старины!). Паллах, эпир «Улӑп» сӑмахпа пачах усӑ курмалла мар тесшӗн мар. Усӑ курмалла. Анчах тӗрӗс усӑ курмалла. Кирлӗ ҫӗрте вӑл сӑмах питех те вырӑнлӑ, усӑллӑ.

Н. Евстафьевӑн партипе Ленин ҫинчен ҫырнӑ сӑввисем, унӑн ытти сӑввисемпе танлаштарсан, шел пулин те, ну-

май начартарах. Шупка. Вĕсем чĕлхи енчен те çара, шухăш енчен те ăшăх. Сăмахран, «Юратнă парти» ятлă сăвă шăпах çавăн пек пулса тăрать. Пуçламăшне те пулин илер-ха:

Тăван çĕршывăмăр
Таçтан-таçтан
Выртать мăнаçлăн сарăлса.
Уйри сар тыррăмăр
Хăех пĕр океан—
Чуна çĕклет ялан,
Çилпе чăштăртатса.
Юратнă Парти! çак пуянлăха
Эсĕ патăн халăха!

Ку йĕркесене сăвă тес пулсан, сăвă çырма ытла та çăмăл пулĕччĕ. Анчах вĕсене сăвă теме çук: вĕсем — сăвăлла каркаланă сăмахсем кăна. Вĕсем сăвă мар,— прозă, çитменнине — начар прозă.

Сăвă вĕçĕнче тата çакăн пек йĕркесем пур:

Тăван çĕршывăмăр
Тус-тăванне
Шута илеймĕн çĕр çинче
Хисепсĕр йышăмăр!

Тем каласшăн кунта автор — ниепле те ăнланма çук. Этем ывăл-хĕрĕ сăвва ăнлантăр тесен, поэтăн хăйĕн шухăшĕ уçăмлă пулмалла. Кам уçăмлă шухăшлать, вăл яланах уçăмлă çырать.

Совет халăхне, пĕтĕм çĕршыва ертсе пыракан тăван парти çинчен ăнланмалла мар çырнă сăвăсене кĕнекене кĕртни вулакансене тĕлĕнмеллипех тĕлĕнтерет.

Н. Евстафьевăн парти çинчен çырнă сăввисен чĕлхи ытла та «кăткăс» (!), тĕрĕссипе каласан, илемлĕ литературă чĕлхи мар. Чăнах та, çак йĕркесенче поэзи пур-и, вĕсем илемлĕ литературă чĕлхи пулма пултараççĕ-и-ха?

Конструктор эс, тăватăн кăткăс (!) аппарат—
Хăватлă атома цехра ĕçлеттересшĕн;
Тепри — Мичуринçă, лартать ав çĕнĕ сад,
Чăваш çĕршывĕнче лимон туса илесшĕн.
Анчах та ĕçĕ кăткăс (!), çĕнĕ япала;
Ана тăвас-тăк — кирлĕ тем пĕлни те,
Вăл та çитмест, кăна та тумалла;
Васкавлă пирĕн вăхăчĕ те питĕ...
Пур Аслă Парти тĕнчере — сан ĕмĕтне,
Сан ĕçӳнти чăрмавсене вăл йăлт курать.
Таçтан ятна пĕлет тата, аçу ятне!
Шав ăслă, кирлĕ канашсем парать.
— Хăюллăрах пул, пулăшăпăр, тет...
Çĕнтерӳпе вара ĕç сан вĕçленет.

Сăввăн теми — хальхи тема, анчах васкаса çырнă сăвă. Илемлĕх тĕлĕшпе ку сăвă питех те вăйсăр, çавăнпа та вăл чĕрене те, ăса та хускатаймасть. «Конструктор», «Мичуринçă» тенипех, çĕнĕ темă илнипех паха произведени çырма çук çав, паха произведени çырас тесен, нумай-нумай тăрăшмалла, илемлĕ те вырăнлă сăмахсем тупмалла. Произведенин пахалăхĕ чи малтан ăсталăхран килет: ăсталăх — вăл тăрăшни, тăрăшмасан — çĕнĕ темă та пулăшаймасть.

Литературă ĕçĕ — çăмăл ĕç мар, вăл — чи йывăр ĕçсенчен пĕри. Чăн-чăн литературă ĕçĕ ăсталăхсăр ниме те тăмасть. Литературăри ăсталăх — вăл сăнлăхсем тума, вĕсене палăртма пĕлни. Сăнлăхсем тума пĕлмен писатель — писатель мар.

Н. Евстафьев сăввисенче стандарт пулса тăнă сăмахсемпе танлаштарусем нумай. Вĕсене поэт хăй те сисет, те сисмест, анчах вĕсем унăн кĕнекинче сăвăран сăвва куçса пыраççĕ.

Пĕрремĕш тĕслĕх «мăнаç» сăмах.

> Кашлать тайган м ă н а ç вăрманĕ (3 с т р.).
> Вăл пирĕн чи чаплă шăпа,
> Чи м ă н а ç çĕнтерӳ (19 с.).
> Этемĕн м ă н а ç прависемшĕн (20 с.).
> М ă н а ç керменсем кармашаç пĕлĕте.
> М ă н а ç океан хумĕсем пек (21 с.).
> Тухать м ă н а ç л ă н Атăл тинĕсе (ç а в ă н т а х).
> Епле илемлĕ те м ă н а ç л ă (30 с.).
> Ирпе хĕвел тухайтăр çеç м ă н а ç л ă н (53 с.).
> Итем тавра м ă н а ç хула пек (56 с.).
> Мĕн тери илемлĕн те м ă н а ç л ă н (109 с.).

«Мăнаç», «мăнаçлă» сăмах (тĕрĕсрех: «мăнаçлăн») ытларах куçару чĕлхинче тĕл пулать. Н. Евстафьев вăл сăмаха висĕ майлă çырать («мăнаç», «мăнаçлă», «мăнаçлăн»). Тĕрĕссипе каласан, «мăнаç» тени чĕлхене кĕрсе çитмен-ха (кĕмест те пулмалла), кĕрсен те вăл «-лăх» суффикспа кĕрет пулмалла («мăнаçлăх»). «Мăнаçлăн» сăмах чĕлхене кĕчĕ, наречи пулса тăчĕ, халлĕхе ăна политикăллă литературă куçаракан тăлмачсем юратарах параççĕ.

Иккĕмĕш тĕслĕх — пĕр йышши сăмахсем: «хисепсĕр», «вĕçсĕр», «чикесĕр».

> Х и с е п с ĕ р йышлă, пĕр тăванлă (4 с т р.)
> Халăх, халăх, в ĕ ç с ĕ р йышлă халăх (13 с.)
> Х и с е п с ĕ р çăлтăр туйĕ (14 с.)
> Татах та в ĕ ç с ĕ р ĕмĕрӳ сан (22 с.)
> Вăрçăра х и с е п с ĕ р йывăр (41 с.)
> Пĕр в ĕ ç с ĕ р типĕ çилччĕ (51 с.)

Вĕçсĕр çеçен хир (64 с.)
Яланах шеллевсĕр (65 с.)
Тӳпе чикесĕр таран та таса (111 с.)

«Стандартлă» сăмахсем Н. Евстафьев сăввисенче тата та нумай (сăмахран, «вут пек çунать», «хĕвел пек», «вĕрин чуп турĕ» тата ыт. те).

Кремль çăлтăрĕсем çинчен çырнă «Аслă çăлтăр» ятлă сăвăра поэт çакăн пек калать:

Çук унран çут çăлтăр тĕнчере,
Кунĕн-çĕрĕн вăл çунать хитре;
Тĕттĕм каç та, сар хĕвел çути те,
Çумăрпа тăман та, тăвăл-çил те
Тĕксĕмлĕх кӳреймĕç ĕмĕрне
Аслă Кремлĕн сутă çăлтăрне.

«Хитре» сăмах чăнах та хитре. Çапах та ку сăвва вăл хитрелетмест: вăл кунта сăнлăх тумасть, пачах урăхла — сăнлăх вăйне чакарать, чарса лартать. «Кунĕн-çĕрĕн çунать...» тени куç умне явлени (пулăм) кăларса тăратать, анчах вăл пулăм конкретлă мар-ха, унăн сăнĕ курăнмасть-ха (сăнлăх çук-ха!). «Кунĕн-çĕрĕн çунать вăл хитре» тени те сăнлăх туса памасть. Сăмахран, «хитре» вырăнне «вут пек» (е «ахах пек») тесе çырсан, пирĕн шутпа, сăнлăх пулать.

Малалла: «тĕттĕм каç та, сар хĕвел çути те... тĕксĕмлĕх кӳреймĕç...» тени — сăмах пуххи çеç. Чăнах та çакăн пирки шухăшласа пăхăр-ха: поэт «Çутă çăлтăр» çинчен, ăна «хĕвел çути те» тĕксĕмлĕх кӳрейменни çинчен калать, тĕрĕссипе унта та, кунта та — çутă çинчен каланă. Эппин «çутă» «çутта» ăçта «тĕттĕмлĕх» кӳтĕр-ха»?..

Тепĕр асăрхаттару: «Тăвăл-çил» тени — вăйсăр, тĕрĕс мар. Чăвашсем: çил-тăвăл, теççĕ. Н. Евстафьев хыççăн каяс пулсан: «кун-çул» вырăнне «çул-кун», «чун-чĕре» вырăнне «чĕре-чун», «ăс-тăн» вырăнне «тăн-ăс» тесе çырма та пулать, анчах эпир, тăван чĕлхене хисеплеме вĕреннĕскерсем, ун пек хăтланмастпăр. Чĕлхен саккунсем пур, çав саккунсене пăссан — чĕлхен вăйĕ те, илемĕ те чакать. Писательсен задачи — чĕлхе илемне, хăватне упрасси кăна мар, аталантарасси, тĕреклетесси пулать.

Поэт чĕлхинче тирпейлĕх пулмалла. Шел пулин те, Н. Евстафьев сăввисенче çавăн пек тирпейлĕх сахал-ха. Чăвашсем илемлĕ те тирпейлĕ хĕрсене «пăрчакан пек», «чĕкеç пек» теççĕ. Сăвă илемлĕхĕ, тирпейлĕхĕ пирки те

«пăрчăкан» пекрех танлаштару тупасчĕ те мĕн каламаллине каласчĕ...

Юлашки вăхăтра хăш-пĕр поэтсем сăввăн хакне (укçа енчен мар, унăн пĕлтерĕшĕ енчен!) йӳнетсе ячĕç: кашни лармассерен виç-тăват сăвă çыраççĕ, теприсем çыраççĕ кăна та мар,— купалаççĕ! Ăнлантарасчĕ, ĕнентересчĕ вĕсене: сăвă — вăл сăмах купи мар, творчествă! Кашни поэтăн творчествăшăн кĕрешмелле, вулакансене сăвă купалани мар, творчествă кирлĕ. Кашни поэт литературăна, унăн историне хăйĕн творчествипе кĕрет. Çакă вăл — пурте пĕлекен чăнлăх, çапах та хăш-пĕр чухне пурте пĕлекен чăнлăха аса илни те вырăнлă.

* *
*

«Çĕршывăмçăм, тăван анне» кĕнекене, сăвăсемсĕр пуçне, виçĕ поэмă кĕртнĕ («Çула тухсан», «Пĕрремĕш çуркунне», «Икĕ тĕнче»). Çак поэмăсенче автор тĕрлĕ ыйтусем хускатнă: эпир унта тĕнчери лару-тăру ыйтăвĕсенчен пуçласа... юрату ыйтăвĕсем таранах куратпăр. Каллех ыйтас килет: пирĕн поэт мĕнле çутатса (сăнласа) панă-ха çав ыйтусене?

«Пĕрремĕш çуркунне» ятлă поэмăра автор 1946 çулхи çуркуннене (вăрçă хыççăнхи ялти, колхозри çуркуннене!) кăтартса пама шут тытнă. Анчах çителĕклĕ кăтартса парайман. «Поэмăн» ячĕ çеç поэмă: чăннипе илсен, ăна çырса пĕтермен поэмă, темелле; унăн содержанийĕ те, форми те пире çырлахтараймасть.

...Куçуков Антун тăван ялне çартан таврăнать. Виçĕ кун иртсен, вăл колхоз членĕсен пухăвне каять. Пухура колхоз председательне Викторов Караçа ятлаççĕ. Колхозниксем: «Эртелри йĕркесĕрлĕх йăлтах Караçран та Хăяхран пуçланчĕ...» теççĕ.

Хăях Кĕркуçĕ те — салтакран таврăннă колхозник. Анчах вăл ĕçке ерсе кайнă.

Пухура Куçуков сăмах тухса калать. «Пулăшни çеç кирлĕ вăрçнă хыççăн, пулăшсан этем тем те тăвать...», тет. Çапла вара, Викоторова председательтех хăвараççĕ: пулăшсан — юсанĕ, тăрăшса ĕçлĕ, теççĕ. Кăштах вăхăт иртсен, колхозра виçĕ коммунистран парторганизаци тăваççĕ. Куçуков бригадир пулса тăрать. Викторов та лайăх ĕçлеме тытăнать. Кун хыççăн вара пĕтĕм хирĕçӳ Куçуковпа Хăях Кĕркуçĕ хушшине куçать. Анчах кайрантарахпа Хăях та колхоз ĕçне хутшăнма шут тытать.

Çаксемсĕр пуçне поэмăра тата виç-тават хушамат тел пулать: вĕсем — Петров бригадир, Уртемеев тимĕрçĕ. Куçуков ашшĕ — Назар, арăмĕ — Кулине, Хăях Макарĕ.

Кунта асăннă геройсене пĕрне те лайăххăн кураймастăн, пĕрин сăнарне те çителĕклĕ кăтартса паман. Вĕсен ячĕсемсĕр пуçне — ним те çук. Назар старик çинчен кăна вăл шурă сухаллă, тенĕ. Геройсен характерĕсем те сисĕнмеççĕ. Куçукован характерне кăштах кăтартса пама тăрăшнă, анчах кăштах çеç. Ана та пулин тĕплĕ кăтартайман. Геройсем пурте чухăн чĕлхепе калаçаççĕ.

Акă, тĕслĕхрен, Куçуковпа Комбаков мĕнле калаçнине илер-ха:

Комбаков вара, пуху пĕтсессĕн,
Антуна чĕнсе, ун аллине
Хыттăн-хыттăн чăмăртарĕ:
— Эсĕ
Коммунист вĕт!
— Коммунист.
— Тинех
Колхозра эсир халь пултăр виççĕн,—
Парторганизаци тумалла.
Секретарĕ пуласси — сан миççи.
— Ман анчах?
— Епле каламалла...
Еç майне-шывне аван чухлатăн.
Вăл ĕçре ĕçленĕ, эс çарта—
— Ротăри парторгчĕ...
— Халь ялта
Парторгах (?) пулмашкăн шăп юратăн.
Предколхоз вăл пĕччеңçи ялта,
Эс каларăш, вăйсăр çын анчах-ха,
Партисĕр ни Викторов юлташ,
Ни тепри çĕклеймĕ колхоза халь...

Пĕтĕм поэмăна çакăн пек шупка чĕлхепе çырнă: поэзи мелĕсемпе усă курнă вырăнсем çукпа пĕрех унта. Хăш-пĕр çĕрте çеç çавăн пек усă курма хăтланса пăхнă та сăнлăхсене туса çитереймен. Вырăнĕ-вырăнĕпе «миççи» пек сăмахсемпе çӳпĕленĕ. Кунта «миççи» сăмаха автор рифмăшăн кĕртсе янă. Çапла вара «паха» рифмăсем пулса тăнă: «виççĕн»—«миççи».

Пирĕн шутпа, «рифмăна» рифмăшăн кăна тумалла мар, рифмă — формă, жанр палли кăна мар: рифмă произведенин илемне, идейине, автор шухăшĕсене вăйлатмалла, вĕсене вулакансемшĕн çăмăллатмалла, ăнланмалла тумалла. Рифмăшăн илнĕ «миççи» сăмах патне çитсен (тĕрĕссипе каласăк, çитсе такăнсан!), вулакан: «Ку мĕнле сăмах-ши, ăна

мĕнле анланмалла-ши?» тесе шухăшлама тытăнать. Ним тăвайман пирки тĕрлĕ словарьсене пăхма пуçлать, анчах «миççи» сăмах чăвашла словарьсенче те, вырăсла словарьсенче те çук. Пысăк тавçăруллă вулакан çеç ăнланса илме пултарать: «миççи» сăмах «миссия» сăмаха пăсса çырнипе пулнă сăмах иккен! Çапла, поэт ку сăмахпа усă курнă чухне унăн содержанийĕпе форми пирки пачах та шухăшласа пăхман, вулакансем пирки те шухăшламан.

Тепĕр тĕслĕх: Антунпа ашшĕ хушшинчи калаçăва автор çакăн пек çырса парать:

...Ун кăкри çинчи виç çăлтăртан
Куçĕпе тĕллерĕ вăл пĕрне;
— Ну-ка,— терĕ,— Антун, ăнлантар,
Мĕншĕн панăччĕ сана çакна?
Мĕншĕн тетĕп-çке! Кала, ан тун.
Ответле-ха ватă аçуна...
— Ку — Дон урлă çĕнтерсе каçнишĕн;
Ку — Варшавă хулине илнишĕн.
Берлинра та пулнă-çке Антун:
Виççĕмĕш палли — Берлиншăн ун.

Кунта автор каллех, формă хыççăн кайса, шухăшсене пăсса ярать. Кунта «Антун! — ан тун» рифмăсем лайăх, анчах çав рифмăллă йĕркесен шухăшĕ поэмăн тĕп шухăшĕпе килĕшсе тăмасть. Ашшĕ Антунпа вырăнсăрах тавлашать, ятлаçать, вырăнсăрах «ан тун» тесе вăрçать, ывăлĕ айăпа кĕнĕ пек, наградисене тивĕçлĕ ĕçшĕн илмен пек пулса тухнă.

Тата «виç çăлтăр» тени мĕне пĕлтерни те паллă мар: унта те орденсем çинчен, те медальсем çинчен калана,— пĕлме çук. «Варшавă хулине илнишĕн», «виççĕмĕш палли — Берлиншăн» тенĕ вырăнсене асра тытас пулсан, сăмах медальсем пирки пырать, темелле (анчах мĕншĕн-ха вĕсем «çăлтăр?»).

Чĕлхе тĕлĕшпе тата çакна асăрхаттарас килет: «каçнăшăн», «илнĕшĕн» тесе калас вырăнне мĕншĕн «каснишĕн», «илнишĕн» тесе каламалла? Мĕншĕн «пуçланишĕн», «тунишĕн» тесе каламалла?

Автор нумай çĕрте прозă чĕлхинчен иртеймест, тĕрĕсрех калас-тăк, начар прозă чĕлхине рифмăласа (е рифмăлакаласа) çырать. Акă çакна кăтартса паракан тĕслĕхсенчен пĕр-иккĕшĕ:

Кинĕ тĕлĕнет атийĕнчен:
— Ак стари-ик! Аçтан вăйне тупать!
Кунĕн-çĕрĕн сад, колхоз çинчен!..

Антун та çав ашшĕпех супать.
Антун мар — Аркаш та çавăн пекчĕ,
Еç тесен — хыпса çунатчĕ-çке!
Сăн-питрен хăй — ытарми чечекчĕ...
Хăрчĕ çав ман янавар çеçке!

Кунта Кулине сăмахĕсене çырса панă (сăмах Антун ашшĕпе ывăлĕ çинчен пырать). Чăвашсем «атийĕнчен» темеççĕ, «ашшĕнчен» теççĕ. «Супать», «янавар» сăмахсем те кунта вырăнсăр. Халăх хушшинче ăсран тайăлнă ват çынна «ват супнă» теççĕ е ĕçке ернĕ çынна «супса çӳрет» теççĕ (Н. Евстафьев хăй те ĕçке ернĕ председатель çинчен çавăн пек калать: «Председатель эрехпе супать», тет). «Янавар» тесе мĕскĕн выльăха е ухмах çынна калаççĕ.

Çак йĕркесене те поэзи теме çук:

Кĕр калчисене тăрантармалăх
Тоннипе сĕнеç суперфосфат.
Станцăна вăл килчĕ те — им-çамĕ.
Пилĕк çул ăна эртел курман.
Халь илес пулать. Анчах та самăр
Лашасем-çке кирлĕ турттарма.
Çулĕ йывăр, пылчăк акăш-макăш—
Кустăрма кĕпчекĕсем таран.
Ешне урлă утма çул сукмакĕ
Апла мар вара,— унта утма аван.
Çичĕ çухрăм... Çирĕм çын ярсассăн,
Михĕпе пăтшар йăтса килсен...
...Председатель шухăшне пĕр саслăн
Йышăнчĕç правлени членĕсем.

Ку строфа, чăннипе каласан, протокол чĕлхипе пĕтет. Çитменнине протоколне çыраканĕ те чĕлхе тĕлĕшпе ăстах мар пулмалла. Анчах протокол çыракан секретарьсен ĕçне тиркесси пирĕн ĕç мар. Протоколăн — хăйĕн чĕлхи, поэзин хăйĕн чĕлхи. Пире поэзи чĕлхи ытларах интереслентерет. Поэзи чĕлхи вăйлă пулсан, протокол чĕлхи те юлсах каймĕ.

Поэмăри хăш-пĕр йĕркесене япăх «куçару чĕлхипе» çырнă. Вĕсем чĕре патне те, ăс патне те пымаççĕ. Тĕслĕхсем нумай илсе кăтартма пулать, анчах эпир ик-виç тĕслĕх кăна илсе кăтартатпăр:

1. Çул çинчен канман фронтовика
Ни канма, ни шăп ларма памаç.
2. Ку ыйту та — хĕсĕкрех участок.
3. Савăнăçран чĕри каллех ун пуйрĕ.
Антун вĕрин чуп турĕ арăмне.

Поэмă авторĕ вырăнĕ-вырăнĕпе чăваш сăмахĕсен пĕлтерĕшне пачах та туймасть. Тĕслĕх вырăнне çак йĕркесене илме пулать:

Ак сехет вун икке шанлаттарчӗ,
«Çитӗ, кан-ха!»— тенӗ пек çемçен.

Мӗнле сехет-ши вăл «шанлаттаракан» сехет? Акăш-макăш пысăк сехет тейӗ автор. Чиркӳ чанӗ пек тукмаклă сехет,— хушса хурӗ вулакан. Апла пулсан, «çемçен» тени «шанлаттарчӗ» тенипе килӗшсе тăмасть. Çакна автор туйса илеймен, редактор асăрхайман (кӗнеке редакторӗ — С. П. Павлов).

«Пӗрремӗш çуркунне» поэмă — çырса, якатса çитереймен поэмă, тӗрӗссипе каласан, черновик кăна. Поэмă тесен, поэмăн шухăшӗ те, илемӗ те пултăр, вулакана савăнтартăр, унăн шухăшӗсене, туйăмӗсене пуйтартăр. Поэмă пичетленсе тухни литературăшăн событи пулмалла. «Пӗрремӗш çуркунне» çавăн пек событи пулса тăраймарӗ. Айăпӗ никамра та мар — айăпӗ авторта çеç!

«Икӗ тӗнче» поэмă та автор ăсталăх тӗлӗшпе тимлеменни çинчен калать. Пирӗн шутпа, ку поэмă «Пӗрремӗш çуркунне» поэмăран та кайра тăрать.

Автор социализм тӗнчипе капитализм тӗнчи çинчен çырасшăн пулнă. Анчах поэмă пулайман, схемă кăна пулса тухнă. Ку схемă, автор сăмахӗсемпе калас-тăк, çакăн пекрех:

Икӗ тӗнче,
Çӗрпе кăвак тӳпе пек,
Икӗ полюс пек, пӗр-пӗринчен
Уйрăлса тăраççӗ...
...Чикӗ леш енче—
Хӗвел те урăх...

...Чикӗ леш енче—
Çанталăк та урăх;
Пӗри туй тăвать,
Тепри — вилет,
Пӗрисемшӗн—
Ташласа çеç пурăн,
Теприсене выçлăх шӗкӗлчет.

Икӗ тӗнче — пӗр шывăн
Икӗ çыранӗ майлă:
Лере вăрçă, вилӗм,
Пирӗн — пурнăç, мир.
Хамăрăн çӗршывăн
Хăватне сăпайлă
Еçпеле хушатпăр эпир.

Ку схемăра тӗрӗсси те, тӗрӗс марри те пур. «Чикӗ леш енче — хӗвел те урăх» тенине кам ӗненӗ? Хӗвел никама та пăхăнмасть, хӗвел вăйӗ, хӗвел ăшши обществă йӗркинчен

килмест. Тен, ӳлĕм, пĕтĕм тĕнчипех коммунизм туса ҫитерсен, хĕвел вăйĕпе, ăшшипе урăхла усă курма тытăнĕҫ, наукă ку тĕлĕшпе тĕлĕнмелле пысăк ҫитĕнӳсем тăвĕ, пĕтĕм тĕнчене тĕлĕнтерĕ. Ҫапах та халлĕхе ун пек мар-ха: хĕвел пире пăхăнмасть!

«Чикĕ леш енче — ҫанталăк та урăх» тени те кулăшла шухăш. Ҫанталăк ăҫта мĕнле тăни пачах та государствă чиккисенчен килмест. Хăш-пĕр государствăра, сăмахран, Совет Союзĕнче, тем тĕрлĕ ҫанталăк та тĕл пулать; теприсенче — ҫанталăк талккăшпех пĕр пек тăрать.

Кунта хускатнă ыйтусене, пирĕн шутпа, Н. Евстафьев та лайăх пĕлет. Анчах вăл поэмă ҫырма схемă шухăшласа кăларнă та ҫав схемă хыҫҫăн кайса тем те пĕр ҫырса тултарнă. Ҫапах та пире ку статьяра хĕвел е ҫанталăк «проблеми» мар, чĕлхе, ăсталăх ыйтăвĕсем ытларах интереслентереҫҫĕ. Ҫавăнпа та каллех поэмă пирки тепĕр ик сăмах калас килет.

Н. Евстафьев капитализм тĕнчинче ĕҫ мĕн тери йывăрри ҫинчен ҫырать: «Индуссем ĕҫлеҫҫĕ кунĕ-кунĕпе»,— тет. Йывăр ĕҫ! Капитализм ҫĕршывĕсенче рабочисене, хресченсене тĕрлĕ майсемпе эксплуатацилеҫҫĕ, вăй-халне, ăс-шухăшне сăрхăнтарса илеҫҫĕ...

Поэт совет ҫыннисем мĕнле ĕҫлени ҫинчен те ҫырать, хăй сисмен ҫĕртенех ниме юрăхсăр сăмахсем каласа хурать. Автора ĕненес пулсан, совет ҫыннисем «юнпа шăварнă жирсене тарпа йĕпетсе (?) тулă тăваҫҫĕ», «ал тупанĕсем суриччен» (?!) ĕҫлеҫҫĕ. Паллах, кирек мĕнле ĕҫ те ҫăмăл мар, анчах поэт пуҫ тавра шухăшласа пăхмасăр ҫырать.

«Икĕ тĕнче» поэмăри хăш-пĕр пуплевсене ăнланма та ҫук. Сăмахран, ҫак пуплеве кам та пулин ăнланать-ши?

Марсель порчĕ
Тĕрлĕ ăпăр-тапăр
Сахал мар илсе килнĕ
Америкă карапĕ.

Ку йĕркесене сăвă тесе вуламалла ĕнтĕ, вĕсене поэзи темелле ĕнтĕ, анчах вĕсем поэзирен ытла та инҫе тăраҫҫĕ. Сăвă тени вăл ăнланмалла пултăр, хитре пултăр, вулакана савăнтартăр, усă патăр (поэт хăй те тантăшĕсене усă кӳресшĕн мар-и!).

«Ҫула тухсан» ятлă поэмине автор «лирикăллă поэмă» тенĕ. Малта тишкĕрсе тухнă поэмăсемпе танлаштарсан, ку поэмăра поэзи ытларах теме юрать. Ҫакă вăл,

Н. Евстафьев тăрăшсан, паха япаласем çырма пултарни çинчен калать. Çапах та «Çула тухсан» поэмăра та чĕлхе кăлтăкĕсем нумай, автор чăваш сăмахĕсен пĕлтерĕшне хăш чухне туйманни палăрать. Поэмă пуçламăшĕнче çакăн пек йырăн пур:

Чĕремçĕм поездран та шухă
Вĕçет сана хирĕç. Пин шухăш
Пуçа киле-киле тухаççĕ.
Хутран-ситрен сана вĕсем
Каçхи хунар пек çутатаççĕ — çав
шухăшсем.

Сăмах кунта вăрçăран таврăнакан салтакпа вăл юратакан хĕрарăм çинчен пырать. Пирĕн шутпа, чĕрене поездпа танлаштарни илемсĕр, «чĕремçĕм поездран та шухă» тени пушшех те илемсĕр.

«Пин шухăш пуçа киле-киле тухаççĕ» чăвашла мар; «тухаççĕ» вырăнне «кĕреççĕ» тесен аванрах. Тепĕр енчен тата çакна та палăртмалла: «Пин шухăш... тухать» (кĕрет!), темелле, кунта «тухаççĕ» (кĕреççĕ) тени чăваш чĕлхине çӳпĕлекен сăмах çаврăнăшĕ. «Пин шухăш» тени нумайлăх хисепне пĕлтерет пулин те, «кĕрет» глагол пĕррелĕх хисепĕнче пулмалла, мĕншĕн тесен нумайлăх хисепĕ «пин шухăш» сăмахсенче пытанса тăрать, вăл шалта, çавăнпа та çав сăмахсене глаголпа пĕрлештерсен те нумайлăх хисепĕ шалтах юлать, курăнмасть.

«Хутран-ситрен сана вĕсем каçхи хунар пек çутатаççĕ» тенинче «хутран-ситрен» сăмахсем илеме чакараççĕ, пăсаççĕ, «прозăлантарса» яраççĕ.

Строфа хыçне «çав шухăшсем» тесе çырса хуни ытлашши йĕрке, вăл хăрăк турат пек çакăнса тăрать.

Тепĕр тĕслĕх:

Эп сыввăн тухрăм. Халь тăратăп
Телей çырмин çăл куçĕнче,—

тет поэт. «Телей çырмин çăл куçĕнче» ытлашши «хитре» çырма тăрăшнипе пулнă, çапах та унта хитри ним те çук,— «телей çырми» те, унăн» «çăл куçĕ» те — сăмахсене туйма пăрахнă тăлмач чĕлхинчен илнĕ сăмахсем. Поэмă вĕçĕнче çакăн пек каланă:

Вăл вăхăтра Тăван çĕршывăн
Шăпи çине тăшман ăмсанчĕ.
Ун чух вара мĕн пур хĕр-ывăл
Пĕр кăмăлпа вăрçа ăсанчĕ.

Каллех начар куçару! Кунта «çине» сăмах çырни чăвашла мар, «ăсанчĕ» те чăвашла мар,— тĕрĕссипе каласан, вырăсла та мар («зявырттарза»... хуракан тăлмач чĕлхи пек çеç!)

Пирĕн шутпа, çак виçĕ поэмăран пĕрне те тăрăшса çырнă паха произведени теме çук. Вĕсенче пĕринче те вулакан асĕнче юлма пултаракан тарăн шухăшсем, хитре йĕркесем, сăнлăхсем çук. Вĕсене вулатăн та ирĕксĕрех çакăн пек шухăшлатăн: халăха нимле çĕнĕ шухăш та, пĕр çĕнĕ сăмах та паман произведенисене пичетлесе кăлармa кирлĕ-ши? Пули-пулми произведенисем çырса, поэт ятне яма кирлĕ-ши? Икĕ ыйтăвне те пĕр ответ пама юрать: кирлĕ мар! Поэтсем лайăхрах çырччăр тесен, каллех çапла калас килет: **вĕсенчен ытларах ыйтмалла!**

Константин Иванов пĕр поэмă çырнипех халăха тĕлĕнмелле паха, тарăн шухăшсем каласа панă. Ĕненес килет: виçĕ поэмă пичетлесе кăларакан виçĕ хут ытларах, виçĕ хут пахарах калас пулать. Çапла пулин те, хăш-пĕр поэтсем вун ик поэмă пичетлесе кăларсан та, халăха К. Иванов чухлĕ усă кӳреймеççĕ. Начар поэмăсем вун иккĕ пичетлесе кăлариччен пĕр поэмă, анчах чăннипех те паха, хăватлă поэмă пичетлесе кăларасчĕ, ăсталăх тĕлĕшпе К. Ивановран иртгерсе ярасчĕ. Поэмă тени — чăн-чăн поэмă пултăр, калаçтартăр, тавлаштартăр, савăнтартăр, историе кĕрсе юлтăр. Чи малтан çакна ăнланса илмелле: поэмă çырасси — вăл творчествă ĕçĕ!

Юлашкинчен кĕнеке ячĕ пирки пĕр-ик сăмах. «Çĕршывăмçăм, тăван анне»— питех те лайăх ят. Шел пулин те, кĕнекене кĕртнĕ сăвăсемпе поэмăсем унăн хаклă та паха пĕлтерĕшĕпе тивĕççе тăраймаççĕ. Тăван çĕршыва парне парас пулсан, чаплă парне парас пулать. Ытах, парнĕр чапллах мар пулсан, сăпайлăрах пулма пĕлĕр,— тесе ăс парĕччĕ кун пек чухне пĕр-пĕр ватă.

*1955*

* * *

P. S. Çак статьяна эпир пĕлтĕрех çырса пĕтернĕччĕ. Анчах ăна вăхăтра пичете параймарăмăр. Халĕ, «Çĕршывăмçăм, тăван анне» кĕнеке пичетленсе тухнăранпа икĕ çула яхăн иртнĕ пулин те, ăна «Ялав» журнала пичетлеме патăмăр пулсан, эпир ăна çакăншăн çеç патăмăр: асăннă кĕнекери сăвăсенче тĕл пулакан çитменлĕхсемпе кăлтăксем

пек тĕслĕхсем Н. Евстафьевăн кăна мар, ытти хăш-пĕр поэтсен сăввисенче те палăраççĕ. («Çĕршывăмçăм...» пирки хамăр мĕн шухăшланине эпир уççăнах каларăмăр. Уççăн калланине ним те çитмест,— урăхла калама эпир пĕлместпĕр!) Уйрăм поэтсем хăйсен произведенийĕсен пахалăхĕшĕн ытла тăрăшсах каймаççĕ (эпĕ кунта «çунсах каймасççĕ» тесе каласшăн пултăм!). Тĕрĕссипе каласан, тăрăшман (çунман) поэт — поэт мар. Сăвă çырасси ӳрĕк-сӳрĕк ĕçлени пулмасть: сăвă çырасси вăл — чĕрене çунтаракан, ăс-пуçа канлĕх паман ĕç, вăл — канăçсăр этем ĕçĕ. Вата поэт Н. И. Шелепи ахальтен мар пулĕ хăйĕн ĕçĕ çинчен çакăн пек каланă:

Эх, сăввăмсем, савнă юлташăмсем,
Епле эпĕ сире юратрăм.
Сирĕн хăватăра шыра-шыра,
Нумай шурă хута хуратрăм.
...Выртнă вырăн çинчен тăра-тăра,
Çыру çинче лартăм çĕрĕпе,
Темле йывăр хĕн-хур курсан та,
Пурăнма тăрăшрăм тӳрĕпе;
Хăш-хăш чухне ăшăм çуннипе,
Хăш чух савăннипе юрларăм.
...Тăван чĕлхен тăван çырулăхшĕн
Мĕн пур вăйăма хурса ĕçлерĕм...
Мĕскер тăвас тени чăнах пулчĕ,
Мĕн ырана çавă тупăнчĕ...
Ĕмĕтленнĕ ĕмĕт пулса тăчĕ,
Ĕç халăхĕ ĕçе йышăнчĕ.

Çапла, сăвă çырасси тăрăшмасăр пулмасть,— поэзи сăвă-юрă çырасси — чăннипех те канăçсăр ĕç. Поэт ĕçне халăх йышăнни — пысăкран та пысăк телей, поэт ятне хисепре усракан чап, вилĕмсĕрлĕх.

Юлашкинчен тата çакна палăртмалла: поэта талант тени кирлĕ! Поэт таланчĕ творчествăлла ĕçре усăлса, аталанса, сарăлса пырать; çырмасан, тăрăшмасан, ĕçлемесен — талант усăлмасть, курăнмасть. Кашни чăн-чăн поэт таланчĕ — хăйне евĕрлĕ, хăйне çеç тивĕçлĕ талант. Поэт талантне, унăн хăйне евĕрлĕхне ниçта та мар, поэт творчествинче шырамалла, творчествăра тупаймасан, урăх çĕрте шырани — усăсăр ĕç. Тĕрĕссипе каласан, вăйлă таланта шырама та кирлĕ мар: вăл хăех те ахах пек çиçсе тăрать!

*1956*

## ВАСИЛИЙ АЛЕНДЕЙЕН ХАШ-ПЕР САВВИСЕМПЕ КАЛАВЕСЕМ ÇИНЧЕН

### 1. Ача-пăча валли çырнă сăввăн шухăшĕ те, чĕлхи те тĕп-тĕрĕс пултăр

Кăçал (1953) çамрăк поэтăн Василий Алендейĕн «Пирĕн кил» ятлă сăвă кĕнеки пичетленсе тухрĕ. Кĕнекере пĕтĕмпе çирĕм пилĕк сăвă. Вĕсем — пурте ача-пăча валли çырнă сăвăсем. «Пирĕн кил» кĕнекене вуланă чухне пире çакăн пек шухăшсем канăç памарĕç. Кашни çыннăн ача чухне чи пуçласа вуланă сăвă, калав, повеç пур, малтанхи хут вуласа тухнă кĕнеке пур. Çав сăвва, калава, кĕнекене хамăр вуланисене эпир халĕ те ас тăватпăр, сăвă йĕркисене, калав содержанине тĕп-тĕрĕс каласа паратпăр.

Мĕншĕн-ха вăл çавăн пек? — акă хайхи канлĕх паман шухăшсенчен пĕри. Ача чухне курни-илтнине çын час манмасть, хăшĕ-пĕрисем мĕн ватăлса виличченех манмаççĕ. Çакă вăл çыннăн ача чухнехи кăмăл-туйăмĕ (впечатление) вăйлă, сисĕмлĕ пулнинчен, ачан асăмĕ (память) нумая пынинчен килет пулмалла. Чăнах та, пĕр-пĕр ватă çын ĕнер мĕн пулса иртнине те манать, анчах çитмĕл çул ĕлĕкрех, хăй пилĕк-улт çулта чухне, курни-илтнине лайăх ас тăвать. Тата çакна та палăртас пулать: çав ача чухне пирĕн алла малтанхи хут лекнĕ сăвăсемпе калавсем паха произведенисем пулнă, çавăнпа ĕнтĕ вĕсенчи сăнлăхсем пирĕн кăмăл-туйăмра, асăмра, ăс-тăнра пысăк йĕр хăварма пултарнă, вĕсем шухăшлаттарнă, хумхантарнă, чĕре хĕлĕхĕсене хускатнă. Шухăшлаттаракан, илемлĕх туйăмĕсене хускатакан произведенине манма çук, ăна çĕр çула çитиччен ас туса пурăнатăн.

Тĕслĕхшĕн çавăн пек сăвăсенчен иккĕшне илер-ха: пĕри вырăс поэчĕ Ф. И. Тютчев çырнă сăвă («Весенняя гроза»), тепри — чăваш поэчĕ К. В. Иванов çырнăскер («Чĕкеç»):

Люблю грозу в начале мая,
Когда весенний, первый гром,
Как бы резвяся и играя,
Грохочет в небе голубом...

Чĕкеç, чĕкеç-чĕкеçĕ,
Пĕртте канма пĕлмерĕ:
Кунĕпе вĕçсе çӳрерĕ...

Кун пек паха сăвăсем вырăс литературинче тем чухлех чăваш литературинче те сахал мар.

Революцичченхи вăхăтра чăваш литературинче ача пăча валли И. Я. Яковлевпа К. В. Иванов кăна çавăн пек илемлĕ произведенисем çырнă пулсан, хальхи вăхăтра каш ни чăваш совет писателĕн ачасем валли çырнă лайăх произ веденисем пур темелле. Ача-пăча валли çырнă кĕнекесене вулакансем ытти кĕнекесене вулакансенчен нумай йышлă рах: çав кĕнекесене ачасем вуланă вăхăтрах, вĕсен ашшĕ амăшĕ, пиччĕшĕсем, аппăшĕсем вулаççĕ.

Пирĕн ӳссе çитĕнекен çамрăк ăрусен ырă шухăш-кăмăл не, вĕсен чун-чĕрин илемлĕхе туйса пĕлес вайне, урăхла каласан, вĕсен эстетикăллă туйăмĕсене тĕрĕс аталантарса пырас ĕçре литературăпа искусствăн чăннипех паха произве денийĕсем калама çук пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Тăван парти пире çакăн пек калать: совет литературин задачи — çамрăксене тĕрĕс воспитани пама государствăна пулăшас си, вĕсене кирлисене тивĕçтересси, çамрăк ăрăва çирĕп те хастар, хăйĕн ĕçне шанса тăракан пулма, йывăрлăхсенчен хăрамасăр тăма, кирек мĕнле чăрмавсене те çĕнтермешкĕн хатĕр пулма вĕрентесси пулать, тет.

Çак шухăшсене асра тытса, эпир «Пирĕн кил» кĕнеке çинчен пĕр-ик сăмах каласшăн.

* * *

«Пирĕн кил» тени пĕр çын ячĕпе каланă сăмахсем мар вĕсем кил-йышри çынсенчен пĕри, пурне те асра тытса, ка ланине пĕлтереççĕ. Чăнах та, кирек кам та çакна асăрханă пулĕ: пĕр-пĕр çын хăйĕн ачисемпе пĕрле ĕçрен таврăнать тейĕпĕр. Тăван килĕ патне çитерехпе вăл ачисене: пирĕн кил, тет; ачисем те: пирĕн кил, теççĕ. Пурте савăнаççĕ Мĕншĕн тесен кил кашни çыншăнах — сывăх та тăван кĕ тес, килшĕн кашниех тăрăшнă, ĕçленĕ. Анчах совет çынни сен килĕ таçта авалхи упа çырминче мар, вăл ирсĕр Сто лыпин пуçарса янă хуторта та мар. Ун пекки халĕ çук

Пирĕн кил совет çĕршывĕнчи ялта е хулара. Вĕсем — çута та илемлĕ хуласемпе ялсем, вĕсенче социализмла пурнăç вĕресе тăрать. Хамăр яла е хулана вара эпир: пирĕн ял, пирĕн хула, тетпĕр; республикă — пирĕн республикă, хамăр çĕршыва — пирĕн Тăван çĕршыв, тетпĕр. Тăван çĕршывра, республикăра, хулара (ялта), тăван килте пирĕн асаттесем, аттесем пурăннă, çавăнтах эпир çуралнă. Хамăр çĕршыва эпир анне ырăнне хуратпăр, мĕншĕн тесен пире, атте-анне пăхса ӳстернĕ вăхăтрах, Тăван çĕршыв пăхса ӳстернĕ, вĕрентнĕ. Эпир унăн ял-хулисенчи, уй-хирĕсенчи, улăх-вăрманĕсенчи сывлăшпа сывлатпăр, тăван уйсенче ӳссе çитĕннĕ тыр-пултан пĕçернĕ çăкăра çиетпĕр, унăн çăлĕсенчи шыва ĕçетпĕр. Тăван халăх чĕлхипе калаçатпăр, юррисене юрлатпăр. Эпир Тăван çĕршыв ĕмĕчĕпе пурăнатпăр. Çакна пирĕн çамрăк ăрусем те лайăх пĕлеççĕ. Василий Алендей, хальхи çамрăк поэтсенчен пĕри, шăпах ĕнтĕ çитĕнсе пыракан çĕнĕ ăрăвăн шухăш-кăмăлне палăртса тата çав ырă шухăшсене вĕсен чĕринче, ăс-тăнĕнче çирĕплетес тесе, совет ачисен тăван килĕ çинчен çакăн пек çырать:

Пирĕн кил,<br>
Хаваслă, ăшă кил,<br>
Пурнăç питĕ ырă пирĕнте.<br>
Пирĕн кил,<br>
Телейлĕ, тулăх кил,<br>
Пурăнас килет ман çак килте.

Ку йĕркесем — Алендей кĕнекинчи «Пирĕн кил» ятлă сăввăн пуçламăшĕ. Вĕсем — пĕтĕм кĕнеке шухăшĕ.

«Пирĕн кил» сăвă, тĕрĕссипе каласан, ытла вăйлах мар. Çитменнине тата, унăн малалли йĕркисене вулама та йывăртарах, ырăнĕ-ырăнĕпе чĕлхе кăлтăкĕсем те, сăмахсен чăвашлах мар çаврăнăшĕсем те тĕл пулаççĕ (тĕслĕхрен, «пурнăç питĕ лайăх пирĕнте» тени — чăвашла мар),— çапах та ку сăвăра авторăн ырă шухăш-кăмăлĕ, ĕмĕчĕ сисĕнсе тăрать.

Кĕнекери ытти сăвăсене «Пирĕн кил» сăввăн тĕп шухăшне аспа тытса çырнă, темелле. Ана поэт килти тĕрлĕ япаласене, ĕçсене сăнласа кăтартнипе, кил таврашĕнчи тĕрлĕ çурт-йĕрсене, кил умĕпе иртен-çӳренсене тата ыттине кăтартнипе каласа панă.

Алендей сăввисенче, кашнинче тенĕ пекех, пĕчĕк герой пур. Вăл — пĕр пилĕк-улт çулхи, аслăрах пулсан, çич-сакăр çулхи «арçын е хĕр» ача. Поэт çав ача çинчĕн çырать, унăн шухăшне, ĕмĕтне калать, ĕçне-хĕлне, савăнăçне, «хуйхи-

суйхине» кăтартать. Çамрăк ачан тавра курăм сарăлсах, пуянлансах пырать. Вĕсен пÿртĕнче электричества çути пур. Пурнăçра электроплитапа, электроутюгпа усă курасçĕ. Электричества вăйне колхоз лартнă электричества станцийĕ парса тăрать.

Ача пĕрре ирхине вăранать те тĕлĕнмелле картина курать. Кил-йыш çыннисем пурте ура çинче тăраççĕ, çемйипех тем итлеççĕ. Хăйсем: «Шăп...»,—тесе асăрхаттараççĕ. Вĕсем радио итлеççĕ-мĕн. Анчах радио итлениче тĕлĕнмелли мĕнех пултăр-ха тейĕç хăшĕ-пĕрисем, çирĕм-çирĕм пилĕк çул радио итлесе пурăнакан çынсем. Сăмах кунта ун çинчен пымасть, сăмах çĕнни çинчен, халĕ пурнăçа кĕрсе пыраканни çинчен пырать. Ача акă мĕншĕн шăп пулса итлет, савăнать — радио вĕсен килне ача ашшĕн сассине илсе çитернĕ. Ача юлашкинчен çакăн пек калать:

Халь ăнлантăм пĕтĕмпех—
Сывлăш тăрăх, инçетрен,
Коммунизм стройкинчен
Килчĕ ман аттем сасси—
Ку вăл радио сасси.
Ман атте хастар ĕçлет,
Паттăра çĕршыв итлет.

Пÿрте почтальон килсе кĕрет. Вăл вырăсла, чăвашла хаçат-журналсем парса хăварать. Ку ĕнтĕ пирĕн кашни кил, пирĕн мĕн пур колхоз çултан çул культурăланса пынине кăтартакан тĕслĕхсенчен пĕри. Кĕнекесĕр, хаçатсăр пурăнма вĕсене кичем. Пĕчĕк герой та хаçат-журналсемшĕн, килти кĕнекесемшĕн савăнать.

В. Алендей чăваш ачи килĕнче мĕнле кĕнекесем пулнине «Кĕнеке» ятлă сăвăра кăтартса панă. Акă хайхи ача кĕнеке пирки калать:

Тăчĕ асатте ирех,
Кĕнеке вулать каллех:
— Пар-ха,— тетĕп кĕнеке,—
Эпĕ çитнĕ пиллĕке.

Кăштах калаçкаланă хыççăн аслашшĕ хăйĕн мăнукне килти библиотекăри кĕнекесене иле-иле кăтартать. Унта В. И. Ленин, Лермонтов, Гоголь кĕнекисем, çавăнтах чăваш поэчĕсен кĕнекисем —«Нарспи» тата «Хурçă шанчăк».

Юлашкинчен, аслашшĕ тата тепĕр кĕнеке илет те:

Ку эк Фет.
Ну, ачам,
Сана çитет,—

тесе хурать. Çак вырăна çитиччен сăвă йĕркеллех пыратчĕ, анчах кунта, тĕрĕссипе каласан, юрăхлă рифмăсем кăна (Фет — çитет). Мĕншĕн тесен пилĕк çулхи ачашăн «Фет» тени пушă сăмах çеç. Кунта поэт хăйĕн геройĕ кăна мар, тата «Пирĕн кил» кĕнекене вулакан та, чи малтан, пĕчĕк ача пулнине манса кайнă. Ача-пăча писателĕсен хăйсен кĕнекисене камсем вуласса яланах асра тытмалла.

Сăмах май, кам-ха вăл Фет? Фет (Шеншин), Афанасий Афанасьевич,— 1820—1892 çулсенче пурăннă поэт. Вăл «таса искусствă» тенĕскершĕн тăракан поэтсенчен пĕри пулнă. Фет творчествин тупсăмĕ обществăри çĕнĕ вăйсене хирĕçле, реакцилле пулнă. Фет çинчен пирĕн вăтам шкулта, тăххăрмĕш класра, пĕр-ик сăмах каласа иртсе каяççĕ. Паллах, унăн сăввисене илемĕш енчен тиркемелли çук: Фет сăввисем паха та илемлĕ. Çапах та вăл хăйĕн сăввисемпе 5—6 çулхи чăваш ачисем патне çитеймен.

...В. Алендей хăйĕн сăввисенче ачасене ĕç çинчен каласа парать, ачасем хăйсем ĕçе хутшăннине кăтартать. Кун пек сăвăсен шутне «Анне кĕпе çĕлет», «Электроутюг», «Харсăр Оля», «Фермăра» тата ыттисем те кĕреççĕ. Вĕсенчен ачасене чăннипех килĕшмелле сăвă —«Харсăр Оля». Ку сăввăн пĕчĕк сюжет та пур. Амăшĕ урай çунине курсан, пĕчĕк Оля ăна пулăшма тытăнать. Çавăн пекех вăл кил карти шăлнă чух та амăшне пулăшать. Оля ĕçлеме вĕренсе çитеймен-ха, çапах та унăн ĕмĕчĕ — лайăх, ырă ĕмĕт, ашшĕ-амăшне ĕçре пулăшас, савăнтарас ĕмĕт.

«Задачă» ятлă сăввăн шухăшĕ лайăх, анчах унăн чĕлхе енĕпе çитменлĕхсем нумай. (Сăмахран, автор: «Ак, хутлатăп, ак, пайлатăп» тенĕ хыççăн «тĕрĕслетĕп суммине» (?) тесе хурать. Кунта «ответне» темелле пулнă).

Ку сăвăра йывăр задачă шутланă чухне ачан интересĕ, вăй-халĕ ӳссе пынине кăтартма тăрăшнă поэт. «Ман шутласчĕ хамăнах!»— акă мĕнле шухăш ачана хавхалантарать. Ача йывăрлăха çĕнтерет, çакă вара ăна чун-чĕререн савăнтарать. Çапла ӳсеççĕ, вĕренеççĕ пирĕн телейлĕ ачасем: пĕрремĕш класра пĕчĕк те «калама çук хĕн» (йывăр) задачăна çĕнтереççĕ, çитĕнсе çитсен, Атăл пек пысăк юхан шывсене пĕвелес ĕçпе çыхăнса тăракан задачăсене татса параççĕ. Çапла вара, вĕсем хăйсен пархатарлă ĕçĕпе кил-йыша кăна мар, пĕтĕм халăха савăнтараççĕ.

Çамрăк ăрăвăн ĕçĕ килте, шкулта пуçланать, ачасене ашшĕ-амăшĕ, учитель, тантăш-юлташĕ, кĕнеке, хаçат, кино, радио воспитани парать. Ку ĕçре чӳрече умĕнчи «хитре

тӗнче» те пысӑк вырӑн йышӑнса тӑрать. Эпир ентӗ поэтпа пӗрле ҫапла калама пултаратпӑр:

Пирӗн кантӑк умӗнче
Ҫав тери хитре тӗнче.
Ҫакӑ ман Тӑван ҫӗршыв,
Ҫӗнелен Тӑван Ҫӗршыв.

В. Алендей «Пирӗн кил» кӗнекене хатӗрленӗ чухне хӑйӗн умне паха задачӑ лартнӑ. Анчах, пирӗн шутпа, ӑна вӑл пӗтӗмпех татса панӑ теме ҫук. Хӑш-пӗр сӑвӑсене «заказпа» ҫырнӑ, темелле. Вӗсем пулсах ҫитейменни сисӗнет: сӑнлӑхсем сахал е шупкарах, чӗлхи якак мар. Ытла вӑрӑм предложенисемпе ҫырнӑ сӑвӑсем пур. Вӗсене вуланӑ чухне пӗчӗк ачан ҫеҫ мар, мӑн ҫыннӑн та сывлӑш ҫитмест. Акӑ пӗр тӗслӗх:

Аттерен,
Аннерен,
Хамӑн ӗҫчен аппаран,
Ҫарти виҫӗ пиччерен,
Пӗчӗк паттӑр шӑллӑмран
Тата пӗтӗм ял-йышран
Калӑттӑм ӑна салам,
Чи пысӑк, ӑшӑ салам!

«Кӗнеке» ятлӑ сӑввӑн чӗлхи ҫӳпӗллӗ — вӑл таса урайне хӗвел ҫаврӑнӑш хуппи тӑкса тултарнӑ пекех. Автор пӗрмаях: «ку ак», тет. Ҫитменнине тата, ӑна икӗ тӗрлӗ ҫырать:

Ку, ак Пушкин,
Ку ак Фет.

Е тата:

Акӑ, ку ак, кӑвакки—
Гоголь кӗнекийӗ.

Ҫак йӗркесене сасӑпа вуласан, пӗр чӗр чун сасси илтӗннӗ пек туйӑнать. Ку вӑл — аллитераци мар, сасӑсен килӗшӳсӗр янравӗ ҫеҫ. Тата ҫакна та асӑрхаттармалла: «кӗнекийӗ», «сӑввийӗ» сӑмахсем, вӗсенче камӑнлӑх аффиксӗ икшер («и», «йӗ») пулнӑ пирки, вулама йывӑрланнӑ (тӗрӗсси: кӗнеке — кӗнек-и; анчах «кӗнекийӗ» е «сӑввийӗ» тенинче «йӗ» ытлашши; ӑна сӑвӑри сыпӑкшӑн ҫеҫ ҫырса хунӑ).

Алендей сӑввисенче сыпӑк ҫитмен пирки ҫырса хӑварнӑ сӑмахсем, сӑмах татӑкӗсем татах та пур. Акӑ тепӗр тӗслӗх: «Эп ӑнлантӑм ҫав тинех»— кунта «ҫав» сӑмаха, паллах, сыпӑкшӑн кӗртсе лартнӑ. Ҫакӑнпа пӗрлех тата вырӑнсӑрах кӗскетнӗ сӑмахсем те сахал мар: пирӗнтен — пиртен, вас-

катăп — васкап, юрататăп — юратап, çĕнелекен — çĕнелен, чупакан — чупан тата ыт. те.

Уйрăм предложенисенче хӳреллĕ пăнчă лартмалла çĕрте ăна лартма маннă. Акă пĕрремĕш сăвăрах («Пирĕн кил») çакăн пек предложени пур:

Аслă çул
Иртет шкул патĕнчен
Васкаса чупаççĕ мăн ЗИСсем.

Кунта «патĕнчен» сăмах хыçне хӳреллĕ пăнчă лартмалла пулнă, анчах темшĕн лартман. Шел пулин те, кун пек предложенисем «Пирĕн кил» кĕнекере чылай тупăнаççĕ. Сăвăсем тĕрĕс шухăш каланисĕр пуçне, вулакансене тĕрĕс çырма та вĕрентмелле.

Хăш-пĕр сăвăсенче тĕлли-паллисĕр каласа хăварнă йĕркесем пур. Ача-пăча валли çырнă кĕнекере сăмахсене тĕрĕс çырма тăрăшмалла, грамматикă правилисене пăтраштармалла мар. Шухăшсене уçăрах, ăнланмалларах каламалла, вулакансем — çамрăк ачасем, пĕчĕккĕскерсем, пулнине манмалла мар. «Пирĕн кил» кĕнеке, пĕр-пĕр ача аллине лексе, чи пуçласа вулакан кĕнеке пулса тăрас пулсан, унти чăннипех те паха сăвăсемпе пĕрле, хăш-пĕр сăвăсен çитменлĕхĕсем те çав ачан асăмне кĕрсе юлма пултараççĕ. Чăнах та, вулакан «Пирĕн кантăк умĕнче» сăвва çырса илет, тейĕпĕр. Унта «пысăкĕш» тесе çырнă сăмах пур, ку сăмаха чăваш чĕлхин орфографийĕ «пысăкăш» (пысăкăшĕ) тесе çырма хушать. Мĕншĕн тата «юратса пăхать» тесе калас вырăнне «юратуллăн пăхать» (6 стр.), «пире телейлĕ ӳстерет» тесе калас вырăнне «пире телейлĕн ӳстерет» (5 стр.) тесе каламалла?

Ку тĕслĕхсене эпир ахалех çырса кăтартас тесе илмен, вĕсене эпир статья пуçламăшĕнче каланă шухăшсене уçăмлăрах палăртас тесе илтĕмĕр: çапла, ача-пăча валли çырнă кĕнекен шухăшĕ те, чĕлхи те тĕп-тĕрĕс пулмалла. Ача-пăча вĕсене ĕмĕрлĕхех вĕренсе ăса илет.

М. Горький 1934 çулта Иркутск хулинчи пионерсем патне çырнă çырăвĕнче çакăн пек каланăччĕ: «Нужно учиться писать о людях, о жизни так, чтобы каждое слово пело и светилось, чтоб лишних слов во фразе не было, чтоб каждая фраза совершенно точно и живо изображала читателю именно то, что вы хотите показать».

Василий Алендей — çырма пултаракан, вĕренсе пыракан çамрăк поэт. Ку тĕрĕссине «Пирĕн кил» кĕнеке те çирĕплетсе парать, уйрăмах «Электроплита», «Атте сасси»,

«Сехет», «Харсăр Оля», «Кĕт кĕтес», «Ташă» тата ытти сăвăсем çирĕплетсе параççĕ. Çавăн çинченех унăн «Апрель» ятлă паха сăвви калать. (Ку сăвă «Ялав» журналăн 1953 çулта тухнă 4-мĕш №-че пичетленнĕ). Çак сăвва пĕчĕккисем те, пысăккисем те юратса вуламалла. Вăл 1953 çулта пирĕн поэтсем çырнă пĕчĕк сăвăсенчен чи пахисен шутне кĕрет, тесен те йăнăш пулас çук. «Апрель» сăвă, пирĕн шутпа, «Весенняя гроза» тата «Чĕкеç» сăвăсем пекех паха, вăл пĕрре вуласанах пуçа кĕрсе юлать. Ку çеç те мар: «Апрель»— хăйĕн шухăшĕпе те, формипе те хальхи вăхăтри илемлĕ произведени, вăл чăннипех те этем кăмăлне, чĕрине савăнтарать.

«Пирĕн кил» кĕнекери сăвăсем пурте «Апрель» сăвă пек илемлĕ пулнă пулсан, В. Алендей кĕнеки çамрăк вулакансемшĕн чăннипех те паха парне пулнă пулĕччĕ, унти сăвăсене чăваш ачисем çитĕнсе çитсен те хăйсен юлташĕсене: эпĕ ача чухне хитре сăвăсем вуланăччĕ, вĕсене халĕ те манман тесе, пăхмасăрах каласа парĕччĕç.

*1953*

## 2. Кĕске калав çырасси — пысăк ăсталăх

Василий Алендей «Ялав» библиотекинче пичетлесе кăларнă (1961) калавĕсене «Кĕске калавсем» тенĕ. Кĕнекен ятне вырăсла «Новые рассказы» тесе куçарнă. Пирĕн шутпа, ку калавсене «кĕске» калавсем теме çук, мĕншĕн тесен вĕсем чылаях пысăк калавсем. «Çĕнĕ калавсем» тенипе килĕшме пулать, мĕншĕн тесен кĕнекери калавсем пурте тенĕ пекех юлашки вăхăтра çырнăскерсем. Тепĕр енчен тата çакна савăнса палăртмалла: вĕсене пурне те хальхи темăпа çырнă.

Калавсене кĕнекере çакăн пек йĕркепе вырнаçтарнă: «Йăкăнат çăкисем», «Пурте тăван», «Калуш йĕрĕ», «Хура пăнчă», «Лисук». Эпир те вĕсене çак йĕркепех пăхса тухма шут тытрăмăр: критиксем паха произведени çинчен часчасах статья пуçламăшĕнче çырма тăрăшаççĕ, начартараххисене кая хăвараççĕ, вĕсем çинчен çитменлĕхсем пирки каланă чухне калаççĕ. Ку вăл, паллах, закон мар, йăла çеç, çавăнпа та эпир пурин те çавăн пек йĕркепе çырмалла тесе каласшăн мар. Закон сăмахпа кавычкăсăр усă курас пулсан, кунта çакăн пек калас пулать: кам мĕнле çырас тет — çавăн пек çыртăр!

...Василий Алендейĕн «Апрель» ятлă паха сăвă пур тенĕччĕ эпир хамăр статьян пĕрремĕш пайĕнче. Çав сăвăра прогрессивлă этемлĕхĕн аслă çулпуçĕ Владимир Ильич Ленин çинчен çырнă:

Шăнкăрчсем хавас юрлаççĕ,
Шарласа шывсем юхаççĕ,
Йăмрасем кăчка лараççĕ,—
чаплă-çке апрель.
Çепĕç çеçпĕлсем тухаççĕ,
Хурăнсем ăшша туяççĕ,
Çамрăк сулçă кăлараççĕ,—
чаплă-çке апрель.

Тракторсем хирте кĕрлеççĕ,
Тарăн касăсем чĕреççĕ,
Тăрисем çўлте вĕçеççĕ,—
чаплă-çке апрель.

Апрельте çуралнă Ленин
Çут хĕвел — телей хĕвелĕ,
Çавăнпа татах илемлĕ,—
чаплă-çке апрель.

Çак сăвва эпир, Алендейĕн «Йăкăнат йăмрисем» калава вуласан, тепĕр хут аса илтĕмĕр. Асран кайми сăвă, чăннипех те илемлĕ, паха сăвă! Ăна манма çук, манас та килмест!..

Йăкăнат мучипе ултă çулхи мăнукĕ Ванюк апрель уйăхĕнче вăрмана каяççĕ. Йăкăнат хул пуççи çине тимĕр кĕреçе хунă. Вăл мĕншĕн вăрмана кĕреçепе кайнине çамрăк мăнукĕ малтан пĕлмест. Анчах вăрманта çўренĕ чухне çакă палăрать: мучи вăрмана йывăç кăклама пынă, вăл малтан вĕрене, йĕлме тĕпĕсем кăларать, юлашкинчен çăка шыраса тупать, çак йывăçсене ялта лартма илсе каять. «Мĕн тума лартмалла?» — тесе ыйтать мăнукĕ. «Хамăр яла илемлетме»,— тет аслашшĕ. Паха шухăш! Анчах калавăн тĕп шухăшĕ ку мар-ха. Унăн тĕп шухăшĕ, тупсăмĕ акă мĕн: Йăкăнат мучи В. И. Ленин çуралнă куна халăх йăлипе чысласа çулсерен пĕрер çăка лартать,— вĕсене ултă çулхи Ванюк шутласа та кăлараймасть, мĕншĕн тесен Йăкăнат Мучи лартнă çăкасен шучĕ халĕ тăхăр вуннах çитнĕ! Ку çăкасене чăваш хресченĕ Йăкăнат «чи ырă çын валли чи ырă кăмăлпа лартнă». Пĕчĕкçĕ Ванюк аслашшĕ шухăшне малтан ăнланмасть. Çавăнпа ĕнтĕ вĕсем хушшинче акă мĕнле калаçу пулса иртет:

«— Мĕн тетĕн, асатте?

— Чи ырă çынна асăнса, тетĕп.

— Кам вăл, асатте, чи ырă çын?

— Чи ырă çын вăл — Ленин, Владимир Ильич. Çакна асра тыт, ачам...

— Эпĕ ăна паллатăп, асатте. Вăл пирĕн килтех пур.

— Çапла çав. Унăн сăн ӳкерчĕкĕ пирĕн килте те пур. Ленин кашни килтех, кашни çын чĕринчех, ачам.

— Мĕнле апла, кашни çын чĕринчех?

— Çаплах...

— Анне манăн чĕрене çак тĕлте тенĕччĕ,— аллипе кăкăрне тытса кăтартрĕ Ванюк.— Ленин вара çакăнта-и?

— Тĕрĕс. Ленин пирĕн чĕрере...

Ача ним калама та аптрарĕ, унăн хура куçĕсем шухăшлăн çутăлса илчĕç. Вăл, тем пирки, сахалтарах калаçакан пулчĕ. Çапах та утсан-утсан сасартăк:

— Ленин çав çăкапа мĕн тăвать, асатте?— терĕ.

— Мĕн тутăр ĕнтĕ. Ним те тăваймасть-ха та...— каллех ассăн сывларĕ Йăкăнат.— Ленин вăл тахçанах вилнĕ. Вăл пирĕн телей, пирĕн пурнăç. Ленин пире ăшăтрĕ, çутă пурнăç пачĕ.

Ача ачаллах пуплет çав. Унăн хăйне майлă туйăм, хăйне майлă шухăш:

— Апла пĕлетĕп эпĕ вăл камне,— хавассăн сăмах хушрĕ Ванюк.

— Вăл хĕвел пуль, асатте. Ăшă та, çутă та панă пулсан, хĕвел пуль. Тĕрĕс-и?

— Тĕрĕс!— çирĕппĕн каларĕ Йăкăнат.

Вĕсем уй хапхинчен кĕчĕç те йăмраллă тăкăрлăка пăрăнчĕç.

...Мучипе мăнукĕ çырма хĕррине, хăйсен пахчи хыçне, çитсе тăчĕç. Унта йывăçсем туллиех, вăрман пек. Вĕсене пурне те Йăкăнат мучи чĕртнĕ. Яштака çăкасене ешĕл тĕс çапнă. Миçе çăка-ши кунта? Ванюк вĕсене шутлама хăтланчĕ. Анчах вун икке çитерсенех арпашăнса кайрĕ.

— Асатте, миçе çăка кунта?

— Шутлама лайăхрах вĕрен-ха. Шкула кайма тытăн. Вара миçе çăкине хăвах пĕлĕн. Кунта эпĕ аслă Ленин çуралнăранпа миçе çул çитнĕ, çавăн чухлĕ çăка лартнă.

— Ӳссен эпĕ те Ленин валли йывăçсем лартатăп. Нумай. Нумай...» (6 стр.).

Мĕн тери ăслă та паха калаçу: ватă ăру çынни çамрăк ăру представительне хăйĕн чи ырă шухăшне каласа парать. Йăкăнат мучи шухăшне ăнланса илсе, совет ачи, пĕчĕкçĕ Ванюк ӳссе çитсен, Ленин ячĕпе «нумай-нумай

йывăçсем» лартма ĕмĕтленет. Ку ĕмĕт, ку пархатарлă ĕç традици пулса тăмалли япала! Республикăри кашни шкул ачи Ленин ячĕпе çулсерен пĕрер йывăç лартса ÿстерсен, пирĕн ялсемпе хуласем чаплă çăкасемпе хурăнсен, чăрăшсемпе ытти тĕрлĕ йывăçсен сулхăнĕнче ларĕччĕç. Илемлĕ те тирпейлĕ урамсенче тусан шăрши мар, çулçă, чечек шăрши кĕрсе тăрĕччĕ.

Йăкăнат мучипе ултă çулхи Ванюк шухăшĕнче, вĕсен ырă ĕçĕнче вилĕмсĕр Ленин пурăнать, государство шухăшĕ, социализмла патриотизм палăрать. Халăхăн тĕрлĕ ĕçĕсенче аслă Ленинăн пуриншĕн те тăван сăнарĕ ăруран ăрăва куçса пырать. Мухтав çавăн пек ырă ĕç тăвакансене, мухтав!

Василий Алендей çырнă «Апрель» сăвăпа «Йăкăнат çăкисем» калав — пĕчĕкçĕ произведенисем, çапах та иккĕшĕ те тарăн шухăшлă, иккĕшĕ те илемлĕ. Автор «Апрель» сăвăра хăйĕн шухăшне каласа пĕтерейммен, çавăнпа та калав çырнă, унта вăл хăйĕн шухăшне тарăнлатнă, халăх патне ăста сăмахсемпе çитернĕ.

Автор «Йăкăнат çăкисем» калавра та апрель илемĕ çинчен çепĕç те ансат, пурте ăнланмалла сăмахсемпе çырать:

«Тĕлĕнмелле аван çав апрель! Унăн хăйне уйрăм илем, чеченлĕх пур. Ача пек савăнăçлă хĕвел кунĕпех ăшшăн кулать. Вăл хуп-хуран курăнакан вăрман хыçне анма, пытанма васкамасть, унăн ытларах выляс, савăнас килет. Тин ирĕлнĕ юр шывĕ пăр çийĕн шăнкăртатса юхать. Вăрманта, юр кайнă-кайманах, кăвак куçлă, хĕрлĕ питлĕ çеçпĕл шăтса тухать. Ăна, хитрескерне, шухă çил кашни вĕрсе иртмессерен чуп тăвать.

Тĕлĕнмелле аван çав апрель! Çĕр типсех пырать. Урамсенче ем-ешĕл курăк çĕкленме тытăнать. Çав черченкĕ курăка таптаса иртме те хĕрхенетĕн. Йăмра çинче, пÿрт умĕнчех, шăнкăрч çунат çапса юрлать. Тракторсем, хаваслăн кĕрлесе, хире тухаççĕ. Сывлăш ытарма çук уçă. Таврара лайăх палăрса тăракан тăпра шăрши, пĕлтĕрхи çулçăсен шăрши сывлăша кăшт йÿçĕтсе, хăйне май тутлантарса тăрать» (3 стр.).

Сăвă ку, паха сăвă, ăста çырнă сăвă! Алендей — çырма пултаракан, ÿссе пыракан поэт, калавçă. Вăл çутçанталăка, унăн юррине, сассине, унăн кĕслине илтме пултарать, вĕсене хăйĕн произведенийĕсенче каласа (кăтартса) пама майсем тупать.

Василий Алендей кӗнекинчи иккӗмӗш калав «Пурте тӑван» ятлӑ. Пирӗн шутпа, ӑна илемлӗ чӗлхепе ҫырнӑ пулин те, вӑл паха калавсен шутне кӗреймест, ӑна вӑтам калав теме ҫеҫ пулать. Ҫырма ӑна йӗркеллех ҫырнӑ, геройне те ырӑ герой тума тӑрӑшнӑ (эпир «ырӑ герой» тесе «положительный герой» тенине калатпӑр), ун хутне кӗрсе, ӑшӑ кӑмӑлпа ҫырнӑ. Анчах!.. Ҫав «анчах» хӑш чухне чылаях шухӑшлаттарать.

«Пурте тӑван» калав геройӗ Анук Микки — вӑтӑр икӗ ҫул ӗлӗкрех ялтан тухса тарнӑ ҫын. «Тарнӑ» тенӗ сӑмах хӑех те шухӑшлаттарать. Тарма Анук Микки акӑ мӗн пирки тухса тарнӑ.

«Микка,— тет автор,— хӑй ялтан тухса кайнине нихҫан та манас ҫук. Ытла та айванла тухса кайнӑччӗ вӑл. Мӗн калӑн ӗнтӗ. Пурнӑҫра та тем те пулать, темле инкек-синкек те килсе тухать. Ҫирӗме ҫитнӗ-ҫитменех вӑл ялти магазин продавецне кӗчӗ. Аванах ӗҫлетчӗ темелле. Ялйышсене ытлашши кӳрентерни пулман. Анчах ултӑ уйӑх хыҫҫӑнах Миккан укҫа тухмарӗ. Вара ӑна магазинран кӑларчӗҫ, суда пачӗҫ. Микка ҫав намӑса тӳсеймесӗр, кунсӑр пуҫне... кунсӑр пуҫне тата тӗрмене лекесрен хӑраса, ялтан никама систермесӗр тухса тарчӗ. Инҫенех, Хабаровска ҫитиччченех, тарчӗ» (8 стр.).

Миккана Инҫет Хӗвелтухӑҫӗнче судпа следстви органӗсем шыраса тупаҫҫӗ те «ҫулталӑк хушши ирӗксӗр ӗҫлеттереҫҫӗ». Автор каланӑ тӑрӑх, вӑл унта ытти ҫынсем пекех, мӗн кирлине тума тӑрӑшать, чул кӑларать, пулӑ тытать, платникре «каскалать». Вӑтӑр ҫул иртсен, тӑван ялӗнчи ҫынсем чылайӑшӗ манса кайсан, Микка хӑй ҫуралса ӳснӗ яла ҫитсе курма шут тытать. «Атте-анне тӑприне ҫитсе курӑп, хам ӑутнӑ урамсемпе утӑп», тесе шутлать вӑл.

Микка яла пырса кӗрсен, ялти вӗт-шак ачасене тӗл пулать. Вӗсемпе калаҫнӑ май вӑл ялти ӗҫсемпе ҫынсем ҫинчен пӗлет, тӗлӗнет. Ачасем ӑна Ылтӑн Ҫӑлтӑр илнӗ Улине ҫинчен каласа параҫҫӗ. Вӗсем тата пӗри те тепри, Улине вӑл пирӗн тӑван, теҫҫӗ. Тавҫӑруллӑрах ачи «Улине темиҫе ҫын тӑванӗ пулма та пултарать», тет. Автор, ҫак шухӑш тӗрӗс шухӑш пулнине палӑртса, Улине пек ӗҫпе чапа тухнӑ ҫынсем пуриншӗн те пӗр тӑван, вӗсене пурте хисеплеҫҫӗ, тӑван тесе йышӑнаҫҫӗ, тет (10 стр.). Ҫав вӑхӑтрах автор Микка ҫинчен ҫакӑн пек каласа хурать: «Миккана вара ун пек тӑван тесе йышӑнма сӑлтавӗ те ҫук

пулас. Микка ял-йыш уменче халăхшăн кирлĕ, ырă ĕç нимех те туман» (çавăнтах).

Чăнах та, ĕçпе чапа тухнă Улине ялта пуриншĕн те тăван пулсан, ялтан тарнă Микка çавăн пек пулма пултарать-и? Вăхăтлăха калав ятне аса илер-ха: вăл «Пурте тăван» ятлă!

Ку ыйтăва автор акă мĕнле татса парать: вăл Ĕç Геройне манса каять те Миккана «тăван» туса хурать.

Вăтăр çул ĕлĕкрех ялтан тарнă çын икĕ эрне хушшинче ялта килтен киле хăнана çӳрет: ăна çитереççĕ, ĕçтереççĕ! Юлашкинчен Микка, намăса туйса пулас, хире тухса ĕçлет: «комбайн пăрахса хăварнă улăма пухать, ял çыннисемпе пĕрле пулать, кулать, шӳт тăвать, табак туртать...»

Калав вĕçĕнче автор Миккана ял халăхĕ мĕнле ăсатнине кăтартса парать (акă хайхи «анчах» ăçта!):

«Ыраш вырса пĕтернĕ кун Миккана ял çыннисем ăшшăн хăналаса ăсатрĕç. Станцăна çитиччен леçме лаша та пачĕç. Микка лав çине чăматанне çеç хучĕ, хăй тем тусан та лармарĕ, тăван уй-хир тăрăх çуранах утас, терĕ.

Уй хапхинчен тухсан, Микка ял çыннисене: Сухвур арăмне те, Çарăк Улинине те — пурне те, пурне те алă пачĕ. Чĕлхесĕр Сергее хыттăн ыталаса чуп турĕ. Çак вăхăтра ун кăмăлĕ сасартăк çемçелсе килчĕ. Икĕ куçĕнчен те сутă тумламсем йăр-р шуса анчĕç. Микка куççуль витĕр:

— Каçарăр мана, ял-йышсем. Каçарăр! Питĕ лайăх хăна пултăм. Питĕ чăрмантартăм сире. Çамрăк чухне тата... Çамрăк чухне апла-капла пулнăшăн та каçарăр,— терĕ.

— Мĕскер эсĕ? Ун пек сăмах нихçан та каланă ан пултăр,— терĕç ăна ял çыннисем.

— Тăван-хурăнташран та тарават пултăр эсир,— куççульне шăлса илчĕ Микка.

— Çапла кирлĕ те... Эпир — совет çыннисем, эпир — пурте тăван» (13 стр.).

Ку сентименталлă шухăшпа эпир килĕшесшĕн мар, мĕншĕн тесен Микка тăван çĕршыв уменче нимпе те чапа тухман, ăна герой туса хума нимле сăлтав та çук, вăл çамрăк Улинипе танлашаймасть.

Миккана «куççульпе» ăсатнă чухне ял çыннисенчен тахăшĕ: «Эпир — совет çыннисем, эпир — пурте тăван», тет. Тĕрĕс, совет çыннисем хушшинчи туслăх, тăванлăх ӳссех, тĕрекленсех пырать. Çапах та Микка «пурте тăван»

тенĕ йыша пĕр сăмахсăр кĕмелĕх ĕçлеймен, ĕç паттăрĕ пулса таврăнайман,— вăтăр çул ытла аякра çӳренипе (пурăннипе) «тăван» ятне илтме çук çав. Алендей пулать тесе ĕнентерме тăрăшнă, анчах ĕнентереймен. Улинепе Миккана ĕçри пĕр тăвансем пек туса кăтартни, пирĕн шутпа, тем тесен те, килĕшӳсĕр, вулаканăн кăмăлĕ Улине еннех туртăнать.

Виççĕмĕш калавне Алендей юлташ «Калуш йĕрĕ» тенĕ. Унта фермă хĕрĕсем çинчен çырнă. Ĕне сăвакан хĕрсем кашни ĕнерен виçĕ пин литртан кая мар сĕт суса илме пулнă. Вĕсем хушшинче сĕт ытларах суса илнипе палăраканни — Таркки ятлă хĕр. Анчах пĕр кунне унăн «Красавкă» ятлă ĕни тем пирки сĕт ик литр сахалтарах панă.

Калаври ĕçсем, пĕр енчен, çакăнпа çыхăнса пыраççĕ. Тепĕр енчен, юрату ыйтăвĕпе çыхăнса каяççĕ. Халех калăпăр, «иккĕмĕш енне» автор ăста кăтартса панă. «Сĕт ыйтăвĕ» калавăн сюжетне кирлĕ пек çыхăнтараймасть. Вăл — калава «çĕнетекен» ыйту çеç.

Хĕлле. Чарăнма пĕлмесĕр юр çăвать. Ир те, каç та çăвать. Фермă хуралçи Ванюк —«вун тăххăрти ĕçчен те лăпкă каччă»— юра тасатса та çитерейместь. Каччă тасатакан сукмакпа фермă хĕрĕсем пыраççĕ. Сукмак çине малтан йĕр тăвакан хĕр — Ванюк савакан, юратакан Таркка. Вăл хитре те илемлĕ. Писатель сăнласа панă тăрăх, акă мĕнлерех Таркка сăн-пичĕ:

«Тĕлĕнмелле çав Таркки сăн-пичĕ. Епле çуралма пултарнă-ши ун пек хĕр тĕнчене! Унăн пурте, пурте хитре, килĕшӳллĕ. Унăн тӳрĕ сăмси те, кăвак куçĕ те, шăнкăрч тĕкĕ тĕслĕ куç харшийĕ те чуна çĕклентерет. Пуринчен ытла унăн пĕвĕ-сийĕ, утти... Вăл утнă чухне сывлăш та савăнăçлăн хӳ-хӳ килсе, вăркăшса юлать. Çавăнпах унăн йĕрĕ çине ирĕн-каçăн тинкерет Ванюк» (18 стр.).

Василий Алендей ытти калавсенчи геройĕн сăнарне те лайăх туса кăларнă. Унăн пултарулăхĕ ку тĕлĕшпе ӳссех пырать. Калавçă, сăмах май каласан, сăнар тума пĕлмест пулсан, лайăх калавçă шутне кĕме пултараймасть. Аса илĕр-ха, Тургенев, Короленко, Чехов калавĕсенчи геройсене. Вĕсен кашнин хăйне евĕр портрет пур. Вĕсен кашнин уйрăм характерĕ пур. Çав характерпа вĕсем ыттисенчен уйрăм тăраççĕ.

«Красавкă» икĕ литр сĕт чакарсан, пурте пăшăрханса ӳкеççĕ. Паллах, чи хытă пăшăрханаканни Таркки хăй. Ванюк та пăшăрханнипе ним тума пĕлмест.

Ку «пăшăрхану» çинчен автор васкаса (илемлĕх майĕсене мансах!) çырса пырать. Акă кунта çепĕç те илемлĕ чĕлхепе çырма пултаракан писатель мĕн тери «хаçатла» чĕлхепе кĕрлеттерет:

«Анчах Ванюк кăна мар, çав кун Таркки сĕт сахалрах суса илни çинчен зоотехник та, фермă заведующийĕ те шухăшларĕç, вĕсем унăн сăлтавне пĕлме тăрăшрĕç, витене тухса, ĕнесене тĕрĕслерĕç, рационти апатсене пăхса тухрĕç. Ветеринари фельдшерĕ, ăшталанчăк, лара-тăра пĕлмен Кĕркури, витене тепĕр хут тишкерчĕ, сых ятне тесе, дезинфекци тума хатĕрленчĕ. Парторганизаци секретарĕпе колхоз председателĕ çак хыпара çийĕнчех пĕлчĕç. Комсомол организацин секретарĕ Кирук фермăна чупса тенĕ пекех çитрĕ. Ене сăвакансемпе калаçрĕ, вĕсенчен ыйтса пĕлчĕ. Унтан фермăра ĕçлекенсене пурне те пухрĕ те Пĕрлешнĕ Нацисен Генеральнăй Ассамблейин сессийĕ çинчен каласа пачĕ. Вăл чылайччен калаçрĕ. Хăй сăмахне вĕçлесен, Кирук çăмăллăн сывласа ячĕ. Сĕт чакнине çак сăмахпа чарса лартнă пекех туйăнчĕ пулас ăна» (16 стр.).

Эпир ку абзац çинчен кăнттам сăмахпа «хаçатла» терĕмĕр. «Хаçат чĕлхипе» тенĕ пулсан, тĕрĕсрех пулнă пулĕччĕ. Анчах турă çырлахтăр! Эпир хаçат чĕлхи чăннипех те начар чĕлхе тесшĕн мар. Çук, çук! Эпир пачах та ун пек каласшăн мар, çавăнпа та «хаçат» сăмаха эпир кавычкăпа çыртăмăр. Çапах та Алендей фермă çыннисем «пăшăрханни» çинчен пĕр-пĕр район хаçачĕ валли васкаса хатĕрленĕ «очерк» чĕлхипе çырнă. Çав «очерк» татăкĕнче кăтартнă комсомол организаци секретарĕ Кирук пуринчен те ытларах тĕлĕнтерет. Вăл, «Красавкă» сĕт чакарни çинчен илтсен, ĕне сăвакансем патне чупса çитет те «политикăлла» ĕç пуçласа ярать: секретарь, фермăра ĕçлекенсене пурне те пухса, «Пĕрлешнĕ Нацисен Генеральнăй Ассамблейин сессийĕ çинчен» каласа парать. Чылайччен калать. «Сĕт чакнине,— тет писатель,— çак сăмахпа чарса лартнă пекех туйăнчĕ пулас ăна». Ку сăмахсене секретарьтен кулса, ăна тăрăхласа каланă-ши е асăрхамасăр персе янă-ши? Эпир асăрхамасăр каланă пулĕ тетпĕр, мĕншĕн тесен калавра комсомол организацийĕн секретарĕ çинчен ним шарламасăр иртнĕ пулсан та, секретарь калавра кирли е кирлĕ марри пачах та сисĕнмест. Секретарь çинчен каланă вырăна вуласан, ирĕксĕрех: «ăнланма çук!» тетĕн.

Юрату ыйтăвĕ калавра çакăн пек сӳтĕлсе каять:

Ванюк ахалех Таркки калушĕн йĕрне сăнать, ахалех хыпса çунать, чуссăнкки тăхăннă хĕр кирзă атă тăхăннă каччăна, нумаях пулмасть çартан таврăннă Сантăр Колине, юратать иккен. Çакна писатель питех те лайăх кăтартать. Акă Ванюк колхоз клубĕнче пулнă хыççăн урамра каçпа Таркка тухасса кĕтсе тăрать. Таркка тухни курăнмасть. Ăçта çухалчĕ-ши вăл? Тӳрех фермăна каймарĕ-ши?..

Тăрсан-тăрсан, Ванюк ак мĕн пĕлет: «Ванюк ури шăнмаллипех шăнчĕ, вăл вара хуллен килнелле сулăнчĕ. Чылай кайсан, Тарккисем патне пăрăнакан улах тăкăрлăка çитсен, Ванюк темскер пулнă пек тăпах чарăнчĕ. Тăкăрлăк еннелле икĕ ура йĕрри кайнă. Çав йĕрсем электричества çутинче ытла та аван курăнаççĕ. Пĕри чусăнкки тăхăннă, тепри — кирзă атă. Пĕр йĕрне Ванюк тӳрех палласа илчĕ. Таркки йĕрĕ вăл, çав вĕттĕн-вĕттĕн пусса иртнĕ çак тĕлтен. Çĕн калушĕн тĕпĕ ытла та лайăх пичетленсе юлнă. Тепĕр йĕрĕ камăн-ши? Неушлĕ паçăр курнă салтакăн? Неушлĕ Сантăр Колин? Ванюк çак ура йĕрĕсем çине нумайччен пăхса тăчĕ. Шап-шурă юр ӳкет, ӳкет...»

Уйрăм вырăнсенче кăнттамрах пуплевсем тĕл пулаççĕ пулсан та, ку калава йăлтах тиркеме сăлтав çук. Ăна лайăх калав темелле. Калав вĕçĕнчен илсе кăтартнă цитатăри пек детальсене асăрхамашкăн пурнăçа лайăх сăнама пĕлекен писатель çеç пултарать. Алендей — пурнăçа сăнама, тинкерме пултаракан писатель. Пурнăçа, унăн тĕрлĕ пулăмĕсене асăрхама, сăнама, туйма пĕлмен çын писатель пулма пултараймасть.

Юлашкинчен тата «Хура пăнчă» калавпа «Лисук» калав çинчен пĕр-ик сăмах калас килет. Пирĕн шутпа, «Хура пăнчă» — çырса пĕтермен калав. «Плакипе Терентей вăрманти улах сукмакпа утрĕç»,— тесе пуçлать автор калава. Камсем-ха çак çынсем? Плаки — штукатурщицă, Терентей — чулçă. Вĕсем, упăшкипе арăмĕ, инçетре, Орск комбинатĕнче, ĕçлекенскерсем, яла Плаки амăшĕ патне хăнана килеççĕ. Вĕсен ача та пур. Ачи тăхăр уйăх тултарнă.

Акă çĕнĕ çынсем Плакисен ялĕ патне çывхарса пыраççĕ. Плаки вĕр-çĕнĕ кĕпе тăхăннă, куçлă-куçлă саппун çакнă. Упăшки шурă кĕпепе, хура шăлаварпа. Терентей пĕчĕкçĕ ывăлне йăтнă, амăшĕ вĕсем хыççăн пырать. Хушăран: «Толик, Тол...»— тесе чĕнет. Ачи вара тӳсеймесĕр чăлтăр кулса ярать.

Çул çинче калаçса пынă вăхăтра Плаки хăй амăшĕн кăштах сăкăлтăк-мăкăлтăк пуррине пĕлтерет. Ĕлĕк вăл хĕрĕ чирлесен-вĕрĕлсен, ăна хăш-пĕр чухне тĕрлĕ им-шывпа сипленĕ. Каçхине халап-юмах пуçласа ярсан, тĕрлĕ усал-тĕсел çинчен каласа панă. Плаки килтен тухса кайнăранпа пилĕк-ултă çул çитнĕ. «Пурнăç улшăнтарнă пулĕ ăна» тесе шутлать хĕрĕ амăшĕ çинчен. Улăштарман пулсан, Плакие упăшки умĕнче тем пекех «лайăх мар пулассăн туйăнать». Мĕншĕн тесен «Терентей паллă чулçă, вĕсен бригадине коммунизмла ĕçлекенсен бригади ятне панă» (23 стр.).

Сăмах май, халех каласа хăварăпăр: Терентей паллă чулçă пулин те, коммунистла бригадăра ĕçлени те урăх нимрен те курăнмасть. Ăна эпир автор каланинчен çеç пĕлетпĕр.

Хайхискерсем, упăшкипе арăмĕ, киле çитеççĕ. Упăшки арăмĕн амăшĕпе паллашать. Карчăк Толик çинчен ыйтса пĕлет. Çакăн чухне вара хунеме карчăкăн «сăкăлтăк-мăкăлтăкĕ» палăрать. Кун çинчен писатель çакăн пек çырса пĕлтерет:

«Сарă çӳçлĕ, кăвак куçлă патвар ачана кукамăшĕ питĕ юратрĕ. Çапла пулин те, куç ан ӳктĕр тесе, Урук ачана мухтаса каламарĕ. Юриех:

— Тьфу! Ачи илемсĕр иккен. Тьфу, илемсĕр, — тесе хучĕ.

Унтан каллех кăмака умне утрĕ, пӳрнине хăрăм лектерсе килчĕ. Çав хăрăмлă пӳрнепе Толик пичĕ çине хура пăнчă турĕ.

— Никам куçĕ те ан ӳктĕр сан çине. Хури те, хăмăрри те, чакăрри те. Ваттин те, вĕттин те...— мăкăртатрĕ Урук.

Çакна курсан, Плаки сăн-пичĕ хĕрелсе кайрĕ, амăшĕ çапла хăтланнине вăтантарчĕ ăна. Терентей малтанлăха нимĕн те ăнланмарĕ-ха, кайран кулса ячĕ» (26 стр.).

Плаки хура пăнчăна тутăрпа шăлса тасатать. Упăшки: «Çук, Плаки, ку хура пăнча тутăрпа шăлнипех тасатас çук-ха эпир. Çапах та тасатма тăрăшăпăр»,— тет.

Калав çакăнпа «пĕтет». Пирĕн шутпа, пĕтмест, пуçланмалла çеç. Мĕншĕн тесен «хура пăнчă»— калава çыхаканни, завязкă, калава аталантармалли, малалла çырма пуçламалли вырăн, конфликт. Çавăн пирки ĕнтĕ эпир малта ку калава çырса пĕтермен, вĕçлесе çитермен терĕмĕр.

Совет халăхĕ социализм туса çитерчĕ, коммунизм

обществине анлăн тăвас тапхăра кĕчĕ. Ку вăл питех те чаплă çитĕнӳ, çав тери пысăк утăм. Калама канас: пысăк утăм! Социализм! Коммунизм! Вĕсенчен пахи, чапли пирĕншĕн урăх ним те çук. Анчах... çав вăхăтрах уйрăм çынсен пурнăçĕнче, йăлинче, ăс-тăнĕнче çаплах «хура пăнчăсем» тĕл пулаççĕ-ха. Писатель ĕçĕ — çав «пăнчăсем» пурри çинчен каласа иртсе каясси мар. Унăн ĕçĕ пысăкрах та ответлăрах: писатель ĕçĕ «хура пăнчăсене» пĕтерме совет çыннисене пулăшасси, «пăнчăсен» сиенне тăрă шыв çине кăларасси, халăха тĕрлĕ тĕшмĕше хирĕç, «сăкăлтăкмăкăлтăка» хирĕç кĕрешме хавхалантарса тăрасси. Тĕрлĕ «хура пăнчăсене» курнипе «хĕрелсе вăтанни», «кулса илни» тĕшмĕше хирĕç кĕрешме пулăшмасть. Вĕсене хирĕç паян та, ыран та кĕрешмелле, мĕн коммунизма çитиччченех, пĕтĕм обществă коммунистла ĕçлекен обществă пулса тăриччченех кĕрешмелле.

«Лисук» калав, ыттисемпе танлаштарсан, чи çăмăл калав. Кану çуртĕнче пĕр çамрăк каччă Лисук ятлă хĕре тĕл пулать. Каччă пĕрре курсах ăна юратса пăрахать. «Хулĕнчен ярса тытать те такăр сукмак тăрăх вăрманалла уттарать». Анчах тепĕр кунне çакă палăрать: Лисук — суккăр хĕр, юратма та вăл урăх çынна, суккăр Павăла, юратать-мĕн! «Эпĕ хам куççăр çынпа ларнине те сисмен», тет калав геройĕ.

Эпир Василий Алендейĕн кашни калавнех пăхса тухрăмăр. Вĕсенчен чи пахи — «Йăкăнат çăкисем» калав. Ыттисем ун çӳллĕшĕнче тăраймаççĕ. Çапах та эпир вĕсене пĕрне те тиркесшĕн мар. Эпир çакăн пек каласшăн: Василий Алендей — пултаруллă калавçă; малашне те тăрăшса ĕçлесен, вĕренме пăрахмасан, пурнăçпа çывăхрах пулсан, вăл тата та хитре калавсем çырма пултарĕ.

Анчах халĕ тӳрех çакна калас пулать: Василий Алендей калавĕсем сюжет тĕлĕшпе вăйсăртарах-ха. Каяççĕ — килеççĕ, килеççĕ — каяççĕ,— çакăн пек вĕсен сюжечĕсем. Тарăн çыхăнусем, хирĕçӳсем, вĕсене татса пани çук; çынсен характерĕсем, шухăшĕсем ӳсни, сарăлса, тарăнланса пыни курăнмасть. Хăшĕ-пĕри: Алендей хăйĕн калавĕсене «кĕске калавсем» тенĕ, çавăнпа та сюжет пирки çав тери хытă ыйтса çырни вырăнсăр, тейĕ. Эпир ун пек калана хирĕç çакăн пек калăпăр: А. П. Чехов калавĕсем нумайăшĕ В. Алендей калавĕсенчен кĕскерех, пĕчĕкрех, çапах та сюжет енчен пурте малта тăраççĕ, пурте вăйлă. Ку вăл

ака мĕн ҫинчен калать: кĕске калав ҫырасси вăл — пысăк ăсталăх.

Василий Алендей чĕлхе тĕлĕшпе чăвашсен хăш-пĕр писателĕсенчен нумай малта тăрать, геройсен сăнарĕсене, портречĕсене тума та пĕлет. Анчах вăл васкаса ҫырнă вырăнсенче хăш-пĕр чухне ахаль статья шайне анса ларкалать. Ун пек ан пултăр тесен, писателĕн яланах илемлĕх мелĕсемпе ĕҫлес пулать. Ҫакна манма кирлĕ мар: литература, искусство вăл — илем ăсталăхĕ!

Алендей пурнăҫа сăнама пĕлет, терĕмĕр. Ку вăл унăн литература ĕҫĕнчи пахалăхĕ. Ҫапла пулин те, ҫакна асăрхаттарас килет: хăш-пĕр ҫĕрте вăл, пурнăҫа лайăх пĕлнĕ вăхăтрах, тĕрлĕ детальсене ҫителĕклĕ тĕрĕслемесĕр, вĕсем пирки пуҫ тавра кирлĕ чухлĕ шухăшламасăр ҫырать. Сăмахран, «Пуоте тăван» калавра ҫакăн пек ырăн пур: «Яла ҫитеспе Микка шоссе ҫулĕ ҫинчен пăрăнчĕ те такăр ҫинҫе сукмак ҫине кĕчĕ. Ҫав сукмак, ҫыхланчăк ҫип евĕрлех, ҫӳллĕ ыраш хушшинче ял еннелле авкаланса пырать. Сукмак икĕ енче те утмăл турат, Ҫтаппан пуҫ чечекĕсем курăнкалаҫҫĕ. Пăру хӳри куракĕ те кăрак чечек кăларнă. Сукмак урлах йыт пырши кара-кара кайнă. Шултра ыраш пучахĕсем Микка еннелле сулăнаҫҫĕ те хăлчăсемпе питрен кăтăклаҫҫĕ.»

Колхоз уйĕ! Ҫӳллĕ ыраш!.. Анчах колхоз уйне утмăл туратсемпе, ҫтаппан пуҫсемпе, пăру хӳрисемпе, йыт пыршисемпе тата ытти ҫум куракссемпе «илемлетни» вырăнсăр.

«Лисук» калавра ҫакăн пек каланă: «Ҫав каҫ нумайччен упкаласа ҫӳрерĕмĕр. Уҫă сывлăш чуна килентерчĕ. Йывăҫсен хушшинче ярăнса ҫӳрекен шухă уйăх хутранситрен ҫеҫ курăнчĕ» (27 стр.).

Илемлĕ-и? Илемлĕ! Анчах, пирĕн шутпа, уйăх «ярăнса ҫӳреме» пултараймасть. «Ярăнса сӳрет» пулсан, «хутран-ситрен ҫеҫ» мар курăнмалла. «Шухă» сăмах та кунта вырăнлах мар.

Хăш-пĕо поэтсем, шăпчăксене юратаканскерсем, шăпчăксене хăҫан юрлаттарас теҫҫĕ, ҫавăн чухне юрлаттараҫҫĕ. Вĕсен шăпчăкĕсем октябрьпе ноябрь уйăхĕсенче те юрлаҫҫĕ. «Йăхăнат ҫăкисем» калавра шăпчăк апрель уйăхĕнчех «юрă шăрантарать». Ку ытла ир мар-и?..

Кĕнекере чĕлхе кăлтăкĕсемпе корректура йăнăшĕсем те пур. Ҫапах та статьяна корректорсене критикленипе

пĕтерес килмест, кĕнеке авторне ырлăх-сывлăх, ăнăçлăх сунса вĕçлес килет. Василий Алендейĕн «Кĕске калавĕсене», вĕсенче хăш-пĕр çитменлĕхсем пур пулин те, эпир савăнса вуларăмăр, хавасланса статья çыртăмăр. Статьяна пачах та автора хурлас, кӳрентерес тесе мар, пулăшас тесе çыртăмăр. Çак статья кĕнеке авторне мĕн чухлĕ те пулин пулăшсан, эпир чăннипех те савăннă пулăттăмăр.

* * *

В. Алендей сăвăсем те, калавсемпе очерксем те çырать. Унăн юлашки вăхăтри ĕçне-хĕлне пăхса тухсан, çакă курăнать: вăл ытларах прозăра ĕçлет, повеçсем, калавсем, очерксем çырать. Алендейĕн юратнă жанрĕ прозă пулса тăчĕ пулас. «Тăван кил» кĕнеке хыççăн вăл сăвă кĕнеки пĕрре çеç кăларчĕ, прозăпа çырнă произведенисен кĕнекисем виççĕ-тăваттăран та иртсе кайрĕç. Писатель кăмăллакан геройсем — çĕнĕ ял çыннисем: колхозниксем, ĕне пăхакан, чăх-чĕп ĕрчетекен хĕрарăмсем, колхоз бригадирĕсем, председателĕсем, Совет Çарне каякан çамрăксем, унтан таврăнакан салтаксемпе офицерсем.

Василий Алендей литературăра хăйĕн вырăнне тупрĕ, халăх пĕлекен, вулакансем юратакан проза

*1961-1963*

## Г. И. КУЗНЕЦОВ-КЕЛИ

(Çуралнăранпа утмăл çул çитнĕ тĕле)

Чăваш литературине тĕпчекенсемпе унăн историне çыракансем, литература критикĕсем Григорий Кузнецов-Келие яланах «чăвашсен малтанхи критикĕ» е «малтанхи критикĕсенчен пĕри» теççĕ. Çакă вăл тĕрĕс сăмах пулин те, Кели пирки тата çакна хушса калас килет: вăл, паллă критик пулнă вăхăтрах, паллă поэт пулнă, критикăллă статьясемсĕр пуçне сăвăсемпе юрăсем, вырăсла та, чăвашла та çырнă. Анчах нумай çырнă теме çук, мĕншĕн тесен Кели ĕмĕрĕ ытла та кĕске пулнă, пултарулăхĕ, таланчĕ сарăлса çитеймен. Çапах та поэт-критик хăйĕн ятне ырă сăмахпа асăнтармалăх ĕçленĕ, чăваш литературин паллă çыннисен йышне кĕрсе юлнă. Çавăнпа чăваш халăхĕ ăна манмасть, ун çинчен пĕр ăру тепĕр ăрăва каласа парать.

* * *

Григорий Иванович Кузнецов 1901 çулхи январĕн 1-мĕшĕнче Патăръел районĕнчи Тĕмерте çуралнă. Унăн ашшĕ — Иван Герасимович Кузнецов — ялта учительте ĕçленĕ; 1917 çулхи Октябрьти революци хыççăнхи малтанхи çулсенче халăх хушшинче активлă ĕçлеме тытăннă, 1918 çулта Коммунистсен партине кĕнĕ. Çав вăхăтрах чăваш хаçачĕсемпе журналсене статьясем, кулăшла калавсемпе сăвăсем çырма тытăннă (вĕсене вăл «Сенĕк» псевдонимпа пичетленĕ). Ашшĕн халăх хушшинчи хастарлăхĕ ывăлĕшĕн ырă витĕмлĕ пулнă. Вун пилĕк çулта чухнех вăл тĕрлĕ кĕнекесем вуласа пĕлӳ илме, ăс пухма тăрăшнă, тĕнче мĕнле пӳçланса кайни çинчен, çăлтăрсем мĕнле тытăнса тăни çинчен шухăшланă, хĕвел çине пăхса тĕлĕннĕ. Çамрăк

ачана пурте, пурте интереслентернӗ. Ҫапах та ӑна илемлӗ литературӑ, Пушкин, Лермонтов, Толстой, Короленко, Горький, Серафимович кӗнекисем ытларах кӑмӑла кайнӑ, Белинскин, Чернышевскин, Добролюбовӑн хутран-ситрен алла лекнӗ кӗнекисем тарӑн шухӑша янӑ. 1918 ҫулта, граждан вӑрҫи ҫулӑмӗ ялкӑшнӑ вӑхӑтра, вӑл Хапӑсри (Вӑрнар районӗ) икӗ сыпӑклӑ шкула вӗренме кӗрет, унтан Чурашри (Етӗрне районӗ) семинарире вӗренет. Ҫак ҫулсенче Г. Кузнецов марксистла литературӑпа паллашать, Ленинӑн хаҫат-журналсенче пичетленнӗ статйисене, тӗрлӗ съездсенче, пухусенче тухса каланӑ сӑмахӗсене чун-чӗререн юратса вулать.

Кузнецов шкулта вӗреннӗ чухнех обществӑлла ӗҫе хастар хутшӑннӑ, 1919 ҫулта комсомола кӗнӗ, комсомол ячейкин секретарӗнче ӗҫленӗ. Кайрантарахпа вӑл комсомолӑн вулӑсри ячейкин ответлӑ секретарӗ те пулнӑ.

Ҫӗршывра ҫаплах граждан вӑрҫи пынӑ. 1920 ҫулта Г. Кузнецова Хӗрлӗ Ҫара илеҫҫӗ. Ҫарта вӑл виҫӗ ҫул хушши пулать. Вӑрҫӑ пӗтсен, тӗнче тамалсан, демобилизаци йӗркипе Хусана пырать. Татчекан Хусан комендатури уйрӑмӗнче ӗҫлет. Кӑштах вӑхӑт иртсен, чӑваш ҫамрӑкӗ тӑван ҫӗршывне таврӑнать те малтан Облчекара ӗҫлет, унтан Патӑръел уесчӗн милици уйрӑмне куҫать. Кузнецова ытларах культурӑ ӗҫӗ кӑмӑла кайнӑ. Вӑл вара часах ҫут ӗҫ пайӗнче ӗҫлеме тытӑнать.

Тӗрлӗ кӗнекесемпе, уйрӑмах В. И. Ленин кӗнекисемпе паллашнӑскер, хурапа шурра курма ӗлкӗрнӗскер, ҫирӗмрен иртнӗ Кузнецов 1924 ҫулта, Шупашкара килсе, чӑваш рабфакӗн иккӗмӗш курсне вӗренме кӗрет. Ку вӑхӑтра вӑл ӗнтӗ активлӑ комсомолец, чӑваш хаҫачӗсен корреспонденчӗ пулнӑ. Рабфакра Кузнецов чӑваш студенчӗсем хушшинче хӑйӗн хастарлӑхне, вӗресе тӑракан вӑй-халне часах кӑтартать. Аҫта кӑна ӗҫлемест-ши вӑл? Профком. Литературӑ кружокӗ. «Кузница кадров» стена хаҫачӗ. Эрнере пӗрре тухакан, шӑматкунхи каҫхине студентсен вечерӗнче вуласа паракан «Шӑнкӑрав» хаҫат. Докладсем. Тавлашусем. Пур ҫӗрте те Кузнецова курма пулнӑ. Пӗр организацире вӑл — секретарь, тепринче — член е тата сӑмах калама, «тавлашма» пынӑ юлташ. Тепри, унпа ӑмӑртаканни, хальхи паллӑ историк тата критик Иван Данилович Кузнецов пулнӑ,— темле пуху та, темле лару та вӗсем пырсан, интересленсе кайнӑ. Сӑмах калама пачах хатӗрленмен ҫын та кун пек пухусенче сӑмах каланӑ, юлташла тавлашӑва кӗрсе кайнӑ.

...Кĕнеке вулама юратакан Григорий Кузнецов рабфакра вĕреннĕ чухне тата та нумай вулать. Эпĕ ун чухне унпа туслăччĕ. Çавăнпа та çакăн пек калама пултаратăп: Гриша Кузнецова кĕнекесĕр пĕрре те курман.

Пирĕн литературăра Григорий Кузнецова «Кели» теççĕ. «Кели» тесе калани, çырни тĕрĕсех мар. Вăл хăй «Гелий» тесе çыратчĕ. Анчах ун чухне чăваш алфавитĕнче «Г» саспалли пулман пирки унăн псевдонимĕ «Кели» пулса кайрĕ. Гелий — грек сăмахĕ, Гелий — хĕвел çинче, хĕвел массинче тĕл пулакан хими элеменчĕ.

Григорий Гелий, литературăна, поэзипе критикăна юратнипе пĕрлех, хими наукине юрататчĕ. Хими тесен, чăвашла калас-тăк, пĕтсех каятчĕ, хими кабинетĕнче тĕрлĕ опытсемпе аппаланатчĕ. Анчах математикăна ытлах юратмастчĕ. Ман пата Ленинградран янă çырăвĕнче пĕррехинче çапла çырнăччĕ: «Эпĕ математикăпа мĕн чухлĕ асаплантăм, халĕ ĕнтĕ манран математикă ыйтмаççĕ. Çапах та эпĕ Копеца ырă сăмахпа асăнатăп. Кондратий Никифоровича * манаймастăп».

Григорий Кузнецов, химие юратаканскер, хăйĕн псевдонимне те Менделеев системинчен илнĕ. Ку псевдоним пирки пĕррехинче пирĕн хушăра çакăн пек калаçу пулса иртрĕ.

— «Гелий» сăмаха чăвашла «Кели» мар, «Хĕвел» е «Хĕвелли» теме юрать, — терĕм эпĕ.

— Çапла, çапла! Кели, Хĕвелли... Анчах эпĕ Сарачăм мар, Карачăм! — терĕ Гриша Кузнецов.

Çаксене шута илсе, эпĕ хамăн статьяра 1926—1930 çулсенчи пек «К. Куснетсов (Кели)» тесе мар, «Григорий Кузнецов (Гелий)» тесе çырасшăнччĕ, анчах унăн псевдонимне «Кели» тесе çырма хăнăхнă пирки «Гелий» тесе çырма хăяймарăм).

Лара-тăра пĕлмен Кели 1925 çулта, хăйĕн пĕр çывăх юлташĕ чĕннипе, çуллахи каникул вăхăтĕнче хальхи Çĕмĕрле районĕнчи Хутар салине кайса, унта вулав çурчĕн пуçлăхĕнче ĕçлет. Рабфак студенчĕ Хутарти çамрăксем хушшинче тĕрлĕ докладсем тăвать, лекцисем вулать, калаçусем иртерет. Спектакльсем лартма хăех пьесăсем çырать. Сăмахран, унăн «Çăкапа юман» ятлă пьесине Хутар таврашĕнчи ялсенче пĕр уйăх хушшинче тăхăр хут лартнă. Кели

---

* В. О. Копец. К. Н. Никифоров — рабфакра вĕрентнĕ преподавательсем.

сăввисене литературă каçĕсенче вуланă, юррисене çамрăксем вăйăсенче юрланă.

1926 çулта Г. Кузнецов рабфакран вĕренсе тухать те Ленинградри государствă университетне кайса кĕрет. Университетра вырăс литературипе чĕлхине, историпе архив ĕçне вĕренет. Çав вăхăтрах тата литературă организацийĕнче (ЛАПП чăваш секцийĕнче) ĕçлет, статьясем, фельетонсем, сăвăсем çырать. Хăйĕн тусĕсем патне Ленинградран янă çырăвĕсене вăл тăтăшах: «Чăваш пролетариллĕ литературипе çинчен шухăшламасăр пурăнаймастăп»; «...вĕренсе тухам-ха. Шупашкара пырам. Вара çур пурнăçа литературăшăн парнене кӳрĕп»; «Çырмасăр чăтаймастăп...» тесе пĕтерет. Харсăр журналист-коммунист хăйĕн вăй-халне нимле ĕçре те шеллесе тăман: вăл пур ĕçре те ырмиканми ĕçленĕ, литературă юхăмĕнчи тĕрлĕ сиенлĕ шухăшсене хирĕç, уйрăмах буржуалла национализма хирĕç паттăр кĕрешнĕ. Анчах... хастар литераторăн сывлăхĕ хавшаса пынă: Ленинградра вĕреннĕ чухне унăн ӳпкепе пыр туберкулĕзĕ пуçланса кайнă, юлашки курсра чухне чир-чĕр ураран ӳкернĕ. 1931 çул пуçламăшĕнче тăван ялне, ватă амăшĕ патне, таврăнса темиçе эрне вырăнпа выртнă хыççăн январĕн 23-мĕшĕнче Г. Кузнецовăн куçĕ ĕмĕрлĕхех хупăннă.

Григорий Кели — поэт, критик, историк. Унăн литературă ĕçĕнче теорипе критикă ыйтăвĕсем малти вырăнта тăраççĕ. Сăвăсем çырма çамрăклах тытăннă пулин те, Кели ытларах критикăллă статьясем çырнă. 1932 çулта Кели тусĕсемпе юлташĕсем унăн сăввисене пухса йĕркеленĕ те «Октябрь кĕввисем» ятпа сборник туса кăларнă. Унта вăтăр пилĕк сăвă. Унăн сăввисем тĕрлĕ темăсем çине пайланаççĕ: революци кĕввисем, хула сăн-сăпачĕ, çĕнелекен ял, çамрăксен ĕçĕ-хĕлĕ, сыхăлăх сăввисем, литературă ĕçĕ тата ыт. те. Вун пилĕк пин экземплярпа кăларнă кĕнеке темиçе уйăх хушшинче саланса пĕтнĕ. Паллă поэт тата критик хăйĕн сăввисенче те, статйисенче те литературăн обществăри вăйне, писателĕн, поэтăн çĕнĕ пурнăç тăвас ĕçри вырăнне, литературăн класлăхне, партилĕхне кăтартса пама тăрăшнă.

Анчах унăн статйисемпе сăввисем пирки халĕ мĕн калама пулать-ши?

* * *

Г. Кузнецов-Келин критикăри ĕçĕсемпе шухăшĕсем пирки каланă чухне унăн «Марксистла критикăн хăш-пĕр

ыйтăвĕсем» ятлă статйи çинче чарăнса тăмасăр иртме çук («Сунтал», 7-мĕшпе 8-мĕш номерсем», 1928 çул). Ку статьяра литературă критикин ыйтăвĕсене, унăн задачисемпе тĕллевĕсене марксизм-ленинизм енчен ăнлантарса пама тытăнса пăхни паларать. Хăйĕн статйине вăл В. И. Ленин сăмахĕсемпе пуçлать:

«Каждый художник, всякий, кто себя таковым считает, имеет право творить свободно, согласно своему идеалу, независимо ни от чего.

— Но, понятно, мы — коммунисты. Мы не должны стоять, сложа руки, и давать хаосу развиваться, куда хочешь. Мы должны вполне планомерно руководить этим процессом и формировать его результаты» (Ку сăмахсене В. И. Ленин хăй Клара Цеткинпа калаçнă чухне каланă. Г. Келий вĕсене чăвашла куçармасăрах илнĕ. Эпир те ку цитатăна çаплипех хăваратпăр)*.

Критик каланă тăрăх, «Çак темиçе сăмахпах Ленин пире пролетарисен литературинче марксистла критикăн проблемисене татса пама практикă методне кăтартса парать.» Ытларах та. Эпир тата çакна калама пултаратпăр: художник (писатель), кирек хăшĕ те, хăйĕн шухăшĕсене, ĕмĕчĕсемпе идеалĕсене кура, никама пăхăнмасăр; ирĕклĕн ĕçлеме пултарать, ĕçлемелле те, анчах пирĕн ĕмĕтсемпе идеалсем — коммунизм тăвасси; хăшĕ-пĕрисен, йывăрлăхсенчен хăраса ӳкекен уйрăм çынсен, коммунистла идеалсене ăнланман е ĕненмен çынсен, шухăшĕсемпе ĕçĕсем аяккалла пăрăнса, пĕтĕм халăх такăрлатакан çулпа мар, уйрăм сукмакпа пыраççĕ пулсан,— пирĕн мĕн тумалла-ха? Алăсене усса лармалла-ши е мĕн те пулин тумалла-ши? В. И. Ленин çавăн пек ларма хушмасть, вăл йĕркесĕрлĕхе (хаоса) ăçталла килчĕ, çавăнталла аталанма памалла мар, тет. В. И. Ленин искусствăна, литературăна ертсе пыма, çул кăтартса пама хушать. Вăл малта пыракан шухăша пулăшмалли çинчен, каялла туртакан кивĕ шухăшсене хирĕç кĕрешмелли çинчен калать. Пирĕн совет государстви, Коммунистсен партийĕ искусствăпа литературăна аталантарас ĕçре ленинизм принципĕсене тĕпе хурса ĕçлеççĕ. Марксистла литературă критики те хăйĕн ĕçĕнче çав принципсене тĕпе хурса ĕçлет. Марксистла критик «апла тусан та, капла тусан та юрать», «кунталла кайсан та, унталла кайсан та юрать» темест,

---

* Ăна халĕ çак кĕнекере тупма пулать: «В. И. Ленин о литературе и искусстве». Госполитиздат, 1957, 582—583.

мĕн тумаллине, ăçталла каймаллине халăх интересĕ енчен, парти тĕллевĕ енчен, марксизм-ленинизм вĕрентĕвне тĕпе хурса, уççăнах кăтартса парать.

Малалла Кели Коммунистсен партийĕн Тĕп Комитечĕ тĕрлĕ вăхăтра литературăпа искусствăна мĕнле аталантарасси çинчен йышăннă резолюцисене асăнать, вĕсен шухăшĕсене кĕскен каласа парать. «Парти калана пек тăвас пулсан,— тет вăл,— пирĕн чăваш литературинче те марксистла критикăн шкулĕ пулмалла».

Кели калана тăрăх, критик ĕçĕ çăмăл ĕç мар. Критик ĕçне пĕлменнисем марксистла критикăна киревсĕр шухăшсемпе çӳпĕлеççĕ («вносят всякий хлам в марксистский храм»), тет. Критикăн марксистла диалектикăн чăнлăхĕсене, марксизм-ленинизм принципĕсене пĕлмелле.

Кели, критикăн пултарулăхĕ çинчен калана май, В. Г. Белинский сăмахĕсене илсе кăтартать (вĕсене Кели хăй куçарнă; мĕнле куçарни вулакансемшĕн хăш-пĕр енчен интереслĕ; çавăнпа та эпир вĕсене, пĕр енчен, чăваш критикĕн шухăш-кăмăлне палăртас тесе, тепĕр енчен, мĕнле куçарнине кăтартас тесе, ним улăштармасăр çырса паратпăр):

«Критик пултарулăхĕ (таланчĕ) сайра, унăн çулĕ шăвăнчăклă, хăрушă». «...Ку талантра миçе услови пĕрлешеççĕ-ши?— искусствăна кăварлăн юратни, тараннăн кăмăллани, тĕплĕн, тĕрлĕ енчен вĕренни, тата пур енчен те пăхакан ăс; çавсем (условисем)— тӳрĕлĕхĕн çулпуçĕ, хăйĕн кăмăлĕн ирĕкне парăнмасăр пултарни; питĕ пысăк унăн хăйĕн çине илекен ĕçĕ!»*

Çак статьярах Кели эстетикăн хăш-пĕр ыйтăвĕсем çинчен те çырать. Анчах мĕнлерех-ха унăн эстетика тĕлĕшĕнчи шухăшĕсем? Вăл калана тăрăх, эстетика науки илемлĕх çинчен вĕрентет. Кашни обществăлла эпоха хăйĕн пурнăçĕнчи илемлĕхе искусствăра кăтартать. Илемлĕх шутне формăри техника, сăнлăх майĕсем, виçе, ритм тата ыт. те кĕреççĕ, содержанипе килĕшсе пулаççĕ. Общества пурнăçĕ

* Ку цитатăна В. Г. Белинскин «О критике и литературных мнениях «Московского наблюдателя» ятлă статйинчен илнĕ. Белинский унта çакăн пек çырнă: «...талант критика редок, путь его скользок и опасен... сколько условий сходится в этом таланте: и глубокое чувство, и пламенная любовь к искусству, и строгое многостороннее изучение и объективность ума, которая есть источник беспристрастия, способность не поддаваться увлечению; ...какова высокость применяемой им на себя обязанности!» (В. Г. Белинский. Сборник сочинений в трех томах, т. I, ГИХЛ, 1948, стр. 225).

улшăннă май, искусствă содержанийĕ, унпа пĕрле искусствă форми улшăнать. Пĕр-пĕр эпохăри обществăн, класăн илемлĕх тутине произведени форминчен, унăн содержанийĕнчен уйрăм пĕлме çук. Произведенири илемлĕх çинчен унăн содержанийĕнчен уйрăм калаçма та юрамасть, мĕншĕн тесен содержанипе формă пĕр-пĕринпе ним уйрăлми тачă çыхăнса тăраççĕ.

Малалла критик çакна палăртать: кашни вăхăтăн хăйĕн илемлĕх тути пур. «Литературă пурнăç сăнне çеç кăтартса памасть, вăл пурнăç тума та вĕрентет», тет вăл. Ку шухăшсене калана чухне Кели ытларах Г. В. Плеханов çырнисемпе усă курать, унăн кĕнекисенчен цитатăсем илсе кăтартать.

Объективлă критикă, субъективлă критикă, формалистла критикă мĕне пĕлтернине каласа панă хыççăн Кели искусствă клас кĕрешĕвĕпе мĕнле çыхăнса тăни çинчен калакан ыйтăва хускатать.

Мĕнле те пулин клас ĕçне туман писатель çук, тет вăл. Класлă обществăра вăл яланах пĕр-пĕр клас позицинче тăрать. Кун çинчен пире литературă историйĕ, литературă тавра, литературăра тата литературăшăн пулса пыракан клас кĕрешĕвĕ калать. Писатель хăй класĕн интересĕсене сыхлать пулсан, ытти классен интересĕсемпе килĕшме пултараймасть. Вăл хăйĕн класлă ĕçне творчествă урлă тăвать, творчествăллă ĕçпе классен кулленхи кĕрешĕвне хутшăнать, унта хăйĕн социаллă позицине кăтартать.

Çапла вара, литературă, поэзи те çавах, классен кĕрешĕвĕнче хăватлă хĕç-пăшал пулса тăрать. Литературă задачи — класлă задачă. Вăл — пĕр-пĕр класăн е классен вăй-халне çĕклесси, тепĕр класăн е классен вăй-халне путарасси. Урăхларах каласан, клас мĕнле задачăсене лартать, писатель те хăйĕн творчествинче çав задачăсенех лартать. Урăхла пулма та пултараймасть. Мĕншĕн тесен класлă обществăсен законĕ çавăн пек. Писательсем çак закона пăхăнаççĕ, хăшĕсем ăна пĕлсех пăхăнаççĕ, теприсем — пĕлмесĕр.

Ĕçпе пурăнакан классен интересне хӳтĕлекен поэтăн пултарулăхĕ халăхăн йышлă массисен шухăш-кăмăлне палăртать. Çапла вара, çавăн пек поэтăн шухăш-кăмăлĕпе халăх шухăш-кăмăлĕ пĕрлешсе каять.

Искусствă,— тет Кели,— классен кĕрешĕвĕн тĕкĕрĕ. Унăн ырлăхĕ çине критик хăйĕн класĕн кăмăлĕпе пăхмалла, класăн кăмăлĕпе хаклямалла.

Пĕр-пĕр клас, влаçа аллине илсен, «искусства пурнăç-шăн» тет, сцена çинчен анакан клас «искусства искусства-шăн» тет. «Искусства хăйшĕн кăна» тени тĕрĕс мар, кирек хăш искусствăн та тĕллевĕ пур.

Искусства пурнăçа кăтартать. Критикăн унăн ырлăх-шырлăхне класлă идеологи енчен пăхса критиклемелле. «Искусства,— тет Кели,— пурнăçа ăнланма пулăшать. Пролетарисен искусстви çак задачăна ас тăвать: искусства урлă пролетарисен, хресченсен, вĕсен социализм тумалли ĕçĕшĕн, идеологийĕ те, психологийĕ те социализмлă шухă-ша ăнланса ун енне аванмалла».

В. Лебедев-Полянский критикăн шухăшĕпе килĕшсе, критик-марксист çинчен Кели çапла калать: вăл произведение хакласа çеç те памалла мар, вăл хăйĕн класĕшĕн, хă-йĕн искусствишĕн кĕрешет, кĕрешмелле те. Критик çакăн пек ĕçлет, чи малтан писателĕн произведенийĕнчи тĕп шу-хăша, кăмăлне, темине тупать, унтан кашни литературăллă типăн (сын сăнĕн) обществăри вырăнне кăтартать; вĕсен кăмăлĕсене вĕтетсе пăхать; кайран писателĕн «формăллă вырăнĕсене», сăнлăхĕсене, сăмах çаврăнăшĕсене критик-лет, юлашкинчен, формăпа содержани мĕнле — аван-и е усал-и — килĕшсе тăнине хаклать. Произведенире классен, обществăри ушкăнсен кăмăлĕ пурнăçри пекех палăрса тă-малла. Критик вĕсен идеологине, шухăш-кăмăлне, психоло-гине тупмалла.

Çакă пуриншĕн те паллă: марксистла эстетика юлашки 20—30 çул хушшинче пысăк утăмсем турĕ. Кели вĕреннĕ çулсенче эстетика ыйтăвĕсене нумай вĕреннĕ критиксем те хытă пăтраштарнă, йăнăшсем тунă.

Марксистла эстетика иртнĕ саманана марксизм енчен пăхса ăнлантарса панĕ. Этем çутçанталăка, тулашри тĕнче-не хăйне кирлĕ пек улăштарса çĕнетет, чăн пурнăç (действительность) законĕсене вĕренсе пĕлсе алла илет. «Çак-на пула,— тет Маркс,— этем материе илемлĕх законĕсем тăрăх та йĕркелет» («В силу этого человек формирует материю также и по законам красоты»*).

Искусства çăл куçĕ — ĕç, пурнăç. Искусства çынсен ĕç-не пула пуçланса кайнă, материаллă пурлăхсем тăвакан ĕçе пула аталаннă. Этем хăйĕн кашни ĕçне илемлĕх законĕсем тăрăх тăвать, ăна вăл хăйĕн ăсĕпе таланчĕ пулăшнипе

---

* «К. Маркс и Ф. Энгельс об искусстве», т. I, М. «Искусство». 1957 ç., 158 стр.

илемлетет. Çыннăн илемлĕх, эстетикă туйăмĕсем тасти аякри, пĕлĕт çинчи вăйсенчен килмеççĕ, пурнăçри, çĕр çинчи вăйран килеççĕ. Çын пултарулăхĕ «амăш кăвапипе» мар, пурнăç урапипе çыхăнса тăрать, ăна вăй-хал паракани — общество пурнăçĕ, халăх интересĕ, ĕмĕчĕ, идеалĕ. Илемлĕх туйăмĕ обществăри условисене, обществăлла кирлĕхсене пула йĕркеленет, вăй илет, аталанса малалла каять. Илемлĕх çутçанталăк туса хунă сыхăнусем çинче мар, чи малтан обществăра истори тăршшĕнче пулса тăнă çыхăнусем çинче тытăнса тăрать. Çынсен ăс-пуçĕнче, обществăн ăс-тăнĕнче, обществăри шухăшĕсем, туртăмĕсем палăраççĕ.

Марксистла-ленинла эстетикă мĕне пĕлтернине çакăн пекрех палăртма пулать: марксистла-ленинла эстетикă вăл — этем чăн пурнăçа илемлĕх урлă ăнланса илмелли майсен тĕп законĕсем синчен вĕрентекен наукă.

Искусствă илемлĕ сăнарсем тăвать. Вĕсем обществă пурнăçĕнче, халăх ĕçĕнче, классен, партисен кĕрешĕвĕнче питех те пысăк вырăн йышăнса тăраççĕ. Илемлĕ сăнарсем çынсене обществăлла идеалсене уяма, вĕсемшĕн тăма, вĕсене пурнăçа кĕртессишĕн тăрăшма, вĕсемшĕн кĕрешме хавхалантараççĕ.

Г. Кели статйисене илес пулсан, эпир вĕсенче эстетикă ыйтăвĕсене лартма тытăнса пăхнине çес куратпăр. Тĕрĕссипе каласан, чăваш литературинче эстетикă ыйтăвĕсене Кели ĕçленĕ вăхăтра та, кайрантарахпа та сарлака лартса, тĕплĕ çутатса пани пулман. Халĕ те-ха вĕсене чăваш литератури пуянлăхне шута илсе, чăваш ĕç çынчисем пĕлекен произведенисене тĕпчесе çутатса пани çук. Чăваш критикĕ эстетикă ыйтăвĕсене тĕпчес, ăнлантарса парас тет пулсан, тăван литературăн тĕслĕхĕсемпе усă курмасăр иртме пултараймасть.

Г. Кели чăваш литературине аван пĕлнĕ. Писательсен произведенийĕсене тишкернĕ чухне вăл авторитетсем çине пăхса мар, тĕрĕслĕх çине пăхса ĕçленĕ.

Ку тĕлĕшпе пĕр-ик тĕслĕх илсе кăтартма пулать. 1929 çулта В. И. Красновăн «Шуррисемпе çапăçни» ятлă кĕнеки Мускавра пичетленсе тухсан, ун çинчен пĕри пĕр майлă, тепри тепĕр майлă çырма тытăннă: туссем — тусла, «тăшмансем»—«тăшманла». Ку вăл уйрăмах А. Миллипе Н. Шупуççынни статйисенче сисĕннĕ. Пĕр критикĕ (Милли) асăннă кĕнекене пĕлĕте çити мухтанă, тепĕр критикĕ (Шупуççынни) çĕр айне персе чикес пекех хурланă. Çакна кура Кели «Шуррисемпе çапăçни» тавра «çапăçни» ятлă

статья çырать. Унта вăл, критиксен авторитетне, вĕсен ĕçри выранне пăхмасăр-тумасăр, çакăн пек калать: «Объективлă» марксистла критика паратпăр текен Шупуççыннипе Милли иккĕшĕ те чăн марксистла критикăн икĕ енне кайса тăраççĕ: пĕри, Шупуççынни, произведение хурласшăн тăрăшнипе «Шуррисемпе çапăçнине» çитĕнӳ енчен тишкермесĕрех иртни; тепри, Милли, произведени ырлăхĕпе киленнипе пĕр çитменлĕх çинчен те асăнмасть. Кун пек критиксем марксистла объективизмран пăрăнарах тăраççĕ».

Критика объективлă критикă пулмалла. Кели ку шухăша хăйĕн темиçе статйинче палăртать. Объективлă критикă вăл «тăванлăха» е «туслăха» пăхăнмасăр хаклать, уншăн чи вăйли, чи хакли — вăл тĕрĕслĕх. Тĕрĕслĕхрен пăрăнакан критикă субъективизм лачакине кĕрсе ӳкет.

Çак статьярах Кели «Шуррисемпе çапăçни» пирки кĕске пĕтĕмлетӳсем тăвать. Ку произведени «чăвашăн пролетарилле произведенийĕсем хушшинче пысăк выранта тăрать. Пролетарилле идеологи енчен, пуçламăшĕнчен вĕçне çитиччченех, пĕтĕмпех тĕпленсе çитеймен, анчах кунта пысăк йăнăшсемех çук». «Авторăн чи хисеплĕ çитĕнĕвĕ — граждан вăрçине тĕрĕс, истори вăхăчĕпе, ун вăхăтĕнчи классен кăмăлĕпе, пурнăçĕпе çыхăнтарса сăнласа пани. Автор произведенири геройсене (хушăран хăйне те) вĕсен класлă выранĕпе килĕшсе, пытармасăр кăтартнă, хăйне ирĕксĕрлемесĕр, уçă кăмăлпа çырнă»,— тет.

«Шуррисемпе çапăçни» В. И. Красновăн — малтанхи произведенийĕ. Паллах, писателĕн малтанхи произведенийĕнче çеç мар, кайранхи произведенийĕнче те çитменлĕхсем пулма пултараççĕ. Критиксен ĕçĕ — произведение объективлă хакласси, произведенийĕн паха енĕсене те, çитменлĕхĕсене те тĕрĕс палăртасси.

Тепĕр тĕслĕх. С. Ялавин критик П. Хусанкай пултарулăхĕ çинчен «Сунтал» журналта статья пичетлесен, Кели, унпа килĕшмесĕр, «Ялавин критик тĕкĕрĕнчи Хусанкай» ятлă статья çырать. Критик çак статьяра Ялавина поэтăн пултарулăхне тĕрĕс хакламаншăн критиклет.

«Критикăна,— тет Кели,— хăш-пĕр сулăхакансем пирĕн пролетари умĕнче тăракан критикă задачисене пăхăнасшăн мар. «Кам мĕнле критиклес тет, çапла критиклеме пултарать. Мана вĕрентмелли çук, эп нумай вуланă»,— тет Ялавин. Эпир вуланине пит хавас. Хăш-пĕр чух нумай вулани сахала ăнланма та кансĕрлет. Литературăра эпир мĕн çинчен çырас тетĕн, çавăн çинчен çырма чармастпăр... Проле-

тари патшалăхĕнче критикă марксистла пулмалла, вăл пролетарин литературăри хĕç-пăшалĕ. Пирĕн критикă наукăллă, объективлă. Кун пек критикă Ялавинран аякра, ун критики йĕркесĕр, хăйне манерлĕ супăнь хăмпи: апла та, капла та — нимĕн те ăнланаймăн. «Йĕре-кула Микула» тенĕ пек: пĕр çыннах çĕр тĕслĕ хак парать».

Шел пулин те, С. Ялавин кун пек çитменлĕхсенчен йăлтах хăтăлса çитнĕ теме çук. Вăл тепĕр чухне писателĕн произведенине «тишкернĕ», «критикленĕ» çĕртен,— те сиссех, те сисмесĕрех,— урăх «çуна» çине иксе ларать те писателе хăйне тулама тытăнать. 1960 çулта вăл, сăмахран, А. Яндаш писатель калавĕсем пирки çырнă чухне çавăн пек турĕ: Яндаш писателĕн калавĕсене юлташла тишкĕрес вырăнне Никифоров (Яндаш) директорăн ĕçне «критиклерĕ»... Паллах, кун пек критикăпа чăн-чăн критикă хушшинчи уйрăмлăх пĕлĕтпе çĕр хушшинчи уйрăмлăх пекех. Критик ĕçĕ — йывăр ĕç, анчах тем пек йывăр пулсан та, критикăн çынна туласа, автора тӳпкесе канма юрамасть.

Г. Кели хăйĕн статйинче Хусанкай сăввисемпе поэмисене те хытă критиклет, хăш-пĕр çĕрте ытлашши хытă ятлать, анчах унăн Хусанкай пултарулăхĕ пирки иккĕленесси-тăвасси пулман.

«Хусанкай сăввисем тӳлек, анчах çивĕч,— тет критик.— Вĕсенче пайтах сăнлă вырăнсем, илемлĕ сăмах çаврăнăшĕсем, танлаштарăвĕсем тĕрлĕ висе. Хусанкайран илемлĕ майсене вĕренмелле. Çак вăхăтри Хусанкай ерипен хăйĕн формине туса пырать. Ун стилĕ пуласси паллă. Хусанкай умĕнче сарлака поэзи çулĕ».

Тĕрĕс çырнă критик: Хусанкай «сарлака поэзи çулне» тупрĕ, чăваш литературинче паллă поэтсенчен пĕри пулса тăчĕ; унăн пултарулăхĕ вăйлă та пуян, таланчĕ — хăйне евĕр талант, унăн хăйĕн стилĕ, чĕлхи пур. Хусанкай тесен, эпир чăваш поэзийĕн малти ретне пăхатпăр. Анчах эпир культ тăвакансем мар: Хусанкайпа пĕрле чăваш поэзийĕн пысăк отрячĕ пынине те куратпăр. Эпир пултаруллă ушкăна, унăн вăй-халне, коллективлă ĕçне ĕненетпĕр, мĕншĕн тесен, литературă тĕлĕшпе калас пулсан, пĕр çын çырать кĕнеке пулать, темиçе çын çырать литературă пулать. Ку çеç те мар-ха: литературă — халăх ĕçĕ, вăл пин-пин майпа халăх ĕçĕпе, ĕмĕт-шухăшĕпе çыхăнса тăрать.

Г. Кузнецов (Кели) сăвă виçисене, уйрăмах чăваш сăввин виçисене, тĕпчесе темиçе статья çырнă. Кунта унăн çак статйисене асăнма пулать: «Поэзи формисем çинчен»

(икӗ пайлӑ тӑвата статья, 1927, 1928 ҫулсенче ҫырнӑ), «Сӑвӑсене мӗнле ҫырмалла» (1929 ҫ.), «Силлабикӑпа тоникӑ ҫинчен тавлашни мӗнпе сӳтӗлсе тухрӗ» (ку статья критик вилсен пичетленнӗ).

Ҫак статьясенче критик чӑваш поэзийӗнче силлабикӑ системипе тоникӑ системи мӗнле аталаннине сӑнаса тӗпчет.

Чӑваш сӑввинчи тоникӑлла виҫе ҫинчен, унӑн пулас кун-ҫулӗ ҫинчен хӑй вӑхӑтӗнче Ҫеҫпӗл Мишши ҫырнине пурте пӗлеҫҫӗ. Ку ыйтӑва Кели те лайӑх тӗпчесе пӗлнӗ.

Кели хӑйӗн критикӑлла статйисенче тоникӑ системи чӑваш сӑввишӗн ют маррине нумай тӗслӗхсемпе кӑтартса панӑ.

Силлабикӑ системи чӑваш сӑввишӗн «улшӑнми, пӗтми системӑ», текенсене хирӗҫлесе, Кели ҫакӑн пек ҫырнӑ:

«Мӗншӗн эпир тоникӑ техники ҫинчен маларах хурса калаҫма пуҫларӑмӑр?

1. Мӗншӗн тесен ку тоникӑ чӑваш чӗлхин уйрӑмлӑхӗпе, ун законӗпе пит аван килӗшет — ӑна пурнӑҫа кӗртме тӑрӑшмалла. (Вӑл кӗчӗ ӗнтӗ — истори хушшинчен иртмелли пулмасӗ.)

2. Тоникӑ системи пур сӑвӑ техникисенчен те ҫаврӑнӑҫлӑ, пурнӑҫӑн тӗрлӗ тапписене кӑтартма пултаракан техникӑ. Унпа пирӗн революциллӗ, социализмла пурнӑҫпа стройкӑна кӑтартнӑ ҫӗрте усӑ курмалла».

Хӑш-пӗр литераторсем, Келие хирӗҫлесе: «Тоникӑ системине пурнӑҫа кӗртме «нацин», унӑн чӗлхин улшӑнмалла», тенӗ. 1930 ҫулта Кели, «тоникӑ системи» ыйтӑвне хускатса, ҫапла ҫырнӑ: «Наци улшӑннӑ-и? — Улшӑннӑ. Революци пулни наци улшӑннине пӗлтерет. Чӗлхе улшӑнни пуриншӗн те паллӑ. Чӗлхе улшӑннӑ: «тоникӑ» чӑваш чӗлхипе чӑнах та килӗшет, ун законӗ ҫавнашкал».

Ку шухӑш — тӗрӗс шухӑш. Анчах чӑваш сӑввисен виҫисем ҫинчен ҫырнӑ статьясенче Кели хӑш-пӗр ыйтусене тӗрӗс мар ӑнлантарать. Сӑмахран, сӑвӑ техникине, уйрӑмах силлабикӑ виҫине, класла категори тесе ӑнлантарма пӑхать.

«Силлабикӑпа тоникӑ ҫинчен тавлашни мӗнпе сӳтӗлсе тухрӗ» ятлӑ статьяра Кели ҫакӑн пек ҫырнӑ: «Нарспи» — вак буржуаллӑ поэмӑ. Ун авторӗ — вак буржуаллӑ чӑваш хресчен поэчӗ — вак буржуалла массӑра ҫуралнӑ юрӑ виҫине хӑйӗн поэзине куҫарнӑ, мӗншӗн тесен ку виҫе чӑваш халӑхӗн вак буржуаллӑ кӑмӑлне кайнӑ».

Кунта тӗрӗс марри ҫакӑ: 1. «Нарспи» поэмӑна йӑнӑш ҫак панӑ; 2. Сӑвӑ виҫи пирки тӗрӗс ҫырман. Совет литера-

тури иртнĕ вăхăтри литературăсен пуянлăхне, çав шутра сăвă виçисене те, сирсе пăрахмасть, критикăлла тишкерсе илет. Александр Фадеев калашле, Ш. Бодлер е П. Верлен декадентсен поэзийĕнче те формă тĕлĕшпе, ăсталăх енĕпе вĕренмелли пур.

Кели статйисенче пахи тата çакă: вăл хăйĕн статйисенче буржуалла националистсене хытă критиклет. Сăмахран, 1930 çулта Н. Г. Гарин-Михайловскин «Зора» («Сар пике») ятлă произведенине Д. Юман чăвашла куçарса, ăна валли умсăмах çырса кăларсан, Г. Кузнецов çийĕнчех критикăлла статья çырать, унта Юманăн националистла шухăшĕсене тăрă шыв çине кăларать.

Гарин-Михайловский произведенийĕнчи Гарри капиталист çинчен Юман: «Вăл пирĕн тĕттĕм çĕршыва культурăпа техникă тапратма, промышленноç акса ÿстерме шухăш тытнă», тесе çырнă. Çакна критиклесе, Кели: «Куратăр-и, хĕвеланăçри капиталист чăваш çĕрне культурă акма килнĕ. Ма пăлханаççĕ-ха пархатарсăр чăваш ĕç çыннисем, тав тăвас вырăнне вĕсем капиталиста чиксе пăрахаççĕ».

Юман хăйĕн статйи вĕçĕнче, чăваш çамрăкĕсене чĕнсе, çапла çырнă: «Чăваш çамрăкĕсем, Сарачăмсем, хăвăртрах Гаррисем пек пулса тăрăр. Сар пикене вăрманта юр çинче шăнса вилесси вырăнне куç пăван керменсем тăвăр. Йĕрĕхе, ийе, юмçă сăнĕсене сирсе пăрахса, Апполон, Венера кĕлеткисемпе пурнăçа илемлетĕр».

Юманăн хитре сăмахĕсене Кели çапла сирсе пăрахать: «Эх, мĕн чухлĕ кунта, вырăссенни пек, Юман калашле, «çунатлă, чечеклĕ поэзи», анчах марксизмăн диалектикăлла ăнланăвĕ пĕр тĕпчĕм те çук. Ăçтан Сарачăмсем (калăпăр, çамрăк чăваш ĕç çыннисем) Гаррисем пулса тăма пултарĕç? Гарри пек капиталист е буржуа интеллигенчĕ, инженер пулма чĕнни абсурд вĕт вăл! Е тата: Апполонпа Венерăсен ĕмĕрĕ тахçанах иртнĕ.

Социализмла обществăн этемĕ пачах урăхла пулмаллине те пĕлмест-и Юман? Кашни Венера хăйĕн вăхăтĕнче çеç илемлĕ, кашни Апполон хăйĕн вăхăтĕнче çеç вăйлă».

Илемлĕх пирки калани тĕрĕсех мар, анчах çак тĕслĕхсем буржуалла националиста Кели мĕн тери хаяр критикленине питĕ аван кăтартса параççĕ. Юманăн шухăшĕсене, ăнлантарăвĕсене Кели: вĕсем «пĕтĕмпех буржуалла демократ шухăшĕ, пĕтĕмпех «либерал-марксист» Струве шухăшĕ», «пĕтĕмпех романтикла, идеалистла ăнлантару», тесе хаклать.

Чăваш пролетари писателĕсен IV съезчĕн ĕçĕсем çинчен çырнă статьяра (1930) Кели каллех Юмана критиклет, вăл,—«национал-шовинистла шухăшсене хавхалантараканĕ», тет. Кели шухăшĕпе, «хальхи пурнăçа кăмăлламан çынсем ирĕксĕрех каялла çавранса пăхаççĕ. Çак çынсем «чăваш-пăлхар» тенĕ вăхăтра хавассăн аваллăх мĕлкине кайса çӳрерĕç. Иртнĕ пурнăç «геройĕсем» иртнĕ пурнăçа мухтама хатĕр.

«Çавнашкалах, тет Кели, хамăр «чăвашлăхпа» мухтанни те сиенлĕ. Ку шовинистла шухăш чăваш ĕç халăхне ытти ĕç халăхсемпе хирĕçтерет, вĕсене интернационаллă пролетари задачисенчен пăрăнтарать. Национал-шовинистла шухăшсемшĕн пирĕн литературăра малашне вырăн çук. Кун пек литераторсем совет тăшманĕсен лагерĕнче çеç пулма пултараççĕ, вĕсен литератури реакциллĕ».

Çирĕммĕшпе вăтăрмĕш çулсенче литературăра пулса пынă кĕрешӳ парти çул-йĕрĕ çĕнтернипе, социализмла реализм меслечĕ çирĕпленнипе вĕçленчĕ. Çав кĕрешĕве критик-коммунистсем активлă хутшăннă, унта Кели те, хастар литератор, партин кăвар чĕреллĕ салтакĕ пулса хутшăннă.

Анчах Кели çырнисенче пурте тĕрĕс тени йăнăш пулнă пулĕччĕ. Унăн статйисене вăхăтне кура хаклас пулать.

Г. Кузнецов (Кели) çырнă критикăлла статьясенчи çитменлĕхсемпе йăнăш шухăшсем мĕнрен килнине ăнланса илме йывăрах мар. Критик Ленинградри университетра вĕреннĕ чухне (1926—1930 çç.) унта ĕçленĕ профессорсемпе преподавательсем хушшинче вульгарлă социологистсемпе формалистсем пулнă. Вĕсен юрăхсăр «теорийĕсем» студентсен ăс-пуçне чылаях çӳпĕленĕ. Григорий Келие те çав социологистла тӳнтерлĕхсен витĕмĕ пырса тивнĕ. Вăл хăйĕн статйисенче час-часах В. Фриче профессор çырнисене асăнать, хăйĕн шухăшĕсене «çирĕплетме» унăн кĕнекисенчен цитатăсем илет.

«Марксистла критикăн хăш-пĕр ыйтăвĕсем» ятлă статйинче Кели марксизм никĕсне хывакансем тесе Маркспа Энгельса тата Ленина асăннисĕр пуçне Плеханова, Меринга, Каутские асăнать, Фриче профессора «социологилле методшăн» мухтать. Çав вăхăтрах тата хăй вĕреннĕ университетри кашни профессора тенĕ пек пысăк авторитет вырăнне хурать, вĕсен сăмахĕсемпе тишкермесĕр усă курать.

«Таса искусствă», «искусствă искусствăшăн» текен «теорие» критикленĕ май, Кели «сцена çинчен анакан помещиксен» теоретикĕсем шутне Писарева, Чернышевские,

Добролюбова, Белинские кӗртет. В. И. Ленин хайӗн «Мӗн тумалла?» ятлӑ кӗнекинче Белинские, Чернышевские вырӑс социал-демократийӗ пуҫланас вӑхӑтра ӗҫленӗ, социал-демократи пуҫланса каймалли никӗсе хатӗрленӗ ҫынсен шутне кӗртнине аса илсен,— Кели йӑнӑшӗ уҫҫӑнах курӑнать.

Кели РАПП «теоретикӗсен» хӑш-пӗр йӑнӑш шухӑшӗсене чӑваш литературине илсе кӗртнӗ, чӑваш писателӗсене «диалектикӑлла методпа» ҫырма сӗннӗ. Анчах ку йӑнӑш ун чухне чӑваш литературинче ҫеҫ мар, вырӑс литературинче те пулнӑ. Рапповецсем, литературӑри «юхӑмсем» хыҫҫӑн чупса, тӗрлӗ «измсем» шутласа кӑларса, калӑпӑр, А. Фадеева «диалектикӑлла материализм» представителӗ тенӗ, Ф. Панферова «эмпиризм» представителӗ тенӗ, ҫапла вара, писательсене тӗрлӗ ушкӑнсем ҫине уйӑрса, пӗр-пӗрне хирӗҫ тӑратма тӑрӑшнӑ.

Ку йӑнӑшсене Коммунистсен партийӗн Тӗп Комитечӗ 1932 ҫулхи апрелӗн 23-мӗшӗнче литературӑпа художествӑ организацийӗсене урӑхлатса ҫӗнетесси ҫинчен, РАППа пӗтерсе совет писателӗсен пӗрлӗхлӗ Союзне тӑвасси ҫинчен йышӑннӑ постановленипе тӳрлетрӗ. Ҫак постановление пурнӑҫа кӗртсе пынипе писательсем хушшинчи тӗрлӗ ушкӑнсем пӗтрӗҫ, писательсем ҫав ушкӑнсенче «питӗрӗнсе ларасси», пӗр-пӗрипе харкашасси те пӗтрӗ, писательсем ытларах халӑхпа ҫыхӑнса, пӗр-пӗрне ӗҫре пулӑшса ӗҫлеме тытӑнчӗҫ. Пурнӑҫ хӑех писательсене пултарулӑх ӗҫӗнчи меслете — творчествӑ методне — кӑтартса парӗ. Вӑл — социализмла реализм меслечӗ. Социализмла реализм историйӗ совет литературин историйӗпе. М. Горький ӗҫӗ-хӗлӗпе. В. Маяковский, А. Фадеев, Ф. Гладков тата ытти нумай писательсен ӗҫӗпе сыхӑнса тӑрать.

Г. Кузнецов (Кели) пурӑннӑ пулсан, хӑйӗн йӑнӑшӗсене хӑех тӳрлетнӗ пулӗччӗ, ҫӗнӗ те паха статьясем ҫырнӑ пулӗччӗ. Унӑн критик ӗҫне тӑвас талант, литературӑна тӗпчес ӑсталӑх пысӑк пулнӑ, вӑл яланах тӑван литературӑ ҫинчен шухӑшланӑ, ӑна аталантарас тесе, пӗтӗм вӑй-халне парса ӗҫленӗ.

* * *

Г. Кузнецов (Кели) сӑввисенче те литературӑпа искусствӑн, уйрӑмах поэзин, обществӑри вырӑнӗ ҫинчен, вӗсен класлӑхӗ ҫинчен каланӑ шухӑшсем тӗл пулаҫҫӗ.

Кăвар чĕреллĕ поэт-коммунист Çеçпĕл Мишши, хăйĕн ĕмĕт-шухăшĕ, сасси-юрри халăхпа çыхăнса тăнине туйса, çапла çырнă:

Кăвар чĕрем — пин сын чĕри.
Эп пĕр çын мар — эп хам пин-пин,
Эп пин чăваш, эп пин-пин çын!
Чĕрем юрри — пин çын юрри!

Кели шухăшĕ те çавăн пекех:

Кашни хăй ĕçĕпе, анчах пĕр ĕç çинчех.
Çĕн пурнăçшăн мĕльюнлă çар ĕçлет.
Çакă аслă ĕç çинчи пин халăх сассинче
Ман хамăн пурăнăç сасси те илтĕнет.

Эпир кунта Çеçпĕл Мишшипе Кели шухăшĕ пĕр пеккине куратпăр. Çеçпĕл Мишши «пин-пин çын» тени — вăл «мильюнлă çар» тениех: Çеçпĕл хăйĕн чĕре юррине «пин çын юрри» тет, Кели «пин халăх сассинче» хăйĕн «пурăнăç сассине» илтет. Çак йĕркесенче икĕ поэтăн класлăхĕпе халăхлăхĕ палăрать, вĕсен класлăхĕ халăхпа пĕрлешсе тăни курăнать. Çапах та, эпир ку поэтсене пĕр «хăма» çине тăратасшăн мар. Паллах, Çеçпĕлпе Кели иккĕшĕ те революцилле поэтсем, коммунистсем, анчах вĕсем пултарулăх енĕпе пĕр пек мар. Çеçпĕл — чăваш поэзийĕн классикĕ; Кели — унăн ученикĕсенчен пĕри. Хăш чухне ученик‹сем учительсенчен иртсе каяççĕ. Анчах Келие поэзире хăйĕн учителĕнчен иртме мар, унăн çӳллĕшне çĕкленме те пӳрмен. Çапах та вăл Çеçпĕл пек пулма тăрăшнă. Çеçпĕл Мишши çамрăксене (çав шутра çамрăк поэтсене те) малалла чĕнсе:

Хастарлă, хыт утăмлă пулăр,
Сĕршывăн хастар ачисем,
Вут кайăклăн вĕçĕр, ан юлăр,
Ан юлăр кун-çул уттинчен,—

тенĕ. Кели, çакна ăнланса, акă мĕнле йĕркесем çырнă:

Малаллах пуç усмасăр юхарччĕ.
Эпĕ хамшăн сехреп — ман пăлхав
кимминчен
Хавшакпа чĕлĕнсе юлас марччĕ!

Тепĕр сăвăра вăл поэтăн пурнăçпа кĕрешӳри вырăнне çакăн пек палăртать:

Поэт — вăл тупă. Чĕринчен
Юнне сăхса вăл авăрланчĕ;
Вăл пенипе те çĕр çинче
Хĕн-хур каски пайтах арканчĕ.

Çапла, «поэт — вăл тупă». Анчах Кели мĕнле поэт, мĕнле «тупă» пулнă-ха? Ку ыйтăва татса парас тесен, унăн сăввисене кăшт та пулин пăхса тухас пулать.

Кели пултарулăхĕ çинчен çырни çук. Критиксем ун çинчен çырман. Ку ĕнтĕ, паллах, пирĕн критика пурнăçран юлса пынине кăтартать; вĕсем Ивановпа Çеçпĕл пултарулăхĕ çинчен ытларах çыраççĕ, тепĕр чухне Шупуççыннипе Шелепи çинчен çыркалаççĕ.

Келие Октябрь кĕввисене юрланă сăвăç теме юрать. Унăн сăввисем нумайăшĕ Октябрь революци ыйтăвĕсемпе çыхăнса тăраççĕ. Хăш-пĕр сăввисем хăйсен ячĕсемпех ун çинчен калаççĕ: сăмахран, «Октябрь сăвăçĕсене», «Революци карапĕ», «Юнлă вырсарни», «Октябрь Питĕрте», «Пăлхав юрри», «Малалăх гимнĕ», «Çĕнĕ çул» тата ыт. те.

Кели кивĕ тертлĕ пурнăçа чун-чĕререн кураймасть. Ун тискерлĕхĕпе пусмăрлăхне вăл «Юнлă вырсарни» (1905 çул) ятлă сăввинче кăтартса панă. Унта Питĕрти рабочисем патша çурчĕ умне хоругвăсемпе, иконăсемпе кайса мĕнле улталанни çинчен çырать. «Юнлă вырсарнире» Раççейри ĕçлекенсем «чăтма май килмен мăшкăл тӳсни» çинчен калать. Çав мăшкăл вĕсемшĕн ахалех иртмен. Пролетариат 1905—1907 çулсенчи революцире кĕрешӳ опытне туянчĕ. «Икон выранне,— тет поэт,— вăл (ĕç халăх,— **В. Д.**) тăратрĕ ялав, куççуль выранне тăкрĕ пульă». «Кивĕ тĕнчене шеллес мар», тет вăл тепĕр сăввинче. Мĕншĕн тесен «кивĕ пурнăç — тĕрме».

Çитрĕ 1917-мĕш çул. Октябрĕн 25-мĕшĕ. Поэт каланă тăрăх, «çĕн çул пуçланчĕ çак кунран». Çав кун — революци пуçланнă кун. Революцие Кели ырлать, уншăн пĕтĕм чунпа савăнать. Революцире, тет вăл:

Пĕрре пăлхавлă юн хĕрсен,
Теме ĕç паттăрĕ тӳнтерĕ...

Кĕрешӳ сăлтавĕ — обществă классене уйăрнинче, тĕнче икке пайланнинче. Çакна поэтăмăр уççăнах курать, уççăнах калать:

Халь ик тĕнче. Ĕç сыннисем
Шăпа Октябрьшĕн тытаççĕ...

Е тата:

Писмен çинче этемлĕх ĕмĕрĕ,
Тĕнче пайланчĕ ик каса.
Шăпа тытатпăр васкаса—
Кама тивет çак çĕрĕн чăмăрĕ.

Çапла, Кели Октябрьти революцие пĕтĕм чĕререн мухтать, уншăн çапăçать, революцилле шухăшсене халăх хушшине сарать. Вăл кĕрешӳшĕн, пăлхавшăн, революцишĕн. Кĕрешӳ шухăшĕ унăн пултарулăхне витĕр витнĕ, çакă вăл Кели пултарулăхĕн никĕсĕпе пăрăсĕ. Анчах Октябрь революцине Кели кăшт урăхларах, хăй майлăрах ăнланать, çак революци уншăн чи малтан «пăлхав». Ку, паллах, Кели «революци» сăмаха (термина) чăвашла «пăлхав» тесе куçарнинчен те килнĕ. «Революци», «пăлхав» (бунт) ăнланусем пĕр маррине Кели тавçăрсах илеймен. Вăл «пăлхавпа» «революци» сăмахсем хушшинче уйрăмлăх курман. Çакна Келин кашни сăввинчех тупма пулать. Вăл ятарласах «Пăлхав юрри» ятлă сăвă çырнă.

Пăлхав кĕвви кивелмĕ час,<br>
Пăлхав юрри пĕр май йыхравлă.<br>
Пăлхав хаяр, пăлхав чĕресĕр;<br>
Ана кирлех юн кӳнĕ чӳк...

Ку шухăш «Октябрь Питĕрте» ятлă сăвăра та лайăххах палăрать. Унта вăл:

Паян ĕç халăхĕ пăлхавлă...<br>
Пăлхавлă Питĕр... тет.

Е тата:

Путилов завочĕн рабочи алли<br>
Пăлхавшăн ĕçре тимĕрленнĕ.

Çапла, Кели 1905—1907 çулсенчи революцие те, 1917 çулти социализмла революцие те пăлхав вырăнне хунă пек тухать. Кунта çакна калас пулать: революци, пуринчен ытла 1917 çулти Октябрь революцийĕ, пăлхав мар,— ăна пăлхав тенипех иртсе кайма çук. Çиелтен çеç пăхакансене вăл пăлхав пек те туйăнма пултарĕ, анчах ăна апла ăнланни нихăш енчен те çителĕклĕ пулма пултараймасть тата йăнăш та. Октябрь революцине илсен (Кели чи малтан ун çинчен çырать), эпир акă мĕн куратпăр: вăл халăх пăлханнипех пулман, унта организациллĕ вăй, руководствă, ленинла тактика вăйлă пулнă. В. И. Ленин пролетариата чи тĕрĕс çул кăтартса панă, большевиксем революцири вăйсене лайăх пĕлнĕ, çавăнпа та парти ăçта мĕн кирлĕ, ăçта хăш «ункăран» тытмалла, хăш еннелле туртмалла тата ыт. те аван курнă, аван пĕлнĕ. Пролетариат тата «тӳнтерекен» вăй çеç мар, вăл çав вăхăтрах творчествăллă, пултаруллă вăй.

Çапла, Октябрь — вăл пăлхав мар, Октябрь — вăл хăйĕн задачисене ăнланса илнĕ пролетариат тунă революци. Пролетариат Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе революцие хатĕрленсе тухнă, влаçшăн кĕрешнĕ. Пролетариатпа пĕрле ĕçлекенсен йышлă масси пулнă. Революцин организациллĕ, пултаруллă енĕсене ĕнтĕ Кели çителĕклĕ таран тавçăрса илеймен. Вăл «кив пурнăçа — тĕрмене» çĕмĕрнине (тӳнтернине) курать, анчах кивĕ пурнăçа организациленнĕ вăй (пролетариат) пĕтернине уççăн кăтартса параймасть. Çакă Кели поэзинче хирĕçӳллĕ вырăн пулса тăрать. Кели Октябрьшĕн, анчах ăна вăл пăлхав тесе хаклать. (Кели — хăй те киввине хирĕç тăракан пăлхавçă. Вăл «Октябрь сăвăçĕсене» те пăлхавçă пулма хушать).

Поэт пăлхавлă,
Юрри йыхравлă...

Е тата:

Хĕн-хур аваллăхĕ,
Пăлхав пахалăхĕ
Асран каймаççĕ...
Çитес ыраншăн эс паян,
Поэт, пăлхав юрри юрла.

Çапах та, хастар поэта куншăн, хăш-пĕр ыйтусене çителĕклĕ ăнланса илейменнишĕн, ытлашши тиркеме, хурлама сăлтав çук. Кели — революциллĕ поэт, çĕнĕ пурнăç юрăçи. Вăл халăхпа парти çулĕпе пынă, унăн урăх çул пулман. Ку çул çине тухма ăна çăмăлах пулман, пăлхавçăран пролетарилле революционер, марксист пулма çăмăл мар. Çапах та, вăл пĕр маях малалла туртăннă, вăл пулас тĕнчешĕн çунма пултарнă. Çавăнпа ĕнтĕ вăл çакăн пек çырнă:

Малаллах! Хирĕлсе таврари çулсемпе
Юхăнатпăр ниçта чарăнмасăр.
Пирĕн хурçă кĕсмен кĕрешет хумсемпе
Тинĕсри вупкăна пăхăнмасăр.

Куратпăр, малалăх, сан Аслă кунна.
Эс пар ĕмĕрсем урлă ху аллуна...
Пур ĕç сынне илттеретпĕр
Хамăр малалăх чанне.

Ку йĕркесенчен Кели малалла, çĕнĕ пурнăç патнелле, хăйĕн пĕтĕм вăйĕпе туртăнни аванах курăнса тăрать.

Революцилле ĕçре хавхаланнă чăваш поэчĕсене халалласа, Кели «Октябрь сăвăçисене» ятлă сăвă çырнă. Унта вăл çакăн пек калать:

Вутра хунанă сăвăссем
Ҫуратнă амăшне манмаççĕ;
Октябрь чапĕшĕн вĕсем
Паян мухтав юрри юрлаççĕ:
Пурте пĕр сассăн,
Юрлар хавассăн!
...Ан чар! Октябрь кăварне
Поэт акать хавассăн,— актăр!
Вăл сăввипе кӳрет парне,
Теприн парни тыр-пул е трактор.

Г. Кели кашни сăввинче тенĕ пекех пулас тĕнчене, коммунизма асăнать, ĕç çыннисене коммунăшăн кĕрешме чĕнет, вĕсен пултарулăхне, ĕçне мухтать. Ҫĕн пурнăçшăн пуçланнă кĕрешĕве, çĕн пурнăçшăн пĕтĕм çĕршывĕпе çĕкленнĕ ĕçе хăй те хастар хутшăннине аса илсе, поэт «Мухтав юрри» ятлă сăввинче çапла калать:

Ĕç çарĕпе танах эп шурăм
Ун Юпари пăлхавĕнче,
Ҫĕн ăстасен ĕретĕнче
Эп те тăрса çĕн пурнăç турăм.
Мухтав ĕçе!
Вилнисемпе тухам вĕçе,
Тепри çуралтăр тĕнчене,
Юрлатăр пурнăç вырăнне,
Ҫĕн пурнăç паракан ĕçе
Мухтав юрри!

Григорий Келин пурнăçпа ĕçри девизĕ çакăн пек пулнă: клас тăшманĕпе ниçта та, нихçан та килĕшмелле мар; тăшмансене хирĕç Октябрьти революци кунĕсенче те, граждан вăрçи çулĕсенче те кĕрешнĕ, килĕшмен, малашне те вĕсемпе килĕшмелле мар,— кĕрешмелле! Сăмахран, «Пăлхав юрри» ятлă сăвăра вăл çĕнĕ çамрăкшăн, çĕнĕ ăрушăн кĕрешни çинчен каласа: «Тĕнче ик енлĕ — ас тăватпăр: пăлхав, çил-тăвăл, кĕрешӳ,— ниçта ан пултăр килĕшӳ, шăпа çĕн çамрăкшăн тытатпăр!» тет.

Григорий Кели çутçанталăк çинчен çырнă сăвăсенче те социаллă, политикăллă ыйтусем патне пырса тухать, вĕсене хускатмасăр иртеймест.

Акă хĕвел. Вăл ĕнтĕ этем пĕлми ĕмĕрсенчех хăйĕн çутине тĕнчен вĕçĕ-хĕррисĕр уçлăхне сарса тăнă. Хĕвелшĕн çĕр çинчи пурнăç ним те мар, вăл уншăн сисĕнмесĕр иртет. Поэт сăмахĕсемпе калас-тăк, «ун ĕçĕ-хĕлĕ: ирпе çутал та каç хĕрел». Анчах çĕр çинче хаяр кĕрешӳ пырать:

Кунта çĕн пурнăçăн тĕпелĕшĕн
Вăрçмасăр вăхăт та шумасть.

Эпир илсе кăтартнă тĕслĕхсем акă мĕн çинчен калаççĕ: Кели хăйĕн сăввинче тарăн шухăшсем калама пĕлнĕ, фисофла шухăшлама пултарнă, халăха этемлĕхе интереслентерекен ыйтусем хускатнă. Кели нумай çырма пултарнă. Унăн таланчĕ çителĕклех пулнă. Вăл поэт çеç мар, çав вăхăтрах — паллă критик, теоретик. Унăн поэзийĕнче хăйне майлă философи пур. Вăл философи «пăлхав» (революци) ыйтăвĕпе тĕрлĕ майсемпе çыхăнса тăрать. Анчах çитменлĕхсем те пур: Келин хăш-пĕр философиллĕ сăввисене ăнланма питех те йывăр. Вĕсем вулама та йывăррăн вуланаççĕ. Хăш вырăнсенче поэт шухăшĕсем сăнлăхсем айне пулнă.

Тĕслĕх вырăнне «Пролетари музине» ятлă сăвва илме пулать. (Ку сăвă малтан «Утăм» альманахăн 2-мĕш номерĕнче 1929 çулта пичетленнĕ). Унта поэт-критик литературăпа искусствă çинчен, вĕсен обществăри вырăнĕ çинчен, çĕнĕ музă çурални çинчен çырнă. Анчах тӳрех çапла калас пулать: «Пролетари музи» пек ăнланма йывăр сăвă чăваш литературинче урăх çукпа пĕрех. Вăл Кели сăввисем хушшинче те — чи йывăр чĕлхеллĕ сăвă.

Сăввăн малтанхи строфинче поэт кĕрхи аслатипе (Октябрьти революципе) вăраннă миллионсем çинчен калать. Вĕсем этем çитми тӳпесене штурмлаççĕ. Революци кунĕсенче хаяр штурма пула кепен çӳл сăрчĕсем шартлатнă, курăнми çӳле çĕкленнĕ пĕлĕтсем ӳпленнĕ. (Кепе сăмаха поэт хăй çакăн пек ăнлантарса парать: «Кепе — пур светитленĕ япала, сăмах тĕпĕ «турă». Н. И. Ашмарин профессор: «Кепе — чăваш турри», тет те «анне — кепе, унпа вăрçма юрамасть» текен тĕслĕхсем илсе кăтартать).

Малалла поэт тăвăлсем «пур аскăн Парнасăн укăлчи» тет (Парнас — грексен музисем, ăсталăх туррисем пурăнакан ту, тесе ăнлантарать автор). Ĕç çыннисем искусствăсен çĕнĕ алтарьне тăваççĕ. Ку алтарьте ырă шăршлă мирă çук, унăн маччисем ӳсĕртекен фимиампа тулмаççĕ. Унта «ĕç туррине» «кӳреççĕ тарлă чӳк».

Илтетни: савăтсен пин саслă трубисем
Пĕр хурçăллă саспа кăвак ирпех улаççĕ.
Юпа аслатине çуратнă ачасем
Ĕç туррине унта мухтав юрри юрлаççĕ.

Çĕнĕ лирăна тухнă миллионлă çар итлет:

Набатлă кĕслепе вăранччăр тертрисем,
Кĕрешчĕр ĕмĕрсен хура ылханĕпе;
Ĕç çыннисен тăртаннă хăлхисем
Киленччĕр савăклă çĕн гимнăн чанĕпе.

Малалла Кели, пуласлăха шанса, çакăн пек çырать.

Вĕркетĕр самана чăн лиръ сассипе...
Чăвашăн варĕнчен Рабиндранат çуралĕ.
Мицкевич, Пушкинăн, Шевченкă кĕввипе
Чăваш пур хĕн-хура хурçă кăшăлпа чуралĕ.

«Пролетари музине» сăвăра поэт çакна та шанать:

...Пулас юпасене тĕл пулĕ хĕвелтухăç;
Ун кĕввисем вăратĕç çывăракан юна—
Пур тертĕн кĕтесне кăварлăн кĕрсе тухĕç.

«Сунтал» журналăн 5-мĕш номерĕнче «Утăм» утăмĕсем чапрасрах мар-и?* ятлă статьяра çак сăвва: «Лирăна эпир «ĕлĕкхи пек (?) янравлă» теме хал çитерейместпĕр. Ĕлĕкхи лирă буржуазишĕн çеç усăллă, янравлă пулнă», тесе критикленине ответлесе, Григорий Кели çакăн пек çырнă: «Пролетари поэзине «ĕлĕкхи пек» янравлă тени вăл революцичченхи поэзи пекех илтĕнет тенине мар, ырлăх енчен революцичченхи поэзинчен кая мар тенине пĕлтерет. Поэзи ячĕ çеç юлнă, ытти пурте: поэзи задачи, ăш-чикки, тулашĕ,— пурте улшăннă».

Кели хăш-пĕр сăвăсенче пĕр-ик сăмахпах сăнлăх туса парать. Мещене «кив пурнăçăн алланчăкĕ», тет поэт, пĕччен сăвăçа «ун анчăкĕ» тесе хурлать. Кун пек шухăша Кели хăйĕн статйинче те палăртать, мещенле сăвăçсене тăрăхласа, вĕсенчен кулса çырать.

Кели сăввисенче паха рифмăсем тĕл пулаççĕ: кăварне — парне, актăр — трактор, шăпамăр — хамăр, каса — васкаса. сакăлта — çакăнта, ячĕ — пачĕ тата ыт. те.

Тата çакна калас пулать: Келин эрудицийĕ пысăк пулнă, вăл нумай пĕлнĕ. Вăл хăйĕн шухăшĕсене пуянлатас тĕлĕшпе хытă ĕçленĕ. Кели сăвă техникине те питĕ лайăх пĕлнĕ, анчах ăста усă курайман. Сăвă техникине пĕлес тĕлĕшпе Келипе Çеçпĕл чăваш литературинче уйрăмах паллă пулнă. Анчах вĕсем сăвă техникипе тĕрлĕ усă курнă. Çеçпĕл Мишши çăмăл сăвăсем çырма пултарнă, унăн таланчĕ те пысăк пулнă. Кели йывăр çырнă, вăл çĕнĕ формăшăн киввине хирĕç кĕрешнĕ, çĕнĕ техника шыранă.

---

* «Утăм альманаха кăларакансенчен хăшĕ-пĕрисем çав альманаха кăларнă вăхăтра хăйсене хăйсем çиччĕмĕш пĕлĕт тăрне хăпарнă пекех туйнă, анчах «мухтаннă туйĕнче намăс курнă» тени вĕсемшĕн те тĕрĕсех пулнă. Мухтанчăксем йăнăш хыççăн йăнăш тунă. Çавăнпа та вĕсене критиклекен статьясем тухсах тăнă: «Утăм утти», «Утăм мĕнле утать?», «Утăм» утăмĕсем чапрас мар-и?»

Григорий Кели, сăвă çырас правилăсене, сăвă техникине аван пĕлнĕ вăхăтрах, ăнланма йывăр сăвăсем çырни формă хыççăн кайнинчен килнĕ. Унăн сăввисенче формалистла теорисен витĕмĕ сисĕнет.

Анчах эпир иртнĕ вăхăтри çынсене: вăл «ăна туман та, кăна туман» тесе хакламастпăр, хăйсен вăхăтне кура вĕсем мĕн тума пултарнине шута илсе хаклатпăр. Г. И. Кузнецов (Кели) çинчен, вăл хăй вăхăтĕнче мĕн-мĕн тунине пăхса каласан, çакна палăртма пулать: Кели чăваш совет литературине аталантарас ĕçе нумай-нумай вăй хунă, вăл — чăвашсен малтанхи коммунист-литераторĕсенчен пĕри, паллă критик, поэт.

Григорий Кузнецов (Кели) тăван халăхшăн, унăн çамрăк литературишĕн пархатарлă ĕç тунă, вăй-халне шеллемесĕр ĕçленĕ. Çавăнпа ăна халăх манмĕ, яланах асра тытĕ, унăн ырă ятне çĕнĕ ăрусен чĕринче усрĕ.

Халĕ эпир Кели çинчен, унăн сăмахĕсене кăштах улăштарса, çапла калăпăр: тăван халăх сассинче Кели сасси те илтĕнет тейĕпĕр.

*1961*

## ИСАЕВ МĔТРИ ÇЫРĂВĔСЕНЕ ВУЛАСАН...

«Ялав» журналăн 1961 çулхи 12-мĕш номерĕнче чăвашсен вăхăтсăр çĕре кĕнĕ паллă писателĕн, критикĕн, редакторĕн, комсомол работникĕн ултă çырăвне пичетлесе кăларнă. Вĕсене пичете валли филологи наукисен кандидачĕ Н. Иванов хатĕрленĕ. Çырусене Д. Исаев çырăвĕнчен илнĕ сăмахсемпе çакăн пек ят панă: «Искусствă пирĕн вăхăтра пĕтĕм халăхшăн пулмалла».

Критик çырăвĕсем умне Н. Иванов пĕчĕкçĕ статья çырса пичетленĕ. Д. В. Исаев чăваш литературинчи ют шухăшсене хирĕç 20-мĕш çулсенче мĕн тери хастар кĕрешнине палăртса, умсăмах авторĕ Исаев-критик ĕçне çапла хаклать: «Вăл литературăри тасалăхшăн, партилле идейăлăхшăн кĕрешнĕ, тăван литературăна тĕрĕс çулпа ярасшăн вăй-хала шеллемесĕр ĕçленĕ. Çакна унăн Хумма Çеменĕ патне янă çырăвĕсенче те аван куратпăр. Исаев Мĕтри искусствă халăхшăн пулмаллине, чăн-чăн ăсталăхпа çырнă произведенисем кăна ĕç çыннисен кăмăлне тивĕçтерме пултарнине кăтартса парать».

Умсăмах авторĕпе килĕшсе, эпир те çавăн пекех калăпăр, Исаев çырăвĕсем вулакансене, тăван литературăна тĕпчекенсене пысăк усă пама пултарассĕ, тейĕпĕр.

Исаев Мĕтри хăйĕн «Рабфак хĕрĕ» ятлă калавне «Сунтал» редакцине ярсан (1927 ç.), Хумма Çеменĕ патне çыру çырать, писательрен çав калав пирки хăйĕн шухăшне каласа пама, йăнăшсемпе çитменлĕхсене кăтартса пама ыйтать. Çапла вара, икĕ писатель хăйсен пĕр-пĕрин патне ярса тăнă çырăвĕсенче, «Рабфак хĕрĕ» калавран пуçласа, литературăпа искусствăн теорилле ыйтăвĕсене хускатассĕ,

тĕрлĕ ыйтусене пĕр-пĕрне ăнлантарса параççĕ (ку вăл Исаев сырăвĕсенче те аван курăнать, Хумма Çеменĕн çырăвĕсене халлĕхе тупман-ха).

Хумма Çеменĕ çыру çырсан, «Рабфак хĕрĕн» авторĕ савăнмаллипех савăнать. Хумма Çеменĕ калаври çитменлĕхсене кăтартса панă пулмалла. Çакна май ун патне Исаев тепĕр çыру янă. Унта вăл литературăн обществăри рольне хăй мĕнле ăнланнине тата мĕнле ăнланмаллине каласа парать. «Эсĕ тата,— тет вăл,— пĕр енчен (чĕлхе илемлĕхĕ енчен) çеç пăхнă, ман шутпа, пирĕн тепĕр енчен — социологи, обществăна усăлли енчен те пырса пăхмалла. Тем пек илемлĕ çырнă япалан та, вăл ĕçлекенсен класĕн, пĕтĕм ĕç халăхĕн ĕçне малалла яма пулăшмасть пулсан, пĕр катăк çур пуслăх усси те çук».

Ыйтăва кун пек лартни, калас пулать, хальхи вăхăтшăн та тĕрĕс: пире халăха коммунизм тума пулăшакан произведенисем кирлĕ. Илемлĕ произведени, унăн кашни сыпăкĕ, кашни пуплевĕпе сăмахĕ халăха, партие усă патăр, ăна ĕç çыннисем савăнса вулаччăр, вуланă хыççăн вĕсен хаваслăхĕ çĕклентĕр, пурăнас, ĕçлес килнипе вĕсем малалла турттăнччăр, савăнса юрлаччăр. Урăхла пулсан, Исаев калашле, писатель çырнă произведени темле паха пулсан та, «катăк çур пус» тĕшне те тăмасть. Хăш-пĕр литераторсем пĕр-пĕр произведение илеççĕ те чĕлхи паха, илемлĕ, тесе каçсах каяççĕ, ăна, ăш-чикки çĕрĕк пулин те, пĕлĕте çити çĕклесе мухтаççĕ. Мĕншĕн содержанийĕ пирки пĕр сăмах та шарламастăр тесен, аккаланса, хуçкаланса: «Содержанине тĕпчесси Исаевсем пек, Кузнецовсем пек... критиксен ĕçĕ» тесе, пăрăнса каяççĕ. Эпир тӳрех калатпăр: çĕрĕк ăшчиклĕ произведени хăйĕн çĕрĕк шухăшĕсемпе сиенлĕ, анчах вăл тулашĕ илемлĕ пулнă пирки пушшех те сиенлĕ! Çавнашкал произведени орхидейă ятлă чечек пек: илемĕ çынна илĕртет, анчах шăрши чыхăнтарса ярать. «Ăш-чикки» тенĕрен, чăваш çамрăкĕсен революцичченхи пĕр юрри аса килчĕ (ăна вĕсем кӳршĕ ялăн хĕрĕсене, çав вăхăтрах тата каччисене те тăрăхласа юрланă):

> Сакă ялăн хĕрĕсем
> Çырла пек,
> Ăшĕ-чикки
> Хура юн...

Икĕ писатель, Хумма Çеменĕпе Исаев Мĕтри, пĕр-пĕрин патне çӳретнĕ çырăвĕсенче хăйсен шухăшĕсене пытарман, уççăн каласа панă (чăн-чăн писательсен ĕнтĕ çавăн пек

пулмалла та!). Вĕсем литература произведенийĕн содержанийĕпе форми пирки интереслĕ калаçу пуçарса янă. Хумма Çеменĕ «Рабфак хĕрĕ» калава чĕлхе енчен, «формă» енчен ытларах тишкĕрнĕ пулас, çавăнпа та формăна шута илменшĕн Исаева «вăрçса» та пăхнă.

Çавăн пирки ĕнтĕ Исаев ку çырура содержанипе формăна мĕнле ăнланмалли çинчен çырать. «Эпĕ,— тет критик,— формăна кирлĕ мар, формăшăн кĕрешмелле мар тесе нихçан та каламан та, калас та çук... Формă та кирлĕ, чĕлхе илемлĕхĕ те кирлĕ. Формăна çĕнетессишĕн те, «искусствă хăвачĕшĕн» те пирĕн кĕрешмелле. Анчах произведенире «искусствă хăвачĕшĕн» çеç мар, ăш-чик хăвачĕшĕн те кĕрешес пулать».

Малалла ку ыйтăва вăл çапла ăнлантарать: «Эпир япалана формăшăн анчах тумасгпăр. Çавăнпа литературăра вăтам çулпа пырас пулать: формăшăн анчах тăни те, ăшчикĕшĕн анчах тăни те тĕрĕс мар. Кунта акă мĕнле пример илсе танлаштарма пулать: чĕресе темĕскер пек илемлетсен те, ун ăшĕнче чĕрене кантаракан сăри пулмасан, вăл пирĕн кăмăла тултараяс çук. Çавăнпа эпир: савăчĕ те лайăх, илемлĕ, тĕплĕ тунă япала пултăр, ун ăшĕнче ĕçме-çиме те чуна кантармалла, чĕре çумне çыпăçмалла, усăллă япала пултăр тетпĕр».

Исаев танлаштарăвĕ илемлĕ, оригиналлă. Анчах литература произведенийĕн содержанийĕпе форми пирки сăмах хускатрăмăр пулсан, кунта çакна асăрхаттарас пулать: ку ыйту — вăл литература тĕпчевĕнче (литературоведенире) пысăк вырăн йышăнса тăракан философилле ыйтусенчен пĕри. Литература произведенийĕн содержанине е формине тĕпчесе пĕлес тесен, вĕсен (содержанипе формăн) пĕрлĕхне тĕпчес пулать, урăхла каласан, вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрмасăр тĕпчесен çеç кирлĕ пек ăнланса илме, ăнлантарса пама пулать.

Литература произведенийĕн содержанийĕ вăл — пурнăç, анчах хăйне халлĕн илнĕ пурнăç мар; литература произведенийĕн содержанийĕ вăл — писатель ăнланнă (ăнлантарнă), искусствă майĕсемпе сăнласа кăтартнă (кăтартса панă) пурнăç. Кашни писателĕн хăйĕн шухăшĕ, ăнланăвĕ, ĕмĕчĕ, идеалĕ пур, вăл хăйĕн произведенийĕнче çав шухăша каласа пама тăрăшать, пурнăçа хăй мĕнле ăнланать, çавăн пек ăнлантарса парать. Класлă обществăра писателĕн шухăшĕ, ăнланăвĕ, ĕмĕчĕ, идеалĕ пĕр-пĕр клас шухăшĕ, ăнланăвĕ, ĕмĕчĕ, идеалĕ пулса тăрать. Пирĕн вăхăтра, совет

обществинче пачах урăхла: писатель ăнлансах халăх шухăш-кăмăлне палăртать, халăх идеалĕшĕн ĕçлет, ăна пурнăçа кĕртес тесе кĕрешет. Çапла ĕнтĕ, литературăра произведенин содержанине писатель кăтартса паракан ĕçсене, пулăмсене (явленисене) хăй мĕнле ăнланнипе тата мĕнле ăнлантарнипе пĕрлех унăн шухăш-туртăмĕсемпе ĕмĕчĕсем те кĕреççĕ.

Литература произведенийĕн форми — произведение çырнă чĕлхе çеç мар, унти сăнлăхсем çеç те мар, литература произведенийĕн формине унта кăтартса панă сăнарсем те кĕреççĕ.

Формă çинчен калана чухне чĕлхе, сăмах пирки калаçу хускатаççĕ. Тĕрĕс! Литературăра чĕлхесĕр формă тума çук. Чĕлхе, сăмах — формă тумалли хатĕр. Сăмах — сăнлăхсем тумалли элемент. Произведенин композицийĕ те, жанр тĕлĕшĕнчи структури (йĕрки) те, ритм та тата ыттисем те формă пайĕ, элеменчĕ пулса тăраççĕ. Формă содержанин тĕрлĕ элеменчĕсене çыхăнтарса пĕр пĕтĕм япала, пĕрлĕх туса хурать. Произведенири персонажсене вырнаçтарса тухни, вĕсем пĕр-пĕринпе çыхăнса тăни, произведенири, персонажсен чĕлхинчи детальсем, композици меслечĕсем автора кирлĕ шухăшсене калама пулăшаççĕ.

Литература вĕренмелли учебниксенче содержанипе формă ыйтăвне ăнлантарса панă чухне тĕслĕх вырăнне Л. Толстойăн «Война и мир» романне илеççĕ. Вара çапла калаççĕ: «Вăрçă тата мир» романăн содержанийĕ — вырăс обществин 1812 çулхи вăрçă тапхăрĕнчи тата декабристсен малтанхи вăрттăн союзĕсем пуçланнă çулсенчи пурнăçне, вырăс çыннисен ĕçне-хĕлне, паттăрлăхне, çемье ыйтуне, уйрăм çыннăн историри рольне, обществă умĕнчи тивĕçне «халăх шухăшĕн» çутипе, Толстойăн истори, философи, нравственноç тĕлĕшĕнчи шухăшĕсен, ăнланăвĕн, вĕрентĕвĕн çутипе кăтартса пани, ăнлантарни, теççĕ. Çак содержанине кăтартса памалли формă — произведени валли илнĕ Ростовсен, Болконскисен, Безуховăн, Трубецкисен, Курагинсен, Наполеон, Кутузов пурнăçĕ, салтаксен, хресченсен, çарăн, обществăри çӳлти сийсен пурнăçĕ, ун чухне пулса иртнĕ событисем, лару-тăрусем тата ыттисем теççĕ. Пĕр сăмахпа каласан, «Вăрçă тата мир» романăн содержанийĕ унти сăнарсем урлă пулса тăнă, çав сăнарсем кунта роман содержанине усраççĕ, формă пайĕ пулса тăраççĕ.

Чăваш литературин классикла произведенине — вилĕмсĕр «Нарспи» поэмăна илсе пăхсан та, эпир содержанипе

формă, ăш-чикĕпе тумĕ мĕн тери тачă çыхăнса тăнине куратпăр. «Нарспи» поэмăра пирĕн ума чăваш халăхĕн иртнĕ ĕмĕрти пурнăçĕ тухса тăрать. Иванов çав пурнăçа илнĕ те хăй мĕнле ăнланнă пек кăтартса панă. Ăна вăл халăхăн малта пыракан шухăш-кăмăлĕ енчен пăхса, вырăс литературинчи прогрессивлă çынсен шухăшĕсене ăса хывса çутатса çырнă. Ку çеç те мар-ха, вăл хăйĕн ĕçĕнче таçтан-муртан килнĕ шухăшсен витĕмĕпе мар, 1905—1907 çулсенчи пĕрремĕш революци витĕмĕпе хавасланса ĕçленĕ. Çапла вара, «Нарспи» поэмăн содержанийĕ — вăл чăваш халăхĕн, ытти халăхсен шухăшĕсемпе килĕшсе тăракан ĕмĕт-шухăшĕсемпе килĕшсе тăракан ĕмĕт-шухăшсем, халăхăн сывă ăс-пуçлă çыннисем çав вăхăтри пурнăçа, ĕçпе кĕрешĕве, телей, юрату ыйтăвĕсене мĕнле ăнланнине, поэт хăй çав ыйтусене мĕнле ăнланнине сăнлăхсемпе кăтартса пани пулса тăрать. Хăш-пĕр реакцилле писательсем, этемĕн пурнăçри, обществăри ролĕ пирки киревсĕр шухăш сарса, пурнăçшăн этем — лăкăр-лакăр çеç, вăл ним те тума пултарайман чĕрчун, тесе сӳпĕлтетнĕ пулсан, Иванов, материалистла философин хăш-пĕр идейисене ăнланса илнĕскер, урăхла шухăшланă: эпир пурăнакан тĕнчере чи вăйли этем, тенĕ. Çак прогрессивлă шухăш, ун чухнехи гуманизмăн тĕп шухăшĕ, Иванов пултарулăхне витĕр витнĕ. Анчах «Нарспи» авторĕн çак шухăшне палăртнă чухне эпир унăн шухăш-кăмăлĕ пур чухне те тап-таса ылтăн пек пулнă тесе калама пултараймастпăр: Иванов пурăннă саманара халăх ăс-тăнĕнче тĕксĕм шухăшсем те нумай пулнă, халăх турра та, усала та ĕненнĕ; пĕрисем киреметсене, теприсем турăшсене пуç çапнă, виççĕмĕшсем турăшсене хăйма сĕрсе, кил хушшине çĕтĕк çăпата çине кăларса лартнă; пĕрисем революцие мухтакан кĕнекесем тупса вуланă, патша йĕркине хирĕç пыракан кĕрешĕве хутшăннă, теприсем революци паттăрĕсене тытса жандармсен аллине панă... Иванов чăваш пурнăçне халăх шухăшĕн çутипе çутатса панă чухне «Нарспи» поэмăра «турă çырни» мĕне пĕлтернĕ пирки шухăшласа пăхман, çав шухăша тиркесе тăман. Çапла вара, чаплă поэмăн содержанине этем вăй-халне мухтакан хăватлă шухăшсемпе пĕрле этем ăс-тăнне çӳпĕлекен шухăшсем те кĕрсе кайнă. Паллах, вĕсем «Нарспире» тĕп вырăнта тăмаççĕ. «Нарспи» — прогрессивлă шухăшсемпе тулнă произведени, унăн прогрессивлă содержанийĕ юрăхсăр шухăшсене хăйĕн вăйĕпе путарса тăрать.

Содержанипе формă ыйтăвне Хусанкайăн «Аптраман

тавраш» поэмине, Ухсайăн «Кĕлпук мучи», «Çул» поэмисене тата ыт. произведенисене тĕпчесе те кирлĕ пек çутатса пама пулать.

Произведенири сăнарсемпе сăнлăхсен пуянлăхĕ, унăн форми пулса, произведенин содержанийĕпе ним уйрăлми çыхăнса тăрать. Содержанипе формă пĕр-пĕринпе тачăран та тачă çыхăнса, пĕрлешсе, витĕр витсе тăнине асра тытса, вырăссен аслă критикĕ В. Г. Белинский çакăн пек каланă: «Формă содержанине палăртаканни пулсан, вăл содержанипе çав тери тачă çыхăнса тăрать, содержанине формăран уйăрас тени содержанине пĕтернине пĕлтерет; тата çапла та: формăна содержаниреи уйăрас тени формăна пĕтернине пĕлтерет»*.

Л. Н. Толстой тата «Что такое искусство» ятлă произведенийĕнче çапла палăртнă: «...чăн-чăн илемлĕ произведенире — сăвăра, драмăра, картинăра, юрăра, симфонире — пĕр стиха та, пĕр сценăна та, пĕр фигурăна та, пĕр такта та харпăр хăй вырăнĕнчен кăларса урăх вырăна куçарса лартма çук, мĕншĕн тесен пĕтĕм произведени пăсăлса кайма пултарать...»**

Л. Н. Толстой малалла произведение чĕрчун организмĕпе танлаштарать. Чăнах та, çыннăн ури вырăнне алă, куçĕ вырăнне хăлха, хăлхи вырăнне сăмса лартсан, этемĕн кĕлетки пăсăлса каять; ун пек çынна урама кăларса ярсан, ăна курма çĕршер кăра çăвар пухăннă пулĕччĕ...

Илемлĕ произведенин (содержанийĕнче те, форминче те) хăйне кирлĕ логикă пур. Çавăн пек логикăсăр произведение çырма та, унăн уйрăм сăнарĕсене кăтартма та çук. Илемлĕ произведенири логикă, содержанипе формăна ним уйрăлми çыхăнтарса, содержанипе формă пĕрлĕхне туса хурать.

Д. Исаев хăйĕн «Марксизм-ленинизмпа литературă» ятлă статйинче, М. Федоров критикăн шухăшĕсене тиркесе, содержанипе формă пирки хăй вăхăтĕнче çакăн пек çырнă:

«Федоров илемлĕ произведени содержанине çапла определени парать, çапла ăнлантарать: «Объектлатнă пурнăçри фактсен системи, ăшри (!) пĕррелĕх саккунлăхне пăхăнса тăракан образсен системи — илемлĕ произведенин содержанийĕ» (Скобкăра калар: «Ай-уй,— тесе тĕксе илет Исаев,— чĕлхи мĕнле, чĕлхи! тейĕç вулакансем. Чăнах та,

---

* В. Г. Белинский. Собрание соч. в трех томах, 3 т., 138 стр.
** Л. Н. Толстой. Сочинения, 30 т., 13 стр.

кунашкал калаçма пуçласан, шăмăсăр чĕлхе те хуçăлса кайĕ. Анчах чĕлхе пĕр хĕрĕнче тăтăр-ха»).

Федоров шухăшĕпе, тет малалла Исаев, искусствă — образсен системи, литературă — образсен системи, илемлĕ произведенин содержанийĕ—образсен системи... Исаев шухăшĕпе произведенин содержанийĕ — вăл идеологи (!), произведени материалĕнче панă идеологи (!). Идеологи — вăл идейăсен йĕркеллĕ çыххи, шухăшсен çыххи, системи. Художествăллă идейă — шухăш çеç мар, сисĕм те («идеологи» сăмах хыçне лартнă кăшкăру палли пирĕн.— **В. Д.**)

Паллах, идейă илемлĕ произведенин содержанийĕн ўтне кĕрет, унтан уйрăм тăма, таçта вĕçсе çўреме пултараймасть; содержани писатель пурнăçа мĕнле ăнланнинчен килет, вăл хăйĕн умне лартакан задачăсене мĕнле ăнланнинчен, мĕнле ăнлантарнинчен, вĕсене пурнăçа кĕртме сĕннĕ майсенчен килет. Исаев произведенин содержанине идеологи патне илсе çитернипе, содержанипе идеологие пĕр карта лартнипе содержани ăнланăвне ансăрлататъ, хĕссе хурать, тĕрĕс мар ăнлантарать; сисĕм çинчен каланипе çеç хăйĕн шухăшне содержани ыйтăвне тĕрĕсрех ăнланас çул çине кăларать. Тĕрĕссипе илсен, произведенин содержанийĕ вăл — çаппа-çарамас шухăш мар, çаппа-çарамас идеологи мар, вăл эстетикăлла пафоспа, чун хавалĕпе, чĕре туйăмĕпе витĕр витнĕ шухăшсен, ăнланусен «çыххи». Писатель пĕр-пĕр произведенире хăйĕн шухăшĕсене, ăнланăвĕсене, пăхавĕсене эмоцилле-эстетикăлла майсемпе калаçа парать, туйăмсен конкретлă формипе кăтартса парать. Шухăшсене чун-чĕре, сисĕм-туйăм патне çитерме пулăшаканни вăл — формă; формă пулмасан, содержани, каларăмăр ĕнтĕ, пурăнаймасть, кайăка çунат кирлĕ пулнă пекех содержание те формă кирлĕ.

Эпир мĕншĕн-ха кунта содержанипе формă пирки çав тери нумай сăмах вакларăмăр? Акă мĕншĕн: чĕреспе сăра формăпа содержание ăнлантаракан тĕслĕх пулма пултараймасть. Сăрине ĕçсе ярсан (е тăкса ярсан)— чĕрес (формă) юлать, вăл сăрасăр та пĕр çул мар, çĕр çул та ларма пултарать. Паллах, чĕреспе сăра — илемлĕ танлаштару, анчах ытла та примитивлă, механистла танлаштару.

Чĕреспе сăрана формăпа содержани вырăнне илсе кăтартнă хыççăн Исаев, ку тĕслĕх вырăнлă мар пулин те, тĕрĕс вывод тăвать: «Формăпа ăш-чикне кашни калаврах, кашни романрах — произведенирех çыхса пыма пĕлес пулать. Формăпа ăш-чикĕ лайăх килĕшсен, сыпăçуллă пулсан

анчах, тумĕ те, вăл тума тăхăннă ăш-чикĕ те вырăнлă, пĕрпĕринпе килĕшнĕ пулсан анчах произведени лайăх пулма пултарать», тет.

Çав вăхăтрах Д. Исаев хăйĕн статйинче, содержанипе идеологи пĕр пек тесе шутласа, йăнăш тунă. Çавăнпа та ĕнтĕ эпир кунта ун пирки те асăрхаттарас терĕмĕр.

...Исаев Мĕтри çак çырурах тепĕр пысăк ыйту хускатать. Вăл — искусствăн обществăри, халăхри вырăнĕ çинчен калакан ыйту. Унăн çырăвĕнче çак йĕркесене вулатăн та критик ăсĕшĕн, вăл искусствă ыйтăвĕсене марксистла ăнланнăшăн чун-чĕререн савăнатăн: «Искусствă — искусствăшăн çеç пулмалла мар, вăл ĕç халăхне хăйĕн пурнăçне илемлетме, çĕнетме пулăшмалла. Искусствă пирĕн вăхăтра пĕтĕм халăхшăн пулмалла. Искусствăна ĕç халăх массисем патнерех çывхартмалла».

Хăшĕсем, коммунизм тунă тапхăрта искусствă мĕнле пуласси пирки каласа, искусствă çынсене савăнтарса, илĕртсе тăмалла, теççĕ. Пирĕн шутпа, коммунизм тунă тапхăрта искусствă ролĕ çавăн пек çеç пулма пултараймасть: искусствă ролĕ нумайрах, сарлакарах, вăйлăрах пулмалла. Коммунистла искусствă халăха çĕн обществă, коммунизм тума пулăшмалла, унăн ĕçне çăмăллатмалла, малалла чĕнсе тăмалла, пулас кунсене курма çутă памалла, çул кăтартмалла, шухăш-кăмăл, нравственноç тĕлĕшпе аталанса пыма пулăшмалла.

Аса илер-ха КПСС Программинче литературăпа искусствă пирки çырнă йĕркесене. Унта акă мĕн каланă:

«Совет литературипе искусствинче оптимизм, çĕнĕ пурнăç тума хавхалантаракан коммунизмлă идейăсем витĕр палăрса тăраççĕ, литературăпа искусствăн идейăллă воспитани парас ĕçри ролĕ пысăк, вĕсем совет çыннин çĕнĕ пурнăç тăвас пахалăхĕсене аталантарса пыраççĕ. Литературăпа искусствă миллионшар çынсене савăнăç кӳрекен, хавхалантаракан вăй пулса тăмалла, вĕсен кăмăлне, туйăмĕсемпе шухăшĕсене палăртса тăмалла, вĕсене идейă енĕпе ӳссе пыма, нравственноç енĕпе аталанса çитĕнме пулăшмалла».

* * *

Д. Исаев çырăвĕсен хăш-пĕр вырăнĕсене вуласан, куç çуль тухать; çав вăхăтрах унăн оптимизмне, çирĕплĕхне куратăн та: Исаев — эсĕ паттăр çын, чăн-чăн коммунист пулнă! тетĕн.

«Пурăнатăп, темелле, майĕпе,— тет писатель 1930 çулхи январĕн 17-мĕшĕнче çырнă çырăвĕнче.— Тӳрех калас, начар, пур енчен те. Çăкăри пур, какайĕ çук, какайĕ пур, çăкăрĕ çук, вĕсем иккĕш те пур чух чей-сахăрĕ çук — ытти енчен каламастăп та ĕнтĕ. Пĕр ик-виçĕ эрне хушши выçă та пурăнса».

«На самом деле эпĕ, пессимист пулсан, тахçанах çапăнса е çакăнса вилмелле, эпĕ калама çук пысăк оптимист пулнăран çакнашкал асаплансан та вилесшĕн мар-ха. Пурăнасшăн та ĕçлесшĕн...»

Чирлĕ писатель, ӳпкепе пыр туберкулёзĕпе аптранăскер, сывлăхне пăхмасăрах, тăван литературă кун-çулĕ çинчен, альманах кăларасси çинчен шухăшлать. «Вĕт пирĕн альманах — ахаль альманах çеç мар, вăл, пуринчен малтан, пирĕн пĕрлехи «кăрмафон». Чи пахи çавă. Ку пуçламăш, сыв пулсан, кăрмафонтан «громкоговоритель» туса ярăпăр».

Д. Исаев хăйĕн калавĕсене, статйисене кивĕ тĕнчене, кивĕ шухăшсене хирĕç çырнă. Юлташĕсем патне янă çырăвĕсенче те вăл кивви çине тарăхса çырать: «...Ман мĕн пур киввине, кивĕ этемсене, кивĕ тĕнчен пĕчченлĕхĕпе пăнтăхнă чĕреллĕ çынсене çапса салатса, çапса çунтарса кĕлне çилпе вĕçтерсе ярас килет...», тет.

Çак сăмахсене çырнă хыççăн, пĕр-ик уйăхран, 1930 çулхи апрелĕн 18-мĕшĕнче, Дмитрий Владимирович Исаев вилсе кайнă. Вăл 25 çул çеç пурăннă, анчах çав тери сахал пурăннă пулин те, нумай ĕçленĕ, халăх хушшинче хăй çинчен ырă ят хăварнă.

* * *

...Д. Исаев çырăвĕсем пирĕн литературă, уйрăмах литературă критики, мĕнле аталанса пынине, тĕрĕс çулшăн мĕнле тăрăшнине кăтартса параççĕ.

Хăшĕ-пĕрисем Исаев çинчен: вăл чăваш литературишĕн нимех те туман, унăн калавĕсемпе статйисем тахçанах манăçа тухнă, теççĕ.

Иртнĕ вăхăтри писательсен пултарулăхĕ çине çавăн пек нигилистла пăхакансене Исаев хăй тахçанах çакăн пек ответ панă пулĕччĕ: «Çăва çине, калаччăр, эпир хамăр çулпах утар!»

Эпир Исаевăн литературă критикинчи ĕçне пăхса тухнă чух вăл Белинский пек, Чернышевский пек темĕпĕр. (Ун пек критиксем чăваш литературинче мар, вырăс литературинче те курăнмарĕç-ха). Çапла çеç калăпăр: вăл — никам

та мар, чи малтан, ИСАЕВ пулнӑ, тейӗпӗр. Писатель — вӑл, темле пулсан та, кашни пӗрре. Критик та ҫавах. Ҫамрӑк Исаев, писатель тата критик, комсомолец ҫулӗнчех ҫӗре кӗнӗскер, хӑйӗн пултарулӑхне ҫителӗклӗ таран сарса ярайман, ҫапах та самана шухӑш-кӑмӑлӗпе пурӑннӑ, халӑхпа парти писательсене мӗн тума хушнине тӗрӗс ӑнланса ӗҫленӗ, ҫавна пурнӑҫа кӗртессишӗн пӗтӗм вӑй-халне панӑ.

Исаев Мӗтрийӗ кам тесе ыйтакансене ҫапла калӑпӑр: вӑл чӑваш совет прозин никӗсне хываканӗсенчен пӗри, чӑваш литературӑ критикине пуҫарса яраканӗсенчен пӗри пулнӑ. Ҫавӑнпа та вӑл тӑван литературӑ историне ырӑ ятпа кӗрсе юлнӑ.

Кун пек ҫеҫ калани Исаевшӑн сахал: вӑл — чӑваш пичечӗн, уйрӑмах чӑваш ҫамрӑкӗсен хаҫат-журналӗсен паллӑ ҫынни, хастар журналист-коммунист. Вӑл хӑйӗн кӗске ӗмӗрне комсомолпа, тӑван партипе тачӑ ҫыхӑнтарнӑ. Ҫавӑнпа ӗнтӗ унӑн ятне Чӑваш комсомолӗн, пичечӗн историне ҫыракансем манса хӑварас ҫук.

*1962*

## И. Д. КУЗНЕЦОВАН
## ЛИТЕРАТУРА КРИТИКИНЧИ ĔÇЕ-ХĔЛЕ *

Пĕр-пĕр писатель кĕнеке çырсан, ун çинчен критик е тепĕр писатель рецензи (тепĕр чух статья) çырса кăларать. Поэт кĕнеке çырсан та çавах: критиксем ун çинчен рецензисем, статьясем çыраççĕ. Драматург пьеса çырсан, театрта лартаççĕ, театрта лартни çинчен хаçатсенче рецензисем çырса кăлараççĕ. Çыракансем драматург ĕçне те, артистсен ăсталăхне те хаклаççĕ.

Ку ĕнтĕ çавăн пек пулмалла та: мĕншĕн тесен критикă, унăн тĕп пĕлтерĕшне асра тытса калас-тăк, тишкерес, хаклас, ăнлантарас, пропагандăлас, çитменлĕхсене, йăнăшсене кăтартса парас, вĕсене тӳрлетме пулăшас тенине пĕлтерет. «Критикă,— тесе çырнă хăй вăхăтĕнче Н. Г. Чернышевский,— вăл мĕнле те пулин литература произведенийĕн лайăх енĕсемпе çитменлĕхĕсене тишкерни пулать. Унăн ĕçĕ — çав произведени çинчен халăхăн чи малти сийĕ мĕн шухăшланине каласа парасси, ăна массăсем хушшине малашне сарма пулăшасси. Ахалех паллă ĕнтĕ, критикă хăйĕн шухăшне уççăн, татăклăн та тӳррĕн калама тăрăшать пулсан çеç, çав ĕçе мĕн чухлĕ те пулин çителĕклĕ таран пурнăçа кĕртсе пыма пултарать» («Об искренности в критике»** статья).

Вырăссен аслă критикĕсем Белинский те, Чернышевский те, критикă пирки сăмах хускатсан, яланах эстетикă

---

* Ку статья «Литература критики вăйлансах пытăр!» ятпа И. Д. Кузнецовăн «Чăваш культурипе литературин хăш-пĕр ыйтăвĕсем тавра» ятлă кĕнекинче (1961) хыççăмах вырăнне пичетленнĕ.

** Н. Г. Чернышевский. Избранные сочинения. ГИХЛ. 1950, стр. 497.

ыйтăвĕсене асра тытнă: критик тишкĕрекен произведени вулакансен мĕнле туйăмĕсене хускатать? вĕсен ырă туйăмĕсене аталантарать-и? хитрене, илеме туйма вĕрентет-и? кăмăла савăнтарать-и? хаваслантарать-и? тата ыт. те.

Шăпах çакнашкал ыйтусене асра тытса, вырăссен пирĕн вăхăтра пурăннă тепĕр чаплă критикĕ А. В. Луначарский çакăн пек çырнă: «Вулаканăн илем туйăмĕсене витереймен произведени илемлĕ литературă произведенийĕ пулма пултараймасть, эстетика туйăмĕсене хускатать пулсан çеç, ăна чăннипех те илемлĕ произведени теме пулать». Произведенин илемлĕх хăватне хакласси — литературă критикин тĕп задачисенчен пĕри. Унăн тепĕр задачи — произдение социалла хак парасси. Анчах ку задачăсем пĕр-пĕринчен уйрăм тăмаççĕ: вĕсем, пĕр-пĕринпе тачăран та тачă çыхăнса, пĕр-пĕринпе пĕрлешсе, пĕр-пĕрне пулăшса тăраççĕ *.

Эпир пĕрре çеç мар çапла каланăччĕ: литературăра критикă пулмасан, тĕрĕсрех, критикă жанрĕ пулмасан, нихăш литературă та анлă литературă, пур тĕлĕшпе те вăйлă, хăватлă аталанса çитнĕ литературă тесе шутланма пултараймасть. Этеме кĕлеткен пур пайĕсем те кирлĕ пулнă пекех, литературăна та чăн-чăн литературă ятне илтме пур жанрсем те кирлĕ,— поэзи, прозă, драматурги, критикă, публицистикă кирлĕ. Литературăри кашни жанрăн хăйне тивĕçлĕ вырăн пур, хăйне тивĕçлĕ уйрăмлăхсем, мелсем, аталану законĕсем пур.

Критикăна илес пулсан, вăл ытти жанрсемсĕр пуçланма, аталанма пултараймасть, анчах пĕрре пуçланса кайсан, вăл ытти жанрсене аталанма, малалла кайма пулăшать (эпир кунта хальхи вăхăта асра тытса, чи малтан, парти ĕçĕпе тачă çыхăнса тăракан марксистла-ленинла критикă çинчен калатпăр).

Эпир кунта литературă жанрĕсем хушшинче публицистикăна та асăнтăмăр. Мĕншĕн?— тесе ыйтма пултараççĕ теприсем. Акă мĕншĕн: публицистикăпа критикă питех те çывăх тăраççĕ; тепĕр чухне вĕсем пĕр-пĕринпе пĕрлешсе те каяççĕ. Марксистла литературă критики публицистла литературă критики пулмалла тесшĕн эпир. В. И. Ленин, М. Горький, В. В. Воровский, А. В. Луначарский çырнă критикăлла статьясем — пурте публицистла статьясем.

---

* А. В. Луначарский. Критика и критики. М., Госполитиздат, 1938, 10, 13 стр.

Марксистла литература критикин тӗп пахалӑхӗ, тӗп уйрӑмлӑхӗ — вӑл парти политикине, унӑн кӑтартӑвӗсене литература ӗҫӗнче пурнӑҫа кӗртессишӗн кӗрешни, массӑсене революцилле, коммунистла воспитани парас ӗҫре тӑван партие пулӑшни.

Октябрьти революци хыҫҫӑнхи ҫулсенче Совет ҫӗршывӗнчи халӑхсен литератури улӑпла утӑмсем турӗ. Чӑваш литератури те хӑватлӑн аталанса вӑрман пек ешерме пуҫларӗ. Ҫак чаплӑ ҫитӗнӳсен никӗсӗ ҫинче чӑвашсен литература критики аталанса ҫитӗнчӗ, хӑйне уйрӑм жанр пулса тӑчӗ. Литературӑра ятлӑ критиксем палӑрчӗҫ (И. Д. Кузнецов, А. И. Золотов, Г. И. Кузнецов-Кели, Д. В. Исаев, М. Я. Сироткин). Ҫакӑ вӑл чӑваш литератури ҫӗнӗ те пысӑк утӑм тунине пӗлтерет. Чӑваш литератури аталанса малалла кайнӑ май литература критики те аталанать, критикӑ аталанни, вӑй илсе пыни литературӑна, унӑн тӗрлӗ жанрӗсене пулӑшать.

...Эпир ҫак кӗнекере асӑннӑ критиксем хушшинче Иван Данилович Кузнецов чӑннипех те паллӑ вырӑн йышӑнса тӑрать. Вӑл — чӑвашсен марксистла-ленинла литература критикине пуҫарса янӑ юлташсенчен пӗри.

И. Д. Кузнецов Патӑръел районӗнчи Вырӑскассинче 1906 ҫулхи июнӗн 12-мӗшӗнче ҫуралнӑ. Унӑн ашшӗ-амӑшӗ — чухӑн хресченсем. Ашшӗ, ялти тимӗрҫӗ, 1915 ҫулта вӑрҫӑра вилнӗ. Амӑшӗ виҫӗ ачана пӗччен, хӗрарӑм вӗҫҫӗн, ӳстернӗ. Тӑлӑх туратсен пӗчӗклех хура-шур курма тивнӗ. Ҫапах та вӗсем пурте ӗҫпе пурӑнма, вӗренме тӑрӑшнӑ, совет вӑхӑтӗнче аслӑ шкулсем пӗтернӗ, пысӑк специалистсем пулса тӑнӑ.

Иван Кузнецов 1920 ҫулта, вун тӑваттӑра чухне, ялта комсомол ячейки организациленӗ, виҫӗ ҫул хушши комсомол ӗҫӗнче пулнӑ (ялти ячейкӑ тата вулӑс комитечӗн секретарӗ, укомол инструкторӗ). 1923—1926 ҫулсенче Кузнецов юлташ Шупашкарта Чӑваш рабфакӗнче вӗреннӗ. 1931 ҫулта Мускавра Хӗрлӗ профессура институтӗнчен вӗренсе тухнӑ (унта вӑл историпе вӗрентекен институт пӗтернӗ). Ҫавӑн хыҫҫӑн Кузнецов темиҫе ҫул хушши парти ӗҫӗнче, тӗрлӗ институтсенче доцент, кафедрӑ руководителӗ пулса ӗҫлет, историпе вӗрентет.

И. Д. Кузнецов —«Ҫамрӑк хресчен» (хальхи «Ҫамрӑк коммунист») хаҫата пуҫарса яракансенчен пӗри: вӑл унӑн малтанхи секретарӗ пулнӑ, темиҫе ҫул хушши унта статьясем ҫырса тӑнӑ. Рабфакра вӗреннӗ вӑхӑтрах Кузнецов юл-

таш чăваш писателĕсен малтанхи пĕрлешĕвĕнче — «Канаш» союзĕнче активлăн ĕçленĕ. Унăн журналистикăпа литератури ăсталăхĕ аталансах пынă: пурăна киле вăл чăвашсен паллă публицисчĕсенчен пĕри пулса тăрать, литературă критики тĕлĕшпе те тăрăшса ĕçлет. Вăл, марксизм-ленинизм теорине лайăх вĕреннĕскер, хăй тĕпчекен ыйтусем темле кăткăс пулсан та, вĕсен тупсăмне шыраса тупма пĕлет. Çакна унăн «Сунтал», «Ленин çулĕпе», «Тăван Атăл», «Борьба классов», «Историк-марксист», «Советская этнография», «Книга и революция», «Революционный Восток», «Социалистическое строительство ЧАССР» журналсенче, «Правда», «Горьковская коммуна», «Коммунизм ялавĕ», «Советская Чувашия» тата ытти хаçатсенче пичетленнĕ статйисем лайăх кăтартса пparticularly.

И. Д. Кузнецов 1925 çултанпа Коммунистсен партийĕнче тăрать. Вăл — нумай вĕреннĕ историк-марксист, экономист, публицист, критик. Кузнецов юлташ хăйĕн критикăлла статйисенче принципла ыйтусем лартма, вĕсене тарăн çутатса пама тăрăшать. Çакна пула вăл пирĕн критиксем хушшинче уйрăмах паллă вырăн йышăнать. Кузнецов юлташăн тата пирĕн ытти критиксен ĕçĕсем пире çакăн çинчен те уççăнах калаççĕ: литературă критикĕн, литературă ыйтăвĕсене тĕплĕн пĕлнĕ вăхăтрах, истори ыйтăвĕсене лайăх пĕлмелле, историе пĕлмен çынна критик пулма йывăр.

Çакна палăртмалла: И. Д. Кузнецов литературă критикĕнчен ытларах историк. Анчах та çакă ăна критикă ĕçне ăнăçлăн туса пыма кансĕрлемест, пулăшать кăна. В. И. Ленин вĕрентнине асра тытса, И. Д. Кузнецов: историри деятельсен ĕçĕсене хальхи шайран пăхса, ăна туман, кăна туман тесе тиркемелле мар, унтан малараххисен шайĕпе танлаштарсан, вĕсем мĕн çĕнни панине пăхса историлле хаклас пулать, тет. Çакă вăл историлле метод. Унпа литературă историне тĕпченĕ чухне те, иртнĕ тапхăрсенчи писательсен пултарулăхне тишкернĕ чухне те усă курмалла. Çав-çав писатель ăна туман та куна туман тесе сӳпĕлтетни вырăнсăр. Вĕсенчен маларах пурăннă писательсемпе танлаштарсан, вĕсем мĕн-мĕн тунă, çĕннине мĕн панă, камшăн, мĕнле класшăн тăрăшнă, халăха мĕнле усă панă тата ыт. те. Çакăн пек ыйтусем лартса, иртнĕ вăхăтри деятельсен пĕтĕм ĕçне-хĕлне, пĕтĕм пултарулăхне ун чухнехи социаллă условисем енчен пăхса тухмалла.

Час-часах çакăн пек каланине илтме пулать: критиксен марксизм-ленинизм вĕрентĕвне лайăх пĕлмелле, теççĕ. Ку

шухăш тĕрĕсрен те тĕрĕс шухăш. Марксизм-ленинизм теорине лайăх пĕлекен, унпала пултаруллă усă куракан критик философла шухăшлама, литературă тĕлĕшпе тĕрĕс пĕтĕçтерӳсем тума пултарать. Теорире тайкаланса, çапкаланса, такăнса пыракан критикăн пĕтĕçтерĕвĕсем, вывочĕсем тĕрĕс пулма пултараймаççĕ.

И. Д. Кузнецовăн кĕнекисене, нумай-нумай статйисене вуласа, тишкĕрсе тухсан, кашниех çакна курать: унăн ĕçĕсем хушшинче, каларăмăр ĕнтĕ, истори ыйтăвĕсем тăрăх çырнă произведенисем ытларах. Вăл çырнă 15—16 кĕнеке хушшинче литературă ыйтăвĕпе çырнă кĕнеке пĕтĕмпе те иккĕ çеç. (Пĕри —«Наци ыйтăвĕпе чăвашсен илемлĕ литератури», 1931 ç.; тепри — «Чăваш культурипе литературин хăш-пĕр ыйтăвĕсем тавра», 1961 ç.).

И. Д. Кузнецов, наукăпа литературă ĕçне тăрăшса туса пынипе пĕр вăхăтрах, Маркс, Энгельс, Ленин кĕнекисене вырăсларан чăвашла куçарас ĕçе хутшăнать. Вăл марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсене (Марксăн хăш-пĕр произведенийĕсене тӳрех нимĕçлерен) нумай куçарнă. Аста тăлмач хăйĕн тĕрлĕ статйисенче В. И. Ленинăн кĕнекисене чăвашла мĕнле куçарни çинчен те çырать, çак ĕçри опыт çинчен калать, çитменлĕхсене палăртать. Хăшĕ-пĕрисенчен çакăн пек каланине илтме пулать: марксизм-ленинизм классикĕсен кĕнекисене чăвашла куçарма кирлĕ мар, мĕншĕн тесен çав кĕнекесене вулас текен вырăсла та вулама пултарать, унăн пĕлĕвĕсем çителĕксĕр пулсан, вăл тăван чĕлхепе вуласан та марксизм-ленинизм теорине ăнланаймасть. Ку вăл пачах та тĕрĕс мар шухăш. Тăван чĕлхене пĕлекен çын хăйĕн тăван чĕлхипе вулама пăрахмĕ. Паллах, марксизм-ленинизм классикĕсем çырнине чăвашла куçарас ĕç — йывăр ĕç, анчах вăл — питĕ хисеплĕ ĕç, чăваш халăхĕн ăс-тăнне хăпартас ĕç.

И. Д. Кузнецов марксизм-ленинизм классикĕсен ĕçĕсене пропагандăлас тĕлĕшпе те нумай вăй хурса ĕçлет, публицистикăлла статьясем çырать. Унăн публицистикă шутне кĕрекен ĕçĕсенчен чи паллăраххи, пирĕн шутпа, «Атăл паттăрĕ» ятлă статья *.

«Атăл паттăрĕ» статьяра аслă çулпуç, учитель çинчен, тĕнчери пур çĕршывра та пĕлекен, ĕç çыннисем ырă сăмахпа асăнакан Владимир Ильич Ульянов (Ленин) çинчен çырнă. Автор хăйĕн статйине «В. И. Ленин çинчен хыв-

* Ку статьяна 1960 ç. «Ялав» библиотекинче уйрăм кĕнекепе кăларнă.

нă юмаха ăнлантарса пани» тет. Ку статьяра аслă çулпуçăн революцилле ĕçĕ-хĕлĕ çинчен, Российăри халăхсемшĕн, çав шутра чăвашсемшĕн те, вăл мĕн тери пысăк ĕç туни çинчен кĕскен çырса панă. Çак статьярах тата чăваш хулисемпе ялĕсене В. И. Ленин çырнă кĕнекесем тата ытти марксистла литературă мĕнле пырса кĕнине, рабочи класăн революцилле шухăшĕсене чăваш ĕç çыннисем мĕнле ăса илнине кăтартса çырнă.

Статья авторĕ илсе кăтартнă тĕслĕхсем чуна савăнтараççĕ. Вĕсем çинчен çырнă страницăсене вулатăн та, паттăр çынсен ячĕсене асăнса, кăмăла хăпартса: мухтав вĕсене, мухтав! — тетĕн.

В. И. Ленин кĕнекисем революцичченех халăхсем хушшинче хăйсен тусĕсене, пропагандисчĕсене тупнă. Аслă çулпуçăн кĕнекисем чăваш халăхĕ хушшинче те саралнă. Сăмахран, Шупашкарти большевиксем (Зеленский, Пятницкий тата ыт.) Ленин çырнă документсене халăх хушшине сарнă, хăйсене тĕрмене илсе кайнă пулин те, полици аллине паман, — партин III съезчĕн материалĕсене çĕр айне пытарса, çăлса хăварнă! Çав материалсем Шупашкарта 1959 çулччен çĕр айĕнче упранса выртнă, вĕсем хушшинче: Ленин съездра каланисем, вăл сĕннĕ тăрăх йышăннă резолюцисем пулнă.

1913 çулта Çĕрпӳ уесĕнчи Мăн Чак ялĕнчи Петр Матвеев хресчен «Правда» хаçатăн çирĕм пĕр номерне вуланă, унта мĕн çинчен çырнисене халăха каласа панă. Хаçатăн çав номерĕсенче В. И. Ленин çырнă статьясем темиçе пичетленнĕ пулнă.

Большевикла «Правда» хаçатра (унччен «Искра», «Пролетарий» хаçатсенче) чăвашсем çинчен çырнă статьясемпе заметкăсем те пичетленнĕ. Вĕсене чăваш ĕç çыннисен хутне кĕрсе çырнă.

1917 çулта Шупашкарта большевиксем кăларса тăнă «Чебоксарская правда» хаçат В. И. Ленин çырнă статьясене çапса кăларнă, чăваш халăх хушшине салатнă. Ленин шухăшĕсем чăваш ĕç çыннисене те ĕçпе кĕрешӳре хавхалантарнă.

К. Маркспа Ф. Энгельс тата В. И. Ленин произведенийĕсене чăвашла куçарса кăларни çинчен çырнă статьясенче И. Д. Кузнецов марксизм-ленинизм вĕрентĕвне «чăваш ăс-хакăлне кĕртсе пырасси» çинчен калать.

Вăтăр çул ĕлĕкрех французсен пĕр буржуалла журналисчĕ чăвашсем çинчен: «Вĕсем Ленина ăнланаççĕ-ши?»

тесе кулма хăтланса çырнăччĕ. Чăваш ĕç çыннисем, элекçĕ журналиста ответлесе, çавăн чухнех: эпир аслă Ленин çырнисене, унăн вĕрентĕвне ăнланатпăр çеç мар, пурнăçа кĕртсе пыратпăр, тенĕччĕ.

Чăваш ĕç çыннисем В. И. Ленин произведенийĕсене вырăсла та, чăвашла та вуланă, ăнланса вуланă. Вĕсем, Коммунистсен партийĕ ертсе пынипе, ытти халăхсен ĕç çыннисемпе пĕрле, 1917 çулта Аслă социализмлă революцие активлăн хутшăннă, 1918—1920 çулсенче граждан вăрçинче тăван çĕршывăн тăшманĕсене хирĕç хастар çапăçнă. Чăваш халăхĕ революци кунĕсенчен тытăнсах социализм строительствинчен пĕр самант хушши те аякра тăман — социализма пĕтĕм чунне парса ĕçленĕ, уншăн кĕрешнĕ. Чăваш çĕршывĕнче те социализм халăх пурнăçне кĕчĕ, коммунизм строительстви анлăн сарăлса кайрĕ. Çакă вăл, паллах, чăваш халăхĕ В. И. Ленин произведенийĕсене лайăх ăнланни çинчен, унăн шухăшĕсене ăса илни, чĕрене хывни çинчен калать. Карл Маркс хăйĕн пĕр произведенийĕнче: идейăсем массă хушшине сарăлсан, вĕсене массăсем ăнланса ăса илсен, вĕсем (идейăсем) материаллă вăй пулса тăрaççĕ, тенĕ. Марксизм-ленинизм идейисем халăх ăс-тăнне кĕрсе тахçанах ĕнтĕ хăватлăран та хăватлă вăй пулса тăчĕç. Вĕсене халăхран ниепле те уйăрма çук. Мĕншĕн тесен вĕсем халăх ăсĕнче, халăх чĕринче, вĕсем халăх пурнăçĕнче, ĕçĕнче, вăйĕнче,— Ленин идейисем аталанса пыракан марксизм-ленинизм наукинче çеç мар, паттăр совет халăхĕ тăвакан коммунизмра та пурăнаççĕ. Çапла, вĕсем куллен-кун пурнăçа кĕрсе пыраççĕ.

Чăваш халăхĕ те, Ленин вĕрентĕвне ăнланса, ытти халăхсемпе юнашар тăрса, алран алă тытса коммунизм тăвать. Чăваш халăхĕ хăйĕн ĕçĕсемпе тивĕçлипех савăнма пултарать: унăн пĕтĕм экономики, культури социализма пула улăпла утăмсем турĕ, ăс-хакăлĕ улшăнчĕ.

В. И. Ленин произведенийĕсене чăвашсем мĕнле ăнланни çинчен каланă шухăша пĕтĕçтерсе çырас пулсан, çакăн пек калама пулать: Ленинăн произведенийĕсене чăваш тăлмачĕсем чăвашла куçарнисĕр пуçне, чăваш халăхĕ хăй Ленинăн аслă идейисене, унăн вĕрентĕвне «чăвашла куçарать», урăхла каласан, хăйĕн пурнăçне, чăваш пурнăçне кĕртет, ăс-тăнне, чĕрине кĕртсе тăван шухăш, тăван идейă тесе йышăнать. Çакă чăваш халăхне, социализмла чăваш нацине вăй парать, марксизм-ленинизм кăтартнă çулпа пĕр пăрăнмасăр пыма пулăшать.

* * *

Литература енĕпе ĕçleме И. Д. Кузнецов рабфакра вĕреннĕ чухнех тытăннă. Рабфакра литературăпа интересленекен, литературăна юратакан студентсем П. В. Васильев (Рони), Г. И. Кузнецов (Кели), И. Ф. Пачура, М. С. Степанов (Пиçен) тата ыттисем те «Кузница кадров» стена хаçачĕпе «Шăнкăрав» журнал кăларса тăнă, унта çамрăк литераторсем сăвăсемпе калавсем, статьясем пичетленĕ. Çав вăхăтрах вĕсен сăввисем, фельетонĕсем, калавĕсемпе статйисем «Канаш», «Çамрăк хресчен» хаçатсенче, «Сунтал», «Капкăн» журналсенче тăтăшах пичетленсе пынă.

Чăваш рабфакĕнчи литература кружокĕ малтарахра асăннă юлташсем вĕренсе тухсан та ĕçлеме пăрахман. Унта аслăрах юлташсем пуçарнă ĕçе кайрантарах рабфака вĕренме кĕнĕ çамрăксем малалла илсе пынă. Кунта, сăмахран, çак юлташсене асăнма пулать: А. Таньков, М. Аттай, Н. Эхмин тата ыт. те. Вĕсен сăввисемпе калавĕсем чăваш хаçат-журналĕсенче пичетленнĕ, уйрăм кĕнекесемпе те тухнă.

И. Д. Кузнецов хĕрлĕ профессорсем хатĕрлекен институтра вĕреннĕ тапхăрта çырнă критикăлла статйисенче ытларах Çеçпĕл Мишши, П. Хусанкай, В. Митта, В. Рсай произведенийĕсене тишкернĕ. Çамрăк поэтсен сасси хăш чухне йăнăш янранă, сăввисенче час-часах çитменлĕхсем кăна мар, пысăк йăнăшсем те пулнă. Вĕсен йăнăш шухăшĕсене И. Д. Кузнецов «Тăвăлпа çунатланнă поэтсем е авалхипе çуначĕсене амантакансем» (1928) тата ытти статьясенче критикленĕ.

Вăл хăйĕн статйисенче Д. Юман произведенийĕсене, унăн националистла шухăшĕсене ним шеллемесĕр критиклет. Çакна «Национализма хирĕç», «Палăртмасăр иртме çук» (Юманăн «Ӳкăлча касси» ятлă драми пирки) статьясенче курма пулать. Çав статьясенчен пĕринче автор çакăн пек çырать: «Пĕр иккĕленмесĕрех çапла калас пулать: национализма хирĕç эпир камне пăхса кĕрешместпĕр. Йăнăшсене тӳрлетсе, пĕр авкаланмасăр-тумасăр, уççăн татса каласа, ĕçпе тĕрĕссине кăтартакансене никам та ĕçлеме чарас çук, пулăшатпăр та. Анчах ик айкки те тăвайкки тесе, сулкаланеа, «пытанмалла вылякаласа», чăваш ĕç халăх хушшине националистла сĕрĕм саракансене хирĕç вирлĕн, çине тăрса, пĕр иккĕленмесĕр кĕрешмелле. Марксистла,

коммунистла идеологие пăсакансене ачашлама нимле май та çук, ачашламастпăр та, ачашламăпăр та».

Пирĕн, тет малалла критик, национализма хирĕç мĕн çĕнтеричченех кĕрешсе пымалла. Халĕ ĕнтĕ эпир çакăн пек калама пултаратпăр: Чăваш парторганизацийĕ буржуалла национализма пĕтĕмпех çĕнтерчĕ, истори наукинче те, литературăра та, чĕлхе ыйтăвĕсенче те пуçĕпех тĕп турĕ. Социализм пурнăçа кĕрсе çирĕпленнĕ тата коммунизм обществине сарлакан тума тытăннă май буржуалла национализмăн экономикăлла, социалла никĕсĕсем пĕтрĕç. Апла пулин те, парти çапла асăрхаттарать: çапах та унăн юлашкисем хăш-пĕр чух сынсен ăс-тăнĕнче, кивĕ тĕнчен ытти юлашкисемпе пĕрле, палăрма пултараççĕ. Çавăнпа та парти воспитани ĕçне пĕр чарăнмасăр туса пыма хушать.

И. Д. Кузнецов юлташ юлашки вăхăтра П. Хусанкай, Н. Патман, А. Артемьев тата ыттисен пултарулăхĕ çинчен темиçе статья çырчĕ. П. Хусанкая вăл «хастар чĕреллĕ халăх сăвăçи», «хăйĕн шухăш-кăмăлĕпе кăна мар, хăй çырнă сăввисен сюжечĕпе те интернационаллă поэт», тет. Хусанкай хăйне яланах халăхпа пĕрле туять; унăн чĕре юррисем — чунтан-вартан халăха юратса, ăс-пуçпа шухăшласа çырнă юрăсем: чăваш ваттисем калашле, унăн «кăкăрĕ айĕнче çирĕп шухăш пур», «шухăшĕсем чĕре çумĕнче, сăмахĕсем чĕлхе вĕçĕнче».

Иртнĕ вăхăтра П. Хусанкай хăйĕн уйрăм поэмисемпе сăввисенче пысăк йăнăшсемех тунă. Çав вăхăта асра тытса, И. Д. Кузнецов çапла асăрхаттарать: «Хăш-пĕр юлташсем П. Хусанкайăн çамрăклăхра йăнăш пулнине илеççĕ те, вăл малтан националист пулнă тенĕ пекех сӳпĕлтетеççĕ. Анчах унашкал калаçни пĕрре те тĕрĕс мар. Хусанкай националист пулман, пулма та пултарайман». Мĕншĕн тесен вăл мĕн ачаран тенĕ пек ĕçпе ӳснĕ, ĕç çыннисен пурнăçĕпе пурăннă, ака-суха туса, хура çăкăр çисе ӳснĕ, çитĕнсе çитсен, совет самани сывлăшĕпе сывласа пурăннă, коммунизм идейисене ăса илсе хăйĕн ăс-пуçне йĕркеленĕ. Халĕ вăл — Коммунистсен партийĕн активлă членĕ.

И. Д. Кузнецовăн нумаях пулмасть çырнă критикăлла статйисенчен уйрăмах «Писатель ĕçне тухăçлăрах тăвасчĕ» ятлă статйи палăрса тăрать. Статьяра Хветĕр Уярăн 1952 çулта çапăнса тухнă «Шурча таврашĕнче» романне тĕплĕ тишкерсе çырнă.

Хветĕр Уярăн историллĕ романне критик çакăн пек хаклать: «Романăн пĕрремĕш кĕнеки прологпа пуçланать те,

прологран тухаймасть те. Вăл — кинофильм пуçланас умĕн артистсен ячĕсемпе сăнĕсене кăтартса панă евĕрлĕ. Кунта авторăн темине те, идейăллă туртăмĕсене те тавçăрса илме литĕ хĕн. Историе пĕлекен çын та ку тĕлĕшпе уççăн, татăклăн каласа парас çук, мĕншĕн тесен Шурча таврашĕнче тем те пулма пултарнă».

Малалла критик историллĕ роман пирки питех те интереслĕ шухăш калать (тĕрĕссипе калас-тăк, унăн ку вырăнта чĕлхи те писатель-художник чĕлхипе танах): «Историллĕ романăн каштипе урайĕ тĕреклĕ пулмалла. Историлле фактсене, ача-пăча вăййинчи пек, пĕрре пăсса, тепре купалама май çук, мĕншĕн тесен вĕсем мĕнле пулнă, çаплах юлаççĕ. Писателĕн ĕçĕ-хĕлĕ, историкĕн евĕрлех — çум курăк пусса илнĕ фактсен никĕсне кирлĕ мар пĕркенчĕксенчен сирсе парахасси. Паллах, историкпе писатель расна çыраççĕ. Историк çырнă чух ăнсăртла вак-тĕвексем сирĕлсе юлаççĕ. Писатель çырнă чух вак-тĕвексемсĕр пулмасть, мĕншĕн тесен писатель ăслав вĕççĕн кăна çырмасть, сăнлав витĕр, типланă çынсен сăнарĕсем урлă çырса кăтартать. Çапах писатель те тĕпри никĕсе, каштана çухатса çырма пултараймасть».

Критикăн шухăшне кăштах аталантарса, эпир тата çапла каласшăн: писателĕн те, историкĕн те, критикĕн те хăйсен ĕçĕнче «самана каштине» манмалла мар. Çав вăхăтрах вĕсен ĕçĕн меслечĕ тĕрлĕ: писатель-художник кирек хăш событие те, хăйĕн геройĕсене, ыррине те, усаллине те, художествă, илемлĕх, сăнлăх меслечĕпе кăтартса, типласа парать; историк е критик ытларах логикă вăйĕпе усă курать. Çапах та критикпа историк ĕçĕнче пĕр пекки нумай: историк обществăпа халăх пурнăçĕнчи, государствăпа политикă ĕçĕнчи фактсене тĕпчесе вĕренсе кирлĕ выводсем тăвать; критик литературăри явленисене, фактсене тĕпчесе вĕренсе кирлĕ выводсем тăвать, произведенисене, писательсен ĕçĕсене хак парать. Анчах критикрен, пирĕн шутпа, нумайрах тата урăххине ыйтаççĕ. Историк логикăпа, ăс-тăнпа ытларах ĕçлет пулсан, критик логикăпа, ăс-тăнпа ĕсленĕ вăхăтрах чĕрепе, чунпа, вĕсен туйăмĕсемпе те ĕçлет. Критикăн чи ăста писатель пек, пысăк чĕреллĕ художник пек пулмалла. Критик та хăйĕн ĕçĕсем пирки: эпĕ çынсен ăсĕсене çутатрăм, чĕрисенче ырă туйăм çуратрăм, тесе калама пултартăр. Ун пек калас пулсан, критикăн чи ăста писательпе тан пымалла, иртсе те каймалла...

И. Д. Кузнецов 1959 çулта литературăн нацилле уйрăмлăхĕ пирки сăмах хускатрĕ («Литературăра нацилле

хăйне евĕрлĕх çинчен калаçнă май» статьяна вулăр. «Ялав», 7-мĕш номер, 1959 çул).

Тӳрех калас пулать: литературăпа искусствăн нацилле уйрăмлăхĕ, нацилле традицисем пирки чăваш литературинче ку таранччен путлĕ çыракан-тăвакан пулман. 1930 çулсенче ку тĕлĕшпе М. Федоров критик, темиçе ыйту илсе, ик-виç статья çырнăччĕ. Ун чухне çав статьясене вуласа ăнланакансем те пулнă, те пулман,— калама хĕн. Дмитрий Исаевпа Иван Кузнецов Федоровăн тăм чӳлмекре çуралнă «философине» критиклесе темиçе статья пичетленнĕччĕ. И. Д. Кузнецовăн статйисенчен пĕри —«Илемлĕхри хальхипе иртни (тенденцилĕхĕн тенденцийĕ е пĕр критик павăрни çинчен)» ятлăскер —«Наци ыйтăвĕпе чăвашсен илемлĕ литератури» кĕнекере тухнăччĕ.

Çак асăннă статьясем хыççăн литературăн нациллĕ уйрăмлăхĕ пирки никам та сăмах хускатман тесен те йăнăш пулас çук. Критиксем ку ыйтăва тĕпчеме мар, яланах пăрăнса иртсе кайнă. Мĕншĕн тесен вĕсене çав ыйтура хăшпĕр критиксем «этемле мар» пăтраштарса пĕтерни вут-кăвар пекех хăратса тăнă. Тата вĕсене çакă та хытă хăратнă: культ тапхăрĕнче литературăн нацилле уйрăмлăхĕсем çинчен çырма мар, пĕр-ик сăмах каласан та хăш-пĕр этемсем националист е... (калама та вăй çитмест...) туса хуратчĕç. Çав хăрушă кунсенче хăçан та пулин литературă кружокĕнче тăнăшăн айăпланисем те пулнă. Пĕр юлташа «суть» сăмаха чăвашла «тупсăм», «значение» сăмаха «пĕлтерĕш», «род» сăмаха «несĕл» тесе куçарнăшăн айăплама пăхнăччĕ.

И. Д. Кузнецовăн литературăри нацилле хăй евĕрлĕх çинчен çырнă хальхи статйи, пирĕн шутпа, сăмах хускатас, сăмах тапратса ярас тесе çырнă статья.

Кашни халăх литературин нацилле уйрăмлăх (спецификă), нацилле формă пур. Вĕсем чăваш литературин те пур. Нацилле уйрăмлăх тымарĕсем, йывăç тымарĕсем çĕре кĕрсе вырнаçнă пек, халăх пурнăçне кĕрсе вырнаçнă; вĕсем, йывăç çĕртен сĕткен илсе тăнă пек, пурнăçран сĕткен илсе тăраççĕ. Литературăн нацилле уйрăмлăхне халăх пурнăçĕнчен уйăрма çук. Анчах çав уйрăмлăхсене хытса ларнă, нихçан улшăнми япала теме те çук. Çыннăн нацилле характерĕ, кăмăлĕ ытти çынсемпе хутшăннипе, пурнăç аталанса, улшăнса пынипе пуянланса пырать. Йăласем, традицисем улшăнаççĕ: лайăххисем пурăнаççĕ, çирĕпленеççĕ; юрăхсăррисем пĕтеççĕ, сухалаççĕ. Çавăнпа та тахçанхи йăласене, ватă асаттесем ĕмĕрĕнчех манăçа тухнăскерсене (авал-

лăхрисене — XIX ĕмĕре, XIX ĕмĕртисене — XX ĕмĕре, революцичченхисене — хальхи вăхăта куçарса), тепĕр хут чĕртсе яма тăрăшни, пирĕн халăхăн йăлисем халĕ те çавăн пекех тесе сӳпĕлтетни вырăнсăр. Нацилле уйрăмлăхсене шута илмелле, анчах вĕсене ытлашши ӳстерсе кăтартни — ниме юрăхсăр япала.

Класлă обществăра искусствăн нацилĕхĕ яланах класлăхпа ним уйрăлми çыхăнса тăрать, анчах унăн тĕп пĕлтерĕшне палăртаканни класлăх, мĕншĕн тесен класлă интерессем нацилле интерессенчен вăйлăрах. Класлă интерессем нацие касса, çурса, таткаласа тăраççĕ.

Çĕнĕ, социализмлă обществăра искусствăпа литературăн нацилĕхĕ халăхлăхпа çыхăнса тăрать. Çав халăхлăх совет халăхĕсене пĕр-пĕринпе çывхартать, вĕсен туслăхне çирĕплетет, интернационализм патне илсе пырать. Социализмлă искусствăн демократилле, социализмлă элементсем буржуалла обществăрах çуралнă, социализм саманинче вара никам курман-илтмен хăватпа аталанса кайнă. Социализмлă искусствăра интернацилĕх (пĕтĕмĕшли) нацилĕхпе (уйрăммипе) диалектикăллă пĕрлĕх пулса тăрать.

Татах та татах çакна палăртса калас килет: писателĕн нацисене пĕр-пĕринчен уйăраканнине мар, пĕр-пĕринпе пĕтĕçтерекеннине кăтартса памалла, интернационализм, халăхсен туслăхĕн идейисене тĕпе хурса ĕçлемелле.

1960 çулхи июлĕн 17-мĕшĕнче парти руководителĕсем совет интеллигенцийĕн представителĕсемпе тĕл пулса каласнă чухне М. А. Суслов çакăн пек каланă: «Пĕр наци культурине тепĕр наци культуринчен уйăрса тăраканнине кăна, е халăхăн иртнĕ пурнăçĕпе, унăн историйĕпе çыхăнса тăраканнине кăна, халăхăн социалла тата нацилле пусмăр условийĕсенчи йывăр пурнăçне кăтартса параканнине кăна нацилле традици тесе шутлани тĕрĕс мар пулнă пулĕччĕ. Советла социализмла нацисен хутшăнăвĕсенче коммунизм туса пынă вăхăтра аталанса çирĕпленекен çĕнĕ традицисене, пĕр йышши паллăсене лайăхрах курмалла, пулăшса тăмалла. Нацилле культурăсен аталанăвĕнче пирĕн çĕршыври халăхсен пурнăçĕнче кунсерен çуралса çитĕнекен çĕнĕ, коммунизмла пахалăхсене пур майсемпе те пулăшса аталантарса пымалла»*.

М. А. Суслов сăмахĕсенче традици ыйтăвне, истори

* М. А. Суслов. За подлинно великое искусство коммунизма. «Литература и жизнь» хаçат, 85-мĕш №, 1960 çулхи июлĕн 20-мĕшĕ.

енчен пăхса, марксистла-ленинла ăнлантарса панă. Традици ыйтăвне çавăн пек ăнлантарни — пĕртен пĕр тĕрĕс ăнлантару: нацилле традицисем аталанаççĕ, çĕнĕ историлле условисене пула улшăнаççĕ, пуянланаççĕ, малалла каяççĕ.

* * *

Критикăн ĕçĕ — совет литературин шухăшĕсен тасалăхĕшĕн, литература партилĕхĕшĕн кĕрешесси, литературăна парти ертсе пырассине хирĕçлеме, тиркеме пăхакансен киревсĕр ĕмĕчĕсене тăрă шыв çине кăларасси, кирек мĕнле ют шухăша та çапса аркатасси.

Парти Тĕпкомĕн Пленумĕнче 1959 çулхи июнĕн 29-мĕшĕнче тухса каланă сăмахĕнче Н. С. Хрущев юлташ, литературăна парти ертсе пырать тени мĕне пĕлтернине ăнлантарса, çапла кăтартса панă: «Писательсем хушшинче пирĕн йăнăш шухăшлакан уйрăм çынсем пур. Литературăна парти енĕпе мĕнле ертсе пырăн-ха? — теççĕ вĕсем... Анчах парти ертсе пыни мĕн-ха вăл? Ку вăл — миллионшар çынсен ирĕк-кăмăлĕ, миллионшар ăссен ирĕк-кăмăлĕ, миллионшар çынсен коллективлă ăс-хакăлĕ...»*

И. Д. Кузнецов хăйĕн критикăлла статйисенче çакăн пек шухăшсене, принципсене хÿтĕлет: литература партилĕхĕшĕн, литературăна парти ертсе пынине тĕреклетессишĕн литературăра ырми-канми кĕрешекенни шăпах литература критики пулмалла.

Критиксен конкретлă ĕçĕсем çак тĕп задачăран тухса тăраççĕ. Литература критикĕ — вăл литературăра ленинла принципсене çирĕп тытса пыракан çын. Çакă вăл кирек мĕнле условисенче те ленинизм идейисене, парти кăтартăвĕсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешмеллине пĕлтерет. Литература критикĕ — вăл политика енĕпе çирĕп, марксистла-ленинла теорие тĕплĕ пĕлекен çын. Литература критикĕ — вăл малта пыракан çынсен шухăш-кăмăлне палăртакан çын. Критик тарăн шухăшлă, паха та илемлĕ произведенисене халăх хушшинче пропагандăлать, вĕсен уйрăмлăхĕсене вулакансене ăнлантарса парать. Литература критикĕ — вăл писатель тусĕ. Критик писателе пулăшать, ĕçре хавхалантарать. Анчах писательсем хушшинче хутран-ситрен çакăн пекки те пулкалать-ха: критика задачисене ăнланман писатель тепĕр чухне критика тăшман вырăннех хурать,

---

* Н. С. Хрущев. Литературăпа искусствăна халăх пурнăçĕпе тача çыхăнтармалла. Чăваш кĕнеке издат., 88 стр.

критикăна уямасть, уяснăн та мар. Ун пек писатель: «Хам произведение эпĕ темиçе çул хушши ниçта тухмасăр, кунĕн-çĕрĕн тăрăшса çыртăм. Ăна никам та тĕкĕнме пултараймасть, тĕкĕнмелле те мар...» тесе тарăхать. Тĕрĕссипе каласан, «тĕкĕнмелле мар» тени вăл — йăлтах йăнăш шухăш. Эпир критикăна — вăл писательсене хирĕç пыракан жанр теме пултараймастпăр. Принципла критикă писательсене çăкăрпа тăвар пекех, сывлăшпа шыв пекех кирлĕ. Принципла критикăсăр литература аталанма пултараймасть. Ку вăл яланах çавăн пек пулнă, малашне те çавăн пекех пулĕ.

Писатель халăх интересĕсемпе пурăнать пулсан, литература критикĕ те çавах: вăл халăх интересĕсемсĕр, парти çул-йĕрĕсĕр, парти кăтартăвĕсемсĕр пурăнаймасть. Совет литературин паянхи задачи — паттăр совет халăхне коммунизм тума пулăшасси, ăна коммунизм строительствин пысăкран та пысăк задачисем çинчен каласа парасси, совет çыннисен ĕмĕт-шухăшĕсене, кăмăл-туйăмĕсене илемлĕ произведенисенче кăтартса парасси. Çак чаплă ĕçре литература критикин сасси те илтĕнсех тăмалла, вăл писательсене тÿрĕ кăмăлпа, парти кăтартнă пек, пулăшса пымалла.

*1960*

# ЧĂВАШ СОВЕТ ЛИТЕРАТУРИНЧИ КРИТИКĂ ШАЙĚ ПИРКИ

### Пěрремěш статья

Пирěн илемлě литературăри критикă çинчен яланах: вăл вăйсăр, çавăнпа та писательсене пулăшаймасть, çул кăтартса параймасть, теççě. Çак сăмахсене вăрçăччен те калатчěç, халě те калаççě.

Пирěн литературă критики чăнахах та çавăн пек вăйсăр-ши? Вăйсăр пулсан, вăл мěнрен килет-ши? Ăна мěнле вăйлатмалла?

Чи малтан çакна калас пулать (ку шухăша эпě чăваш писателěсен иккěмěш съездěнче те каласаттăм): илемлě литературă пулмасан, литературă критики те пулмасть; анчах илемлě литературă яланах литературă критикинчен малтанрах пуçланса каять; илемлě литературă аталанма тытăнсан, вара литературă критики те аталанма пуçлать; литературă критики ураланса çитсен, литературăн ытти жанрěсене пулăшма тытăнать, унăн витěмě (влиянийě) те ÿсет. Илемлě литературăна пулăшма вăй çитерекен критикă, паллах, пěр çул, икě çул, пилěк çул хушшинче... аталанса çитме пултараймасть, мěншěн тесен çак вăхăт литературăшăн та, критикăшăн та сахал,— вěсем иккěшě те хунав пек çеç пулма пултараççě. Анчах пирěн писательсем литературăра пилěк çул кăна мар, вунă çул, çирěм çул, вăтăр çул ěçлеççě ěнтě.

Чăвашсен революцичченхи литературинче чи паллă писательсенчен пěри Константин Иванов пулнă. Вăл хăйěн таланчěпе пурне те тěлěнтернě. Çавăнпа та вăл пирěн вăхăтри саманана çитрě, хальхи поэтсемпе пěрле малалла утать. Çапла ěнтě, çакă вăл чăваш поэзийěн паха традицийě сывă пулни çинчен калать. Ку традицие хальхи поэт-

сем, ҫӗнӗ саманара тарӑнлатса, сарса, пуянлатса пыраҫҫӗ. Эпир ку тӗлӗшпе телейлӗ. Анчах критика тӗлӗшпе вара пирӗн ун пек традици ҫук тесен те йӑнӑш пулмӗ. Критика, тӗрӗссипе каласан, совет саманинче ҫеҫ аталанма тытӑнчӗ. Ҫак енчен пӑхсан, вӑл ытла та ҫамрӑк-ха, унӑн сасси те витӗмлех мар-ха. Ҫапах та вӑл телейлӗ литература критики, мӗншӗн тесен вӑл ирӗклӗ вӑхӑтра, ирӗклӗ ҫӗршывра ӳсет, ӑна пурте пулӑшаҫҫӗ, пурте ырӑ сунаҫҫӗ, хавасланта-раҫҫӗ. Ӑна партипе халӑх хӑват парса тӑрать, унӑн никӗ-сӗ — марксизм-ленинизм философийӗ.

Совет ҫӗршывӗнче литература ӗҫӗ пӗтӗм халӑх ӗҫӗ, пар-ти ӗҫӗ пулса тӑчӗ; совет литератури халӑх пурнӑҫӗпе, ха-лӑх интересӗпе, государство интересӗпе пурӑнать; унӑн урӑх интерессем ҫук, тет парти. Ҫак сӑмахсенче пӗтӗм со-вет литературин, унӑн уйрӑм жанрӗсен — прозӑн, поэзин, драматургин, критикӑн задачисене палӑртса панӑ. Чӑваш писателӗсем те ҫав задачӑсене ӑнланаҫҫӗ, вӗсене пурнӑҫа кӗртессишӗн чун-чӗререн тӑрӑшса ӗҫлеҫҫӗ. Анчах пӗрисем лайӑхрах, теприсем начартарах ӗҫлеҫҫӗ. Пытармӑпӑр: вӑй-сӑртарах ӗҫлекенсен шутне, чи малтан, критиксем кӗреҫ-ҫӗ. Вӗсен пӗр енчен (кӑна эпир каларӑмӑр ӗнтӗ) — хамӑрӑн нацилле литературӑра, чӑваш литературинче ҫаплах-ха пуян традици, аллӑшар ҫул хушши ҫирӗпленсе пынӑ тради-ци, критика сӑмахӗн традицийӗ ҫукпа пӗрех; тепӗр енчен — вӑл аслӑ вырӑс литературин классикла критикин традици-йӗсене ҫителӗклӗ вӗренсе ҫитмен; виҫҫӗмӗшӗнчен — унӑн теори тӗлӗшӗнчи пӗтӗмӗшле шайӗ калама ҫук пӗчӗккӗ, пи-тех те ансӑр. Критиксем нумайӑшӗ пурнӑҫа ҫителӗклӗ пӗл-меҫҫӗ, иртнӗ пурнӑҫа та, хальхи пурнӑҫа та кирлӗ таран тӗпчесе вӗренмеҫҫӗ. Хӑшӗсем Белинский, Чернышевский, Добролюбов ячӗсене асӑнкалаҫҫӗ, анчах вӗсен кӗнекисене, Маркс, Энгельс, Ленин произведенийӗсене сахалтарах ву-ланӑ, ҫине тӑрсах, тӗплӗн вӗренмен. Ҫавӑнпа та ун пек критиксем хӑш чухне япӑх произведенисене ырлаҫҫӗ, лайӑх-хисене хурлаҫҫӗ. Теприсен ӗҫӗнче ҫакӑн пек те пулкалать: ир ҫинче вӗсем пӗр шухӑшпа, каҫпа тепӗр шухӑшпа пурӑ-наҫҫӗ. Пӗр талӑка та пулин ҫитмен шухӑшпа критик пулма ҫуккине вӗсем чухласа илеймеҫҫӗ.

Пирӗн чылай критиксем, шел те ӗнтӗ, пурнӑҫра, лите-ратурӑра ҫӗннине, малта пыраканнине курсах каймаҫҫӗ, ҫавӑн пекех тата вӗсем киввине, юрӑхсӑррине асӑрхамаҫҫӗ. Критиксен задачи — ҫӗннине пулӑшасси, ҫӗннишӗн кӗре-шесси, вӗсен задачи — киввине, юрӑхсӑррине питлесси, ӑна

хирĕç пĕтĕм вăйпа кĕрешесси, анчах вĕсем çĕннине те, киввине те курмаççĕ пулсан, хăйсен задачине мĕнле майпа пурнăça кĕртсе пыччăр-ха? Мĕнле майпа литература произведенийĕсем çинчен татăклă сăмах калаччăр-ха? Мĕнле майпа писательсене пулăшчăр-ха? Мĕнле майпа халăх хушшине тĕрĕс шухăш сарччăр-ха?..

Литература критикин пĕрремĕш тивĕçĕ — пурнăça тĕрĕс кăтартса паракан произведенисемшĕн, чăннипех те паха, илемлĕ произведенисемшĕн ырми-канми кĕрешесси, совет литературишĕн ют шухăшсемпе «теорисене» çапса аркатассси, литературăн, эстетикăн марксистла-ленинла теорине пропагандăласси, ăна малалла аталантарасси пулса тăрать.

Эппин, пирĕн чăваш совет литературинчи критика хăйĕн задачине мĕнле пурнăça кĕртсе пырать-ха?

Юлашки вăхăтра (1945—1954), вăрçă хыççăнхи тапхăрта, вăл мĕнле ĕçленине, мĕнле аталаннине илсе пăхсан, эпир тӳрех çакăн пек калама пултаратпăр: пирĕн литература критики çителĕксĕр ĕçлет, вăраххăн аталанать, литературăн ытти жанрĕсене çитсе пыраймасть. Çакна «Ялав» журналта, «Тăван Атăл» альманахра, хаçатсенче пичетленнĕ статьясенчи вуншар та çирĕмшер тĕслĕхрен курма пулать. «Статьясенчи тĕслĕхсенчен» тетпĕр, мĕншĕн тесен критиксем çырнă кĕнекесем пирĕн çаплах çук-ха. Эпир критиксен кĕнекисем тухакан тапхăра çитмен-ха...

Иртнĕ тапхăрсенче пирĕн литературăра ытларах сăвăсемпе поэмăсем çыратчĕç, урăхла каласан, поэзи пысăкрах вырăн йышăнса тăратчĕ. Çавăнпа та критиксем те ытларах поэзи ыйтăвĕсем, сăвăсемпе поэмăсем çинчен çыратчĕç. Халĕ ĕнтĕ пирĕн пысăк произведенисем çырнă прозаиксем, поэтсем, драматургсем пур. Литературăри жанрсем пурте аталанса çитрĕç, темелле. Поэзи вăрманĕ лайăх ӳсет, проза вăрманĕ те кашлать: унта паттăр юмансем те, хитре хурăнсем те, хурамапа çăкасем те, чăрăшпа хырсем те пур. Пысăк вăрманта тĕрлĕ йывăç — тĕрлĕ çемĕ, тĕрлĕ юра... Социализмла литература — вăл пуян литература, нумай писательсен, тĕрлĕ талантсен ĕçĕ.

Çакна май литература критикин ĕçĕ те нумайланчĕ, унăн умне тарăнрах, пысăкрах задачăсем тухса тăчĕç. Унăн халĕ поэмăсем çинчен, романсемпе повеçсем, драмăсем çинчен çырмалла, писательсен творчествин уйрăмлăхĕсене кăтартса памалла, тĕпчемелле, вĕренмелле, хак памалла, витĕмлĕрех çырмалла.

Юлашки вăхăтра пирĕн проза çинчен темиçе пысăк статья пичетленсе тухрĕ.

...«Тăван Атăл» альманахăн 42-мĕш кĕнекинче 1952 çулта В. Канюковăн «Д. В. Исаев (Авраль) произведенийĕсенчи проблемăсем» ятлă статйи тухрĕ. Ку статьяна Д. Исаев творчестви çинчен çырнă пысăкрах статьясенчен пĕри тесе калас пулать. Унта автор, тĕпрен илсен, икĕ «проблемă» пирки сăмах хускатать: пĕри — социализмлă экономикăшăн пынă кĕрешӳре çĕнĕ çын ӳссе аталанни; çак ыйтăва пирĕн литературăра Д. Исаев чăнах та пуринчен малтан сăнласа кăтартнă; ку проблемă, автор шучĕпе, Исаевăн пур произведенийĕсенче те палăрса тăрать, вăл Исаев Мĕтри творчествин чи паха енĕ; тепĕр проблеми — уйрăм сынпа обществă хушшинчи çыхăну. Критик, малалла, Д. Исаев произведенийĕсенче большевик сăнарĕ мĕнле вырăн йышăнса тăнине тĕпчет. «Вĕсем хастар чĕреллĕ, çирĕп кăмăллă çынсем» — çакăн пек вĕсен сăнарĕсем.

В. Канюков статйи, çиелтентерех çырнă пулин те, усăллă статья: автор çав асăннă «проблемăсене» тĕпчеме тăрăшнине, вĕсене тĕплĕ çутатса парасшăн пулнине эпир уççăнах куратпăр.

Д. Исаев, калавсемсĕр пуçне, критикăлла статьясем те нумай çырнă. Анчах вăл мĕнле критик пулнине Канюков тĕпчемен, пĕр-ик сăмах каланипех ирттерсе янă. Д. Исаевăн хăш-пĕр ыйтусем тĕлĕшпе йăнăшсем те пулнă, анчах çак хастар критик-коммунист чăваш литературишĕн паха ĕç тунă, чăваш литературин историне ырă ятпа кĕрсе юлнă.

Пирĕн талантлă прозаиксенчен пĕри, чăваш литературинче Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи хыççăн палăрнă писатель Александр Артемьев, пĕр-ик çул каярах, хăш-пĕр çамрăк писательсен калавĕсене тишкĕрсе тухса, «Калавсем çинчен» ятлă статья çырчĕ («Ялав», 1-мĕш №, 1952 ç.). Паха статья. Ăна пысăк интереспа вулатăн. Унăн чĕлхи те лайăх, илемлĕ. Автор унта типлăх (типичность) ыйтăвне лартать, ăна ăнлантарса пама тăрăшать. Пуринчен ытла ку ыйтăва вăл В. Садай калавĕсене пăхса тухнă май хускатать (статьяра кунсăр пуçне тата А. Эсхель, П. Львов, Н. Мартынов, В. Бурнаевский калавĕсене пăхса тухнă). Анчах, пирĕн шутпа, çак ыйтăва вăл тĕплĕн çутатса парайман.

Акă Артемьев юлташ статйинчи хăш-пĕр йĕркесем: «Ăнланмалла, уçăмлă, кĕске çырма пĕчĕк калаврах пысăк шухăша кăтартма, совет çыннисен **типлă енĕсене суйласа илме тăрăшни** — Садай произведенийĕсен чи паха енĕ».

«В. Садай пирĕн çынсен чи характерлă, **типлă енĕсене тĕрĕс илсе кăтартнă».** «В. Садай çырса кăтартнă çынсем пурте — колхозниксем, пĕр пек социаллă, класлă условисенче ĕçлесе пурăнакан çынсен типлă йышĕнчен илнĕ представительсем. Писателĕн пĕр средари представительсенех тĕрлĕрен сăнарлă, кашни çынна хăйне евĕрлĕ, пĕр ăна çеç тивĕçлĕ енĕсене кăтартса памалла, çав хушăрах **вĕсене пурне те пĕрлештерсе тăракан тĕп паллине, вĕсен типлă сăнарне сыхласа хăвармалла.** В. Садай калавĕсенчи персонажсенче çав типлă сăнар тени уççăнах курăнать, çавăнпа эпир кашни персонаж урлă автор мĕн каласшăн пулнине тӳрех ăнланатпăр» (хурапа палăртни пирĕн.— **В. Д.**).

Çак вăрăм цитатăсенчен чи малтан акă мĕн курăнать: В. Садай калавĕсем ытла та паха калавсем имĕш. Анчах Артемьев юлташ вĕсене кăлăхах ырламан-ши? Урăхла пулсан, мĕншĕн-ха вăл, малалла, çав калавсенех хурласа пăрахнă? В. Садай калавĕсенчи геройсене **«пĕр типлă енĕ пĕтĕçтерсе тăрать,** анчах **вĕсене пĕр-пĕринчен уйăрса илме ытла та йывăр,** вĕсен пĕрин те индивидуальнăй сăнлăхĕ çук: пурте пĕр калăпран тухнă пек, пĕр пĕтĕм сăнарлă. Персонажăн çынсен пысăк ушкăнĕшĕн характерлă сăнлăхĕ кăна пулсан, унăн индивидуальнăй сăнлăхĕ пачах çук пулсан — вăл вара художествăллă тулли образ мар, схемă кăна» (хурапа палăртни кунта та пирĕн.— **В. Д.**).

Çапла ĕнтĕ, Артемьев юлташ В. Садайăн калавĕсене, юлашкинчен, хăех тиркесе тăкрĕ, типлăх ыйтăвне «яврĕ-яврĕ» те çавăнтах «сӳтсе пăрахрĕ».

Малалла автор, П. Львовăн «Кулине кинеми» ятлă калавне пăхса тухса, каллех типлăх ыйтăвне кăларса тăратать. Кунта вăл Маленков сăмахне илсе калать: «...Типично не только то, что наиболее часто встречается, но то, что с наибольшей полнотой и заостренностью выражает сущность данной социальной силы» (сăмах май, ку вырăна чăвашла çакăн пек куçарнăччĕ: «...Питĕ час-час тĕл пулаканнине çеç мар типичнă тесе шутламалла, пĕр-пĕр социаллă вăйăн тупсăмне мĕн туллинрех те çивĕчрех палăртать, çавă типичнă пулать»).

Автор вывочĕ акă мĕнле: калава çакăн «хыççăн пичетленĕ пулин те, авторпа редколлеги членĕсем çакна шута илмен».

Ыйтас килет: чăнах та, мĕншĕн шута илмен-ши ăна вĕсем? Вăл йăнăш шухăш-çке!

Татах ыйтас килет: йăнăш сăмахсене мĕн тума шута

илмелле пулнӑ-ши? Артемьев хӑй «шута илнӗ», ҫапах та кирлӗ пек ӑнланман. Тӗрӗссипе каласан, ҫав сӑмахсене ӑнланса илсен, вӗсене шута илме, ертсе пыракан шухӑш теме кирлӗ марри уҫҫӑнах курӑнса тӑрать. Йӑнӑш шухӑшсемпе усӑ курма сӗнни вырӑнсӑр *.

«Калавсем ҫинчен» статьяра типлӑх ыйтӑвне Артемьев юлташ асӑннӑ ҫеҫ, ӑнлантарса парайман, вырӑнӗ-вырӑнӗпе аяккипе иртсе кайнӑ, тӗрӗсех ҫырайман.

Ӑнах та, «В. Садай пирӗн ҫынсен чи характерлӑ, типлӑ енӗсене тӗрӗс илсе кӑтартнӑ» тенине мӗнле ӑнланмалла-ха? «Вӗсене пурне те пӗрлештерсе тӑракан тӗп паллӑ...» тенине тата мӗнле ӑнланмалла-ши? «Типлӑ сӑнарсене пӗр-пӗринчен уйӑрса илме ытла та йывӑр» тенине тӗрӗсрех ӑнланса илесчӗ!

Тип — вӑл тӗрлӗ ҫынсен характерлӑ паллисене, типлӑ енӗсене пӗр ҫӗре пухса пӗрлештерни пулать, тейӗҫ. Анчах вӗсене мӗнле «пухса пӗрлештермелле-ха»? Ӑҫта пухса пӗрлештермелле?.. Тата ыт. те, тата ытти те.

Типлӑх ыйтӑвӗ—вӑл эстетикӑ ыйтӑвӗсенчен пӗри, вӑл—философи тӗлӗшпе лартнӑ ыйту.

В. И. Ленин ҫырнӑ «К вопросу о диалектике» ятлӑ произведенире ҫакӑн пек вырӑн пур: «Общее существует лишь в отдельном, через отдельное. Всякое отдельное есть (так или иначе) общее. Всякое общее есть (частичка или сторона или сущность отдельного»)**.

Ҫак пуплевсенчи шухӑша чӑвашла ҫакӑн пекрех каласа

* Эпир ку абзаца кайрантарахпа, «типичность» ыйтӑвӗ пирки «Коммунист» журналӑн 1955 ҫулхи 18-мӗш номерӗнче «К вопросу о типическом в литературе и искусстве» ятлӑ статья тухсан, ҫыртӑмӑр. Унта ҫакӑн пек калана: «...Проблема типического в художественном творчестве — чрезвычайно сложная проблема. Ее нельзя решать в отрыве от реальной жизни, от конкретного развития литературы и искусства. К сожалению, приходится константировать, что за последние годы в среде работников литературы и искусства распространились некоторые схоластические, ошибочные взгляды на типическое в художественном творчестве. Широкое хождение получили формулы, согласно которым типическое сводится к сущности данного социально-исторического явления и определяется как основная сфера проявления партийности в реалистическом искусстве, утверждается, что проблема типичности — всегда проблема политическая, и только сознательное преувеличение художественного образа полнее раскрывает и подчеркивает его типичность. Эти схоластические формулы выдаются за марксистские и ошибочно связываются с точкой зрения нашей партии на вопросы литературы и искусства».

** В. И. Ленин. Философские тетради. Изд-во ЦК ВКП(б). 1934 ҫ., 327 стр.

пама пулĕччĕ: пĕтĕмĕшли уйрăмминче çеç, уйрăммине пула (уйрăмми урлă) çеç пурăнать. Кашни уйрăмми, кашни уйрăм япала (кирек мĕнле пулсан та) пĕтĕмĕшли пулса тăрать. Кашни пĕтĕмĕшле уйрăммин (пайĕ е енĕ, е тупсăмĕ) пулать.

Кунта пĕтĕмĕшле явленипе уйрăм явлени хушшинчи, уйрăм явленипе пĕтĕмĕшле явлени хушшинчи диалектикăлла çыхăну çинчен, диалектикăлла хутшăну çинчен сăмах пырать. Урăхла каласан, кунта уйрăм явлени пĕтĕмĕшлине, явлени тупсăмне палăртакан формă пулни курăнать.

Искусствăпа литературăри типлăх ыйтăвне илес пулсан, çакăн пек калама пулать: типлăх (типическое) — вăл пĕтĕмĕшли, чи характерли, пулать, пĕр-паллă явление, явленисен суммине, çынсен пĕр-паллă ушкăнне, пĕр-паллă класа тивĕçли пулать, историлле явленин е процесăн тупсăмне, ăш-чиккине палăртса тăраканни пулать. Çапла вара, тип туни, типизацилени — вăл чăн пурнăçа (действительноçа), пĕтĕмĕшле явление уйрăм, конкретлă, индивидуаллă формăра пĕтĕмлетсе пани, историлле явленин чи паллă, чи характерлă енĕсене уйрăм, конкретлă, индивидуаллă формăра пĕтĕмлетсе пани пулса тăрать. Çапла ĕнтĕ, искусствăра пĕтĕмĕшлине, сăнарлине, типлине (типическое) уйрăмминче кăтартса параççĕ, вăл шăпах уйрăмминче пĕтĕçсе тăрать. Аса илер-ха çакна май М. Ю. Лермонтовăн «Пирĕн вăхăтри герой» ятлă романĕн умсăмахĕнчи сăмахĕсене. «Ырă çынсем,— тет М. Ю. Лермонтов,— «Пирĕн Вăхăтри Герой» — вăл чăнах та портрет, анчах вăл пĕр çын портречĕ кăна мар: вăл хамăр вăхăтри пĕтĕм ăрăвăн çитменлĕхĕсене пĕтĕçтерекен, вĕсен аталанăвне кăтартакан портрет». Куратăр-и, кунта çав вăхăтри герой портретĕнче (пĕр çын портретĕнче) темиçе çын, пĕтĕм ăру портречĕ пĕрлешсе тăрать.

М. Горький питех те тĕрĕс калать: «... Литератор, хăй паллакан пĕр лавкка хуçине, чиновнике, рабочие сăнласа парсан, пĕр çыннăн тĕплĕрех сăн ӳкерчĕкне çеç тума пултарать, анчах та вăл фотографи çеç пулать, унăн социалла воспитани паракан пĕлтерĕшĕ пулмасть, вăл пирĕн пĕлĕве çын тĕлĕшпе, пурнăç тĕлĕшпе сарма, тарăнлатма пире нимех те паманпа пĕрех.

Анчах писатель кашни 20—50, кашни çĕр лавкка хуçин, чиновникĕн, рабочин чи характерлăрах паллисене пухса пĕрлештерсен, вĕсен йăлисене, хăйсене мĕнле тыткаланине, вĕсен туйăмĕсене, ĕненĕвĕсене, мĕнле калаçнисене

тата ыттисене те пухса пĕр лавкка хуçинче, пĕр чиновникре, пĕр рабочире пĕрлештерсен, писатель вара çак меслетпе «тип» тăвать,— çакă вăл искусствă пулать».

Тепĕр тĕслĕх чăваш литературинчен илер. С. В. Элкерĕн «Хĕн-хур айĕнче» поэминчи чухăн хресченсем патша влаçĕпе çĕр улпучĕсен пусмăрне тӳсеймесĕр вăрмана тараççĕ. Паллах, çавăн пек тарнисем ун чухне нумай пулнă, анчах ку вăл тарни çеç! Типлă явлени мар, унăн тупсăмĕ, тĕп туртăмĕ вăрмана тарса пытанасси пулман, вăрмана тарса кĕрешӳ çулĕ çине тăрасси пулнă. Çав вăхăтра çапла майпа кĕрешӳ çулĕ çине тухни вара шăпах пĕтĕмĕшле, типлă явлени пулса тăрать, ку вăл уйрăм, конкретлă явленире, Чаккапа пĕрле хресченсем вăрмана тарса кĕрешӳ çулĕ çине тăнинче палăрать; ку вăл çав пĕтĕмĕшле, типлă явленин конкретлă форми, унăн палăрăмĕ. Чакка — тип, ăна пĕтĕмлетсе тунă, типизациленĕ; Чаккара çĕршер хресчен палли, çĕршер хресчен сăнĕ, анчах çав вăхăтрах вăл уйрăм çын, конкретлă хресчен; вăл пĕтĕм чухăн хресченсен сăнарĕ, чухăн хресченсен паттăрлăхне кăтартса паракан пĕтĕмĕшле сăнар, анчах çав вăхăтрах вăл — вĕсен уйрăм сăнарĕ, вĕсен типĕ.

Çак енчен илсе пăхсан, В. Садай калавĕсенчи геройсем, тӳрех калас пулать, пулса çитмен, туса çитереймен сăнарсем çеç. Çавăнпа ĕнтĕ А. Артемьевăн шухăшĕсем «явнă çĕртех сӳтĕлсе кайнинчен» ним тĕлĕнмелли те çук. Типлăх ыйтăвне, паллах, начар калавсемпе, сăнласа çитереймен геройсемпе çутатса пама çук. Шăпах ĕнтĕ çакна сиссе, А. Артемьев, юлашкинчен, типлăх ыйтăвĕнчен пăрăнса каять те В. Садай калавĕсенчи геройсем «пурте пĕр калăпран тухнă пек» тесе хурать. Çапла вара, вăл малтарах мухтанисем, типлăх ыйтăвĕ çинчен каланисем вырăнсăр пулса тăраççĕ, ахалех пĕтсе лараççĕ.

Типизацисĕр, типлăхсăр, тĕрĕссипе каласан, искусствă пулмасть, искусствă вăйĕ сăнлăхра (образра), унăн вăйĕ типизацире.

Прозă ыйтăвĕсем çинчен юлашки çулсенче çырнă статьясем пирки, литературă критикин шайĕ пирки сăмах хускатнă май В. Алакерăн «Шурча таврашĕнче» романа тишкерекен статйине асăнмасăр иртме çук. Ку статья та, ыттисемпе танлаштарсан, чĕлхе тĕлĕшпе те, произведени тĕпчес тĕлĕшпе те лайăх статьясен шутне кĕрет. Автор чăваш литературине, чăваш историне пĕлет. Вăл хăйĕн сăмахĕсене, хăйĕн шухăшĕсене ахаль çеç каласа каймасть,— вĕсене

мĕнле те пулин ыйтăва татса парас, мĕнле те пулин тезиса çирĕплетсе парас тесе калать. Произведенин лайăх енĕсене е çитменлĕхĕсене кăтартас тесе, вăл произведенирен тĕрлĕ тĕслĕхсем илет, вĕсене тишкĕрет, «шĕкĕлчет», хак парать. Акă, сăмахран, критик «Шурча таврашĕнче» романăн пĕр йăнăш шухăшне мĕнле критиклет. «Шурча таврашĕнче» романра,— тет автор,— эпир Хветĕр Уяр çут тĕнче аталанăвĕн законĕсене ăнланмасăр йăнăш патне пырса тухнине те курма пултаратпăр». Критик вара романăн çак вырăнне, Мариç пĕтни çинчен калаканскере, илсе кăтартать: «Çапла иртет çамрăк ĕмĕр — хĕр ĕмĕрĕ. Уншăн çут тĕнче ишĕлсе анать, хĕвел хупланать. Анчах чĕрĕ юлакансемшĕн нимĕн те улшăнмасть. Хуть те эсĕ çурăлса кай, макăрса вил, çĕр çул, пин çул каяллахи пекех, хĕвелĕ те хăй вăхăтĕнче тухать, çил те вĕрет, тулта та çав-çавах сивĕ, тĕттĕм...» (208 стр.).

Вулакансем хăйсемех кураççĕ: йăнăш шухăшлă вырăн ку. Анчах çакăн пек чухне критикăн цитатă илнипех çырлахма юрамасть. Вулакансене çав йăнăш мĕнре пулнине кăтартса парас пулать. В. Алакер çак вырăна критиклет, çав йăнăша тишкĕрсе тухать. «Тӳрех калăпăр,— тет вăл,— марксистла диалектикăна хирĕç пыракан «теори» ку, метафизикла теори. Марксистла диалектикă çак буржуалла теорие тахçанах çапса аркатнине эпир пурте лайăх пĕлсе тăратпăр. Марксизм вĕрентĕвĕ чи тĕрĕс вĕрентӳ иккенне халь ĕнтĕ эпир чăн пурнăçра та яр уççăн куратпăр».

Чăнах та, «чĕрĕ юлакансемшĕн нимĕн те улшăнмасть», пурте «çĕр çул, пин çул каяллахи пекех...» юлать тени мĕнле «теори-ха» вăл? Çакă вăл ĕмĕрех пыракан, нихçан та улшăнман, вырăнтан вырăна кăна куçакан «пурнăç пуçламăшĕсем» çинчен калакан реакцилле теори пекрех «теори». Ăна буржуалла самана пуçланиччене шутласа кăларнă, вăл тахçан-авал («пин çул каяллах») пулнă, унăн авторĕсем, чăннипе калас-тăк, буржуалла философи ĕмĕрĕ пуçланиччене, чи авалхи ĕмĕрсенчех пурăннă, ăна авалхи философсен пĕр ушкăнĕ, пифагориецсем тенĕскерсем, шухăшласа кăларнă. Çав теорие ĕнтĕ чăнах та тахçанах çапса аркатнă, тĕпĕ-йĕрĕпех пĕтерсе хунă. Çапах та унăн халĕ те хутран-ситрен сисĕнкелекен палăрăмĕсене хирĕç, кирек мĕнле реакцилле теорие те хирĕç кĕрешнĕ пекех, хаяр кĕрешмелле.

В. Алакер тепĕр çĕрте «Шурча таврашĕнче» романран çак вырăна илет: «Пуян та эсĕ, çĕршыв, чухăн та, аслă та

эсĕ, хĕсĕк те, вышкайсăр вăйлă та эсĕ, вăйсăр та. Пуян, мĕншĕн тесен санăн пуласлăху çутă, ывăлу-хĕрӳсем вăйлă...»

Ку вырăна тишкерсе, критик çакăн пек калаçа хурать: «Çуралнă çĕршыв пирки, вăхăтне шута илсен, çапла калани тĕрĕс. Ун пирки хăй вăхăтĕнче вырăссен аслă поэчĕ Н. А. Некрасов та çапла каланăччĕ. Анчах Н. А. Некрасов поэзийĕнче эпир çуралнă çĕршывăн чăннипех вăйлă ывăл-хĕрĕсене куратпăр. Хветĕр Уяр романĕнче... çукрах вĕсем». Апла пулсан, писателĕн çав сăмахĕсем çине, «вăхăтне шута илсе», пăхар-ха.

Н. А. Некрасов хăйĕн «Кому на Руси жить хорошо» ятлă поэминче иртнĕ ĕмĕрсенчи Российă çинчен:

Ты и убогая,
Ты и обильная,
Ты и могучая,
Ты и бессильная,
Матушка-Русь!—

тесе çырать. Ку сăмахсем — чăннипех те аслă сăмахсем. Вăл сăмахсемпе В. И. Ленин та революцичченхи Руç çинчен калланă чухне пĕрре кăна мар усă курнă.

Вăхăчĕ пирки сăмах пуçларăмăр пулсан, эпир акă мĕн куратпăр: Н. А. Некрасов хăйĕн поэмине 1863—1877 çулсенче çырнă; Хветĕр Уяр хăйĕн «Шурча таврашĕнче» ятлă романне 1952 çулта çырса пĕтерсе пичетлесе кăларнă.

«Хăш вăхăтне шута илмелле» кунта?

«Кому на Руси жить хорошо» поэмăра Некрасов çав сăмахсене хăй вăхăтĕнчи Руç çинчен, унăн çĕршер çулхи историне асра тытса, каланă. «Шурча таврашĕнче» романра хăçанхи Руç (?) çинчен сăмах пырать (тĕрĕссипе: Руç çинчен-и е Чăваш çĕршывĕ çинчен çеç-и? — Ку уçăмлă мар).

«Шурча таврашĕнче» романра 1830—1840 çулсенчи Чăваш çĕршывне кăтартса панă. Çапла вара: «Пуян та эсĕ, чухăн та эсĕ...» тенĕ сăмахсене роман авторĕ Некрасовран «малтан каланă» пек тухать, анчах ăна, чăннипе илсен, çитмĕл ултă çул кайран, 1953 çулта çеç, каланă. Апла пулсан, роман авторĕ (ун хыççăн критик та) Некрасов сăмахĕсене, патша саманинчи пĕтĕм вырăс çĕршывĕ, государстви пирки каланăскерсене, чăваш çĕрĕ тĕлĕшпе тĕллипаллисĕр, механистла каланине кăна куратпăр.

Роман авторĕн çав йĕркесене Руç пирки калама та,

Чăваш çĕршывĕ пирки калама та нимле сăлтав та çук. Мĕншĕн тесен, чăннипе калас-тăк, «Шурча таврашĕнче» романра пĕтĕм Руç çинчен çырман, Руçăн пĕр кĕтесĕ çинчен, шăпах Чăваш çĕршывĕ çинчен çырнă. Апла пулсан, вăл çав сăмахсене вĕсем мĕне пĕлтернине тавçăрса илмесĕр çырса хунă.

Çапла, «Шурча таврашĕнче» романра Н. А. Некрасов сăмахĕсемпе усă курни, «вăхăтне щута илсен», нихăш енчен те вырăнлă мар, мĕншĕн тесен Чăваш çĕршывне аслă вырăс государствинчен уйăрса хăйне уйрăм «государствă» пек туса кăтартни тĕрĕс мар. Чăваш çĕрĕ яланах вырăс государстви варринче пулнă (XVI ĕмĕрте вырăс государствипе пĕрлешнĕ). Н. А. Некрасов сăмахĕсенче, эпир ĕнтĕ куртăмăр, икĕ йышши тăшмансем çинчен, тулашрипе шалти тăшмансем çинчен, сăмах пырать. Н. А. Некрасов сăмахĕсен историлле пĕлтерĕшне ансăрлатса урăхла ăнланни йăнăш. Çапла ĕнтĕ, критикăн историе те, философие те, литературăна та, политикăна та пĕлес пулать,— унсăрăн хăш чухне тĕрĕс тени те тĕрĕс мар пулать.

В. Алакер статйи «Шурча таврашĕнче» романа писательсен Союзĕнче сӳтсе явнă хыççăн тухрĕ. Романа сӳтсе явнă чухне хăш-пĕр юлташсем, историлле роман çинчен сăмах хускатса, историлле роман мĕн иккенне палăртса пама тытăнса пăхнăччĕ. В. Алакер, çав ыйтуран пăрăнса кайса, тĕрĕс туман, ăна пĕтĕçтерсе пamaллах пулнă. Мĕншĕн тесен чăваш литературинче истори материалĕсем тăрăх çырнă произведенисем сахал мар. Сăмахран, С. В. Элкер произведенийĕсем пурте тенĕпе пĕрех чăваш халăхĕн историйĕнчи пĕр-пĕр тапхăрпа çыхăнса тăраççĕ. Историлле романсемпе повеçсем çырас тĕлĕшпе тата А. Талвир, К. Турхан ĕçлет. Анчах мĕнле романа историлле роман теççĕ?— çакна эпир тĕп-тĕрĕс каласа паман-ха.

Истори темипе çыракан писатель хăйĕн произведенийĕнче лартакан задачăсем — питех те ответлă задачăсем. Историлле произведенире пĕр-паллă саманан (эпохăн) йăлисене çеç кăтартни çителĕксĕр, писателĕн çав саманана тĕплĕ пĕлсе çитмелле, ун чухнехи тĕп социаллă вăйсене ăнланса илмелле, халăх вăй-хăвачĕн çăл куçне кăтартса памалла, халăхăн нациле характерĕ çав саманара мĕнле палăрса тăнине сăнласа кăтартмалла.

Французсен прогрессивлă писателĕ Анатоль Франс каланă тăрăх, романри тĕп проблемăна саманана тĕрĕс ăнланса илсе татса панă пулсан,— эпир историлле роман

куратпăр; авторшăн самана материал кăна пулса тăрать пулсан, çав самана вырăнне çăмăллăнах урăх самана илме пулать пулсан,— ун пек роман историлле роман мар.

Çак жанра, пирĕн шутпа, критиксен малашне вĕренсе, тĕпчесе тухмалла, историлле романсем çыракан писательсем историксен, тĕпчевçĕсен, историе пĕлекен критиксен сăмахне илтесшĕн, вĕсен шухăшĕсене пĕлесшĕн.

В. Алакер, «Шурча таврашĕнче» авторăн ăсталăхĕ пирки сăмах хускатнă май, пĕр çĕрте: «автор ăсталăхĕ пирки иккĕленмĕпĕр», тесе калать, анчах вăл малалла темшĕн хăех иккĕленсе çырма тытăнать. Юлашкинчен вара, хăшпĕр çитменлĕхсене кăтартса панă хыççăн, акă мĕн каласа хурать: «Çавăнпа эпир Хветĕр Уяр чăваш совет литературинче «ăста прозаик, пысăк маçтăр» тенĕ сăмаха каялла илме те пултаратпăр», тет. Мĕншĕн çапла выляса каламалла, мĕншĕн пĕрре ярса пуссанах шухăшсене улăштармалла? Алакер кунта хăйпе хăй тавлашать. Кун пек «дискусси» роман авторне кирлĕ мар, вăл йĕкĕлтеме çеç пултарать. Авторшăн произведенин паха енĕсене, чăн-чăн çитменлĕхсене кăтартса пани «ăста» е «маçтăр», «ăста мар» е «маçтăр мар» тенинчен пин хут усăллăрах. Пĕр писателĕн произведенийĕнчи çитменлĕхсене тĕрĕс кăтартса пани теприсемшĕн те усăллă. Анчах çитменлĕхсемпе йăнăшсене тĕрĕс кăтартса пама, вĕсем мĕн пирки сиксе тухнине, мĕнрен килнине ăнлантарса пама, писателе пулăшма наукă çулĕпе, марксизм-ленинизм çулĕпе пыракан критикă çеç пултарать.

Пирĕн критикă принципла критикă пулмалла, унăн сасси витĕмлĕ, авторитетлă сасă пулмалла. Литературă критикин тĕп задачи — илемлĕ литературă умне парти лартнă задачăсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешесси, совет литературине малалла аталанса чечекленме активлă пулăшасси, киревсĕр шухăшсене, ют «теорисене» хирĕç ним шеллемесĕр кĕрешесси.

*1953*

## Иккĕмĕш статья

Пирĕн илемлĕ литературăра хăш-пĕр критиксем ытларах поэтсен творчествине тишкерме юратаççĕ. Паллах, кунта ырă марри ним те çук, çапах та, ку вăл пирĕн литературă критикин ĕçĕ-хĕлĕ жанрсем тĕлĕшпе пĕр пек пыманни çинчен калать. Анчах çитменлĕх çавăн пек пулнинче мар.

Ҫитменлӗхсенчен пӗри акӑ мӗнре: прозӑ ҫинчен ҫыракан критиксем те, поэзи ҫинчен ҫыракан критиксем те произведенисен содержанийӗ пирки ытларах сӑмах хускатаҫҫӗ, вӗсем формӑ, чӗлхе, стиль ыйтӑвӗсене ялан тенӗ пекех «манса» хӑвараҫҫӗ, урӑхла каласан, ӑсталӑх ыйтӑвӗсене тӗппчемеҫҫӗ. Ҫакӑ вӑл критикӑ вӑйсӑр пулнинчен, тӗрлӗ жанрсен уйрӑмлӑхӗсене ҫителӗклӗ пӗлменнинчен килет пулмалла. Илемлӗ литературӑн специфики шухӑшсене тӗрлӗ сӑнлӑхсемпе (образсемпе) мӗн тери ӑста каласа панинче пулса тӑрать, ытларах та: унӑн специфики, уйрӑмлӑхӗ ҫынсен шухӑшӗсене, кӑмӑлӗсене, туйӑмӗсене, сисӗмӗсене, чун-чӗрисен хумханӑвӗсене, савӑнӑҫӗсене, хуйхи-суйхисене, ӗмӗчӗсене, туртӑмӗсене илемлӗ сӑмахсемпе, сӑнлӑхсемпе каласа (ҫырса) панинче пулса тӑрать. Шӑпах ӗнтӗ ҫакӑнта (чӗлхе пуянлӑхӗнче, сӑнлӑхӗнче) литературӑн нацилле уйрӑмлӑхӗ, нацилле форми палӑрать. Ҫак пӗтӗм пуянлӑха: произведенисенчи ҫӗнӗ шухӑшсене, формӑсене, уйрӑмлӑхсене тӗпчесе пӗлесси, вӗсене халӑх патне ҫитересси, ӗҫ ҫыннисене ӑнлантарса парасси, ыррине, илемлине, хитрине юратма, усаллине, ирсӗррине тиркеме, хирӗҫлеме, пӗтерме вӗрентесси критикӑ ӗҫӗ, тӗрӗссипе каласан, ҫакӑ вӑл унӑн задачи пулса тӑрать. Искусствӑра, чи малтан литературӑра, политикӑллла, философилле, историлле тата ытти шухӑшсем те пур, анчах вӗсене пурне те илемлӗ — образлӑ формӑпа калана. Ҫак формӑ ҫынсен чунӗсене, чӗрисене хускатать, ывӑннӑ ҫынсене хавхаланма, вӑйӗсене пухма пулӑшать. Сӑмахран, поэзин хӑватлӑ вӑйӗ ҫинчен ҫак тӗслӗх те аван каласа парать. Авалхи Грецире, пӗр халап каланӑ тӑрӑх, хаяр вӑрҫӑсенчен пӗринче, вӑйлӑ тӑшман хытӑ хӗснине пула чакса пыракан ҫар пулӑшу ыйтма тытӑннӑ пулать, анчах ҫар пуҫлӑхӗсем ҫапӑҫса халтан ӳкнӗ, аманса пӗтнӗ ҫара пулӑшу парас вырӑнне пӗтӗмпе те пӗр ҫын ҫеҫ ярса панӑ, тет. Вӑл та пулин уксахскер пулнӑ, анчах уксах салтак ахаль салтак пулман. Вӑл поэт пулнӑ. Уксах поэт салтаксем патне ҫитнӗ-ҫитменех юрӑ шӑрантарма тытӑннӑ, тет. Поэт юррине илтсен, унччен хӑраса ӳкнӗ, шанчӑкне ҫухатнӑ салтаксем, пурте кар тӑрса, тӑшман ҫинелле арӑслансем пек ыткӑннӑ, тӑшмана пӗр самант хушшинче аркатса тӑкнӑ, тет.

Ку тӗслӗхре чи малтан юрӑ хӑвачӗ курӑнать. Литературӑна илес пулсан, унӑн обществӑри хӑвачӗ, халӑха вӗрентсе воспитани парас ӗҫри хӑвачӗ ҫав пӗр юрӑ хӑватӗнчен темиҫе пин хут пысӑкрах пулни уҫҫӑнах курӑнса тӑрать.

Литературӑ критикин ӗнтӗ пӗтӗм литературӑн, уйрӑм

произведенисен пĕлтерĕшне курма, тĕрĕс хаклама пĕлес пулать, унсăрăн критикă авторитечĕ кирлĕ таран çĕкленеймĕ.

Çак шухăшсене асра тытса, халĕ чăваш литературинчи критикă ыйтăвĕсене, уйрăм критиксен юлашки çулсенче поэзи пирки çырнă статйисене кĕскен те пулин пăхса тухар-ха. Вĕсем, çак статьясем, чăвашсен халăхра паллăрах поэчĕсен Н. И. Полоруссов-Шелепин, П. П. Хусанкайăн, Я. Г. Ухсайăн тата ыттисен пултарулăхĕ çинчен çырнă статьясем. Паллă поэтсен пултарулăхĕ çинчен тăтăшах статьясем тухса тăни вăл — законлă явлени, темелле, вăл — критикă шухăшĕ ĕçленине кăтартакан паллă.

«Тăван Атăл» альманахăн 48-мĕш кĕнекинче (1953 ç.) Н. Любимовăн «Н. И. Полоруссов-Шелепин совет саманинчи творчестви» ятлă статйи пичетленсе тухнă. Статья авторĕ малтан поэтăн революци хыççăнхи творчествине кĕскен те пулин «çутатса парас тĕллев» лартни çинчен пĕлтерет. Статйинче вара çутатса панинчен ытларах Н. И. Шелепин тĕрлĕ сăвви-юррисен содержанине каласа панă,— таран анализ çук, вырăнĕ-вырăнĕпе çĕршыври пĕр-пĕр событи çинчен е хуçалăх ӳсĕмĕ çинчен каланă та вĕсене поэт сăмахĕсемпе «çирĕплетсе пама» тăрăшнă (хăш-пĕр страницăсенче çавăн пек сăмахсен, цитатăсен шучĕ автор каланинчен те ытларах).

Критик каланă тăрăх, Н. Шелепи хăйĕн произведенийĕсене çырнă чухне халăх юморĕпе, сатирипе, вичкĕн те сăнарлă чĕлхепе тата унăн эпосла поэзийĕпе, лирикăлла произведенийĕсен пуянлăхĕпе анлăн усă курнă. Мĕншĕн тесен «патша саманинче пурнăç условийĕсем йывăр пулнă пирки Н. И. Полоруссов-Шелепи вĕренеймен, çавăнпа та уншăн халăх творчестви тĕп çăл куçĕ пулса тăнă» (?). Н. И. Шелепи халăхран вĕренни çинчен, халăх творчествипе ăста усă курни çинчен калани тĕрĕс, анчах çакна шкулта «вĕренеймен» тенипе ăнлантарса пани пачах та тĕрĕс мар. Халăх творчествипе нумай вĕреннĕ писательсем те усă курнă. Сăмахран, вырăссен аслă поэчĕсем А. С. Пушкин, М. Ю. Лермонтов, Н. А. Некрасов тата ыттисем те фольклорпа ăста усă курнă, фольклорпа Л. Н. Толстой та, В. Г. Короленко та усă курнă. Анчах вĕсем пурте нумай вĕреннĕ çынсем пулнă. Пирĕн шутпа, Н. Любимов тезисĕ тĕплĕн шухăшласа пăхмасăр «персе янă» тезис.

Критик Н. Шелепин совет саманинче çырнă сăввисене ырлать, мухтать, çав вăхăтрах вĕсем пирки çакăн пек

иккĕлле выводсем тăвать: «Ку сăвăсенче лозунгсем çеç пулин те тата вĕсем техникă енчен начартарах пулсан та, Н. И. Полоруссов-Шелепи вулакансен ăсне пуянлатма нумай панă, нумай пулăшнă» (136 стр.). Е тата: «Тӳрех каламалла, унăн ку тапхăрта обществăлла тематикăпа çырнă произведенийĕсем тухсах кайман, çапах та вĕсем ĕç сыннисен ăс-тăнне çивĕчлетес тĕлĕшпе нумай усă панă» (137).

Çакнашкал примитивла тезиссемпе выводсем вулакансене пăтраштарма çеç пултараççĕ. Шел пулин те, Н. Любимов статйинче ун пек тĕрĕс мар шухăшсем тата та пур. Çапла ĕнтĕ, критик поэтăн революци хыççăнхи творчествине сутатса парас тĕллеве пурнăça кĕртеймен.

Юлашки çулсенче поэзи ыйтăвĕпе пичетленсе тухнă ытти статьясене илес пулсан, кунта П. Хусанкайпа Я. Ухсай творчестви çинчен çырнă критикăлла статьясем пирки кăштах чарăнса тăма тивет.

Кăçал П. П. Хусанкай творчестви çинчен икĕ пысăк статья тухрĕ: пĕри вăл — М. Я. Сироткинăн «Чăваш халăх поэчĕ П. Хусанкай» ятлă статйи («Тăван Атăл», 51-мĕш кĕнеке); тепри — Н. Петровăн «Поэт çулĕ» ятлă статйи («Ялав», 3-мĕш №, 1954 ç.)

М. Я. Сироткин статйинче П. Хусанкайăн — пирĕн вăхăтри паллă чăваш поэчĕсенчен пĕрин — литературăри вăтăр çул хушшинчи пархатарлă ĕçне сутатса панă. Автор хăйĕн умне пĕр паха тĕллев лартнă: вăл — П. П. Хусанкайăн творчествине тĕпчесе тухасси, поэт социализмла реализм меслетне мĕнле вĕренсе пынине, сав меслетпе мĕн тери ăнăçлăн ĕçленине кăтартса парасси. Пирĕн шутпа, ку задачăна критик татса панă, поэтăн пуян творчествине лайăх тишкерсе тухнă.

Коммунистсен партийĕ, пĕтĕм совет литературине ертсе пырса, чăваш литературине те аталанма пулăшнă, тĕрĕс çул кăтартса пынă. Ку вăл содержанийĕпе социализмла, формипе нацилле культурă сулĕ, пролетарилле, социализмла литературă сулĕ пулнă. Клас тăшманĕсене çак çул килĕшмен, унăн тĕрлĕ агенчĕсем — троцкистсем, бухаринецсем, буржуалла националистсем — Коммунистсен партийĕн политикине хирĕç темле майсемпе те кĕрешсе пăхнă. «Чăваш буржуазийĕпе кулакĕсен идеологĕсем,— тет М. Сироткин юлташ,— хăйсен шухăш-кăмăлне ĕç халăхĕ хушшине литературă урлă сарас ĕмĕтпе, чăваш писателĕсене тĕрĕс çултан пăрса яма тăрăшнă; вĕсене совет йĕркипе аталанса тĕреклененекен пурнăça ĕненми тăвасшăн пулнă, чăвашсене

аслă вырăс халăхĕнчен пистерме хăтланнă, ĕç халăхне чăваш çĕршывĕ экономикăпа культура тĕлĕшĕнчен хăйне уйрăм буржуалла çулпа аталанса пыма пултарать, тесе илĕртме пăхнă».

Пирĕн Хусанкай шăпах ĕнтĕ çак вăхăтра литературăна килсе кĕрет. Малтанхи сăввисенчен пĕринче вăл камшăн ĕçленине, кама мухтанине уççăнах каласа пĕлтерет:

Çӳлерех çĕклен
Ирĕк мăлатук!
Сана хĕсĕрлен
Урăх чĕрлес çук.

Çак кăшт абстрактлăрах сăвăра поэт çулĕн пуçламăшĕ те, малашлăхĕ те палăрса тăнă. «Ирĕк мăлатук» вăл — Аслă Октябрьте пусмăр тĕнчине тĕп тунă, тĕнчен улттăмĕш пайĕнче капитализма аркатса тăкнă, влаçа хăй аллине илнĕ пролетариат сăнарĕ пулнă. Ку сăвва чăваш ĕç çыннисем пысăк хаваслăхпа йышăннă. Ана вуласа тухсанах, вĕсем чăваш литературинче пысăк талантлă поэт ĕçлеме тытăннине туйса илнĕ.

Буржуалла националистсем хăйсен ирсĕр шухăшĕсене литературăра та сарма тăрăшнă. Çав шухăшсенчен хăшĕ-пĕрисем пирĕн çамрăк поэтăн сăввисенче те палăркаланă. Çакна пула Хусанкайăн идеологи тĕлĕшĕнчен сиенлĕ «Хури», «Поэтпа миссионер», «Сона» йышши сăвăсемпе поэмăсем тухнă, кайрантарахпа çавăн пек шухăшсен юлашкисем «Саркел» поэмăра сисĕннĕ. Поэт, çапах та, ирĕк мăлатук шухăшне пĕрмаях асра тытнă, чĕрере усранă. Çак шухăш ăна Коммунистсен партийĕн ретне илсе пынă.

Çакăн пек (е çакăн пекрех) ĕнтĕ М. Я. Сироткинпа Н. П. Петров статйисен тĕп шухăшĕ.

Анчах М. Сироткинпа Н. Петров статйисенче хăш-пĕр çитменлĕхсем те палăраççĕ. М. Сироткин статйи вырăнĕвырăнĕпе темшĕн вырăсларан пĕр-пĕр пуклак чĕлхеллĕ тăлмач куçарнă статья пек туйăнать *. Акă, сăмахран, пĕр-ик тĕслĕх: «...Чăваш халăхĕ хăйĕн совет формиллĕ государствăллă пурнăçне аталантарса, çирĕплетсе пынă, наци формиллĕ социализмлă культурине çĕклес тĕлĕшпе ĕçленĕ» (134 стр.). Ку сăмахсене темле чĕлхепе мăкăлтаса çырнă

---

* Халĕ асăрхаттарни. Ку статьяна автор вырăсла çырнă пулнă. Альманах редакцийĕ ăна чăвашла куçарнă та авторне кăтартмасăрах пичетлесе кăларнă. Шел пулин те, кун пеккисем пирĕн хушăра пулкалаççĕ-ха!

(тĕрĕссипе калас-тăк: начар куçарнă!). Çавăнпа та вĕсене ăнланса илме питех те йывăр. Тепĕр вырăнта тата: «Типлă çын сăнарĕ уйрăм йĕрсем çине пайланса вакланнипе произведенири геройсен сăнĕ чухăнланса, сăнсăрланса (?) юлать», тенĕ (140 стр.). Каллех ăнланма йывăр пуплев! Эпир литературăра çĕнĕ терминсем: «сăн», «сăнар», «сăнлăх», «сăнсăпат» тума тăрăшатпăр-çке, анчах кунта «сăнсăрланса» сăмах, çав терминсенчен пăрăнса, хăйĕн чăн-чăн пĕлтерĕшĕпе тухса тăнă. (Н. И. Ашмарин ăнлантарнă тăрăх: сăнсăр — безобразный, бесстыжий).

Н. Петров çырнă «Поэт çулĕ» статьян, пирĕн шутпа, пĕр пысăк çитменлĕх пур. Унта, танлаштарарах калас пулсан, «çӳпĕллĕ вырăнсем» сике-сике тухаççĕ. Акă, сăмахран, темиçе тĕслĕх. «Вăтăрмĕш çулсенче пĕтĕм совет ĕç халăхĕ, империализм вăрçипе граждан вăрçине пула юхăнса пĕтнĕ халăх хуçалăхне ура çине тăратма тăрăшнă хыççăн, ырмиканми тар юхтарса ĕçленĕ, çĕршывра талккăшпех социализм çĕнтерсе пынă»,— тет Петров. Кунта «халăх хуçалăхне ура çине тăратнă тапхăр» 30-мĕш çулсенче пулнă пек тухать («вăтăрмĕш çулсенче» тени тĕрĕс мар, мĕншĕн тесен халăх хуçалăхне ура çине тăратнă тапхăр — вăл 1921—1925 çç.). Тата çакна асăрхаттармалла: совет халăхĕ çав тапхăрта мĕнле тăрăшнине «ырми-канми... ĕçленĕ» тени те лайăх кăтартса парать, «тар юхтарса» тени ытлашши сăмах, вăл — чĕлхе «çӳппи». Автора «тар» сăмах уйрăмах килĕшет пулмалла. Тепĕр çĕрте вăл ку сăмахпа акă мĕнле усă курать: поэзи Хусанкайшăн «кăмăл хăвачĕ, чĕре сасси, ăс тарĕ (!)», тет (çак статьярах «поэзи — чĕре уççи» тени те пур). Кунта поэзи пĕлтерĕшне, тĕрĕссипе каласан, ансăрлатса янă, янăравлă сăмахсем каласа, унăн обществăлла пĕлтерĕшне витсе хунă.

Поэзи вăл пĕр вăхăтрах «кăмăл хăватне» те, «чĕре сассине» те, халăх шухăш-кăмăлне те, халăх сассине те пĕрлештерсе тăрать, палăртса парать; чăн-чăн поэт творчествинче поэтăн хăйĕн шухăш-кăмăлĕ, хăйĕн ĕмĕчĕпе сасси халăх ĕмĕчĕпе, кăмăлĕпе, шухăшĕпе пĕрлешсе каять, синтез пулса тăрать. Çакăнта ĕнтĕ поэзин вăйĕ, çакăнта ĕнтĕ чăн-чăн поэтăн çынсен кăмăлне, чĕрине хускатакан вăйĕ, унăн обществăри вырăнĕ,— урăхла пулсан, поэт типĕ хăйăр çинчи йывăç пек: вăл ниçтан та нӳрлĕх илеймест, унăн тымарĕсем типсе хăраççĕ, çулçисем сарăхса каяççĕ.

Пирĕн литературăри критикăлла статьясен шайне кăтартса парас тесе, Н. Петров юлташăн статйинчен тата

тепĕр теслĕх илер-ха. Критик хăйĕн статйин пуçламăшĕнче П. Хусанкайăн 1924 çулта çырнă «Ĕç çинче» ятлă сăввине тишкерсе тухать. Поэтăн çак сăввинче пĕтĕмпе те 12 йĕрке кăна:

Шурăмпуç сенкерĕ
Хыпнă мал енне.
«Тăрах, ачам!» теейрĕн
Мана эс, анне.

Тăрса ура сырайрăм,
Çурăм питĕме,
Йĕс турапа турарăм
Хура çӳçĕме.

Хурçă çурла çакайрăм
Хул пуççи çине.
Хире тухса эп кайрăм—
Ыраш пуссине.

Ку сăвă çинчен Н. Петров: «пирĕн ума социальнăй пурнăçран илнĕ тарăн шухăшлă ӳкерчĕк тухса тăрать», тет. Унтан вара çав «ӳкерчĕке» анализ тума тытăнать: «Умра колхозсем пуçланас умĕнхи ял пурнăçĕ,— тет вăл.— Çутăлман-ха, шурăмпуç мал енне хыпса илнĕ кăна. Акă амăшĕ ачине вырма кайма вăратать (çакна критик сăвва илсе кăтартас умĕн те каласа панă.— **В. Д.**). Хăйĕн ачине вăл, ăшă ыйхăпа тутлăн çывăраканскере, тăванла юратса, чунтан хĕрхенсе «тăрах, ачам» тет (тăр ĕнтĕ! темест). Пĕр хут кăна мар, икĕ хут кăна та мар вĕсем çапла, хул пуççи çине çурла çакса, иккĕшĕ хире тухса каяççĕ те яра кун тар юхтарса ĕçлеççĕ. Кунта ачан ашшĕ çукки çинчен пĕр сăмах та каламан, çапах та эпир çав ача çурма тăлăх иккенне, вăл пĕртен пĕр амăшĕпе пурăннине тавçăрса илетпĕр. Сăвва вуланăçемĕн пирĕн ума мĕскĕнле пурнăçăн мĕскĕнле шăпи тухса тăрать».

Критик çырнинчен эпир мĕн куратпăр-ха? Критик сăвва цитатă вырăнне илет, çав вăхăтрах тата сăвă шухăшне хăйĕн сăмахĕсемпе икĕ хутчен каласа парать. Вăл, сăвă шухăшне малалла «аталантарса», ачапа амăшĕ темиçе хут уя тухса кайни çинчен, «тар юхтарса ĕçлени» çинчен калать, анчах ку сăмахсем пĕтĕмĕшпе каланă сăмахсем. Çавăн пекех «Ĕç çинче» сăвăран «мĕскĕнле пурнăçăн мĕскĕнле шăпи» те тухса тăмасть, вăл унта ниçтан та курăнмасть. Çаксем, тĕрĕссипе каласан, сăвва тĕпчемесĕр, сăвăран пăрăнса кайса, ахалех тунă выводсем.

Малалла Н. Петров поэт ăсталăхĕ пирки калана май тепĕр вывод тăвать: «Хусанкайăн малтанхи сăввисенчех поэт хăйне кăна тивĕçлĕ сасăпа каласма тăрăшнине сисетпĕр», тет.

Пирĕн шутпа, «Ĕç çинче» сăвăра Хусанкайăн «хăйне кăна тивĕçлĕ» сасси илтĕнмест-ха. «Ĕç çинче» сăвă пирки сăмах хускатнă май, критик ăна мĕнле тишкернине кăтартса парас тесе, çакна асăрхаттарас килет: «Ĕç çинче» сăвва вуласа тухсанах эпир Çеçпĕл Мишшин «Ака çинче» ятлă сăввине аса илетпĕр:

Кăвак çут кăваккăн кăвак кантăк витĕр
Сарă сĕтел урлă урайне ӳксен,
Атте «тăрах» терĕ. Ыйхăран вăрантăм,
Карăнса эп тăтăм ăш тӳшек çинчен.

Çак икĕ сăвă хушшинче, пирĕн шутпа, творчествăлла çыхăну пурах: иккĕшĕ те пĕччен хресченсен уй-хирти ĕçĕ çинчен çырнă сăвăсем; унта сăмахсем тĕлĕшпе те пĕр пек вырăнсем сисĕнеççĕ, тĕслĕхрен, «тăрах» тенĕ сăмахсем иккĕшинче те пĕр пекех янраççĕ (критик тем калас шутпа: «Тăр ĕнтĕ! темест», тесе илет?); П. Хусанкай: «çурăм питĕме», тет (Çеçпĕл сăввин малалли йĕркисенче: «çăл шывпе пит çурăм», тенĕ); Хусанкай: «Хире тухса эп кайрăм», тет. (Çеçпĕл: «Акă аттепе тухса кайрăмăр акана», тенĕ).

Çак параллельсене эпир мĕн пирки кăтартрăмăр-ха? Вĕсене эпир «Ĕç çинче» сăвă — вĕренмелле çырнă сăвă, унта поэт сасси уçăлсах çитеймен. «Ĕç çинче» сăвă — поэт камран вĕреннине кăтартакан паха тĕслĕхсенчен пĕри. Паллах, вĕренмелле çырнă произведени тăрăх поэтăн ăсталăхĕ пирки калама хĕн. Куратăр-и, критикăн тепĕр вывочĕ те тĕпчемесĕр тунă вывод пулни курăнать! Çапла ĕнтĕ, критикăн яланах произведенире мĕн пуррине тĕпчемелле, ним те шухăшласа кăлармалла мар,— урăхла пулсан, «ăс тарĕ» вырăнсăр юхать.

«Тăван Атăл» альманахра пичетленнĕ хăш-пĕр статьясенче пирĕн уйрăм писательсем пĕр-пĕрин ĕçне вырăнсăрах тиркеме пăхни курăнать. Кун пек статьясен шутне Илья Тукташ çырнă «Ухсайăн «Кĕлпук мучи» поэми çинчен» ятлă статйи кĕрет («Тăван Атăл», 42-мĕш кĕнеке). Унта поэмăн чăн-чăн çитменлĕхĕсене юлташла кăтартса парас вырăнне тем те пĕр шухăшласа кăларнă. Автор Ухсай поэмине çакăн пек каласа тиркет: «Халăх пурнăçĕнчи чи пысăк событисем çинчен Ухсай пĕр сăмах шарламасăр иртсе кайма тăрăшать»; «вулакана пурнăçри тĕп ыйтусенчен

пăрса ярать» (149 стр.); «граждан вăрçи картинисене... çамăлттайлăн, ним ответсăррăн сăнласа» панă, «ку вăл— писателĕн политикăлла йăнăшĕ, тимсĕрлĕхĕ» (151); «произведенин идейăлла шайĕ питех те аялти пусăмра тăрать, кунтан та ытларах,— автор ку кĕнекере сиенлĕ шухăшсем сарать» (157) тата ыт. те.

Çак тĕслĕхсем эпир мĕн калас тенине хăйсемех каласçĕ: критик вĕсене поэта мĕн май килнĕ таран тиркес, хурлас, айăплас тесе çырнă,— çакăн пек вĕсен тупсăмĕ.

Малалла И. Тукташ поэмăри «политикăлла йăнăшсем» çинчен калать. Çав «йăнăшсем» çинчен «Советская Чувашия» хаçатра Н. Любимов критик та çырчĕ. Анчах мĕнле «йăнăшсем-ха» вĕсем?

Акă, критиксем каланă тăрăх, çав «йăнăшсенчен» хăшĕ-пĕрисем. И. Тукташ кăтартса панă «йăнăш»: «Мĕн ытларах интереслентерет поэта? Кĕлпук кĕпепе çуралнă,— ку Ухсайшăн пысăк факт, вăл ун çинчен ик-виç страницă çырса каять. Кĕлпукăн кăвапи çухалнă,— ку та Ухсайшăн пысăк факт, каллех тем тăршшĕ çырса каймалла. Кĕлпукăн сухалли кăвапа таран ӳснĕ, вăл старшина пулма тивĕç, патшапа юнашар ларса сăн çаптарма пултарать,— каллех поэтшăн пысăк факт, каллех вăл кун çинчен аллăшар йĕрке çырса каять. Кĕлпук тĕлĕкре патшана ларать (сăмах май каласан, çак самантра та вăл пурнăçри чи çивĕч ыйтусене — пусмăр тĕнчине тĕп тăвассине епле майпа пурнăçламаллине кăтартса параймасть) — каллех поэтшăн чăн-чăн событи!» (149 стр.).

Н. Любимов кăтартса панă «йăнăш»: «Поэта больше всего интересуют такие маловажные мелочи, как, например, то, что Кельбук родился в сорочке — это для поэта большой факт, и ему посвящены в книге две-три страницы. И кража сорочки также для Я. Ухсая большое событие — ему посвящено целых девять строф... Любуется поэт и длинной бородой деда Кельбука («хоть сейчас же садись он рядом с царем и фотографируйся»)... Дед Кельбук во сне становится царем — и это занимает целую главу в книге. Автор и здесь не сумел разрешить стоявший в то время перед трудящимися вопрос о путях уничтожения царизма и построения справедливого, социалистического общества».

Пире кунта, ыттисемсĕр пуçне, халлĕхе акă мĕн тĕлĕнтерет: çак критиксем мĕнле майпа пĕр пек шухăшлама, пĕр пек çырма, поэта пĕр пек айăплама пултарнă-ши? Çапах та, Ухсай йăнăшĕ ăçта-ха? Критиксем каланă тăрăх, Кĕлпук,

тӗлӗкре патшана ларнӑ пулин те, пусмӑр тӗнчине мӗнле майпа тӗп тумалли, социализмла обществӑ тумалли ҫулсене кӑтартса параймасть. Пусмӑр тӗнчине тӗп тӑвакан, социализмла обществӑ тумалли ҫулсене кӑтартса паракан патша хӑҫан та пулин историре пулнине никам та курман та, илтмен те, анчах критиксем «Кӗлпук патшана» (тӗлӗкре патшана «тухнӑ» хресчене) «пусмӑр тӗнчине тӗп туманшӑн», социализм тумалли ҫула кӑтартса паманшӑн айӑплаҫҫӗ, ҫакӑнта вӗсем поэтӑн йӑнӑшне кураҫҫӗ.

Истори акӑ мӗн кӑтартса парать: хресченсем хӑйсен пусмӑрҫисене хирӗҫ кӗрешнӗ чухне, чӑнах та, «хресчен патши» ҫинчен ӗмӗтленнӗ, «лайӑх патша» тупасшӑн пулнӑ. Ҫакӑн пек ӗмӗт-шухӑш Степан Разин, Емельян Пугачев восстанийӗсене хутшӑннӑ хресченсен те пулнӑ. Хресчен восстанийӗсен ҫулпуҫӗсем Разинпа Пугачев ҫӗр улпучӗсене хирӗҫ пынӑ, анчах «лайӑх патшашӑн» тӑнӑ (вӗсем «царистсем» пулнӑ). Хресченсен восстанийӗсем, вӗсене ертсе пыракан Разинпа Пугачев пек ҫулпуҫсем тем пек тӑрӑшсан та, хӑйсен тӗллевне вӗҫне ҫитиех пурнӑҫа кӗртме пултарайман. Хресченсен восстанийӗсем рабочи клас ертсе пырсан ҫеҫ ӑнӑҫлӑ пулма пултараҫҫӗ, анчах ун чухне рабочи клас, унӑн партийӗ пулман.

Ухсай поэминчи «хресчен патши» — хресченсен ҫав ӗмӗтне кӑштах сӑнласа пани ҫеҫ. Кӗлпук тӗлӗкре кӑна «патша» пулма пултарнӑ. Критиксем хресчен «патшине» (ҫитменнине тата тӗлӗкри патшана) социализмла обществӑ тутарасшӑн. Ҫакӑ вӑл чӑннипех те кулӑшла япала. Тӗрӗссипе каласан, кунта поэтӑн нимле йӑнӑш та ҫук, критиксем хӑйсем йӑнӑшаҫҫӗ.

И. Тукташпа Н. Любимов «Ухсай хӑй поэминче иртнӗ ӗмӗр вӗҫӗнчи чӑваш ялӗ ҫинчен ҫырать. Ку тапхӑрта Российӑра, ҫав шутрах чӑвашсем хушшинче те, **капитализм аталанма тытӑннӑ.** Хресченсем ытлаpан та ытларах сийленме пуҫланӑ (палӑртни пирӗн.— **В. Д.**). Кулаксем чухӑнсемпе батраксене эксплуатацилесси вӑйланнӑ. Чухӑнсен ҫӗрӗсем ытларан та ытларах ҫӗрме пуянсен аллине куҫнӑ. Ялта клас кӗрешӗвӗ ҫивӗчленсе пынӑ. Чухӑнсем ҫӗр улпучӗсемпе кулаксене хирӗҫ аллисене сенӗксемпе ҫавасем, пуртӑсемпе рычаксем тытса ҫапӑҫнӑ. Пӗтӗм ҫӗршыв тӑрӑх пирвайхи вырӑс революцийӗн хумӗсем сарӑлса пынӑ.

Ҫак тӗп ыйтусенчен пӗрне те Ухсай Яккӑвӗ хӑй произведенийӗнче ҫивӗччӗн кӑларса лартман...»—теҫҫӗ (148 стр.).

Ку сӑмахсене чӑн-чӑн истори енчен, йӗркеллӗ логикӑ

енчен пахса тухсан, каллех поэт йанăшĕ мар, критиксен йăнăшĕ курăнать. Российăра капитализм XIX ĕмĕр вĕçĕнче мар, унччен малтанрах аталанма тытăннă. Маркспа Энгельс калана тăрăх, Российăшăн XIX ĕмĕрĕн иккĕмĕш пайĕ пĕтĕмпех капитализм аталаннипе палăрса тăрать. Çак процеса В. И. Ленин хăйĕн «Российăра капитализм аталанни» ятлă кĕнекинче питех те тĕплĕн кăтартса панă. Российăра капитализм аталаннине народниксем çеç курман, мĕншĕн тесен вĕсем чăн-чăн историе пĕлмен, ăнланман, хăйсен идеалистла теорийĕсене пула, ăнланма та пултарайман.

Хресченсем те нумай малтан сийленме пуçланă. Хуласенче рабочисен йышĕ ӳснĕ. Клас кĕрешĕвне рабочисем ертсе пыма тытăннă. Çĕршывра революци аталанса пынă, анчах вăл 1905—1907 çулсенче çеç пулса иртнĕ (çавăнпа та çак вăхăтчен унăн хумĕсем «пĕтĕм çĕршыв тăрăх... сарăлма» пултарайман).

Çак процес, урăхла каласан, чăвашсем хушшинче капитализм аталанни, пĕтĕм Российăра капитализм аталаннипе çыхăнса тăрать. Чăваш халăхĕ пур тĕлĕшпе те Российă çулĕпех пынă; вăл Российă варринче, Российă халăхĕсен йышăнче пулнă май, унăн Российă çине тапăнса килнĕ тăшмансене хирĕç те вырăс халăхĕпе пĕрле, Российăри ытти халăхсемпе пĕрле, кĕрешмелле пулнă. Вырăс халăхĕн тулашри тăшманĕсем (çав вăхăтрах) Российăри ытти мĕн пур халăхсен тăшманĕсем пулнă; вырăс халăхĕн шалти тăшманĕсем (патша йĕрки, çĕр улпучĕсем, капиталистсем, халăх ĕнси çинче ларакан тĕрлĕ йышши чиновниксем, пупсем тата ыт. те) чăвашсемшĕн те хаяр тăшмансем пулнă. Пирĕн халăха яланах паттăр вырăс халăхĕ пулăшнă, вăй панă, хавхалантарнă. Халăхсен çак пĕрлехи кĕрешĕвне, кун-çулне, вĕсен пурнăçĕн пĕрлехи процесне эпир яланах палăртатпăр, палăртма тивĕç те.

Çакна эпир 1905—1907 çулсенчи революци историйĕнчен аван куратпăр: вырăс халăхĕ хăйĕн шалти тăшманĕсене хирĕç кĕрешĕве çĕкленсен, пирĕн çĕршыври ытти халăхсем те революцилле кĕрешĕве хутшăннă; революцин хăватлă хумĕсем чăвашсем хушшинче те сарăлса кайнă. Российăна çакăн патне унăн халăхĕсен паттăр вăйĕ çултан çул ӳссе, çитĕнсе пыни илсе çитернĕ. Кĕрешӳ пуçĕнче, революци пуçĕнче рабочи клас тăнă.

Я. Ухсай хăйĕн «Кĕлпук Мучи» поэмине çырнă чухне çак ыйтусене ятарласах çутатса парас тĕллеве тытса пыман (вĕсем уйрăм кĕнеке çырмалли темă пулса тăраççĕ).

Çавăнпа та Ухсая поэмăра çырман япаласемшĕн ятлани вырăнсăр япала пулса тăрать. «Ку çук та, вăл çук», тесе критиклени — юрăхсăр меслет. Произведение тишкернĕ чухне унăн пахалăхне, чăн-чăн çитменлĕхĕсене тĕпчесе кăтартас пулать, автора пулăшас тĕллевпе ĕçлес пулать, мĕнле те пулин «критикăлла стандарт», мĕнле те пулин вилĕ шаблон е канон шухăшласа кăлармалла мар. Критиксен чăн-чăн пурнăçа лайăхрах пĕлмелле, ас тусах тăмалла: пурнăç йывăçĕ, поэт калашле, вăл ĕмĕрех чĕрĕ, ĕмĕрех ем-ешĕл! Поэтсен те, критиксен те пурнăç йывăçне куçран çухатмалла мар, унăн шавне, кĕввине итлемелле; вĕсен юррисенче, статйисенче яланах пурнăç кĕвви, пурнăç сасси илтĕнсе тăмалла.

Альманахăн 50-мĕш кĕнекинче пичетленнĕ Л. Терентьев статйине илес пулсан, тӳрех çапла калас пулать: вăл — нигилистла статья; ăна автора пулăшас тесе мар, унăн нумай çул хушшинче тăрăшса çырнă «Çул» романне пĕтĕмпех тиркесе тăкас тесе çырнă.

«Çул» романа, 1952 çулта Мускаврa вырăсла куçарса кăларнăскере, вулакансем хапăл туса йышăнчĕç, центрта тухса тăракан илемлĕ литературă журналĕсем ăна паха произведени тесе хакларĕç. Сăмахран, «Знамя» журналта К. Северова критик «Çул» çинчен çакăн пек çырать: «Шолоховпа Твардовский, Ставскипе Панферов, Лордкипанидзепе Стельмах, Лацис, Саксепе Леберехт произведенийĕсем пирĕн литературăри чи паха произведенисен шутне кĕчĕç, вĕсене совет вулаканĕсем лайăх пĕлеççĕ. Çав произведенисен ретне Яков Ухсай кĕнеки те кĕрет... «Çул» поэмă — социализм вăхăтĕнчи пурнăçăн чĕрĕ туйăмĕпе хавхаланса çырнă произведени, вăл унăн авторĕн ӳсĕмне çеç мар, тата пĕтĕм чăваш совет литературин ӳсĕмне те кăтартса парать».

Анчах «Тăван Атăл» альманах редколлегийĕ, Л. Терентьев çырнă «Яков Ухсайăн «Çул» романĕ статьяна ним сăмахсăр пичетлесе кăларнăскер, ку роман пирки пачах урăхла шутлать пулмалла. Ăна, çак поэтăн «Кĕлпук мучи» поэмине «пĕтерсе хунă» пекех, «аркатса тăкнă», автора «йăнăшсем» тунăшăн айăпласа пĕтернĕ.

Статья пуçламăшĕнче Л. Терентьев хальхи вăхăтра сăвăллă роман çырма юранипе юраманни çинчен «философилеме» шут тытнă. «Пирĕн вăхăтра,— тет критик,— сăвăллă роман çырасси чăнах та пит хăюллă та кăштах тĕлĕнтерекен ĕç ĕнтĕ. Юлашки вăхăтра сăвăллă роман çырмалăх

пултарулăхпа тÿсĕм тупакан поэтсем ӳрăс литературинче те курăнсах каймаççĕ-ха». Мĕншĕн çавăн пек-ши? Мĕншĕн тесен ăна гениллĕ Пушкин çеç çырма пултарнă. Çапла «философла» калаçкаланă хыççăн автор тĕрлĕ влиянисем пирки çырма тытăнать. Вăл каланă тăрăх, Ухсай романĕ формă енчен А. С. Пушкинăн «Евгений Онегин» романĕ пек, содержани енчен М. Шолоховăн «Уçнă çерем» тата А. Твардовскин «Муравии çĕршывĕ» произведенийĕсене аса илтерет. Çапла вара, критик «Çул» роман авторĕн творчествăри хăйне евĕрлĕхне пачах та курмасть, ăна унтан-кунтан тĕрлĕ татăксем пухкаласа çыракан поэт туса хурать. Хăй çав вăхăтрах ку роман «тухни... çинчен... тĕплĕн калаçмасăр ирттерсе яма ниепле те май çук» тет, анчах унăн статйинче, чăннипе илсен, пĕр ыйту пирки те тĕплĕн калаçни çук.

Критик, романăн содержанине кăштах каласа панă хыççăн, поэта романри геройсем пирки айăплама тытăнать, пуринчен ытла Павăл ятлă герой пирки вăрçса çырать. Поэта вăл: Павăл «ытла та ăслă», тесе айăплать. «Чăнах та,— тет вăл,— мĕн кăна пĕлмест пуль Павăл: тракторсен ĕçне пĕлет (трактористсен ĕçне темелле пулнă- мĕн.— **В. Д.**), ырăсла та пит лайăх калаçать., вăлах пултаруллă организатор, принциплă коммунист, вăйлă теоретик. Хăш вăхăтра тата ăçта вĕреннĕ вăл?» Юлашкинчен вара, критик: «романри герой чĕрĕ çын мар, этемĕн чи лайăх пахалăхĕсен пуххи çеç», тесе хурать (118 стр.).

Çакăнта илсе кăтартнă йĕркесен тĕп шухăшĕ мĕнле-ха? Вĕсен тĕп шухăшĕ çакăн пек: геройăн «чĕрĕ çын» пек пулас пулсан, йăнăшсем тумалла, унăн чунне яланах темскер ыраттармалла, чĕрине темскер пĕрмаях вăркатса тăмалла,— çакăн пек пулсан çеç вăл «тулли» герой пулма пултарать. Тĕрĕссипе каласан, Л. Терентьев кунта «положительнăй героя» хирĕç пырать, пирĕн пурнăçра пур тĕлĕшпе те малта пыракан рабочисем, колхозниксем, интеллигентсем, çамрăксем, лайăх герой пулма тивĕçлĕ çынсем пулма пултараймаççĕ, тесе ĕнентерме тăрăшать. Паллах, кун пек шухăшпа килĕшме çук: совет çыннисем хушшинче çавăн пек пур тĕлĕшпе те лайăх çынсем, Тăван çĕршывшăн, халăхшăн, государствăшăн, партишĕн чун-чĕререн тăрăшса ĕçлекен патриотсем темĕн чухлех. Пирĕн çĕршывра Корчагин, Мересьев, Воропаев, Теркин, Зоя Космодемьянская, Олег Кошевой, Уля Громова, Сергей Тюленин, Любовь Шевцова, Иван Земнухов тата ытти геройсем совет çыннисемшĕн ырă тĕслĕх вырăнĕнче тăраççĕ. Ун пек çынсем пирĕн

тата та нумай. Çакăн пек совет çыннисене, вĕсен ĕçĕсене писательсен хăйсен произведенийĕсенче кăтартса памалла,— акă мĕнле задачă тăрать пирĕн литературă умĕнче.

«Положительнăй герой», ырă тĕслĕх паракан герой, паллах, çитменлĕхсемсĕр çын сăнарĕ мар, вăл пачах та йăнăшман çын сăнарĕ те мар. Сăмахран, «Хурçă мĕнле хĕрнĕ» романăн тĕп геройĕ Павел Корчагин — ырă тĕслĕх паракан герой пулни пуриншĕн те паллă, совет çамрăкĕсем Корчагинран ырра вĕренеççĕ, çирĕп шухăшлă пулма, паттăр пулма вĕренеççĕ. Павел Корчагин чăн-чăн пурнăçран илнĕ герой, вăл чĕрĕ çынсем пекех. Корчагинăн çитменлĕхсем те пулнă. Ытларах та: çак хастар çамрăкăн, паллă геройăн пуçне хăш-пĕр самантсенче «хăравçăлăх» шухăшĕсем те пырса кĕркеленĕ. Çакна пула вăл хăйне хăй вĕлересси çинчен те шухăшласа пăхнă. Анчах çавăн пек шухăшсем унăн пурнăçĕнче, унăн характерĕнче тĕп вырăнта тăмаççĕ. Унăн характерĕнче тĕп вырăн йышăнаканни — вăл йывăрлăхсене çĕнтерсе пыни, ĕçре, кĕрешӳ çулĕнче ӳсни, тĕрекленни, халăх интересĕсемшĕн, Тăван çĕршыв кун-çулĕшĕн малти ретре тăрса кĕрешни. Н. Островский хăйĕн кĕнекинче паттăр совет çамрăкĕсен сăнарне панă, вĕсен çирĕп характерне, ĕмĕчĕсене уçса кăтартнă. Çапла ĕнтĕ, пĕтĕм халăх ĕçĕнче, кĕрешӳре ӳсекен, йывăрлăхсене çĕнтерсе пыракан, тăшмансене хĕрхенмен, пуласлăхшăн, çитес çутă кунсемшĕн, коммунизм идеалĕшĕн хăйне те, хăйĕн пурнăçне те шеллемен çынсен паллисене, вĕсен характерĕсене пĕрлештерсе тăракан герой — вăл шăпах ырă тĕслĕх кăтартакан герой, совет çыннисем чун-чĕререн юратакан герой.

«Положительнăй герой» ыйтăвне хускатнă май хăш-пĕр юлташсем «идеалла герой» тенĕ термин шухăшласа кăларчĕç. Çак термина («теорие» теме те юрать) тĕрĕс ăнланас пулсан, вăл çакна пĕлтерет: «идеалла герой» — ырăран та ырă, пахаран та паха, тасаран та таса, ăслăран та ăслă «герой» иккен. Тĕрĕссипе каласан, вăл пачах та ӳсмест, йывăрлăхсемпе те кĕрешмест: вăл мĕнле пулнă — çавăн пекех юлать. «Литературă хаçатĕнче» Б. Рюриков юлташ питех те тĕрĕс çырчĕ: «идеалла герой» — конфликтсăрлăх «теорийĕ» патне туртакан шухăш; конфликтсăрлăх «теорийĕ» халĕ те литературăра упаленсе çӳреме хăтланать; ку чухне вăл «идеалла герой» тумне тăхăнса тухасшăн.

Чăн-чăн пурнăçран илнĕ геройсем çеç литературăра пурăнма пултараççĕ. Совет литератури — вăл пурнăçа чи туллин, чи тĕрĕс, чи лайăх кăтартакан литературă, вăл — чи

малта тăракан, чи тарăн шухăшлă, чи пуян литературă. Унăн геройĕсем — çĕнĕ самана геройĕсем, паттăр çынсем, коммунизм тăвакан çынсем.

Малалла тата акă мĕн асăрхаттармалла: Павăл çинчен вăл «хăш вăхăтра тата ăçта çакăн пек вĕреннĕ?» тенипе критик автора натурализм çулĕ çине тĕртет, урăхла каласан, геройăн кашни утăмне, кашни ĕçне, ĕнер, паян мĕн тунине, ăçта вĕреннине те çырса пама хушать. Ку вăл типизаци çулĕ мар, мĕншĕн тесен типизаци çулĕ геройăн паллă, характерлă, типлă ĕçĕсене илме, вĕсене сăнласа пама, хаклама хушать, малта пыракан идейăсен çуттинче кăтартма хушать. Социализмла реализм литератури ĕнтĕ шăпах çавăн пек тăвать.

«Çул» романра илсе кăтартнă ялта «кулаксем» çук, тет Л. Терентьев (118 стр.). Çавăнпа имĕш «унта хресченсем колхоза чăрмавсăр тата мирлĕн кĕреççĕ» (119 стр.).

Вулакансем вара пачах урăхла калаççĕ: «Ухсай коллективизаци тапхăрĕнчи чăваш ялĕнчи клас кĕрешĕвне çав тери уçăмлăн сăнласа парать»,— тесе çырать Красноярск крайĕнчен И. Горшков. Ростов облаçĕнче ĕçлекен В. Лебедев агроном: «Автор нумай чăваш хресченĕсен пурнăçĕнче пулса иртнĕ чи паллă та пысăк событие — вĕсем колхозсене пĕрлешсе çĕнĕ пурнăç çулĕ çине тăнине тĕрĕс те пултаруллăн кăтартса парать», тет. (Ку тĕслĕхсене эпир «Чăваш писателĕсен вырăсла куçарнă кĕнекисем» ятлă статьяран илтĕмĕр. «Коммунизм ялавĕ» 203-мĕш №-рĕ, 13.X. 54 ç.).

Пирĕн шутпа, вулакансем тĕрĕс калаççĕ. Вĕсем литературăна хăш-пĕр критиксенчен ытларах ăнланни, юратни курăнать. Вулакансен сăмахĕ — писателе вырăнсăр ырласа тăкас е хурласа пăрахас тесе каланă сăмах мар. Произведени паха пулсан, килĕшсен, вулакан ун çинчен ырă сăмах калать; произведени начар пулсан, килĕшмесен — вулакан кӳренсе çырать.

Пирĕн пурин те чăваш литературин парти çулĕ çинче тăракан критикине, социализмла литературă жанрĕсенчен пĕри пулса тăракан марксистла-ленинла критикăна вăйлатассишĕн, унăн теорилле шайне çӳлерех çĕклессишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлемелле. Литературă критикин теорилле шайне вăйлатас, çӳлерех çĕклес тесен, критиксен ĕнтĕ ăсталăх ыйтăвне те манмалла мар, писательсен чĕлхи мĕн тери пуян пулнине тĕпчемелле, вĕсен стилĕ уйрăмлăхне кăтартса памалла. Критиксен халăх шухăшне, обществă шухăшне палăртмалла, малта пыракан наукă вĕрентĕвне ăса илсе

ĕçлемелле. Коммунистсен партийĕн кăтартăвĕсене пурнăçа кĕртсе пымалла.

Халĕ ĕнтĕ чăваш литературинче критикă валли мĕн кирли пурте пур, ĕç те çителĕклех. Чăваш прози те, поэзийĕ те аталансах пырать пулсан, драматурги те вăй илет пулсан, критикă та вăй илмелле, вăл аталансах, тĕрекленсех пымалла,— эппин шансах тăрар: шăпах çавăн пек пулĕ, пирĕн литературă критики авторитетлă та витĕмлĕ пулĕ!

Литературă критики çавăн пек пултăр тесен, Александр Фадеев сăмахĕпе калас-тăк *, пирĕн çĕнĕ критиксем, ленинла критиксем ӳстерме тăрăшмалла; вĕсем нумай вĕреннĕ, нимрен те хăраман çынсем, литературă процесĕн хуçисем, ăна малалла илсе пыма пултаракан теоретиксем пулмалла, хăйсен литературăри ĕçĕпе Коммунистсен партине пулăшса тăмалла. **Критик** тенĕ ят пирĕн çĕршывра хисеплĕ ят пулса тăмалла.

Эппин çавăн пек ленинла критикăшăн тăрăшар, çавăн пек марксистла-ленинла критик-теоретиксене вĕрентсе ӳстерессишĕн вăй хурса ĕçлер.

*1954*

---

* А. Фадеев. Задачи литературной теории и критики. «Советская литература» кĕнекене пăхăр. 1948, 59 стр.

## ПАЯНХИ ЛИТЕРАТУРА КРИТИКИ ÇИНЧЕН

(Заметкăсем)

Чăваш писателĕсем, КПСС XXII съездне хатĕрленнĕ май *, партин XXI-мĕшпе XXII-мĕш съезчĕсем хушшинче хăйсем халăхпа пĕрле утса тухнă çул-йĕре, иртнĕ кунсенче мĕн-мĕн тунисене тĕрĕслесе тухаççĕ.

Чăваш литературин ӳсĕмĕсем пирки шухăшланă май, литературă критикин хăш-пĕр ыйтăвĕсем çинчен пĕр-ик сăмах та пулин калас килет. Литературăн ытти жанрĕсем пирки калакансем, статья çыракансем пирĕн писательсем хушшинче сахал мар. Прозăпа драматурги, поэзи, ача-пăча литератури ыйтăвĕсене ятарласа пухнă пухусенче, темиçе кун ĕслекен семинарсенче пăхса тухаççĕ, вĕсене сӳтсе явнă çĕре Мускав писателĕсене чĕнсе илеççĕ, кайран вара чăваш прози, поэзийĕ, драматургийĕ çинчен чăваш хаçачĕсемпе журналĕсенче çеç мар, Мускаври хаçат-журналсенче те тĕрлĕ статьясем çапăнса тухаççĕ.

Литературă критикине илес пулсан, эпир мĕн куратпăр-ха? Ун пирки час-часах çакăн пек сăмах илтме пулать: литературă критики юлса пырать, вăл питех те витĕмсĕр!

Ку сăмахсенче чăнни пурах.

Партин XX съезчĕ совет литературипе искусстви хăйĕн содержанийĕпе кăна мар, ăсталăхĕпе те тĕнчере чи малта пыракан литературă пулмалла, терĕ. Чăваш писателĕсемпе искусствă çыннисем, парти кăтартăвĕсене тĕпе хурса

---

* Ку статьяна партин XXII съездне хатĕрленнĕ вăхăтра çырнă, çавăнпа та автор съезд материалĕсемпе усă курайман. КПСС XXII съезчĕ литературăпа искусствă умне лартнă задачăсене, парти Программине чăваш литератури пурнăçа мĕнле кĕртсе пынине çутатса парасси — ятарласа çырмалла темă.

ĕçлесе, чылай çитĕнӳсем турĕç. Юлашки вăхăтра чун-чĕрене савăнтаракан, шухăш-кăмăла хăпартакан, ăс-пуçа ыра шухăшсемпе пуянлатакан произведенисем пичетленсе тухрĕç. Чăваш писателĕсен кĕнекисене республикăри кашни хулапа ялта тенĕ пекех сутаççĕ. Библиотекăсенче вĕсене Пушкинпа Лермонтов, Тургеневпа Чехов, Горький, Шолохов, Федин, Твардовский кĕнекисемпе юнашар хурса тухнă. Чăваш ĕç çыннисем, тăван писательсен кĕнекисене вуласа тухсан, пĕр-пĕрне хăйсен шухăшĕсене каласа параççĕ, килĕшнипе килĕшеççĕ, килĕшменнипе килĕшмеççĕ, тавлашса илеççĕ. Тӳрех калăпăр, литературăн вулакансене шухăшлаттаракан, çынсене тавлаштаракан произведенисем пур пулсан, çакă вăл питех те паха япала: эппин вăл çынсен чĕрисене хускатмалăх, шухăшĕсене çĕклемелĕх, хавхалантармалăх çитĕнсе çитнĕ. Çакă вăл пирĕн литературăн идейăлăхĕпе ăсталăхĕн шайĕ ӳснине те кăтартса парать.

Партин XX съезчĕ хыççăн иртнĕ тапхăр хушшинче чăваш литературин жанрĕсем çĕнĕ те паха произведенисемпе пуянланчĕç. Пирĕн литературăра Константин Иванов вăхăтĕнче те, кайрантарах та поэзи жанрĕ ытларах палăрнă. Совет саманинче ытти жанрсем те аталанса вăй илчĕç: прозă ура çине тăчĕ, драматурги, ача-пăча литератури, сатирăпа юмор, критикăпа литературă тĕпчевĕ аталанчĕ. Вĕсенчен чи çамрăкки — литературă критики. Урăхла пулма та пултарайман: литературă критикине пуçланса кайма пысăк литературă — романсемпе повеçсем, калавсемпе очерксем, драмăсем, поэмăсем, сăвăсем тата ыт. те кирлĕ, мĕншĕн тесен литературă критики çара çĕрте, тăр пĕччен, нихçан та пуçланса кайман, пуçланса кайма та пултараймасть. Анчах литературă критики, тата тепĕр хут палăртăпăр, пĕрре пуçланса кайрĕ пулсан, малаллах туртăнать,— ку çеç те мар-ха, вăл ытти жанрсене те хускатса тăма, ертсе пыма тытăнать, литературă пуçне тухса тăрать. Çакă вара литературă вăйланса çитни çинчен, халăх пурнăçĕнче паллă вăй пулса тăни çинчен калать. Анчах пирĕн литературăра ăна çавăн пек вăй паракан, малалла ертсе пыракан критикă пур-ши?

Чăваш литературă критикин ӳсĕмĕсем пирки сăмах хускатнă май, эпир критикăн юлашки çулсенче аталанма тытăннă пĕр паха енне палăртса хăварасшăн. Çакă вăл тăван литературăн ӳсĕмĕсене çулсерен пăхса тухни, литературăн утăмĕсене, ун умĕнче тăракан задачăсене палăртни, уйрăм жанрсен ӳсĕмне, уйрăм писательсен произведенийĕсене, вĕ-

сен пултарулăхне тĕпчесе тухни, паха енĕсене палăртса хаклани, çитменлĕхсене уçса кăтартни, вĕсене пĕтермелли майсене кăтартса пани (скобкăра халех палăртса хăварăпăр, ку ĕç çителĕклĕ таран пулса пырать теме çук-ха, çапах та пахи çакă: эпир литература ÿсĕмĕсене пăхса тухас ĕçе çулсеренех тума тăрăшатпăр).

Вырăс литературинче ун пек ĕçе, çулталăк вĕçĕнче литературăн ÿсĕмĕсене пăхса тухассине, иртнĕ ĕмĕрĕн 30-мĕшпе 50-мĕш çулĕсенчех тума тытăннă. Сăмахран, вырăссен аслă критикĕ В. Г. Белинский ун чухне кашни çул тенĕ пекех литература ÿсĕмĕсене пăхса тухса статьясем çырнă. Вулакансем унăн статйисене хапăл туса йышăннă, вуласа савăннă, ăс-пуçне пуянлатнă.

«1840 çулхи вырăс литератури» ятлă статйине аслă критик çакăн пек сăмахсемпе пуçлать: «Вунă çул ĕлĕкрех, альманахсем нумай тухса тăнă вăхăтра, «Литературăна пăхса тухнисем» «Обозрения литературы».— **В. Д.**) тенĕ статьясем тăтăшах тухса тăратчĕç. Вĕсем журналсенче те час-часах çапăнатчĕç. Çав «обозренисем» пирки тавлашусем пуçланса каятчĕç, пĕр-пĕринпе тавлашса, пĕр-пĕрне хирĕç статьясем çырса, тем чухлĕ чернил пĕтеретчĕç: «обозренисем» литературăна пурнăç паратчĕç — çав ĕçе литераторсем çеç мар, вулакансем те хастар хутшăнатчĕç»*.

Ку сăмахсене çырнă чухне аслă критик Пушкин вăхăтне асра тытнă: литературăна пăхса тухас ĕçе Пушкин вăхăтĕнче пуçласа янă. Белинский ăна малалла сарса пынă.

Асăннă статьяра В. Г. Белинский: «Халĕ пире «обозренисем» кирлĕ-и?»—тесе ыйтать. Вара хăех: «Каллех ĕнтĕ «обозренисен» вăхăчĕ çитрĕ» тесе калать. Çакăн хыççăн Белинский темиçе çул хушши «обозренисем» çырса пырать. Вĕсем вырăссен классикла литературин историне кĕрсе чаплă вырăн йышăннă. Белинский «обозренийĕсене» вулатăн та «тĕлĕнсе пытсах каятăн»: вĕсен шухăшĕ тĕпсĕр авăр пек тарăн, вуланма илемлĕ произведени пек вуланаççĕ, çавăнпа та ĕнтĕ вĕсене вулама тытăнсан, чарăнма пĕлместĕн... Вуласа пĕтерсен, ирĕксĕрех: мĕншĕн пĕтрĕ-ши ку статья, тетĕн. Паха статьяшăн критике чун-чĕререн тав тăватăн.

«Обозренисем» çырасси, литературăн пĕр-пĕр тапхăрти ÿсĕмне пăхса тухасси аслă вырăс литературин кивеле

---

* В. Г. Белинский. Собрание соч. в трех томах, т. I, ГИХЛ, 697 стр.

пĕлми традицийĕ пулса тăнă. Çак ырă традицие вырăссен прогрессивлă журналĕсем, аслă писателĕсем малалла тытса пынă.

«Литература обозренийĕсем» пирки Максим Горький те темиçе хутчен çырнă, çав паха йăлана пирĕн манмалла мар, чĕртсе ямалла, малалла аталантармалла, тенĕ.

Хальхи вырăс литературинче те çавăн пек статьясем час-часах пичетленсе тухаççĕ. Вырăс писателĕсем Мускавра, Ленинградра тата ытти хуласенче те çул вĕçленнĕ вăхăтра( декабрьте) е çĕнĕ çул пуçланнă кунсенче (январьте) прозă, поэзи, драматурги, критикă ӳсĕмĕсене пăхса тухма пухусем туса ирттереççĕ, унта докладсем итлесе сӳтсе яваççĕ, сăмахсем тухса калаççĕ, тавлашаççĕ, çĕнĕ шухăшсем калаççĕ, йăнăшакансене тӳрлетеççĕ, канашсем парса юлташла пулăшаççĕ.

Çак ырă йăла чăваш литературине те çитсе кĕчĕ, аталанма тытăнчĕ. Акă кăçал, 1961 çулта, чăваш литературин юлашки вăхăтри ӳсĕмĕсене палăртса паракан статьясем виççĕ пичетленсе тухрĕç: Александр Алка —«Хальхи вăхăта тивĕçлĕ литературăшăн» («Тăван Атăл» альманах, 3(90) кĕнеке, 81—88 страницăсем); Хветĕр Уяр — «Тухăçлă çул (Пĕлтĕрхи кĕнекесене вуланă май пуça килнĕ шухăшсем)» («Ялав», 5(379), 28—32 стр.); Р. Чепунов — «Пирĕн журналсенчи иртнĕ çулхи прозă» («Ялав», 2(376), 25—28 стр.). Ку статьясемсĕр пуçне пирĕн хаçат-журналсенче уйрăм кĕнекесем пирки темиçе статья пичетленсе тухрĕ. Вĕсене пурне пĕрле илсе пăхсан, пирĕн литература критики ĕçлеме тăрăшни курăнать.

Литература критики пирки сăмах хускатсан, хăшĕ-пĕрисем: пирĕн Белинский пек критиксем çук, пире Белинскисем кирлĕ, теççĕ. Тĕрĕс, пирĕн Белинскисем курăнмаççĕ-ха, анчах пирĕн пĕтĕм ĕçе куллен-кун ертсе пыракан Коммунистсен аслă партийĕ пур. Совет литератури парти кăтартăвĕсене тĕпе хурса ĕçлет, совет писателĕсене марксизм-ленинизм вăй парса, хавхалантарса тăрать. Коммунистсен партийĕ социализмла культурăна аталантарас ыйтусене, çав шутра литературăпа искусствăна аталантарас ыйтусене те, программăлла ыйтусем шутне кĕртет. Вĕсем РКП(б)ăн VIII съездĕнче йышăннă парти программинче тивĕçлĕ вырăн йышăннă. КПСС XXII съезчĕ пăхса тухса йышăннă парти Программи, коммунизмла литературăн задачисене кăтартса парса, совет писателĕсене пысăкран та пысăк çитĕнӳсем тума çĕнĕ вăй-хал парса тăрĕ.

* *
*

Статья пуҫламӑшӗнче эпир чӑваш литератури критикин паха енӗсенчен пӗрне кӑтартса патӑмӑр, ҫавна май хӑш-пӗр статьясене, уйрӑмах А. Алка, Х. Уяр, Р. Чепунов статйисене асӑнтӑмӑр. Вӗсем пирки мӗн калама пулать-ха? Мӗнлерех-ши вӗсен теори тӗлӗшӗнчи шайӗ?

Эппин, ҫак ыйтусем ҫине ответ парас тесе, ҫав асӑннӑ статьясене кӗскен пӑхса тухар-ха.

Р. Чепунов статйи **«Пирӗн журналсенчи иртнӗ ҫулхи прозӑ»** ятлӑ. Унӑн авторӗ, хӑй каланӑ тӑрӑх, «периодикӑлла пичетре» («Тӑван Атӑл» альманахра, «Ялав» журналпа унӑн библиотекинче) 1960 ҫулта ҫапӑнса тухнӑ повеҫсемпе калавсене тата очерксене пӑхса тухать. Х. Уярпа А. Алка уйрӑм кӗнекесене пӑхса тухаҫҫӗ. Ҫапла вара, ҫак виҫӗ статьяна пӗрле илсе пӑхсан, вӗсем пӗр пысӑк «обозрени» пек пулса тӑраҫҫӗ.

Р. Чепунов — ҫамрӑк автор, унӑн литератури ӗҫӗнчи опычӗ ҫукпа пӗрех. Вӑл вӗренет-ха, тӳррипе каласан, унӑн «обзорӗ» те вӗренчӗкле ҫырнӑ статья кӑна-ха. Паллах, вӗренчӗкле тунӑ ӗҫре ҫитменлӗхсем те пулма пултараҫҫӗ. Шел пулин те, ҫамрӑк критикӑн ҫак статйинче пысӑк ҫитменлӗхсем тӗл пулаҫҫӗ («Ялав» редакцийӗ автора кирлӗ чухлӗ пулӑшман, статьяна тивӗҫлӗ таран тӳрлетмен).

Р. Чепунов 1960 ҫулта пичетленсе тухнӑ романсемпе повеҫсене, калавсемпе очерксене пурне те мар, хӑш-пӗрисене ҫеҫ илнӗ. Вӗсене тишкернӗ чухне вӑл пӗрисем ҫинчен нумай ҫырать, теприсем ҫинчен пӗр-ик сӑмах каланипех е асӑннипех иртсе каять. Статьян пуҫламӑшӗнче икӗ романа — Илпек Микулайӗн «Хура ҫӑкӑрне» тата Кипек Мӗтрийӗн «Кайӑк тусне» асӑнать. Анчах вӑл ҫак романсене тишкермест. Пирӗн шутпа, прозӑна пӑхса тухнӑ чухне романсене шута илменни — пысӑк ҫитменлӗх. Прозӑ ӳсӗмне, унӑн ҫитӗнӗвӗсене чи малтан романсем кӑтартса параҫҫӗ, ҫавӑнпа та вӗсем ҫинчен каламасӑр, вӗсене тишкермесӗр, хакламасӑр литературӑн ҫулталӑкри итогне тума ҫук.

Асӑннӑ статьяна «Хура ҫӑкӑрпа» «Кайӑк тусӗ» романсене пӑхса тухнӑ пулсан, прозӑн пысӑк ыйтӑвӗсене те лартма май пулнӑ пулӗччӗ. Анчах статья авторӗ, ун пек ыйтусенчен пӑрӑнса, ытларах пӗчӗк ыйтусем пирки сӑмах ваклать. Вӑл статья пуҫламӑшӗнчех, романсене тишкӗрме йывӑррине сиссе: «Эпир халлӗхе романсемпе поэзи жанрне тӗкӗнесшӗнех мар-ха, мӗншӗн тесен вӗсем пирӗн журнал-

сенче ытла пысăкках вырăн йышăнаймарĕç, тата вĕсем пирки пирĕн пичетре урăх тишкĕрӳçĕсен сăмахне кĕтес кăмăл пур», тет. Çапла вара, критик романсене хăварать те, хăй калана тăрăх, повеçсемпе калавсене, очерксене «мĕн май килнĕ таран тишкерсе тухса, хак парас» ĕçе тытăнать.

Тӳрех калас пулать, ку статьян хăш-пĕр шухăшĕсемпе килĕшме çук. Унăн шухăш тĕлĕшĕнчи çитменлĕхсем, пирĕн шутпа, чи малтан чĕлхе çитменлĕхсенчен килнĕ. Çавăнпа та эпир пĕр вăхăтрах статьян чĕлхи çинчен те, шухăшĕсем çинчен те çырса пырасшăн.

Пĕр философ авалхи вăхăтрах çапла каланă: кам уçăмлă шухăшлать, çав уçăмлă çырать. Анчах эпир çак шухăш тĕрĕс пулин те, ку статьяра тепĕр майлă каласшăн, тепри унăн пуçĕнче тем пек паха шухăшсем пулсан та, уçăмлă шухăшлать пулин те, çырма тытăнсан, тĕп-тĕрĕс çырса параймасть. Ку вăл тин çеç çырма тытăнакансен ĕçĕнче ытларах палăрать.

Асăннă статья шухăшĕпе чĕлхин çитменлĕхĕсем пирки калас пулсан, нумай-нумай тĕслĕхсем илсе кăтартма пулать.

1. Статья пуçламăшĕнче: «Мĕнре курăнчĕ-ха пирĕн литературăн иртнĕ çулхи çитĕнĕвĕсем?»— тесе ыйтать автор. Вара хăех çакăн пек ответ парать: «Малтанах калас пулать, çыравçăсем пурнăçпа тан утма тăрăшни, хăйсен шухăш-кăмăлĕсене витермелле чĕлхепе ăшшăн та уçăмлăн калаcа парас туйăм пурри сисĕнчĕ. Ĕç кунĕсем илсе килекен пурнăçри çитĕнӳсем çинчен хавхаланса çырса кăтартасси, совет халăхне малалла утма, коммунизм патне чĕнесси кашни çыраканăн тĕп задачи пулса тăчĕ».

Çак ыйтупа ответăн чĕлхи — тимлĕн якатса тухман чĕлхе. Куратăр-и: «çитĕнӳсем» сăмах нумайлă хисепре, «курăнчĕ» пĕрреллĕ хисепре. Грамматикăна пăхăнса калас пулсан: «Мĕнре курăнчĕç-ха пирĕн литературăн иртнĕ çулхи çитĕнĕвĕсем?» темелле.

Çак ыйту çине панă ответăн шухăшĕ логика йĕркипе çыхăнса тăмалла. «Çитĕнӳсем... тăрăшнинче... туйăм пурринче курăнчĕç (сисĕнчĕç)» темелле. Анчах автора кун пек çырни те çăлаймасть: статьяра панă ответ вулакана çав-çавах çырлахтараймасть. «Пурнăçпа тан утма тăрăшни» 1960 çулта сисĕннĕ япала мар, писательсем тахçантанпах «пурнăçпа тан утма» тăрăшаççĕ. Тепĕр тесен тата «тăрăшни» хăй тĕллĕн кăна çитĕнӳ пулма пултараймасть-ха,

вулакансене, халăха çĕнĕ произведенисем кирлĕ, çĕнĕ произведенисене çеç çитĕнӳ теме пулать.

Малалла: «çыравçăсем... хăйсен шухăш-кăмăлĕсене витермелле... каласа парас туйăм пурри сисĕнчĕ» тенĕ. Мĕнле ăнланмалла ку вырăна? «Хăйсен шухăш-кăмăлĕсене витермелле» тени мĕне пĕлтерет? «Каласа парас туйăм пурри (сисĕнни)» хăй кăна çитĕнӳ вырăнне шутланма пултарать-и?

Паллах, писатель кашни произведенирех мĕнле те пулин шухăш каласа парать, мĕнле те пулин кăмăл палăртать. Çав шухăшпа кăмăл халăхăн малта пыракан сийĕсен шухăшĕсемпе, кăмăлĕсемпе пĕрлешсе çыхăнса тăрать, тĕрĕсрех калас-тăк, писатель халăхăн малта пыракан сийĕсен шухăш-кăмăлне палăртать, пурнăça çав шухăшсем енчен çутатса парать, халăх шухăш-кăмăлне тивĕçтермелле çырать. Чăн-чăн писатель — вăл парти помошникĕ, халăх ĕçне тăвакан çын, çавăнпа та ун пек писатель çинчен: вăл халăх шухăшне, ĕмĕтне, чĕре туйăмне палăртать, тенĕ.

Статья авторĕ каланă тăрăх, çыравçăсем «пурнăçпа тан утма тăрăшаççĕ», анчах вĕсен туйăмĕ «хăйсен шухăш-кăмăлĕсене» витерессинчен иртеймест. Ку вăл пăтранчăк шухăш, логикăна пăхăнман шухăш.

Чăваш литературин юлашки тапхăрти, уйрăмах партин XX тата XXI съезчĕсем хыççăнхи, çичĕ çуллăхăн пĕрремĕшпе иккĕмĕш çулĕсенчи çитĕнĕвĕсем çинчен калас пулсан, сăмаха акă мĕнрен пуçлани тĕрĕсрех пулать: чăваш совет литератури ĕнтĕ хальхи пурнăça кăтартса парас çул çине тухрĕ, чăваш писателĕсем 1960 çулта та çав çулпах пычĕç.

Статьяра «литературăн иртнĕ çулхи çитĕнĕвĕсене» кăтартса парас шутпа автор чăваш писателĕсем 1960 çулта «икĕ роман», «вунна яхăн повеçсем», «çĕр патнелле калавсем, новеллăсем, нумай-нумай аса илӳсемпе статьясем, очерксем, поэмăсемпе сăвăсем» çырни çинчен каланă. Çак произведенисене асра тытса, автор: вĕсем «вулакансене халлĕхе (?!) самаях савăнтарчĕç», тет. Чăваш писателĕсем 1960 çулта çырнă произведенисем халлĕхе çеç савăнтараççĕ пулсан, пысăк çитĕнӳ вырăнне шутланма пултараççĕ-ши? Пирĕн шутпа, чăваш писателĕсем 1960 çулта çырнă произведенисем хушшинче вулакансене халлĕхе çеç мар, паян та, ыран та, виçмине те савăнтарма пултаракан произведенисем пурах. Вĕсем, тем тесен те, пĕр кунлăх произведенисем мар. Вĕсем — «халлĕхе» картинчен тухса, пурнăçра юлма

пултаракан, ĕç çыннисене пулăшакан произведенисем.

2. «Çырас ăсталăх та, иртнĕ çулсемпе танлаштарсан, çивĕчленсе тарăнланчĕ», тенĕ статьяра.

«Ăсталăх çивĕчленчĕ», «ăсталăх тарăнланчĕ» тенине «критиксене» мар, ахаль çынсене каласа кăтартасчĕ: мĕнле ăнланĕç-ши вĕсем çав «çивĕчленчĕсемпе» «тарăнланчĕсене»?

Статьяра тата çапла каланисем тĕл пулаççĕ:

а) «Иртнĕ çул журналсен страницисем çинче (!) романсем хыççăн повеçсем паркаланма (?) пуçларĕç».

б) «Романăн пĕрремĕш кĕнеки (сăмах В. Садайăн «Лётчиксем» романĕ пирки пырать.— В. Д.) — вăрçă вутне кĕме хатĕрленекен хĕрӳ тапхăра... уçса парать».

в) «Асăннă повеçĕн (ку Алкан «Хурама та хурăн» повеçĕ çинчен.— В. Д.) хăйне евĕрлĕ уйрăмлăхсем пур. Мĕнре-ха вĕсем? Малтанах калас килет, çыравçă пурнăçра халиччен пулман çĕнĕ, чĕрĕ детальсене вăхăтра ярса илсе, паянхи кун шайĕнче тăрса татса пама пĕлнинче (?). Повеçре, темле, асар-писер тĕлĕнмелле паттăрла ĕçсем пулса иртмеççĕ, персонажсем ĕмĕтленекен сăнарсем, çĕннине хӳтĕлекен, киввине сивлекен çынсем».

г) «Çемьепе çыхăннă юрату моральне автор тĕрĕс, паянхи кун виçисенчен тухса (!) татса парать, ытти çыракансемпе вулакансене те малашне хăй çулĕпе чĕнет».

Çак пуплевсене вулатăн та ирĕксĕрех çапла калатăн: тăван чĕлхемĕр, сана пăсаççĕ, çӳпĕлеççĕ, эсĕ çаплах тӳсетĕн! Мĕншĕн писательсем — чĕлхе ăстисем — чĕлхе тасалăхĕ пирки ним те шарламаççĕ-ши?..

Чăнах та, «журналсен страницисем çинче (!) повеçсем паркаланма (!) пуçларĕç» тени чăваш чĕлхине çӳпĕлемест-и? Тĕрĕс чĕлхе-çăбарлă çын çавăн пек калать-и? Çук, каламасть!

Статья авторĕ «детальсене... паянхи кун шайĕнче тăрса татса пани» çинчен калать.

Мĕн-ха вăл деталь? Вырăссен «деталь» сăмахне тӳрех чăвашла калама йывăр, анчах писательсемшĕн те, вулакансемшĕн те çакă паллă: «детале» татса пама çук, татса пама вăл задачă мар. Деталь — вăл япалан, явленин (пулăмăн) чи характерлă палли. Аста писатель япалана е пулăма кăтартса панă чух çав палла илет те çавăн урлă пĕтĕм япалана е пулăма вулакан умне кăларса тăратать. Кирек мĕнле илемлĕ произведени те çавăн пек детальсенчен тăрать. Писатель хăйĕн туйăмĕсене, шухăшĕсене детальсемпе (детальсем урлă) кăтартса парать.

Иван Бунинăн пĕр калавĕнче çакăн пек вырăн пур: «У дверей вокзала толпился возле чего-то народ: я подбежал — это лежал убитый на охоте дикий кабан, грубый, огромный, могучий, закоченевший и промерзший, страшно жесткий даже на вид, весь торчащий серыми длинными иглами густой щетины, пересыпанный сухим снегом, с свиными глазками, с двумя крепко закушенными белыми клыками».

Бунин çырни — детальсен çыххи, пĕр деталĕ тепĕр детальне пулăшать, вĕсенчен вара ӳкерчĕк пулса тăрать, илемлĕх пулать. Вулакан, хир сыснине нихçан та курман пулсан та, хир сысни мĕнлерех чĕрчун пулнине çителĕклех пĕлме пултарать.

Аркадий Эсхелĕн «Ашшĕпе ывăлĕ» ятлă калавĕ çапла пуçланса каять: «Тимĕр тин кăна тĕлĕрсе кайнăччĕ. Унăн хăлхине темĕнле хуллен çеç тăкăртаттарнă сасă сăрхăнса кĕре пуçларĕ. Вăрманта ула такка юман хуппине кĕшĕклет, тейĕн. Çав сасăпа Тимĕр кĕçех тĕлĕк курма та тытăнчĕ пуль ĕнтĕ — ун пек чухне тĕлĕкрипе чăнни сисĕнмесĕрех пĕрлешсе каять,— анчах ăна арăмĕ, Çинук, аяккинчен кăлт тĕртрĕ те:

— Ашшĕ, вăран-ха, кантăка шаккаççĕ,— терĕ».

Асăрхарăр-и, кунта мĕнле паха детальсем пур! Тимĕр хăлхине темле сасă кĕрет, анчах ку вăл ахаль сасă мар — «тăкăртаттарнă сасă»; ку çеç те мар-ха, вăл — «хуллен çеç тăкăртаттарнă сасă»; тата та ытларах, вăл «хăлхана сăрхăнса кĕрекен» сасă. Писатель çак туйăма малалла акă мĕнле вăйлатать: çав сасса илтсен, «вăрманта ула такка юман хуппине кĕшĕклет тейĕн», тесе хурать.

Пирĕн шутпа, автор кунта детальсемпе питех те ăста усă курнă, илемлĕх мелĕсемпе ӳкерчĕк туса панă.

Деталь çинчен С. Антонов писатель çакăн пек çырать: «Характерное свойство детали, чрезвычайно важное для жанра рассказа, заключается в том, что она способна передать уму и сердцу гораздо больше, чем голая словесно-смысловая ткань фразы, выражающей эту деталь. В отличие от подробности, деталь, поставленная в подходящем месте, как бы детонирует. Настоящая сложная деталь звучит, как горное эхо, многократно и разнообразно повторенное. Она способна вызвать в сознании читателя массу ассоциаций, порой настолько глубоких и неожиданных, что иногда сам автор с великим изумлением узнает о них из

критических статей. Деталь иногда действует с такой силой, что само действие ее кажется загадочным».

Писатель ăсталăхĕ пирки калас пулсан, чи малтан унăн детальсем тупас, вĕсене пĕр-пĕринпе çыхăнтарса сăнлăхсем тăвас пултарулăхĕ çинчен калас пулать. Кунта тата çакна асăрхаттарни те вырăнлă пулмалла: тепĕр чухне писатель хăйĕн ăсталăхне хăй те пĕлсех каймасть, критик ытларах курать, тишкĕрсе кăтартса парать. Анчах пирĕн ун пек ăста критиксем сахал-ха, вĕсем хăйсен тишкерӳ ăсталăхĕпе ăста писательсене тĕлĕнтереймеççĕ-ха.

З. А. Е. Алка повеçĕн чĕлхи çинчен критик çакăн пек çырать: «Асăннă повеçре А. Алка анатри чĕлхе лексикине анлăн (!) кĕртсе янă, этнографилле паллăсене, чăваш çыннин психологине витĕмлĕ уçса пама пĕлнĕ». «Нумай писательсем пĕр евĕрлĕ сăмахсемпе час-часах усă кураççĕ. А. Алка ку чăрмавран (!) хăйне аякра тытма тăрăшнă. Вăл, хăй те анат енче ӳснĕскер,— явлăк, тăкăрлăк, кăтăш, картиш, прикашчăк, минтер, хуняма, масар, йĕкĕт тата ытти, анатри чăвашсем çеç калакан çавнашкал сăмахсемпе анлăн (!) та пĕлсе усă курать».

Çакăнта каланисене ĕненес пулсан, чăвашсен икĕ чĕлхе тес пулать: анатри тата тури. Паллах, 50—100 çул ĕлĕкрех чăваш чĕлхинче икĕ диалект, вырăнти калаçу хытă палăрни çинчен калама май пулнă, анчах ун чухне те чăвашсен пĕр-пĕринчен уйрăм икĕ чĕлхе пулман. Чăваш халăхĕ наци пулса тăнăранпа пĕр пĕтĕмĕшле чĕлхепе, наци чĕлхипе калаçать. Чăвашсем, анатрисем те, турисем те, пĕр-пĕрне лайăх ăнланаççĕ. Чăваш писателĕсем пĕр чĕлхепе çыраççĕ. Вăл — халăхăн наци, литература чĕлхи.

Р. Чепунов асăннă сăмахсем тахçанах литература чĕлхине кĕнĕ, наци чĕлхин лексикине кĕнĕ.

Акă, илер-ха Çеçпĕл Мишши сăввисене (Çеçпĕл анатри чăваш мар!). Вĕсенче час-часах «масар» сăмах тĕл пулать:

Мĕскĕн таван, сан чуну тухсан,
Никамăн та куççулĕ юхман.
Санăн кусна арăму хупман,
Анну масар çине ăсатман.

(«Пурнăçпа вилĕм»).

Ват асатте çиллĕ тăвăл витĕр
Мана масар çине кайса чиктĕр.

(«Йывăр шухăшсем»).

«Хуняма» сăмаха илес пулсан, тӳрех çапла калас пулать: ку сăмаха пĕлмен ял, пĕлмен çын чăваш хушшинче

пачах та çук. «Хунямa» сăмах — ĕлĕк-авалхи сăмах. Вăл хунсен (гунсем) саманинчех пуçланса кайнă. Чăваш чĕлхинче çаплах пурăнать. Ăна кирек хăш вырăнти чăвашсен калаçăвĕнче те илтме пулать.

4. Каллех чĕлхи пирки: «Паянхи произведенисенче,— тет статья авторĕ,— пуринче те: пĕчĕк-и вăл, пысăк-и,— пĕр сисĕм-туйăм юхăмĕ палăрать — ĕçе хутшăнма хавхалантарни, кахалсемпе тӳре-шарасене (?), харам пырсене питлени, вĕсемпе пĕр шелсĕр, уяса тăмасăр кĕрешме ыйтни (!)».

Ыйтас килет: мĕн вăл «сисĕм-туйăм юхăмĕ»? Камсем вĕсем «тӳре-шарасем»?

Революцичченхи саманара «тӳре-шара» тесе судьясене, чиновниксене, патша влаçĕн, полиципе жандармерийĕн тĕрлĕ çыннисене каланă. Вăл сăмах — кивелнĕ, хальхи чĕлхерен тухса ӳкнĕ сăмах. Вăл кирлĕ те мар, мĕншĕн тесен совет обществинче тӳре-шара çук. «Тӳре-шара» сăмах патша йĕрки çинчен каланă чухне çеç кирлĕ пулма пултарать.

Статья авторĕ писательсене чăваш чĕлхине пĕлменшĕн критиклет. Сăмахран, вăл А. Петровăн «Тĕрĕс турăн, Надя» очеркне «штамп чĕлхипе, мăка сăмахсемпе» çырнăшăн, «шăйăрттарса кайнăшăн», «фактсене регистрацилесе тухнипех çырлахнăшăн», сăмахсене пăтраштарнăшăн тиркет. «Лексикăна пĕлсе каяс пирки те,— тет критик,— А. Петров ăстах мар курăнать. Тĕслĕхрен, çав очеркрах унăн çакăн пек сăмах çаврăнăшĕ пур: «Шăвармалли шыва Ара çырминчен ăсмалла, анса ухмалли çыран хĕрри чăнкă»... Ухмалла тенĕ. Çак сăмахăн лексикăлла пĕлтерĕшне автор ăнланманни сисĕнет. Ухмалла сăмах пирĕн чăвашсен литературă чĕлхинче — япалана, кĕпе-йĕме çăвас, ухас ăнланăва пĕлтерет», тет. Тишкĕрӳçĕ хăй каланине çирĕплетме Н. Ашмаринпа В. Егоров профессорсен словарĕсене илет, вĕсем мĕнле ăнлантарса панине çырса кăтартать.

Паллах, тĕрĕс калас пулсан, «ухать» мар, «улăхать» темелле. Çапах та, çакна та манмалла мар: «ухать» сăмах чăваш чĕлхинче «улăхать» вырăнне те çӳрет. Çак пĕлтерĕшпе вăл чăвашсен классикла литературин чĕлхине те кĕнĕ. Тĕслĕх вырăнне Çеçпĕл Мишшин «Йывăр шухăшсем» ятлă сăввине илме пулать:

> Шупашкартан тухрăм, тӳрех утрăм,
> Атăл тăвайккине çине ухрăм.

5. Леонид Агаковăн кулăшла калавĕсем çинчен пĕр-ик сăмах каланă хыççăн автор çак писателĕн «Пĕрре, çуркун-

не» тата «Юманлăхра çапла пулнă» повеçĕсен тĕп шухăшĕсене çакăн пек çыхăнтарать: «Автор творчествинче вăрă-хурахсен шайккисене (!) пысăк пайăрпа кăтартасси «Пĕрре çуркунне» повеç хыççăн курăнсах каймастчĕ-ха. Юлашки вăхăтра Л. Агаков обществăн сывă ӳт-тирĕ çинчи чир-чĕрсемпе (!) кĕрешес ĕçе пĕчĕк калавсемпе çеç кăтартса пама май çуккине ăнланчĕ курăнать. Асăннă ĕçе туллин татса парас шутпа вăл иртнĕ çул «Ялав» журналăн страницисем çинче «Юманлăхра çапла пулнă» повеç пичетлеме пуçларĕ».

Л. Агаковăн «Пĕрре çуркунне» повеçĕнче чăнах та вăрă-хурахсен, бандитсен, дезертирсен шайкки çинчен çырнă; вĕсен ирсĕр ĕçĕсене тăрă шыв çине кăларнă. Анчах çав повеç тухнă хыççăн писатель «вăрă-хурахсен шайккисем» çинчен çырманнишĕн, унăн творчествинче çавăн пек шайккăсем «курăнсах кайманнишĕн» критикăн пăшăрханма нимле сăлтав та çук. Тĕрĕссипе каласан, пăшăрханма кирлĕ те мар. Махорка лек бандитсен шайккисем ĕнтĕ пирĕн çĕршывра халĕ çук. Вĕсем — тахçан пулса иртнĕ кунсен мĕлкисем — литературă геройĕсем пулма пултараймаççĕ, тивĕçлĕ те мар.

Л. Агаков хăйĕн çĕнĕ повеçĕнче «обществăн (?) сывă ӳт-тирĕ (?) çинчи чир-чĕрсене» мар, кивĕ обществă юлашкисене, çав обществăн пыйти-шăркисене хирĕç, вĕсем сараккан кĕсенсемпе, кăрчанкăсемпе чирленĕ тӳр пилĕксене, çын шучĕпе пурăнакан çынсене, харам пырсене хирĕç совет çыннисем мĕнле хастар кĕрешнине кăтартса парас задачă лартни паллă мар-и-мĕн? Критикăн çĕнĕ задачăна писатель мĕнле татса пани çинчен çырмалла, «вăрă-хурахсен шайккисене пысăк пайăрпа» кăтартса памалли çинчен çырма кирлĕ мар, мĕншĕн тесен пирĕн çĕршывра унта-кунта вăрăсем пур пулин те, вĕсем «вăрă-хурахсен шайккисене» пĕрлешсе, вăрмансенче пурăнса «ĕçлеймеççĕ». Çакна совет çыннисем лайăх ăнланаççĕ, хăш-пĕр «çыравçăсем» ăнланмаççĕ пулсан, тĕлĕнесси çеç юлать.

6. Статьяра чăваш писателĕсем çырнă очерксем пирки, очерк жанрĕн «тĕп тĕллевĕ» пирки каланă вырăнсем пур. «Çыравçăсем,— тет автор,— ĕç çыннисене тата та тухăçлăрах ĕçлеме хавхалантарнипе пĕрлех, хăш-пĕр тăр-палтайсемпе çил пуççене сăпайлăрах пулма ыйтрĕç; хавшак чĕреллĕ, хевтесĕр çынсене, ура çине тăрса, малашне çирĕпрех пулма хушрĕç. Теприсем вара, çамрăксене ĕç романтикипе хавхалантарса, тухăça кайма сĕнеççĕ; виççĕмĕшĕсем — лăпкă та колхозлă чăвашялĕнчи пурнăç самани те нимрен те

кая мар, кунтах юлтăр тесе, çитĕнӳ çине çитĕнӳ сунчĕç. Ку вăл ытларах пирĕн очерксем урлă пулса пычĕ».

Ним те ăнланма çук: чĕлхи те, шухăшĕ те латти-пăттисĕр. «Тăр-палтайсем», «çил пуçсем» тесе камсене каланăши»? Камсене «питлет-ши автор? Çук, кунта сăмах юрăхсăр этемсене питлесси çинчен мар, «сăпайлăрах пулма ыйтни» çинчен, «çирĕпрех пулма хушни» çинчен пырать.

Статьяра çамрăксем çинчен çырнă очерксем пирки калани те — сăмах сукран сăмах туни çеç; «çитĕнӳ çине çитĕнӳ сунчĕç» тени те çавнашкал япала çеç.

Статьяра очерк жанрĕ пирки малалла çакăн пек калань: «Пĕр сăмахпа каласан, паянхи литературăн тĕп жанрĕ, кăк тымарĕ вăл, роман, повеç, калав, очерк чĕлхи».

Мĕн пулса тухрĕ-ха? Тĕп жанр роман мар, повеç, калав, очерк мар, вĕсен чĕлхи («... очерк чĕлхи»!).

«Очеркăн тĕп тĕллевĕ,— тенĕ çавăнтах,— вăл пĕрре: çынсене пирĕн ĕçсем çинчен каласа парасси мар, çав ĕçĕн пĕтĕм ăш-чиккине, вăл мĕнле пулса иртни çинчен тĕрлĕрен художествăллă меслетсемпе кăтартса парасси. Очеркçă вулакана кăтартса мар, каласа парать пулсан, ку вара вăл илемлĕ произведени мар, пĕр-пĕр хаçат репортажĕ çеç пулса тухать».

Çак сăмахсене автор «Правда» хаçатăн редколлегийĕ писательсене, хальхи кунсен геройĕсем çинчен очерксем çырса, партин XXII съезчĕ тĕлне очерксен кĕнекисем кăларма чĕнсе каланине асра тытса çырнă пулмалла.

Эпир очерк пирки çакăн пек каласшăн: очерк — вăл, Максим Горький калашле, калавпа тĕпчев ĕçĕ хушшинче («между рассказом и исследованием») тăракан жанр. Очерк каласа та, кăтартса та памалла, унта чĕрĕ çынсем, фактсем, фактсем... пулмалла. Очерк калав пек те, тĕпчев ĕçĕ пек те пулмалла, вăл пĕр вăхăтрах илемлĕ, публицистикăллă произведени пулмалла.

Очерк пахалăхĕ, илемĕ, вăйĕ пĕтĕмпех писатель пултарулăхĕнчен, талантĕнчен килет.

Р. Чепунов «Правда» хаçат редколлегийĕ чĕнсе калани вуланă-и е вуламан-и, анчах ăна вăл ăнлансах илеймен. Ăнланнă пулсан, писательсене «очерк çырма вĕрентнĕ» вăхăтрах, репортаж çинчен йĕрĕнсе çырман пулĕччĕ. «Правда» хаçат редколлегийĕ: «Очерксене, репортажсене, статьясене, çырусене, рекомендацисене «Пирĕн вăхăтри геройсем» тенĕ паллăпа «Правда» хаçат редакцине ярса парăр», тет.

7. Очерк пирки çырнă май статьяра тата çакăн пек калана: «Кашни халăхăн пĕр шухăш-тĕллев пулин те, нуши-тамашисем (!) вара тĕрлĕрен. Пĕр-пĕр çыравçă тăван халăхĕн пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен çырать пулсан, вăл хăйĕн произведенийĕнче çав халăхăн уйрăмлăхĕсене шута илет. Юлашкинчен, çырса панă пур енсем те наци колоричĕн туртăмĕсемпе пуянланаççĕ — формипе нацилле, содержанипе социализмла кĕнеке (?!) пулса тăрать».

Совет халăхĕсем, 1917 çулта патша йĕркине, капитализм стройне, эксплуатацие, социалла нуши-тамашисене пĕтерсе, ирĕклĕ пурнăç туянчĕç, пĕр çемьери çынсем пек килĕштерсе ĕçлесе социализм туса çитерчĕç, халĕ коммунизм тăваççĕ. Вĕсен шухăшĕсемпе ĕмĕчĕсем пĕр тĕллеве — коммунизмла обществă туса çитерессине — пăхăнса пыраççĕ. Анчах статья авторĕ халăхсен мĕнле «нуши-тамашисем» çинчен çыртарасшăн-ха? Паллах, уйрăм çынсен, уйрăм çемьесен, тĕрлĕ сăлтавсене пула, нуша-тамашасем пулма пултараççĕ, çапах та вĕсем халăх нуши-тамаши вырăнне шутланма пултараймаççĕ. Капитализмла строй халăх «нуши-тамашине» çуратса тăрать пулсан, социализм вара пачах урăхла: вăл капитализм юхан-суранĕсене пĕлмест, халăх пурнăçне çултан çул лайăхлатса пырать, телейлĕ тăвать.

«Халăхăн уйрăмлăхĕсене» ударени лартса тенĕ пек ытлашши палăртни, вĕсемпе тути-масине пĕлмесĕр тенĕ пек, ытлашши мухтанса вĕçкĕнленни, халăх пурнăçĕнче «наци колоричĕсĕр» пуçне урăх нимех те курманни ырри патне илсе пымасть. Писателĕн нацисене пĕр-пĕринчен уйăраканнине мар, вĕсене пĕр-пĕринпе çывхартаканнине, пĕр-пĕринпе пĕтĕçтерекеннине ытларах шута илмелле, кăтартса памалла, интернационализм, туслăх идейисене тĕпе хурса ĕçлемелле.

8. Статьяра çынсем улшăнса пыни çинчен те калана: «Пурнăç улшăнса пынипе пĕрлех,— тенĕ унта,— çынсем те улшăнаççĕ: вăтамраххисем ватăлаççĕ, çамрăккисем ӳсеççĕ».

Тĕрĕссипе илсен, кунта автор ним те каламан. Совет çыннисем улшăнни çинчен сăмах хускатсан, эпир çынсем «ӳссе ватăлни» çинчен мар, пысăкрах ыйтусем çинчен калатпăр, çынсен шухăш-кăмăлĕ, чун-чĕри, ăс-тăнĕ улшăнни çинчен калатпăр. Пирĕн совет обществинче çынсем улшăннине кăтартакан тĕп паллăсенчен пĕри — вăл çынсем ĕç çине мĕнле пăхни, тăрăшса ĕçлени. Патша саманинче хĕсĕнсе-пĕсĕнсе пурăннă чăваш хресченĕсем, «хĕвел ансан

Хĕветĕрсем», мĕн пур ĕç сыннисем, çĕршывран çĕр улпучĕсене, мул хуçисене, вĕсен тарçи-тĕрçисене, тĕрлĕ тиексемпе вĕсен йыттисене хăваласа ярсан, Совет влаçĕ пулса тăрсан, ваттисем те, çамрăккисем те çĕнĕ пурнăçпа пурăнма тытăнчĕç. Революцишĕн, революци панă ырлăхсене упрассишĕн пыракан ĕçпе кĕрешӳ, коммунизм çăлтăрĕсен çути, коммунизм патне утăм хыççăн утăм туни, çав обществăшăн чун-чĕререн парăнса ĕçлени пĕтĕм халăх сăн-сăпатне, ĕмĕтшухăшне, ăнланăвне, чун-хавалне, чĕрине улăштарчĕ. Çынсем хăйсен сăнĕпе те, ăс-тăнĕпе те илемленчĕç. Çынсем хăйсен умне мал ĕмĕтсем, пысăк та чаплă задачăсем лартаççĕ, вĕсене пурнăçа кĕртеççĕ. Совет çыннисем коммунистла идеалсемпе хавасланса, вĕсене пăхăнса пурăнаççĕ. Вĕсен çутипе малалла кайса пыраççĕ.

Вырăссен классикла литератури этем пур тĕлĕшпе те илемлĕ пулмалла тесе вĕрентнĕ. Совет çыннисем, çĕршыври пурнăç улшăннă май, патварланса, улшăнса, ăслăланса, илемленсе пыраççĕ. Паллах, тĕнчере ватăлман çын çук, анчах пирĕн çĕршывра ваттисем те улшăнаççĕ. Çакна капиталистсем, вĕсен идеологĕсем ăнланмаççĕ, ăнланма мар, совет çыннисем çинчен тем тĕрлĕ элек сараççĕ. Çапах та совет çыннисем хăрамаççĕ, мĕншĕн тесен çĕнĕ обществăна миллионсем тăвакан коммунизм çуртне элекпе витсе хума çук.

9. «Çамрăксене пулăшас шутпа,— тет Р. Чепунов,— произведенисем епле пиçсе çитни çинчен иртнĕ çул пĕр чăваш писателĕ те журналсен страницисем çинче канаш памарĕ».

Кунта автор тĕрĕс ӳпкелешет. Пирĕн писательсен Союзĕ те, хаçат-журнал редакцийĕсем те çамрăк писательсене çителĕклĕ пулăшмаççĕ-ха. Вĕсен произведенийĕсене тимлĕн тишкĕрсе çырнă статьясем те хутран-ситрен çеç пичетленсе тухаççĕ. Çапах та çакăн пек асăрхаттарас килет: вĕренес текен çамрăк писатель произведенисем «епле пиçсе çитни» çинчен «журнал страницисем çинче (!)» канаш парасса кĕтмесĕрех вĕренме тăрăшать. Тĕрĕссипе кашни критикăлла статьярах вĕренмелли, шута илмелли мĕн те пулин пурах. Пирĕн хăш-пĕр çамрăк писательсем вĕренмесĕрех писатель пулма шутлаççĕ. Теприсем института-мĕн кĕрсен пĕр-ик çултанах пăрахса каяççĕ, çакăн хыççăн вара ĕççĕр аптраса çӳреççĕ. Ман шутпа, вĕренес ĕçе пурăнма вĕренессинчен тытăнмалла, çырас ĕçе ăс-пуçа йĕркелекен наукăсене, тăван чĕлхене вĕренессинчен пуçламалла. Чĕлхене

пĕлмен е çителĕксĕр пĕлекен çын нихçан та путлĕ писатель пулаймасть. Чăваш писателĕн, сахалтан та, икĕ чĕлхе — чăваш тата вырăс чĕлхисене лайăх пĕлмелле. Писатель пулас текен çыннăн кашни сăмах тути-масине, сăмах сулмакне туймалла.

Иккĕмĕш услови: çамрăк писатель мĕнле те пулин ĕçе вĕренмелле, ăçта та пулин ĕçлемелле. Ĕçе вĕренни, ăçта та пулин ĕçлени пурнăçа пĕлме пулăшать. Пурнăçа пĕлмен, ĕç урлă çынсемпе хутшăнман çын писатель пулаймасть.

Виççĕмĕшĕ: писатель хăйĕн ăсталăхне хăй тăрăшнипе çеç туянма пултарать. Писателе талант та кирлĕ. Анчах вăл — такам панă япала мар. Ытлашши философилемесĕр калас-тăк, талант вăл — тăрăшнипе, ĕçленипе, вĕреннипе аталантарнă пултарулăх.

Статья авторĕ Я. Ухсая, А. Алкана, П. Хусанкая, Х. Уяра, Л. Агакова «вĕрентсе, ăс парса» статьясем çырма хушать. Кун пек статьясем пирĕн журналсен «страницисем çинче» курăнмаççĕ. «Ун выранне вара,— пĕлтерет автор,— çамрăксем час-часах аслă писательсем урлă ăслă канаш выранне тип мунча та кĕркелерĕç. Хăш чухне ăс парас выранне, çамрăксене ура хурса ӳкеркеленисем те пулкаларĕç».

Малтан çакна асăрхаттарăпăр: çак пуплевсене çыру чĕлхине пĕлекен çын çырнă теме çук, вĕсем кăнттам та илемсĕр. «Писательсем урлă», «ăслă канаш выранне», «часчасах... тип мунча кĕркелерĕç» — кам çакăн пек чĕлхепе калаçать? «Час-часах» тенипе «кĕркелерĕç» тени логикă йĕркине пăхăнмасть. «Кĕркелерĕç» тени «час-час» тенĕ шухăша пĕлтермест. Тата «кĕркелерĕç» тенинче «аслă писательсен» айăпĕ çук, «кĕркелерĕç» пулсан, çав «тип мунчана» «çамрăк писательсем» хăйсем кĕнĕ пек пулса тухать. Йĕркеллĕ калас пулсан, «тип мунча кĕртрĕç» тес пулать. «Тип мунча кĕркелерĕм» тени çав мунчана кĕрекен çын ирĕкĕпе пулать, «тип мунча кĕртрĕç» тени çав çынна урăх çын кĕртнине, такам хытă ятланине, критикленине, «çунтарнине», «ăшаланине» пĕлтерет.

Р. Чепунов çырнисене шухăш енчен илсе пăхсан, çакă курăнать: çамрăк писательсене такам хĕсĕрлет, такам кун памасть, çулĕсене пӳлет, «ура хурса ӳкерет». Анчах камсем ун пек хăтланаççĕ-ха? Камсем?! Çакна Чăваш писателĕсен Союзĕн правленийĕн тĕрĕслемелле те айăплисене хытă айăпламалла!

Эпир Р. Чепунов статйине «вĕренчĕкле çырнă» статья

терĕмĕр. Чепуновăн ку статьясăр пуçне «Тăван Атăл» альманахра тепĕр статья пичетленсе тухнă. Унта вăл «Тăхăр ял» авторĕн пултарулăхĕ çинчен çырать. Ку статьяна тăрăшса çырнă, çавăнпа та ăна тиркеме çук. Эппин, Р. Чепунов тăрăшсан, тимлесен — лайăх статьясем çырма пултарасси курăнсах тăрать.

* * *

Пирĕн критикăлла статьясем час-часах «инструкци» евĕрлĕ пулса тухаççĕ: вĕсен чĕлхи курăс пек типĕ, вулама тытăнсан, çĕр хут такăнатăн, хăна ху ирĕксĕрлесе вуланипе пуç ыратакан пулать. Анчах чăн-чăн писатель, чăн-чăн литератор çырнă критикăлла статья ун пек мар. Вĕсем илемлĕ произведенисем пекех! Вĕсене вуламасăр нимле те хăвармастăн, вăхăту тем пек сахал пулин те, вуласа тухатăнах. Çакă вăл акă мĕнле шухăша çирĕплетсе парать: тăрăшса çырсан, ăсталăх пулсан, критикăлла статьясене те илемлĕ çырма пулать, чĕлхе енчен илемлĕ произведенисем çӳллĕшĕнче тăракан критикăлла статьясене такам та хавасланса вулама пултарать. Анчах пирĕн ун пек статьясем питех те сахал.

Тепĕр чухне тата критикăн чĕлхи илемлĕ пулсан та, хăш-пĕр писательсем, унăн статйисене вуламасăрах, «чĕлхи япăх!» тесе алă сулаççĕ. Кун пек йăла — çĕнĕ йăла мар. Иртнĕ вăхăтсенче вырăссен аслă критикĕн Н. Г. Чернышевскин статйисем пирки те çавăн пек «шавласа» алă сулакансем пулнă. Анчах аслă критик чĕлхине тиркеме вĕсен нимле сăлтав та пулман. Халĕ эпир Н. Г. Чернышевский статйисемпе кĕнекисене вулатпăр та ăна критикăпа публицистика маçтăрĕ тетпĕр. Пирĕн вăхăтри критик ĕçĕ ăнăçлă пуласси чи малтан унăн пĕлĕвĕсенчен, унăн мировоззренийĕнчен, ăсталăхĕнчен килет. Писатель кăна мар, критикĕн те художник пулмалла.

Р. Чепуновăн статйи пичетленсе тухнă хыççăн ик-виç уйăхран Хветĕр Уярпа Александр Алка статйисем çапăнса тухрĕç. (Çамрăк автор «вĕрентсе, ăс парса» статьясем çырма ыйтни пурнăçа кĕчĕ темелле). Уярпа Алка статйисем, Чепунов статйипе танлаштарсан, пур тĕлĕшпе те малта тăраççĕ. Вĕсенче чăваш литературин ӳсĕмĕсене, юлашки вăхăтра пичетленсе тухнă произведенисене, пĕтĕмĕшле илсен, тĕрĕс хакланă. Уярпа Алка статйисен чĕлхи яка та илемлĕ.

Хветĕр Уяр, 1960 çула асра тытса, хăйĕн статйине

**«Тухăçлă çул»** тесе ят панă. Тухăçлă çул! Автор унăн тухăçлăхне кăтартса пама А. Алкан «Хурама та хурăн», «Уйăп Мишшин «Инçе çулсем тăрăх» кĕнекине, К. Турханпа Н. Мранькка романĕсене, В. Алакерăн «Çул юппинче», Н. Илпекĕн «Хура çăкăр» повеçĕсене илет тата ытти хăшпĕр писательсен романĕсемпе калавĕсене асăнать. Тӳрех калăпăр: тухăçлă çулшăн ку сахалтарах. Сахалтарах та мар, сахал!

Литературă çулталăкĕ тухăçлă пулни çинчен калас пулсан, прозă ӳсĕмĕ çинчен çеç мар, литературăн ытти жанрĕсем мĕнле аталаннине те пăхса тухас пулать. Паллах, вăйлă литературăна прозă та, поэзи те кирлĕ. Чăваш литературине илес пулсан, унта, тем тесен те, халлĕхе поэзи тĕп вырăн йышăнса тăрать. Константин Иванов юманĕсен икелĕсем патвар шăтаççĕ, тымарланса, туратланса ӳсеççĕ. Чăваш поэзи ăстисем çинчен республикă тулашĕнче те калаçаççĕ.

Чăваш прозин пысăк çитĕнĕвĕсенчен пĕри тесе Кузьма Турханăн «Сĕве Атăла кĕрет» романне шутлас пулать. Чăваш прозинче ку таранччен те историлле роман (чăн-чăн историлле роман!) пулманччĕ-ха. Халĕ ĕнтĕ пирĕн ун пек роман пур. Эпир Турхан романне ним иккĕленмесĕрех историлле роман тетпĕр.

Уярпа Алка статйисенче Турхан романĕ пирки те, ытти произведенисем пирки те, пĕр пек шухăшласа, пĕр евĕрлĕ çырнă вырăнсем час-часах тĕл пулаççĕ (ку сакăнтан килнĕ пулмалла: вĕсен статйисене, иккĕшне те, пĕр вăхăтра тесен те йăнăш пулас çук, писательсен пухăвĕсенче пăхса тухса сӳтсе явнă). Юлашки вăхăтра пирĕн критиксем: чăваш писателĕсем хальхи пурнăçа кирлĕ таран кăтартса памаççĕ, ытларах иртнĕ пурнăç çинчен çыраççĕ, тесе калакаларĕç. Ку ĕнтĕ тĕрĕс шухăш: литературă иртнĕ вăхăта кăтартнипе кăна обществă пурнăçĕнче тивĕçлĕ вырăн йышăнса тăракан литературă пулма пултараймасть, литературăн яланах пурнăçпа тан утса пымалла, ку çеç те мар-ха: унăн пурнăçран иртсе каймалла, малта пымалла, вулакансене пурнăç тума вĕрентмелле. Тем тесен те, эпир тахçан-авал пулса иртнĕ ĕçсен картинче чаваланнипех совет литературин аслă тĕллевне — халăха коммунизм тума пулăшас тĕллеве — пурнăçа ăнăçлăн кĕртме пултараймастпăр. Каялла пăхса ларнипех малалла кайма çук, малалла каяс тесен, яланах малалла пăхса пымалла.

Совет писателĕсем çарти разведчиксем евĕрлĕ: вĕсем паян мĕн пулса иртнине пĕлнипе çырлахмаççĕ, ыран мĕн

пуласса та кăтартса пама тăрăшаççĕ. Аса илер-ха, тĕслĕхрен, вырăссен писатель-революционерăн Н. Г. Чернышевскин «Мĕн тумалла?» романне. Чернышевский хăй вăхăтĕнчи çынсене малалла чĕннĕ, пулассине кăтартса панă, пуласси мĕн тери илемлĕ пулнине халăха ĕнентерсе пама тăрăшнă. Чернышевский романĕнче геройсенчен пĕри пулас обществă çинчен çапла калать: «Оно светло, оно прекрасно... Любите его, стремитесь к нему, работайте для него, приближайте его, переносите из него в настоящее, сколько можете перенести: настолько будет светла и добра, богата радостью и наслаждением ваша жизнь, насколько вы умеете перенести в нее из будущего. Стремитесь к нему, работайте для него, приближайте его, переносите из него в настоящее всё, что можете перенести»*.

Аслă писатель-революционер хăй вăхăтĕнчи пурнăçа питех те лайăх пĕлнĕ, пулас пурнăçа чун-чĕререн юратнă. Çавăнпа ĕнтĕ ăна В. И. Ленин хисепленĕ, пысăка хурса хакланă.

Тӳрех калăпăр, иртнĕ ĕмĕрсем çинчен çырма ытла йывăрах та мар, калăпăр, вун тăххăрмĕш ĕмĕр çинчен çырнă чухне пĕр-пĕр героя, ăслă сăмахсем калаттарса, вăл пирĕн вăхăта, паянхи кунсене, курнă теме те пулать. Ăна çакăн пек калаттарнинче ăсли нимех те çук, çавăн пек каланисене гениллĕ шухăш тесе вĕçсе çӳреме нимле сăлтав та çук. Анчах пĕр-пĕр писатель, Чернышевский вун тăххăрмĕш ĕмĕрте çырнă пек, хăйĕн геройĕн ĕмĕчĕсене, ыранхи пурнăçне кăтартса пама тăрăшса пăхтăр-ха: кунта ăна фантази çеç мар, ăс вăйĕ те, ăна çунат пама пĕлни те кирлĕ. Ытлашши каланăшăн вулакан каçартăрах: ăна ахаль пултарулăх кăна мар, генилĕх кирлĕ! Тата тепĕр хут, пысăк саспаллисемпе çырса, палăртсах калатпăр: ГЕНИЛЕХ!

Иртнĕ вăхăт çинчен çырнă, уйрăмах Турхан романĕ пирки каланă май, Уяр çакăн пек çырать: «Тăват çĕр çул ытла ĕлĕкрех пулса иртнĕ ĕçсем çинчен çырса, Турхан пире паянхи кун та интереслентерекен ыйтусенчен пĕртте аяккалла пăрăнса кайман пек туйăнчĕ мана. Эпир хăй мĕнле йăх-тĕпрен çуралнине манса кайнă Ивансем мар».

Алка та çавăн пекех çырать. Ĕлĕк чăваш халăхĕ хут пĕлмен, унăн писательсем пулман, çавăнпа та унăн пурнăçĕпе кĕрешĕвĕ «хут çине ӳкерĕнсе юлайман», тет вăл.

* Н. Г. Чернышевский. «Что делать?» ГИХЛ, 1954, 404 стр.

«Пирĕн халыхи писательсем,— вулатпăр эпир малалла,— çак «пушă вырăна» пушăллах хăварас мар тесе, аваллăха чĕрт-се куç умне кăларас тесе... ĕлĕкхи-авалхи пурнăç çинчен чылаях кĕнекесем çырчĕç. Çырĕç те. Эпир те, вырăссем пек каласан, йăха-тĕпе ас туман Ивансем мар. Халăх хăйĕн кун-çулне пĕлме тивĕç».

Малалла Алка халыхи пурнăç çинчен çырма кирлине асăрхаттарать. Н. С. Хрущев юлташăн совет литературин аслă тĕллевĕ пирки каланă сăмахĕсене илсе кăтартать (Уяр та хăйĕн статйи вĕçĕнче: «халыхи вăхăт — литературă чунĕ, тетпĕр», тет). Çапах та вĕсен статйисенчи тĕп шухăш «литературă чунĕ» тавра мар, тӳрех калăпăр, иртнĕ самана çинчен çырнă произведенисем тавра пырать. Вĕсем иртнĕ саманасенче «пушă вырăн» (вакуум) пуласран хăраççĕ. Пирĕн шутпа, иртнĕ саманари «пушă вырăнсемшĕн» çав тери хытă хăраса тăмалла мар, халыхи пурнăç çинчен çырас, ăна илемлĕ литературăра халăх ыйтнă пек кăтартса парас ĕçре çавăн пек «пушă вырăнсем» (вакуумсем) тăвас марччĕ тесе тăрăшмалла. Çак шухăша çине-çинех калани никама та кансĕрлемĕ, татах та татах эпир çирĕммĕш ĕмĕрте, коммунизм пуçламăшĕнче пурăннине асăрхаттарĕ.

Алкан «пушă вырăн» пирки каланă сăмахĕсем кунта «теори» евĕрлех пулса тухнă. Урăхла ку «теорие» (ăна кавычкăсемпе илсе те пулин, «теори» теме юратех пулсан) «шурă пăнчă» «теорийĕ» теме пулнă пулĕччĕ, мĕншĕн тесен «шурă пăнчă» тени Алка калас тенĕ шухăша тĕрĕсрех кăтартса парать: иртнĕ саманасенче эпир пĕлмен, пирĕн писательсемпе историксем çутатса паман тапхăрсем пур, писательсен çав тапхăрсене кăтартса памалла тесе каласшăн вăл (Уяр та çавнах каласшăн!),— Алкапа, Уяр сăмахĕсемпе калас-тăк, «эпир хамăр йăха-тĕпе ас туман Ивансем мар-çке»! Çапах та эпир, çавнашкал йăхсăр-тĕпсĕр Ивансем мар пулин те, иртнĕ саманасемпе йăпанса пурăнакан, халыхи хĕрӳллĕ кунсенчен хăраса, иртнĕ ĕмĕрсем хыçне пытанакан çынсем те мар: эпир паянхи кунсен чаплăхне, паттăрлăхне, героикине тăвакансене, юрă юрласа малалла утакансене ытларах хисеплетпĕр.

Писательсене парти ĕçлеме вĕрентет, хăйсен произведенийĕсемпе çĕнĕ пурнăç тăвас ĕçе хастар хутшăнма чĕнет. Н. С. Хрущев юлташ çапла калать: «Пире çакăн пек кĕнекесем, кинофильмсем, спектакльсем, музыкă, живопиç, скульптурă произведенийĕсем кирлĕ: вĕсем çынсене коммунизм идеалĕсем майлă вĕрентсе воспитани паччăр, вĕсенче

пирĕн социализмла пурнăçăн пĕтĕм чапĕпе, илемĕпе чунчĕререн савăнас туйăм вăратчăр, çынсене тăван халăхшăн ĕçлеме мĕн пур пĕлĕвĕсене, пĕтĕм вăйĕпе пултарулăхне пама хатĕр тăракан туччăр, произведенисенчи ырă геройсем çынсене паха тĕслĕх паччăр, пурнăçра обществăна хирĕç пыраканнине, сиенлине пурне те курайми пулас кăмăла çĕклеччĕр. Пире талантлă, чаплă, çынсем ытарайми савăнса вулакан кĕнекесем кирлĕ, хаваслантаракан фильмсем, кăмăла килентерекен музыкă кирлĕ».

Н. С. Хрущев юлташ сăмахĕсем писательсене малалла чĕнеççĕ, хавасланса ĕçлеме çĕнĕ вăй параççĕ.

...Асăннă статьясен авторĕсем К. Турхан романне хак панă вырăнта та пĕр пекех, пĕр чĕлхепех çыраççĕ (эпир кун пирки тавлашас е ăна тиркес тесе мар, сăмах май çеç калатпăр). Икĕ автора роман кăмăла кайнă, вĕсем вара хăйсен шухăшне каласа панă.

«Куçма Турхан романне вуласа тухрăм та,— тет Уяр,— эпĕ савăнсах кĕнеке çӳлĕкĕ çине вырнаçтарса лартрăм. Кăмăл тулчĕ. Чăваш литературине тата тепĕр лайăх кĕнеке хутшăнчĕ, терĕм эпĕ»,— тет.

Алка статйинче акă мĕн вулатпăр: «1960 çулта пичетленсе тухнă чи лайăх кĕнекесенчен пĕри — ăна çыракансем те (миçен çырнă-ши ăна? — **В. Д.**), вулакансем те çапла хак пачĕç — Куçма Турханăн «Сĕве Атăла юхса кĕрет» ятлă историллĕ романĕ. Вăрăм ĕмĕр курма тивĕçлĕ лайăх та хулăн кĕнеке... Пирĕн литературăна тепĕр паха кĕнеке хутшăнчĕ».

Авторсем Н. Илпекĕн «Хура çăкăр» романĕ çинчен те пĕр пекех çыраççĕ, унăн чĕлхине «ытлашши паха» пулнăшăн, «иртĕхсе кайнăшăн» тиркеççĕ. Эпир писательсем хушшинче хăйсен произведенийĕсене «хитре» сăмахсемпе эрешлеме юратакан юлташсем пуррине те пĕлетпĕр, анчах Илпек ун пек писательсен шутне кĕмест: Илпек чĕлхи — халăх чĕлхи пуянлăхĕпе çиçсе тăракан чĕлхе.

«Тухăçлă çул» статьяра «поэтсен прози» (Уйăп Мишшипе Александр Алка кĕнекисем) çинчен ятарласах çырнă пĕчĕкçĕ сыпăк пур. Пĕрин кĕнеки: «Инçе çулсем тăрăх», теприн: «Хурама та хурăн»; пĕрремĕшĕ — очерксен кĕнеки; иккĕмĕшĕ — «лирикăлла повеç».

Статья авторĕ Уйăп кĕнеки пирки икĕ пĕчĕк абзац çеç çырнă, вĕсенче те пулин кĕнекен юлашки сыпăкĕ çинчен кăна каланă. «Уйăп Мишши поэт,— тет автор,— унта эпир пурте шухăшланă, пирĕн чĕлхемĕрсем вĕçĕнчех çӳренĕ,

анчах ун пек хитрен çаварса калама ăс çитереймен шухăшсене пĕтĕçтерсе каласа пама пултарнă. Пирĕн шухăшсене хамăра каласа парса тĕлĕнтерчĕ поэт».

Эпир кăшт урăхларах калăпăр: пуçра шухăш пулсан, сăмахне тупма пулать, сăмахĕ «чĕлхе вĕçĕнчех çӳрет» (чĕлхе вĕçĕнче çӳрекен шухăша çырса пама пултарайман çын писатель пулма пултараймасть). Уйăп ку тĕлĕшпе кивçене кайса тăмасть: ашшĕ-амăшĕ ăна шухăш çӳпçине те, сăмах енчĕкĕ те панă.

Уяр шухăшĕ, автора «мухтаса» каланă пулин те, статьяра çакăн пек пулса тухнă: Уйăп çĕннине ним те каламан, вăл пирĕн шухăша çеç каланă. Пире, паллах, хамăр пĕлмен шухăшсем, пирĕн ăс-пуçа пуянлатакан çĕнĕ шухăшсем кирлĕ.

Кĕнеке çырасси вăл — творчествă, ăсталăх, чăн-чăн творчествă яланах çĕннипе çыхăнса тăрать; чăн-чăн литературă вăл — яланах çĕннине кăтартса, каласа пани; вăл — открыти, çĕннине тупса уçни. Çынсен шухăшĕсене çеç калани — творчествă мар, открыти мар; çынсен чĕлхи вĕçĕнчи шухăшсене калани — репродукци кăна, репродукцие ремесленник та тума пултарать, репродукцие пысăк пултарулăх кирлĕ мар. Чăн-чăн литературă, искусствă çĕннине тупса уçнипе, пĕр паллă самана çуратнă сăнарсене, характерсене тупса кăтартнипе аталанса пырать. Çавăнпа та эпир вырăссен «творчество» тенĕ сăмахне «пултару» сăмахпа куçаратпăр, творчествă, пултару çĕннисĕр пулмасть, пулма та пултараймасть.

Вулакансем Уярăн Уйăп Мишши кĕнеки пирки мал-тантарах çырнă статйине аса илтерĕç, вăл Уйăп кĕнеки çинчен «Ялавăн» кăçалхи (1961) пĕрремĕш номерĕнче тĕплĕ çырнă, тейĕç.

Ку статьяра та Уяр «Инçе çулсем тăрăх» ятлă кĕнекешĕн савăнса çырнă (çĕнĕ те паха кĕнекешĕн мĕншĕн савăнас мар!). Эпир те, рецензи авторĕпе килĕшсе, çакăн пек калатпăр: «Халиччен çӳресе курман çул пекех, кĕнеке малтан мала туртать. Кашни утăмрах мĕн те пулин çĕнни тухса тăрать, курманни курăнать. Вăл васкамасть, хыпăнса ӳкмест...»

Çапла, Уйăп кĕнекинче «кашни утăмрах» (çав шутра унăн юлашки сыпăкĕнче те темелле!) çĕнни тухса тăрать, тӳрех калăпăр: хайхи «пирĕн чĕлхемĕрсем вĕçĕнчех çӳренĕ» шухăшсем мар, çĕнни, курманни курăнать.

Вулакана авторăн стилĕпе паллаштарас тесе, рецензент

кĕнекерен пĕр вырăн илет: «Мускавран тухсанах пирĕн çул пĕр хушă çурçĕр еннелле пырать. Ку тăрăхра вăл Александров, Ростов, Ярославль хулисенчен иртет. Ярославль патĕнче Атăл урлă каçать. Унтан, Данилов ятлă станцăран иртсен, эпир çурçĕрелле каякан çултан пăрăнатпăр, хĕвелтухăçнелле каякан çул çине ӳкетпĕр.

Кĕçех çĕрле пулса килчĕ. Кĕске ыйхă çывăрса илнĕ çĕре акă ир те пулчĕ. Мускавран тухнăранпа пĕр талăк кайнă хыççăн эпир Киров хулине çитрĕмĕр. Кĕçех вăл та кая тăрса юлчĕ. Ку енче тăтăшах сĕм вăрмансем, сăртлă-çырмаллă çĕрсем тăсăлаççĕ. Пынăçем вăрманпа витĕннĕ сăртлăхсем, тарăн çырма-çатрасем ытларах та ытларах курăна пуçларĕç. Пуйăс Урал тăвĕсем патнелле çывхарать.

Акă, Пермь хули. Ку тĕлте Кама шывĕ урлă каçатпăр». Юлашкинчен рецензи авторĕ «тата ытти те, тата урăххи те» тесе хурать, ку вăл, урăхла каласан, малалла та çавăн пекех, çавнашкалах тенине пĕлтерет. Автор вара çакăн хыççăн: «Тăршшĕпех çавăн пек — тĕплĕ теваскамасăр», тесе пĕтĕçтерет.

Уяр илсе кăтартнă вырăн, пирĕн шутпа, васкамасăр çырни çинчен мар, пачах урăхла, васкаса çырни çинчен калать. Пуйăс васкаса малалла кайнă, хула хыççăн хула вĕлтлетсе иртнĕ, автор вĕсен ячĕсене çеç пĕлсе пынă. Тӳррипех калăпăр: ку вырăна вăл пуйăс васкаса пынă пекех васкаса çырнă,— кунти хăвăртлăх пуйăс хăвăртлăхĕ пекех!

Уяр ку вырăна Эрнест Хемингуэй стилĕпе, А. П. Чехов стилĕпе танлаштарать (вĕсем «тĕплĕн çырса кайнă»-çке!). Çавăн пек «тĕплĕ те васкамасăр» çырнине рецензи авторĕ «темле сарлака экранпа çутатса пынă пек» тесе хаклать. Малалла вара: «Чи малтан Эрнест Хемингуэй çапла çырма тытăннă, теççĕ,— тет автор.— Халĕ Хĕвеланăç Германири Эрих Мария Ремарк та, Генрих Бĕлльпе Опитц та, Америкăри Уильям Фолкнерпа Сароян та тата ыттисем те çапла çыраççĕ», тесе пĕлтерет. Çавăнтах тата: «Хемингуэй произведенийĕсенчи пĕр йĕркине вуласа курман Николай Иванович Шелепи те пирĕн «хемингуэйла» çырма пĕлнĕмĕн», тесе хурать.

Пирĕн шутпа, çак хушаматсемпе ятсем кунта ним çинчен каламаççĕ, критик «эрудицине» те кăтартмаççĕ,—вĕсем, тĕрĕссипе калас-тăк, ăнсăртран аса килнĕ хушаматсем çеç, Уйăп стилĕпе чĕлхи критик асăннă писательсем пек мар: унăн стилĕ — Уйăп стилĕ, чĕлхи — Уйăп чĕлхи.

Шелепи те Шелепи кăна пулнă, вăл темле «хемингуэйла» витĕмсене пула çитĕнсе тухнă писатель пулман. Ун пек калани пачах та тĕрĕс мар.

Уйăп çинчен, унтан Хемингуэйпа Чехов çинчен каланă май, Уяр тата тепĕр «вывод» тăвать: «Çав вырăнсене вуласа, эпир хамăр та тахçан такси шыранине, арăмсене тунсăхласа кĕтнине, магазинсем тăрăх кирлĕ япаласем шыраса çӳренине аса илетпĕр те пирĕн кăмăл тулать», тет.

Тӳрех калăпăр: этем чĕлхи вĕçне тем те пĕр килме пултарать, анчах çав «тем те пĕр» çинчен çырнипе вулакансене çырлахтарма çук. «Тем те пĕр» чĕлхене кăна мар, шухăша та çӳпĕлет. Критик шухăшĕ — вулакансем ăнланмалла шухăш, кукăр-макăрсене, тĕрлĕ тăкăрлăксене кĕрсе çӳремен шухăш пулмалла: шурра шурă те, хурана хура те, тĕрĕсе — тĕрĕс, йăнăша — йăнăш те, — авкаланса, хуçкаланса ан çӳре! Критик — вăл пĕр-пĕр каччă хĕр ашшĕ патне янă хăта мар, хăтасен меслечĕпе ĕçленипе критик пулма çук. Критик «кукăр пăшалпа» персе çӳрекен çын та мар, вăл тӳрĕ сăмах калакан публицист. «Кукăр пăшал» критик хатĕрĕ пулма пултараймасть.

«Тухăçлă çул» статьяра Н. Мранькан «Ĕмĕр сакки сарлака» ятлă романне: «Чăваш халăхĕн революцичченхи пурнăçĕн тĕкĕрĕ, тесе калас килет ман ун çинчен», тенĕ. Ку вăл В. И. Ленин хăй вăхăтĕнче Л. Н. Толстой çинчен каланă пекех. Анчах, статья авторĕ каланă тăрăх, «Ĕмĕр сакки сарлака» романра начар тĕлсенче — тӳсме çук начар, лайăххи пуçлансан — ытарма çук лайăх». Роман чĕлхине автор тирпкесе каланă: унăн ал çырăвне ик-виçĕ редактор темиçе уйăх тӳрлетсе асап курнă, çаплах тӳрлетсе çитереймен, «малтанах пулнă пулсан, унта нумай çĕрте ашса тухма çук пăтăччĕ, сирсе сирĕлми çатракаччĕ», тенĕ.

Критикă-и ку е критикă мар-и? Эпĕ, кĕнекене вулакан çын, ăна миçе редактор редакциленине пĕлместĕп, пĕлме те кирлĕ мар. Мана кĕнеке кирлĕ, маншăн лайăх кĕнеке пултăр. Критик ăна тишкĕрсе тухтăр та тĕрĕс сăмах каласа патăр, мухтани те, хурлани те ĕненмелле пултăр. автора та, вулакана та пулăштăр. Çынна, пĕлĕте çити çĕклесе, çĕре çити çавăрса çапмалла мар, пĕлĕте çити çĕклени те, çĕр тĕпне персе чикни те усăсăр. Çыннăн хăйне тивĕçлĕ хак пур, çав хак çеç ăна çырлахтарма пултарать. Начаррине кăтартса парать-и критик, лайăххине-и — пур пĕрех: тивĕçлĕ хакшăн никам та ытлашши кӳренес çук.

Эпир тата статьян çак вырăнĕсемпе килĕшместпĕр.

1. «Вăтăр çулсем-мĕнсем каялла та пирĕн прозăра примитивлă калавсемпе очерксем çеçчĕ-ха».

2. Вăтăр çулсем-мĕнсем: «Нăр-нăр», тенĕ евĕрлĕ сăмахсене ылмаштарса çырнине — поэзи, тенĕ. Мĕн те пулин çинчен мĕнле те пулин çыхăнтарса каласа пани калав пулнă». «Малтанхи çеçпĕлсем пире розăран чаплă пек курăнатчĕç».

Акă мĕншĕн килĕшместпĕр. Пĕрремĕшĕнчен, иртнĕ вăхăт çине нигилистла пăхмалла мар. Историлле пăхас пулать. Чăваш совет прози юлашки çулсенче, паллах, нумай аталанчĕ, çӳллĕ пусăма çĕкленчĕ. Çапах та, вăтăр çул ĕлĕкрех çырнă «примитивла» калавсем хушшинче те паян кун та кивелмен, çаплах çынсен чĕрисене хускатакан произведенисем пур. Литературă историкĕсем тăван литературăн иртнĕ тапхăрĕсене тĕпченĕ чухне вăтăр çул мар, тăхăр вун-çĕр çул ĕлĕкрех çырнă калавсем хушшинче те юрăхлă произведенисем тупаççĕ. Сăмахран, Игнатий Иванов, И. Я. Яковлев, Тайăр Тимкки калавĕсене шута илмесĕр иртме пулать-и-ха? Е тата: революци хыççăнхи писательсен — И. Ахахăн, Д. Исаевăн, Хумма Çеменĕн. М. Трубинан калавĕсене манма пулать-ши? Н. И. Шелепи 1925—1926 çулсенчех «хемингуэйла» çырма пĕлмен-и-мĕн?.. Апла пулсан, пирĕн «хăйĕн йăхне-тĕпне маннă Ивансем пек» хăтланса, хамăра нигилистла тыткалама кирлĕ-ши? Иккĕмĕшĕнчен, поэзие илес пулсан, пирĕн поэзи «нăр-нăр» тапхăрĕнчен революцичченех тухнă, гражданла поэзи шайне çĕкленнĕ. Совет влаçĕн малтанхи çулĕсенче ĕçлесе пуранна кăвар чĕреллĕ Çеçпĕл Мишши сăвви-юррисем чăваш çĕршывĕ тăрăх вут кайăклăн çӳренĕ, çынсен чĕрисене вăйлăрах та вăйлăрах таптарнă. Çеçпĕл Мишшин ырă ячĕпе пархатарлă ĕçне пула чăваш поэзин чĕлхине «çеçпĕл» сăмах чи паха пĕлтерĕшпе кĕрсе вырнаçнă. Чăваш чĕлхипе сăвви аталанса пынă май «çеçпĕл» сăмах «чечек» тенĕ ăнланăва палăртнă вăхăтрах, урăх ăнланăва — чи паха, чи таса тенине пĕлтерекен сăмах пулса тăчĕ. Çакна ĕнтĕ пурте пĕлеççĕ, пурте ăнланаççĕ...

Эпир иртнĕ çулсенче хамăрăн юратнă поэтăмăрсен — Хусанкайăн, Миттан, Тукташăн, Шавлин тата ыттисен литературăри вăтăр çуллăхне, вăтăр-вăтăр пилĕк çул хушши лăш канмасăр ĕçленин юбилейне палăртсăмăр. Яков Ухсай та ĕнтĕ литературăра вăтăр çул ĕçлет. Вĕсене, халăх чун-чĕререн юратакан поэтсене, «нăр-нăр» тесе витлеççĕ пулсан, эпир каллех те каллех калăпăр: ун пек хăтланма,

юлташсем, юрамасть! Çеçпĕл Мишши сăмахĕсене аса илсе çапла калăпăр:

Кам: «çук», тет, çав — суеç чĕлхеллĕ;
Кам «мар», тет çав — суккăр, чапрас!

Хветĕр Уяр — чăваш литературине пĕлмен çын мар, вăл унăн историне те лайăх пĕлет, вăл — чĕлхе ăсти, пултаруллă прозаик. Çапах та хăйĕн статйисене вăл тимлесе, тăрăшса, пуç тавра кирлĕ таран шухăшласа çырман. Чи паха пулсан та, вĕсем писатель заметкисем вырăнне çеç шутланма пултараççĕ. Вĕсен хакне йӳнетекенни — субъективизм («мана килĕшекенни — лайăх, килĕшменни — япăх»!).

* * *

Каларăмăр ĕнтĕ, хальхи тапхăрта писательсем умĕнче пысăкран та пысăк задачă тăрать: вăл — тăван литературăра коммунизм тăвакансен сăн-сăпатне ĕнентерӳллĕ кăтартса парасси, партин XXII съезчĕ лартнă задачăсене пурнăça кĕртсе пырасси. Эпир пăхса тухнă статьясенче кун пирки ним те каламан. Александр Алкан **«Хальхи вăхăта тивĕçлĕ литературăшăн»** статйинче çеç кăштах, сăмах майĕн тенĕ пек, каласа хăварнă. Унта КПСС Тĕп Комитечĕн январьти Пленумĕ партин XXII съездне пухма йышăнни çинчен, çак хыпар пĕтĕм совет халăхне, кашни çынна çĕнĕлле хавхалантарса яни çинчен каланă. Поэзи ӳсĕмĕ çинчен çырнă çĕрте автор поэтсем пирки: «Мĕнпе кĕтсе илеççĕ-ши, кĕтсе илĕç-ши (!) тата пирĕн поэтсем партин XXII съездне?» тесе ыйтать. Çавăнтах вара ответне те вулатпăр: «Çак пысăк ыйту кашни поэтах шухăшлаттарать паян. Паллă кунсем умне пушă алăпа çитсе тăракансем мар-ске эпир». Малалла статьяра иртнĕ çулсенче, уйрăмах 1960 çулта, мĕнле кĕнекесем тухнине кăтартса панă, тĕрĕссипе каласан, вĕсене шутласа тухнă.

Пирĕн шутпа, «Хальхи вăхăта тивĕçлĕ литературăшăн» статьяра, партин XX-мĕшпе XXII-мĕш съезчĕсем хушшинчи иртнĕ тапхăрта чăваш литератури мĕнле темăсене ытларах çутатса пани, чăваш писателĕсене мĕнле проблемăсем ытларах интереслентерни, шухăшлаттарни çинчен, пур писательсем те партин XXII съездне хатĕрленнĕ вăхăтра мĕнле çĕнĕ произведенисем çырни çинчен каламалла пулнă, чăваш писателĕсем мĕнле хавасланса ĕçленине палăртса çырмалла пулнă.

«Хальхи вăхăта тивĕçлĕ литературăшăн» статьяра, эпир ĕнтĕ малта асăрхаттартăмăр, ытларах иртнĕ вăхăта çутат-

са паракан произведенисем ҫинче чарӑнса тӑнӑ. Паллах, писатель пултарулӑхӗшӗн чикӗ тавраш ҫук. Писатель тахҫан-авал иртни, хальхи вӑхӑт, пулас вӑхӑт ҫинчен те ҫырма пултарать,— ҫакнах урӑхла калӑпӑр: художникӗн ӑсӗпе чӗрине пурте интереслентерме пултарать, ҫапах та, хальхи хӗрӳллӗ кунсем, вӗресе тӑракан ӗҫсем писателе ытларах интереслентермелле, унӑн ӑсӗпе чӗрине хумхантармалла. Писательшӗн, паянхи пурнӑҫ ҫинчен ҫырассинчен пуҫне, пархатарлӑрах ӗҫ урӑх ҫук. Хӑй вӑхӑтӗнчи пурнӑҫ юрӑҫи, халӑх юрӑҫи,— акӑ кам вӑл писатель! Партие активлӑ пулӑшакан,— акӑ тата кам вӑл!

Эпир хӑш-пӗр чухне пирӗн романсемпе мухтанатпӑр (нумай тесе те калатпӑр!). Алка статйинче хальхи пурнӑҫа, хальхи ҫынсене кӑтартакан романсем пирки икӗ тӗрлӗ каланӑ. Пӗр тӗлте: «Иртнӗ ҫул пирӗн литературӑра уйрӑм кӗнекепе пичетленсе тухнӑ, паянхи куна сӑнлакан чӑн-чӑн ӑста алӑ ҫырнӑ, халӑх юратса йышӑннӑ хулӑн романсем (!) курӑнсах каймарӗҫ», тенӗ. Тепӗр ҫӗрте: «Чӑваш писателӗсен пирӗн вӑхӑтри ҫынсем ҫинчен ҫырнӑ повеҫсемпе калавсем кӑна мар, романсем те пур», тенӗ. Кунта иккӗшинче те паянхи куна кӑтартакан романсене асра тытса каланӑ. «Романсем те пур» тенӗ хыҫҫӑн: «вӗсенчен пӗри — Мӗтри Кипекӗн «Кайӑк тусӗ» романӗ...», тесе ҫырнӑ. «Романсем пулсан, «вӗсенчен пӗри» пулсан, иккӗмӗшне те, виҫҫӗмӗшне те... ыттисене те пӗлес килет. Анчах... анчах ӑҫта-ха вӗсем? Вӗсем ҫук! Статьяра вӗсем ҫинчен каламан. Эппин, пирӗн хальхи кунсене кӑтартакан романсем пур тесе мухтанма та сӑлтав ҫук.

Иртнӗ вӑхӑта кӑтартса паракан романсемпе повеҫсенчен чи пахи, пирӗн шутпа та, К. Турхан романӗ. Ун пысӑкӑш роман хальхи вӑхӑт ҫинчен чӑваш писателӗсенчен никам та ҫырман-ха. Хӑйӗн ӑсталӑхӗпе, илемлӗхӗпе, социаллӑ пӗлтерӗшӗпе Турхан романӗ шайӗнче тӑракан, хальхи пурнӑҫа кӑтартакан романсем виҫҫӗ-тӑваттӑ, повеҫсем пилӗк-улттӑ пулсан, эпир хамӑр литературӑ ҫинчен: вӑл саманапа тан утма тытӑнчӗ, пирӗн халӗ повеҫсемпе калавсем кӑна мар, романсем те пур, тенӗ пулӑттӑмӑр. Халӗ ун пек калама ир-терех, мӗншӗн тесен, пӗр чӗкеҫ ҫур ҫитнине пӗлтермест, пӗр роман та ҫавах,— литературӑ пурнӑҫпа тан пыни ҫинчен калама темиҫе повеҫ, темиҫе роман кирлӗ. Паллах, ҫавӑн пек вӑхӑт пулатех, килетех! Ҫав вӑхӑт чӑваш литературин идейӑпа илемлӗх шайӗ тата та ҫӳллӗ пусӑма ҫӗкленнине пӗлтерӗ!

Очерксем пирки А. Алка тĕрĕс калать. Пирĕн ячĕшĕн кăна, васкаса çырнă, очерк картне ларайман, пĕр «калăппа хуçнă» очерксем нумай, писатель ятне яраканнисем те тĕл пулаççĕ. Çитменнине тата, çакă палăрать: ятлă писательсем, паха кĕнеке çырма пултаракан, ăсталанса çитнĕ литераторсем, очерксемпе «аппаланмаççĕ». Тимлĕрех пăхса илĕр-ха, Леонид Агаковсăр пуçне хăш писатель очерксем çырас ĕçе юратса, тăрăшса тăвать? Хăш писатель халăхи вăхăтри геройсем çинчен çырнă очерксем кĕнекине кăларчĕ? Хăшĕ кăларма хатĕрленет? Кам çаннисене тавăрса ĕçлет?

А. Алка ача-пăча литератури пирки калани те тĕрĕс. Хăш-пĕр опытлă писательсем ача-пăча литератури пирки шухăшласа пуçа ыраттарасшăн мар. Çав вăхăтрах тем тесен, тем çырма хатĕр çынсем ача-пăча валли кĕнеке хыççăн кĕнеке кăлараççĕ, шурă хута кăна мар, ачасене те хĕрхенмеççĕ. Алка питех те вырăнлă калать: лайăх калав, поэмă, сăвă, юмах ачасен ăсне ĕмĕрлĕхе юлать. Эпир ку сăмахсем çумне тата çакна хушса каласшăн: япăх произведени те ачасен ăсне ĕмĕрлĕхех юлать. Юлать кăна мар, ĕмĕрлĕхех пăсма та пултарать. Çакă вара ачасемшĕн чи сиенлĕ, чи хăрушă япала. Япăх произведени, япăх чĕлхе вĕсен илемлĕх туйăмĕсене пăсать, мăкатать, путарать. Çакна писательсен ăнланса илмелле те çамрăк ăрусем валли пахаран та паха произведенисем çырма тăрăшмалла. Хăлтăртти «çыравçăсене» ача-пăча литератури яхăнне те ямалла мар.

Поэзи пирки ик-виç сăмах калас килет. Чăваш поэчĕсем, литературăн ытти представителĕсемпе танлаштарсан, пирĕн шутпа, халăхи пурнăçа çывăхрах тăраççĕ. Я. Ухсай, П. Хусанкай, А. Алка, Ст. Шавли, Г. Ефимов, А. Воробьев тата ыттисем çырнă произведенисем, пурте пулмасан та, халăхи пурнăçпа халăхи çынсем çинчен çырнăскерсем. Çамрăк сăвăçсем те халăхи кунсем çинчен ытларах çыраççĕ. Анчах поэтсем, çак вырăнта вуласан, «эпир, эпир» тесе мухтанса ан ӳкчĕр. Хăш-пĕр поэтсен произведенийĕсен шухăшĕсем ытла та ăшăх, ăсталăхĕ те ырламалăх çук. Теприсен произведенийĕсем калама çук кăпăшка — пушă кĕлте пек, вуншар пин йĕркеллĕ. Вĕсене вулама тытăнсан, вуласа тухма çук, хăвна ху ирĕксĕрлесе вулаттарнипе ывăнса çитетĕн, хăçан пĕтет-ши тесе çирĕм-вăтăр хут уçса пăхатăн. Çакă вал пирĕн поэтсен поэзи пахалăхĕшĕн пĕтĕм вăя, пултарулăха парса ĕçлемелли çинчен каламасть-ши? Калать, шăпах çавăн çинчен калать!

Алка иртнĕ çул тата кăçал кĕнекесем кăларнă поэтсен ячĕсене асăнать. Вĕсем — Шавли, Уйăп, Краснов-Кĕçĕнни, Давыдов, Ефимов, Лукин, Орлов, Воробьев, Каттай, Сандров. Çак поэтсенчен уйрăмах Шавлипе Краснова палăртнă: Шавлине «тавлаштаруллă поэт» пулнăран, Краснова — унăн «Кĕсле» ятлă кĕнеки пичетленсе тухнă май. Статьяра Красновăн «Тăван партие» поэми пирки уйрăмах чарăнса тăнă.

Алка çакна палăртать: Краснов-Кĕçĕнни поэминче «ытларах каласа кăна кайнă», «тĕп темăна сапаласа пăрахнă». Пирĕн шутпа, «Тăван партие» поэмăн паха енĕсене асра тытса калас пулсан, вăл — чăваш поэзийĕн ӳсĕмне кăтартакан произведенисенчен пĕри. Эпир Краснов-Кĕçĕнни поэмин çитменлĕхĕсене те пĕлетпĕр, вĕсем — ăсталăх сахаллипе, васканипе пулнă çитменлĕхсем.

«Тăван партие» поэмă çинчен сăмах хускатнă май, Г. Кузьминăн «Пĕр поэмă пирки» ятлă статйи («Коммунизм ялавĕ», 31. V. 1961 ç.) çинчен пĕр-ик сăмах калас килет. Вăл — поэта пĕр сăлтавсăрах хĕнекен статья (сăмах май çакна асăрхаттарса хăварар: эпир юлашки вăхăтра çак критикăн виçĕ статйине вуларăмăр, виççĕшинче те пĕр япала: чукмар!).

«Тăван партие» поэмă авторне Кузьмин мĕн пирки кăна тылламасть-ха, мĕн пирки айăпламасть-ха? Акă хăш-пĕр тĕслĕхсем:

1. «Сухапуç ырăнне трактор йышăнни те — поэзишĕн тахçанах тутăхнă деталь», тет критик, поэмăна тиркесе.

Пирĕн шутпа, сухапуç ырăнне трактор йышăнни — «тутăхнă деталь» мар, совет хресченĕн пурнăçĕнчи пысăк событисенчен пĕри. Трактор хресченсен ăс-тăнне социализм майлă улăштарас ĕçре чăннипех те пысăк ырăн йышăннă. Ахальтен мар ĕнтĕ В. И. Ленин 1919 çулта партин VIII съездĕнче çапла каланă: вăтам хресченсене çĕр пин трактор парсан, вĕсем: эпир коммунăшăн тенĕ пулĕччĕç, тенĕ. Çак сăмахсем пророкла сăмахсем пулнă: сухапуçне тракторпа улăштарсан, колхозсене кĕнĕ хресченсене трактор парсан, хресченсем рабочи клас ертсе пынипе хăйсен аллипе социализм тума тытăнчĕç. Ку тĕлĕшпе мĕн тери пысăк çитĕнӳсем тунине халĕ пĕтĕм тĕнче пĕлет.

2. «Малалла вара,— тет критик,— поэт пурнăç ырлăхĕ çинчен вĕçĕмсĕр саванса юрлать». Çавăнтах тата: «Поэт сăмахĕсемпе пĕтĕçтерсе калас пулсан, пурнăç «çĕр хут, пин хут аван юмахринчен», тет.

Çакă вăл — поэта пăтраштаракан, тĕрĕс çултан пăрса яракан критикă. Чăн-чăн поэта пурнăç ырлăхĕ савăнтарать, савăнса юрлама оптимистла вăй парать. Поэта «вĕçĕмсĕр савăнса юрланăшăн» тиркемелле мар, ырламалла. Пире поэт-пессимистсем мар, поэт-оптимистсем кирлĕ. Совет поэзийĕн тĕп уйрăмлăхĕсенчен пĕри — вăл оптимизм. Шел, критик урăхла шухăшлать.

3. Поэмă сыпăкĕсене «апла та, капла та ылмаштарса лартма пулать. Анчах поэзи уншăн нимĕн чухлĕ те ўкмест (?), поэзи тараси çинчи виçи те чакмасть (?)», тесе ĕнентет статья авторĕ. Анчах поэмă сыпăкĕсене мĕншĕн «ылмаштарса» лартмалла-ши? Поэмăна тиркес тесе мар-и? Апла пулсан, ку меслет — ниме юрăхсăр меслет, чукмар меслечĕ.

4. Критик поэмăна вуланă хыççăн нимĕн те асра юлманнишĕн тарăхать. «Мĕншĕн хамăр хумханманнине, хамăр хавхаланманнине, автор çĕкленўллĕ те çунатлă сăмахсемпе хăлаçлансах юрларĕ пулин те, туймарăмăр?» тесе ыйтать вăл. Хумханасси, хавхаланасси, тĕрĕссипе каласан, икĕ япаларан килет: пĕрремĕшĕ, произведени чăннипех те илемлĕ пулнинчен; иккĕмĕшĕ, вулаканăн (çав шутра критикăн та!) илемлĕхе туймалăх сисĕм-туйăм пулнинчен, хумханмалăх, хавасланмалăх чĕре туйăмĕ пулнинчен. Поэт — вăл илемлĕхе чун-чĕрепе туякан, хăвăрт сисекен çын. Анчах ун пек чĕре нихçан та сăвă-юрă çырман, çырма шутламан çыннăн та пулма пултарать. Çавăн пек чĕреллĕ çын поэзи произведенине вуланă чухне, хăйĕн сисĕмлĕ те туйăмлă чĕрине пула, поэт пекех хумханать, хавасланать, çунатланса каять, поэт чĕринчи пек туйăмсемпе пурăнма тытăнать. Критикăн та çавăн пек чун, çавăн пек чĕре пулмалла. Урăхла пулсан, вăл поэзие ăнланаймасть, унăн илемне туйса илеймест.

Чăваш поэзийĕ — вăйлă поэзи. Вăл халĕ уйрăм çынсен чĕрине çеç мар, халăх чĕрине те хумхантарма пултарать. Чăваш литератури чăваш халăхне коммунизм тума пулăшать.

Александр Алка статйинче паянхи литературă критики çинчен каланă вырăн та пур. Вăл кăçалхи хăш-пĕр критикăлла статьясене асăнса илет. Çав статьясенчен пĕри — Мĕтри Кипекĕн «Кайăк тусĕ» романĕ çинчен В. Алакер çырнă рецензи (ку рецензи «Ялавăн» 1961 çулхи 1-мĕш номерĕнче пичетленнĕ).

В. Алакер çав романăн тĕп геройĕсен — Виктор Тараевăн, Шатра Михалан, Чĕкеçĕн тата ыттисен — сăнарĕсене

тимлĕ пăхса тухнă, произведенин пахалăхĕ пирки вырăнлă асăрхаттарусем панă. Алакер статйи çăмăл вуланать, мĕншĕн тесен ăна чăн-чăн литературă чĕлхипе çырнă.

«Кайăк тусĕ» романа тишкерсе тухса, статья авторĕ çакăн пек пĕтĕçтерсе калать: «Кайăк тусĕ» роман — паянхи пурнăçа, паянхи çынсене сăнласа кăтартакан, хальхи вăхăтшăн питех те кирлĕ ыйтăва, çутçанталăка, унăн пуянлăхне сыхлас ыйтăва çутатса паракан произведени».

«Ялав» журналпа «Тăван Атăл» альманахра тата хаçатсенче Алакер рецензийĕ пек рецензисемпе статьясем пичетленсе пырсан, пирĕн вулакансем критикă пирки ытлашши ӳпкелешмен пулĕччĕç.

Алка, кунсăр пуçне, тата пирĕн «Кĕске калав çырасси — пысăк ăсталăх» ятлă статьяна лайăх статьясен шутне кĕртет (вăл 1961 çулта «Ялавăн» 3-мĕш номерĕнче тухнă). Çав вăхăтрах асăннă статья пирки вăл çакăн пек çырать: «Анчах ман кунта çакна кăтартса хăварас килет,— тет вăл.— Эпир иртнĕ çулсенче «чукмарлă» критиксене вăрçаттăмăр. Халĕ В. Долговăн лайăх статйине вуласа тухрăмăр та, вăл вĕçĕнче пире тĕлĕнтерчĕ; унта акă мĕн çырнă: Василий Алендейĕн «Кĕске калавĕсене», вĕсенче çитменлĕхсем пур пулин те, эпир савăнсах вуларăмăр, хавасланса статья çыртăмăр. Статьяна пачах та автора хурлас, кӳрентерес тесе мар, пулăшас тесе çыртăмăр. Çак статья кĕнеке авторне мĕн чухлĕ те пулин пулăшсан, эпир чăннипех те савăннă пулăттăмăр».

«Епле йăваш чунлă иккен пирĕн критик! — тет Алка малалла.— Епле вăл, писателе çитменлĕхсене кăтартса панăшăн, кӳрентересрен шикленет! Тепĕр тесен, çитменлĕхсем пуртан мĕншĕн савăнмалла, хавасланмалла-ши? Кама мĕнле-тĕр те, маншăн пулсан, критик писатель умĕнче, хăй тĕрĕсне пĕле тăрах, каçару ыйтни килĕшсех каймасть. Чукмар пуçа минретет пулсан, йăвашлăх чуна хавшатать кăна. Критикă литературă çинчен чăннине тĕрĕс сăмахпа каласа памалла».

Çакăнта каланисем вĕсем — критикă мар, чăвашсем пек каласан, ним çукран нимĕр кăна. Мĕншĕн тесен «Кĕске калав çырасси — пысăк ăсталăх» статьяра «çитменлĕхсем пуртан савăнни, хавасланни» пачах та курăнмасть, унта Алендейĕн кĕске калавĕсене савăнса вулани çинчен, хавасланса статья çырни çинчен каланă. «Çитменлĕхсем пур пулин те» тени вĕсемшĕн савăннине, хавасланнине пĕрре те

пĕлтермест, ҫитменлĕхсемшĕн саванма, хавасланма ас-пуҫа ҫухатнă сын кăна пултарать.

Александр Алка «ҫитменлĕхсем пуртан мĕншĕн саванмалла, хавасланмалла-ши?» тесе тĕлĕнни, пирĕн шутпа, этем логикипе килĕшсе тăмасть, йĕркеллĕ логикă законĕсене пăхăнса шухăшласан, ҫавăн пек тĕлĕнме нимле сăлтав та ҫук.

Статья авторĕ: «Критикă литературă ҫинчен чăннипе тĕрĕс сăмахпа каласа памалла» тесе айăплама пăхни те вырăнсăр, мĕншĕн тесен пирĕн статьяра литературă ҫинчен суя сăмах калани ҫук. Эпир унта пĕтĕмпе те Алендей калавĕсем пирки ҫеҫ сăмах хускатрăмăр, савăнас терĕмĕр пулсан, статья кĕнеке авторне мĕн чухлĕ те пулин пулăшсан, савăнма шутларăмăр. Логикă тени философсене кăна мар, статья ҫыракан кашни ҫыннах кирлĕ иккен!

Статьяра логикăпа чĕлхе пирки сăмах хускатрăмăр пулсан, Алкапа Уяр статйисенчен тата темиҫе тĕслĕх илсе кăтартас килет.

«Хальхи вăхăта тивĕҫлĕ литературăшăн» статья чĕлхинче ҫакăн пек шайраксем тĕл пулаҫҫĕ.

1. Чăваш мăрсисем (Такайпа Сарри тата мăрса пулма ĕмĕтленекен Урасмет) ҫинчен: «Вĕсем те пулин хăйсен тăванĕсенех, чăвашах, хĕсеҫҫĕ», тенĕ.

Мĕн каласшăн пулнă-ши кунта автор? Чăваш пуянĕ, чăваш мăрси чăваш чухăнне хĕсмелле мар тесшĕн пулнă-ши е тĕрĕс шухăша калама вырăнлă сăмах тупайман-ши? Е... е логикă тени ҫитмен-ши?..

2. «Емĕр сакки сарлака» роман пирки: «Ҫавăн пек пысăк пĕлтерĕшлĕ романсене, хулăн кĕнекесене пичетлесе кăлариччен малтан пур енчен те пиҫĕхтерсе (?) ҫитермелле», тенĕ.

Писательсем хушшинче ҫапла каланисене илтме пулать: «Ку произведени пиҫсе ҫитмен». Анчах «ку произведение пиҫĕхтерсе ҫитермен» тенине эпир илтмен. «Пиҫнипе» «пиҫĕхтерни» пĕр шухăша пĕлтермеҫҫĕ. Вĕсем хăйсен тымарĕ (корень) (**пиҫ**) пĕр пек пулнипе ҫеҫ пĕр йĕркере тăраҫҫĕ. «Пиҫĕхтер» сăмах пирĕн чĕлхере ҫак пĕлтерĕшсемпе ҫӳрет: хулла пиҫĕхтер, лашана пиҫĕхтер, ачана пиҫĕхтер (ку сын ĕҫпе кĕрешӳре пиҫĕхнĕ, ҫирĕпленнĕ, тĕрекленнĕ). Н. И. Ашмарин профессор ҫакăн пек тĕслĕх илсе кăтартать: «Чĕрĕ йывăҫа касса пăрахсан, хĕвелпе пиҫĕхет (ҫемҫелет, авăнакан пулать, авăнсан та хуҫăлмасть) (Словарь, IX вып., 233 стр.).

3. Стихван Шавли — тавлаштаруллă поэт» тенине тата мĕнле ăнланмалла-ши? Поэтăн пĕр-пĕр произведенийĕ пирки е произведенире хускатнă мĕнле те пулин ыйту пирки «тавлаштаруллă» (тĕрĕсрех: тавлашуллă!) теме пулĕччĕ, анчах поэчĕ пирки тавлашма кирлĕ-ши? Тавлашмалла пулсан, мĕн тесе тавлашмалла? «Тавлаштаруллă» пулсан, мĕн пирки тавлаштарать?

Уяр çырнă статьясенче те чĕлхе кăлтăкĕсем (хăй пек калас-тăк: «тумхахĕсем») сике-сике тухаççĕ.

1. «Ырă-сывă чухне çынна нимĕн те йывăр мар, савăнăç кăна», тет Уяр.

Кунта «ырă-сывă чухне» «савăнăç кăна» йывăр тенĕ пек пулса тухнă.

2. «Хурама та хурăн» повеçĕн пĕр геройĕ çинчен çапла каланă: «Чĕрĕ çын пек курăнас тесе, вăл хăй те тем те тăвать повеçре, ыттисем те мухтаççĕ ăна, çук, пур пĕрех шуплка вăл».

Кунта произведени геройне асра тытса каланă. Анчах произведение çыраканшăн та, вулаканшăн та çакă паллă: герой — вăл автор ăсталăхĕ, фантазийĕ тунă сăнар; герой, вулакана чĕрĕ çын пек курăнсан та, хăй тĕллĕн тем те пĕр тăваймасть, чĕрĕ çын пек курăнас тесе çӳреймест. Героя чĕрĕ çын пек кăтартасси — пĕтĕмпех писатель ĕçĕ. Вăл йăлтах писатель пултарулăхĕпе ăсталăхĕнчен килет.

3. «Ĕмĕр сакки сарлака» роман çинчен: «Тиркемелли татах нумай та пирĕн, атя, ыттисене калама юлтăр пуль ĕнтĕ. Атту автора мухтама тытăнчĕ те хурланипех (!) çырлахрĕ, тейĕç», тенĕ.

«Мухтама тытăнчĕ те хурланипех çырлахрĕ»! Мĕн ку? Чĕлхе тумхахĕ мар-и, логикăсăр шухăш мар-и? Логикăна пăхăнса калас пулсан, мухтама тытăнчĕ те мухтанипех çырлахрĕ е хурлама тытăнчĕ те хурланипех çырлахрĕ, темелле.

Шухăша пĕтĕмлетсе калас шутпа Уярăн тĕрĕсрен те тĕрĕс сăмахĕсене илер: «Хăвна ху тытма пĕлни чĕлхере те кирлĕ-мĕн».

Алка хăйĕн статйинче критиксен йăваш чунлăхĕ пирки сăмах хускатнине куртăмăр. Тĕрĕс те вырăнлă сăмах! Йăваш чунлăх тенĕ йăла чăнах та пирĕн литературă критикинче сисĕнет. Ун пек критик никама та критиклемест, пĕр çитменлĕхе те путлĕ кăтартса памасть, пĕр йăнăша та курмасть. Калаçма вара авкаланса калаçать, япалана хакластăвас пулсан, çитмĕл çичĕ хут унталла-кунталла пăхса илет, тепĕр чухне сăхсăхса та илет. Тӳрĕ калас вырăнне яланах

темле юптарса калать, пĕр-пĕр кĕтесе пытанса тăрса кукăр пăшалпа перет. Унăн стилĕ: «çук» тес вырăнне «çукрах» е «çукрах пек», «тĕрĕс мар» тес вырăнне «тĕрĕсех мар» е «тĕрĕсех мар пек»...

Шел пулин те, Уярпа Алка статйисенче те çавăн пек «стиль» сисĕнмеллипех сисĕнет. Эппин, сăмах пушă ан пултăр тесе, виç-тăват тĕслĕх илсе кăтартар-ха.

**Уяр:** «Пурнăçра çынсем «тарăнрах», чĕрĕрех (!) пек (!) туйăнать (!)». «Хурама та хурăн» повеçри Иринăна та çаплларах (!) пулса тухман-ши (!), тетĕп эпĕ». «Мана «Таркăнсем» калав килĕшерех (!) панăччĕ». «Л. Агаков чĕлхи чăвашлах (!) мар». «Эпир вара вырăнăн-вырăнăн (?) ним те ăнланми пулса ларатпăр. Ытла нумаях (!) мар ун пеккисем, çапах та (!) пур çав (!)». «Усал ĕç тăвакан çынсене те, патшана та Турхан малтан этемсем пек кăтартать. Каярахпа тин вĕсен киревсĕр ĕçĕсем палăрма тытăнаççĕ. Ку тĕрĕс пек (!) туйăнчĕ (!) мана». «Хаçат чĕлхинче апла хăтланни юрах (!) та пырать пулĕ (!), илемлĕ литературăра вăл килĕшмен пек (!) туйăнать (!)». «Тутар ханĕсен пусмăрĕ çителĕксĕртерех (!) курăнать».

**Алка:** «Çавăнпа та-и (!) пире героиньă шăпи пăшăрхантарсах (!) каймасть». «Ст. Шавлин поэми те ăнăçсăртарах (!) пулчĕ». Уйăп Мишши... «ку кĕнекипе... поэзи йывăр çулĕпе малалла сисĕнмелле (!) ярса пусман пек (!) туйăнать (!)». «...Ача-пăча литератури тата критикă каярах (!) юлса пыраççĕ-ха... аяккарах (!) тăраççĕ».

«Чукмарла» критикă писатель пуçне минретет пулсан, сăпă хĕр пек йăваш критикă, сăмаха татса калайман критикă, «кукăр пăшал» меслечĕ чăннипех те писатель чунне хавшатать. Ку çеç те мар-ха, критикăри йăваш чунлăх хăшпĕр критиксене пытанмалла выляс çул çине те кăларса тăратать. Пирĕн шутпа, пытанмалла вылякан критикă пурринчен çукки аванрах, мĕншĕн тесен вăл никама та усă памасть,— писателе витлет кăна, йĕкĕлтет кăна!

* * *

Кăçалхи критикăлла статьясенчен лайăххисен шутне Михаил Сироткинăн **«Сĕве Атăла юхса кĕрет» романа вуланӑ май тĕрленнĕ шухăшсем»** ятлă статйине кĕртмелле. Вăл — тĕплĕ те лайăх çырнă статья. Унăн авторĕ чăваш литератури ыйтăвĕсене çеç мар, чăваш чĕлхипе истори ыйтăвĕсене те тăрăшса тĕпчени курăнать.

Статьян паха енĕсенчен пĕри — романа истори енчен

тишкĕрни. М. Сироткин, XVI ĕмĕрти чăвашсене «хура халăх» тет пулин те, вĕсене социаллă питсĕр-сăнсăр масса вырăнне хурса пăхмасть. Вăл калана тăрăх, чăвашсене, тĕрĕсрех: чăваш ĕç çыннисене, тутар хан таврашĕсемсĕр пуçне, хăйсен пуянĕсем пусмăрласа пурăннă, вĕсен ĕнси çинче чăваш сăвăсĕсем — мăчавăрĕсем, хапăсĕсем, турханĕсем, мăрсисем, тăрăнĕсем, çĕрпĕвĕ-ĕмпĕвĕсем ларнă. Чăваш халăхĕ Мускав патшалăхĕпе вырăс халăхĕн хӳтлĕхне тăнипе çеç çăлăнса юлма, хăйне хăй упраса хăварма пултарнă. Мускав патшалăхне кĕрес шухăш чăваш халăх ăс-тăнĕнче çултан çул аталанса вăй илсе пынă. Вырăс патшалăхĕ, чăвашсене пылпа çу пӳрмен пулин те, хăйĕн тĕреклĕхне пула, чăваш халăхне çĕкленме пулăшма пултарнă. К. Турхан романĕнче çак шухăш витĕр витсе тăрать, тет критик М. Сироткин.

1436 çултан пуçласа 1552 çула çитиччен, 116 çул хушши, тытăнса тăнă Хусан ханлăхĕ чăвашсене кăна мар, вырăссене те нумай сиен кӳнĕ. Хан çарĕсем Мускава хирĕç вăрçа кайнă чухне яланах чăваш, мăкшă, мари çĕрĕ-шывĕ урлă каçса çӳренĕ, ăна таптанă, ĕç çыннисене тыткăна илсе кайнă, хĕр-упраçĕсене хан эшкерĕн хăрхăмĕсем тунă, ятне янă, варалана.

Чăваш халăхĕ Вырăс патшалăхне хăйĕн ирĕкĕпе кĕни чăвашсемшĕн прогрессивлă ĕç пулнă. Чăвашсем Атăл тăрăхĕнчи ытти халăхсемпе пĕрле вырăс çарĕсене хан çарĕсене çĕнтерме пулăшнă. Анчах вулакансем «Сĕве Атăла юхса кĕрет» романăн пĕрремĕш кĕнекинче ку событисене курмасçĕ-ха: унта XVI ĕмĕрĕн 15—30-мĕш çулĕсене çеç кăтартса панă, иккĕмĕш кĕнекере тата пысăк событисене кăтартса памалла.

М. Сироткин статйинче общинă (ял-йыш, «халăх») пирки калани питĕ интереслĕ (86 стр. пăхăр). Ытăва автор диалектикăлла лартнă: общинă ĕç çыннисемшĕн, пĕр енчен, усăллă, тепĕр енчен, сиенлĕ пулнă. Романăн пĕрремĕш кĕнекинче ял-йыша, халăх хăватне çителĕклĕ кăтартман, анчах ăна иккĕмĕш кĕнекере кăтартсан та вырăнлă пулать, тесе асăрхаттарать критик.

Кунта, чăвашсем Мускав патшалăхне хăйсен ирĕкĕпе кĕни çинчен калана май, Уярăн «Тухăçлă çул» статйинчи пĕр кăлтăка кăтартса хăвармасăр иртме çук. «Пирĕн халăхăмăр,— тет Уяр,— Хусанти тутар ханĕсен пусмăрĕнчен хăтăлса вырăс халăхĕпе пĕрлешни пурнăçпа вилĕмрен пурнăçа суйласа илнипе пĕрех пулнă».

Уяр калана тăрăх, чăвашсем малтан тутар ханĕсен пусмăрĕнчен хăтăлнă, унтан вара «вырăс халăхĕпе пĕрлешнĕ».

Вырăс патшалăхне чăвашсем хăйсен ирĕкĕпе кĕнĕ (1551 ç.). Ку ĕç акă мĕнле пулса иртнĕ: Атăл тăрăхĕнче тутар ханĕсен ирсĕр пусмăрне тӳсе пурăнакан халăхсем (чăвашсемпе марисем тата ытти сем те) XVI ĕмĕрĕн хĕрĕхпе аллăмĕш çулĕсенче ытларах та ытларах вырăссем еннелле туртăнма, вырăс патшинчен пулăшу ыйтма тытăнаççĕ. Сăмахран, 1546 çулта вĕсем патшаран Хусана хирĕç çар яма ыйтаççĕ, хăйсем воеводăсемпе пĕрле патшашăн службăра пуласси çинчен пĕлтереççĕ.

1550 çулта IV Иван патша правительстви Хусана хăйне пăхăнтарас ĕçе хатĕрленме тытăнать. 1551 çулта Свияжск хулине лартаççĕ. Ăна лартнă çĕрте чăвашсем те ĕçлеççĕ. Çав çулхинех чăвашсем хăйсен ирĕкĕпех Вырăс патшалăхне кĕреççĕ. 1552 çулта IV Иван патша хăйĕн çарĕсене мордвапа чăваш çĕрĕсем урлă Хусана хирĕç ертсе каять. Чăвашсем вырăс çарĕсене тĕрлĕ майпа пулăшаççĕ: салтаксем валли апат-çимĕç, çар лашисем валли утă-сĕлĕ параççĕ, çырмасем урлă каçарма кĕперсем тăваççĕ. Чăвашсем вырăс салтакĕсемпе пĕрле Хусана илнĕ çĕрте те хастар çапăçнă. 1552 çулхи октябрьте вырăс çарĕсем Хусана çапăрса илнĕ те Хусан ханлăхне яланлăхах парăнтарнă. Çакна май чăваш халăхĕ те ĕмĕрлĕхех тутар ханĕсен пусмăрĕнчен хăтăлнă.

Ку ыйтусем, К. Турханăн романне тишкернĕ май сиксе тухнăскерсем, пурте — истори ыйтăвĕсем. Турхан хăйĕн романне çырма нумай-нумай документсем пăхса тухнă, тĕпченĕ, историпе çырнă кĕнекесене вуланă. Критикăн, çавăн пек историлле роман çинчен статья çырас тесен, историе çав романа çырнă писательтен те лайăх пĕлмелле.

Эпир чăваш литератури çинчен çырнă чухне, кирлĕ пулсан, чăваш историйĕн ыйтăвĕсене çеç мар, пĕтĕм çĕршыв историйĕн ыйтăвĕсене те тĕрĕс çутатса памалла. Литературăпа истори тачă çыхăнса тăнине манмалла мар.

Критик ĕçĕ — йывăр та тертлĕ ĕç, çапах та, критик парти кăтартнă çулпа пырать пулсан,— çав ĕç халăхшăн усăллă та пархатарлă. Чăн-чăн критик хăйĕн ĕçне чун-чĕререн юратса тăвать, нимле йывăрлăхсенчен те хăрамасть.

М. Сироткин статйинче К. Турхан романĕн çитменлĕхĕсене тĕрĕс кăтартса панă. Çитменлĕхсене кăтартакан вырăнсене вуласан, критик мĕн тери тăрăшса ĕçленине куратăн. Сироткин кăшкăрмасть, кăшкăру паллисем те

лартмасть. Çапах та вăл каланисем, асăрхаттарнисем вулакан патне часах çитеççĕ, вулакана ĕнентереççĕ, çĕнĕ шухăшсем параççĕ.

Статьяра чăваш чĕлхипе уйрăм сăмахсем пирки паха шухăшсем каланă. Р. Чепунов пек çамрăк юлташсене чăваш чĕлхи пирки кăштах асăрхаттарса хăварас тесе, М. Сироткин статйинчен çак вырăна та пулин илсе кăтартар-ха. «400 çул ĕлĕкрех те, халĕ те чăваш чĕлхи, тĕпрен илсен, пĕр чĕлхех пулнă. Паллах, паянхи чăваш чĕлхи, саманине кура, çĕнĕ ăнланусене, çĕнĕ япаласемпе пулăмсене пĕлтерекен сăмахсемпе калама çук пуянланнă. Анчах, ĕлĕк чăваш çыннисен пурнăçĕ кайттă, тавра курăмĕ ансăр пулнă пирки вĕсем хăйсен тавралăхĕнчи япаласемпе пулăмсене ят пама та сăмах çитереймен тесе, айванла шухăшлама пултаратпăр-и вара эпир? Паллах, çук!»

М. Сироткин юлташ «янташ» сăмах пирки сăмах хускатать. «Турхан,— тет вăл,— 4—5 çул каярах çеç Митта Ваçлейĕн пуçарăвĕпе хăш-пĕр писательсем килĕштерсе пăрахнă, чăвашсемшĕн пулсан ниме пĕлтермен «янташ» (тутарла ĕнтĕ вăл «çĕнĕ чул» пулать) сăмаха ял-йыш, хамăр ял, хамăр енчи çын пĕлтерĕшĕпе XVI ĕмĕрти чăвашсене те калаттарма пăхать».

Чăвашсем XVI ĕмĕрте «янташ» сăмаха «земляк» пĕлтерĕшпе каламан тенипе, паллах, килĕшме пулать. «Янташ» сăмаха çав пĕлтерĕшпе 4—5 çул каярах çеç калама тытăнни те тĕрĕс (чăн та, халлĕхе вăл сăмахпа писательсем çеç усă кураççĕ-ха). Çапах та, «янташ» сăмах чăваш чĕлхинче «земляк» сăмах вырăнне çӳреме пултарать тесе калас килет. Паха та илемлĕ, типтерлĕ сăмах! Çичĕ çул вĕренмелли шкул пĕтермесĕрех ялтан таçталла тухса кайнă хăш-пĕр çынсем пĕр-пĕрине курсан: «Эй, хамăр ялсем!» тесе чĕнсе илеççĕ. Ку вăл, вĕсен шучĕпе, «земляк» тенине пĕлтерет имĕш. «Земляк» сăмаха, пĕли-пĕлми куçаркаласа, «хамăр ялсем» тени хăлхана ыраттарать, ăна ун пек куçарни, калани — кăнттамран та кăнттам.

Чăвашсен «-таш» сыпăкран тăракан сăмахсем татах та пур. Акă вĕсем: «юлташ», «хурăнташ» («янташ» сăмах та çак йĕркерех тăрать). Пĕррехинче чăвашсен паллă чĕлхеçи Тимухха Хветĕрĕ пире çапла каласа панăччĕ: — «-таш» вăл сăмахăн пĕрлехине, пĕр япаларан пулнине пĕлтерекен сыпăкĕ (аффикс) тенĕччĕ. «Юлташ» сăмаха вăл çулпа пĕрле пыракан çын тесе ăнлантарнă. Ун шучĕпе: «хурăнташ» пĕр хырăмран тенине, «янташ» пĕр юнран тенине пĕлтерет

(кун пек ӑнлантарни Тимухха Хветӗрӗн ал ҫырӑвӗсенче пулма кирлӗ) *.

Эпир «янташ» сӑмахшӑн тӑратпӑр: хитре сӑмахпа мӗншӗн усӑ курас мар! Паян вӑл ырӑнсӑр пек туйӑнать пулсан, ырансем якалса ҫитӗ, халӑх ӑс-тӑнне кӗрсе вырнаҫӗ. Эпир вара, хамӑр енчи ҫынсене курсан-тусан, ытлашши шутласа тӑмасӑрах: «Сывӑ-и, янташ!» тесе алӑ парӑпӑр.

«Сӗве Атӑла юхса кӗрет» романа эпир пӑхса тухнӑ статьясен авторӗсем виҫҫӗшӗ те историллӗ роман тесе хаклаҫҫӗ. М. Сироткин уйрӑмах тата унӑн реализмӗ ҫинчен калать: «Сӑмах реализмла произведени ҫинчен пырать пулсан — Турханӑн романӗ шӑпах ҫавсен хисепне кӗрет», тет. Пирӗн шутпа, совет писателӗн историллӗ романӗ социализмлӑ реализм меслечӗпе ҫырнӑ произведени пулмалла. Шухӑшпа идейӑ пуянлӑхӗ, психологи тарӑнлӑхӗ, историлле конкретлӑхӗ, патриотла хаваслӑх, чӗлхе сӑнарлӑхӗ, чӗлхе илемӗ историлле романа та тем пекех кирлӗ. Социализмлӑ реализм меслечӗ историлле романшӑн та ют мар.

* *
*

Партин XXII съездне хатӗрленнӗ кунсенче Бурят Республикин столицинче — Улан-Удэ хулинче — РСФСР писателӗсен Союзӗн Секретариачӗн ларӑвӗ пулса иртрӗ. Ҫав ларура питех те пысӑк ыйту сӳтсе ярнӑ. Вӑл ыйту — хальхи пурнӑҫпа нацилле традицисем. Ҫак ыйтӑвах Секретариат 1959 ҫулта Ӗпхӳре, 1960 ҫулта Саранскра ирттернӗ ларӑвӗсенче пӑхса тухрӗ, кирлӗ пек сӳтсе,яврӗ.

«Хальхи пурнӑҫ» тени — вӑл конкретлӑ ӑнлану. Хальхи пурнӑҫ — вӑл пирӗн вӑхӑтри общества, халӑх, паянхи ҫынсем, халӑх ӗҫӗ-хӗлӗ, паттӑрлӑхӗ, ҫынсен обществӑшӑн, коммунизмшӑн тунӑ кулленхи ӗҫӗ, вӗсен ӗмӗчӗсемпе шухӑшӗсем, савӑнӑҫӗ, хуйхи-суйхи; вӑл — киввипе ҫӗнни кӗрешни, ҫӗнни киввине ҫӗнтерсе пыни, пӗтӗм пултарулӑха коммунизма пани, ӑна ҫывхартни, хальхи ҫынсем коммунизма кӗрсе пыни. Анчах ҫак чаплӑ ӗҫ таҫта пӗлӗт ҫинче пулса пымасть, вӑл ҫӗр ҫинче, хамӑр пурӑнакан обществӑра, кулленхи пурнӑҫра пулса пырать. Ӑна тӑвакансем — эпир хамӑр, рабочисемпе колхозниксем, тӗрлӗ ӗҫе кӳлӗннӗ интеллигентсем. Пирӗн вӑхӑтри ҫын — ҫӗнӗ ҫын, унӑн шухӑшӗ

* «Янташ» сӑмах пирки Тимухха Хветӗрӗ каланипе эпир килӗшместпӗр. «Янташ» сӑмаха малтан «ентеш» сӑмах вырӑнне каланӑ пулмалла; «ен», «ян» тени «юн» тенинчен, ҫавӑн пекех «ҫӗнӗ чул» тенинчен пулса кайнӑ тесе ӑнлатарни, пирӗн шутпа, тӗрӗс мар.

сем те, ĕмĕчĕсем те çĕнĕ,—ăна ĕçе, кĕрешĕве хавхалантаракан ĕмĕт-шухăшсем. Иртнĕ ĕмĕрте Чернышевский, Добролюбов, Писарев çавăн пек çынсене курма ĕмĕтленнĕ пулсан, халĕ вĕсене, çĕнĕ çынсене, эпир пурнăçра куратпăр. Çĕнĕ çын социализмла обществă ĕçченçин сăнарĕ пулса тăчĕ.

Анчах паянхи пурнăçпа ĕнерхи пурнăç хушшинче тимĕр карта пулма пултараймасть, ĕнер эпир паянхи пурнăçа тунă, паян ыранхине хатĕрлетпĕр, хамăра кирлĕ пек тăватпăр. Ĕнерхи, паянхи, ыранхи диалектикăлла çыхăнса тăрать. Пурнăç — пĕр вĕçĕмсĕр процес. Пурнăçра кивви кая юлса, пĕтсе пырать, çĕнни, паянхи киввине çĕнтерсе, мала тухса пырать. Çапах та кивви хăй тĕллĕнех пĕтесшĕн мар, çынсем çумне, урана пылчăк сыпçăннă пек, çыпçăнать, пырса çакăнать, каялла туртать, хăшĕ-пĕрисен ăс-тăнне кĕрсе каять.

Пирĕн традицисем хушшинче киввине мар, çĕннине аталантарса пымалла, çĕннине пулăшса тăмалла. Пĕр-пĕр писатель, халăхăн тахçан-авал пулнă йăлисене мухтаса, хальхи йăлисем тесе кăтартать пулсан, хăй пурнăçран кая юлса пынине çеç палăртать. Ун пек йăласем хыççăн кайни писателе лачакана, шурлăха туртать, талантне пӳлсе, пăвăнтарса пырать.

Совет обществи коммунизма сарлакан туса пыракан тапхăра кĕчĕ, обществăпа пĕрле, унăн ним уйрăлми пайĕ пулса, литературă та коммунизмла обществăна сарлакан туса пыракан тапхăра кĕчĕ. Нацилле литературăсем умĕнче, çав шутра чăваш литератури умĕнче те, халăхсен нацилĕхне (нацилле самосознание) аталантарса тĕреклетесшĕн, халăхсене права тĕлĕшпе пурне те пĕр тан тăвассишĕн кĕрешес задача тăнă тапхăр ĕнтĕ иртсе кайрĕ: Совет Союзĕнчи халăхсем халĕ пурте пĕр тан праваллă, вĕсен экономики те, культури те çӳллĕ шая çĕкленчĕ, вĕсем тăванла йышра ĕçлесе пурăнаççĕ, коммунизм тăваççĕ, пĕр-пĕрне тăванла пулăшса малалла утаççĕ.

Писательсем хушшинче хăш чухне литературăн нациллĕ уйрăмлăхĕ пирки калаçса илеççĕ. Ку ыйту — шухăшлаттаракан ыйту. Вăл чăваш писателĕсене çеç мар, ытти писательсене те калаçтарать. Çавăнпа та РСФСР писателĕсен Союзĕн секретариачĕ хальхи пурнăçпа традицисем çинчен час-часах ыйту лартнинчен тĕлĕнме нимле сăлтав та çук.

Тӳрех калас пулать: литературăпа искусствăн нациллĕ уйрăмлăхĕ, нациллĕ традицисем пирки чăваш литературинче ку таранччен путлĕ çыракан-тăвакан пулман.

1959 çулта çеç чăваш литературин нацилĕхĕ пирки çырнă пĕр статья тухрĕ. Вăл И. Кузнецовăн **«Литературăри нациллĕ хăйне евĕрлĕх çинчен калаçнă май»** ятлă статйи («Ялав», 7-мĕш номер). И. Кузнецовăн çак статйи, пирĕн шутпа, сăмах хускатас, сăмах тапратса ярас, калаçтарас тесе çырнăскер пулин те, кирлĕ те усăллă статья.

Марксистсемшĕн çакă паллă: класлă обществăра искусствăн нацилĕхĕ яланах класлăхпа уйрăлми çыхăнса тăрать, унăн тĕп пĕлтерĕшне палăртаканни яланах класлăх. Урăхла пулма та пултараймасть, мĕншĕн тесен класлăх нацилĕхрен вăйлăрах.

Клас интересĕсем — нацилĕх тĕшши, нацилĕхе малалла илсе пыраканни. Социализмлă обществăра искусствăн нацилĕхĕ халăхлăхпа çыхăнса тăрать, тĕрлĕ халăхсене пĕр-пĕринпе çывхартать, вĕсен туслăхне çирĕплетет, интернационализм çулĕпе пырать. Социализм, тенĕ Н. С. Хрущев юлташ партин XX съездĕнче, нациллĕ уйрăмлăхсемпе нациллĕ хăйне евĕрлĕхсене пĕтермест, пачах урăхла, мĕн пур нацисемпе халăхсен экономикине, вĕсен культурине пур енĕпе те аталанса чечекленме вăй парать.

Парти çапла вĕрентет: хăйсен ĕмĕрне пурăнса ирттернĕ, кивелсе çитнĕ, халь хи пурнăçпа килĕшсе тăман, каялла туртакан нациллĕ традицисене хирĕç кĕрешсе пымалла. Çакă вăл пушшех те хальхи вăхăтра, коммунистла пурнăçăн никĕсне хывнă тапхăрта кирлĕ. Ĕç çыннисене коммунистла воспитани парас ĕç вĕсен нациллĕ уйрăмлăхĕсене шута илсе, мĕн пур нацисен ĕç çынниййĕсене коммунизм тăвас çĕрте пĕрлештерсе тăраканнине, пĕрлехи тĕллеве тĕпе хурать.

* * *

Коммунистсен партийĕ совет писателĕсене куллен-кун пулăшса пырать. Парти хăйĕн XXII съездне хатĕрленнĕ тапхăрта Н. С. Хрущев юлташăн «Литературăпа искусствăн çĕнĕ çитĕнĕвĕсемшĕн» ятлă статйи * пичетленсе тухрĕ («Тăван Атăл» альманахăн 3(90) кĕнекинче ăна чăвашла куçарса кăларнă). Çак чаплă документра литературăпа искусствă çыннисен пархатарлă ĕçне ырă кăмăлпа пăхса

* Н. С. Хрущев. К новым успехам в литературе и искусстве (Сокращенное изложение выступлений на встрече с представителями советской интеллигенции 17 июля 1960 года, на приемах в честь писателей и композиторов РСФСР).

тухнă, литературăпа искусствăн халăхи вăхăтри задачисем ҫинчен каласа панă.

Писательсем коммунизм тăвас ĕҫе илемлĕ произведенисем ҫырнипе, вĕсене халăх хушшине сарнипе, халăхăн ырă шухăш-кăмăлне вăратса аталантарнипе хутшăнаҫҫĕ. «Чунчĕререн ĕненсе коммунизм обществи тăвакан ҫирĕп шухăш-кăмăллă ҫынсене,— тет Н. С. Хрущев,— этемлĕхĕн ҫутă малашлăхĕшĕн, ҫынсен ҫĕр ҫинчи телейĕшĕн кĕрешме хăйсем суйласа илнĕ ҫул ҫинчен нимле тăшманла вăй та, нимле йывăрлăх та пăрса ярайми ҫынсене вĕрентсе ҫитĕнтерес аслă ĕҫе хăвăр произведенисемпе хутшăннинчен хисеплĕрех, кăмăллăрах ĕҫ урăх пулма та пултараймасть».

Н. С. Хрущев статйинче литература критикин задачи пирки те каланă. Принципла критикă писательсене вăй парать, ĕҫлеме хаваслантарать, хастарлăхне ӳстерет, массăсен ăнланса тăвакан ĕҫне аталантарать.

Пире ҫитменлĕхсенчен, кивĕ шухăшсенчен тасатакан критикă кирлĕ. Н. С. Хрущев юлташ, ытарлăрах сăмахсемпе каласа, кун пирки ҫакăн пек асăрхаттарать: «Ҫавăн пек критикă мĕн чухлĕ ытларах, ĕҫшĕн ҫавăн чухлĕ лайăхрах. Ҫын хăйĕн ӳт-тирне хытă мунчалапа, тен, щёткăпа мĕн чухлĕ тăтăшрах ҫуса тасатать, хăйне ҫавăн чухлĕ хаваслăрах туять. Критикă вăл, ансат каласан,— хăйне евĕрлĕ мунча. Ахальтен мар ĕнтĕ пĕр-пĕр ҫынна критиклесен, хăш чухне ҫапла калаҫҫĕ — ну мунча кĕртрĕҫ те ăна! Эпир ҫавăн пек уҫăлтаракан «мунчашăн», вăл ҫынсене хăйсене таса тытма пулăшать».

Литература критики писательсене тĕрĕс те ырă шухăш витĕмĕпе пулăшса тăмалла, литературăна тĕрĕс ҫулпа пыма пулăшмалла. Ҫакна кашни критикăн лайăхран та лайăх пĕлсе тăмалла. Критикăн паян пĕр майлă, ыран тепĕр майлă ҫырма тивĕҫ ҫук: вăл ҫил хӳри (флюгер) мар, вăл партин идеологи ĕҫĕнчи работникĕ, парти ĕҫне литература фронтĕнче тăвакан ҫын. Ҫавăнпа та критик яланах партипе государствă, халăх интересне тĕпе хурса ĕҫлемелле. Ленин каланă тăрăх, литературă вăл — пĕтĕм парти, халăх, государствă ĕҫĕ.

Критикшăн литературăра пĕлĕшсемпе туссем, хăйматлăхсем ҫук, пулмалла та мар. Вăл яланах тĕрĕслĕхшĕн, тĕрĕс сăмахшăн, литературăн халăхлăхĕшĕн, ленинла партилĕхĕшĕн тăмалла. Партин идейăллă, политикăллă ҫул-йĕрне хӳтĕлесси пирки сăмах пынă чухне, хамăршăн ют шухăшсемпе ăнланусем, тăшманла теорисем сарма хăтланакансене

хирĕç кĕрешнĕ чухне критикăн ним килĕшми хаяр пулмалла. Ют шухăшсене çийĕнчех çапа-çапа антармалла, колхоз уй-хирĕнчен çум куракĕсене кăкласа ывăтнă пек, кăкласа ывăтмалла. Халăха пулăшас, коммунизм ĕçне малалла ярас тесе, ырă кăмăлпа ĕçлекен писательсене пулăшса тăмалла, вĕсене çитменлĕхсемпе йăнăшсем пулсан, вăхăтра пулăшасси — литература критикин чи паха тивĕçĕсенчен пĕри. Çакăн пек критикăсăр литература, кирлĕ пек хăвăрт аталанса, малалла çирĕппĕн кайма пултараймасть.

Чăваш литературинче писатель-профессионалсем те пур, анчах критика ĕçĕпе çеç пурăнакан литератор-критиксем-профессионалсем çук. Хаçатсемпе журналсенче критикăлла статьясем пичетленсе пыраççĕ пулсан, вĕсем — нумайăшĕ ĕç хыççăн, пуçа ураттарса, çырнă статьясем. Çавăн пек ĕçлеме сывлăхсăр пуçне пысăк пултарулăх, иксĕлми хăюлăх, нумай-нумай вĕренни кирлĕ. Чăваш критикĕсем, çапах та, тăрăшса ĕçлеççĕ пулсан, йывăрлăхсенчен хăраса-шикленсе тăмаççĕ пулсан, вĕсем чăннипех те паттăрла ĕç тăваççĕ.

Критика задачи — литературăн кашни çĕнĕ произведенийĕ пирки çийĕнчех, вăл пичетленсе тухсанах, тивĕçлĕ сăмах каласси. Çавăн пек ĕçлесен, литература критики малта пырĕ, литература процесне ертсе пыма пултарĕ. Кирек хăш литературăна та ертсе пыракан марксистла-ленинла критика кирлĕ. Çавăн пек критика çеç литература ӳпкине таса сывлăш парса тăрать, чĕрине ĕçлеме çĕнĕ вăй парать, чунне çунат хыççăн çунат парса малалла вĕçтерет.

Эппин, çавăн пек литература критикишĕн пĕтĕм вăя хурса ĕçлер, тăрăшар, кĕрешер!

*1961*

## ЧĂВАШ ЛИТЕРАТУРИН САН-САПАЧĔ

**(Тăван литература пирки шухăшлани)**

Чăваш литературин историне ытти литературăсен историпе «танлаштарсан», вăл ытла та пĕчĕкçĕ пек туйăнать. Чăнах та унăн пĕтĕм тĕнчене каластарнă пысăкран та пысăк произведенисем (романсем, повеçсем, поэмăсем, литература тĕпчевĕсем т. ыт.) çаплах çук-ха, унăн çĕршер çул хушши аталанса пынă, çулран çул пуянланнă традицисем те çук. Çапах та, ăна уйрăм илсе пăхсан, эпир хăюллăнах çапла калама пултаратпăр: чăваш литературин историне И. Я. Яковлев пуçарса янă çырулăхпа, унăн букварĕнче пичетленнĕ чăваш литературин малтанхи произведенийĕсемпе, просветитель кăларнă кĕнекесемпе çыхăнтарса тĕпчес пулсан, пирĕн тăван литература çĕр çула яхăн пурăнать, тепĕр 7—8 çултан, нумай пулсан, 10 çултан вăл пуçланса кайнăранпа çĕр çул çитрĕ теме пулать. Çĕр çул, урăхла каласан — пĕр ĕмĕр! Истори мар-и-мĕн вăл? Паллах, хăйне евĕрлĕ истори, нацилле литература историйĕ. Хăйне кура унăн пуянлăх та, традицисемпе мехелсем те пур. Вĕсем аталаннă, малалла кайнă. чăваш литературин сăн-сăпатне палăртнă.

1879 çулта М. Ф. Федоров «Арçури» баллада çырнă. Чăннипех те паха произведени. Вăл пĕрре те чăваш литературин чи пуçласа çырнă произведенийĕ пек туйăнмасть. Унăн идейисем те, сăнлăхĕсем те пачах та тин çеç утма вĕреннĕ ача çулĕнчи литературăн пек мар. «Арçури»— халăх пурнăçĕ пирки шухăшласа çырнă оригиналлă произведени. Унăн шухăшĕсем, сюжечĕ, форми, унти колорит йăлтах чăваш халăхĕн, патша Российĕнче хĕсĕнсе-пĕсĕнсе

пурӑннӑскерӗн. Ҫапла, чӑваш литературин историне «Арҫури» балладӑран пуҫлас пулсан та, вӑл ҫӗр ҫула яхӑн пурӑнни курӑнать. (Кунта эпир Яковлевччехи чӑваш писателӗсене Чӑваш Хветине, Янтуша, паллах, манман. Вӗсене эпир асра тытатпӑр, вӗсем ҫинчен: Чӑваш Хветисен юрри-сӑввисем тӑван ҫырулӑх пулман пирки сӑмах вӗҫҫӗн ҫеҫ ҫӳренӗ, чӑваш литературине пуҫламалӑх, «истори» тумалӑх палӑрайман тетпӗр).

XIX ӗмӗрӗн иккӗмӗш пайӗнче чӑваш поэзийӗ ҫеҫ мар, прози те пуҫланса кайнӑ. Игнатий Иванов калавсем ҫырнӑ. И. Я. Яковлев хӑй те ҫырмасӑр пурӑнма тӳсеймен, Чӗмпӗрти чӑваш шкулӗнче вӗренекен ачасене те ҫырма вӗрентнӗ. И. Н. Юркин 1889 ҫулта «Этемӗн пырӗ тутӑ та куҫӗ выҫӑ» ятлӑ повеҫ ҫырнӑ. Унӑн тепӗр повӗҫӗ «Мул» ятлӑ. Вӗсем — чӑвашсен чи малтанхи повеҫӗсем. Совет саманинче чӑваш прози роман ҫӳллӗшне ҫӗкленнӗ.

Революцичченхи чӑваш писателӗсен драмӑсем ҫырас шухӑш та пулнӑ (М. Акимов 1907 ҫулта хӑйӗн «Ялти пурнӑҫ» ятлӑ фельетонне пьесӑ пек туса ҫырнӑ). Драмӑ элеменчӗсем «Нарспи» поэмӑра та кӗретӗнех курӑнаҫҫӗ. Чӑваш поэзийӗ мӗнле те пулин жанр «ҫуратни» ҫинчен сӑмах каклас пулсан, унӑн «ӑшӗнче» драмӑ жанрӗ ӳтленнӗ, тытӑнса кайнӑ теме пулать.

«Хыпар» хаҫат чӑваш публицистикине, сатирӑпа юморне аталантарас енӗпе пысӑк вырӑн йышӑннӑ. Ҫакӑ вӑл «Хыпарҫӑсем» кӗнекене (1961) ҫиелтен пӑхса тухсан та аван курӑнать. Хыпарҫӑсем чӑваш литературине ӳстерессишӗн чун-чӗререн тӑрӑшнӑ. Вӗсен 1906—1907 ҫулсенче тӗрлӗ жанрпа ҫырнӑ произведенийӗсем чӑваш литературин историне тивӗҫлипех кӗрсе вырнаҫнӑ. Эппин, чӑваш литературин историне хыпарҫӑсен произведенийӗсене тӗпчемесӗр ҫырма ҫук. Вӗсен произведенийӗсенче революцилле-демократилле идейӑсем уҫҫӑнах палӑраҫҫӗ, вӗсем, пуринчен ытла Тайӑр Тимкки, чӑваш литературин сӑн-сӑпатне революцилле тӗс, революцилле ҫутӑ кӗртнӗ.

Чӑвашсен патша саманинчи литературинче, паллах, чи пысӑк вырӑн йышӑннӑ писатель К. В. Иванов пулнӑ. Савӑнпа та чӑваш литературин 1905—1915 ҫулсенчи тапхӑрне Иванов тапхӑрӗ теме те пулать. Ҫакна шута илсе, пирӗн тӗпчевҫӗсем Иванова чӑваш поэзине, чӑваш литературӑ чӗлхине пуҫарса яракан вырӑнне хураҫҫӗ. Чӑваш поэзийӗ Ивановчченех пулнине, унччехи произведенисене те, пӗтӗмӗшпе илсен, литературӑ чӗлхипе ҫырнине шута илсен,

çакă вăл литература историкĕсене кăштах шухăшлаттарать. Ивановчченхи чăваш литератури пирки çакăн пек калама пулать: «Арçури» баллада та, И. Н. Юркин повеçĕсем те вуншар çул хушши пичетленмесĕр выртнă, халăх хушшине сарăлайман. («Арçури» 1908 çулта çеç пичетленнĕ, «Этемĕн пырĕ тутă та куçĕ выçă» повеç 1949 ç. кăна пичетре тухнă). И. Я. Яковлевăн букварь валли çырнă пĕчĕкçĕ калавĕсем çеç халăх патне çитнĕ. Эппин Ивановчченхи писательсен произведенийĕсем пĕтĕм халăх ăс-тăнне пуянлатайман, пĕтĕм халăх кăмăлне çĕклентереймен, чун хавалне савăнтарайман. Тепĕр енчен тата çакă та паллă: вĕсене пур çĕрти чăваш чĕлхипе, чăваш сăмахĕсемпе анлăн усă курса çырайман-ха. Ивановчченхи писательсем, тĕрĕссипе каласан, чăваш литературипе чĕлхи никĕсĕн малтанхи кирпĕчĕсене çеç хывнă, пулас писательсен ĕçне-хĕлне хăш-пĕр таран çăмăллатнă. Паллах, чăваш литературипе чĕлхине И. Я. Яковлев калавĕсем те, И. И. Иванов новеллисем те, халĕ те манăçа тухман «Сармантей» те кирлĕ пулнă, анчах пирĕн литературăна, унăн чĕлхине чăннипех пуçарса яма «Сармантей» халапран ытларах Константин Ивановăн «Нарспи» поэми, юмахĕсем, Н. В. Шупуççынни сăвви-юррисем, «Хыпар» хаçат кирлĕ пулнă. Çав ĕçе тума тата М. Ю. Лермонтов, А. В. Кольцов, Л. Н. Толстой тата ыттисен произведенийĕсене чăвашла куçарма тивнĕ. Çак таран историлле процесра К. В. Иванов ĕçĕ, унăн вырăнĕпе ролĕ калама çук пысăк та паллă. Унăн чăваш литературинчи вырăнĕ А. С. Пушкинăн вырăс литературинчи вырăнĕ евĕрлĕ. Чăваш литературине чăннипех пуçарса яма, чăнчăн литература шайне çĕклентерме Константин Иванов кирлĕ пулнă.

Чăваш литературин историйĕнче халăх пултарулăхĕ питех те пысăк вырăн йышăнса тăрать. Халăх пултарулăхĕн сăн-сăпачĕ пирĕн литературăра халĕ те курăнать, ăна илемлетсе пурăнать. Чăваш литературине аталанма вăй панă тепĕр хăват вăл — аслă вырăс халăхĕн классикла литератури. Унăн чаплă идейисем, ĕмĕрех пархатарлă традицийĕсем чăваш литературишĕн ют пулман, çавăнпа та вĕсем пирĕн литература аталанăвĕнче ăна малалла илсе пыракан вăйсенчен пĕри пулса тăнă. Чăваш литературин сăн-сăпачĕ хăш-пĕр таран вырăс литературин сăн-сăпачĕ пекрех пулни пирĕн литература вырăс литературин чаплă идейисене, ырă традицийĕсене хапăл туса йышăннинчен килет.

Революцичченхи чăваш литературин идейисем халăхшăн

ĕçлес, халăх ирĕклĕхĕшĕн, пусмăра хирĕç кĕрешес, халăх курайман тăшмана тĕп тăвас идейăсем пулнă. М. Ф. Федоровах чăваш ĕç хресченĕсен чухăн пурнăçĕ çинчен, вĕсене тĕрлĕ харам пырсем çаратни çинчен тарăхса çырнă. Тайăр Тимкки, К. В. Иванов, Н. В. Шупуççынни, Н. И. Полоруссов-Шелепи ĕç халăх тăшманĕсене питленĕ. Ивановпа Тайăр халăх хушшине патша йĕркине пĕтерес шухăш та сарма пуçланă. Ку идейăна вĕсем, чи малтан, çĕр ыйтăвне хускатса сарнă. Акă вĕсем «Хресчен марсельезине» чăвашла мĕнле куçарнă (пĕрремĕшĕ — Иванов куçарăвĕ, иккĕмĕшĕ — Тайăрăн):

Вăранăр, тапранăр, чăваш сыннисем!
Тапран эс вăрçма, выçă халăх!
Халăх хăй çиллине кăтарттăр!
Малалла, малалла, малалла!

Çĕршĕн, ирĕкшĕн, çимелĕх çăкăршăн
Тухăр тăшманпа çапăçмашкăн.
Пиртен мăшкăлласа кулнăшăн
Пухăнăр вĕсемпе вăрçмашкăн.

Поэт-революционер Тайăр Тимкки патша йĕркине чунчĕререн курайман, халăха, ĕнсе çинчен тĕрлĕ харам пырсене сирсе пăрахма чĕнсе, кивĕ йĕркесем урăх ан пулччăр, тимĕр сăнчăр татăлтăр, тенĕ. 1963 çулта тупнă пĕр сăвă татăкĕнче патша çинчен поэт çакăн пек çырать:

Çухал, çухал ку çĕртен,
Сана тупăк хуплатăр.
Санăн хура юнăнтан
Никам асап ан куртăр.

Тайăр Тимкки 1906—1907 çулсенчех чăваш литературине рабочисен пурнăçĕ çинчен калакан тематика кĕртнĕ: вăл «Рабочисен юрри» ятлă сăвă çырнă, «Интернационал» гимна чăвашла куçарма тытăннă.

К. В. Иванов ирĕклĕ этеме мухтакан гуманизм шухăшĕсемпе хавасланса ĕçленĕ. Поэтăн этем ăсĕпе вăйĕ пирки каланă идейисем халĕ, пирĕн саманара, чăннипех те пурнăça кĕрсе пыраççĕ. Çут тĕнчере (шывсем, çĕрсем çинче, тĕнче уçлăхĕнче) этем хуçа пулса тăрас ĕçе малалла яракансенчен пĕри пирĕн чăплă янташ А. Г. Николаев пулни пире пушшех те савăнтарать.

Чăваш литературин сăн-сăпачĕ Октябрь революци панă ирĕке пула, унăн ырă тивлечĕсене пула нумай-нумай пуянланчĕ, илемленчĕ, шухăшĕ тарăнланчĕ. Чăваш совет

литератури совет халăхĕсен литературине вĕсен ним уйрăлми пайĕ пулса кĕчĕ, вăл интернационалла литературă çулĕпе ăнăçлăн аталанса пырать.

Чăваш халăхĕн мухтавлă ывăлĕсенчен пĕри, кăвар чĕреллĕ поэт-коммунист Çеçпĕл Мишши Совет влаçĕн малтанхи çулĕсенчех халăхсен туслăхĕн идейине, интернационализма ырласа çырнă, чăваш халăхĕн çутă пуласлăхне курнă. Поэт шухăшланă тăрăх, унăн пуласлăхĕ **Интернационализм** кĕперĕпе каймалла. Поэт çĕн ĕмĕрти çĕн чăвашăн сăнарне çакăн пек кăтартса панă: вăл «хул пуççийĕпе кăвак пĕлĕте перĕнсе, кун-çул уйне тухса, хĕвеллĕ тумтир тумланĕ», тенĕ.

Тепĕр ик-виç çултан Хумма Çеменĕ, çĕнĕ кунсене кĕтсе, вĕсене ырласа, çапла çырнă:

Васка, васка, çĕнĕ тĕнче,
Васка, васка эс çул çинче.

Акă тата Н. В. Шупуççынни кивĕ тĕнчепе çĕнĕ тĕнче пирки мĕнле çырнă:

Çĕкленес, улăхас, малалла чикĕнес,
Кивĕ тĕнчене кăкласа çеремлес!
Паянтан малалла, коммунизм патнелле
Ӳкес те, вилес те, çапах çитмелле!
Чуралăх, тĕттĕмлĕх, пĕр-перне кăшлани
Халапра çеç юлтăр килес ĕмĕр валли!

Чăваш совет литературин пуçламăшĕ революци кунĕсемпе, ирĕкшĕн, çĕнĕ тĕнчешĕн, революци уçса панă кун-çула сыхласа хăварассишĕн, çĕнĕ этемшĕн, унăн ĕçĕшĕн, телейĕшĕн кĕрешнипе çыхăнса тăрать. Çамрăк чăваш литератури хăйĕн кун-çулне лайăх пуçланă, вăл пуласлăхшăн, коммунизмшăн кĕрешес çул пулнă. Пирĕн литературă халĕ те çав çулпах пырать.

Çĕнĕ тĕнчене, вăл панă ирĕке пĕтĕм чăваш литератури мухтаса çырнă. Çĕнĕ тĕнчене, революцие хӳтĕлес, тăшмансенчен сыхласа хăварас идейă чăваш совет литературишĕн чи чаплă идейă пулнă.

Совет патриотизмĕн идейисем, халăх ĕçĕпе кĕрешĕвне савакан шухăшсем чăваш совет литературине витĕр витнĕ. Чăваш поэчĕсемпе прозаикĕсем аслă партие, унăн гениллĕ çулпуçне, учительне В. И. Ленина мухтанă, унăн чаплăран та чаплă идейисене халăх хушшине сарнă, ăс-тăнне уçнă.

Аслă çулпуçăн ятне чĕрере усраса, чăваш ĕç сыннисем поэт сăмахĕсемпе калаççĕ:

Хăватлă та вилĕмсĕр Ленин
Вăл пирĕншĕн компăс, виçе.
Кашни утăмах эпир меллĕн
Унпа чухласа тĕрĕслене,
Тишкернĕ унпа пур ĕçе.

(П. Хусанкай. «Ленин пирĕнпе»)

Пирĕн совет саманинчи литературăра пур жанрсем те вăй илчĕç, чечекленме тытăнчĕç. Халĕ пирĕн прозăра романсем, повеçсем, паха калавсемпе новеллăсем пур. Чăваш поэзийĕн илемĕ ытти халăхсен çыннисене те тĕлĕнтерет. Пирĕн халăх поэчĕсем С. В. Элкер, П. П. Хусанкай, Я. Г. Ухсай пурăна киле классикла произведенисем пулса тăмалла поэмăсемпе сăвă-юрăсем çырчĕç. А. Алка, С. Шавли, Уйăп Мишши, Г. Краснов-Кĕçĕнни тата ыттисем те хайсен паха произведенийĕсемпе тăван литературă пуянлăхне ӳстереççĕ. Тата çакă савăнтарать: чăваш поэзине çамрăк талантсем килсех тăраççĕ: А. Афанасьев, Н. Сандров, Г. Ефимов, Г. Айхи, А. Канаш, В. Урдаш, А. Дмитриев т. ыттисем те кашни хăйне евĕр поэт, кашни — пĕрре.

Чăваш совет поэзийĕнче халăхăн çĕршер çулхи пурнăçне кăтартса паракан произведенисем пур. Çакна эпир Я. Ухсайăн «Кĕлпук мучи», «Çул», «Акăшкӳл», «Çĕр» поэмисенче куратпăр. Çак тăватă произведенире поэт чăваш халăхĕн 100—200 çул хушшинчи пурнăçĕнчен илнĕ ĕçсене кăтартса панă. П. Хусанкайăн «Аптраман тавраш» поэминче чăвашсен пĕр паттăр ăрăвĕн виçĕ сыпăкне илсе кăтартнă. Аптрамансем, паттăр чăвашсем, хăйсен ĕмĕрĕнче тем те курнă, анчах нихçан та, ниçта та аптраман.

Чăваш прози анлă çул çине тухрĕ. С. В. Элкер, В. И. Краснов-Асли, Л. Агаков, А. Эсхель, А. Талвир, А. Артемьев, Н. Илпек, К. Турхан, Хв. Уяр, В. Паймен, М. Ухсай, С. Аслан, т. ыт. те — пĕрисем, тăван халăх историйĕн йĕрĕсемпе кайса, историлле произведенисем çыраççĕ, теприсем, хальхи пурнăçа «пуç тӳпи» таран кĕрсе кайса, совет çыннисен сăнарĕсене кăтартса параççĕ. Çамрăк прозаиксем тата мĕн чухлĕ? Пурте пултаруллăскерсем: В. Алендей, Ю. Скворцов, В. Игнатьев, П. Львов, И. Григорьев, В. Бурнаевский т. ыт. те. Вĕсен произведенийĕсенче совет çыннисен ĕçне-хĕлне, кăмăл-туйăмне кăтартса панă. Унти ырă сăнарсем — рабочи, техник, инженер, учитель, врач, агроном, колхозник, фермăсенче ĕçлекен хĕрарăмсем, колхоз председателĕсемпе бригадирĕсем. Вĕ-

сем — ырӑ геройсем, ӗҫӗпе, шухӑшӗпе, ӗмӗчӗпе ӗҫ ҫыннисене хаваслӑх паракан ҫынсем.

Чӑваш прози хальхи пурнӑҫпа тан пыма тӑрӑшать. Кутуртӑм драматургире те ӳҫҫӑнах палӑрать. Пирӗн драматурги тепӗр чухне «яла култармаллах» йӑнӑшсем тӑвать пулин те, малаллах каять, тӑрӑшса ӗҫлет. Унӑн пуласлӑхӗ пысӑк.

Пирӗн литературӑ критики пулса тӑчӗ. Вӑл, халлӗхе вайсӑртарах пулин те, тӑван литературӑн сӑн-сӑпатне кӑтартса пама, унӑн тӗп шухӑшӗсемпе идейисене тӗпчесе пӗлме, йӑнӑшсемпе ҫитменлӗхсене уҫса кӑтартма, писательсене пулӑшма пӗлет. Чӑваш литературӑ критики марксизм-ленинизм вӗрентӗвне тӗпе хурса ӗҫлет.

Чӑваш совет литературин, ытти литературӑсенчи пекех, нациллӗ сӑн-сӑпат, нациллӗ формӑ, хӑйне тивӗҫлӗ уйрӑмлӑх пур. Формӑ ыйтӑвне илес пулсан, ҫакна палӑртма пулать: литературӑн нациллӗ формине тӑваканни — чи малтан чӗлхе. «Чи малтан» тетпӗр, мӗншӗн тесен нациллӗ чӗлхе пулмасан, литературӑн нациллӗ форми кӑна мар, нациллӗ литературӑ хӑй те пулма пултараймасть, ытларах та — нациллӗ литературӑ пулма нацин хӑйӗн пулмалла. Ҫапла ӗнтӗ, наци литературине наци чӗлхи кирлӗ, урӑхла каласан — нациллӗ формӑ кирлӗ. Формӑ пулмасан, литературӑн содержанийӗ тытӑнса тӑраймасть. Тепӗр майлӑ та, вӑл содержанисӗр пурӑнаймасть. Вӗсем — ним уйрӑлми пӗрлӗх. Литературӑн нациллӗ формине тӑваканни — вӑл тата халӑх чӗлхин, сӑмахлавӗн хӑйне евӗрлӗ тӗсӗ, йӗрки, ӗмӗрсем хушши халӑх пултарулӑхӗпе, фольклорпа пуянланса пынӑ йӗркесем, ӑслайсемпе майсем. Виҫҫӗмӗшӗнчен, вӑл — нацин классикла литературин традицийӗсем, вӗсене малалла аталантарни. Пирӗн хальхи литературӑ Константин Иванов, Тайӑр Тимкки, Ҫеҫпӗл Мишши тата ыттисен пархатарлӑ традицийӗсемпе чӑннипех те мухтанать. Вӑл чӑваш совет литературин ырӑ традицийӗсене ҫӗнӗ вӑй парса малалла яма тӑрӑшать. Юлашкинчен, вӑл, литературӑн нациллӗ форми,— халӑхӑн литературӑра палӑракан нациллӗ кӑмӑлӗн, характерӗн йӗрки, халӑхӑн психологипе эмоцин уйрӑмлӑхӗсем, ытти литературӑсенче курӑнман тӗссем, чун-чӗре туйӑмӗсем. Пӗр сӑмахпа каласан, вӑл — наци хӑй, унӑн сӑн-сӑпачӗ, шухӑш-туйӑмӗ, чӗлхи-ҫӑварӗ.

Чӑваш совет литературин пултарулӑх меслечӗ — социализмла реализм. Чӑваш литературин тӗпчевҫисем ҫак меслет пирӗн литературӑра хӑҫан пуҫланса кайнине пӗлес тесе

пайтах шухăшлаççĕ, пуçĕсене çĕмĕреççĕ. Хăшĕ-пĕрисем ăна 1919—1920 çулсенчи чăваш литературинчех «тупаççĕ». Ку, паллах, пирĕн литературăшăн ытла та ир: ун чухне чăваш литератури социализмла реализм çўллĕшне çитмелĕх аталанайман-ха. Ку тĕлĕшпе М. Я. Сироткин профессорпа килĕшмесĕр тăма çук. Вăл тĕпчесе тухнинчен çакă уççăнах курăнать: совет саманин малтанхи çулĕсенчи чăваш литературинче социализмла реализмăн тĕп паллисем курăнмаллах ўссе çитеймен. Ку вăл акă мĕнрен килнĕ: çав тапхăрти чăваш литератури, пĕтĕмĕшпе илсен, пурнăçа реалистла кăтартас тĕлĕшпе те, илемĕш енчен те кирлĕ шайра тăрайман, утăмĕсем шанчăклă пулнă пулин те, малтанхи утăмсем çеç пулнă. Çапах та вĕсем пирĕн литературăра социализмла реализм меслетне алла илмелли майсене тупса панă, литературă çулне такăрлатнă. Çапла вара, социализмла реализм чăваш литературинче мĕнле аталанса çирĕпленнине пирки пĕтĕмлетсе калас пулсан, çакăн пек палăртма пулать: социализмла реализм меслечĕ, вырăс литературинче хăйĕн пуçламăшне М. Горький, Д. Бедный, В. Маяковский тата ыттисен ячĕпе çыхăнтарнăскер, 20-мĕш çулсен вĕçĕнче, 30-мĕш çулсен пуçламăшĕнче чăваш совет литературинче те вăй илет, анчах вăл пĕр писатель ĕçĕ мар, чăваш совет литератури социализмла реализм çулĕ çине тăни пĕтĕм пурнăç туртăмĕнчен, халăх социализм тунинчен, уншăн пĕтĕм вăя хурса кĕрешнинчен, социализм çĕнтерсе пынинчен килнĕ; чăваш литературинчи социализмла реализм — вăл чăваш писателĕсен пысăк ушкăнĕ, коллективĕ хăйсен ĕçне-хĕлне пурнăçпа тачă çыхăнтарса пынипе, çĕнĕ пурнăçа, çĕнĕ çынсене литературăра кăтартса пама тăрăшнипе вăй илсе çирĕпленнĕ меслет. Çапла вара, социализмла реализмăн принципĕсем чăваш литературин никĕсне кĕрсе вырнаçнă.

Революцичченхи чăваш литератури критикăлла реализм картинчен тухайман. Çакă унăн чи çўллĕ шайĕ пулнă, совет саманинчи условисенче социализмла реализм шайне куçма пулăшнă, унăн никĕсне кĕрсе юлнă. Советла, социализмла литература иртнĕ саманасен культура тĕлĕшĕнчи ўсĕмĕсене юрăхсăр тесе сирсе пăрахман, критиклесе, тишкерсе йышăннă. Чăваш совет литератури те çав çулпах пынă: вăл революцичченхи литературăн пуянлăхне тишкерсе йышăннă.

Пĕр сăмахпа каласан, наци пурнăçĕсĕр, сăн-сăпачĕсĕр нимле литературăн та нациллĕ сăн-сăпачĕ пулма пултарай-

масть. Писателĕн çакна пĕлнĕ вăхăтрах нацисен пурнăçĕнчи тепĕр туртăма курма пĕлмелле: пирĕн нацисен пурнăçĕнче нациллĕ уйрăмлăх пуррипе пĕрлех интернационалла пĕрлĕх вăйланса пырать, нациллĕ традицисем улшăнаççĕ; нациллĕ формăсем те çаплах — вĕсем улшăнса, лайăхланса пыраççĕ.

Н. С. Хрущев КПСС XXII съездĕнче парти Программи çинчен туна докладра акă мĕн каланă:

«Наци культурин формисем пĕр улшăнмасăр хытса лармаççĕ, вĕсем лайăхланса, çĕнĕлсе пыраççĕ; коммунизм строительствин задачисене тивĕçтермен, кивелнĕ формăсем пăрахăçа тухса пыраççĕ, çĕнĕ формăсем çуралаççĕ. Литературăпа искусствăра нацилле колоритпа усă курни кирлех ĕнтĕ. Анчах та эпир ку ĕçре час-часах архаизм тĕслĕхĕсене те куратпăр... Чăннипе вара, пирĕн саманана тивĕçтерекен формăсем çеç малалла аталанма тивĕç...

Пирĕн нацисен чĕлхисене аталантарас тĕлĕшпе нимле чару та çук. Анчах та вĕсем аталанса пыни нацисене пĕр-пĕринчен уйăрма мар, нацисене пĕр-пĕринпе çывхартма пулăшмалла».

«Паллах,— тет малалла Н. С. Хрущев,— нацилле уйрăмлăхсем пĕтсе пынăшăн кӳренекенсем те тĕл пулаççĕ. Эпир вĕсене çапла ответлетпĕр: коммунистсем нацилле уйрăмлăхсене çаплипех тата ĕмĕрлĕхех упрама шутламаççĕ. Малашне те эпир коммунизм строительствинче ирĕклĕн тата демократиллĕ майпа пулса пыракан объективлă процеса, нацисемпе вак халăхсем пĕр-пĕринпе ытларах та ытларах çывăхланса пыракан процеса аталанма пулăшса пырăпăр».

Социализмла реализм нациллĕ литературă формин пуянлăхĕсене тишкĕрсе йышăнать, ырă енĕсене малалла аталантарать. Социализмлă реализм нихăш литературăшăн та ют мар. Вăл — çĕнĕ йышши литературăсен, советла, социализмла литературăсен пултарулăх меслечĕ çеç мар, çĕнĕ сыпăкĕ, çĕнĕ çӳллĕшĕ.

Çакă паллă: социализмла реализм меслечĕ çĕнĕ условисене кура, пурнăç улшăннине кура хăй те улшăнса, пуянланса пырать. Формăпа содержани социализмла реализм литературинче те, пĕр-пĕрне витĕр витсе тăракан пĕрлĕх пулса, диалектикăлла аталанаççĕ, уйрăлми пĕрлĕхре улшăнса, лайăхланса пыраççĕ.

Историре, И. Д. Кузнецов критик калашле, пур этеме тивĕçлĕ, пур этеме пуянлатакан, пур этеме хумхантаракан,

килентерекен литература çиеле тухса пырать. Çакă вăл халăх интересĕсене тĕрĕс палăртакан, унăн ĕмĕчĕсене пурнăçа кĕртессишĕн кĕрешекен литература. Халыхи вăхăтра совет халăхĕн интересĕ, ĕмĕчĕ — **коммунизм туса çитересси.** Совет халăхĕсен пурнăçĕ, вĕсен интересĕсем, ĕмĕчĕсемпе шухăшĕсем, коммунизмла идеалĕ совет литературисене интернационалла никĕс парать, литературăсен нацилĕхĕпе интернацилĕхне уйăрăлми пĕрлĕх туса хурать. Çапла вара, совет литературин нацилĕхĕнче те, содержанийĕнче те интернационализм аталанать, интернационализм, халăхсен туслăхĕ — нацилле культурăсен никĕсĕ пулса тăрать, нацилле культурăсене хăват парать, малалла вăйлăн аталанма пулăшать.

Литературăн композицийĕпе сăнлăх хатĕрĕсем те, мелĕсем те (вырăсла «композиционно-изобразительные средства и способы» тенĕскерсем те) нациллĕ формăна кĕреççĕ. Вĕсем халăхăн илемĕш (художества) пултарулăхĕ истори тăршшĕнче аталаннипе пуянланса, çирĕпленсе, якалса пыраççĕ, ăруран ăрăва куçаççĕ. Анчах вĕсем — яланах произведени содержанине, идейине палăртакан хатĕрсем, идейăна пăхăнаканскерсем. Тепĕр енчен тата çакă та паллă: произведенине çырас принципсем халĕ кашни литературăрах пĕр евĕрленсе пыраççĕ. Сăмахран, роман композицийĕн принципĕсем пĕр евĕрленсе, чăннипех те интернациленсе пыраççĕ т. ыт. те. Эппин, формăра та интернацилĕх элеменчĕсем аталанаççĕ, литературăсем формă енĕпе те пĕрпĕринпе çывхарса пыраççĕ.

Кунта çакна та асăрхаттармалла: чăваш сăввин виçи, техники, сăвă çырас йĕрке революцичченхи вăхăтсенче силлабикă виçинчен тухса çитеймен пулсан, халĕ, «Çеçпĕл шкулĕн» ăнăçлăхне пула, чăваш поэчĕсем хăйсен сăввисене тоникă тенĕ виçепе çыраççĕ, вырăс поэзийĕн произведенийĕсене оригинал виçипех куçараççĕ. Ку вăл пирĕн поэзи формисем интернационала çул çине тухса пынине кăтартса памасть-и? Çак ӳсĕм чăваш поэзийĕн формă тĕлĕшĕнчи майĕсене, мехелĕсене пĕрре те хĕсмест, ансăрлатмасть, пачах урăхла: пуянлатать, йышлăлантарать, çĕнĕ майсем парать, чăваш поэзине интернационализмăн анлă çулĕ çине тухма пулăшать.

Юлашкинчен, чăваш литературин пĕтĕмĕшле ӳсĕмне, итогне илес пулсан, эпир мĕн куратпăр-ха? Совет саманинче чăваш литератури, чăваш çĕршывĕ пекех, пысăк утăмсем турĕ. Халыхи вăхăтра чăваш писателĕсен Союзĕнче члента

64 писатель тăрать. Вĕсен шутĕнче — прозаиксем, поэтсем, драматургсем, тăлмачсем, критик-публицистсем. Чăваш совет литератури хамăр çĕршыври халăхсене интереслентерекен темăсене ăнăçлăн лартса çутатса пама пултаракан литература çÿллĕшне çĕкленчĕ. Чăваш литератури вырăс тата ытти халăхсен нумай аталаннă литератури шайне çити çĕкленме тăрăшать. Максим Горький тахçанах ĕнтĕ пирĕн çĕршыври халăхсен литератури çавăн пек литература пуласса ĕмĕтленнĕ. Паха та чаплă ĕмĕт! Вăл пирĕн вăхăтра пурнăça кĕрсе пырать. Совет литератури ем-ешĕл вăрман пек ÿсет. Унта мĕн тĕслĕ йывăç çук-ши! Пурте, пурте — совет литературин вăрманне илем кÿрет.

Совет саманинче, 40—46 çул хушшинче, пирĕн литература тăван халăх пурнăçне туллин кăтартса памалăх вăй пухрĕ. Пирĕн литературăн ырă сăнарĕсемпе идейисем нацин социализмлă культурине пуянлатаççĕ. Унăн илемĕшĕ, шухăшĕ çынсен чун-чĕрине, ăс-хакăлне савăнтарать.

Чăваш совет литератури социализмла реализм меслетне çирĕп те тĕрĕс тытса пырать. Çакă вăл пирĕн писательсене пысăк темăсене хускатма, вĕсене ăнăçлăн çутатса пама, халăх кĕрешĕвĕпе пурнăçне тĕрĕс кăтартма пулăшать.

Пирĕн литература тăван халăха çĕнĕ общества тума хавхалантаракан литература пулса тăчĕ. Çакă вăл — парти ертсе пынипе туяннă, чи кирлĕ, чи вăйлă пахалăх. Çак пахалăха пула вăл обществă вăйĕ пулса тăчĕ. Çакна халĕ пурте кураççĕ, пурте пĕлеççĕ.

Чăваш совет литератури хамăр республика чиккисенчен тухса пырать. Çирĕммĕш çулсенче чăваш писателĕсен произведенийĕсене вырăс чĕлхине питех те сахал куçарнă е куçарманпа пĕрех пулсан, халĕ, уйрăмах 50-мĕшпе 60-мĕш çулсенче, пирĕн литературăн «географийĕ» нумай сарăлчĕ. Чăваш поэчĕсен, прозаикĕсен, драматургĕсен, критикĕсен произведенийĕсем вырăсла тухаççĕ те пĕтĕм çĕршыв тăрăх саланаççĕ. Ку çеç те мар-ха: чăваш писателĕсен кĕнекисене ытти тăванла халăхсен чĕлхисене те куçараççĕ. Çапла, чăваш литературин произведенийĕсем ытти халăхсен вулакана ĕсем умĕнче те «экзамен» тытма пултараççĕ. Çакă вăл пирĕн литературăн идейисем тарăнланнине, илемĕшĕ çÿллĕ шая çĕкленнине кăтартса парать.

Çапах та, çитĕнÿсем пысăк пулин те, акă паян, 1963 çулта, чăваш совет литератури хальхи пурнăçпа яланах тан пырать, халăх пурнăçне пур енчен те туллин çутатса парать тени тĕрĕсех мар пулĕччĕ. Пытарма çук, пытарма

кирлĕ мар, пирĕн литературă, хальхи пурнăç темисем патне нумай çывхарчĕ пулин те, вăл пурнăç уттинчен чылай юлса пырать-ха. Кашни писателĕн тенĕ пекех хальхи пурнăç çинчен çырнă произведени пур: пĕри роман, повеç, калав çырнă; тепри поэмă, пьесă çырнă, анчах лысăкрах сарăмпа çырнă произведенисем хушшинче иртнĕ саманасене кăтартаканнисем, çапах та, нумайрах. Паллах, пире çавăн пек произведенисем те кирлĕ. Апла пулин те, хальхи пурнăçа, хальхи çынсене сăнласа паракан пысăк произведенисем сахалли пирĕн литературăн чи пысăк çитменлĕхĕ пулса тăрать.

Вулакансене тата çакă хытă пăшăрхантарать: уйрăм писательсен хальхи пурнăç çинчен çырнă повеçĕсемпе калавĕсем, поэмисемпе сăввисем хăш-пĕр чухне ытла та шупка пулса тухаççĕ, ăсталăх тĕлĕшпе кирлĕ пек шайра тăмаççĕ.

Буржуалла теоретиксемпе вĕсен тĕрлĕ хӳрешкисем, социализмла реализма хирĕç, литературăна парти ертсе пырассине хирĕç тăрса, тĕрлĕ элек сараççĕ. Ку пирĕншĕн, паллах, çĕнĕ япала мар: буржуазин янахсăр йыттисем пĕтмен-ха, вĕсем ир те, каç та вĕреççĕ. Писательсем çакна лайăх пĕлеççĕ: совет литературине парти ертсе пырать, çул кăтартса парать. Совет писателĕсем парти ĕçне, халăх ĕçне ăнлансах тăваççĕ, чĕре хушнипе, аслă Ленин вĕрентĕвĕ хаваслантарнипе тăваççĕ.

Н. С. Хрущев юлташ литературăпа искусствă çинчен каланисем, КПСС Тĕп Комитечĕн литературăпа искусствă тĕлĕшпе йышăннă постановленийĕсем, парти Тĕп Комитечĕн 1963 çулхи июньте пулнă Пленумĕн идеологи ĕçĕн задачисем çинчен йышăннă постановленийĕнче, КПСС Программинче литературăпа искусствă пирки кăтартса панисем, унта лартнă задачăсем пирĕн литературăпа искусствăна, писательсене, художниксене, композиторсене çĕнĕ произведенисем çырма хавхалантарчĕç, халĕ те хавхалантараççĕ. Литературăпа искусствă çыннисем умĕнче пысăк задачăсем тăраççĕ: вĕсен идейă тасалăхĕшĕн пĕтĕм вăйпа кĕрешмелле, формалистла, абстракционистла хăтланчăксене путарса пымалла, пурнăçпа тачă çыхăнса тăмалла, çĕнĕ произведенисенче совет халăхĕн паттăрлăхне, совет çыннисен ĕçне-хĕлне, шухăш-кăмăлне тĕрĕс кăтартмалла. Писательсен патриотла тивĕçĕ — халăх умĕнчи пысăк ответлăха чун-чĕрепе туйса ĕçлесси, яланах малта пырасси, халăха ырă шухăшсем парасси, çĕнĕ пурнăç тума пулăшасси.

*1963*

И. Д. КУЗНЕЦОВ

# КĔНЕКЕ АВТОРĔ ҪИНЧЕН

Пирĕн вулакансем, пĕр-пĕр кĕнеке туянсан, ăна вуласа тухсан, кĕнекене ҫыраканпа пушшех те интересленеҫҫĕ. Кам вăл ăна ҫыракан? Мĕнле ҫын? Ăҫта ĕҫленĕ? Мĕнпе паллă?..

«Чăваш литературин сăн-сăпачĕ» кĕнекен авторĕ В. А. Долгов (Хударсем) — чăваш литературинче нумайранпа ĕҫлекен писательсенчен пĕри. Унăн малтанхи произведенийĕсем 20-мĕш ҫулсенче «Сунтал» журналта тата чăвашсен тĕрлĕ хаҫачĕсенче пичетленсе пынă. Литературă ĕҫне вăл ытти ĕҫре пулнă вăхăтра тунă, урăхла каласан, хăйĕн произведенийĕсене вăл ялан тенĕ пекех ĕҫ хыҫҫăн, пĕр-пĕр пушă вăхăтра е канмалли кунсенче, отпуск вăхăтĕнче ҫырнă... Ҫакна шута илсен, унăн ҫак сăмахĕсенĕ ҫăмăллăнах ăнланса илетĕн: «Шутласа пăхрăм та, манăн кăнтăрлахи ҫутăпа ҫырнă произведени ҫукпа пĕрех...»

Василий Архипович Долгов 1906 ҫулта Ҫĕмĕрле районĕнчи Хутар салинче чухăн хресчен кил-йышĕнче ҫуралса ӳснĕ. Малтан вăл Хутарти И. Н. Ульянов лартнă шкулта вĕреннĕ, унтан, Вăрнарти ял хуҫалăх техникумĕнче пĕр хĕл вĕреннĕ хыҫҫăн, Шупашкара Чăваш рабфакне кĕнĕ. Рабфакра виҫĕ ҫул (1924—1927) вĕреннĕ те Мускаври государствă университетне кайнă. Унта вăл философипе истори факультетĕнче вĕреннĕ. Ăна вĕрентекенсем хушшинче Н. М. Покровский, В. П. Волгин, Н. М. Лукин-Антонов, Е. А. Косминский академиксем тата ыт. пулнă, вăл унта А. В. Луначарский, П. С. Коган, А. К. Воронский, И. И. Анисимов, В. В. Ермилов т. ыт. доклачĕсемпе лекцийĕсене итленĕ. Университетран вĕренсе тухсан, 1930 ҫул вĕҫĕнче, В. Долгов Чăваш республикине таврăннă та хăй вĕреннĕ рабфакра тăватă ҫул хушши преподаватель тата директор пулса ĕҫленĕ. 1934 ҫулта ВКП(б) Чăваш обкомĕ ăна Ленинграда марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсене СССР-ти халăхсен чĕлхине куҫаракан-

сене вĕрентсе хатĕрлекен курса янă. 1937—1941 çулсенче В. Долгов Чăваш государствă издательствинче марксизм-ленинизм классикĕсен произведенийĕсене чăвашла куçарса тата редакцилесе кăларакан комиссире ĕçленĕ, 1941—1945 çулсенче вăрçăра пулнă, çартан 1946 çулхи кĕркунне тĕлне çеç таврăннă. Гварди капитанĕ В. Долгов фронтра хастар политработник пулнă, хăйсен чаçĕнчи офицерсем ăна ырми-канми ĕçленĕшĕн, шиксĕр пулнăшăн «неугомонный капитан» тесе чĕннĕ. Вăрçă хыççăн В. Долгов Чăвашгиз аслă редакторĕ, КПСС Чăваш обкомĕнче пичет секторĕн заведующийĕ пулса ĕçленĕ.

В. Долгов (Хударсем) çамрăклах обществăпа политикă ĕçне хутшăнса ĕçлеме тытăннă: 1922 çулта вăл комсомола кĕнĕ, 1928 çулта парти членне кĕнĕ, рабфакра вĕреннĕ чухне те, çавăн пекех университетра та пĕрмаях комсомол, парторганизаци бюровĕн членĕ е секретарĕ пулса ĕçленĕ. Ку ĕç унăн шухăш-кăмăлне çирĕплетнĕ, политикăлла опыт панă. Çав вăхăтрах вăл литературă юхăмне активлă хутшăнса ĕçленĕ. Малтан статьясемпе сăвăсем çырнă. Унăн сăввисем 1929 çулта Мускавра Центриздатра «Хура тар» ятпа уйрăм кĕнекен пичетленсе тухнă. Университет пĕтерсен, вăл фельетонсемпе калавсем, критикăллă статьясем çырма тытăннă. Унăн калав кĕнекисем тăваттă: «Çурхи калавсем», «Тĕлĕнмелле винтовкă», «Пирĕн сывăх юлташ» тата «Çуралнă çĕршывра». В. Долгов чăваш литературин историне тĕпчесе нумай статьясем çырнă. Унăн ĕçĕнче К. В. Иванов пултарулăхĕ çинчен çырнă статьясем уйрăмах паллă вырăн йышăнаççĕ. Çав статьясенчен лайăххаххисем «Чăваш халăх поэчĕ К. В. Иванов» кĕнекере икĕ хутчен тухнă. В. Долгов критикăн тепĕр паха кĕнеки— И. Я. Яковлевпа И. Н. Ульянов хушшинчи ырă туслăх çинчен çырнă «Ĕмĕрех пархатарлă туслăх» ятлă кĕнеке. Кунта тата çакна та палăртмалла: Долгов — чăвашсен пултаруллă тăлмачĕсенчен пĕри. Вăл В. И. Ленин произведенийĕсене чăвашла куçарас тĕлĕшпе нумай ĕçленĕ, илемлĕ произведенисем те вырăсларан куçарнă. Вăл шутра А. С. Пушкин, И. С. Тургенев тата ытти писательсен произведенийĕсем.

В. Долгов тата журналист, газетчик. Унăн, литературă ĕçне хаçат-журналсенче пуçланăскерĕн, тĕрлĕ статйисем «Комсомольская правда», «Литературная газета», «Литература и жизнь», «Учительская газета», «Советская Чувашия», «Коммунизм ялавĕ», «Çамрăк коммунист», «Ленин ялавĕ» тата ытти хаçатсенче, «Земля советская», «Революция и национальности», «Ялав», «Тăван Атăл» тата ыт. журналсенче пичетленсе тухнă. Долгов юлташ чăваш пичетĕнче ĕçлеме тытăннăранпа чăвашла тата вырăсла кĕнекесем 200 ытла редакцилесе кăларнă.

Пултаруллă историкĕн, писателĕн, критикăн, редакторăн, тăлмачăн 30—35 çул хушшинчи ĕçне-хĕлне кĕскен хаклас пулсан, унăн ĕçĕнчи, пултарулăхĕнчи çак пахалăхсене палăртмасăр хăварма çук.

Мĕн çамрăкранпах (эпĕ ăна 1924 çултанпа пĕлетĕп) В. Долгов

кун-сулёнче иксёлми хастарлăх вăйлă палăрса тăрать. Çав хастарлăха вăл партилĕх хурçи хывтарса пиçĕхтернĕ. Çавăнпа ĕнтĕ унăн хастарлăхĕ яланах типтерлĕ, вирлĕ, сыпăçуллă та вырăнлă, парти ĕçĕ-хĕлĕпе тĕлме тĕл пулса пырать. Вăл кирек мĕнле ĕçре те хавхаланса, ăвăнса ĕçлет, хăй калашле, унăн тарламасăр тунă ĕç сук. Ĕçе юратни, тăрăшни Долговăн кашни калавĕнчех, кашни статйинчех сисĕнет. Ку унăн «Чăваш литературин сăн-сăпачĕ» кĕнекинче те уççăнах курăнать.

Литературăра ĕçлекенсем çакна лайăх пĕлеççĕ: критик ĕçĕ часчасах хăй пуçарса, хăй тунă ĕç пек курăнмасть, хăшне-пĕрне урăх сын çырнă пирки калаçкаланă пек кăна туйăнать. Çитменнине тата, писательсем хушшинче тепĕр чухне критик тишкернине пачах юратман, çавăнпа ăна чыслама мар, хисепрен кăларса пăрахма та хăтланакансем те пур. Ун пек çынсем çакна ăнланмаççĕ: критик ĕçĕ — вăл питĕ кирлĕ, чăн-чăн партиллĕ ĕç, вăл çыракана та, вулакана та пулăшать. Писателе тав туса мухтанинс çийĕнчех илтме пулать, тишкерсе çырнисем хăш-пĕр чухне чылай вăхăт иртсен тин çыракансен ăсне кĕреççĕ. Тепĕр тесен, критик çырнисем, темле паха пулсан та, хаçатра е журналта тухнă май, пĕр-ик кун, нумай пулсан, пĕр уйăх хушшинче, манăçа тухаççĕ, мĕншĕн тесен вĕсем хаçат-журнал «ĕмĕрĕпе» пурăнаççè, часах «ĕнере» юлаççĕ.

Критикăн ĕлĕкрех çырнă произведенийĕсенчен кирлĕреххисене суйласа илсе, пĕр кĕнекене пухса кăларни питĕ паха ĕç пулса тăрать. Ман шутпа, В. Долговăн тĕплĕ те меллĕ тĕпчесе çырнă критикăллă статйисем шкул ачисемпе учительсемшĕн кăна мар, кашни вулаканшăн интереслĕ, ăскўревлĕ.

«Чăваш литературин сăн-сăпачĕ» кĕнекене вуланă чухне тата акă мĕн сисĕнет: унăн авторĕ — вăйлă публицист, вăл вырăссен паллă публицисчĕсем, сăмахран, В. Г. Белинский, Н. Г. Чернышевский, А В. Луначарский тата ыт. çырнисене тăрăшса вĕреннĕ. Паллах, унăн публицист ăсталăхĕ пуринчен ытла В. И. Ленин çырнисене тĕплĕ вĕреннĕ, тимлĕ куçарнă, редакциленĕ хушăра вăй илсе пынă. Вăл кирек мĕнле ĕçре те, мирлĕ вăхăтра ĕçленĕ-и, вăрçăра çапăçнă-и,—яланах партин çирĕп те шанчăклă салтакĕ пулчĕ. Чăн та, кĕççе питлĕ Берия ним айăпсăр çынсен пуçĕсене каснă ирсĕр кунсенче элекçĕсем, Долгова «халăх тăшманĕ» ятне парса, нерсе ўкерме хăтланчĕç. Анчах тăван парти ăна ун пек тип-шартан хăтарса хăварчĕ.

Совет правительстви В. Долговăн фронтри хăюлăхне, чăваш пичетĕнчи ырă ĕçне пысăк хака хурса, виçĕ орденпа тăватă медаль панă.

Çак кĕнеке халăх хушшинче хисепе кĕресси пире пĕрре те иккĕлентермест. Манăн хамăн пĕчĕкçĕ статьяна кĕнеке авторне ырлăх-сывлăх сунса вĕçлес килет: тата та лайăхрах кĕнекесем кĕтетпĕр эпир санран!

# ТУПМАЛЛИ


стр.

Совет литературин аслă тĕллевĕ . . . . . . 3
Чăваш литературин малтанхи утăмĕсем . . . . 23
М. Ф. Федоровăн «Арçури» халапĕ . . . . . 41
Тайăр Тимкки . . . . . . . . . . 53
Константин Иванов . . . . . . . . 64
Çеçпĕл Мишши . . . . . . . . . 82—100
1. Поэт пурнăçĕ . . . . . . . . 82
2. Поэт сасси . . . . . . . . 90
И. Е. Ундрицов (Ахах) . . . . . . . 101
И. Е. Тăхти . . . . . . . . . . 108
Чăваш халăх юрăçи . . . . . . . . 125
«Хĕн-хур айĕнче» поэмă . . . . . . . 133
Петĕр Хусанкай . . . . . . . . . 139
Поэзи пулсан . . . . . . . . . . 149
Ухсайăн хăш-пĕр произведенийĕсем пирки . . 171—228
Пĕрремĕш статья . . . . . . . . 171
Иккĕмĕш статья . . . . . . . . 190
Стихван Шавли çырнă икĕ поэмă . . . . . 229
Поэт ĕçĕ — канăçсăр ĕç . . . . . . . 242
В. Алендейĕн хăш-пĕр сăввисемпе калавĕсем çинчен 257—276
1. Ача-пăча валли çырнă сăвăсен шухăшĕ те, чĕлхи те тĕп-тĕрĕс пултăр . . . . 257
2. Кĕске калав çырасси — пысăк ăсталăх . . 264
Г. И. Кузнецов-Кели . . . . . . . . 277
Исаев Мĕтри çырăвĕсене вуласан . . . . . 300
И. Д. Кузнецовăн литература критикинчи ĕçĕ-хĕлĕ . . 310
Чăваш совет литературинчи критика шайĕ пирки . . 324
Пĕрремĕш статья . . . . . . . . 324
Иккĕмĕш статья . . . . . . . . 335
Паянхи литература критики çинчен . . . . . 351
Чăваш литературин сăн-сăпачĕ . . . . . . 393

И. Д. Кузнецов. Кĕнеке авторĕ çинчен . . . 405


---


**Долгов Василий Архипович**

ОБРАЗЫ И ИДЕИ
ЧУВАШСКОЙ ЛИТЕРАТУРЫ

Редактор Н. А. Александров. Технический редактор А. Ф. Никитина.
Художественный редактор В. Ф. Солодовников. Корректоры Р. И. Белова, Р. И. Шипколина.

НТ 03479. Сдано в набор 16-IX-1963 г. Подписано к печати 2-XII-1963 г.
Формат 84×103 1/32. Объем 21,42 печ. л. Учетно-изд. л. 21,1. Изд. № 115/63.
Заказ № 2043. Тираж 1500 экз. Цена 1 руб. 05 коп.

Типография № 1 Министерства культуры Чувашской АССР
Город Чебоксары, ул. Володарского, д. 5.

ЦЕНА 1 р. 05 к.